УМ САМАХ

Çак кĕнеке автор маларах кăларнă вĕренӳ пособийĕн (Чăваш литератури: XVIII–XIX ĕмĕрсем. – Шупашкар, 2006. – 463 с.) тăсăмĕ шутланать. Вĕренекенсен çакна асра тытмалла: 1904–1916 çулсенчи тапхăра Ю.М.Артемьевăн «Ĕмĕр пуçламăшĕ» (Шупашкар, 1996) ятлă ĕçне тĕпе хурса вĕренмелле.

Вĕренӳ пособийĕн тепĕр уйрăмлăхĕ – унта кĕртнĕ обзор пайĕсемпе портретсем пурте пĕр шайра пулманни. Хăшĕсене тĕплĕнрех пăхса тухнă, теприсен пултарулăхне тарăна кĕрсех тĕпчемен, вырăнăн-вырăнăн субъективлă тата лирикăллă самантсем те кĕртнĕ. Çакна хăш-хăш материал вĕр çĕнĕ пулнипе, хăш çыравçă çинчен вара типпĕн, тап-таса наука стилĕпе çырма май килменнипе ăнлантармалла. Чăн та ĕнтĕ, синкер шăпаллă сăвăç кун-çулĕ пирки çырнă чухне тĕпчевçĕ çав çыравçă пурнăçне шалтан туять, вăл тӳснине чĕре витĕр кăларать.

1917–1930 çулсенчи литературăна чĕрĕ процесс пек вăтăр пилĕк çул ытла тĕпчеменрен (Чăваш совет литератури. Шупашкар, 1972) хăш-пĕр çĕнĕлле хаклавсем çиелтенрех курăнма пултарĕç. Пичетленнĕ текстсем çителĕксĕртен хăш-пĕр хайлавсенчи вырăнсене туллинрех илсе кăтартнисем те çук мар кунта. Уйрăм хайлав тишкерĕвне маларах лартни те, хайлавсен пултарулăхлă историне пăхса тухма тăрăшни те сисĕнет кĕнекере. Çаксене кĕнеке авторĕн хăй евĕрлĕхĕ пек курса йышăнмалла.

Паянхи тĕпчевçĕсенчен пĕр пайĕ илемлĕ литературăна аталануллăн, пĕчĕкрен пысăкланса, вăйланса пынине кăтартни кирлех мар тесе шутлать, ăна политика лару-тăрăвĕпе çыхăнтарнине сивлет. Çапах та илемлĕ сăмах тĕнчи халăх пурнăçĕнчен пачах уйрăм йĕркеленет тени тĕрĕсех мар пулнă пулĕччĕ. Илемлĕ сăмахлăха чăмăртаса, кĕлте çыхнăн çыхса пыракан тĕп шухăш кирек хăш вăхăтра та пулнă. XX ĕмĕрĕн малтанхи икĕ-виçĕ вунă çуллăхĕнче вăл наци чăмăртанăвĕн, çĕкленĕвĕн идейипе пĕр килнĕ, çакна кĕнекере çителĕклех палăртма тăрăшнă.

Чăваш литературин çак тапхăра халаллана академиллĕ историйĕ хальлĕхе çуккине асра тытса, автор ку кĕнекене монографи принципĕсене тĕпе хурса çырма тăрăшнă. Кĕнеке аслă шкулсенче вĕренекенсемшĕн кирлĕ пулнă хушăрах чăваш литературине аслă классенче вĕрентекен учительсемшĕн хушма материал пулма пултарасса та шута илнĕ.

Пĕрремĕш сыпăк

1917–1922 ÇУЛСЕНЧИ ЛИТЕРАТУРА

Наци ăнĕ аталанни. Халăхри политика юхăмĕсемпе çыравçăсен ушкăнланăвĕсем

Чăваш халăхĕн иртнĕ пурнăçĕнчи пысăк улшăнусене виçĕ паллă ĕçпе çыхăнтарса пăхма пулать: чăваш тăрăхĕ Раççейĕн пĕр пайĕ пулса тăнипе (1551), чăваш çынни православи чиркĕвĕн тĕнне куçнипе (XVIII ĕмĕрĕн 40-мĕш çулĕсем) тата Раççейре патша йĕркине пăрахăça кăларнипе (1917).

XVI–XVII ĕмĕрсенче чăваш халăхĕн традицилле сăнĕ-сăпачĕ (культурипе йăли-йĕрки), унăн этнографи ушкăнĕсем (анат енчисемпе анатрисем тата турисем), этнотерриторийĕ çирĕпленсе çитеççĕ. Ку тапхăрти наци ăнĕ чĕлхепе культурăран ытларах тĕнпе (çу чăваш тĕнĕпе) тачă çыхăннă (тĕнне улăштарнă чăваш чĕлхипе çи-пуçне те, йăлисене те улăштарнă). Мăсăльмана куçнисем тутар, православие куçнисем крешĕн (вырăсла *крещеный* сăмахран) пулса тăнă. Ун чухне кашни халăха Турă хăйне уйрăм тĕн уйăрса панă тесе ĕненнĕ.

XVIII ĕмĕр варринчен пуçласа чăвашсен тĕп пайĕ хăйне православи çынни тесе хисеплеме тытăнать. Çĕнĕ тĕне вырăссемпе кӳршĕллĕ ытти халăхсем те уянăран чăваш хăйне ыттисенчен чи малтан чĕлхепе культурăна кура уйăрса пăхма пуçăнать. Турри те патша пекех пĕрре кăна тет вăл («Çӳлте Турă, çĕрте патша»). Патша вара çĕр çинчи халăхсене тытса та пăхса пурăнать иккен.

XX ĕмĕр пуçламăшĕ тĕлне чăваш халăхĕ хăйĕн вĕреннĕ çыннисемлĕ (интеллигенцийĕллĕ), кĕнекеллĕ (малтанхи чăвашăн кĕнекине «ĕне çинĕ»

пулнă), шкуллă халăх пулса тăрать. Унăн вĕреннĕ ачисем Турăпа патша çинчен мар, хура халăх пурнăçĕ, тăван халăхăмăр шăпи, аваллăхĕпе паянхи тата пуласлăхĕ пирки шухăшлаççĕ.

1917 çулта чăвашсен наци ăнĕ тата çĕнĕ шая çĕкленет. Интеллигенци патшапа Турра та сивлет ĕнтĕ. «Эпир, чăваш вĕреннĕ çыннисем, – тесе çырать А.Милли тин кăна çĕнĕрен чĕрĕлсе тăнă чăваш хаçатĕнче (Хыпар. 1917. 3 №), – патша пур чухне нумайччен вăрттăн хуйхăртăмăр. Çав ухмах патша пур чухне эпир чăн сăмаха сире каласа пама та хăраттăмăр. Халĕ патша çук, пире чăнлăха вĕрентнĕшĕн хăратакан çук. Сире хытă саспа чĕнсе калатпăр: пирĕн те хамăр пурăнас тенĕ пек пурăнма вăхăт çитнĕ. Чăвашсем! Хăвăршăн тăрăшакан çынсемшĕн хытă тăрăр».

«Чăвашсем! Пĕрлешсе ĕçлеме тытăнăр!» йышши чĕнӳсем хаçатра (Хыпар. 1917. 2 №) тăтăшах курăнма пуçлаççĕ. «Хамăр пурнăçа лайăхлатас тесен пирĕн, чăвашсен, пĕрлешсе, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пĕр çын пек, пĕр чун пек ĕçлес пулать», – тесе пĕтĕмлетет А.Милли хăйĕн пĕр статйинче (Сыхланăр // Хыпар. 1917. 1 №). Шел пулин те, килĕштерсе ĕçлесси шалти вăйсемпе туртăмсенчен кăна мар, тулашри сăлтавсенчен те (Раççейри политика лару-тăрăвĕнчен) те чылай килнĕ. Çакна 1917–1918 çулсенчи ĕçсем аван кăтартса параççĕ. Çав пулăма тĕплĕнрех ăнланас тесен маларах пулса иртнисене пĕлни те кирлĕ.

Мĕтри Юман хăйĕн «1905 çул» ятлă аса илĕвĕнче (1925) Яковлев ӳстернĕ интеллигенци аслă çутуçăн (просветителĕн) программинчен иртсе кайни, «ун туртинчен тухса урăх çулсем шырама тытăнни» çинчен каланă: «Çав интеллигенци хушшинче тĕрлĕ туртăмсем курăна пуçлаççĕ: пĕрисем революци еннелле сулăнаççĕ, теприсем наци культурине тăвас ĕç çине çеç тĕренсе унтан иртеймеççĕ». Юман хаклавĕнче тенденцилле шухăш сисĕнсен те вăл ХХ ĕмĕр пуçламăшĕнчи лару-тăрăва тĕрĕс кăтартса парать. Чăваш хушшинче социаллă партисенче тăракан çынсем ун чухне çителĕклех пулнă. «Çав социалистсем чăваш интеллигенцийĕн сулахай çуначĕ пулаççĕ – вĕсем чăваш халăхĕн малашнехи пĕтĕм ĕмĕтне революци çине çеç хураççĕ, çавăнпа

вĕсем пĕтĕм авалхи пурнăçа хирĕç пыраççĕ, пуринчен ытла вĕсем патшасен патшалăх йĕркине вăйпа сирпĕтесшĕн тарăхса ĕçлеме тапратаççĕ. Çапла Иван Яковлевич çавăрнă йăваранах ерипен социалистсем сиксе тухаççĕ». (Çавăнтах.)

Тепĕр, сылтăм, çуначĕ тесе Юман буржуаллă демократи енне туртăнакан юхăма калать, вĕсен ретне Н.В.Никольские, О.Г.Романова, В.И.Кривова тата ытти нумай вĕрентекене, земствăра ĕçлесе пурăнакан, хуласенче патшалăх вырăнĕсенче тăракан чăвашсене кĕртет. Çав юхăма Юман акă еплерех хак парать: «Çак буржуаллă демократи енне туртăнакан юхăм та Иван Яковлевич кăтартса панă çула пĕтĕмпех пăрахать: вăл хăй шанчăкне патшапа улпутсем çине, унтан чиркӳ çине хумасть, вăл хăй ĕмĕтленнĕ пур ĕмĕте буржуази çине хурса тăрать, çавăнпа вăл буржуази кĕрешнĕ чухне вăй çитнĕ таран пулăшу парса тăрать».

Юман çак икĕ хире-хирĕçле юхăмсăр пуçне чăвашсем хушшинче «тĕрлĕ националлă юхăмсем» палăрни çинчен те калать. Вĕсем шкул ĕçне, кĕнеке кăларас ĕçе малалла ярас тесе çанă тавăрсах тăрăшаççĕ, халăх историйĕпе кăсăкланаççĕ, чăваш шкулĕнче чăваш учителĕ ĕçлетĕр, чăвашăн хăйĕн архиерейĕ пултăр теççĕ. Çак юхăм (Юман ăна *наци оппозицийĕн çыранĕ* тесе палăртать) «патшасен пусмăрлă йĕркипе те килĕшмест, вĕсене хирĕç вăйпа кĕрешӳ тапратма чарăнса тăрса самодержави вăхăтĕнчех чăваш культурине епле те пулсан малалла ямалли мелсем шырать». (Çавăнтах.)

Юман палăртнă юхăмсем, хăй каланă тăрăх, чăвашăн вăл е ку «класлă сийĕн сунавĕсене» палăртнă: социализм енне туртăнакан юхăм хыçĕнче чухăнпа вăтам хресченсем, бурлакланнă ял çыннисем, унтан пурнăçĕпе пролетариата çывăх чăваш интеллигенчĕсем тăнă; либерализмпа буржуаллă демократи енне пирĕн аталанакан вак буржуази сулăннă; Иван Яковлевич çулĕпе националистсен çулĕ çине ялти пуянсем, пупсем, нумай вĕрентекен, нумай тĕттĕм хресчен пусса тăнă.

Çак ушкăнлу чылай хирĕçӳллĕ. Калăпăр, патшан пусмăрлă йĕркипе килĕшмен, тăван культурăна малалла яма тăрăшакансене националист (тен, автор ăна *патриот* пĕлтерĕшпе усă курнă?) тесе хаклани ăнăçсăр. Наци оппозицине социалистсем те, буржуаллă демократсен ретне лартнă чăвашсем те кĕни паллă. Эппин, ушкăнлу критерийĕсене социаллă сийсене тĕпе хурса мар, урăххи çине тĕревлесе палăртмалла. Анлăрах куçпа пăхсассăн тĕп кĕрешӳ яланах икĕ вăй хушшинче пынă: халăх чăмăртанăвĕн, аталанăвĕн мехелĕ тата ăна чăрмантарса, чарса пыраканĕсем. Яковлев чăваша шкулсемпе кĕнекесем парса, çĕнĕ интеллигенци çитĕнтерсе вăхăта хуса çитме пулăшнă. XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи Раççей техникăпа ăслăлăх ĕмĕрне çирĕппĕн кĕрет. Ку вăхăтра тĕн ĕçĕ мар, вĕренӳпе пĕлӳ ĕçĕ мала тухать; халăха пупсенчен ытларах вĕрентекенсемпе ял хуçалăх ăстисем, юристсемпе инженерсем, тĕрлĕ ăслăлăхçăсем кирлĕ пулни курăнса каять. Çак наци идейине чăмăртакан юхăм пуçне ĕмĕр пуçламăшĕнче **Николай Васильевич Никольский** (1878–1961) тăрать. 1903–1917 çулсенче вăл Хусанти куçару ушкăнĕнчи чăваш секцине ертсе пырать. Çав çулсенче секци сĕннипе 30 ытла чăвашла кĕнеке тухать, вĕсенче выльăх-чĕрлĕх, çĕр ĕçĕсем, медицина, географи, ачасене вĕрентес ыйтусем çинчен çырнă, халăх сăмахлăхĕпе илемлĕ литература тексчĕсем те пичетленнĕ. 1906–1914 çулсенче Н.В.Никольский çулсерен «Çулталăк кĕнеки» пухса кăларать. Хусан вĕренӳ округĕн управленийĕ çумĕнчи куçару комиссийĕнче ĕçленĕ хушăра вăл 6 кĕнеке редакцилесе кăларать, çав шутрах Н.И.Ашмарин словарĕн («Чăваш сăмахĕсен пуххин») чи малтанхи кăларăмне те. 1910–1911 çулсенче Никольский вырăсла-чăвашла тата славянла-чăвашла словарьсем пичетлесе кăларма пултарать. Вăл шкул чĕлхи пирки пыракан тавсене хутшăнса яланах тăван чĕлхемĕрпе культурăмăра хӳтĕлеме, тĕрлĕ шовинистсен çăварĕсене хупласа лартма тăрăшнă.

1911 çулта Хусанти дворянсен пухăвĕнче çапларах йышăнусем тăваççĕ: 1. Вырăс мар халăхсем хушшинче ĕçлекен шкулсенче вĕрентме вырăссене кăна илмелле. 2. Чиркӳсенче те вырăс çыннисем кăна ĕçлемелле. «Вырăс

халăхĕ кăна тĕрĕс вĕрентме пултарĕ «инородецсене», лешсен вĕреннĕ çыннисем час-часах вырăс культурипе патшалăхне хирĕç тăраççĕ», – тенĕ çав пухура. Пĕри вара вырăс мар халăхсене «этнографилле анахронизм» тесе хак панă.

Çакăн пек лару-тăрура вырăс мар халăхсен интеллигенцине ăслăлăх çине тĕревленнĕ, шовинистсене шăплантарма пултаракан аргументсем кирлĕ пулнă. Кĕçех Н.В.Никольский «Христианство среди чуваш Среднего Поволжья в XVI–XVIII веках» ятлă пысăк тĕпчев ĕçĕ (Хусан, 1912) çырса пичетлет. Унта вăл *чăваш хушшинчи ĕçсене* (чиркӳ е шкул таврашĕсенчи-и вăл) *чăвашла лайăх пĕлекенсен туса пымалла* текен шухăша çирĕплетет. Ку ĕнтĕ чăваш хушшинче чăваш интеллигенцийĕ ĕçлемелле тенине пĕлтернĕ. Çапла майпа наци идейин тĕп паллисем çирĕпленсе пыраççĕ. Çакна православи тĕнне уякан ытти халăхсен (çармăссен, арсен (удмуртсен), ирçесемпе мăкшăсен) интеллигенцийĕ хăвăрт туйса ăнланнă. 1917 çулхи нарăс уйăхĕнче патшана сирпĕтсен вĕсем чи малтан Н.В.Никольский тавра чăмăртанаççĕ.

Атăлçи халăхĕсене пĕрлештерес тĕллевпе Н.В.Никольский (ун чухне вăл Хусан университечĕн приват-доцентĕнче ĕçленĕ) 1917 çулхи пуш уйăхĕн варринче çак хулара ĕçлекен, вĕренекен, çар гарнизонĕнче службăра тăракан чăвашсене, çармăссемпе арсене, комисемпе крешĕн тутарсене, мăкшă-ирçесене пĕрлешӳллĕ пухăва чĕнет. Çав пухăва пуçтарăннисем пĕр-пĕринпе канашласа-килĕшсе Атăлçи вак халăхсен ушкăнне (Общество мелких народностей Поволжья) йĕркелеççĕ, правлени пуçлăхне чăваш ăсчахне лартаççĕ. Çапла вара, вырăс мар халăхсен интересĕсене хӳтĕлекен, вĕсене вăхăт ыйтнă пек аталанма пулăшакан общество юхăмĕ йĕркеленет, каярах вăл хăйĕн ларăвĕсенче политика ыйтăвĕсене те хăюллăн хускатма пултарать. Çак пĕрлĕх ĕçĕ-хĕлĕ пирки каярах та калаçăпăр-ха. Халĕ ăна аркатма май туса панă ытти юхăмсем çинчен пуплесе илер.

Н.В.Никольский ертсе пыракан наци чăмăртанăвĕн юхăмне чылай чухне социал-революционерсем (Юман палăртнă социалистсен юхăмĕ) чăрмантарса пынă, вĕсен ырă пуçарăвĕсене хăйсен чарусăрлăхĕпе чăрсăрлăхне пула пăчлантарса лартнă. Çакна Н.В.Никольскин чăвашла хаçат кăларас ĕçĕнчи лару-тăру аван кăтартса парать.

Ун хаçачĕн программи либераллă туртăмлă пулнă. Редактор влаçа хирĕçле шухăшсенчен асăрханнă, ăна хупса хурасран шикленнĕ. Çав хушăрах вăл халăх пурнăçне çăмăллатма кирли çинчен те çырать. Хресченсен çĕр хĕсĕк, вĕсене çĕр касса памалла, çĕнĕ çĕрсене куçармалла тет вăл. Пурнăçа лайăхлатас тесессĕн хут вĕренсе пĕлӳ илмелле. Ялсенче ал ĕçĕн (ремесло) шкулĕсем уçмалла тесе çырать вăл хăйĕн «Хура халăх нушисем çинчен» ятлă статйинче.

1906 çулхи çурла уйăхĕн 1–2-мĕшĕсенче Чĕмпĕр çывăхĕнчи пĕр уçланкăра чăваш çамрăк интеллигенцийĕн «Чăвашсене вĕренме пулăшакан союз» ятлă ушкăнĕн срезчĕ вăрттăн иртет. Унта пухăннисем халăхăн полити-кăлла ăнланулăхне еплерех ӳстермелли çинчен калаçаççĕ, «Хыпар» хаçата хăйсен аллине илме палăртаççĕ. С. Игнатьев редактор пулса тăрсан хаçатра революци шухăшлă статьясем ытларах та ытларах пичетленме пуçлаççĕ. Никольский асăрхаттарни чăна килет: 1907 çулхи çĕртме уйăхĕн 6-мĕшĕнче «Хыпар» хаçата хупаççĕ. Унта ĕçленĕ Тайăр Тимккине виçĕ çуллăха ссылкăна яраççĕ. Кĕçех реакци вăхăчĕ çитет. Вырăс шовинисчĕсем Яковлевпа Никольский ертсе пыракан юхăм ĕçĕсене хытах тапăнма пуçлаççĕ. Çак лару-тăрура халăх чăмăртанăвĕн, культурăмăр аталанăвĕн идейи каллех малти вырăна тухса тăрать. Самарта çав пархатарлă ĕçе Д.Ф.Филимонов, /пхӳре Г.И.Комиссаров (Вантер) кӳлĕнеççĕ, чăваш ĕçне официаллă влаçа хирĕç каймасăрах туса пыма пултараççĕ.

1906 çулхи чӳк уйăхĕн 6-мĕшĕнче Д.Ф.Филимонов Никольский патне çапла çырса пĕлтерет (çырăвне оригинал чĕлхипех илсе кăтартнă): «Глубоко сожалею, что за «Хыпар» достается Вам так много душевных мук и

скорбей... Но вы не унывайте, а вооружайтесь терпением и верою в истинность и полезность Вашего служения. Пройдет немного времени, – все сгладится. Ведь золото как ни топчи в грязь, – оно все равно золотом же останется. На моей памяти ни один честный инородческий деятель не оставался без нападок со стороны врагов. Такая уж их судьба... Кто знает, быть может, увлечение «кружка» (кунта сăмах «Чăвашсене вĕренме пулăшакан союз» пирки пырать) чувашской молодежи приведет наших сородичей не к пути прогресса, а к погибели, что и происходит теперь».

Филимонов малалла хăйĕн ӳсĕмĕ Яковлев ертсе пынипе 30 çул ытла чăваш культурине аталантарни, политикăран аяккарах тăма тăрăшни çинчен çырать. Паянхи интеллигенцин тĕллевĕсем анлăрах пулнине йышăннă хушăрах вăл çамрăксене социализм идейисемпе ытлашши айхашаççĕ тесе ӳпкелет. Çакă вĕсемччен тăрăшса тунă ĕççене харама ярать иккен. Унпа пĕрлех чăваш пек пĕчĕк йышлă халăхсене социалистсем темиçе пая уйăрса яма пултарни те пăшăрхантарать ăна. Çав хушăрах вăл хура халăхăн наци туйăмне аталантарасси пирки те шухăшлать, «вырăс пулас», «тутар пулас» тесе калакансем чăвашра ан пулччăр тет.

Гурий Иванович Комиссаров (Вантер) (1883–1969) Хусанти тĕн академийĕнче вĕреннĕ хушăрах «Чуваши Казанского Заволжья» ятлă пысăк тĕпчев ĕçĕ çырса пичетлет (1911), /пхӳре «Чувашский «саламальник» ятлă тĕпчев брошюри (1914), «Смысл мировой истории» ятлă философи трактачĕ (1916) кăларать. 1917 çулхи ака уйăхĕнче вăл ертсе пынипе «/пхӳри Чăваш Халăхĕн Ушкăнĕ» йĕркеленет. /ренпур (Оренбург) вĕренӳ округĕнчи тата /пхӳ кĕпĕрнинчи вĕрентекенсен срездне çак ушкăн П.Миронова тата Г.Комиссарова ярать. Вĕсем унта чăваш халăхĕ ячĕпе тухса калаçаççĕ, /пхӳре чăваш вĕрентекенĕсен семинарине уçма ыйтаççĕ. Кĕçех Г.Комиссаров «Чăваш халăхĕ малалла кайĕ-ши, каймĕ-ши?» ятлă ĕç çырать, ăна «/пхӳри Чăваш Халăхĕн Ушкăнĕ» 1918 çулта пичетлесе кăларать. Чăннипех те сăвăлла

прозăн янăрать çак хайлав. Унта çыравçăн шанчăкĕпе чун хавалĕ тапса тăни сисĕнет, халăхăмăрăн мал ĕмĕчĕ палăрать.

/пхӳре Г.Комиссаровпа пĕрле И.Ефимов (Тăхти) та чăваш ĕçĕшĕн çуннă, çар гарнизонĕнчи чăвашсене пухса патша тытăмĕ пĕтни, халăхăмăрăн чăмăртанма кирли çинчен ăнлантарса пысăк ĕç тунă.

Çак шухăша каярах Çеçпĕл Мишши «Чăваш чĕлхи ячĕпе пурте пĕр пулар» тесе тепĕр хут каланă (1921 çулхи пуш уйăхĕн 22-мĕшĕнче Ваçанкка патне янă çырура). Çакăн пек çырни вара сăмахлăх, литература ячĕпе пĕрлешме йыхăрнинех пĕлтернĕ. Чăваш историйĕ ячĕпе пĕр пулма чĕнесси интеллигенци хушшинче Н.И.Ашмаринăн «Пăлхарсемпе чăвашсем» ятлă кĕнеки пичетленсе тухсан (Хусан, 1902) пуçланнă. Н.В. Никольский, Г.И.Комиссаров тата вĕсем хыççăн туртăнакан ытти чăваш яшĕсем халăхăмăр аваллăхне тĕпчеççĕ, унăн тымарĕсене шыраççĕ. Чăваш халăхĕн историне çырма Турхан Энтри 1915 çултах пуçăнать, ăна вăл тепĕр икĕ çултан «Хыпар» хаçатра пичетлесе кăларать.

Э.Турханăн «Чăваш историйĕ» çакăн пек пайсенчен тăрать: 1. Умĕнхи сăмах. 2. Чăвашăн авалхи ячĕ. 3. Атăл вилсен. 4. Дунай пăлхарĕсем. 5. Пăлхар хулисем. 6. Пăлхар тĕнĕ. 7. Пăлхарсемпе вырăссем. 8. Тутарсем килсен. 9. Хусан патшалăхĕ. 10. Вырăс аллинче. Кунта чăвашăн виçĕ пине яхăн авалрах пулса иртнисене, халăхăмăр историне çырса кăтартнă. Мĕнпурĕ чăвашăн харкам ăнне вăратассишĕн, наци туйăмне хускатассишĕн çырăннă çав хайлав. Автор типĕ чĕлхеллĕ хронист мар, вĕри чĕреллĕ, халăх шăпи çинчен шухăшласа чунне ыраттаракан, ăна чунтан-вартан савакан публицист. Çакна уйрăмах «Хусан патшалăхĕ» пайра аван туйса илме пулать. Вырăссемпе тутарсем хушшинче тăнă чăваш халăхне мĕн тери йывăр килнине ăнлантарас тĕллевпе автор риторика мелĕсемпе усă курать.

Калуçă халăхра тĕл пулакан хыт кукарлăха та, чĕмсĕрлĕхе те, йăпăлтатулăха та çав пусмăр вăхăчĕпе çыхăнтарса ăнлантарать. Очеркри калу хальхи вăхăта куçать, кунта XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи пурнăç варкăшĕ аванах сисĕнет: «Çавăнтах халĕ те чăваш ялĕсенче вырăс пупĕсем, вырăс

вĕрентекенĕсем ырă курса кăна пурăнаççĕ. Чăваш вĕрентекенĕсене чăвашсемех тĕрлĕ майпа мăшкăлласççĕ, кӳрентереççĕ, ялтан хăваласа кăлараççĕ».

Чăваша хурлаканĕсем, «эсир» текенĕсем чăваш хушшинче ырă курса пурăнакансемех иккен. Калуçă вĕсене куçран чăр! пăхса çапла хăюллăн калать: «Çук, чăваша юратман çынсем! Авал чăваш апла та, капла та пулман! Ăна сирĕн пек чăваша курайман çынсем тертленсе, çапла кайăк чĕреллĕ хăравça, хура чĕреллĕ хăлăхсăра кăларнă. Ку чăвашăн айăпĕ мар. Ку сирĕн айăп вăл, чăвашăн тăшманĕсем!»

Çапла вара, наци юхăмĕн йышĕнче унăн ертӳçипе (Н.В.Никольскипе) харăсах ытти хастар чăвашсем те хăйсен сассисене панă. 1917 çулта çак юхăм пĕр тапхăр социалистсене те хăйне май çавăрать. Çав хушăрах эсерсен витĕмне пула «Хыпар» хаçатăн девизне «Пĕтĕм чăваш хаçачĕ» мар, «Хура халăх хаçачĕ» тесе çырма йышăнаççĕ. «Хыпар» чăваша вĕренме чăрмантаракан çынсене, чăваш пупĕсен консервациленнĕ, хытса ларнă пĕр пайне кăна сивлет. Хаçат редакцийĕ ячĕпе А.Милли вĕренме чĕнсе калать.

Çак наци юхăмĕн чи пысăк çитĕнĕвĕ тесе Раççейри Аслă Пухăва (Учредительное собрание) Хусан кĕпĕрнинче суйламалли списока чăвашсем хăйсен номерĕпе (1 №) тухма пултарнине шутламалла. Çав списока ун чухне Чăваш Халăхĕн хучĕ (Чувашский Национальный список) тенĕ.

Списока 7 çын кĕнĕ: Г. Алюнов, Патшалăхри Хура Халăх Канашĕн членĕ; И.Васильев, Мускаври çĕр виçевçисен институтĕнче вĕренекен; С.Николаев, Шупашкарти мировой судья; А.Краснов, Хусанти Чăваш салтакĕсен ушкăнĕн пуçлăхĕ; И.Сергеев, Шупашкар уесĕн земски управĕн пуçлăхĕ; Д.Петров (Мĕтри Юман), Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи хресченсен канашĕн пуçлăхĕ; С.Павлов, Хусан кĕпĕрнин земски управĕн членĕ, Хусанти университетра вĕренекен.

«Хыпарта» номерсерен Чăваш Халăхĕн хучĕшĕн сасăлама чĕннисем пичетленнĕ. «Пĕр чăваш суйлакан вырăс хучĕшĕн (списокшăн) сас пани те пĕтĕм чăваш халăхĕшĕн пысăк намăс, – тесе çырнă хаçат. – Чăваш çынни!

Хресчен-улпут-и, салтак-и, ахвицер-и, вĕренменни-и, вĕреннĕ-и, арçын-и, хĕрарăм-и, çамрăк-и, ватă-и, тĕне кĕнĕ-и, тĕне кĕмен-и, – эсĕ пуринчен те малтан ху чăвашне асту та Учредительное Собранине суйланă чухне чăвашсен хучĕшĕн, 1-мĕш нумершĕн сасă пар» (45 №).

Суйлав хыççăн Аслă Пухăва 4 чăваш кĕни паллă пулать. Юпа уйăхĕнчи пăлхавăр (революци) хыççăн халăх чăмăртанăвне хирĕçле ĕçсем пулса иртеççĕ. Г.Алюнов Чăваш Халăх Ушкăнĕпе «Хыпара» сылтăмалла туртса каять, çĕнĕ влаça хирĕç тăрать. Ку тĕлĕшрен Мĕтри Юман чăваш ĕçне влаçпа хирĕçмесĕр, çураçăнса туса пырас çул çине тăни паллă. Вăл чăваш халăхĕн интересĕсене мала лартать, совет влаçĕ чăвашăн пĕртен-пĕр хаçатне хупса лартасран асăрханас тĕллевпе «Хыпар» хаçата сылтăм эсерсенчен туртса илсе «Канаш» ятпа кăларма пуçлать. 1918 çулхи нарăсăн 28-мĕшĕнче унăн пĕрремĕш номерĕ тухать. Ака уйăхĕнче хаçата Чăваш тĕп Совечĕпе сулахай социалистсен Комитечĕ кăларма пуçлать.

Наци юхăмĕн пĕрлĕхне хытах хавшатакан сăлтавсем шутне шурă чехсен 1918 çулхи çу уйăхĕнчи пăлхавне кĕртмелле. Вĕсем Самар хулине туртса илнĕ хыççăн эсерсем советсене хирĕçле власть (КОМУЧ) туса хураççĕ, шуррисен çарне йĕркелеççĕ. Шурă çар çурла уйăхĕнче Хусана туртса илсен Г.Алюнов тепĕр хут «Хыпар» кăларма пуçлать, хĕрлисем таврăннă чухне шуррисемпе тухса тарать. М.Юман та, И.Васильевпа С.Николаев та шуррисемпе пĕрлешеççĕ. Çапла вĕçленет пĕтĕм чăваш халăхĕ Аслă Пухăва суйланă çынсен политикăри пурнăçĕ. Тĕрĕссипе влаçпа хирĕçĕве кĕрсе вĕсем хăйсем сисмесĕрех Н.Никольскипе унăн юлташĕсем йĕркелесе çитернĕ наци идейине те, чăвашлăха та хирĕçле ĕçсем тунă. 1917 çулхи кĕркунне чăмăртанса çитнĕ наци юхăмĕн пĕрлĕхĕ большевиксен пăлхавăрне, влаça вăйпа туртса илнине пула пуçĕпех арканса каять. 1918 çулхи авăн уйăхĕн 5-мĕшĕнче большевиксен «Хĕрлĕ террор» декречĕ тухнă хыççăн влаçпа килĕш-меннисене судсăр-мĕнсĕрех персе пăрахма, тĕрмесене лартма пуçлаççĕ. Шуррисемпе кайнă учредиловецсене тата ытти чăвашсене арестлемелли хушу тухать. Унта Г.Комиссарова та тытса хупма хушни пулнă. Вăл чăваш

интеллигенцийĕн 1917 çулхи кĕркунне пулса иртнĕ чăмăртанăвне тепĕр хут тавăрасшăн. «Нужно сохранить дело прошлого года и упрочить новую жизнь общими дружными усилиями народа, не разделяя его на враждующие партии», – тесе пĕтĕмлетет ăсчах. Шел пулин те, унăн ĕмĕчĕ пурнăçланма пултараймасть. Кĕçех Граждан вăрçи анлăран анлă сарăлса каять, тăван тăвана, чăваш чăваша касма пуçлать.

* * *

Хăйĕн пĕр çырăвĕнче Д.Элмен çапла аса илни пур: «Чăваш коммунисчĕсем икĕ ушкăна пайланса кайни область йĕркеленĕ чухнех палăрчĕ: пĕрисем большевиксен çулне-йĕрне çирĕппĕн тытса пычĕç, теприсем чăваш националисчĕсен, интеллигенцийĕпе кулакĕсен кăмăлĕсене çырлахтарма тăрăшрĕç».

Çыру авторĕ «большевикла тĕрĕслĕх» тенине чи малтан тĕп комитет йышăнăвĕсене пурнăçа кĕртсе пынă, çӳлтен хушнине яланах итленĕ тесе ăнланмалла: «Ревком тата облĕçтăвком, обком ертсе пынипе тĕп власть директивисене пурнăçа çирĕппĕн кĕртсе пычĕ».

Иккĕмĕш ушкăнрисем чи малтан парти директивисене мар, халăх интересĕсене хӳтĕленĕ, центр хушнисене лешĕсем пек хыпăнса ӳксе пурнăçламан иккен. Çав çулсенче Сталин, партин тĕп секретарĕ пулнăскер, влаçа хăйĕн аллине ытларах та ытларах ярса илсе пынă. Çакă Чăваш облаçĕнче те сисĕннĕ. Чи малтанах центр хушнипе Элмен ревкома (унăн автономи облаçĕ йĕркелемелле пулнă) большевиксен партийĕн обкомĕнче тăракансене кăна кĕртет, чăваш коммунисчĕсем сĕннĕ Г.Савандеевпа Ф.Сергеева пăрса хăварать. Сталин аппаратĕнчисем çак ĕçе (авторитарлă власть туса хунине) ырласа йышăннă.

Элмен ертсе пынипе Чăваш автономи облаçĕ Мускавран ярса панă продразверстка планне (халăхран тырă вăйпа пухас ĕçе) 136 процент тултарать. Влаçа хытă тарăхнă чăваш хресченĕсем пăлхав çĕклеççĕ, тырă пухакансене хăваласççĕ, хĕнесе пĕтереççĕ. 1921 çулхи пуш уйăхĕнче обком секретарьне Элмен вырăнне Г.Савандеева лартаççĕ. Çав выçлăх çул Элменпе

унăн хăш-пĕр тусĕсем тутă Çĕпĕре тухса тараççĕ. Облаçри власть обкомран облаçри советсен ĕçтăвкомĕн аллине куçать. Унăн председателĕ С.Коричев тата обком секретарĕ Г.Савандеев пĕр шухăшлă пулни сисĕнет.

Сталин аппарачĕ влаça парти обкомне тавăрса парасшăн пулнипе Элмене Çĕпĕртен каялла чĕнсе илет те ăна каллех секретаре ларма пулăшать. Хирĕçӳсем çĕнĕрен пуçланса каяççĕ. Парти обкомĕн секретарĕ советсене хăйне пăхăнтарттарасшăн С.Коричевпа унăн майлисене хĕстерет, ĕçрен кăларса ярать. Çав хирĕçӳре С. Коричев Чĕмпĕр чăвашĕсем (Г.Савандеев, И.Лукьянов тухтăр, Мĕтри Юман) çине таяннă, хăйсен тĕрекĕ пуласса шанса Чĕмпĕртен А.Миллие чĕнсе илет (1922 çулхи пуш уйăхĕнче). Центр пулăшнипе Элмен ушкăнĕ вăй илсех пырать, Шупашкартан 1923 çулта А.Миллин, тепĕр çулне Мĕтри Юманăн тухса кайма тивет. Кĕçех Элмене хăйне те секретарь ĕçĕнчен хăтараççĕ. Тарăн тымар яма ĕлкĕрнĕ хирĕçӳ 20-мĕш çулсен вĕçĕнче те аванах сисĕнет-ха. Ку тапхăрта Элмене хăйне те айăплаççĕ ĕнтĕ. Сталин парти аппаратне çине-çинех çĕнетсе тăни, çĕнĕрен ларнисене малтанхисемпе хирĕçтерме тăрăшни çыравçăсен хушшинчи ушкăнланусене вăй илме чылай пулăшать.

Элменпе Савандеев (Коричев) хушшинчи хирĕçӳсем 1918 çултах пуçланнă. Чăваш хресченĕсемпе ĕçлекенĕсен çĕртме уйăхĕнчи тĕп пухăвĕнче «Чăвашăн Тĕп Комиссариачĕпе унăн пайĕсем çинчен» ятлă докладпа харăсах икĕ çын калаçнă – Д.Петров (Мĕтри Юман) тата Д.Элмен. Пĕрремĕшĕ асăннă органăн чăваш ĕçĕшĕн тăрăшмалла тенĕ, иккĕмĕшĕ вара унăн пĕлтерĕшне Мускавран янă хушусене пурнăçласа пынинче кăна курнă.

Мĕтри Юман шуррисемпе кайни Элменшĕн ал май пулса тăрать. Вăл чăваш хушшинче культура автономийĕ е республика мар, *ĕç коммуни* йĕркелеме тĕв тăвать. Ревком йышне хăйĕн çыннисене кĕртни ăна хăйĕн ĕмĕтне пурнăçлама май парать: Чăваш облаçне Чĕмпĕр тăрăхĕнчи чăваш çĕрĕсем кĕреймеççĕ. Çав тăрăхра çуралса çитĕннисене «внеобластниксем» тесе власть тытăмĕнчен тĕрлĕ майпа пăрма пуçăнаççĕ. «Они же (Коричев,

Михайлов тата Мĕтри Юман. – *В.Р.*) ведь думают дать управление в Чувреспублике внеобластникам-чувашам, чтобы во чтобы ни стало хоть на йоту осуществить идеи культурной автономии, осужденные ленинизмом», – тесе çырнă Н.Золотов Д.Элмен патне 1926 çулта.

Çак влаçшăн пынă хирĕçӳ культурăпа литературăра вирьяллăхшăн тăрăшакан юхăма вăйлатса ярать. Яковлев шкулĕнче анатри чăвашсем пуç пулса тăни, литература чĕлхи те вĕсен диалектне тĕпе хурса аталанни тури чăвашсен пĕр пайне кӳрентернĕ. Вĕсем хăйсен вырăнти калаçăвĕпе культурине хисеплени, ыттисене те хисеплеме ыйтни йĕркеллĕ япалах пулнă ĕнтĕ. Çав хушăрах ентешлĕх туйăмĕ вăйланни халăх чăмăртанăвне чăрмантарма пултарни те курăнсах тăнă. Элмене пăхăнса тăракан «Канаш» хаçат (унта ытларах тури чăвашсем ĕçленĕ) «Чухăнсен сасси» (малтан унăн редакторĕ А.Милли пулнă), «Çĕнĕ пурăнăç» (редакторĕ Г.Савандеев) хаçатсемпе, «Атăл юрри» журналпа (редакторĕ А.Милли) хирĕçкелесех тăнă. Тĕпрен илсен вĕсем чĕлхе тата культура ыйтăвĕсемпе çыхăннăскерсем пулнă.

1917 çулхи çу уйăхĕнчен пуçласа А.Милли «Хыпар» хаçатăн редакторĕнче, каярах «Канаш» сотрудникĕнче ĕçлет. 1918 çулта «Чухăнсен сасси» редакторĕнче вăй хурать, пичет ĕçне И.Ахаха, Н.Золотова тата ытти çамрăксене те явăçтарать. А. Миллипе Н. Золотов хушшинчи хирĕçӳ çав çулсенчех пуçланнă пулас.

1920 çулта Чĕмпĕрте А. Милли «Атăл юрри» ятлă журнал кăларма пуçăнать. Унăн чи малтанхи номернех тиркесе йышăнаççĕ канашçăсем. «Милли стихĕсене стихсем тесе шутламастпăр... Ивановăн «Стихсем» ятлă статйи хăй ĕмĕрне ирттерсе янă статья, вăл статья вилни чылай вăхăт пулать ĕнтĕ, – хирĕлет Лукка Эрхипĕ, унтан çапла пĕтĕмлетӳ тăвать: «Атăл юррин» малтанхи номерĕ чăвашла çыракан юлташсене йăнăш çул çинелле туртать, ăна тӳрлетме редакци коллегине çĕнетмесĕр пулмасть пулĕ» (Канаш. 1921. 2 №). Çавăнтах Ютăн (Н. Золотовăн хушма ячĕ) А. Миллие ятласа çырнă

статйи те («Чăваш чĕлхин паттăрĕсем») пур. Вăл «Атăл юррине» тĕрĕс çул çине тухма чĕнет. Автор чăн-чăн илемлĕ литература, тĕнче классикине çитме пултаракан илемлĕ хайлавсем тăван литературăра питех те сахалли, чăвашла ытларах тĕн кĕнекисем пичетленсе пыни çинчен калать. Унтан вăл ушкăнăн тĕп тĕллевĕсене палăртать. Вĕсем çаксем иккен:

1. Чăваш халăхĕн ĕçлĕ çыннисене Европăри вĕреннĕ халăхсен ушкăнне кĕртес тесен, вĕсене хăйсен чĕлхипе илемлĕ, ăнланмалла сăмахсемпе тĕнчери этемлĕхĕн пурте йышăнмалли шухăшĕсене йышăнтармалла. Ăна чăваш халăхĕн пултарса çыраканĕсем пĕрлешсе тусан анчах тума пулать.

2. Чăваш халăхĕн юррисемпе халапĕсене пуçтармалла.

3. Чăвашсен илемлĕ литературине (пултаруллă çырулăхне) араслантарасшăн çине тăрса ĕçлемелле.

4. Чăваш халăхĕ хушшинче хастарлă çыракансем курăнсанах вĕсене пур енчен те пулăшу парса тăмалла.

5. Чăвашла пултарса çыракансен чăваш ялĕсене тăтăшах кайса чăвашăн илемлĕ литератури çинчен калаçмалла.

6. Ют халăхсен чаплă çыраканĕсен пултарăвĕсене чăвашла куçармалла. Пуринчен малтан чухăн халăхăн асапĕсене кăтартса çырнисене куçарарах парас пулать.

7. Чăвашла эрешлесе (илемлетсе) çырмаллин йĕркисене чăваш халăхĕн юрри-халапĕсене вĕреннинчен кăларса майлаштармалла.

Илемлĕ литература хаçат вĕççĕн кăна аталанма пултарайманнине асăрхаттарать А.Милли, ăна журнал-кĕнеке кăларни питех те кирлĕ пулнине аса илтерет. Кунта чĕлхен халăхлăхĕ, унăн тасалăхĕшĕн тăрăшмалли пирки шухăшлани пур. «Эпир те, чăвашсем, хамăр камне пĕлнинчен пуçласан тин культурлă халăх пулăпăр», – тесе пĕтĕмлетет çыравçă.

«Атăл юрри» пĕтĕмĕшле ырă сунуллă, никама та хурламасть. «Хĕрлĕ Урал» хаçат та çавнашкал кăмăллă. Çав хушăрах мĕнпур хирĕçӳллĕ ыйтусене «Канашра» хускатаççĕ, хăшĕ-пĕрне область тулашĕнчи чăвашсем хăйсен сассине пани килĕшмест. Ку тĕлĕшрен уйрăмах Ют хастар. «Стаканри шывра

çил-тăвăл кашлать» статьяра (Канаш. 1921. 10 №) вăл Миллипе Вантере каллех тустарса илет. Унăн 37-мĕш номерте пичетленнĕ «Чуралăх «пылакĕпе» ирĕклĕх сиенĕ» статйинче вирьял чăвашĕсене анатрисемпе хирĕçлетсе кăтартнă. «Хальхи хăйсене анатри текен чăвашсем хăйсен аслашшĕсен аваллăхне хăйсене тутар сăнĕ çĕнтерсе пынă майĕпе калаçăва улăштараççĕ, мăкшă сăнĕ çĕнтерсе пынă майĕпе тумтирне улăштараççĕ, – тиркештерет вăл чăваш халăхĕн пĕр пайне тата унăн культурине. Çавна май автор хăй çуралса çитĕннĕ тăрăха мухтаса илет. – Çак енчен вирьял чăвашĕсем телейлĕрех. Вĕсен шурă тумĕ чăвашсен аваллăхĕ çинчен асăнтарать... Вирьял чăвашĕсен калаçăвĕ каллех анатрисен пек тутар калаçăвĕпе хутшăнасси çинчен шухăшламасть. Çакна хирĕç тутине тавăракансем пулĕç, анчах вĕсене çакна асăнтармалла. Анатри чăвашсен йăлисене, пурнăçне вĕренсе çитнĕ Рекеев анатри чăваш чĕлхи тутарсен енне сулăнни çинчен çапла çырать... Вĕсен калаçăвĕнче чăваш чĕлхин тасалăхĕ çухалса пырать... Вирьял чăвашĕсем çак енчен таса, вĕсем вырăса тухасси çинчен те, çармăссем еннелле пăрăнасси çинчен те шухăшламан. Вĕсен чĕлхинче авалхи чăвашсен уçă, çăвар туллин тухакан сасă илтĕнет».

64-мĕш номерте Н. Золотов татах та хаярланни сисĕнет. Унта вăл хаçата вуламаççĕ текенсене çапла вăрçать: «Çапкаланчăксем, чăваш чĕлхине виçĕ пуслăх та пĕлеймеççĕ, çапах та вĕсем, Крыловăн юптарса каланинчи ашак пек, революци тунă майсене тиркеме (критиклеме) пăхаççĕ. Вĕсем пурте «Канаш» чăваш чĕлхине пăсать, унта ютран кĕрекен сăмахсене чăмласа, урăхлатса пĕтереççĕ, вуламалли те çук теççĕ. «Канаш» чĕлхипе ĕлĕк куçарнă евангели чĕлхи хушшинче тĕпсĕр çыран выртать. Евангели чĕлхи яп-яка, «Канаш» чĕлхи тикĕс мар теççĕ... Çапкаланчăксемшĕн евангели чĕлхи вутран та хăватлă».

Кунта автор чĕлхе тавне идеологи юхăмне кĕртсе яма, çавна май Турă кĕнекисенче çирĕпленсе, вăй илсе пынă литература чĕлхине сивлеме тăрăшни сисĕнет. Вăл çулсенче чиркӳсене вăйпа хупма, ĕненекенсене хĕстерме пуçлани паллă ĕнтĕ. Чĕлхе тавне пуçараканĕсем Яковлев ĕçне сивлени, чăваш

культурине икке пайласа ярас çул çине тăни халăхăмăр чăмăртанăвне чылаях чăрмантарма пултарнă. «Атăл юррине» пĕтĕмпех Пăва чĕлхипе çырнă, çавăнпа ăна Чикме чăвашĕсем, Етĕрне чăвашĕсем юратсах каяс çук, – чĕлхе тавĕ пирки шухăшласа çырать Ванеркке. Малалла теприсен куçĕпе пăхса çапла калать: «Канаш» чĕлхи те, брошюрăсен чĕлхи те çавăн пекех: пĕриншĕн лайăх, теприншĕн ниме те юрăхлă мар» (Канаш. 1922. 21 №).

Çавăн йышши хирĕçӳ çармăссен (марисен) те пынă. Туçи çармăссем улăх çармăссен каласăвне тĕпе хунă литература чĕлхине йышăнасшăн мар пулса область тĕп хулине Чикмене куçарасшăн тапаçланаççĕ. Вĕсем хăйсен каласăвĕпе кĕнекесем, хаçат кăлараççĕ. Çав хирĕçӳ тарăна кайни икĕ литература чĕлхи тăвасси патне илсе çитерет. Ирçепе мăкшăсен те çавах. Вĕсем пĕр-пĕрне ăнланманран (уйрăм литература чĕлхисем йĕркелени чăвашсене те икĕ ушкăна уйăрса янă пулĕччĕ) хутшăннă чухне вырăсла каласаççĕ. Акă мĕн патне илсе çитерме пултарать халăх чăмăртанăвне хирĕç тăракан «хамăр ял» патриотизмĕ!

Ун чухне çав ерекен «чирпе» хăш-пĕр çыравçă чылай асапланнă, çапах та вăл хăвăртах иртсе кайнă. Çак «хамăр яллăх» туртăмне интеллигенцин тĕп пайĕ пачах йышăнман. Енчен те вирьял чăвашĕсен срездне (вăл 1917 çулта Элĕкре пуçтарăнмалла пулнă) Г.Комиссаровпа Ф.Павлов малтан ырланă пулсассăн, каярах вĕсем чăвашăн çак «хамăр яллăх» чирĕнчен сывалнă, пĕтĕм халăхăмăра чăмăртасшăн çунма пуçланă. Ахальтен мар ĕнтĕ Г.Комиссаров тавлашусене Н.Золотовпа Н.Шупуççынни пек «хамăр яллăха» шута илсе хутшăнмасть, ун пек чухне вăл наци интересĕсене маларах лартать.

Чăваш литературинче авторитарлă шухăшлав çирĕпленсе çитни Д.Элмен тата Н.Золотов хăйсен оппоненчĕсене 1923–1924 çулсенче пуçĕпех çапса çĕмĕрнипе тачă çыхăннă. С.Коричевăн та, А.Миллипе М.Юманăн та Шупашкартан пуçĕпех тухса кайма тивет тенĕччĕ маларах.

Ушкăнлăх, авторитарлăх 20-мĕш çулсен вĕçнелле татах та вăйланса пырать. Халĕ ĕнтĕ çĕнĕ ӳсĕм (С.Петров, И.Кузнецов т. ыт. те) Д.Элмен

ушкăнне аркатать, Мускавра А.Милли, С.Коричев, Юман йĕркеленĕ культура обществине салатать. 1930–1936 çулсенче çыравçăсене пĕр-пĕринпе хирĕçтерсе яраççĕ, вĕсем çине тĕрлĕ ярлăк çакса тултараççĕ. 1937 çулхи репрессие вара пурте – малтанхи ӳсĕмĕн икĕ ушкăнĕ те, çамрăккисем те – тивĕçеççĕ. Хăрушă самана тапранса каять... Çак синкерлĕ пăтăрмахсем пĕтĕмпех большевиксен пăлхавăрĕ хыççăн пуçланаççĕ. Класс кĕрешĕвĕн ячĕпе витĕнсе Раççейри пур халăха та пайласа-хирĕçтерсе яраççĕ. Çав ӳкерчĕк чăваш çыравçисем хушшинче те аван курăнать. Ку ыйту патне каярах тепĕр хут таврăнса çитĕпĕр-ха.

Халĕ хăш-пĕр пĕтĕмлетӳсем тăвар. XX ĕмĕрĕн малтанхи çирĕм çулĕнче чăваш халăхĕ чăмăртанса, цивилизацире хăйĕн вырăнне тупнă наци пулса çитет: унăн тĕрлĕ социаллă сийĕсем уйрăм партисене ушкăнланаççĕ, чăвашла хаçат-кĕнеке тухсах тăрать, наци идейи палăрса çитет. Тăван чĕлхепе шкулшăн пынă кĕрешӳ юлашкинчен наци автономийĕ, республики йĕркелесе ярасси патне илсе çитерет. Çак ирĕклĕхпе пĕр танлăх çулне 1917 çулта пулса иртнĕ нарăс тата юпа уйăхĕсенчи пăлхавăрсем те уçса пыма майсем туса панă.

XX ĕмĕр пуçламăшĕнче И.Я. Яковлевăн çутлăх программи чăваш интеллигенцийĕн тĕп пайне çырлахтармасть ĕнтĕ. Нацин çĕнĕ идейине чăмăртакансен пуçне ун чухне çамрăк тĕпчевçĕ тата публицист Н.В. Никольский тухса тăрать. Вăл пуçарнипе ял хуçалăхĕ, çĕр ĕçĕ, географи, медицина ыйтăвĕсемпе чăвашла вăтăр ытла кĕнеке кун çути курать, халăх сăмахлăхĕпе илемлĕ литература тексчĕсем пичетленеççĕ. Чăваш тĕпчевçи хăйĕн ĕçĕсенче чăваш хушшинчи ĕçсене тăван халăх çыннисенех туса пымаллине ĕнентерсе çирĕплетет, Атăлçи халăхĕсен ушкăнне чăмăртама хал çитерет. Вăл наци ĕçне политика ыйтăвĕсемсĕрех ăнăçлăн татса пама май пуррине кăтартса ĕнентерет.

Г.И. Комиссаров та чăвашлăх ĕçĕнче тĕп туртарах пырать. Гуманитари ăслăлăхне кӳлĕнсе вăл чăваш халăхĕ пуян чун-чĕреллĕ те аваллăхлă пулнине,

унăн иртнипе хальхи кăна мар, пуласлăхĕ те пуррине ĕненмелле кăтартса парать. Çак ыйтăва халапласа вăл 1917 çулта «Чăваш халăхĕ малалла кайĕ-ши, каймĕ-ши?» ятлă публицистикăлла хайлав-тĕпчев шăрçалать, Ирĕклĕх çулĕпе утакан тăванăмăрсен чĕрисенче шанăç вучĕ чĕртме пултарать.

Г.И. Комиссаров – чăваш литературинче вун-вун çул тăтăшах хускатнă ыйтăва – Ырăпа Хаяр, Турăпа Шуйттан хушшинче пыракан хирĕçĕве – философи трактачĕ шайĕнче пăхса тухнă пĕрремĕш чăваш тĕпчевçи. Çав хирĕç тăрăва И.Юркин, К.Иванов, Н.Шупуççынни тата ытти çыравçăсем кашни хăйне май ăнланса сăнланă. Вл. Соловьевăн шухăшĕсене ăша хывнă чăваш философийĕ те Шуйттан-Çын (сатаночеловек) хушшинчи хирĕçӳ хивреленсе пырассине ĕненет. Çав хушăрах унăн хăйĕн ăнлантарăвĕ пур: тĕнче арканса каясси патнех çитмест, ырă вăйсем Çынран, Халăхран тата Космосран йĕркеленнĕ аслă çураçуллă Пĕрлĕх (Всеединство) çирĕплетсе çитерме пултарайĕç.

Н.В. Никольский пуçарнă ĕçе истори ăслăлăхĕнче Турхан Энтрийĕ, литература пĕлĕвĕнче Илле Тăхти малалла аталантараççĕ. 1917 çулта «Хыпар» хаçат çĕнĕрен кун çути курать, вăл пĕтĕм чăваша чăмăртас ĕçе пуçăнать, халăха вĕренӳ идейипе пĕрлештерме тытăнать. Наци юхăмĕн пĕрлĕхĕ Раççейри Аслă Пухăва суйланă чухне питĕ лайăх палăрать: чăваш халăхĕн списокĕпе (1№) харăсах тăватă çын суйланма пултарать. Юпа уйăхĕнчи пăлхавăр хыççăн çав ирĕклĕхпе пĕр танлăх юхăмĕ хăвăрттăн хавшама пуçлать. Кунта чи малтан большевиксен партийĕн советсене хирĕçле туса пынă ĕçĕсене аса илмелле. Политикăри пăтрашусем çыравçăсене те ушкăнласа яраççĕ, Яковлев шкулĕнче çирĕпленсе çитнĕ литература чĕлхине тĕн тата чиркӳ чĕлхи вырăнне антарса лартма пуçлаççĕ. Ушкăнлăх тата авторитарлăх вăхăчĕ çитсе пырать.

1917–1922 ÇУЛСЕНЧИ ДРАМАТУРГИ

Драматургие аталантарма чи малтан театр кирлĕ. /мĕр пуçламăшĕнче чăваш ялĕсенче тата Яковлев шкулĕнче тĕрлĕ спектакльсем лартни,

концертсенче сценкăсемпе инсценировкăсем кăтартни пулкаланă. Çапах та ун чухне халăхăмăрăн профессиллĕ театрĕ уçăлайман-ха. Хальхи Чăваш академи театрĕн пĕрремĕш спектаклĕ Хусанта 1918 çулхи кăрлачăн 14(27)-мĕшĕнче иртет. Ун чухне И.Максимов-Кошкинский ертсе пыракан ушкăн сцена çинче А.Островскин «Не так живи, как хочется» пьесин чăвашла куçарăвне выляса кăтартнă.

Хусанта уçăлнă чăваш театрĕ хĕлле «Ампир» ятлă кинотеатрта, çулла ятарласа тунă уçă театрта ĕçлет, кашни кун пекех спектакльсем кăтартать. Унта Хусанти чăваш студенчĕсен Т.Д.Алексеев ертсе пыракан хорĕ те хутшăнать. «Виçĕ уйăх хушшинче ултă пьеса лартрăмăр, – аса илет çав вăхăта И.Максимов-Кошкинский, – вĕсенчен пĕри – чăвашсен малтанхи пьеси, М.Ф.Акимовăн «Вăхăтсăр вилĕмĕ» пулчĕ».

Хусантан шуррисене хăваласа ярсан малтанхи спектакльсенче выляна çамрăксем Хĕвел тухăç фрончĕн политпайĕ çумĕнчи чăваш пайĕ кăларакан «Чухăнсен сасси» хаçатра ĕçлеççĕ, çав хушăрах салтаксем валли спектакльсем кăтартаççĕ. Театрăн тĕп артисчĕсем малтан çаксем пулнă: И. Максимов-Кошкинский (тĕп режиссер), О.Ырсем, Е.Терентьева, П.Осипов, Т.Яковлев. Каярах çав йыша Г.Тал-Мăрса, И.Данилов, С.Горский, М.Пушев, Д.Кузьмина, Е.Дмитриева, У.Тимофеева, А.Иванова (Токсина) т. ыт. те хутшăнаççĕ. Вĕсем Г.Тал-Мăрсан «Кам айăплă?», Ф.Павловăн «Судра» пьесисене те лартса параççĕ. Вырăс тата тĕнче драматургĕсен хайлавĕсене тĕп режиссерпа пĕрле П.Осиповпа Тал-Мăрса та, И.Даниловпа ытти артистсем те куçараççĕ. Çав вăхăт пирки Ç.Элкер çапла аса илсе çырнă: «Театр текех пьесăсем ыйтрĕ. Çакна пула Тал-Мăрса вырăсларан нумай пьеса куçарчĕ, вĕсене вăл хăй те çырчĕ. Тата пулас операсем валли тесе драмăллă поэмăсем çырчĕ». Элкер аса илнĕ тăрăх, драматург Гоголĕн «Ревизор», А.Луначарскин «Королевский брадобрей» камичĕсене, Шиллерăн «Разбойники» трагедине, Мольерăн «Плутни Скапена» камитне, Потехинăн «Чужое добро впрок не идет» драмине, Ярыгинăн «В чужом гнезде» пьесине, Писемскин «Горькая

судьбина» драмине тата ыттисен хайлавĕсене те куçарать, сцена çинче кăтартма хатĕрлесе çитерет.

1919 çулăн çĕртме уйăхĕнче Хĕвел тухăç фрончĕн политпайĕ çумĕнчи чăваш пайĕ Чĕмпĕрте ĕçленĕ чух хăй çумĕнче чăвашсен иккĕмĕш театрне йĕркелесе ярать. Ун режиссерĕ Н. Шевле ертсе пынипе А. Головина, Л.Евграфова, А. Тимофеева, М. Андриянова, М.Рехинкина, Ф.Баимкина, Е.Иванова, А.Наумова, Л.Баимкин, В.Смирнов, Н.Михайлов, Н.Аванский, Ф.Мигушов, М.Сергеев тата ытти артистсем те куравçăсене савăнтараççĕ. Вĕсем чи малтан çав театртах ĕçленĕ Н.Ефремовăн «Пуян Карук» ятлă пьесине лартса параççĕ. Театр нумаях ĕçлеймен пулсан та унăн чăваш культуринчи пĕлтерĕшĕ питех те пысăк. Н. Ефремовăн «Маюк» ятлă пьесине те çакăнтах кăтартнă пулас.

1919 çулта драма ушкăнĕсем чăваш ялĕсенче те чăмăртанаççĕ. Шемшерте икĕ çул маларах Ф.Павлов йĕркеленĕ ушкăна К.Егоров, Шĕнерпуçĕнче Е.Римова, Палтай ялĕнче И.Скворцов артистсем ертсе пыраççĕ. Палтайри кружокра пулас актриса Тани Юн тĕрлĕ рольсем вылянă.

1920 çулхи çуркунне тĕп театр хăйĕн пултарулăхĕпе паллаштарма Чĕмпĕр тата Самар хулисене çитсе килет. Çав çулах Хусанти Чăваш театрне Шупашкара куçараççĕ, режиссерпа пĕрле И.Шевле, Д.Кузьмина, Т.Атнер тата С.Горский артистсем куçса каяççĕ. Кунта вĕсен йышне çак артистсем хутшăнаççĕ: Е.Осипова, М.Михайлова, Г.Громов, П.Захаров, И.Илларионов (Иван Мучи), И.Агеносов, Нягина тата ыттисем те.

1921 çулхи нарăсăн 12-мĕшĕнче çак театр М. Лермонтовăн «Испанцы» драмине чăвашлатса йĕркеленĕ «Чăвашсем» ятлă спектакль кăтартма пултарать. Малтанхи сезонра унта куçарнă пьесăсемпе пĕрле М.Акимовăн «Вăхăтсăр вилĕм», Н.Ефремовăн «Пуян Карук», Ф. Павловăн «Судра» пьесисене кăтартаççĕ. Каярах репертуар Ф. Павловăн «Ялта» драмипе тата К.Ивановăн «Нарспийĕпе» (ăна П. Осипов йĕркелет) пуянланать.

1918–1922 çулсенче чăваш театр ĕçĕ хăвăрттăн вăй илсе аталанать. Çакна вăхăт ыйтнипе ăнлантармалла. Революци хыççăн наци туйăмĕ хăпарнă

чăвашсем хăйсен театрне уçма пултараççĕ. Çĕнĕ власть ку ĕçпе кăмăллă юлнă: чи малтан театр çапăçса ывăннă салтаксен канăвне йĕркеленĕ-çке! Идеологи тĕлĕшĕнчен те çырлахтарнă театр. Унта кăтартнă чăвашла спектакльсенче вăрçа питленĕ, пуянсенчен кулнă, чухăнсене хӳтĕленĕ. Наци драматургийĕ те театрпа танах аталанса пынă.

Çав çулхи çу уйăхĕн 17(30)-мĕшĕнче тепĕр паллă ĕç пулса иртет: театр ушкăнĕ чăваш драматургĕ М.Акимов-Аруй çырнă «Вăхăтсăр вилĕм» драмăна лартса парать.

Михаил Филиппович Акимов-Аруй (1895–1971) çыравçă ĕçне пуçăниччен икĕ çул ытла вăрçăра çапăçнă. 1918 çул пуçламăшĕнче вăл «Хыпар» хаçатра куçаруçăра ĕçлеме пуçланă. Чăваш театрĕ уçăлнипе хавхаланса çыравçă чи малтан «Ăратнепе» ятлă сценка çырса ăна пичетлесе кăларать. Çакă ăна малалла ĕçлеме хавхалантарать. Акă мĕнле аса илнĕ вăл çав вăхăтсене: «Мĕн çинчен çырас? Çапла хайхи «Вăхăтсăр вилĕм» драма та пуçра çуралчĕ. Малтанласа унта пĕрремĕш пайĕ, леш Микулай хăй Верук савнийĕпе уйрăлса салтака кайни çинчен калакан пайĕ çукчĕ. Вара хам салтака кайнине аса илсе çак пая хушас терĕм. Пьеса чăнах та лайăхрах, туллинрех курăнакан пулса тăчĕ».

Хайлавăн иккĕмĕш пайĕнчи ĕçсем фронтра пулса иртеççĕ. Микулай тепĕр чăваш салтакĕпе (Ванюкпа) паллашать, вĕсем çарти, ялти ĕç-пуç çинчен калаçаççĕ. Микулай Верук ятлă савнийĕнчен çыру илет. «Епле юратать вăл мана! Малашне те çаплах пулĕ-ши? – шухăша путать салтак. – Мана манĕ-ши? Уйрăлсассăн пĕр-пĕрне манаççĕ, – ун пеккисем нумай. Верук та тăрсан-тăрсан сивĕнĕ-ши? Çук... Ĕненместĕп!»

Виççĕмĕш пайра аманнă Микулайпа Ванюк сывалакан лазаретри пĕр палатăна кăтартнă. «Эпĕ тĕлĕнетĕп! – тет йывăр аманнă Микулай хăйĕн юлташне. – Мĕне кирлĕ-ши çынсене вăрçма? Мĕн çитмест-ши? Аманнăшăн салтаксене хĕрессем параççĕ. Акă вăл, мана чĕртет-ши? Мана сывлăх кирлĕ! Эпĕ çамрăк! Манăн пурăнас килет!»

Хайлавăн тĕп шухăшĕ Микулайăн тепĕр монологĕнче те палăрать: «Кам аван тумланать, кам пуян, вăл пур çĕрте те чаплă. Ăна пурте пĕлеççĕ. Вăл çылăхлă. Вăл хăйĕн ĕçне кăна тăвать. Çыннăн ăсне, чĕрине пăхмаççĕ те, вăл кирлĕ мар пек. Пурин те пурăнас килет. Пурне те çак çут тĕнче хаклă вĕт! Çамрăк çынсем... выляса, кулса, ĕçлесе çӳрес вырăнне... сурансем, чирсем...»

Ку сăмахсем вăрçăн харамлăхне, унăн тискерлĕхне кăна мар, вăхăтăн тепĕр паллине те кăтартаççĕ. Çав паллă – çынсем мулпа тата чун-ăспа уйрăлса кайнинче. Микулайпа унăн юлташĕсем чун-чĕре тĕлĕшĕнчен таса та пуян. Йăпăлти офицерсемпе тискер полковник, Микулайăн ялта юлнă хыт кукар инкĕшĕпе пиччĕшĕ вара чаппа мула пуç çапаççĕ.

Аманнă Микулая Георги хĕресĕ мар, сывă пурнăç кирлĕччĕ. Тăванĕсенчен, савнийĕнчен инçетри çĕрте куçне ĕмĕрлĕх хупать çав çамрăк салтак. Унăн япалисене Ванюк килне илсе çитерсен Микулай ашшĕ çапла калать: «Ачам-ачам!.. Çак япалусем çине пăхса тăмалла-им ĕнтĕ?..(*Йĕрет.*) Эх, мăнтарăн вăрçи! Пĕтерет çамрăк çынсене! Микулай ачам!.. Епле вăхăтсăр вилмелле пултăн?!»

1918–1919 çулсенче М.Акимов-Аруй «Илюк» ятлă драма çырса ăна 1920 çулта уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларать. Хайлаври ĕç-пуç 30 çула çитсе пыракан Илюк тавра пулса иртет. Вăл авланнă, Сашук ятлă ывăлĕ çитĕнет. Салтака кайса килнĕ. Мăшăрне выльăх вырăнне хурса ĕçлеттерет, ун çине аллине çĕклет. Çав хушăрах эрех юхтарса сутакан пĕр тăлăх арăм (Наçтук) патне вăрттăн çӳрет. Юлашкинчен чирлĕ арăмне килĕнчен кăларса ярать.

Наçтукпа икĕ ачине илсе пыни те пурнăçне малалла яма пулăшмасть Илюкăнне. Çĕнĕ арăмĕ Сашука хĕненĕрен ăна та кăларса ярать вăл. Килĕнче хĕрарăмпа деспот пек хăтланать, çав хушăрах тăван ывăлне кӳрентерме памасть. Вăл пурнăçри улшăнусене ăнланма пултаракан хресчен, улпутсене мурсемпе танлаштарать, чăваш чĕрĕлĕвне ырласа йышăнать.

Автор кил-йышри хутшăнусен идеалне вĕрентекенте ĕçлекен Муççее калаттарать: «Ухмах мар вĕт хĕнеме [арăма]. Хĕнесе пурнăçа малалла яраймастăн вĕт, Матви».

Вăл ватăрах çынсен мĕнпур киревсĕр хăтланăвĕсем вĕсем вĕренменнинчен килеççĕ тесе шухăшлать. Хăйĕн аппăшĕ (Илюк арăмĕ) пирки амăшне çапла каласа хурать Муççей: «Эсир Марье аппана та вĕрентмелле пулнă. Вăл вĕреннĕ пулсан хальхи пек асапланман та пулĕччĕ. Темĕскер, ăна ухмах чăваша качча панă, унсăр пуççăр урăх каччă тупайман пуль çав».

Вилекен Марье патне Илюк ывăлĕпе çитсе кĕрет. «Марье, ĕлĕкхине ман!.. Каçар!.. Йăлăнатăп, каçар!..» – тилмĕрсе ыйтать вăл арăмĕнчен. Лешĕ каçармасть.

Автор Марьепе Илюк хушшинчи хутшăнăва кивĕ пурнăç юлашки тесе шутлать, вĕсем вĕреннĕ пулсан апла хăтланман пулĕччĕç тет.

Çапла вара, М.Акимов-Аруй чăваш драматургине çĕнĕ хирĕçӳсемпе сăнарсем кĕртет. Вĕсем çыравçă вăхăчĕшĕн типлă пулнă. «Илюк» драмăри Илюк прототипĕ пур вара, – аса илнĕ каярах драматург. – Ăна эпĕ хамăн Палюк ятлă йыснана кăтартса панă. Манăн аппа кӳршĕ яла качча кайнăччĕ, унăн упăшки Палюк çав тери усалччĕ, аппана ялан хĕнетчĕ».

Марье шăллĕне Муççее автор хăйĕнчен илсе сăнарланă тесе шутлаççĕ.

Николай Сидорович Ефремов (1895–1988) 1919 çулта «Униççе» тата «Пуян Карук» ятлă пьесăсем çырать. Юлашки хайлавра автор хыт кукар хресчен мĕнле майпа çăткăн пулса кайнине, çынсене пусмăрлама пуçăннине кăтартса парать. Вăрçă вăхăтĕнче ял пуянĕсен виçесĕр пуяс ĕмĕчĕ, çын хуйхине ăнланманни вăйланнă. Драмăри лару-тăру та, çынсен характерĕсем, шухăш-ĕмĕчĕпе кунĕ-çулĕ те истори тапхăрĕн сывлăшĕпе сывлать.

Истори чăнлăхĕпе пĕрлех çыравçă хăй çырни çавнашкал усалăн социаллă тата психологи тупсăмĕ пуласса, ăна уçса парса вулавçăсене асăрхаттарасса шаннă. Ахальтен мар вăл пьеса ум сăмахĕнче çапларах каланă: «Этем хăйĕн начар, йĕркесĕр пурнăçĕ çине пăхса йĕркеллĕ пурăнма вĕренет... Акă эсир Карука айăплăр... Çынсем е пĕлсе, е пĕлмесĕр айăпла пуçласан хамăр çине

часрах çаврăнса пăхатпăр, унсăрăн эпир хамăр айăпсене, çылăхсене пĕтĕмĕшпе мансах каятпăр. Çавăнпа ĕнтĕ «Карукпа» эпир çав хăрушă шкула кĕрсе хамăра хамăр куç кĕски витĕр курнă пек курас терĕмĕр...»

Хайлава социаллă психологи драмисен ретне лартма пулать. Автор унта Г.Комиссаровпа М.Акимов традицийĕсене малалла аталантарни сисĕнет.

«Ялавăн» 1988 çулхи 4-мĕш номерĕнче Юхма Мишши хăй Николай Ефремов драматург патĕнче пулни çинчен интереслĕ очерк пичетлерĕ. Унта вăл «Пуян Карук» авторĕн «Маюк» ятлă водевиль пулнă тесе çырнă. Çавăн евĕрлĕ япала – «Маюк» ятлă поэма – «Атăл юрри» журналта Упа ятпа пичетленнĕ. Вĕсен сюжечĕсем те пĕр, вĕçĕсем те кăшт кăна урăхларах: Упа хайлава венчет ыран тенĕ чух каччăпа хĕре наркăмăш парса вĕлернипе вĕçлет, Н.Ефремовăн вариантĕнче каччи кăна вилет.

Миллин килĕнчи хучĕсем хушшинче эпир поэмăн ал çырăвне тупрăмăр. Унта авторне Н.Ефремов тесе кăтартнă. Çыравçă хăйĕн поэмине водевилĕнчен маларах хайланă пулас (1918–1919). Каярах ăна драматург сцена валли юсаса тунă. Сцена саккунĕсене шута илни (тен, вилĕмсĕр «Нарспи» витĕмне пула та-и) автора хайлав вĕçне улăштарма хистенĕ.

«Маюк» поэма – Ефремовăн сăвăлла çырнă чи пысăк калăплă хайлавĕ: унта улт çĕр йĕрке. Поэт кунта вилĕмсĕр «Нарспи» çулĕпе кайма тăрăшни куç кĕрет. «Маюк» поэмăна çапах та вăйсăр хайлав тесе калама çук. Унăн поэтикинче литературăмăршăн çĕнĕ енсем те пур. Калăпăр, поэмăра калавçă тĕп геройсенчен пĕри пулни те ун чухне çĕнĕлĕх шутланнă. Çав сăнар поэма вĕçĕнче пурнăç çинчен шухăшлани те хăй евĕрлĕ.

Пĕлтĕр типнĕ хăмăлтан
Кăçал каю каяс çук;
Эпир, асап чурисем,
Пит нумаях ĕçлес çук, –

тесе вĕçлет хăйĕн сăмахне харкамçă. Кунта вăл хăйне чухăн Савипе тата унăн савнийĕпе Маюкпа танлаштарса калать. Хайлаври конфликт мулпа чухăнлăх, кĕвĕçӳпе юрату хирĕçӳлĕхне пула аталанать, вулавçа тĕрĕслĕхшĕн

тата тасалăхшăн кĕрешме йыхăрать. Çав шухăш «Маюк» ятлă пьесăра та тĕпре пулнă тесе шухăшламалла.

Н. Ефремовăн Упа ятпа сăвăсем татах та пичетленнĕ («Çуркунне», «Атăл юрри»), вĕсем пурте А. Милли кăларнă журналта кун çути курнă. «Çуркунне» сăвва вуласан К.Ивановăн «Нарспи» поэмин пуçламăшне аса илетĕн. Унта поэт чăваш çуркуннине питех те сăнарлăн ӳкернĕ. Çав ӳкерчĕк чунра хускатнă ăшă туйăма Ефремовăн «Çуркунне» сăввине вуланă хыççăн та асăрхатăн. Кунта вăл Ивановран урăхларах сăрăсемпе усă курнă. Çапах та туйăмĕ пĕрех: çур сивĕ хĕле çĕнтерсе пыни, çут çанталăк чĕрĕлни вулавçă чĕрине хускатать, чунне ăшăтать. Акă хирти улăх çăра та ешĕл курăкпа витĕнет, хура вăрман симĕс тум тăхăнать. Ыраш калчи хĕл ыйхинчен вăранса çĕкленет. Çурхи кун çитнине кайăк хурĕ-тăрни те, тăри-шăнкăрчĕ те, мулкачĕ-тыркасĕ те, шăпчăкĕ-куккукĕ те систерет. Малалла поэт ял кĕтĕвне, çул çинчи «шăлтăр-шăлтăр урапана» сăнлать, унтан пире яла илсе кĕрет, çынсен ĕçĕ-пуçĕ, хуйхи-суйхи çинчен каласа парать. Акă Акмантей арăмĕпе пăри акасси çинчен канашлать, Селиван сĕлĕ акать, Эливан тулă сапать, Сĕнтĕр кантăр сирпĕтет, Суххуй суха сухалать – ял çынни ĕçĕ-пуçĕ çинчен çавăн пек ăшшăн, сасă вылявĕпе усă курса, тĕрлĕ çын ĕçне пĕрлештерсе поэт пĕтĕмĕшле сăнар, хресчен сăнарне тăвать.

Сăвă ĕççи хыççăнхи ӳкерчĕкпе вĕçленет: «Ăшă çумăр пĕрĕхет, – Хирти симĕс кавире Çĕклентерет çӳлелле; Çак тĕнчери сывлăшра Ырă шăрăш тултарать...» Çӳлте, пӳрт карнисĕ çинче, кăвак кăвакарчăнсем кăлтăртатаççĕ, аялта вара хĕрпе каччă пăшăлтатать...

Çак «Çуркунне» хайлавра «Нарспи» поэтикин витĕмĕ аван палăрать. Çакна композици йĕркеленĕвĕнче те аван куратпăр: хайлаври харкамçă сăмаха çут çанталăк ӳкерчĕкĕнчен пуçлать те ерипен ялпа, унăн çыннисемпе паллаштарать, вĕсен хуйхи-суйхипе савăнăçне сăнласа парать. Поэтăн хайлаври ăшă кăмăлĕ, халăхла шӳчĕ çĕр ĕçченне чĕререн юратмасăр тухас çукчĕ. Эппин, ăна эпир пысăк гуманист тесе калама пултаратпăр.

Н.Ефремовăн илемлĕх системи халăх эстетикине çывăх. Унăн поэзилле чĕлхе те, тĕрлĕ символсемпе ытти илемлĕх мелĕсем те сăмахлăхăмăрта тăтăшах тĕл пулаççĕ. Поэт уйрăмах чĕрĕлӳ, пурнăç çĕнелĕвĕ çинчен çырать, вĕсене вăл çуркунне сăнарĕнче курать. Уншăн революци хăй те – çурхи кунсен улшăнăвĕ («Атăл юррин» малтанхи тăватă çаври).

Акă çурхи шывсем юхса иртрĕç, Атăл шывĕ тăрăлчĕ. Автор çак çут çанталăк ӳкерчĕкĕ урлă Граждан вăрçи вĕçленнине сăнлать: «Мул тĕнчине çĕмĕрсен Хĕрлĕ çар та лăпланчĕ», – тет вăл. Çак сăвăри çурхи Атăл – революци тапхăрĕ, унăн символĕ. Ку символика Н. Ефремова Çеçпĕл Мишшипе çывăхлатать. Çапах та вĕсен хушшинче пысăк уйрăмлăх пур: Çеçпĕл – революцилле романтик, новатор, реформатор, Ефремов вара – лирик, вăл К. Иванов традицийĕсене малалла аталантараканĕ. Çакна унăн «Çуркунне» сăввинче те, «Маюк» поэминче те асăрхама пулать.

Н.Ефремовăн пултарулăхне пур енлĕн пăхса тухни пире анлă пĕтĕмлетӳсем тума май туса пачĕ. Пĕр авторах пьесăсенче çыннăн çитменлĕхне социаллă лару-тăрура тата психологи мелĕсемпе кăтартать пулсан, лирикăра вăл ӳкерчĕк тăвас енне сулăнать, халăх сăмахлăхĕнчи евĕрлĕрех сăнарсемпе символсем калăплать. Лиро-эпикăра («Маюк» поэмăра) Н.Ефремов çак икĕ туртăма çураçтарать, социаллă тишкерĕве кăмăл-туйăмпа пуянлатать.

Георгий Васильевич Тал-Мăрса (1895–1921) 1919 çулта «Кам айăплă?» драма, «Ухатер» трагикомеди, «Çĕнĕ пурнăç шурăм пуçĕ» социаллă-героикăллă пьеса çырнă. Вăл хăй çырнă ытти хайлавсене те сцена çинче лартнине калаççĕ.

«Кам айăплă?» драмăри ĕç-пуç чухăн Лялькка Раман Çеркейĕн кил-йышĕ тавра пулса иртет. Унăн лашипе ĕнине куланай парса татман тесе илсе каяççĕ. Унăн çĕрне Эсрел Кĕпĕрьян Михали улталаса туртса илет. Юлашкинчен Çеркейпе арăмĕ ыйткалама тухса каяççĕ, вĕсен хĕрĕ (Анук) ĕç шыраса Чĕмпĕре çитет. Выçăллă-тутăллă хĕре улталаса намăс çуртне илсе

çитереççĕ, юхха хĕрсен ĕçне явăçтараççĕ. Анук хăвăртрах укçа тупса ашшĕ-амăшне ура çине тăратасшăн. Унăн ĕмĕчĕ пурнăçланаймась, вăл юхха ĕçне те, вăрă ĕçне те пултараймасть. ӳсĕр арçын кĕсйинчен укçа кăларса илнĕ чухне ăна тытаççĕ те чиксе пăрахаççĕ. Çав ӳсĕр çын, Анука вăрра тытса чиксе пăрахаканĕ, хĕрĕн тăван пиччĕшĕ Ванюк пулнă. Вĕсем пĕр-пĕрне чылай хушă курманран палласа илеймен иккен.

Ванюк монологĕ хайлаври тĕп шухăша ăнланма пулăшать: «Атте-аннене çаратнă, ыйткаласа çӳреççĕ, ватă кунĕнче чăтми намăс кураççĕ... – ерипен пуçласа хытăран хытă, хăвăрттăн калама пуçлать Ванюк. – Йăмăкăм пулăшас тесе çак шăтăка кĕрсе ӳкнĕ, хăйне хăй сутса пурăнать, çамрăк пуçне çухатать...

Акă мĕн... Акă ăçта вăл ирсĕр ĕç! Саккун тарçисем, патша йыттисем, саккун ячĕпе утнă-утайми ват супнă стариксене хăйсен çуртĕнчен шартлама сиввине хăваласа кăлараççĕ, хутаç çакса яраççĕ. Вĕсен чечек пек хĕрĕсене лачакана чикеççĕ. Тăван тетĕш аллипе вĕсен чунне илтереççĕ... Çав вăхăтра вĕсен ывăлĕ салтакра тăрать, путсĕр саккунпа ирсĕр патшана халăха çаратма, ашшĕ-амăшне хур тума вăй парать, саккунпа патша йыттисене халăх тирне сӳме пулăшать, тăранайми сĕлĕхсене хура халăх юнне ĕçме ирĕк парса тăрать...»

Ванюк чи малтан патшапа унăн тарçисене айăплать. «Халăх вăранать, çак таса чунсен юнĕ, çак таса чунсем йĕнĕ сасă ăна пушарти хăрушă чан сасси пек йывăр ыйхăран вăратĕ», – тет вăл вĕсене пулас пăлхавăрсен вăхăчĕсем çитсе пынине систерсе.

«Ухатер» трагикомеди тĕп шухăшне автор ум сăмахра çапла палăртнă: «Ку пьесăра эп чăваш епле пуйнине кăтартасшăн пулман, хыт кукар пурнăçĕнчен çеç кулас тенĕччĕ. Çавăнпа ку пьесăн тĕп шухăшĕ, ман шухăшпа, «хыт кукарлăх – айванлăх» пулмаллаччĕ... «Пуян Карук» пьесăн тĕп шухăшĕ – «пĕр мулра çех телей мар», çавăнпа кунта чăваш епле-епле майпа пуйнине кăтартма чăнах та кирлĕ. «Ухатерте» вăл аплах кирлĕ мар».

«Силпи – пăлхар пики» ятлă историлле трагеди те хайланă Г.Тал-Мăрса. Ăна драматург вырăс княçĕ Андрей Боголюбский пăлхар-чăваш хĕрне кацча илни çинчен калакан документпа паллашнă хыççăн çырма пуçăннă. «Силпи» ятлă 7 пайлă трагедие музыкăллă постановка валли юрăхлă тесе сăвăласа, классикла трагедисем евĕрлĕ çырма шутлатчĕ», – аса илнĕ каярах Н.Ваçанкка. Хайлав пирки Ç.Элкер аса илсе каланисем те пур: «1918 çул пуçламăшĕнчех, чăвашсен пулас оперисем валли никĕс пултăр тесе, Тал-Мăрса «Вăйлисен айăпĕ» тата «Силпи» ятлă драмăлла поэмăсем çырма тытăнчĕ. Вĕсене иккĕшне çуррисене яхăн çырса çитернĕччĕ ĕнтĕ...»

Трагедие автор Ф.Павлова халаллана, унта вăл «хамăн вĕрентекенĕме, тусăма» тесе палăртнă. Вĕсем иккĕшĕ пулас трагеди пирки çĕрĕ-çĕрĕпе калаçса ларни çинчен Н.Ваçанкка та аса илсе çырнă.

Пăлхар хунĕн (патшин) хĕрĕ Силпи Тивлет ĕмпĕве (пăлхарсен çар пуçне) юратать. Вĕсен юратăвне ют патшалăх çарĕ Пăлхара çĕнсе илни пĕтерсе лартать. Тивлет вилет, хунпа унăн хĕрĕ чуралăха лекеççĕ.

Хайлавăн ытти пайĕсем упранса юлман. Малалла мĕн пулассине чухлама кăна пулать: Силпие тăшман ĕмпĕвĕ хăйĕн çĕршывне илсе кайса арăм тăвать.

Усă курмалли литература

Акимов-Аруй М. Вăхăтсăр вилĕм: Драмăсем. – Шупашкар, 1917. – 72 с.

Тал-Мăрса Г. Хĕрлĕ çар çыннин юрри. – Шупашкар, 1975. – 240 с.

Романова Ф. Театр, любимый народом. – Чебоксары, 1973. – 167 с.

Хлебников Г.Я. Чăваш совет литературин поэтики. Малтанхи тапхăр (1917–1922). – Шупашкар, 1990. – 92 с.

ФЕДОР ПАВЛОВ (1892–1931)

Пурнăçĕпе пултарулăхĕн тĕп тапхăрĕсем. 39 çула çитичченех çĕре кĕнĕ Ф.Павловăн пурнăçĕ хĕрӳ вăхăтра иртнĕ. Вăл виçĕ пăлхавăр хумĕпе çăвăнса вăрçă вутне тутаннă, выçлăх çулĕсене тӳссе ирттернĕ, республикăра музыкăпа культура юхăмĕсене ертсе пынă. Хăй пурăннине тата пултарулăхĕнчи уйрăмлăхсене асра тытса Ф.Павловăн кун-çулне çак

тапхăрсене уйăрса пăхма пулать: Патăрьел –Иккасси тапхăрĕ (1892–1907); Чĕмпĕр тапхăрĕ (1907–1916); Шемшер – Хусан тапхăрĕ (1917–1920); Шупашкар тапхăрĕ (1920–1931).

Патăрьел – Иккасси тапхăрĕнче пулас çыравçă Иккасинчи икĕ сыпăклă шкулта (халĕ Чăваш Республикин Шупашкар районне кĕрет) вĕреннĕ. Каярах вăл çав вăхăта çапларах аса илнĕ: «Эпир унта революци çулĕсенче вĕрентĕмĕр. Хальхи пек астăватăп: хресченсем тавраллах пăлханма пуçланăччĕ. Хăш-пĕр ялсенче хресченсем полици отрячĕсемпе тытăçни те пулнăччĕ. Эпир кунне темиçешер хут пуçтарăнаттăмăр, революци юррисем юрлаттăмăр. Пĕррехинче (ун чухне юр ӳкнĕччĕ ĕнтĕ) пуп пурăнакан çурта хӳптĕрлесе илтĕмĕр те ун çине юр чăмаккисем вăркăнтартăмăр. Ун чухне пуп сакайĕнче мĕн çĕрлечченех ларнă тесе каласа панăччĕ. Кайран вăл Шупашкара пуçлăхсене çăхав пама вĕçтернĕ терĕç.

Тепрехинче пире шкула кĕртмерĕç, шкул пуçлăхне Н.Ф.Беляева Çĕрпӳ тĕрмине лартма илсе кайрĕç. Çуркунне тепĕр вĕрентекене шкултан кăларса ячĕç. Эпир ăна революци юррисем юрласа ăсатса янăччĕ».

Çак тапхăрта пулас çыравçă ирĕклĕх шухăшĕсемпе пуянланать, тĕрлĕ тӳре-шарапа пуп таврашĕсене юратми пулать. ӳлĕмрен вăл нихăçан та Турра ĕненмест.

Чĕмпĕр тапхăрĕ (1907–1916). Çав çулсенче Ф.Павлов пурнăçĕнче пысăк улшăнусем пулса иртеççĕ. Чĕмпĕр шкулне вĕренсе пĕтерсен ăна И.Яковлев унтах ĕçлеме хăварать. 1911–1913 çулсенче вăл чăваш ачисене юрлама вĕрентет, шкул хорне ертсе пырать. Çав çулсенче унта С.Максимовпа (кайран вăл паллă композитор пулса тăнă) К.Эсливанова юрăçă та ĕçленĕ. «1911 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухсассăнах преподаватель туса хучĕç, – аса илет Капитолина Никитична. – Тепĕр икĕ çултан Степан Максимовича кацча тухрăм та шкулта ĕçлеме пăрахрăм. Тăватă çул хушши шкултах пурăнтăмăр, икĕ ачаллă пултăмăр».

1913 çул. Çак çул К.Эсливановăна икĕ йĕкĕт хăйсене качча тухма ыйтаççĕ: С.Максимов тата ... Ф.Павлов. Çавăн пек лару-тăрура вăл Н.Бичурин манах çулне суйласа илнĕ. Ф.П.Павлов вара Чĕмпĕрти тĕн семинарине вĕренме каять. «Ф.Павлов мана юрататчĕ, – аса илет каярах Эсливанова. – Хăйне качча тухма ыйтнине эпĕ хирĕç пулни питех те пусăрăнтарнăччĕ ăна... Эпĕ ун чухне çамрăк та айван пулнă, çынсен чунĕсене кĕрсе пăхма, вĕсене ăнланма пачах та пĕлмен. Ун чухне Федор Павлович мана эпĕ С.Максимовпа телейлĕ пулмасси çинчен каларĕ. Вăл калани тӳрре килчĕ... Хама çавăн пек пултаруллă та тĕлĕнмелле çын юратнишĕн мухтанма пултаратăп». Çак тапхăрти тепĕр уйрăмлăх – Ф.Павлов музыкăпа тата поэзипе хытах кăсăкланса кайни. Унăн чи юратнă вĕрентекенĕ Иван Митрофанович Дмитриев (1884–1911) пулнă. Вăл Питĕрти юрă капеллинче ăсталăхне туптанă, Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче 1906–1911 çулсенче музыка вĕрентнĕ. «Шкулта вĕреннĕ чухне Ф.Павлов çулталăк çурă Дмитриев регента пулăшаканĕ (подрегент) пулса тăрăшрĕ. Кăçалхи апрельпе май уйăхĕсенче чирлĕ регент вырăнне пĕчченех хор ертсе пычĕ», – пĕлтернĕ И.Яковлев пуçлăхсене 1911 çулта.

Хăйĕн вĕрентекенĕн меслечĕсене алла илнĕ çамрăк хорпа кăна мар, вĕрсе каламалли тата хĕлĕхлĕ инструментсен оркестрĕсене те йĕркелесе ĕçлет. Çав çулсенче Ф.Павлов халăх юррисене пухать, чи лайăххисене нумай сасăллă туса гармонизацилет.

Чĕмпĕр тапхăрĕнче Патăрьел каччи чылай сăвă-калав хайланă. Унăн 1913 çулта вĕçленĕ «Памятник моей юности» ятлă сăвă типтерĕ (тетрачĕ) упранса юлнă. Унта кĕнĕ сăвăсен тĕп пайне вырăсла çырнă, вĕсене автор вĕренмелле хайланă.

«Вĕлле хурчĕ» сăвва Ф.Павлов К.Эсливанова сăнарĕпе хавхаланса çырнă теççĕ. Сăвăç çын ăшĕнчи туйăма çут çанталăк тĕнчипе танлаштарса курăмлă тăвать. Риторика фигурисемпе ăста усă курса лирика харкамçин чун тăрăмне кăтартма пултарнă.

«Экспромт», «Савнă хĕр» сăвăсене Ф.Павлов хăйĕнпе пĕрле вĕреннĕ В.Эхмере халаллана теччĕ. Хăш-пĕр фактсем вĕсене сăвăç К.Эсливановăна асра тытса хайланă тесе калама май параччĕ. Г.Комиссаров хăйĕн аса илĕвĕнче çамрăк Капитолинăна Чĕмпĕр шкулĕнче «шет хитре хĕр» тесе чĕннĕ тет.

«Савнă хĕр» сăвăри харкамçă та «хитре хĕрпе» каласать, ăна хăйĕн купăсĕ мĕн каланине ăнлантарать. Иккен, вăл каччă хĕре ытарайман пирки ыталаса йĕрес, ун çине савăнса пăхса кăна пурăнас ĕмĕтлĕ пулни çинчен пĕлтерет. Çав хушăрах купăс хĕр туйăмне каламасть иккен.

«Йăсăрка» хайлава сăвăç философиллĕ шухăша яракан баллада жанрĕпе çырнă. Чи малтан калуçă хĕллехи тăманлă çĕре ӳкерсе кăтартать:

Кутсăр-пуççăр çил-тăман
Çавра çил пек çаврăнса
Тĕнче тăрăх кустарать.
Арçури пек ахăрса,
Пин шăпăрпа шăлнă пек,
Шурă юра вĕçтерсе
Çил улать те шăхăрать.

Ал-ура «Вупăр карчăк тытнă пек Хытса каять, тапранмасть», «куç лупашки питĕрнет». Çаксене калуçă хăй куçĕпе курнăн каласа парать. Иккен, çул çинчи çуран çын нимĕн пĕлми пулнă, вăл «кĕрт çине кайса ӳкет, ăна йăсăрка хӳсе каять...»

Уй варринче тепĕр çын та пур иккен. Вăл çунапа, тăлăп тăхăннă, хăй юрă юрлать, хăйне хăй çапла каласа чун кĕртет:

Манăн мĕншĕн кулянас
Маттур лаша пур çинчен,
Çил-йăсăрка пулсан та
Çавах киле çитĕпĕр...
Эй халĕ, атте лаши!..

Калуçă çак çынсем инçе çула çĕр варринче тухнинчен тĕлĕнет. Усал сывлăш астарса хăваласа кăларнă-мĕн вĕсене çил-тăман вăхăтĕнче.

Çын яланах таçта васкать. Çуран çынна çитмен пурнăç çула кăларнă-ши? Тăлăпли хăйĕн килне çитесси пирки иккĕленмест. Ашшĕн маттур лаши ăна илсе çитерет ĕнтĕ. Ахальтен мар вăл хăна юррине хытă кăшкăрса янратать: «Хăта килне кĕтĕмĕр те Хăта пуç кукши çутипе...»

Çын пурнăçĕ хăй çак ӳкерчĕке аса илтермест-ши? /мĕрĕпе йывăрлăхсене çĕнтерсе малалла кайма тивет. Кам лашапа, кам çуран... Малаллине вулавçă хăй шухăшласа пĕтĕмлетĕ.

Шемшер – Хусан тапхăрĕ (1917–1920). Çак вăхăтра Ф.Павлов драматургипе театр ĕçĕшĕн хытах çуннă, хăйĕн классика ретне кĕрсе юлнă «Судра» комедийĕпе «Ялта» драмине хайланă. Малтан вăл И.Дмитриев аппăшĕн упăшки (йыснăшĕ) ĕçленĕ чиркĕве псаломщика вырнаçать. Кушлавăш тăрăхĕнче ĕнерхи семинарист халăх юррисене çырса илет, «Ялта» драма çырма пуçăнать. 1917 çулхи августра Ф.Павлов мировой судьяна суйланса Шемшер ялне (халĕ Чăваш Республикин Шупашкар районне кĕрет) куçса каять.

«Судра» камите Ф.Павлов 1917 çул вĕçнелле çырни паллă. Унăн чи малтанхи вариантне автор 1918 çулхи январĕн 3-мĕшĕнче вĕçленĕ. Хайлавăн иккĕмĕш вариантне драматург 1919 çулта йĕркелесе çитерет. 1925 çулхи апрельте автор «Судрана» виççĕмĕш хут тӳрлетсе ал çырăвне Шупашкарти музее парнеленĕ. Вулавçăсем ытларах çав юлашки вариантне пĕлеççĕ.

Çав виçĕ варианта танлаштарса пăхсан автор уйрăм персонажсен сăн-сăпатне уçăмлатса тата тарăнлатса пыни курăнать. Секретарь сăнарнех илер. Пĕрремĕш вариантра вăл уçăмлах мар пек. Юлашкинче автор унăн вăрăм монологне хушса хунă. Секретарь пĕр кунта вун виçĕ ĕç пăхса тухмалли çинчен калать: «Шуйттан тӳшĕнĕ тухсан нихçан та ахаль иртмест. Е кулмалли ĕç тухать, е тата макăрмалли».

Секретарь Ухтеркке ĕçне чи малтан ярать, куракансене вăл кулăшла пулса иртессе шантарать. Малалли ĕç-пуç секретарь сăмахĕсене тӳрре кăларни евĕрлĕ йĕркеленсе пырать.

«Судра» камите А.Чеховăн хăш-пĕр калавĕсемпе танлаштарса пăхни вырăнлă. Вырăс çыравçин «Унтер Пришибеев» калавĕнчи лару-тăру «Судрарипе» пĕрешкелех. Икĕ хайлавĕнче те тĕп персонажсем мировой судья умĕнче тăраççĕ. Пришибеева явап тыттараççĕ пулсан Ухтеркке хăйĕн кинне айăплать. Сăлтавĕсем те пĕрех: суда паракансене кӳрентерекен ĕçсем пулса иртнĕ («оскорбление словами и действием»).

Пришибеев – «Судрари» Катăк Çăвара çывăхрах сăнар. Вĕсем иккĕшĕ те хăйсене çар çынни пек тытаççĕ. Ку вăл çиелти пĕрпеклĕх.

А.Чеховăн тепĕр калавĕнче («Злоумышленник») следовательпе пĕр хресчен хушшинче сценка пулса иртет. Ял çыннине чугун çул рельсне шпал çумне çирĕплетмелли гайкăна кăларса илнĕшĕн айăплаççĕ. Автор çав харкамça айвантарах пек, çав хушăрах хăйне саккунсене ăнланнăн тытакан евĕр кăтартнă. Вăл хăй каланă кашни сăмахах ĕненет, хăйĕн ĕçне ниепле те сăтăрла ĕç тесе шутламасть. «Ăссăр тумастпăр эпир... ăнланатпăр...» – тет вăл хăйне тӳрре кăларса. А.Чеховăн çак геройĕсем чăннипех те трагикомедиллĕ сăнарсем. Вĕсем обществăн чи тĕттĕм, хăйсем ăнланмасăрах прогреса хирĕçле ĕç тăвакансем.

Ухтерккепе Катăк Çăвар – пачах урăхла сăнарсем. Вĕсен кулăшла сăмахĕсем айванран мар, чееленме хăтланнăран çапла çаврăнса тухаççĕ.

Камитĕн «Суд» ятлă прологне (ăна автор чи малтан выляса кăтартма сĕннĕ) пăхар-ха. Унта Ухтеркке çинчен каланă çакăн пек вырăнсем пур: «/нер Ухтерккепе Çитăр пырса ĕçсе кайрĕç. Ухтеркки пĕр-иккĕ сыпсанах мачча çине пăхса юрлама пуçларĕ...», «Ухтерккенне пуçне çапса шăтарнă тет».

Кунта Ухтерккене укçалла сăмакун ĕçсе çӳрекен, такампа хирĕçме пултаракан çын пек кăтартнă. Мĕншĕн Ухтеркке хăйĕн пуçне çапса

шăтаракана мар, аллинчи çăкăра туртса илекен кинне айăпласшăн? Мĕн тĕллевпе çитнĕ вăл суда?

Миравай касамат (тĕрме) çинчен сăмах хускатсанах Ухтеркке хыпăнса ӳкет: «Мĕ-ĕн?.. Касамата?.. Çук, çук, çу-ук, çу-ук!» Вăл кинне айăпласа тĕрмене лартасшăн мар.

Ухтеркке кинĕнчен ирĕк илесшĕн. Мĕнле ирĕк-ши вăл? Кукăльне çиме ăна чарман та иккен («Кин! Эсĕ вара малалла та ан чар!»). Вăл кинне Катăк Çăвара киле кĕртме те ирĕк парать, вара тин хăйĕн чăн-чăн ĕмĕтне пĕлтерет: «Эпĕ те авланатăп!» Кинĕн ирĕкне илнĕ Ухтерккен тĕллевĕ пурнăçланчĕ ĕнтĕ, халĕ унăн судра урăх ĕç çук. «Крахьян! – тулли кăмăлпа чĕнет вăл пулас арăмне. – /нтĕ пирĕн иксĕмĕрĕн кунта урăх ĕç те çук!»

Катăк Çăвар пирки те çав сăмахсенех каламалла. Вĕсем Сăпанипе иккĕшĕ пĕр шухăшлă. «Катăк Çăвар вăл ман кине качча илесшĕн астарать. /нер те вĕсем иккĕшĕ пĕрле пасара кайрĕç», – тет Ухтеркке кӳнтелен (свидетель) туннине сăлтавласа. Катăк Çăвар айван çын мар, вăл вăхăт сывлăшне те туять («хăспатин Герасим Федорович Криворотов-Второй», «Я слопотный краштанин, хăспата причашные»).

Вĕсем иккĕшĕ те «судсăр самана – тăварсăр çăкăр» (прологри сăмахсем) пулнине пĕлеççĕ, хăйсен хӳтлĕхĕ пуррине туяççĕ. Вĕсем суда ирĕк илме çитнĕ, камит вĕçĕнче чăннипех те илеççĕ ăна: икĕ мăшăр чăмăртама калаçса килĕшеççĕ. Çакăнта пулчĕ хайхи судăн миссийĕ.

Ф.Павлов вырăс калав ăстин хайлавĕсене пĕлнех-тĕр. Çапах та «Судра» камитри сăнарсем унăн пачах та урăхла пулса тухнă. Драматург хăй çырни тăрăх, камите вăл хăйĕн суд практикинчен илсе хайланă.

«Ялта»

Хайлава çырнă вăхăт. Ф.Павлов «Ялта» драмăна хăй чăваш ялне (Кушлавăша) кайсан çырма пуçăннă тесе шутлаççĕ. Шемшер вулăс судйинче ĕçлеме пуçласан вăл драмăна хайлама чарăнса камит çырма пуçăннă пулĕ теç-

çĕ (М.Сироткин, Н.Павлов). Çапла ăнлантару çыравçă мĕншĕн поэзирен драматургие куçнине ĕнентерме пулăшмасть.

Кушлавăш чиркĕвĕнче ĕçленĕ тапхăрта (1916 çулхи июнĕн 14-мĕшĕнчен пуçласа 1917 çулхи августăн 14-мĕшĕччен) поэт, малтанхи пекех, халăх юррисене пухнă. Вĕсем, тĕпрен илсен, лирикăллă юрăсем пулнă. Театрпа вăл 1917 çулхи кĕркунне кăсăкланма пуçлать, Шемшерте чăваш драматургине юратакансен ушкăнне йĕркелесе ярать. Çавăн чухнех вĕсем вырăсла пьесăсене чăвашла куçарма пуçăнаççĕ. Çав лару-тăрура «Судра» камит çуралать.

«Ялта» драмăна маларах çырнă тесе шутлани хайлаври ĕç-пуç Германи вăрçи вăхăтĕнче пулса иртнипе çыхăннăран килет. Анчах та çыравçă ăна вăрçă йывăрлăхĕсене кăтартас тĕллевпе кăна çырнă-ши? Çук пулĕ. Аса илер-ха Ф.Павлов 1920 çулхи июнĕн 11-мĕшĕнче тунă докладри çак сăмахсене: «Хальхи вăхăтра вăрçă тата революци ĕçĕ-хĕлĕ палăрса тăраççĕ. Çак икĕ пулăм хресченсен пурнăçне те витĕм кӳрет. Çав витĕм ухмахла, вăл çын чунне чурăслатать. Хальхи çын характерĕ, унăн чунĕ хытса пырать».

«Ялтари» Çтаппанпа Йăскар, Пăрчканпа Ванюк сăнарĕсем çапла мар-и вара? «Вăрça пула, вăл Граждан вăрçи пулсан та, кăмăлсем чурăсланаççĕ», – тесе çырать Ф.Павлов тепĕр вырăнта.

Халĕ Елюк сăнарĕ пирки шухăшлар. Вăл чи малтан чунлăхшăн, юрату тасалăхĕшĕн тата харкам ирĕкшĕн, пĕр танлăхшăн кĕрешет. Ку вăл çав вăхăтри Нарспи сăнарĕ. «Чурăслăха, чун хытнине пĕтерме халăх валли çĕнĕ идеалсем шырамалла, – хавхаланса каласнă Ф.Павлов Шупашкар уесĕнчи ӳнер ĕçченĕсен срездĕнче (1920 çулхи июнĕн 11-мĕшĕ). – Çын хавалне паттăрлăх шайне çĕклес тесен театрсенче халăх массисене кăтартакан картинăсене лартмалла».

Елюк сăнарĕ урлă Ф.Павлов çĕнĕ идеал хуçине – хăйĕн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен çынна – кăтартнă. Эппин, вăл хăйĕн ăнланăвне драмăна та варса хума мехел çитернĕ.

Умĕн каланисем «Ялта» драмăна унăн авторĕ 1920 çулта çырма пултарнă тесе каланине çирĕплетеççĕ. Ф.Павлов халăх театрĕсемпе ĕçлемелли тĕрлĕ должноçсенче 1919 çулхи юпа уйăхĕнчен пуçласа 1920 çулхи кĕркуннеччен вăй хурать. Чăваш автономи облаçĕн халăх вĕрентӳ пайĕн музыка секцине ертсе пыма пуçласан вăл пуçĕпех хор, музыка вĕрентĕвĕпе тăрмашать.

Çапла вара, «Ялта» драмăна çырнă вăхăта 1919 çулхи юпа уйăхĕнчен пуçласа 1920 çулхи çурла уйăхĕчченхи тапхăрта шырамалла.

1920 çулхи пуш уйăхĕн 16-мĕшĕнче çырнă пĕр отчетĕнче Ф.Павлов хăйĕн пĕр драма хайлавĕ («Судра») кăна пуррине палăртнă. Эппин, вăл «Ялтана» çав çулхи çуркунне е çулла çырса пĕтернĕ. Çакăн пек ăнлантарни Ф.Павловăн ун чухнехи шухăшĕсемпе килĕшсе тăрать.

Хайлаври тĕп конфликт. Ф.Павлов хăй палăртнă çĕнĕ идеала (чурăслăха, кăнттамлăха хирĕçлескере) тĕпе хурса Елюк сăнарне калăплать. Çавна пулах çыравçă малтан фольклор сюжечĕн йĕрĕпе аталанакан ĕç-пуçа палт! тепĕр май çавăрса лартать.

Çав тĕнчипе анлă сарăлнă сюжетăн тытăмĕ яланах пĕр. Туй хыççăн упăшки арăмĕнчен уйрăлса инçете (вăрçа е çул çӳреве) каять, чылай хушă килне таврăнаймасть. Çав вăхăтра çамрăк арăма тепĕр арçын çавăрма хăтланать, упăшки вилни çинчен суя хыпар сарать. Çамрăк арăма тепĕр хут качча кайма пурте хистеççĕ. Хура-шур тӳснĕ упăшки килне таврăнать те арăмĕн туйне çитсе кĕрет. Лешĕ ăна палласа илет, пĕр-пĕрне юратакансем каллех пĕрлешеççĕ. Арăма улталаса-суйса çавăрма хăтланнă арçынна тупăннă упăшки тивĕçлипе тавăрать.

«Ялта» сюжечĕ малтан фольклорти пекех аталанса пырать. Вĕçĕнче кăна таврăннă упăшки ултавçă арçынна (Çтаппана) мар, хăйĕн арăмне вĕлерет. Ку вăл драмăна хайлаканĕн кăмăлĕ. Мĕн каласшăн пулнă-ши çыравçă Елюка вĕлерттерсе?

Текста аса илер-ха. Ванюк туя пырса кĕрсенех Елюкран тăрăхласа кулма пуçлать. «Мĕн чухлĕ тӳлерĕн ку арăмшăн?» – тесе ыйтать вăл Çтаппанран.

Кунта Ванюк та, Çтаппан та Елюка сутмалли япала вырăнне хуни, ăна туянма-сутма пултарни сисĕнет. Ванюк çине-çинех «эпĕ», «ман», «манăн» тесе хăйне кăна итлет, Елюка «акă çакă» тесе çӳлтен пăхса калаçать.

Нумай хушă чĕнмесĕр тăнă хыççăн (ку вăл ăшра çунса вĕренине кăтартакан паллă) Елюк хăйĕн телейне Ванюк патне таврăнсан та тупаймассине пĕлтерет. «Суд тăвас тетĕн пулсан суд ту – санăн ирĕк», – тет вăл. Кунта Елюк хăй Çтаппана качча кайма килĕшсе тунă йăнăша йышăнни те, Ванюка хăйне айăплама ирĕк пани те сисĕнет. Çапах та упăшки ытамне кĕрсе ӳкмест Елюк. Вăл халĕ тин унпа малтанхи пек пурăнаймасса пĕлет (Ванюк вĕри юнлă та кăра çилĕллĕ, вăл арăмне ĕмĕрĕпех ӳпкелесе тата кӳлешсе пурăнасси иккĕлентермест). Çавăнпа та хăйĕн ыйтăвĕсемпе çыпăçакан Ванюка *вилнĕ пек пулса* (автор çак сăмахсене çырса Елюк калани суя, çав хушăрах унăн çапла пулма тивнине систерет) Елюк акă мĕн хуравлать: «Юратса...»

Вăл Çтаппана юратса мар, хĕрхенсе качча кайни паллă. Ванюк вара çав сăмахсене чăна хурать. Ку вăл ăна чĕререн пенипех танлашать. Хирĕç тавăрас тĕллевпе Ванюк револьвер кăларать. Малтан Çтаппана «авлантарасшăнччĕ» (персе вĕлерессине метафорăласа çапла калать вăл) урса кайнă хăна. Кайран Елюка çийĕнчи пĕркенчĕкне пăрахтарасшăн пулать.

Елюк ывăнса çитнĕ, Ванюка чарăнма ыйтать. Лешĕ хăйĕннех перет, илтмест те, туймасть те вăл арăмне. Уншăн пулсан хăй каланине çийĕнчех итлени пултăр. Анчах та Елюк чура мар-çке, вăл хăйне вăйпа хистенине хирĕç. Тен, Ванюк урăхларах (ăнланарах) хăтланнă пулсан, Çтаппан суйи (Ванюк вилнĕ тесе суя хут çырни) çиеле тухнă пулсан венчет çĕррине хывса та пемен пулĕччĕ Елюк (вăл ăна унччен пăрахман-çке!).

Ванюк хăйĕн арăмне вăйпа каялла тавăрасшăн, сăнчăрти йытта сĕтĕрнĕ пек... Йыттăн ирĕклĕхне сăнчăр, арăмăн ирĕклĕхне венчет çĕрри чарать. Ирĕклĕх вăл качча кайсан та юлмаллах. Çын çынпа (арăм-и вăл е упăшка) пĕр тан пулмалла, пĕр-пĕрне хисеплемелле, чунлă пулмалла, чурăсланмалла мар –

акă мĕн кĕтет пирĕн Елюк. Çав идеала Çтаппан мар, Ванюк та ăнланмасть. Вĕсем арăмсене япала пек кураççĕ.

Çапла вара, драмăра икĕ тĕнче туйăм, икĕ кăмăл-сипет, несĕп хирĕçĕвĕ варăннă. Пĕринче мулпа чун чуралăхĕ, чунсăрлăхпа чурăслăх, тепĕр енче юрату тасалăхĕпе пĕр танлăх, ирĕклĕх тăраççĕ. Ахальтен мар Елюк вилнине автор çапла ремаркăпа çырса кăтартнă: «Елюк аллисемпе вĕçнĕ пек пулса илет те кайса ӳкет». Çтаппан та ăна ангелпа танлаштарнăччĕ. Çапла çырса Ф.Павлов Елюкăн сăваплăхне кăтартасшăн пулнă. Вăл çыравçăн çĕнĕ идеалĕ.

Хайлав ячĕ. 1920 çулта хайланă «Аслă уя тухрăмăр ула йытăпа...» сăвăра Ф.Павлов ялта çитĕннĕ лирика харкамçине сăнарланă. Вăл «ӳснĕ чухнех чура» пулса çитĕннĕ иккен, çамрăк кунĕсене «ялта путса пурăнса» ирттернĕ. Хайхи «Ялта» тени «кивĕ пурнăç тыткăнĕнче» тенипе пĕрешкелли курăнса каять. Ахальтен мар Елюк хулана кайма ĕмĕтленетчĕ, унта вăл çынсен çăлăнăçне куратчĕ. Çĕнĕ идеал яла хуларан çитнине те систерет драма ячĕ.

Сăнарсен тытăмĕ. Драмăри пĕр сăнар та ытлашши мар. «Халăх масси» кунта туйра тата вăйăра курăнать. Йăскарпа Пăрчкан – укçашăн çунакансем. Муççа – ырă, çав хушăрах эрех енне туртăнакан ватă. Çтаппан – ял пуянĕ тата куштанĕ. Вăл Ванюк пек чухăнсене картмасть. Çак сăнарсем пурте Елюк сăваплăхне тата тасалăхне кăтартма кирлĕ.

Çĕнĕ идеал çăлкуçĕ. Ф.Павловăн çынсем хушшинчи çĕнĕ идеалĕ мĕне пула çуралнă-ши?

Революцисен вăхăтĕнче тата вĕсем хыççăн наци интеллигенцийĕ тĕрлĕ ирĕклĕхсем (нацин, социаллă сийсен, харкамăн) пирки хăюллăн каласа пуçланă. Хăшĕ-пĕри çав ирĕклĕхсене пĕр-пĕринпе хирĕçлетме кăмăллана. Ф.Павлов, «халăхăн йăлапа психологи çĕрне» (быто-психологическая почва народа) аван пĕлекенскер, ирĕклĕхĕн тĕрлĕ формисене шырама, вĕсене драма хайлавĕсенче сăнлама ăнтăлать. Пĕр ирĕклĕх тепринпе çураçăнма, килĕшĕнме пултарать иккен.

Çыравçă ырăпа усала икĕ тĕспе кăна курмасть, усаллинче те ырри пуррине астутарсах тăрать (Çтаппан, Йăскар, Пăрчкан сăнарĕсем). Ун шучĕпе, усал çын чи малтан хăйĕнпе мухтанать. Сăнран хитре мар çын та ăшĕпе, кăмăлĕпе хитре пулма пултарать. «Çын сăпатне пур енлĕн аталантарнă чухне çынра нимĕнле иккĕмĕшле енсем те çукне астуса тăмалла, – тенĕ Ф.Павлов. – Çын вăл – чунпа несĕп йĕркелĕвĕн пĕр пĕтĕмĕшле комплексĕ... Вăл идейăсене ăспа кăна мар, чĕрепе те йышăнма тивĕç».

Елюк сăнарĕн прототипне чи малтан Ф.Павловра хăйĕнче курмалла. Капитолина качча кайсан вăл Чĕмпĕр шкулĕнчи прачка хĕрне Лидия Николаевнăна васкавлăн качча илсе ярать. Кайран хăй тĕрĕс мар тунине, юратусăр кил-йыш чăмăртама май çуккине ăнланса илет çыравçă. Капитолина та упăшкин ултавне тӳссе пурăнать. Пĕррехинче вăл ун патне: «Манăн санран лайăхрах хĕрарăм пур», – тесе çырса пĕлтерет, тăватă ачапа пăрахса хăварать.

Ф.Павловăн хăйĕн çемйи те ăнăçман. Çывăх юлташĕсене вăл хăй телейсĕр пулни çинчен пĕлтерни паллă. Çав прачка хĕрне малтан рабфакран, кайран Хусанти пĕр институтран вĕрентсе кăларать. Кайран пархатарсăр арăмĕ Ф.Павлова пăрахса пĕр доцентпа кăнтăра тухса тарать. Юратнă ывăлĕ майра туяннишĕн амăшĕ те пăшăрханнă, юлташĕсем те ырламан. Телейсĕр мăшăрсен ачи-пăчи те пулман. Ф.Павлов Капитолинăран хăйĕн пĕр ачине усрава пама тархасласа ыйтнă. Малтанхи юратăвне хисепе хурса çапла хăтланнă ĕнтĕ çыравçă.

Çакă тата ытти сăлтавсем çыравçă Елюк сăнарне хăйне тата Капитолина Никитичнăна пăхса калăпланă тесе калама май параççĕ.

Шупашкар тапхăрĕ. 1920 çулта Ф.Павлов наци стихийин идейипе кăсăкланма пуçлать. Чăвашăн илем курăмне вăл ытти тĕрĕк халăхĕсеннипе танлаштарса пăхать. Тĕпчевçĕ чăвашсен кашкăра хисеплес йăли хунсенченех (тухăçран анăçалла куçса килнĕ чăвашсен аслашшĕсенченех) пуçланса кайнине пĕлет. Ахальтен мар вăл «Хитре» статйинче (1923) арçынсене кашкăрпа танлаштарни çинчен тĕплĕн çырса кăтартать.

«Чăваш йăхĕсем тĕп авал Китай çумĕнче пурăннă (хунсем), – тесе çырать Ф.Павлов «Чăваш музыки» ĕçĕнче (1922). – Çавăн чухнерен чăвашсем «Китай гаммине» манман, хальхи вăхăта çитиччен пăхса усранă. Çавăнпа «Китай гамми» авалхи кĕвĕ-юрăсенче ытларах тĕл пулать».

Чăвашсен ватă аслашшĕсем Европăна куçсан вĕсен культури улшăнса пынине те палăртать Ф. Павлов. «Халăхăн экономики улшăнсан, культура ӳсме пуçласан, ăс пурнăçĕ ăслăланма пуçласан искусство та, музыка та вырăнтан тапранать», – тесе çырать ӳнер тĕпчевçи. Ун шухăшĕпе, чăваш музыки хăвăрттăн аталанма тивĕç. «Юрăра чĕрĕ энерги (чĕм) пур, вилĕмсĕр вăй пур. Юрăсен чуна савакан сăмахĕсене каласа-юрласа пынă чух чăваш чĕлхи нихçан та вилессĕн, çухалассăн туйăнмасть», – хавхаланса çырать паллă музыкçă. Вăл чăваш юрри шкула кĕрессе шанса çапла ĕмĕтленет: «Шкулсенче чăвашла юрлаттарма пуçласан çуралнă музыкăн ĕмĕрĕ пуçланĕччĕ. Вара пирĕн те музыкçăсем, юрлакансем, композиторсем, музыкăра ĕçлекенсем пулĕччĕç».

Ф.Павлов «Чăваш тĕп театрĕ» (1922), «Чăваш кĕсли», «Çырмари юрă», «Чарăннă сасă» (пурне те 1928 çулта çырнă) ятлă статьясем пичетленĕ, вĕсенче чăваш юррин историне пăхса тухнă, театр пирки шухăшланă. «Искусство малалла кайтăр, вăйланса пытăр тесен ăна театр енне туртас пулать, театр ăшĕнче ыттисемпе пĕр çемье тăвас пулать, вара тин чăваш искусстви малалла кайĕ, – тесе çырнă Ф.Павлов театр пĕлтерĕшне палăртса. – Кунтан шухăшласан та чăваш халăхне театр пит те кирлĕ».

Çапла вара, юлашки çулсенче çыравçă ытларах музыкăра ĕçленĕ пулсан та театр çинчен шухăшлама пăрахман. 1920 çулта унăн «Ялта» драми сцена çине тухать, чăваш куравçисене паян кунччен савăнтарса йĕртет.

Чăваш драматургийĕ 1917 çулхи пăлхавăрсем хыççăн наци театрĕпе таччăн çыхăнса аталанма пуçлать. Малтанхи драма хайлавĕсем пурте пекех вĕсене çырнă вăхăтпа çыхăннă, çавăнпа та куравçăсемшĕн çывăх та ăнланмалла пулнă. М.Акимов-Аруй çĕнĕ хирĕçӳсемпе сăнарсем палăртать,

Н.Ефремов усал çыннăн социаллă тата психологилле тупсăмне шырать. Ку вăхăтра çырнă драмăсене К.Ивановăн «Нарспийĕ» питĕ пысăк витĕм кӳнине палăртмалла. Г.Тал-Мăрса хивре фабула йĕркелеме те, çав хушăрах историлле трагеди хайлама та маттур ватă асаттемĕрсен – Атăлçи пăлхарсен – пурнăçне ĕнентерӳллĕн ӳкерсе кăтартакан чи малтанхи çыравçă пулнă.

Чăваш драматурги аталанăвĕн тепĕр утăмĕ пĕтĕмпех Ф.Павлов пултарулăхĕпе çыхăннă. Вăл хăйĕн камичĕпе драминче чи малтан ирĕклĕх ыйтăвĕсене хускатать. «Судра» камитри персонажсем ирĕклĕ пулса мăшăрлă пурнăçпа (Турри çапла çырнă-çке!) савнă çынпа пурăнасшăн. «Ялтари» тĕп персонаж (Елюк) вăрçă вăхăтĕнчи чăваш ялĕсенче анлă сарăлнă чун чурăслăхĕпе эгоизма хирĕç тăрать. Вăл та Нарспи пекех кайăк пулса инçетелле вĕçсе каясшăн – чăн пурнăç вĕçертмест сăваплă чуна. Елюкшăн кайранхи Ванюк Çтаппанран ытлашши уйрăлсах та тăмасть. Унăн куçĕ Нарспинни пек суккăрланман хыпса çунтаракан юратупа. Уйрăм çын ирĕклĕхĕ унăн туйăмĕнчен çӳлерех тăрать тесе ĕнентерет Ф.Павлов. Ку вăл XX ĕмĕрти чăваш литературинчи çĕнĕ парадигма, çын сăпачĕн концепцийĕ пулнă.

Усă курмалли литература

Родионов В.Г., Кириллов К.Д. К тайнам народной стихии // Федор Павлов. Собрание сочинений. – Чебоксары. – С. 8–34.

1917–1922 ÇУЛСЕНЧИ ПОЭЗИ

1917 çулхи май уйăхĕнче «Хыпар» хаçат çĕнĕрен тухма пуçлать. Çакă чăваш çыннисене хавхалантарса ярать:

«Хыпар» сасне илтсенех Куçĕ-пуçĕ çуталса,
Пирĕн патра мĕскĕнсем Хĕвел пек йăлтăртатса Вĕçсĕр киле пуçларĕç. Хавасланса тăраççĕ! –
Хăйсем савăнса кайнă,

тесе сăвăланă ун чухне çĕнĕ хаçат редакторĕ Алексей Прокопьев (Милли).

Алексей Прокопьевич Милли (1894–1942) чăваш поэзине малалла аталантарас тĕлĕшпе сахал мар ĕçленĕ. Хăй редакцилекен хаçатăн иккĕмĕш номерĕнчех вăл «Чăвашсенĕн марсельезĕ» ятлă сăвă пичетлет. «Марсельеза» сăмах французсен наци гимнне (ăна 1792 çулхи революци вăхăтĕнче хывнă пулнă) пĕлтерет. Кунта та вăл «Чăваш наци гимнĕ» пĕлтерĕшлĕ. Сăвва автор çапла йĕркесемпе вĕçлет:

Мĕнпур чăваш халăхĕшĕн
Мĕнпур чĕререн кăшкăрса
Эп те çĕнĕ ирĕклĕхшĕн
Чăваш чĕлхине «ур-ра!» теп.

Çут çанталăк ӳкерчĕкĕсем тунă чух та сăвăç çĕнĕ пурнăç, çĕнĕ вăхăт çинчен каласма кăмăллать. Тĕслĕхшĕн унăн «Çур çĕр иртсен» сăввине илсе пăхар-ха. Малтан вăл тĕлĕнтермĕш пейзаж ӳкерет:

Çу уйăхĕ каçсенче Кашламасăр лараççĕ!
Çу пек çемçе, ачаш каç, Ăвăс çулçисем анчах
Ăшă, тутлă, уç сывлăш Каçхи тĕнче шăплăхне,
Хумханмасăр тĕлĕрет! Тĕлĕрекен сывлăшне
Çулçисене чух йăтса Кăшт вăрантарас тесе
Лăпсăр йăмра йывăçсем Шĕлтĕртетсе, сикейсе,
Тĕлĕнсе шухăшласа Чĕлтĕртетсе лараççĕ!..

Ку вăхăтпа киленекенсем те пур иккен:

Хура вăрман хĕрринчен Юратакан çамрăксен
Лӳ-лӳ тапхăр çил анать, Чечен, ачаш питсене
Тутлă шăршă сарăлать!.. Çемçен кăштăр шăлайрĕ!
Çил те кăштах вĕрейрĕ,

Хайхи тутă сывлăш кăштах сĕртĕннипе юратуллă çамрăксен чунĕсем çемçелеççĕ, юнĕсем вĕриленеççĕ. Анчах та:

Лăпсăр йăмра кашларĕ: Тухассине систерчĕ,
Хăй шухăшлă лăпсăрне Юратакан чунсене

Ерипе кашлаттарса Киле кайма пĕлтерчĕ!

Час çут хĕвел çуталса

Кĕçех «Çунаттине хыт çапса, Шарт-шарт! туса харăссăн Ял автаньсем авăтрĕç; Тĕлĕрекен сывлăш та Вăранмашкăн тытăнчĕ!» Юлашкинчен хĕвел тухăç хĕрелет, хĕвел пайăркисем пĕлĕт çине ӳкеççĕ. Çĕнĕ кун çитрĕ. Поэт сăвва çапла йĕркесемпе вĕçлет:

Çĕнĕ пурнăç хускалчĕ,
Ун вĕçĕ те курăнмасть,
Шухăшласан – ăс çитмест!

Пейзаж лирики юрату лирикине çаврăнса ӳкет, юлашкинчен философи сĕмĕ вăйланать. «Çĕнĕ кун – çĕнĕ пурнăç – революци – çын пуçĕ çавăрса çитерейми пулăм» ăнлавсем пĕр çыхха пухăнаççĕ, вулавça тарăн шухăша путараççĕ.

Чăваш поэзийĕнче Турхан Яккăвĕпе Хĕветĕрĕ никĕсленĕ çырулла лирикăна А.Милли малалла аталантарать. Çакă сăвăç пейзаж лирикине философиллĕ шухăшсем кĕртнинче те лайăх курăнать. Çав хушăрах вăл публицистика енне сулăннă гражданла лирикăна та пуянлатать («Тантăша», «Некролог», «Чăвашсен марсельесĕ»), вĕсенче тăван халăх, чĕлхе ирĕклĕхĕ çинчен чунне ыраттарса çырать.

Чăваш поэзийĕнче **Мĕтри Юманăн** (Дмитрий Петрович Петровăн, 1885–1939) пайти те пур. Малтанхи тапхăрта вăл поэзире палăрать, прозăллă сăвăсем («Шевле вылять», «Нарспи»), мифологилле повесть («Чăваш халăх ывăлĕ») хайлать.

«Шевле вылять» – поэзи ретне кĕрекен хайлав. Çакă унти йĕркесене юпаласа тухни хыççăн аван курăнать. Вĕсене пурне те 7–8 сыпăклă силлабикăна тĕпе хурса хывнă, кашни йĕрки икĕ пая пайланать: 4 Ă 3 е 4 Ă 4. Сайра хутра йĕркен вăл е ку пайĕнче пиллĕкмĕш сыпăк тĕл пулать. Çакă вара халăх сăввин çеммине такăнтарсах каймасть.

«Шевле вылять» хайлавăн шалти тытăмне тĕпченĕ хыççăн çапла калама май пур: авторĕ ăна малтанласа сăвăласа çырнă, кайран çеç, йĕркисене

прозăлатса, вырăнăн-вырăнăн çĕнĕ сăмахсем е тĕрлĕ татăксем хушнă. Ытларах сăвăри кĕске формăллă сăмахсене туллин çырнă: *эп – эпĕ, пуç – пуçăм, мăкăртатаç – мăкăртатаççĕ* т. ыт. те. Пĕр вырăнта малтанхи «ӳсет, вилет – пĕртте пĕтмест» вырăнне «ӳсет-пиенет, вилет-çуралать – пĕртте пĕтмест» тесе улăштарнă. Сăвăланман икĕ вырăн пур. Пĕри Улăп паттăр çинчен каланă хыççăнах тĕл пулать: «Анчах çапла-ши ман тантăшсем? Ах, тăванăм, ан асăн, чунна-пуçна ан йӳнеçтер, хальхи этемсене кăмăл туса: чирлĕ, халсăр хурт-кăпшанкă, начар ăслă, кайăк чĕреллĕ хăравçă никексем – хальхи çынсем, çăкăр мурĕсем...» Тепри Тавăш хуçа чăваша хӳтĕлесе паттăррăн çĕре кĕни çинчен калакан халап хыçĕнчен тĕл пулать: «Çак вырăнта маттур хуçа шăммисем, унпа пĕрле унăн савнă ут юлашкисем... Çичĕ çĕр çул иртрĕ, тăхăр ялпа тăхăр çул урлă лаша пусса, чӳк туса Тавăш хуçана хисеп тăваççĕ чăвашсем». «Шевле вылять» хайлав 1918 çулхи майăн 5-мĕшĕнче «Канаш» хаçатра (19 №) пичетленет. Ăна вăл çав тапхăртах прозăласа хайланă пулас. Çапла çырма ун чухнехи лару-тăру хистенĕ-тĕр.

Хайлаври лирика харкамçине тĕрĕс ăнланас тесен чи малтан текст литературăн хăш жанрне кĕнине палăртмалла. «Шевле вылять» сăвă çеммиллĕ, çав хушăрах прозăлатса пичетленĕ хайлав монологран йĕркеленнĕ поэмăна çывăх. Унта мифологилĕх вăйлине шута илсен ăна мифологилле поэма жанрĕпе çырнă теме май пур (хăшĕ-пĕри *несер* тет). Çак жанра чăваш литературине кĕртекенĕ Г.Филиппов пулнă. И.Яковлев çинчен çырнă «Чăваш халăх ывăлĕ» мифологилле повеçĕнче те вăл мифла сăнарсемпе тата шу-хăшлавпа тухăçлă усă курнă. Çак меле пула çыравçă аслă вĕрентекенĕмĕрĕн пĕлтерĕшне философи тӳпинчен пăхса хаклать. Ку хайлава эпир проза пайĕнче пăхса тухăпăр.

Поэмăра çапларах йĕркесем пур: «Ăçта кайнă-ши авалхи паттăрсен самани? Ăçта кайнă-ши Тăхăрьял чӳксем чӳклесе асăнакан Чапăр хуçи? Ăçта кайнă-ши Таяпа ялĕ пуççапса пурăнакан Тауш хуçа самани? Чăваш ирĕкне, чăваш çеçен хирĕсене йĕри-тавра тăшман пусса илнĕ».

Мĕтри Юман хăйĕн «Шевле вылять» ятлă хайлавĕнче çак шухăшсенех калать. Тавăш хуçа вăхăчĕ – халăхăмăра ирĕклĕхшĕн кĕрешме йыхăракан символ. Вăл кунта мифла халапсенчен йĕркеленнĕ. Мифа чăн пурнăçпа çыхăнтарни, пурнăçăн чуна ыраттаракан ыйтăвĕсене мифла шухăшлав урлă хускатни – литературăри паллă пулăм. «Шевле вылять» хайлаври халăх ячĕсем те истори халапĕсемпе çураçуллă, вĕсем пурте çак текстсенче тĕл пулаççĕ. 30-мĕш çулсенчи тӳнтер социологсем автора кӳршĕллĕ халăхсем çинчен япăх калана тесе айăплана. Сăмахĕ хайлавра пусмăрçăсем, вăрçăпа çĕмĕрсе килнисем çинчен пырать. Унти «тăшман» пĕтĕм вырăс халăхĕ мар, çав халăхран тухнă улпут-тиек. Çакă текст контекстĕнче лайăх курăнать.

«Шевле вылять» хайлаври харкамçă – аталануллă сăнар. Çеçен хирте пĕр-пĕччен пыраканскер, çут çанталăкри кашни чĕрĕ чун хăйĕн çулĕпе çӳрени, хăйĕн килĕ-çурчĕпе пурăнни çинчен шухăшлать вăл. Кунта лирика харкамçи хăй пурнăçĕн çулне, идеалне шырани курăнать. Ахальтен мар вăрăм çавра вĕçĕнче вăл çапла шухăшлать:

Этем çулĕ – çăлтăр çулĕ,
Этем çулĕ – Кайăк хур Çулĕ:
Вĕçĕ те çук, хĕрри те çук,
Йĕрĕ те çук, палли те çук.

Çак философиллĕ пĕтĕмлетӳ хыççăн герой мифла Аша-патман сăнарне аса илет. Çав асамçă çинчен калани «Чăваш халăх ывăлĕнче» те пур. Вăл Азирен аташса килсен çич ют аллине тыткăна лекнĕ чăваш халăхĕ хутне кĕрекенĕ имĕш. «Шевле вылять» хайлаври лирика харкамçи вара хăйĕн «мăнтарăн пуçĕн сиенне» çав Ашапатман сирсе яма кăмăл туманнишĕн пăшăрханать. Çав хушăрах вăл хăй улакан кашкăртан çӳлерех тăни, Улăп йăхĕнчен пулни çинчен пĕлтерет.

Лирика харкамçи маларах хăйне тискер кайăксенчен те каярах лартатчĕ пулсан, халĕ вара вĕсенчен çӳлерех тăни çинчен калать: вăл историллĕ

халăхăн пĕр пĕрчи. Анчах та çав халăхăн авалхи çыннисем – улăпсем – паттăр пулнă: вĕсем кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ, чир-чĕр, асап таврашне пĕлмен.

Малалла автор лирика харкамçине хальхи вăхăт çинчен шухăшлаттарать, хальхи чăвашсем чирлĕ, начар ăслă, хăравçă тесе калаттарать. Ку вырăна писатель кайран прозăлатнă тенĕччĕ. Çапла туса вăл чăвашсене пурнăçа «вак-тĕвек шухăшпа-чĕрепе» ирттернишĕн хытах ӳпкелет, пуласлăхри телейлĕ куншăн пĕр пулса кĕрешме йыхăрать. Çак чĕнӳ халăхăмăршăн уйрăмах революцин малтанхи çулĕсенче (1917–1918) малти вырăнта пулнă. Шăп çав тапхăрта чăваш чăмăртанма, çавна май наци туйăмĕ вăйланма пуçланă тенĕччĕ маларах. Çав процеса Раççейре классен хирĕçӳлĕхĕ хĕрсе пыни питех те кăткăслатнă. Пусмăрта пулнă халăх чăмăртанса çитичченех арканма пуçлани чăвашсен мал шухăшлă чылай çыннишĕн трагедин курăннă.

Çак хирĕçӳлĕх «Шевле вылять» поэмăри лирика харкамçин шăпинче лайăх палăрать. Вăл шăпа трагедиллĕ. Автор харкамçăн тĕп тĕллевĕ пуррине, ун патне çитмелли çула вăл епле йывăррăн шыранине ĕненмелле кăтартать.

Герой куçĕ умĕнчи шевле вăл – халăх телейĕ, ирĕклĕ пурнăçĕ. Епле çитмелле-ши ун патне? Умри çула хура пĕлĕт е асамат кĕперĕ хупласси те, вĕре çĕлен чуна илесси те пулĕ. Çак асамлă тĕнчери мифла герой çутă шевле еннелле пĕр кун та, пĕр çул та мар, ĕмĕр-ĕмĕр утĕ:

Мана чĕнет çут шевле,
/мĕр утап малалла,
Хĕвел тухăç еннелле...

Апла пулсассăн вăхăчĕ те кунта мифологи пĕлтерĕшлĕ. Вăл тĕнче пуçламăшне ыранлăхпа ытамлать. Герой конкретлă вăхăтри çын сăнарĕ мар, вăл этемлĕх историйĕнчи пĕтĕмĕшле Çын символĕ. Çав Çын çулĕ вара – аслă цивилизаци тата прогресс çулĕ. Çав çултан пĕр пăрăнмасăр пыма питех те йывăр. Çын каялла чакмасть, унăн чунĕ шевле вылявĕ еннех ăнтăлать. Умра –

этемлĕх телейĕ. Малтан тунсăхлăрах илтĕннĕ ĕнерӳ поэма вĕçĕнче романти-кăлла ăнтăлупа ылмашăнать, оптимизм туйăмĕ çуратать.

«Шевле вылять» – кăткăс та нумай структурăллă хайлав. Унăн илемлĕ идейи те темиçе идейăран чăмăртанать, шухăш конкретлă халăх шăпинчен философиллĕ пĕтĕмлетӳ патне туртăнать. Çак мифологилле поэма – 1917–1922 çулсенчи чăваш поэзийĕн чи лайăх тĕслĕхĕсенчен пĕри.

Мĕтри Юман «Нарспи» поэмăна чунтан юратни, ăна ăша хывни унăн «Нарспи» ятлă прозăлла çырнă мифологилле сăввинче те витĕр курăнать. Çак хайлава поэт «Шевле вылять» поэтикине малалла аталантарса çырнă, мифла сăнарĕсем те çавсемех кунта: кашкăр, пӳлĕх, арçури, кăвак хуппи, шевле, вĕре çĕлен т. ыт. те.

Çын кăмăлĕ, туйăмĕ гуманизмпа кăткăс çыхăнура пулни сăвă геройне хытах шухăшлаттарать: «Эх, Нарспи, Нарспи! Сетнер чунне илсе кайни сана çитмен пулĕ халь. Каччăпа хĕр чĕрисене вут-кăвар хĕрӳпе çунтармашкăн чарăнма санран пулмасть пуль. Савман мăшăр пуçĕ çине алă çĕклесе хăвăн пуçна ху çирĕн, усал туса, вилĕм илсе çын кăмăлне парăнмарăн. Ху кăмăлă, ху ирĕкĕ саншăн вилĕмрен те малта пулчĕ. Çак хăватшăн чăваш сăвăçи санăн ятна ĕмĕр чапа хăварчĕ...»

Хайлавăн тĕп идейи çак илсе кăтартнă йĕркесенчен тухса тăрать: çын туйăмĕ, унăн ирĕкĕ пурнăçран та хаклăрах. Çав хушăрах вăл çынлăхпа та хирĕçĕве кĕме пултарать. Вĕсене çураçтарма питех те йывăр. Çакăнта курăнать сăвăça пурнăçри тĕп трагеди.

Мĕтри Юман ăста поэт çеç мар, пултаруллă куçаруçă та пулнă. 30-мĕш çулсенче вăл вилĕмсĕр «Калевалăпа» «Шах-намэ» эпоссене чăвашла куçарнă, çавна май чăваш вулавçине тĕнче классикипе паллаштарнă.

Мĕтри Юман поэтăн пултарулăхĕ нумай енлĕ. Вăл литературăмăр историйĕнче хăйĕн вырăнне йышăнма тивĕç.

Иван Евграфович Ахах (1898–1920) чылай хушă А.Миллипе пĕрле ĕçленĕ, хаçатпа публицистика ĕçне унран вĕренсе пынă. 1919 çул

пуçламăшĕнче «Чухăнсен сасси» хаçат редакцийĕ Хусантан /пхӳ хулине куçать, редактора И. Ахаха лартаççĕ. Куçса çӳренĕ чухне поэт йывăр чирленĕ.

Çавăн чухне вăл чылай вăхăт сивĕ вакунта выртнă, ăна пăхакан та пулман. Çав самантсенче поэтăн ӳпкелешӳ кĕввиллĕ сăвă йĕркисем çырăннă. Вăрçă, выçлăх вăхăчĕ уйрăм çынна хуçнă, унăн харкамлăхне хуратнă, сăпатне сăнсăрлатнă. Вăхăта сейсмограф пек туйнă сăвăç хăйĕн идеалĕ чăн пурнăçран уйрăлса пынине чунĕпе сиснĕ. Ăна хăйне кирлĕ пулма пăрахнă япала вырăнне хуни хытах кӳрентернĕ. 1919 çулхи июль уйăхĕнче чирлĕ сăвăç-хаçатça тăван килне яраççĕ. Тепĕр çичĕ уйăхран вăл ӳпке чирне çĕнтереймесĕр çĕре кĕрет. Çак çухату пирки пĕлсен Çеçпĕл Мишши хӳхлев сăвви шăрçалать. Тĕрĕссипе, Çеçпĕле те Ахах шăпиех кĕтнĕ. Чăваш лирикин эстафетине унран илсе юлнăскер, Çеçпĕл хăйĕнчен темиçе уйăх кăна аслă Ахах ĕмĕчĕсене тултарать, çĕнĕ лирика çуртне тăрласа çитерет.

Чăваш лиро-эпикинче 1917–1922 çулсенче **Илья Ефимович Тăхти** (1889–1938) тухăçлă ĕçлет. Кунта вăл чи малтан Н.Шелепин истори халапĕсене тĕпе хурса хайланă сăвви-поэмипе хавхаланни сисĕнет. 1912–1913 çулсенчех сăвăç Етĕрне уесĕнче пĕр халап çырса илнĕ. Унта чăваш хĕрне Атăл урлă вăрласа кайни, лешĕ шыва сиксе вилни çинчен каланă. «Киле тавăрăнсан эпĕ «Селиме» ятлă историлле повесть çыртăм, – аса илнĕ каярах поэт. – «Селимере» вырăссем Хусана илнĕ вăхăтра Курбский князь вун çичĕ çулхи калама çук чипер Селимене Мускава вăрласа кайнине çырса кăтартрăм».

Вĕçленмен поэма патне И.Тăхти 1918 çулта тепĕр хут таврăнать, ăна «Канаш» хаçата ярса парать. «Эпĕ «Элихун (Селиме)» поэма çыртăм. Материалăн хура вариантне хатĕрлесе çитертĕм, – пĕлтерет поэт хаçатçăсене. – Май килет пулсан эсир ăна çаптарса пырăр».

Хайлава сăвăç аваллăх халапĕсене тĕпе хурса çырнă, çапах та историре чăн пулнине тĕрĕс ӳкерес туртăм та пулнă çыравçăн. Калу Шăмалăх ялне

сăнланинчен пуçланать. Çав ялта Туксар ятлă чăваш пуянĕ пурăннă иккен. Унăн сарă хитре хĕрĕ çитĕннĕ:

Селимене куракан
Унăн чипер сăнĕнчен
Пăхнăçемĕн тĕлĕннĕ.
Пĕвĕ-сийĕ, кĕлетки,
Ытарма çук сăн-пуçĕ.

Çак хитре хĕре Хусана илме килнĕ чухне Туксар патĕнче чарăннă Курбский князь юратса пăрахать. Акă мĕн калать вăл:

– Пуçăм çамрăк пулин те Тем чул хĕр те савнă эп.
Лях çĕрне те çитнĕ эп, Çакă чăваш хĕр пекки
Нимĕçпе те паллашнă; Хам ĕмĕрте курманах...

Вăйăран кĕрсе çывăрнă Селиме тĕлĕк курать: ăна çавра çил çӳле çĕклесе тинĕсе пăрахрĕ пек. Килтисем çакна пĕлсен чăваш йăлипе чӳк тăваççĕ, çамрăк хĕре упрама ыйтаççĕ.

Малалла автор Хусан таврашĕнче пынă вăрçа сăнлать. Тутарсем вырăссене Хусантан хуса кăларма тытăнсан Ар уйĕнче пурăнакан чăвашсем пулăшăва çитеççĕ:

Çитнĕ-çитмен Элихун
Хăйĕн хура лашине
Тутар паттăр çинелле
Чĕвентерчĕ тигрла.

Элихун тутар паттăрĕн Япанчан пуçне кассан тăшмансем тарса пĕтеççĕ. Тутар патши Утямăш башня çинче купăс калать те акăш пулса сĕтлĕ кӳлле вĕçсе каять.

«Çакни» сыпăкра Элихун ашшĕне Сатура хурăн çине çакса хуни çинчен каланă. Сăлтавне автор вырăссем улталанипе ăнлантарать. Ар уйĕнче пурăнакан Сатур ятлă çар пуçне те çав сăлтавпах çакнă иккен. Унăн ывăлĕ Элихун çавна пула тарса çӳрет.

Элихун Мускава илсе кайнă Селимене хăтарма шухăшлать. Этрел ятлă ватăпа вĕсем вырăс хули патнех çитеççĕ. Ун чухне ватти шухăша путса çапла калать:

Çапла ачам, Элихун, Ытла йышлах пулмарĕ:
Ку тĕнчере тăвансем, Ик урхамах, ик йытă –
Пирĕн турту-хурăнташ Акă пирĕн тăвансем,
Чар Иванăн ырлăхпе Чăн-чăн шаннă тус-йышсем.

Кунта Этрел Чар Ивана ӳпкелени, вăл чăвашсене улталани чĕрине ыраттарни сисĕнет. Автор истори фактне тĕрлĕ куçпа пăхса хаклама тăрăшать. Вăл архивсенчи документсемпе усă курнă темелле. Тĕслĕхрен, Хусана илнĕ хыççăн çĕкленнĕ тĕрлĕ пăлхавсем (вĕсене «Çармăс вăрçи» тесе каланă) çинчен çырнă йĕркесем халăх халапĕсенче упранса юлман, вĕсене çыравçă истори документчĕсене тĕпчесе кăна пĕлме пултарнă.

Поэмăна И.Тăхти каярах юсаса çĕнетни паллă, ăна вăл эпос шайне çитересшĕн пулнă. Пĕр ал çырупа поэт хайлав жанрĕ пирки çапла çырса хуни пур: «Вроде «Илиады». Вăл 1552, 1555, 1575 çулсенче Хусанта, Мускавра, Крымра, Турцире тата Венгрире пулса иртнĕ ĕç-пуçа ӳкерсе кăтартма тĕв тунă пулнă. Малалла «Элихунăн» çак сыпăкĕсене хайлама палăртнă сăвăç: «22. Этрель и Элихун едут в Москву на поиски дочери первого, сестру и брата второго. 23. Растворив окно терема, Селиме запевает песню... 26. В Москве Этрель ведет дипломатические переговоры с Иваном Грозным... 28. Позиция А.Курбского – либеральное отношение к инородцам Сибири, Волги, ногайцам. 29. Татарский набег на Аруй, Ахмат, на деревню Муркар. 30. Ушкуйники грабят Чашламу, Липовое, Шуршу. 31. Жертвоприношение озеру Эль. Как место, безопасное от набегов. Как тихое и спокойное место».

Çак хайлава сăвăлла аваллăх халапĕ тесе калама май çук, вăл Н.Шелепи хайлавĕсенчен истори чăнлăхĕ пуррипе уйрăлса тăрать. Çавăнпа та «Элихун» жанрне историлле поэма тесе палăртмалла. Хайлавра икĕ стиль пурри сисĕнет. 1917–1918 çулсенче хайланă сыпăксенче эпикăлла сулмаклăх, калуллă пуплев хуçаланать. Каярах çырнă сыпăксенче тĕп вырăнта шӳт-

кулăшпа шахвăрту тăрать, калуçă вулавçăпа тӳррĕн каласма тăрăшать, хайлаври ĕç-пуçпа вулавçă-калуçă хушшинчи дистанци питех те пысăк.

И.Тăхти 1919 çулта «Колчак» ятлă сатирăллă поэма пичетлет. Ăна вăл халăх сăмахлăхĕн мелĕсемпе, сĕтеклĕ чĕлхипе усă курса хайланă. 1918 çулта Хусан митрополичĕ шуррисемпе пĕрле Çĕпĕре тарнă. Çавăн çинчен Тăхти «Пуп таврашĕ» статйинче çапла çырнă: «Çав митрополит Яков Çĕпĕрте шур кулач çиет пулĕ, улпутсем ăна эрехсем («коньяк», «шампански» хаклă эрехсем) ĕçтерсе, ӳсĕрскерне хăйсемшĕн кĕлтутараççĕ пулмалла».

Поэмăра публицист хĕрӳлĕхĕ те, чĕлхе çивĕчлĕхĕ те, халăхла сăнарлăх та, тăрăхлу-питлӳ те пур. Автор сăнарсене юмахри пек стереотиплана, усал-тĕсел таврашне пуçĕнчен пуçласа ура тупанĕ таран ӳкерсе кăтартнă. Сĕтел умĕнче «шĕвĕр сăмса, хурчка куç» Колчак ларать, унăн сылтăм енче «ыраш çĕмел пысăкăш тулли питлĕ мăн хырăм» пуп вырнаçнă. Тепĕр енче «яка çӳçлĕ хĕсĕк куç» усламçă, «юн ĕçен» Дутов атаман, «çăлтăр-çăлтăр генерал» тата ыттисем те «кашта çинчи чăхсем пек ларнă сĕтел хушшине».

Вĕсем пурте хура халăха тĕп тума, ирĕклĕхе хĕстерсе пуянсене пулăшма ĕмĕтленсе каварлашаççĕ иккен. Кунта поэт сăнарсене гиперболăласа калăплать, фактсене ӳстерсе кăтартма тăрăшать. Колчак эшкерне карикатура стилĕпе ӳкерсе кăтартни хайлава публицистикăри памфлет енне сулăнтарать. Тăхти кунта реализмла ытарлăх мелĕпе усă курнă.

1921 çулта И.Тăхти «Выçлăх çул» поэма хайлать. Унта вăл выçлăх çулăн уйрăм ӳкерчĕкĕсене кăтартнă. Тĕслĕхрен, «Выçлăх» сыпăка сăвăç çапла йĕркесенчен пуçлать:

/нтĕ халăх чĕрине Часрах сутса пĕтерсе,
Выçлăх сăнни тăрăннă – Çĕре-шыва пăрахса
Çурта-йĕре, выльăха Каяç хăшĕ Çĕпĕре.

Выçăпа шыçăннă çынсем çул çинчех «виле-виле выртаççĕ». Сăвăç ӳкерчĕкĕсем халăх синкерлĕхĕн тарăнăшне туйма пулăшаççĕ.

Çапла вара, чăваш поэзийĕ 1917–1922 çулсенче мифопоэтикăлла шухăшлавран реалистла шухăшлав патне çывхарса пынă тесе çирĕплетме пултаратпăр. Çакна И.Тăхти, Г.Тал-Мăрса çырнисенче те курма пулать. Çав хушăрах мифла сăнарсемпе символсем Мĕтри Юмана классикăлла хайлав – «Шевле вылять» мифологилле поэма – çырма майсем туса панă. Çак тапхăрта пĕрремĕш хут историлле поэма хайланать.

Усă курмалли литература

Изоркин А.В. Публицист тата лирик // Ахах Иван. Атьăр социализмшăн çапăçма! – Шупашкар, 1972. – 5–21 с.

Родионов В.Г. «Чăваш çырăвĕн ушкăнĕ» // Чăваш литератури: поэтикăпа стиль ыйтăвĕсем. – Шупашкар, 1989. – 41–60 с.

Унăнах. Юман Мĕтри – поэт // Çавăнтах. – 112–127 с.

Тăхти И. Поэзи, проза, публицистика. – Шупашкар, 1979.

ÇЕÇПĔЛ МИШШИ (1899–1922)

Юр айне пулнă сар кайăк

Çеçпĕл Мишшине эпир революци йыхравçи пек, хăюллă романтик пек курма хăнăхнă. Çавна май ытларах унăн «Çĕнĕ Кун аки», «Хурçă шанчăк» тата ытти çавăн йышши программа евĕр палăрса тăракан сăввисем çинчен каласнă, сăвăçăмăрăн пултарулăх хăй евĕрлĕхне чи малтан çавсенче курма хăнăхнă.

Чăн та, 1920 çулта, 1921 çулăн çуллахи уйăхĕсенче Çеçпĕл çавăн пек романтик шухăш-ĕмĕтлĕ çын пулнă. Урăхла каласан, вăл çурхи хĕвеллĕ ирхи сар кайăк пек юрланă (унăн «Ĕнер йывăç пахчи кăмăлне...» ятлă сăвă пуçламăшне вулăр). Ку вăл Çеçпĕл сăвăç сăнарĕ. Шел пулин те, поэт сăнарне çапла пĕтĕмлетни унăн чунне тĕплĕн уçса параймасть-ха. Сăвăç сăнарĕн тепĕр енĕ кунта илсе кăтартнă сăввăн малалли йĕркисенче уçăмлăрах палăрать:

Паян шыв-юр чечек пахчинче,
Юр айĕнче хĕрлĕ-хĕрлĕ чечек.

Сар кайăк çук хурăн тăрăнче,

Сар кайăкăм шур юр айĕнче.

«Миçе ĕмĕр витĕр асаппа тухмарăн...» XVI–XVII ĕмĕрсенче Хĕвел анăç Европа, XVIII ĕмĕрте Хĕвел тухăç Европа капитализм саманине кĕрсе пыраççĕ, çав тапхăрта вĕсен литературипе искусстви, ăслăлăхĕпе техники хăвăрт çĕкленсе аталанаççĕ, ешерсе чечекленеççĕ. Ази ку тапхăрта вăранма ĕлкĕреймен-ха, çав шутра – Атăлçи халăхĕсем те. Пирĕн халăх аталану тĕлĕшĕнчен Европăран 300–400 çул, Раççейрен 100–150 çул кая тăрса юлнă. Ку вăл халăхăмăрăн XIII–XV ĕмĕрсенчи трагедийĕнчен те, колонилле пусмăр тӳснинчен те чылай килнĕ.

Малтан вуланисене тепĕр хут аса илер-ха. XX ĕмĕр пуçламăшĕнче чăвашăн çĕнĕ интеллигенцийĕ наци шăпи пирки чылаях шухăшлама пуçлать: мĕншĕн эпир ытти халăхсенчен кая тăрса юлнă, мĕншĕн пирĕн вăл çук, ку çук т. ыт. те.

Çак тапхăрта халăх çутлăх идейине тĕпе хурса иккĕмĕш хут чăмăртанма пуçлать. Ку вăл чи малтан чăваш обществи капитализма кĕрсе пынинчен килнĕ ĕнтĕ. Çак чăмăртану ĕçне 1917 çулхи февраль уйăхĕнчи революци татах та хăвăртлатать. Ун чухне халăхран Тимахви Хури, Ф.Николаев, Г.Алюнов, Д.Петров (Юман), А.Краснов йышши ертӳçĕсем тухаççĕ, вĕсем пурте халăхăмăрăн социаллă пурнăçне улăштарасшăн кĕрешеççĕ. Чăвашăн улпучĕ-тӳри те, рабочийĕ те пулманран интеллигенци чи малтан хресчен партийĕ енне туртăнать. Юпа уйăхĕнчи пăлхавăрта большевиксем влаça илнĕ хыççăн икĕ çул юппине çитсе тăрать. Пĕри – хура халăх партийĕн пуласлăхĕшĕн кĕрешесси, тепри – çĕнĕ власть енне куçасси. Халăхпа власть хушшинче пулма пултаракан çак хирĕçӳлĕх сахал мар шухăшлаттарнă ун чухнехи ăслă чăвашсене. Кунта класс кĕрешĕвне тата вăрçăллă коммунизм идейисене ăша хывнă çамрăк пуçтахсенчен шикленни те пулнă ĕнтĕ. «Чăваш наци обществин» членĕсене хупа-хупа лартаççĕ, тавраллах «контрреволюционер» ятпа айăпланисене тата таркăнсене пере-пере

пăрахаççĕ, хире-хирĕçле икĕ çарти чăвашсем пĕр-пĕрне вĕлереççĕ. Ылтăн пĕрчи вырăнĕнчи вĕреннĕ çынсен пысăк пайĕ вăрçăра пуç хурать е ĕмĕрлĕхех сусăрланать. Çакă тин çеç чăмăртанма пуçланă пĕчĕк йышлă халăхăн пысăк трагедийĕ мар-и вара? Çапла курнă та çапла шухăшланă ун чухнехи чăваш-шăн çунакансенчен чылайăшĕ.

Çав тапхăрта нацие чăмăртас, ăна чĕртсе тăратас ыйту нихçанхинчен те çивĕчрех пулнă. Революцичченхи лидерсем влаçпа оппозицие кĕрсе кайнăран çак тĕллеве пурнăçлама пултарайман ĕнтĕ. Кунта утопилле общество (коммуна) идейисене чунтан-вартан ĕненекенсем кирлĕ пулнă. Çавăн пек çынсенчен пĕрне Çеçпĕле куратпăр. Вуласа пăхар-ха унăн «Пуласси» сăввине:

Чухăнлăх, пуянлăх, уйрăмлăх йăранĕ
Ирĕкпе çĕнелнĕ пурăнăçран тарĕ,
Чĕрере ачашшăн çунĕ, çулăмланĕ
Тантăшлăх, тăванлăх, юрату кăварĕ.

Ку вăл пуласлăх ӳкерчĕкĕ. Анчах та çак пуласлăх енне террор çăвимасарĕ урлă каймалла-çке! Эппин, тăванлăхлă малашлăхшăн ĕнер-паянсенче çакăнпа килĕшмен тăванна пусмăрлама, тен, вĕлерме те тивнĕ. Çылăхĕ-мĕнĕ пуласлăх ячĕпе каçарăнать тенĕ. Çапла вара, нацие чăмăртас туртăма çав тапхăрта пăхсан курăнми «тăванлăх пĕрлĕхĕпе» çыхăнтарни трагеди çулĕ пулнă.

Çеçпĕл чăваша чăмăртама ăнтăлни 1918 çул пуçламăшĕнчех палăрать («Савнă чăваш, çапла пулăшатăн-и эсĕ выçă вилекен тăвануна?..» т.ыт.те.). Çав тапхăртах вăл «Пуласси» сăвва çырать, вăрçăллă коммунизм идейисене ăша хывать. Кĕçех вăл хăй те трибунал, суд ĕçĕсене çанă тавăрсах пуçăнать. Ку вара Çеçпĕл трагедине татах та хăвăртлатма пулăшать.

Поэтăмăрăн ытти трагедийĕсене каярах та асăнса тухăпăр-ха, халĕ вара халăхăмăрăн историйĕн мехелĕ патне таврăнар. Халăх генофондне, унăн аталанăвне йĕркелесе пыракан вăй революци çулĕсенче интеллигенцин çĕнĕ, пултаруллă ӳсĕмне аталанма пулăшать, вĕсене пурнăç хумĕ çинче тытать. Çак

пулăм çав ӳсĕме халăхăмăрăн пин-пин çул пуçтарăннă вăй-халĕ куçнипе çыхăннă. Çак кĕрешӳçĕсен ӳсĕмĕ çĕнĕ пурнăç тума пуçăнать, тăван культурăпа чĕлхемĕре чĕртессишĕн çунать. Вĕсенчен чи пултарулли те чи вĕри чĕрелли – Çеçпĕл Мишши. Вăл хăйĕн «кăвар чĕрипе» тăван сăмахăмăра шăратнă, унран «хĕрлĕ хĕрнĕ хурçă» тума пултарнă. Анчах та çав ӳсĕмĕн пиçĕлĕхне вăхăт пĕр хĕрхенӳсĕр тĕрĕслет: Граждан вăрçи, нэп фонĕнчи выç-лăх. Çеçпĕл хăйĕн поэт чунĕпе вăрça тӳсме пултарнă-ха, анчах та выçăпа асапланакансене курса пурăнма хал çитереймен вăл. Каярах çав ӳсĕм юлашкисенчен чылайăшĕ пуçилте (ссылкăра) хĕн курать, вăрçăра пĕтет. Çапла шăпа пӳрнĕ пулнă Çеçпĕлпе унăн тантăшĕсене.

Çеçпĕл Мишшине Вăхăт халăхăмăрăн иртнипе пуласлăхне çыхма, вĕçсĕрлĕх çыранне каçмалли Кĕпер хывма пӳрнĕ. Çакна Чĕлхемĕр хăватне çĕклесе çеç тума май килнĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ поэтăмăр тăван чĕлхе шăпи çинчен çапла çунса çырнă:

Миçе ĕмĕр витĕр асаппа тухмарăн
Миçе çичĕ ютăн мăшкăлĕ пулса...
Çапах паттăр юлтăн, вăйна çухатмарăн,
Халь те пулсан çивĕч, кăвартан таса.
Йывăр асапран та, тимĕр сăнчăртан та
Эсĕ парăнмасăр хăтăлтăн пулсан, –
Пулас пурнăçра та çивчĕпе хăватлăх
Ют чĕлхесенчен те кая пулмĕ сан.
Кăмăллă çĕршывăн кăмăллă чĕлхиçĕм!
Иртнĕ хурлăхушăн çитĕ ырлăху:
Хĕрлĕ хĕрнĕ хурçă, çунтаракан çиçĕм,
Вĕри вутлă çулăм эсĕ пулăн ху...

(«Чăваш чĕлхи»)

Çеçпĕл 1921 çултах интеллигенцие: «Чăваш чĕлхи ячĕпе пурте пĕр пулар!» – тесе йыхăрать, тăван культурăшăн чăмăртанса ĕçлеме ăнтăлать.

Шел, çав туртăма каярах упраса хăвараймаççĕ, сулахая сулăннă çамрăксем И.Я.Яковлева та, ытти хастар ĕçченсене те класс кĕрешĕвĕпе, национализмпа çыхăнтарса айăплама пăхаççĕ. Çав сулахай революционерсемпе танлаштарсан Çеçпĕл наци пĕрлĕхне те йышăннă, социаллă танмарлăха та курнă. Çав хушăрах вăл парти, совет органĕсенче палăрнă элитарлăха хирĕç тăнă, ăна хаяррăн питленĕ. «Пăхатăп та куратăп, – чунне асаплантарса çырать поэт хăйĕн кун кĕнекинче, – хăйсем ман евĕрлĕ явапла работниксемех, пурăнма вара лайăх хваттерсенче пурăнаççĕ, ăшă кĕрĕксем тăхăнаççĕ, çунасемпе çӳреççĕ, хăйсене çав аслă вырăнсене Турă лартнăнах тытаççĕ...»

Чухăнсен хӳтлĕхĕ пулни поэтăмăра нацие чĕлхе ячĕпе чăмăртанма чĕнме пачах та чăрмантармасть. Çавăн пек чăмăртанусăр наци пуласлăхĕ пулмассине Çеçпĕл аван курса тăнă. «Тата эсĕ чăваш халăхин тăрăх мĕн шухăшлатăн?.. – тесе ыйтать вăл Н.Ваçанккаран 1921 çулхи мартăн 26-мĕшĕнче çырнă çырăвĕнче. – Чăннипе çырса яр. Чăваш халăхин пулассишĕн Чăваш Чĕлхи ячĕпе чăваша юратса тапакан чĕреллĕ çынсене пухса ушкăн тума кирлĕ пек туйăнмасть-и? Чăваш халăхĕ таптанса пĕтес патне çитнĕ. Хамăр тăван чĕлхене хăтарма ушкăнпа пурте харăс тăмасан пирĕн наци çĕр пичĕ çинчен çухаласса кĕтсех тăр».

Çав çулсенчех вăл çапла йĕркесем çырса хунă: «...Пурăнăç чĕлхесĕр пулмасть. Чăваша вырăс чĕлхипе пурнăç тутараймăн, чăваша чăваш чĕлхи кирлĕ. Пĕр енчен, чăваш чĕлхи çухалма пултараймасть. Пăлхавăр тунă чухне те чăваш чĕлхи кирлĕ...»

Çеçпĕл çавăнтах, чĕри ыратăвне пусарас тесе-ши, шӳтлеме те пăхать: «Темле пулсан та малалла та чăвашăн чăвашла каласмалла пулать. Нимĕн тума та çук. Мĕн тăвăн çухалма пĕлмен чĕлхене? Ирĕксĕрех хисепе хурас пулать».

Мĕншĕн поэтăмăр ялан пекех **Чĕлхе** çинчен каласать-çырать-ши? Чĕлхе вăл – нацин тĕп палли. Эппин, чăваш чĕлхине чĕртсе тăратни халăхăмăра çĕкленипе танлашать. Анчах та чĕлхене епле чĕртме пулать-ха? Чи малтан

«кăвар» сăмахпа иккен. Çакна поэтăмăр питех те лайăх туйнă. Çавна пулах вăл тăван сăмахăмăра сăвва кĕртсе хĕрӳ йĕркесем хайлама пуçаннă. Çакăнта курмалла та Çеçпĕл поэзи ĕçне кӳлĕннин тĕп сăлтавне.

Вăл ăста художник-сăрăçă та пулма пултарнă, çапах та чи малтан поэзие суйласа илнĕ. Сăнарлă чĕлхе урлă халăхăмăра чăмăртама, унăн наци туйăмне çĕклеме ытларах май килнĕ, сăвăç сăмахĕ хура халăх патне хăвăртрах çитме пултарнă.

Чăвашăн чĕлхе асамлăхĕпе, унăн хăвачĕпе ăста усă куракан çыннисем чи малтан вĕрӳçĕ, тухатмăш-юмăç хушшинче пулнă. Ахальтен мар ĕнтĕ çамрăк поэтăмăр пĕр хушă хура магипе кăсăкланать, сăмах хăвачĕн тупсăмне шырать. Çав çул ăна тăван халăх сăмахлăхĕ патне илсе çитерет. Сăвăç вĕрӳ-суру чĕлхисене, текстри сăмах вылявĕсене сăнаса тĕпчет, тутар сăмахлăхĕнчи тĕслĕхсемпе танлаштарса пăхать. Хăйĕн сăввисене вăл ылхан евĕрлĕ те çырса пăхнă.

Çеçпĕл сăмах вылявĕ урлă çутă ӳкерчĕксем те ăста тума пултарать:

Инçе çинçе уйра уяр
Карталанса чăлтăртатать,
Енчен енне çупса чупать...

Кунта «инçе çинçе» тата «уйра уяр» сăмах ушкăнĕсем инçетлĕхе, анлăша кăтартаççĕ. Иккĕмĕш йĕркере РТА сасă йĕркеленĕвĕ хусканăва туйтарать. «Чăлтăртатать» тени хăех хумханăва сăнлать, виççĕмĕш йĕркере вара çав хускану (уяр) енчен енне чупни илтĕнет: виçĕ хут ЕН, унтан НЕ (сасăсен ылмашăвĕ пулнă хирĕçлев) тĕл пулать.

Паллах, чунпа туймалли япалана сăмахпа каласа пама питех те йывăр. Çеçпĕл сăввинчи сăмахсем вара ĕç-пуçа сăнарлаççĕ çеç мар, илтĕнтереççĕ те. Чăваш хăлхи çак тĕлĕшрен питĕ çивĕч. Калăпăр, эпир пĕр-пĕр япалана вăл епле ӳкнинчен хак пама пултаратпăр: лап! ӳкрĕ, лăп! ӳкрĕ, леп! ӳкрĕ, лĕп! ӳкрĕ т.ыт.те. Чĕлхемĕрĕн çак пуянлăхĕпе Çеçпĕл ăнăçлă усă курнă, çавна май сăмаха янăраттарса янă.

Çеçпĕлшĕн тăван чĕлхе халăхăмăра чăмăртамалли символ та, «хаяр аçа çаппин уххи» те, «кĕсле кĕввин янăравĕ» те пулнă. Чĕлхемĕре Çеçпĕл пурсăмăра та чĕнсе йыхăракан чан вырăнне хунă.

«Асап тăвĕ çине çаруран...» Çеçпĕле çывăх пулнă çын Н.Рубис ăна Аслă Асаплануçăпа (Великий Страдалец) танлаштарнă: «Аслă Асаплануçă – çапла калама хăятăп эпĕ, мĕншĕн тесен вăл унăн пурнăçне тĕрĕссĕн кăтартать. Михаил Кузьмичăн пурнăçĕ вĕçсĕр-хĕрсĕр асапланура иртрĕ-çке: чир-чĕрĕ, выçлăх, хаяр элек, телейсĕр юратăвĕ...» Хăйĕн пурнăçĕ Асап çулĕ çинче пулнине поэт аван ăнланнă. «Асаплану – ман пурнăçăн саккунĕ», – тесе çырать вăл хăйĕн А.Червякова патне 1921 çулхи апрелĕн 27-мĕшĕнче янă çырăвĕнче.

Асаплану çулĕ Çеçпĕле сарăмсăр вилĕм патне кăна мар, поэзири вилĕмсĕрлĕх патне те илсе тухнă. Асапланма пĕлни унăн поэт чунне çĕкленĕ, çынсене юратма вĕрентнĕ. Асаплану Çеçпĕлĕн идеалĕсем чăн пурнăçринчен урăхларах пулнинчен те нумай килнĕ. Маларах çак трагеди пĕтĕм интеллигенци шăпинче палăрни çинчен каласа хăварнăччĕ ĕнтĕ. Ахальтен мар поэтăмăр нэпа йышăнман, унăн идеалĕ çынсен Библири пек пĕрлĕхĕ пулнă. Çынлăха тĕпе хунă пĕрлĕхре чунсăрлăхпа чурăслăх валли вырăн пулман. Çеçпĕл вара шăпах та çавсене хирĕç тăма хал çитереймен. Поэтăмăра ытларах чунсăр чиновниксем хуçса ӳкернĕ. Хăйĕн пĕр çырăвĕнче вăл çапла çырать: «Чунсăр, суеçĕ çынсен аллинчи вылямалли тетте пек курăн-ха. Вĕсем кулнине, мăшкăлланине тӳс!.. Мĕн тери ансат пурнăç. Нимĕнле вăрттăнлăх та çук. Йăлтах куç умĕнче». Çавăн йышши бюрократсене поэт «коммунизм чиновникĕсем» тесе йĕплет, çав çынсем пур чухне çутă малашлăха кайма май çукне кăтартать, тăванлăх пĕрлĕхĕ пулмасса туйтарать.

Çеçпĕл идеалĕпе хирĕçӳлĕхĕ вăл Киев хулинче пурăннă тапхăрта татах та çивĕчленет. Ку вăхăт тĕлне унăн романтикăлăхĕ пуçĕпех сĕвĕрĕлсе пĕтет. Пурнăç çине вăл выçăпа вилекенсен куçĕпе пăхать, Ирĕклĕх, Пĕртанлăх идейисене шанма пăрахать. «Каллех пĕрисен чухăнлăхĕ те теприсен

пуянлăхĕ, – ӳкĕнсе çырать поэтăмăр Ф.Пакрышень патне. – Хăрушă тĕлĕклĕ ăмăр кунсене çутăлтаракан çутă пайăрки ăçта-ши? Мĕн тери тертлĕ, мĕн тери йывăр».

Çав тапхăрта поэт хăйне хăр тăлăххăн туйнă. Çакă илсе кăтартнă çырăвăн малалли йĕркисенче те аван курăнать: «Федя! Ан ман мана! Çак тĕнчере эпĕ пĕр-пĕччен. Ют тăрăхра – ан ман мана. Пиччем пул маншăн. Вара мана асапланăвăма тӳссе ирттерме çăмăлрах пулĕ. Çапла пурнăç пурри çинчен малтан эпĕ шухăшлама та пултарайман».

Юлашки тапхăрта çырнă сăввисем айне Çеçпĕл «Манăçнă Мишша» («М.Забытый») тесе алă пуснă. Чăн та, ку тĕле хаклă çыннисем унăн çумĕнче пулман ĕнтĕ. Чи юратнă çынни – ашшĕ – çĕре кĕнĕ. Савнă тусĕ Нуся (А.Червякова), инçетре пурăнаканскер, хăй çинчен хыпар-хăнар туман т.ыт.те. Çапах та вăл хăй манăça тухнăран мар, урăххишĕн куляннă. Çеçпĕл 1922 çулта çуркунне аташнă выçлăх çулне хăй нимĕнпе те пӳлейменнишĕн тăвăлнă. Н.Рубиса вăл ун чухне: «Эпĕ хама хам ытлашши туйсассăн çак пурнăçран кайма хал çитерейĕп», – тенĕ имĕш. Выçлăха пула Атăл тăрăхĕнчен тарса килнĕ çынсене вырнаçтаракан инспектор пулнă май вăл хăй çак çĕр çинче «ытлашшине» 1922 çулхи июнĕн 15-мĕшĕнче ĕненсе лартнă. Çав кун пулса иртни ăна юлашки утăмне тутарнă. Çакăн çинчен Н.Рубис çапла аса илет: «А.Г. Свистельник ун чухне уездри çĕр пайĕн заведующийĕн Нестер Савченкăн пӳлĕмĕнче пулнă. Çав вăхăтра унта Михаил Кузьмич кĕнĕ те хăй çул çинче икĕ ачаллă чăваш хĕрарăмне курни çинчен пĕлтернĕ. Лешсем выçăпа касăлса вилес патнех çитнĕ, тин çеç çитнĕ те ниçта та вырнаçма ĕлкĕреймен-ха, – вĕсем валли çăкăр çыртарма ыйтнă вăл. Савченко килĕшмен, Михаил Кузьмич вара çапла каласа хунă: «Эппин, мана тивекен паека парсамăрччĕ, эпĕ алă пусма хатĕр». Савченко кăтăрса кайса кăшкăрнăран Михаил Кузьмич пӳлĕмрен чупсах тухса кайнă, тепĕр кунне вара унăн виллине тупнă».

Çеçпĕл хăйне тупăксăр, çаруран, «йытта пытарнă пек» пытарма ыйтнă иккен. Хăйне çакăн пек шеллеменнипе вăл революци тĕрĕслĕхне, унăн çирĕплĕхне çĕклесшĕн пулнă. Поэт хăй çине алă хуни унăн вăйсăрлăхне, халсăрлăхне кăтартмасть. Ку вăл поэтăмăрăн тĕрĕс марлăхпа, чун чурăслăхĕпе кĕрешмелли мелĕсенчен чи юлашки те чи хăрушши: çын çав тĕрĕслĕхшĕн хăйĕн пурнăçне те шеллемест. Аса илер-ха чăвашсен ĕлĕк анлă сарăлнă «тип шарне»: айăплана çын халăх умĕнче хăйĕн чысне, ятне упраса хăварассишĕн тăшманăн хапха юпинчен çакăнса вилнĕ. Тĕрĕслĕхшĕн, таса ятшăн пурнăç та шел пулман. Çак шухăша Çеçпĕл çирĕп тытнă, çавна пулах пурнăçне трагедилле вĕçленĕ.

Çеçпĕл выçăпа вилекенсене пулăшма тăнă, анчах та çав вăхăтра нимĕн те тăвайман. Ку социаллă танмарлăх çеç мар-çке, вăл наци танмарлăхĕ те (выçăпа аптранисем чăвашсем пулнă) курăннă пулĕ сăвăçăмăра. Тĕрĕслĕхшĕн пыракан кĕрешӳре халсăррăн курăнасси – уншăн чи хăрушши. Апла пулсан, – шутланă поэт, – çав лару-тăрура хăй çине алă хунипе çеç вăл çĕнтерӳçĕ пулса юлма пултарайĕ.

Эпир çакна ăнланма тивĕç: Çеçпĕл хăйĕн пурнăçĕпе кăна мар, вилĕмĕпе те мăнаçлă. Çынлăха, Чунлăха, Тĕрĕслĕхе тӳрре кăларассишĕн вăл хăйĕн çамрăк пурнăçне те, çырăнман сăввисене те шеллесе тăман. Акă вилес умĕн çырнă пĕр сăввине илсе пăхар. Унта сăвăç хăйĕн халсăрлăхĕнчен Нуль ятлă сăнар туса çапла çырать:

Чунăм савнă, юратнă Нуль,
Кураймастăп сана, ылханатăп.
Сана, уссăрлăха, саврăм пуль,
Эс анчах пуль мана пăталатăн.
Патăм пурăнăça йăлт сана,
Ил ак – ывăс çинчех ман чĕремçĕм
Чĕрĕ, йăмăх юнпа пăсланать...
Ĕнтĕ ку – юлашки кучченеçĕм.

Мĕн чухлĕ хĕрхенӳсĕрлĕх, юлашки вăй-хала пухса, шăла çыртса хăйне хăй айăплани. Чăн-чăн трагеди çыранĕ хĕрринче тăнă чухне каланă юлашки сăмахсем.

Çеçпĕл хăйĕн ĕмĕрне килĕшӳлĕх, гармони енне ăнтăлса ирттернĕ. Чи малтанах çав килĕшĕве вăл хăйĕнче курма ĕмĕтленнĕ. Хăй тунă идеала пăхăнтарса хăйне хăй туптанă сăвăç, çав идеалпа ӳссе пынă. «Çеçпĕлĕн «эп» текенни пур енчен те лайăхланса ӳссе пынă... – çырать Н.Рубис П.Бекшанский патне. – Пурнăç чăнлăхĕ вара, вăл хăй ăнланнă тăрăх, унăн идеалĕнчен питех те инçетре тăнă...»

Çеçпĕл пурнăçа ĕмĕчĕ-шухăшĕ еккипе ярасшăн ăнтăлнă, анчах та вăхăт шунăçемĕн вĕсем икĕ еннелле пăрăнсах кайнă. Ку вăл, каланăччĕ ĕнтĕ, Çеçпĕлĕн тата унăн ӳсĕмĕн Пысăк Инкекĕ.

Поэтăмăр хăйĕнпе нихăçан та кăмăллă пулман. «Эсир, хитрисем тата вырăссем, – тесе çырать Çеçпĕл хăйĕн савнийĕ патне, – илемсĕр чăваш ачин шăпи мĕн тери инкеклине нихăçан та ăнланаймăр...» А.Свистельник аса илнĕ тăрăх, чăваш сăвăçи хăй Н.Рубиса савни, анчах та çак юрату телейсĕр пуласси çинчен пĕлтернĕ. Тĕп сăлтавне Çеçпĕл хăй вырăс мар пулнинче курнă иккен. Çав туйăм унăн «Юншăх» калавĕнче те вăйлă палăрать.

Çеçпĕл нацисем хушшинчи танмарлăха питех те çивĕч туйма пултарнă, пĕр халăх теприне кӳрентерессинчен асăрханнă, хăранă та. Çакă вăл чăвашсем нумай ĕмĕр хушши наци пусмăрĕ, тĕрлĕ кӳрентерӳ тӳссе ирттернĕрен килнĕ ĕнтĕ.

Çеçпĕл хăйĕн çитменлĕхĕсене хаяррăн питлени вăл хăйне мĕскĕнлетнине пачах та пĕлтермест. Çапла майпа вăл хăйне çирĕплетсе, аталантарса пынă. Çакă вара унăн таса идеалне – пĕртанлăх тата ирĕклĕх шухăшĕсене – упраса хăварма пулăшнă.

Çапларах утнă Аслă Асаплануçă Асап тăвĕ еннелле: хăйĕн ирĕкĕпе, ĕмĕтри çутă тĕллевĕпе ырă идеалĕсене сивлемесĕр, хăйне шеллемесĕр (поэтăн «Паянтан» сăввине аса илĕр). Пирĕн умра – поэтăмăрăн чи юлашки сăн

ӳкерчӗкӗ (А. Алимасов сӑрӑçӑ çак оригинала тӗпе хурса портрет çырчӗ, Çеçпӗлӗн çӗнӗ, пире паллӑ мар сӑнне кӑларчӗ). Варринче – Аслӑ Асаплануçӑ, вӑл пӑталанӑ Турӑ ывӑлӗн позинче тӑрать (пуçне кӑштах пӑрса уснӑ). Мӗн çинчен шухӑшлать çав хӳтлӗхсӗр, юр çинчи чӗрӗ çеçке пек черченкӗ чун? Тен, сӑвӑçӑмӑр хӑйӗн хыçӗнчи портупейӑллӑ, ӑшӑ кӗрӗклӗ шыçмак çынсене Христоса Асап тӑвӗ çине çавӑтса каякан çар çыннисемпе танлаштарать? Пуçне вара çак йӗркесем аса килеççӗ пулӗ:

Таврара хурахсем ахӑраççӗ,
Тӳресем кӑмӑллӑн кулкалаç.
Çаруранлӑ çӗршыв макӑрать-çке,
Ун çине витӗнет тӗттӗм каç...

Тинкеререх пӑхатӑн та ӳкерчӗкре Çеçпӗлӗмӗрӗн тӗп трагедине куратӑн: поэт хӑй – çутӑ та черченкӗ ӗмӗт, пӗрлӗхлӗх идеалӗ. Ун хыçӗнчи ӗмӗлкесем – пурнӑç чӑнлӑхӗ (тӳресен, хурахсен иртӗхӗвӗ, вӗсен чун чурӑслӑхӗ т.ыт.те). Вӗсем пӗр-пӗринпе хаяр тӑшмансем. Кӗрӗклӗ эшкер çаруранлӑ Асаплануçа Асап тӑвӗ çине çавӑтса илсе каять. Унта вара вӗсем Ӑна пӑталӗç, эрех-йӳçек ӗçтерсе мӑшкӑллӗç. Куçне хупас умӗн Асаплануçӑ хуллен ахлатӗ, хӑйӗн юлашки сӑмахӗсене калӗ: «Или! Или! Лима савахвани!» Еврей чӗлхинчен куçарсан вӗсем çапларах илтӗннӗ пулӗччӗç: «Турӑçӑм! Турӑçӑм! Мӗншӗн мана манса кайрӑн?»

«Халӗ çӗнӗ ӑслайсем кирлӗ...» Çеçпӗлӗн илемлӗх концепцине идеал куçӗпе кӑна пӑхса ӑнлантарма май çук. Кунта поэт хӑй илемлӗ пултарулӑха, сӑмаха еплерех ӑнланса курнине те, еплерех çӗнӗ ӑслайсем енне туртӑннине пӗлни те кирлӗ. Çав туртӑмсем унӑн тӗрлӗ тапхӑрта тӗрлӗрен пулнӑ.

Поэт пултарулӑхне çак тапхӑрсене уйӑрса пӑхмалла: 1) Шӑхасан тапхӑрӗ (1917 çулхи августчен), 2) Теччӗри малтанхи тапхӑр (1917 çулхи сентябрь – 1919 çулхи май), 3) Теччӗри кайранхи тапхӑр (1919 çулхи май – 1920 çулхи август), 4) Шупашкар тапхӑрӗ (1920 çулхи сентябрь – 1921 çулхи май), 5) Крым тапхӑрӗ (1921 çулхи июнь – август), 6) Киев тапхӑрӗ (1921 çулхи

сентябрь – 1922 çулхи февраль) тата 7) Остер тапхăрĕ (1922 çулхи март–июнь).

Шăхасан тапхăрĕ. Поэтăмăрăн ашшĕ вĕри те мăн кăмăллă, çав хушăрах ыттисене шанман, иккĕленекен çын пулнă. Ывăлĕ пĕтĕмпех ашшĕне хывать, ахальтен мар вăл уншăн чи хаклă çын пулса юлать. «Эп аттене мĕнле юратнине пĕлесчĕ Сирĕн... – тесе çырать поэт А. Червякова патне 1920 çулхи июнĕн 2-мĕшĕнче янă çырăвĕнче, – пĕлесчĕ Сирĕн: пурнăçăн ăраскаллă та çутă тапхăрĕнче эпир унпа шухăшсем шухăшлаттăмăр, ĕмĕтленеттĕмĕр...»

Мишша хăйне ыттисенчен уйăрарах тытма, çынсенчен ютшăнарах çӳреме пуçлать. Çын вĕлерекенĕн ачи ятпа çӳреме йывăр пулнă ĕнтĕ. Çеçпĕлте пулнă ывăлĕн ăшă туйăмĕ мораль-несĕппе хирĕçĕве кĕрет. Поэт Асап çулĕпе çакăнтан пуçласах утма тытăнать.

Çеçпĕл юлташĕсем тĕрлĕ приключенисем вулама юратнă, вăл вара ытларах Лермонтов, Некрасов, Кольцов сăввисене кăмăллана. Юлташĕсем çăмăл юрăсем юрланă, поэт «Ямшăк арăмĕ», «Амăшĕн вил тăпри çинче» йышши юрăсене хисепленĕ, чăваш халăх юррисене шăрантарнă. Амăшĕ аса илнĕ тăрăх, пĕррехинче ăна ывăлĕ кĕнекерен хĕр йĕрри сăмахĕсене вĕрентнĕ иккен:

Акăш вĕçсе пынă чух
Кам курать-ши урине?
Çич ют килне килсессĕн
Кам курать-ши ыррине?

Икĕ витре шыв ăсрăм,
Пусма вĕçне лартайрăм.
Ахах ятăм – путмарĕ,
Кĕмĕл ятăм – юхмарĕ.

Шăхасанта вĕреннĕ çулсенче Мишша сăвăсем хайлама пуçлать, М. Лермонтовăн «Горные вершины» çеммине çывăх йĕркесем шăрçалать. Шăллĕ аса илнĕ тăрăх, пулас сăвăç вырăссен çак поэтне питех те хисепленĕ, унăн «Мцыри» поэмине вара пĕтĕмпех пăхмасăр калама пултарнă. Çав çулсенче вăл вырăсла çырнă «Правила стихосложения» кĕнекене тишкерет, сăвăсем çырма вĕренет. Çак ĕçре вăл вырăс поэзийĕн традицийĕсемпе пĕрлех чăваш халăх нĕрĕн, илемĕн виçисене, хушăран тытăмне те ăша хывса пырать.

Теччĕри малтанхи тапхăр – поэтăмăршăн тĕнче культурин алăкне уçнă вăхăт. Ку тĕлĕшрен ăна пулăшаканĕ учительсен семинарийĕнче вĕрентекен В.Никаноров пулнă. Çак çын хăй вăхăтĕнче П.Коган тата П.Сакулин литературоведсен лекцийĕсене итленĕ, вĕсен шухăшĕсене ăша хывнă. Ун тăрăшăвне пула Çеçпĕл антика литературине, Чĕрĕлӳ, Çутлăх тапхăрĕсенчи литературăна пĕлсе çитет, вырăс романтизмĕпе классицизмне тĕшмĕртет.

1918 çулхи çуркунне поэт хăйĕн пĕрремĕш программа евĕрлĕ сăввине хайлать. Çак сăвва вăл вырăсла, силлабо-тоникăна тĕпе хурса çырнă, «Кузница» поэчĕсене çывăх сăнарсемпе усă курнă. «Пуласси», «Иртнĕ самана» сăввисене те вăл çав шкулăн традициллĕ сăнарĕсенех кĕртет. Хăш-пĕр тĕпчевçĕ Çеçпĕлĕн çеçпĕллĕхне шăп та шай çак сăвăсенче курать, вĕсенче историзм вăйлине палăртать. Чăннипе çав сăвăсем поэтăн вĕренмеллерех çырнăскерсем. Сăвăç çав тапхăрта пролетари писателĕсен витĕмĕнче пулнă.

Теччĕри малтанхи тапхăр вĕçнелле поэт вырăс символизмĕ енне туртăнма пуçлать. Кунта В.Брюсов витĕмĕ питех те вăйлă пулнине палăртмалла. Ахăртнех, сăвăçăмăр А.Блок поэзине те пĕлнĕ. 1919 çулхи июлĕн 20-мĕшĕнче вăл «Хĕрлĕ тинĕсре» ятлă тĕрлĕ символсемпе пуян сăвă пичетлет. Хĕрлĕ тинĕс – революци; карап – халăх, общество; Асап çыранĕ – иртнĕ пурăнăç; Телей çыранĕ – пулас пурăнăç т.ыт.те.

Теччĕри кайранхи тапхăр Çеçпĕлшĕн чи малтан поэзири харкамлăха аталантарнă вăхăт пек кĕрсе юлать. Çакă сăвăç А.Червяковăна юратма пуçланинчен те чылай килнĕ. Вăл туйăмлă лирик пулни унăн çав тапхăрти пĕрремĕш сăввинчех курăнать:

Çепĕç кулянăçлăн, вĕçĕмсĕр хурлăхлăн
Хурлăхлă ĕмĕт ăшне Эсĕр вăрăннă.
Сирĕн илемĕр тин çеç куçран пăрăннă
Тĕлĕкĕн, çăлтăрăн курăнчĕ уçăмлăн.

(Вырăсларан *П.Хусанкай* куçарнă)

Çеçпĕлĕн тĕс символики чи малтанах туйăма романтика сĕмĕ çаптарнă. Ку тĕлĕшрен вăл А.Блока çывăх тăнă. Чăваш сăвăçин çав вăхăтри тĕп тĕсĕсем

– хĕрлĕ, симĕс тата кăвак тĕссем. Пĕрремĕшĕ вăл Революци, çын ăс-хакăлĕ, иккĕмĕш тĕсĕ – поэт, сăрăçă чунĕ. Кăвак тĕсĕ вара туйăма, юратăва пĕлтернĕ.

Тĕссене хисепленĕ пулсан та поэт сăвăра чи кирли сасă янăравĕ тесе шутланă. Ку тĕлĕшрен вăл В.Брюсов каланипе (сăвă – сасă пулăмĕ) пĕр шухăшлă пулни курăнать. Вырăссен теоретикĕ сăвă теорине ятарласа эвфони (сăвăри сасă йĕркеленĕвĕн вĕрентĕвĕ) тата мелодика (сăвăри сасăсемпе сăнарсен хăй евĕрлĕ çыхăнăвĕн вĕрентĕвĕ) пайсем кĕртет. Çав хушăрах вăл тĕрлĕ халăх сăввисен уйрăмлăхне чĕлхе уйрăмлăхĕсемпе ăнлантарать.

Çак ăслай вĕрентĕвĕсем В.Брюсовăн «Краткий курс науки о стихе» (М.,1919) кĕнекинче пурте пур. Çеçпĕл çав тапхăрта ку ĕçе тĕплĕн тишкерни паллă. Шăп çавăн чухне ĕнтĕ вăл чăваш тата тутар юррисенчи аллитерацие сăнать, çав мелпе малтанласа «Ака çинче» тата «Дорогая...» сăввисене çырать (1919 çул вĕçĕнче). Ун чухне вăл чăваш сăввисенче аçа састаш (мужская рифма) ама састашран (женская рифма) ытларах тĕл пулнине асăрхаса палăртать; дактиль тата импердактиль виçеллĕ йĕрке вĕçĕсем питĕ тухăçсăрри çинчен çырать.

Шупашкар тапхăрĕ. Çеçпĕлĕн илемлĕх концепцийĕ çак тапхăрта çирĕпленсе, малалла аталанса пырать. Поэт çĕнĕ жанрсем, ăслайсем шырать, çĕнĕ тропсемпе усă курма пуçлать. Çакă вара çĕнĕ стильпе поэтика йĕркелеме май парать. Кунта вăл В.Брюсовăн «Смысл современной поэзии» статйинчи шухăшсене ăша хывни аван курăнать. Çеçпĕл вырăс теоретикĕн çав статьяри шухăшĕсемпе 1920 çулхи сентябрьте, хăй Мускава кайсан паллашнă. Шăп çав кунсенче В.Брюсов поэзи çинчен лекци вуланă, унта вăл çĕнĕ вăхăт çĕнĕ форма, çĕнĕ çемĕ ыйтни çинчен чылай калаçнă. Çеçпĕлĕн тепĕр уйăх иртсен пичетленнĕ «Сăвă çырассипе ударени правилисем» статйин тĕп шухăшĕ те çавах. Тепĕр вырăнта сăвăç çапла çырса хурать: «Чăваш поэчĕсен малтан сăвă хурăмне тăвас пулать. Кивĕ хурăм, çич сыпăклă сăвă, чăваш поэзийĕнче ку таранччен патша пулса тăнă. Халĕ çĕнĕ ăслайсем кирлĕ. Çĕнĕ хурăм пултарас. Ку тĕрĕс çул, мĕншĕн тесен картин тăвас тесен малтан сăрă кирлĕ, çурт тăвас тесен чи малтан кирпĕч кирлĕ».

Çеçпĕлĕн тата Брюсовăн эстетика концепцийĕсем чылай чухне пĕр килеççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те символа сивлемен, çав хушăрах мистификацие йышăнман. Вĕсем сăнарсене тĕпе хураççĕ, тĕп шухăша палăртма та манса каймаççĕ. Вĕсем çĕнĕ саманапа çураçса тăракан çĕнĕ литература шкулĕ йĕркелес ĕмĕтпе пурăнаççĕ. В.Брюсов, сăмахран, тĕрлĕ юхăмри писательсене чăмăртать, Пĕтĕм Раççейри писательсен союзĕн председателĕ пулать (1919–1921 çулсенче). Çеçпĕл те çав ĕмĕтсемпех çуннине эпир унăн Н.Ваçанкка патне янă çырăвĕнче куртăмăр ĕнтĕ («...Чăваша юратса тапакан чĕреллĕ çынсене пухса ушкăн тума кирлĕ пек туйăнмасть-и?»). 1920 çулхи çуркунне Хусанта вăл хăйĕн тавра чăваш çыравçисене пуçтарнă, литература ушкăнĕ тăвас ыйтусене хускатнă. 1921 çулхи май уйăхĕнче вăл çав шухăшсене тĕпе хурса Шупашкарта доклад тунă, чăваш поэчĕсен сăввисене пухса кăларма пуçăннă.

1920 çулхи сентябрь–ноябрь уйăхĕсенче Çеçпĕл чăваш сăввин тытăмне тĕпрен çĕнетме пуçăнать. Теори ыйтăвĕсемпе ĕçленисĕр пуçне вăл хăйĕн программăллă сăввисене хайлать («Чăваш чĕлхи», «Чăваш ачине», «Чăваш арăмне»). Çак тапхăрта сăвăç наци ирĕклĕхĕпе çĕкленсе мăнаçланать, чăваш чĕлхин, культурин çутă пуласлăхне шанать: «Ку таранччен чăваш сăмахĕ илтĕнмен – халĕ чăваш юрри илтĕнĕ: чăваш сăвви, чăваш сăмахĕ Атăл хумĕ пек, вăрман сасси пек, кĕсле сасси вырăнне пулĕç. Чăваш чĕлхи тимĕр татĕ, çивчĕ пулĕ. Вăхăт çитĕ! Вăхăт çитĕ!»

1920 çулхи декабрĕн 27-мĕшĕ. Çак кун Çеçпĕле айăпласа (Юстици пайĕн çуртне юри вут тĕртсе çунтарнă тесе) 1921 çулхи февральччен тĕрмере тытаççĕ. Çак тапхăр витĕмĕпе поэт «Йывăр шухăшсем» сăввине хайлать, малтанласа ирĕк виçеллĕ дольникпе çырать, каласу интонацине тĕпе хурать.

1921 çулхи апрель уйăхĕнче çырнă «Чăн чĕрĕлнĕ!» сăввине автор «Ирĕклĕ çырнă сăвăсем» тенĕ. Çак жанра сăвăç хăй çапла ăнлантарать: «Ирĕклĕ çырнă сăвăсем тесе стих тăршшĕнче (метр) умлă-хыçлă ударенисем пур çĕрте те пĕр пек пыманнине каласççĕ. Çавăн пек сăвăсен стих тăршшĕ те пĕр пек мар. Вĕсем ытла кĕвĕллех мар вара».

Кунта поэт çак сăвă кĕвĕлĕхне силлабо-тоникăпа танлаштарса калани куç кĕрет. Çав çулсенче тĕрлĕ картлă (стопаллă) йĕркесенчен тăракан сăвва В.Брюсов «вольные стихи» тенĕ. Йĕркесерен тĕрлĕ картсем улшăнса пыраççĕ, тата вĕсен шучĕ йĕркесенче тĕрлĕрен пулсан ун пек чухне вырăс теоретикĕ çав сăвва «свободные стихи» тесе калать. Малтанхи сăвви çак системăн пĕр тĕсĕ иккен. «Чăн чĕрĕлнĕ!» сăвва Çеçпĕл шăп та шай çак кӳлепене тĕпе хурса хайлать (вырăнăн-вырăнăн вăл силлабо-тоникăн виçисене те кĕртсе ярать).

Çак тапхăртан пуçласа чăваш сăввин теоретикĕ силлабо-тоникăсăр пуçне ирĕклĕ сăввăн тĕрлĕ тĕсĕсемпе усă курать. Кăшт каярах, «Кĕпер хывăр!» сăвва хайласа, поэт чăваш поэзине французсен верлибрне (ирĕклĕ сăввăн тепĕр тĕсне) кĕртет:

Ах, Ах,
Веç – ывăтăр, Эй!
Нăйкăшатăп, Ĕнсене хуçăр,
Кĕпер айне ывăтăр мана. Ывăтăр мана.
Хал пĕтрĕ, хул халсăр...

Эппин, Çеçпĕле чăваш сăввин реформаторĕ тенĕ чухне пирĕн силлабо-тоникăна аталантарнине çеç мар, поэзие ирĕклĕ сăвă тĕсĕсене кĕртнине те асра тытмалла. Çеçпĕл вăл е ку сăвă системине хăйне уйрăммăн савман. Сăвă кӳлепине вăхăта тата поэт туйăмĕн юхăмне кура суйламалли уншăн пĕр иккĕленӳсĕр пулнă. Революци чĕнĕвĕ марш евĕрлĕ тикĕс те «хыт утăмлă» сăвă ыйтнă пулсан, шухăшлă, трагедиллĕ йĕркесем ытларах ирĕклĕ сăвă виçипе çырăннă. Ун пек чухне сăвăç вĕрӳ-суру, ылхан сăмахĕсене те ăша хывнă.

Шупашкар тапхăрĕнче Çеçпĕл хăйĕн пултарулăхне прозăпа драматургире те кăтартать. Унăн «Юншăх» калавĕпе «Упик» («Чăваш поэчĕ») драмин ал çырăвĕсене пĕр-пĕринпе танлаштарса пăхсан вĕсене иккĕшне те пĕр вăхăтра çырни курăнать. Хут тата чернил тăрăх вĕсем Çеçпĕлĕн 1921 çулхи март уйăхĕнчи çырăвĕсемпе пĕр. Поэт шăллĕ аса илнĕ тăрăх, пиччĕшĕн «Упик» ал çырăвĕпе вăл Чăваш театрĕнче спектакль курнă

хыççăн паллашать. Çав пьесăра вăл студент пурнăçне сăнласа кăтартма тĕллев тытнă иккен. Ал çырăвĕн пĕр пайĕ темле майпа сыхланса юлма пултарнă.

Шупашкарта Чăваш театрĕ 1921 çулхи февралĕн 28-мĕшĕнче уçăлнă. Ку вăхăт тĕлне поэт тĕрмерен тухнă ĕнтĕ. Çапах та çавăнта ларнă чухнехи кăмăл-туйăм пьесăра ӳкерĕнсе юлнă-юлнах. Ун чухне вăл çул юппинче тăнă: Шупашкарта юлса тăван литературăшăн çунмалла-ши е Чĕмпĕре савнийĕ патне кайса сăрăçă çулне суйласа илмелле? Пьесăри Михала-художник та Чĕмпĕре туртăнать. Яхрав ятлă поэт вара Шупашкара кайма килĕшет. Виççĕмĕшĕ – Упик («Миша» тени те «Мишка» е «Упа» тенипе çыхăннă!) – Чиперччене савать. Драмăн виçĕ тĕп геройĕ те Çеçпĕлтен илсе сăнарланăскерсем иккен. Яхрав-поэт, Михала-художник тата Упик-савни – çаксем Çеçпĕлĕн виçĕ сăнĕ, енĕ темелле. Çакăнта поэтăмăрăн христианла мифологилĕхне курмалла-тăр (ашшĕ, ывăлĕ, таса сывлăшĕ). Драма геройĕсене вăл тăван сăмахăмăра упраса ăна малалла аталантараканĕсем пек сăнланă.

Крым тапхăрĕ. Çак тапхăрта поэт литература классикине кĕрсе юлмалли ултă сăвă хайлать: «Инçе çинçе уйра уяр...», «Катаран каç килсен...», «Шăршлă каç йывăрри...», «Чăваш! Чăваш!..», «Çĕн Кун аки» тата «Тинĕсе». Çак тапхăра Çеçпĕл пултарулăхĕн тӳпи тесе хакламалла. Енчен те эпир «Çĕн Кун аки» тата «Тинĕсе» сăвăсене классика шайне лартса пăхатпăр пулсан, çав рете ыттисене те лартмаллах. Малтанхи виçĕ сăввине автор июнь уйăхĕнче вĕрӳ-суру чĕлхисене çывăхлатса çырнă. Çав хайлавсенче сасă вылявĕпе магийĕ питех те вăйлă («Инçе çинçе уйра уяр...» сăвă пуçламăшне тишкернине аса илĕр). Июльте çырнă сăвăсем вара символсемпе тата метафорăсемпе питех те пуян (Çĕн Кун аки пуçĕн хĕп-хĕрлĕ тимĕрри, ылтăн ака пуç, сар-хĕрлĕ кантăк, кăварлă ывăç, ылтăн сӳре т.ыт.те). «Тинĕсе» сăвви – поэтăмăрăн чи вăйлă сăввисенчен пĕри. Унта сасă тата тĕс урлă поэт тинĕс кĕрлевне кăтартса итлеттерме пултарнă. Тĕслĕхшĕн икĕ йĕрке çеç илсе пă-х-

ар: «Хуп-хуран, сип-симёссён, Кăпăк тумлăн, хумлăн-хумлăн...». Акă инçетрен хура хумсем килеççё, çывхарнă май вёсем симёссён курăнаççё, çырана çапăнса шурă кăпăкăн саланаççё. Сăвăра тёл пулакан *кёр, хăр, кар, хум, пăр* сăмах пайёсем шыв кёрлевне, хум çырана пырса çапнине илтёнтереççё. Крым тапхăрёнче Çеçпёл хăйён малтанхи илемлёх принципёсене аталантарса вёсемпе сăвă çырнă чухне питех те ăнăçлă усă курать. Çак тапхăрта сăвăçăн харкамлăх ăнё ушкăнлăх ăнёпе килёшӳллён çураçать. Хăйён сăпатне çёклени поэта миллион чăваш ячёпе каласма чăрмантармасть. Халăхăмăра вăл сăмах асамлăхёпе асамлать, ăру тёперё-мăчаварё пек йыхăрать, сăввисемпе чёлхемёр ăсти-вёрӳçи пек çунтарать.

Киев тапхăрё. Çак тапхăр пуçламăшёнче çырнă «Хурçă шанчăк» сăвăра Çеçпёлён оптимизмё чылай пек-ха. Çав хушăрах «Çук, çук» теекен улталанё, кам «çук» тет, ун чунё чăлах» тени виçё хут тёл пулни ăнсăртран мар. Поэт ăшёнче иккёленӳ йăшăлтатнă. Çакă пурнăç чăнлăхё сăвăç идеалёнчен инçетрен инçетелле тарса пынипе çыхăннă.

Хёле кёнё май выçлăх та алхассах пынă. Тепёр уйăхран чăваш сăвăçи «Выç псалом» хайлать, унта Çёршыва пăталани çинчен малтанхи пек иртнё вăхăтра мар, хальхи вăхăтпа çыхăнтарса калана. «Çёршывăм вилсе выртнă вăхăтра эпё аякра, Украина улăхёсем тăрăх çухалса-сётёрёнсе çӳретёп, – тесе çырать вăл 1921 çулхи ноябрь (декабрь) уйăхёнче «Канаш» хаçат редакторё патне. – Мёнпур шухăшăм тăван çёршывăм çинчен кăна, çак выç самана Асапё çёршывăма сарлака çёр пичё çинчен пётёмпех шăлса çухатнă-ши, эпёр – çёршывран саланса пётнисем – ёмёрех çуралнă çёршывсăр, хамăра çуратнă халăхсăр тăлăххăн тёнче тăрăх сётёрёнсе çӳрёпёр-ши тесе шухăшлатăп кунён-çёрён...» Савăнăçлă марш вăхăчё хыçа тăрса юлнă. Вăхăт поэтран çёнё сăрă-сăнар, çёнё туйăм, çемё ыйтнă. Кёвёллё йёркесем арканаççё, вёсен вырăнне шухăшлă шăплăх е тарăхуллă кăшкăру-ахлату йышăнать. Çаксем пурте «таканлă» силлабо-тоникăна такăнтараççё. Çеçпёле верлибр енне туртаççё («Кёпер хывăр!»).

Остер тапхăрĕ. Поэтăмăрăн çак тапхăрта вырăсла çырнă сăввисенче имажинизм витĕмĕ вăйлă палăрать. Çав юхăм вырăс поэзийĕнче 1919 çулта вăй илнĕ, унта икĕ тĕп ушкăн пулнă: сулахайрисен ушкăнĕ (Шершеневич, Мариенгоф) тата сылтăмрисен ушкăнĕ (А.Кусиков, С.Есенин). Сулахайрисем сăнара шухăшран маларах лартнă, сăвва «сăнарсен каталогĕ» вырăнне хунă. Сылтăмрисем сăнара хисепленĕ, çапах та вăл хăйшĕн мар, шухăша уçса парассишĕн кирлине палăртнă.

Çеçпĕл сылтăм имажинистсен енче пулнă. Çак юхăма вăл чи малтан Есенин витĕмне пула кĕрсе кайнă. Поэтăмăр Мускавра В.Брюсов докладне чăннипех те итленĕ пулсан унта вырăс теоретикĕ «имажинист Есенин» тенине тăнласа юлнах ĕнтĕ. Çав каç вырăссен аслă поэчĕ хăй те тухса калаçнă. Есенин пултарулăхĕпе Çеçпĕл Шупашкар тапхăрĕнче тĕплĕн паллашнă, унăн сăнар системине çывăх сăнар тытăмĕ йĕркеленĕ. Ку вăл вĕренӳ мар, пултарулăхри пĕр танлă тупăшу-диалог пулнă. Çапла майпа пирĕн поэзие Çеçпĕл урлă сылтăм имажинизм юхăмĕ кĕрсе пынă. Каярах çав юхăма В.Рсай, П.Хусанкай тата В.Митта аталантараççĕ. Ç.Элкер вара ытларах Çеçпĕлĕн хресченсен çĕнĕ туртăмне (новокрестьянское направление) çывăх сăввисен çулĕпе каять; çавна май «Хурçă карап» йышши сăвăсем хайлать. 30-мĕш çулсенче Çеçпĕл традицийĕн пĕр вуллине (имажинизм туртăмлине) пуçĕпех касса пăрахаççĕ, унăн вĕренекенĕсене нормăланă эстетика çулĕ çине пăрса яма хăтланаççĕ.

Çеçпĕлĕн илемлĕх концепцийĕ, куртăмăр ĕнтĕ, тапхăрсерен улшăнса, аталанса пынă. Сăвăç халăх сăмахлăхĕпе те кăсăкланнă, вырăс тата тĕнче литературипе те интересленнĕ, тĕрлĕ литература шкулĕсен, юхăмĕсен вĕрентĕвĕсене аван пĕлнĕ. Вĕсемпе вăл хутшăну-диалога кĕрсе тупăшнă, чăваш поэзийĕн анине çĕнĕ вăрлăх акнă.

«Кĕпер хывăр!» сăвва Çеçпĕл 1921 çулхи юпа уйăхĕн 30-мĕшĕнче çырни паллă. Унăн ку вăхăтри шухăш-кăмăлне çав кунхине Ф.Пакрышень патне янă çырăвĕнчен пĕлме пулать. «Хальхи вăхăтра пурăнма мĕн тери йывăр, – тесе çырать вăл хăйĕн украин тусĕ патне. – Кунĕн-çĕрĕн шăв-шав, таврал-ла

кăнттам та чунсăр салтаксем. Хама тăр пĕччен пек туятăп. Пыйтă таврашĕ. Сивĕ çанталăк. Кунсерен ассах пыракан выçлăх. <...> Каллех пĕрисен чухăнлăхĕпе теприсен пуянлăхĕ çитрĕ».

Çак çырурах кирек хăш самантра çывăх çынна таптама хатĕр «пуç мимисĕр салтаксемпе çынсен кĕтĕвĕ» пирки асăнни пур.

Халĕ сăвă патне таврăнар. Унта кĕпер урлă каçаканĕсем (пуласлăха çитекенĕсем тесе ăнланмалла) тимĕр ураллă (такан атăллă салтаксем тесе ăнланмалла) тата чул чунлă. Тĕрĕссипе, вĕсем маларах асăннă кĕтӳ çыннисем. Лирика харкамçи çав «паттăррисен» шутне кĕмест, мĕншĕн тесен вăл чунлă, куçĕ куççуль кăларать. Ыттисем пек «вилесем урлă, шăмă куписем çинче» кĕпер чĕнтĕрлеме, халсăррисен чĕрисем çине хăюллăн таптама пултараймасть вăл.

Камсем пулĕç-ши çав «хĕвеллĕ ыран енче»? Паллах, лирика харкамçи йышшисем мар. Апла пулсан унта кĕпер хывса каçма, çавăнта çитессишĕн çынлăха, чунлăха пĕтерме кирлех-ши? Автор юриех хăрушă та тискер ӳкерчĕк тăвать, сăвă йĕркисене хуçать, вăй-халĕ пĕтсе çитнĕ харкамça суя оптимизмлă сăмахсем калаттарать.

Хăйĕн пултарулăхĕпе Çеçпĕл Мишши чăваш поэзине тепĕр шая çĕклеме пултарнă. Унăн сăвă поэтикинчи çĕнĕлĕхĕсем лирика харкамçин сăнарĕпе, пĕтĕмĕшле хавха-çĕкленӳпе çураçăнма пултарнă. Наци чĕрĕлĕвĕн идейи унăн яланах малта тăнă, уншăн чи хакли те пĕлтерĕшли пулнă. Хăйĕн сăввисенче сăвăç сăмах пиçĕлĕхне тĕрĕсленĕ, çăра метафорăсем, илтĕнекен тата тĕрлĕ тĕслĕн курăнакан сасăсен пĕрлĕхне йĕркелеме пултарнă. Халăхăмăрăн пин-пин çул пуçтарăннă сăмах мехелĕ Çеçпĕл умĕнче кăвак хуппин уçăлнă. Чăваша тĕнпе тĕрлĕ политика партийĕсем мар, чи малтан унăн чĕлхи çăлăнăç кӳрессе вăл пĕтĕм чунтан-вартан ĕненнĕ. Унăн ĕненĕвĕн хĕрӳлĕхĕ, вăй-хăвачĕ питех те хăватлă иккенне эпир паян та туйса-курса тăратпăр. Çав ĕненӳ пире чăваш пулма тĕнчене чăваш ятпа тухма пулăшать.

ÇEÇПĔЛ ПРОЗИ. 1917–1922 ÇУЛСЕНЧИ

ПРОЗА

Çеçпĕл Мишшине эпир ытларах сăвăç пек пĕлетпĕр. Унăн прозăласа çырнă хайлавĕсем те пур. Тĕслĕхрен, 1918 çул пуçламăшĕнче «Хыпар» хаçатра сăвăçăн «Çапла пулăшатăр-и?» тата «Пирĕн вăй» ятлă статйисем пичетленеççĕ. 1918 çулхи кăрлачăн 5(18)-мĕшĕнче çав хаçатрах («Чăваш пурнăçĕ» ярăмра) Çеçпĕлĕн тепĕр хыпарĕ кун çути курнă. Унта вăл хăй Хусантан Шăхран (хальхи Канаш хулин малтанхи ячĕ) станцине çитни, чăваш салтакĕсемпе пĕрле калаçса ларни çинчен хыпарлать. «Пит те тĕлĕнсе эпĕ савăнтăм чăваш тăванăмăрсем çине пăхса, – хавхаланса пĕлтерет Касаккасси каччи. – Ĕлĕк çакăн пек станцисенче чăвашсен сассисем илтĕнместчĕç, вăрттăн анчах кĕтессенче пĕр-пĕринпе пăшăлтататчĕç. Халĕ пит аван хамăр чĕлхепе калаçса савăнса кулкалаççĕ».

Çеçпĕл çав салтаксене чăваш хаçачĕн тăватă номерне вуласа парать, чăвашла утмăл кĕнеке сутать.

«Çапла пулăшатăр-и?» ятлă статьяра Çеçпĕлĕн сăнар тăвас ăсталăхĕ уçăмлах паллă. Малтан вăл йывăр саманан тĕп палли – выçлăх аптратни – çинчен асăнса илет, унтан Шĕкĕр ялĕнче хăй илтнĕ калаçусене çырса кăтартать: «Çамрăксем улахсенче, ваттисем те халăх çинче калаçаççĕ:

– Вăрçăра салтаксем кунне çуршар кĕрпенке анчах çиеççĕ. Хуласенче çимĕç çук! – теççĕ.

Кăрчамасем ĕçсе ларнă чух та кăна çăвартан пăрахмаççĕ. Пĕр-пĕр çамрăк салтак арăмĕ те ĕçкĕре кукăркаланса:

– Юлташăм хăçан таврăнĕ-ши, выçă вилмесен юрĕччĕ! – тесе юрлать».

Малалла автор Шĕкĕр çыннисем хăйсен мăкаçей тыррине (халăхран вăрлăх валли пухнă тырра) выçă салтаксем валли илсе каясран хăраса килрен киле валеçсе тухни çинчен пĕлтерет. Тырă валеçсе ăшĕсене хыптарнăскерсем сĕлĕ сутса сăра илеççĕ те «çĕрĕпех янраса, кăшкăрса лараççĕ» иккен.

Малалли ӳкерчĕк татах та витĕмлĕрех: «Пуянни те, чухăнни те ĕçкĕ тăвать. Тăлăпли те ĕçет, çĕлĕкĕ тăрри çĕтĕкки те кая юлмасть, çын сиккипех сикес тет. Çĕрле урамра яшсемпе чупакан, упăшкасăр ача тунă салтак

арăмĕсен, ӳсĕрсен юрри ыйхăллă ял тăрăх ян ярать, аякра, ял вĕçĕнче, тӳпелешсе хаяррăн шуйăхни илтĕнет».

Малалла автор хирĕçле сăнар калăплать, нӳрлĕ окопсенчи выçă салтаксем çинчен каласа парать. «Киле килме тухнă салтаксем выçă вилеççĕ; хуласенче пирĕн пек чунлă çынсемех выçăпа вăйран кайнă, ачасем ĕсĕклесе йĕрсе улаççĕ...» – хирĕçле ӳкерчĕк тăвать автор. Унтан вăл каллех Шĕкĕр ялне сăнлать. «Ватти-çамрăккисем ӳсĕрĕлсе: «Кăрчама тăвакана Турă сывлăх патăр», – тесе юрра яраççĕ».

Вĕçĕнче çыравçă риторикăн ыйту мелĕпе усă курса вулавçăран çапла ыйтать: «Савнă чăваш, çапла пулăшатăн-и эсĕ выçă вилекен тăвануна?.. Ывăлу çăкăр ыйтсан чул анчах паратăн-и?» Юлашкинчен чунĕ кӳтсе çитнĕрен вăл çапла тарăхса калать: «Эх, выççа тутти мар, выççи анчах паллать пуль!»

«Пирĕн вăй» статьяра Çеçпĕл чăваша ытти халăхсем мăшкăл ан кăтартчăр тесен мĕн-мĕн тумалли пирки шухăша путать. Чăваш тĕп хысни (хальхилле – казначейство) тусан чăвашсем влаça хăйсен аллине илессе шанать вăл. Малалла каллех çав «мăшкăлу мотивĕ» палăрать: «Пирĕн тĕттĕм пӳртсене те вĕренӳн çути кĕрсе çутатса ярĕ. Вырăс-мĕн мăшкăлласан çĕлĕке пусса лартса, пуçа чиксе чĕлхесĕр выльăх пек сăмахсăр пулмăпăр...» Тепĕр тăватă предложенирен каллех çав кĕвĕллĕ сăмахсем тĕл пулаççĕ: «Кирек ăçта тухсан та чăваш тăлăххăн, мĕскĕннĕн хăраса çӳремĕ. Тин вара çунса, ялкăшса чăвашăн кĕтнĕ Хĕвелĕ тухĕ те Чăваш çĕрне, нумай асап курнă çĕре, хăй çутипе ачашласа çутатса ярĕ!..»

«Вăрман ачисем». Хайлава Çеçпĕл çичĕ сыпăка пайланă. Вăл кино сценарийĕ пекрех монтажлă пулса тухнă. Кашни сыпăк уйрăм кадрсен ушкăнне аса илтерет. Çакна хайлав пуçламăшĕнчех туйса илме пулать: «Йĕри-тавра сĕм вăрман. Çил улать, йĕрет. Вăрман хĕрринчи сăрт çинче ватă юман хаяррăн шатăртатса ларать; сăрт айĕнче çырма хĕрринче пĕчĕк лаççем

сапăнса ларнă. Ухилле мучи кил картине çӳллĕ хӳмепе хӳсе çавăрнă; кил варринче пĕчĕк чӳречесемлĕ хура пӳрт ларать».

Çыравçă кунта чăвашăн ĕмĕртен ĕмĕре куçса пынă мифологилле тĕнчине ӳкерсе кăтартнă. Хайлав ятĕнче палăртнă вăрман ачисем – сăрт айĕнчи çырма хĕрринче пурăнакан чăвашсем. Вĕсем ку таранччен сăрт çинчи Киремет хӳттинче пурăннă, халĕ вара ăна мана пуçланă иккен. Çакна эпир автор ватă Ухилле шухăшне каласа панинчен пĕлетпĕр: «Эх, самана, самана, ваттисен йăлине пăраха пуçларĕç. Эй, авал халăх карласа кашни çĕн уйăхăн ватă юман патне пуçтарăнатчĕ, халь çулталăкра пĕр-иккĕ пуçтарăнкалаççĕ. Манчĕç сана, аслă Киремет, манчĕç!»

Чăваш хăй тĕнчинче хăйне тĕреклĕ те çирĕп туйнă. Çакна автор Çăлтăр (ку ята вĕçсĕрлĕхĕн, Пысăк Вăхăтăн, пĕтĕмĕшле каласан, космосăн символĕ тесе ăнланмалла) ятлă каччă юрланă юрă урлă та систерет:

Э-э-эй! Авал паттăр
Атăл пулнă тет...
Маттур паттăр
Атăл пулнă тет...
Э-э-эй! Ырă Киремет.

Хайхи сăрт çинчи аслă Киремет сăнарĕ историре пулнă Аттила (V ĕмĕрте пурăннă хунсен патши) сăнарĕпе пĕрлешсе кайрĕ. Кунта Çеçпĕл Мишши Турхан Энтрин «Чăваш историйĕ» ятлă очеркне (вăл «Хыпарта» 1917 çулта пичетленнĕ) вулани, унти хăш-пĕр фактсемпе усă курни сисĕнет. Унта çапла йĕркесем пур: «Атăлăн ӳтне унăн халăхĕ кĕмĕл тупăк ăшне хурса, Дунай шывне пĕвелесе- чавса вăхăтлăха урăх çĕре ярса, шыв тĕпĕ типсен çавăнта чавса пытарнă тет. Унтан пĕвине татса, шывне хăйĕн вырăнне ярса савнă пуçлăхăн ӳтне шывпа витнĕ тет».

Çеçпĕл хайлавĕнчи Çăлтăрăн юрри акă мĕнле сăмахсемпе вĕçленет: «Вилнĕ вăрçăра Çапăçнă чухне, Пытарнă ăна Ылтăн тупăкпа Тинĕсĕн тĕпне».

Çапла вара, Çăлтăр чăвашсен авалхи *паттăрлăх* вăхăтне, халăхăн *мухтавлăхне* аса илсе юрлать. Çеçпĕл ятлă çамрăкăн юрри вара вăрманпа тата шăпчăк кайăкпа çыхăннă: «Шăпчăк, шăпчăк, Пĕчĕк кайăк, Тарам пĕчĕк пулсан та Мăн вăрмана ян ярать».

Çак сăмахсен вăрттăнлăхне пĕлме Турхан Энтрин «Чăваш историйĕ» очеркне пăхса илме тивет. Унта тутарсем мĕнпур пăлхар çĕрне тытса илни çинчен каланă хыççăн çапла çырни пур: «Хайхи пăлхар çĕрĕнчи сĕм вăрмансем пăлхарсене нумайăшне тарса пытанма вырăн пулнă. Çав сĕм вăрмансем, пуринчен те ытла Атăлтан хĕвел анăçĕнчи Сăр вăрманĕ, телейсĕр мĕскĕн чăваш халăхне хăйĕн йывăç çулçисем айне пытарнă. Тутарсем пыра пуçласан, ян-ян кайсан чăвашсене инкек çывăххине систерсе тăнă. Тутарĕсене çулçисемпе çупса, пăшăл-пăшăл туса «чăваш çук» тесе суйса янă. Тутарсем иртсе кайсан тин хура вăрман шăпчăкĕсем хăйсен хаваслă юррисене юрласа шăши чĕреллĕ чăваш халăхне вăрмантан тухса пĕр хăрамасăр ĕçе тытăнма чĕннĕ.

Тавтапуç сана, сĕм вăрманăм!

Эсĕ тĕнчере пулман пулсан, ху çулçупа ман асаттесене тăшмансенчен çăлман пулсан çут тĕнчери хӗ́хĕм кунсене эпĕ те, чăваш, кураймăттăм, хам пуçăма çӗ́ле тытса чăваш ятне йăтаймăттăм. Чăваш тесен чĕре ăшшăн хавасланса выляймĕччĕ. Хам халăхăн чыс-чапĕшĕн чунăм çунса вĕреймĕччĕ. Тавтапуç сана!»

Чăвашсене сĕм вăрман тăшмантан çăлса хăварни çинчен пĕлтерни пур. Шăпчăк мăн вăрманта юрлани вăл халăха ĕçе йыхăрнине, çывăхра тăшмансем çукне пĕлтернĕ. Сĕм вăрман – чăвашăн çăлăнăçĕ, хӗ́тлĕхĕ. Çăлтăр юрри чăвашсен паттăрлăхне аса илтернĕ терĕмĕр. Çеçпĕл ятлă çамрăкăн юрри вара – Сăр вăрманĕсенче хӗ́тлĕх тупнă шиклĕ чăвашсен вăхăтлăх хавхалану юрри. Çак тапхăрта (XIII–XIX ĕмĕрсенче) чăваш халăхĕ, Турхан Энтри калашле, «шăши чĕреллĕ» пулса тăнă. Çеçпĕл Мишши çак хăравçăлăхпа мăшкăлу мотивĕсене пĕрлештерсе хирĕç тăруллă фабула йĕркелет. Йăх пуçĕ Ухилле

хăйĕн ывăлĕсемпе ял халăхне Киремете маннăшăн ӳпкелет. Унăн «ĕçлĕхсĕрленсе выртма» юратакан Сӳхепи ятлă ывăлĕ ашшĕне çапла сăмахсемпе вăрçать: «Ват супнă, Киремет, Киремет. Акă вырăссем шăнкăравсемпе шăнкăртаттарса килсен куланай ăçтан тупса парăпăр-ха? Чӳк тăвас, çырлахтарас! Тиек хулăпа çунтара пуçласан – чӳк тăвăн – лайăх!»

Кунта Сӳхепи шикленни, куланай пухакан вырăссенчен (каярах мĕнпур вырăсран) хăрани курăнать. Çапах та вăл хăйĕн тĕнче касса çӳрекен Микур вăртахĕн сĕнĕвĕпе килĕшет, вырăс хушшине чугун çул хывнă çĕре ĕçлеме кайма пулать. Хăйĕн хăтланăвне çапла ăнлантарать вăл: «Шутласан каймалла пек те туйăнать. Часах выçă лармалла пулĕ. Çăвар нумай – тырри пулмасть. Кайăксем Атăлтан леш енне куçнă тет атте. Ăçтан этем пулас?! Кайсан луччĕ!»

Вунă чăваш инçе çула тухма хатĕрленет. Ĕç ăнăçмасси малтанах сисĕнет. Ваттин пилне илес вырăнне Сӳхепи ашшĕпе харкашать, вĕсем вырăс тиеке кирлĕ хутсем тутарнăшăн икĕ тилĕпе пĕр юпах тиха «парнелеççĕ». Эртеле хăравçă та çапкаланчăк Микур ертсе кайни те йĕркеллĕ мар пек. Сăр шывĕ хĕрне çитнĕ-çитменех вĕсен икĕ лашине вырăссем ăна пула туртса илеççĕ, хĕнесе тăкаççĕ. Ирĕке тухсан Микурĕ çапла каппайланса илет: «Юрать хам вырăсла пĕлеп. Эп пулман пулсан хупса лартатчĕç-ха!»

Малалла та ăнса пымасть тăван ялĕнчен инçетелле кайса пыракан чăвашсен. Малтан Шăнкăрча, унтан Çеçпĕле çухатаççĕ. Кайран Микур пĕр лаша çине утланса эртеле пăрахса тарать. Халĕ тин ĕнтĕ Сӳхепи ашшĕн сăмахĕсене аса илет. Автор çав саманта кĕскен çырса кăтартать: «Сӳхепи чĕрине хуйхă кĕрсе çунтарса ячĕ те, аякри аслă вăрман, ял, аслă Киремет аса килсе кайрĕ. Сӳхепи вăрмана кĕчĕ те пĕр йывăç умне чĕркуçленсе кĕлтăва пуçларĕ».

Эртел каялла тарать. Вĕсене вăрă вырăнне хурса вырăссем хăваласççĕ. Çав саманта автор харкамçă куçĕпе курăмлăн сăнланă: «Акă Сӳхепи умĕнче

улăх варринчи утă куписем çаврăнса кайрĕç... Пур япала та çаврăнса кайрĕ. Ун çумĕнче Паккайпа Тăмпа лашисем çинчен ывтăнса кайрĕç. «Эй, Турă!» – тесе сехĕрленни илтĕнсе кайрĕ. Тяккапа Маккан айĕнчи лашасем йăванса кайрĕç. Сӳхепи вĕсем урлă сиктерсе кайрĕ, лешсем лашисен айĕнче харлатса юлчĕç. Лайăх курать Сӳхепи – Сăр урлă Тимккапа Çăлтăр ишсе çыран хĕрне çитеççĕ».

Сӳхепи те хăй шыв урлă каçса хăтăласса шанать, лаши-качки Сăр шывне сикет. Вăл вилнĕ саманта автор сăнарлăн çырса кăтартать: «Курать – икĕ вырăс ăна çыран çинче пăшалпа тĕллесе тăраççĕ. Пăшал сасси илтĕнмест; пăшал вĕçĕсенче тĕтĕм курăнчĕ те, Сӳхепи тавралла шыв хĕп-хĕрлĕ пулса кайрĕ. Лаши те, Сӳхепи те çаврăнса юхăмпа пĕрле кайрĕç.

Пĕлĕт тап-таса, кăн-кăвак, пĕчĕк пĕлĕт татăкĕсем çинче хĕп-хĕрлĕ хĕлхемпе хĕвел вылять. Юхса пырать Сӳхепи, ун умĕнче хăйĕн ачисем чупса çӳреççĕ; ашшĕ, ватă Ухилле, тырă вырать. Сăрт çинче ватă юман кашласа ларать...»

Сӳхепи хăйĕн йăнăшне – Киремете манма юраманнине – кая юлса ăнланчĕ. Вĕсем çапкаланчăк Микур хыççăн кайса хăйсен пуçĕсене хăйсемех çирĕç. Ку кăна-и-ха? Тимккапа Çăлтăр тăван ялне çитсессĕн сăрт çинчи аслă юман çилпе хуçăлса выртнине кураççĕ. Шурă сухаллă Ухилле те ывăлĕсем вилнине пĕлсен симĕс курăк çине кайса ӳкет. Çакăнпа хайлав вĕçленет, анчах та вулавçă çав ватă çын урăх тăраймасса пĕлет, мĕншĕн тесессĕн ял чăвашĕн тĕрекĕ – сăрт çинчи аслă юман – тӳнсе выртнă.

Хайлав идейи тĕрлĕ халăхсене хирĕçлетнинче мар, чăваша истори харкам хупăнчăклăх (самоизоляция) патне илсе çитернин синкерлĕхне кăтартнинче. Çав шухăш Çеçпĕлĕн Э.Турхан очеркне вуланă хыççăн тĕвĕленни иккĕленӳсĕр. Çав хушăрах вăл илемлĕ идейăна Киремет юманĕ тавра çыхса пĕрлештерет, символла сăнар калăплать. Хайлав эпикăлăх тата философилĕх енне сулăнать.

Жанр тĕлĕшĕнчен ăна халăх аваллăхĕпе çыхăннă, эпопея сĕмне илнĕ калав йышне кĕртме май пур. Ун чухне Э.Турхан шăпах çавăн йышши аваллăх халапĕсене «калав» тесе палăртать: «Хусана илни çинчен чăваш хушшинче пĕр **калав** пур». Çеçпĕл Мишшин «Вăрман ачисем» хайлавĕ çав жанра питех те çывăх. Унти аваллăха упраса пурăнакан Ухилле ватă ячĕ авторшăн ютă мар: вĕсен йăхне пуçласа яраканĕ те çав ятлă пулнă-мĕн.

«Юншăх». Маларах «Юншăх» калавпа «Упик» драма ал çырăвĕсене хăçан хайлани паллă тенĕччĕ. Вĕсене авторăн 1921 çулхи март уйăхĕнче çырнă çырăвĕсемпе пĕр вăхăтра йĕркеленĕ. Çеçпĕле лайăх пĕлнĕ, унпа Теччĕ семинарийĕнче пĕрле вĕреннĕ И.Петров çапла аса илнĕ: «Чăваш каччипе вырăс хĕрĕ хушшинчи хутшăнусене пула наци хирĕçĕвĕсем пуçланни пирки роман çырасси çинчен мана Кузьмин темиçе хут та каласа панăччĕ. Унти сюжет çапларах пулмаллаччĕ: чăваш каччипе вырăс хĕрĕ паллашаççĕ. Вĕсем пĕр-пĕринпе çывăхланаççĕ, пурнăç вĕçне çитичченех пĕрле пулма тупа тăваççĕ. Хĕрĕ унăн каччи чăваш пулнине пĕлет те унран йĕрĕнсе пăрăнать, уйрăлса каять».

Çеçпĕл вилсен унăн хăш-пĕр хучĕсене Ф.Пакрышень сăвăç амăшĕ патне ярса парать, вĕсен хушшинче çак калавпа «Упик» пьеса ал çырăвĕсем те пулнă. Вĕсене темиçе хут та тӳрлетсе тухнине шута илсен автор çав хайлавсене вĕçлесе çитерме тĕллев тытнă тесе каламалла. «Юншăх» калава вăл 1919 çултах çырма пуçăннă. Çакна унăн А. Червякова патне янă пĕр çырăвĕнчен пĕлме пулать. Унта çапларах йĕркесем пур: «Сире, таса та илемлĕ вырăс çыннисене, кăнттам чăвашăн ăраскалсăр шăпи мĕн тери йывăррине ăнланма пӳрмен. Сирĕншĕн тĕлĕнмелле-тĕр, анчах çав чăваш, шел пулин те, сисĕм-туйăмлă».

Кунта Çеçпĕлĕн тепĕр çĕрте каланă сăмахĕсене аса илмелле: «Темле пулсан та малалла чăвашăн чăвашла каласмалла пулать. Нимĕн тума та çук. Мĕн тăвăн çухалма пĕлмен чĕлхене? Ирĕксĕрех хисепе хурас пулать». Çак «шел пулин те», «ирĕксĕрех» тенисене автор тепĕр çын куçĕпе пăхса каласнине, вăл унпа вăрттăн тупăшăва кĕнине сисме пулать.

Çапла вара, Çеçпĕл хăйĕн пулас романĕнче (тĕрĕсрех каласан ăна *повесть* тесе палăртмалла-тăр) чăвашсене ытти халăхсем кӳрентернине сăнласа парасшăн пулни курăнать. Калавра кӳрентернине мар, герой хăвăрт кӳренме пултарнине кăтартса панă. Унăн катăклăх комплексĕ вăйлă. Вăл (Миклуха) хĕр хăйне упăтепе танлаштарнăшăн хытах кӳренет. Лешсем сăнран китай çынни евĕрлĕрех çамрăк вырăс маррине сисеççĕ, çавăнпа ăна тиркештерме пăхаççĕ.

Миклуха прототипĕ Çеçпĕл хăй пулни иккĕленӳсĕр. Çапах та хайлаври ĕç-пуçа чăн пурнăçран ӳкерсе илнĕ тесе калама çук.

«Чунăмçăм, çунатăмçăм». Çеçпĕл хăйĕн савнийĕ (А.Червякова) патне янă 98 çыру упранса юлнă. Вĕсене автор илемлĕ хайлав çырас тĕллевпе шăрçаламан ĕнтĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн çав çырусем литература палăкĕ пулса тăчĕç, илемлĕ хайлав пек, юрату поэми пек вуланма пуçларĕç. Çырусенче Çеçпĕлĕн идеалĕ, илем туйăмĕ, пурнăç чăнлăхĕ, вĕсен хирĕçĕвĕ курăнать. Поэт хăйне те, ытти çынсемпе вăхăта та хак парать.

Çак çырусенче каланине тĕрĕс ăнланас тесен пирĕн А.Червякова чăннипе мĕнлерех çын пулнине пĕлмелле. 1919 çулта А.Червякова Чĕмпĕртен Теччĕ хулине темиçе уйăхлăха хăнана каять, вăхăтлăха унти библиотекăра ĕçлет. Çавăнта паллашаççĕ те икĕ çамрăк чун – чăваш поэчĕпе вырăс чиперкки. Ку таранччен пирĕн тĕпчевçĕсем А.Червяковăна «мещен хĕрарăмĕ», «шурă гвардеец арăмĕ» тесе сивлеккĕн хаклама юрататчĕç, «вăл Çеçпĕле юратман» тетчĕç. Тĕрĕссипе, Анастасия Александровна мораль тĕлĕшĕнчен хăйне йӳле янă çын пулман: чиркӳре венчет тăнă саккунлă упăшкине улталама вăл, Çеçпĕле тем пек юратсан та, хал çитереймен. Мăшăрĕ çĕре кĕнĕ хыççăн çеç вăл туйăмне пытарма пăрахнă, хăйĕн чăн-чăн юратнă çыннин адресне шыраса тупса хĕрӳллĕ çырусем çырма тытăннă. Ун чух хăй кая юлнине пĕлме пултарайманскер (пирвайхи çырăвне çырнă тĕле поэт çакăнса вилнĕренпе виçĕ уйăх иртнĕ) пĕрре чунне уçса çырать, тепре мăн кăмăллă йĕркесем шăрçалать, хăйĕн шанăçне çавах çухатмасть.

А. Червякова Çеçпĕл патне 1922 çулхи сентябрĕн 14-мĕшĕнче çапла çыру çырнă пулнă:

«Çырмасăр чăтаймастăп, çавăнпа каллех шурă хута хурататăп, каллех сан канлĕхе сирсе сăмах хушнăшăн йывăра илместĕн пуль тетĕп. Каçар, хаклă çыннăм, анчах ытла йывăр-çке... Хам мĕнле асапланни, шăпа иксĕмĕре икĕ еннелле уйăрса яни çинчен эпĕ сансăр пуçне никампа та калаçаяс çук... Анчах ун чухне эп хам та хам маррине, çын аллинче пулнине, çав тивĕçрен иртейменнипе умри телее сирнине, çапах та чыс сăваплăхне, чыс тасалăхне упраса хăварма пултарнине эсĕ те ăнланмаллах. Пĕлсем, ун чухне эс мĕнле асапланнине курса эп хам та санран кая мар çунтăм. Ман ăшра мĕнле кĕрешӳ пынине эс курман, çавăнпа сан чунна ытлашши ыраттарас мар тесе тăрăшни маншăн мĕн хака ларнине те, чылай чухне эпĕ хампа хам ăнăçлă кĕрешейменнине те ĕненĕн-ши? Çав кĕрешӳре вăйăм-халăм пĕтсе çитнине туйсанах уйрăлса кайрăм санран. Ку маншăн мĕне пĕлтернине эс курман, ма тесен эпĕ чăн туйăма яланах пытарма тăрăшнă, тепĕр чухне, пытарса çитереймен самантсенче, çав туйăм çиеле вăркăнса тухсан та вăл шеллев-хĕрхенӳ кăна мар, вăл ирĕке талпăнакан чун ăнтăлăвĕ пулнине систерес мар тесе вăй хураттăм. Çырусене хирĕçӳллĕ те пăтрашуллă çыраттăм, çавăнпа та пĕррехинче чунри туйăма тӳрремĕнех кăтартсан та ĕненмерĕн эс, хам та ытлашшиех çине тăмарăм, ма тесен çав туйăм ĕмĕрлĕх юрату мар, самантлăх алхасу кăна пулĕ тесе шутларăм. Эс çырма пăрахрăн... Сан çинчен ним пĕлмесĕр иртсе кайнă çулсем çакна çирĕплетрĕç: сана эпĕ манаймастăп, асăмран кăларса пăрахас тесе тем пек тăрăшсан та кăларса пăрахаймастăп. Миçе çул пытарса пурăнтăм çакна санран, халĕ вара сан шăпу паллă маррине пĕле тăркачах мĕншĕн тапратрăм-ха çак калаçава? Мĕншĕн – пĕлместĕп. Манмалла пулсан йăлтах манăça кăлар. Йăлтах. Сан умра тӳрре тухма тăрăшнă пек ан туйăнтăрччĕ. Анчах ман сана пĕлтересех килет: çак сăмахсем – йăлтах чăн, хам пĕлменни, хам туйманни çинчен сана эп нихçан та каламан. Ăнланатăп, паллах, мана эс хăвăн пурнăçна çапла арпаштарса янăшăн

каçарасшăн пулмăн, туятăп... Анчах уншăн эпĕ хама хам та каçарассăм çук, ма тесен хамăн пурнăç та арăш-пирĕш сапаланчĕ, арканчĕ. Анчах йĕрет, нăйкăшать тесе ан шутла, ман чăтмалла. Кунта эпĕ йăлтах хам айăплă, сана мĕншĕн те пулин йывăра илме сăлтав çук. Хамăн сивĕ те чунсăр кăмăлпа сан туйăмна сӳнтертĕм пулать те – епле айăплама хăям-ха сана? Хаклă çыннăм! Мĕн тери асапчĕ маншăн «эсĕ мана ăнланмастăн, эсĕ ман туйăмсенчен кулатăн» тесе ӳпкеленисене илтесси. Çав вăхăтра мана мĕнле йывăр килнине пĕлесчĕ санăн... Пĕлнĕ пулсан – унашкалах ӳпкелемĕттĕн эс мана <...>

Эсир маншăн хам туйăма хамран пытарасси мĕне ларнине ăнланман, эп Теччĕрен тухса кайни хамран хам тарни пулнине те пĕлмен. Ун чухне эп Сире ним шантарма та пултарайман, мĕншĕн тесен урăх çын умĕнчи тупама сăваплă тесе шутланă, паллах, çав тивĕçĕме туйса тăнă хушăрах эпĕ Сирĕн тата хамăн пурнăçа аркатма пултарайман. Хам шăпама эпĕ пит шеллесех каймастăп, анчах Сирĕн пурнăçăра пăлхатса янишĕн хама нихăçан та каçарассăм çук. Пур çырура та пĕр шухăшах тăсатăп, ма тесен Эсир хăш çырăвне илессине пĕлместĕп. Çитейĕ-ши хăшĕ те пулин?»

Çапла вара, Çеçпĕлпе Червякова хушшинчи хутшăну ансатах мар пулнине, поэт хăй савнă çыннин сăмахĕсене пурне те чăна хуманнине пĕлтĕмĕр. Червякова Çеçпĕл вилĕмĕшĕн хăйне айăплана. Ф.Пакрышень патне янă пĕр çырăвĕнче вăл çапла хак парать: «Вăл мана чăн-чăн юратупа халĕ никам та çавăн пек юратма пултараймасла юратнă. Çапла юратма идеаллă лайăх çынсем кăна пултарнă пулĕччĕç. Пирĕн ĕмĕрте ун йышшисем çукрах ĕнтĕ».

Çеçпĕл çырăвĕсене унăн пурнăçĕпе пултарулăхĕн тапхăрĕсене лартса уйăрса пăхни тĕрĕсрех пулĕ. Теччĕри малтанхи тапхăрта сăвăç юратупа хыпса çунма ĕлкĕреймен-ха. Тĕрĕссипе, Теччĕ тапхăрне икке (малтанхи, кайранхи) пайланин сăлтавĕ поэт А. Червяковăна курнипе çыхăннă. Кайранхи тапхăрта вăл юрату лирики енне сулăнать, çырусене поэзи сăнарлăхне хăюллăн кĕртет. Шупашкар тапхăрĕнчи çырусем иккĕленӳ туйăмĕсемпе тулнă. Сăвăç хăйĕн

шанманлăхне палăртать, аллисене те уснă вăл. Ку вăхăтра Çеçпĕлĕн çемçе чĕри чăн пурнăçри хытă та чул чĕреллисене пула хытах ыратать. Çав хушăрах хăй юратакан хĕрпе сăмах вылятма та халĕ çитет-ха унăн.

* * *

1917–1922 çулсенче проза чи малтан чăвашла хаçатсенче кун çути курнăран унăн жанрĕсем журналистикăпа публицистика жанрĕсемпе тачă çыхăннă. Чылай чухне илемлĕ калав, фельетон, очерк е тĕрленчĕк евĕрлĕ пулса тухнă, публицистикăпа пĕрлешсе кайнă. Çакна уйрăмах И.Ахах йышши хаçатçăсен хайлавĕсенче курма пулать. Ытларах чухне вĕсем вырăсла хаçат материалĕсене куçарса пичетленĕ. Çакă вара чăваш прозин тытăмĕпе проблематикине çавăн чухнехи вырăс публицистики енне хытах сулăнтарнă. И. Ахахăн чылай прози çапларах пулса тухнă. Тĕслĕхрен, «Икĕ виле» калавра çыравçă хĕрлисемпе шуррисем вăрçнине çавăн чухнехи хирĕçлетӳ мелĕпе кăтартнă. Сăрт çинче икĕ виле выртать.

«Камсем-ши ĕнтĕ çаксем? Хăçантанпа пĕр-пĕрне тăшман пулса пурăннă-ши? Мĕншĕн вĕсем çакăнта пĕрне-пĕри чикрĕç-ши? – шухăшлăн ыйтать калуçă. Малалла хуравне хăех пĕлтерет: – Пĕри, иккен, кусенчен – буржуй ывăлĕ, офицер; патша туса лартасшăн, хырăм пысăклатасшăн çĕртен-шывран уйрăлчĕ. Тепри тата – вăл чухăн, ака-суха тăвакан. Тăшман мăшкăлне тӳссе ку таранччен пурăннă».

И. Ахахăн публицистикăран хăпса çырнă хайлавĕсем те пур. Кунта тĕслĕх вырăнне унăн «Сарă хĕр» калавне (1919) илсе кăтартма пулать (хайлава эпир каярах, Хумма Çеменĕн пултарулăхĕпе паллашнă май, пăхса тухăпăр). «Ялти пурнăç» хайлаври (1918) калавçă пĕр ялти хĕрпе калаçни урлă хĕрлисемпе шуррисен хирĕç тăрăвĕ çинчен пĕлме пулать. Хресчене май килнĕ чухне пурте çаратаççĕ иккен. «Çул çинче» тĕрленчĕкре (1919) ял канашĕнчи пуçлăхсем хĕрлисене пулăшас вырăнне ĕçкĕпе айхашса пурăнаççĕ. «Çитрĕ самана» калавра (1919) çыравçă кахал чухăн «çĕнĕлле» пурăнма май тупнинчен тăрăхласа кулать. Çав «пролетариат» совет саманинче питĕ

çăмăллăн пурăнма вĕреннĕ: хăйĕн кумĕ, чухăнсен комитечĕн пуçлăхĕнче ĕçлекенскер, ăна кулаксенчен туртса илнĕ выльăх-чĕрлĕхе парсах тăрать иккен. Çав юлхавсем вара кăмака çинче выртса та чарт! сурса çеç пурăнаççĕмĕн. Кунта эпир И.Ахахăн гуманизмĕ класс хирĕçĕвĕпе пролетариат идеологийĕнчен чылай анлăраххине куратпăр. Çак енчен пăхсан унăн илемлĕх идеалĕ Çеçпĕл Мишшин пултарулăх принципĕсене питех те çывăх пулни курăнса каять.

Чăваш прози 1917–1922 çулсенче анлă утăмсемпе аталанманни çав çулсенче журнал-кĕнеке таврашĕ тухсах кайманнипе те, вăхăт хăвăртрах халăх патне çитерме май паракан жанрсене çул уçса панипе те тачă çыхăннă. Çак тапхăрта чăваш прозин ашшĕ И.Юркин та повеçсенчен кĕске тĕрленчĕксемпе прозăлла сăвăсем тата калавсем енне сулăнать. Çакна пурнăçри улшăнусем питĕ хăвăрт пулса иртнипе çыхăнтарса сăлтавламалла. «Пӳркел ялĕ, аслă ял» прозăлла сăввипе (1921) «Çĕнелни» (1919), «Ака туйĕ» (1921) тĕрленчĕксенче çыравçă чăваш ялĕн ĕмĕртен ĕмĕре куçакан йăли-пурнăçĕпе пĕрлех унăн хаклăхĕсене те илсе кăтартать. Мулпа чун проблемине хăйĕн малтанхи повеçĕсенчех хускатнăскер («Этемĕн пырĕ тутă та куçĕ выçă», «Мул»), К.Иванов хайлавĕсенче те çав ыйтăвах вуласа пĕлнĕскер, вăл миçемĕш хут ĕнтĕ усалпа ырă хирĕçĕвĕ, мулпа чун хирĕç тăрăвĕ (вăл чăваш культуринче тĕп концептсенчен пĕри пулас) пирки шухăшлать. «Мĕне кирлĕ мана сирĕн «лайăх» тенĕ пурнăçăр? – риторикăлла ыйту лартать те лирика харкамçи çавăнтах хурав шырама пуçăнать. – Пуянлăхăр сирĕн ĕмĕрлĕхе мар. Уссăр. Çынна пулас çук чух сирĕн пурлăхăр пурлăх та мар, вилсен хăвăрпа илес çук... Пуян çын пулса пурăниччен лайăх çын пулса пурăнасчĕ. Лайăх çыннăн лайăхне мулпа ылтăн çитес çук».

Пуянпа чухăн хушшинчи хирĕçĕве кăтартни маларах асăннă ĕмĕрсерен тăсăлакан философиллĕ проблемăна социаллă пурнăç, конкретлă вăхăт куçĕпе пăхса курни тесе хакламалла. Çавăн йышши хайлавсем 1917–1922 çулсенче те, каярах та йышлăн пичетленнĕ. Кунта эпир тĕслĕхшĕн Г.Тал-Мăрсан «Пуян Петĕр» калавне (1919) пăхса тухăпăр. Хайлавра хыт кукарлăхпа

палăрнă пуяна мар (Н.Ефремовăн «Пуян Карук» драмине аса илер), чеелĕхпе, сутуçă пултарулăхĕпе çуталса тăракан пуяна сăнласа панă. Вăл ял çыннисене йӳнĕ хакпа тара тытса Хусанти чугун çул станцийĕнче ĕçлеттерет: вагонсенчи тавара малтан ятарлă лупассене йăттарать, каç пулттипе хулари базăна лавсемпе турттартарать. Çĕнĕ власть тата вăрçă пуян чăвашăн пурнăçне хĕстерсе çитереççĕ. Хайхи Петĕр яла таврăнса кунти пуçлăхсене хăйĕн çыннисене лартма май килтерет. Юлашкинчен Çара Кĕркури ертсе пынă ял чухăнĕсем Петĕр çĕрĕпе пуянлăхне туртса илеççĕ. Çыравçă хайлава юмах мелĕпе вĕçленĕ: хĕн-асап кураканĕсем лайăх пурăнма пуçлаççĕ, ырлăхра пурăннисене вара тĕп тăваççĕ.

1917 çул тĕлне ырăпа усал хирĕçĕвĕ хăш-пĕр чăваш интеллигенцине нацисен тата тĕнсен хирĕç тăрăвĕ пек те курăннă. Вырăс православийĕ – вырăссен тĕнĕ, пупсем вара – çав тĕн çыннисем. Наци ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекенсен вырăс тĕнлĕхне, уйрăмах пуп таврашне, сивлеме тивнĕ. Ку тĕлĕшрен уйрăмах И.Тăхти палăрнă. «Пара слов о чувашской литературе до 1917 г.» ĕçĕнче çыравçă шовинистсен çапла шухăшне илсе парать: «Так к чему же толковать о чувашской литературе. Это пустая трата времени. Будет благо чувашам скорее забыть свой язык, принять спасительное православие, перейти на русскую культуру, всосаться, как нежное дитя, в грудь этой миродержавной культуры и больше ничего». И.Тăхти Пуршевичпа унăн йышши кадетсене питлет, «Русское слово» хаçат çырнă çак йĕркесене илсе кăтартать. «Засияет золотой крест на Айя-Софии». Что это значит? «Долой Турцию, долой неверных мусульман» не значит ли «Да здравствует святое православие»?

И.Тăхти пултарулăхĕнче ырăпа усал хирĕçĕвĕ хĕрлисемпе шуррисен, пуянсемпе чухăнсен хирĕç тăрăвĕ пек курăнать. «Пуп таврашĕ» статьяра (1919) çыравçă Хусан митрополичĕ улпутсемпе пĕрле Çĕпĕре тарни çинчен пĕлтерет: «Вăл хура халăха, Христоса ĕненекен мĕскĕнсене – çармăссене, чăвашсене – пăрахнă та улпутсемшĕн кĕлтума тара кĕрĕшсе Çĕпĕре кайнă. Çав митрополит Яков Çĕпĕрте шур кулач çиет пулĕ, улпутсем ăна эрехсем

(«коньяк», «шампански» хаклă эрехсем) ĕçтерсе, ӳсĕрскерне, хăйсемшĕн кĕлтутараççĕ пулмалла». Çак мотив çыравçăн «Ачапа асламăшĕ» калавĕнче те (1919), «Колчак» поэминче те (1919) илтĕнет, калавра вăл лейтмотивах (тĕп мотив) пулса тăнă.

Пупсен çăткăнлăхĕ çинчен Хумма Çеменĕ, Ç.Элкер тата ытти прозаиксем те çыраççĕ, вĕсене уççăн питлеççĕ. Ку тĕлĕшрен Ф.Павловăн «Ишекелле» ятлă диалогсенчен йĕркеленĕ кĕске калавĕ (1919) тенденцисĕртерех калăпланса тухнă. Кунта автор позицийĕ уççăн курăнмасть, ун вырăнне Çитăр ятлă харкамçă калаçать. Ишеке çурта лартма каякан тĕшмĕшлĕ çынна (вăл хăйĕн хăш-пĕр енĕсемпе Ухтерккене аса илтерет) Çитăр революци, социализм çинчен ăнлантарсан лешĕ акă мĕнле ыйтать: «Мĕскер вăл социализм? Çимелли-и вăл?» И.Тăхтин «Ачапа асламăшĕ» калавĕнче те çак сăмах пĕлтерĕшне тепĕр май çавăрса пăхни (чăваш çыртса пăхмасăр ĕненмест тенешкел) пурччĕ. Çав мел каярах Тăхти прозаик пултарулăхĕнче никĕсе хывăнать, ун стилĕн тĕп палли пулса тăрать. Ф.Павлов калавĕнчи харкамçăсем хăйсен шухăш-кăмăлне улăштармаççĕ. Çитăрăн социализм мĕн япала пулни çинчен ăнлантарнă сăмахĕсене итлесе тăнă çын акă мĕн калать: «Пĕлес çук, пулĕ те пулĕ. Но-о! Каям-ха эпĕ Ишекеллех. Сыв пул, хăта!» Кунта вăл ӳкĕте кĕмест, хăй шухăшланине çав-çавах тăвать – чиркĕве çурта лартма вĕçтерет.

Трубина Марфин калавĕсем вара питех те синкер ĕçсемпе вĕçленеççĕ. «Лапчăк пӳртре» калавра (1921) ачаллă салтак арăмĕ вилни çинчен чуна çӳçентермелле кăтартса панă: «Ача чун хавалĕпе амăшне вăратать. Амăшĕ пĕрре те шарламасть, лăп выртать. Ак уйăх унăн пичĕ çине ӳкрĕ. Çав арăмăн ырхан пичĕ сарăхса выртать. Куçĕсем путса кайнă, нихăçан та урăх уçăлас çук. Тути-çăварĕ хуралса выртать, нихăçан та урăх уçăлса хăй ачине ăшă сăмах калас çук. Ачам, ан чĕн, ан вăрат аннӳне! Эсĕ ăна вăратас çук! Санăн аннӳ вăрăм ыйха кайнă. Эсĕ çывăрнă чух вăл çĕрле пĕр-пĕчченех вилсе выртнă».

«Эрех çулĕ» калавĕнче (1922) çыравçă эрехпе айхашакан çынсем пӳкле вилĕмпе вилнине чуна сăрлатмалла ӳкерсе кăтартнă. Ĕçкĕç Ваççа хăйĕн арăмне хĕнесе хĕне ярать, пӳрт тулли ачи-пăчине тăлăха хăварса вĕсен амăшне çĕре кĕртет. Калав вĕçĕнче урай çума каçнă кӳршĕ арăмĕ тăлăхсене çапла лăплантарать: «Эрехпе тăлăх турата, хурлăха юлни эсир çеç мар, ачасем, эрехĕн çулĕ пысăк унăн, эрех çулĕ – куççуль çулĕ...»

1917–1922 çулсенчи чăваш прозин утăмĕсем пысăках мар пулсан та çав çулсенче чылай çыравçăн малашнехи пултарулăхри стилĕ çирĕпленсе те курăмланса пынă темелле. И.Тăхти сăмах пĕлтерĕшĕсене улăштарса вылятасси-шахвăртасси, ухмаха пересси енне сулăнать, Трубина Марфине кăмăл-сипет ыйтăвĕсем канăç памаççĕ, вăл кил-йыш синкерлĕхĕ пирки педагог пек шухăшлать. Харкамçăсене вĕсен каласăвĕ урлă хаклас, тĕп шухăша та çапла майпа палăртас туртăмлă Ф.Павлов вара драматургипе музыкăна пуçĕпех куçса каять.

Усă курмалли литература

Родионов В.Г. Энергия, воплощенная в слово // Михаил Сеспель. Собрание сочинений. – Чебоксары, 1989. – С. 8–46.

Поэтика Сеспеля: Сб. статей. – Чебоксары, 1991.

Революция в художественном сознании начала XX века и поэзия Михаила Сеспеля. Кн. 1. – Чебоксары, 2001.

Хлебников Г.Я. Чăваш совет литературин поэтики. Малтанхи тапхăр (1917–1922). – Шупашкар, 1990.

Иккĕмĕш сыпăк

1923–1930 ÇУЛСЕНЧИ ЛИТЕРАТУРА

Иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенче пултарулăх ĕçĕнче Раççей çыравçисем хăйсене ирĕклĕрех туйнă. Йышлăн йĕркеленнĕ ушкăнсем пĕр-пĕринпе хирĕçкеленĕ пулсан та вĕсенчен чылайăшĕ совет влаçне йышăннă, унпа килĕштерсе ĕçлеме тăрăшнă. Ун чухне пултарулăх меслечĕсене пĕрпеклетесси пирки калаçсах та кайман.

30-мĕш çулсен пуçламăшĕнче совет ӳнерĕнче тĕпре «социализмла реализм» меслечĕ пулмалла текен шухăш хуçаланма пуçлать. Ку ĕнтĕ çыравçăн сăнарлă сăмахлăхпа усă курса çĕнĕ йĕркешĕн кĕрешмеллине, сăнарсене революцилле аталанура кăтартмаллине пĕлтернĕ. Унăн хайлав содержанине малашне яланах класс кĕрешĕвĕпе, «нацилле тĕшмĕшлĕхсене» пĕтернипе çыхăнтармалла иккен. Историлле оптимизм, коммунизмла эстетика идеалĕ пултăр хайлавра, партилĕх тапса тăтăр унта.

Чăваш çыравçисен тĕрлĕ пĕрлешĕвĕсем. Ушкăнланăвĕсемпе хирĕçĕвĕсем. 1923 çулхи апрельте А.Милли пуçарнипе «Чăваш çыравçисен ушкăнĕ» ятлă пĕрлĕх чăмăртаннă. Унта Н. Шелепи, Ф. Павлов, Ç. Элкер, Н. Ваçанкка тата ытти паллă çыравçăсем те кĕнĕ. Çак çыравçăсен пĕрлĕхне коммунист мар çын ертсе пыни обком ĕçченĕсене хытах сехĕрлентернĕ. Вĕсем А.Миллие пуçлăхран кăлармалли меллĕ самант шыранă. Çав

«переворот» еплерех пулса иртни пирки тепĕр вунă çултан хăйĕн аса илĕвĕнче Ç.Элкер тĕплĕн çырса кăтартнă.

Н. Золотовпа унăн ĕçтешĕсем Миллие вăл класлăха асăрхамасть тесе, чăваш илемлĕ литературишĕн пурин те пĕрле тăрăшмалла текен тĕллев лартнишĕн айăпланă. Халăх сăмахлăхне, совет тапхăрĕччен çырнă хайлавсене, çав шутра К. Ивановăн «Нарспине» те, йышăнасшăн пулман çав «партийцăсем». Вĕсем йĕркеленĕ «Канаш» союза (1923) парти обкомĕ хăй ертсе пынă, тĕрлĕ хушусем парсах тăнă. Çапах та малтанхи çулсенче çыравçăсем хăйсен ирĕклĕхне çухаттармаççĕ-ха. «Литература тумĕ (форми) тĕлĕшĕнчен парти нихăш организаци майлă та пулмасть, – ăнлантарать Хумма Çеменĕ «Сунтал» журналта (1925. 7 №). – Ку тĕлĕшрен тĕрлĕ ушкăнсем, юхăмсем ăмăртса ĕçлени те кирлĕ... Çырнисене çаптарас ĕçре те парти нихăш организацие те, чи пролетарлă шухăшланине те ***монополи*** (палăртни авторăн. – *В.Р.*) пама пултараймасть, апла туни пĕтĕм пролетари литературине пĕтерсе лартни пулать».

1926 çулта «Канаш» Раççейри пролетари писателĕсен ассоциацине (РАПП) кĕрет. Тепĕр çултан «Канаш» союз вырăнне Чăваш пролетари писателĕсен ассоциацине (ЧППА) йĕркелеççĕ. Çакăн хыççăн уйрăм çыравçăсене идеологи тĕлĕшĕнчен айăпласси вăй илет. П. Хусанкайпа В. Рсая, В. Паймена, Г. Комиссаров-Вантере, Митта Ваçлейне вăрçаççĕ. Ку тĕлĕшрен уйрăмах Н. Золотовăн «ӳсĕм çулĕ çинчи чăваш литератури» ятлă статйи (Сунтал. 1930. 7–8 №) палăрса тăрать. Унта вăл «есенинлăхпа», «либераллă, земствăллă тата буржуазиллĕ национализмлă» шухăшсемпе кĕрешет.

1930 çулхи сентябрьте Чăваш обкомĕн бюровĕ П.Хусанкайăн «Чăваш калавçине – Петĕр ывăлĕ Мĕтри Юмана – «вак буржуаллă» сăвăçран – Хусанкайран – Уç çыру» сăвăлла хайлавне сӳтсе явать. Сăвăça парти политикин тĕп çул-йĕрне тĕрĕс мар çутатнă тесе айăплаççĕ. Çавăнтах «Сунтал» редакцийĕпе Чăвашлит (хăйне евĕр цензура органĕ) инспекторне хытах асăрхаттарса хăварнă. Çыравçăсен пĕр ушкăнĕ тата хаяртарах çырнă:

«Юлашки вăхăтра пичетленекен сăввисем урлă («Паянхи поэма», «Уç çыру») Хусанкай контрреволюцилле платформа çине икĕ урипех хăпарса тăни курăнать... Кулаксен идеологĕсем пĕр-пĕрин патне пĕр фронт тăвас тĕлĕшпе анчах çырма пултараççĕ. Кĕç ак Хусанкай Рсай патне çырĕ. Вара кулак писателĕсен чăн союзĕ пулса тăрать те. Çавăнпа та Хусанкайăн «Уç çырăвĕ» чăваш литературинче класс тăшманĕ пуçне çĕнĕрен çĕкленине кăтартать».

Çыравçăсене икĕ ушкăна уйăрса пăхма пуçлаççĕ. В.Рсайпа П. Хусанкая, Г. Вантерпе М. Юмана, М.Юрьевпа Хумма Çеменне пролетари литературине хирĕç пыракансен ретне кĕртеççĕ, вĕсен хайлавĕсене тиркеççĕ. Классикăна та вăрçаççĕ. «Нарспи» поэма – чи малтан реакциллĕ, – çырать Кели критик. – Поэма геройĕсем пĕри те пирĕншĕн юрăхлă мар, мĕншĕн тесен унта хăйĕн класлă вырăнне ăнланса илес текен ĕç çыннисене «геройласа» кăтартман. Ку чăн малтан кулакла произведени».

Çакнашкал лару-тăрура хăшĕ-пĕрин хăйсен çук айăпне халăх умĕнче йышăнма тивет. В.Рсай çыру пичетлет, унта вăл хăй малтан çырнисем «ĕç халăхĕшĕн усăсăр, хăшĕсем сиенлĕ» тесе йышăнать. «Пушар» йăнăшĕсене Липединскин «Герой çуралнинчи» йăнăшсем манерлĕ тесе шутлатăп, – хăйне хăй суд тăвать çыравçă. Çавăнтах хăйĕн пултарулăхĕнчи чи лайăх енне те сивлеме тивет унăн. – Анчах ман йăнăшсем тата пысăкрах. Унта эпĕ «психологизм» меточĕпе çырса пырса хам сисмен çĕртен кăтартма шухăшланă идейăран пăрăнса шалалла туртса кĕрсе кайнă. Урăхла каласан, «психологизм» меточĕ мана хăй тыткăнне илнĕ пулнă».

1932 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕнче партин Тĕп комитечĕ «Литература организацийĕсене урăхлатса çĕнетесси çинчен» йышăну кăларать. Унта вак ушкăнсене пĕтерсе пĕр пĕтĕмĕшле пĕрлĕх – совет çыравçисен союзĕ йĕркелемелли çинчен каланă. «Пăрахăçа тухать-и-ха вара пролетари литературишĕн кĕрешес задача? – ыйту лартать канаш пуçлăхĕ Н.Золотов. – Камсем тăма пултараççĕ совет писателĕсен союзĕнче? Вантер-Юмансем кĕреççĕ-и унта?»

1934 çулхи июнĕн 11–13-мĕшĕсенче çĕнĕ Союза пĕрлешнĕ чăваш çыравçисен I срезчĕ пулса иртет. Çав çулах Мускавра Пĕтĕм Союзри писательсен I срезчĕ пухăнать. Унăн ĕçне чăваш çыравçисем те хутшăнаççĕ.

* * *

Н.Шупуççынни 1930 çулта «Чăваш çырăвĕн ушкăнĕ» çинчен çапла çырнă: «Это общество вырабатывало свою платформу, положив во главу угла восстановление чувашской старины, с сохранением чистоты чувашского языка и создания особой чувашской националистической культуры. Оно боролось против нововведений в чувашском языке... Но самое главное это то, что общество воевало за представление полной свободы писателям в идеологическом отношении, за аполитичность писателей и отрицало партийное руководство в литературе».

Н.Шупуççынни – халăх сăмахлăхĕпе чи тухăçлă усă курнă çыравçăсенчен пĕри. Вăл çав çулсенче поэзире халăх сăвă форми (силлабика) çеç пулмалла тесе çапăçнă, çав хушăрах А.Миллие шăп та шай çав туртăмшăн айăплать.

Критик революцичченхи литературăна ăш пиллĕн йышăнать, çав хушăрах А.Миллие пĕр пĕтĕмĕшле чăваш культури (литератури те!) тăвасшăн тесе ятлать (вăл тапхăрта фольклор та, литература та кашни класăн хăйĕн тесе ăнлантарнă).

Куртăмăр ĕнтĕ, Н. Шупуççыннин сăмахĕпе ĕçĕ пачах та пĕр килмеççĕ. Кунта вăл хăйĕн оппонентне мĕнле пулсан та айăплас тесе тенденциллĕ калаçни курăнать. Ватă çыравçă мĕншĕн çапла хăтланнин сăлтавне тупма йывăрах мар: А. Милли обществине çапса аркатаканĕсенчен пĕри вăл хăй пулнă.

Н.Шупуççынни общество йĕркелекене вăл чăваш чĕлхине аталантарасшăн мар тесе ятлать. Чăннипе вара, çак хирĕçӳ литература чĕлхи никĕсне малтанхи пекех анатри чăвашсен калаçăвне, е çĕнĕлле, тури чăвашсен калаçăвне тĕпе хурасси тавра пынă. Çакăн çинчен Н. Шупуççынни 1933 çулта хăех çырать: «Миллишĕн чăваш аваллăхĕпе чăваш кив йăлисем

никĕсре шутланнă май революцичченхи миссионерлă кĕнекесене çырнă «анатри» – «мал енчи» чĕлхе çеç чăн чăвашăн «тĕп чĕлхи» шутланнă».

Малалла автор чĕлхене анатрипе тури çине уйăрса тиркени «аваллăхăн шăршлă, кулаклă принципĕ» пулни çинчен калать. Ку ĕнтĕ каллех Милли пахчине пенĕ чул. Çав хушăрах çакă паллă: 1929 çулхи кăрлачăн 4-мĕшĕнче Н.В. Шупуççынни Мускавра «Главнейшие этапы развития чувашской литературы» ятлă доклад тунă. Çав докладра вăл чăвашсене шăпах та ĕнтĕ хăй каланă пек хирĕçлетсе кăтартнă. Ахальтен мар С.Коричев ăна çавăн чухне вирьялсемпе анатрисене хирĕçлетме юраманни, ку вăл чухăнпа кулака пĕр-пĕринчен уйăрма кансĕрлени пулать тесе ăнлантарнă.

Н.Шупуççынни А.Миллие вăл литературăна парти ертсе пырассине йышăнмасть тесе айăплать. Парти ертсе пынине критик ун чухне питĕ ансăр ăнланни паян аван курăнать. Çапах та çав сăмахсен хыçĕнче акă мĕн выртнă. 1923 çулхи «Ушкăн» канашĕн членĕсенчен чылайăшĕ парти ретĕнче тăман пулнă-ха, çав хушăра ăна çапса аркатаканĕсем (Н. Шупуççынни, Д. Элмен, Н. Золотов) партин ертсе пыракан органĕсенче ĕçленĕ. Кунта çак ушкăн хăйĕн таса мар ĕçне парти интересĕпе витĕнсе тума хăтланни куç кĕрет. Ахальтен мар ĕнтĕ вĕсем, йĕркеллĕ пуçтарăннă тата пуçланнă конференцие Троя учĕсем пек кĕрсе, ăна шалтан аркатса тăкаççĕ. Ç. Элкер çакăн çинчен таса чунпа аса илет: «Акă Элменпе Золотов Н. темскер шăппăн каласса илеççĕ те, Элмен театр умĕнче тăракан халăх еннелле пăхса кăшкăрать: «Итлĕр!.. Партийцăсемпе комсомолецсем, пурте ман хыçран «Камчатка» çине – вăн çав больница хыçне!.. Унта тăватпăр канашлу...» – тесе кăшкăрчĕ. Милли обществин членĕсенчен çурри ытла вĕренекенсем – вĕсем пурте пекех комсомолецсем. Элмен кăшкăрсанах нумайăшĕ ун хыççăн утса кайрĕ...Театр умне Миллипе пĕрле пĕр 5–6 çынран ытла юлмарĕ. Элменпе Золотов хăйсем тавра пухăннă çынсене Милли программин йăнăшĕсем çинчен каласа параççĕ...»

Д.Элменпе Н.Золотов А.Миллие хирĕç тăнин тĕп сăлтавĕсем çинчен малтан çырнăччĕ-ха. Мĕншĕн вĕсемпе пĕрле халăх сăмахлăхне юратакан

Н.Шупуççынни те пулнă-ха? Шел пулин те, çак паллă писатель совет тапхăрĕнче тӳрĕ чунлăн юлма хал çитереймен. Парти ретне кĕнĕскерĕн çав çулсенче тĕрлĕ «çемçе пукан» çинче ларма тивнĕ, çавна май вăл çиле май сурма хăнăхнă. Ун чухне çилĕ улшăнсах тăнăран вараланчăксем те тавраллах сапаланаççĕ. Ĕнер калани малтанхине, паянхи ĕнерхи сăмахсене хирĕçле пулса тухнă. Тĕслĕхрен, 20-мĕш çулсенче Н.Шупуççынни силлабо-тоникăна пуçĕпех хирĕçленĕ, поэзи пуласлăхĕ силлабикăра тесе ĕнентернĕ. Рапповецсем хăйсен чавсисемпе хытах хиркеленсен, вĕсем халăх сăввин формине буржуази культуринче курсан (ку ĕнтĕ ушкăн интересне идеологи интересĕпе витĕнсе хӳтĕленин тепĕр тĕслĕхĕ) Шупуççынни пачах урăх юрă юрлама пуçлать: «Социализмлă стройкăн хаваслăхĕ дисциплинăсăр пулаймасть; социализмлă сăвă та татса паракан ритмлă тоника (силлабо-тоника. – *В.Р.*) стихне силлабика стихĕнчен мала хурса йышăнать».

Н.Шупуççынни – чăвашсен революцичченхи литературинче паллă вырăн йышăнакан çын. Кунта каланисем унăн çав тапхăрти пултарулăхне пачах та чухăнлатмаççĕ. Çав хушăрах вĕсем чăваш интеллигенцийĕн тепĕр трагедийĕ те пуррине аван кăтартса параççĕ. Пĕрисен инкекне (Мĕтри Юманăн, Г. Комиссаровăн, А. Миллин т.ыт.те) Октябрьти революцие çийĕнчех йышăнманнинче (çак инкек Раççейри чылай интеллигентшăн типлă пулнă) курмалла, теприсенне – хăйсен çăварĕнчен тухнă сăмахсене яланах çӳлтен антарнă резолюцисемпе пĕр килтернинче. Шăп çавăн йышшисем Сталина та ал май пулнă, вĕсем çине таянса вăл хăйĕн авторитарлă влаçне тĕреклетнĕ. «Разделяй и властвуй» принцип тата «Класс кĕрешĕвĕ кунран-кун хĕрсе пырать» текен лозунг Н.В.Шупуççынни йышши чăваш интеллигенцийĕн пуçне çавăрттарнă, ĕнерхи юлташа сутма хистенĕ.

Мĕнлерех тытнă-ши хăйне çак лару-тăрура Ç.Элкер?

Чăваш халăх поэчĕ партин XX срезчĕ хыççăн 30-мĕш çулсене аса илнинче çав çулсенче хăй тунă пĕр йăнăшшăн (репрессиленĕ писательсене мĕншĕн айăплани çинчен çырса кăларнă статьяшăн) питĕ хытă ӳкĕнсе çырнă.

Тӗрӗссипе, ун чухне ăна çав статьяна çырма ирӗксӗрлесе хистенӗ-мӗн. Çав тапхăртах поэтăмăра 1923 çулта А.Милли обществинче пулнăшăн тата сăвăсенче «чăваш халăхӗ» тесе çырнăшăн (çапла çырнине ун чухне национализм, чăваш обществи хире-хирӗç классенчен тăнине йышăнманни вырăнне хунă) айăпласа партирен кăларма пикенеççӗ, Берия йӗрлевçисем канăç памаççӗ.

Ç. Элкере тапăнасси маларах, 1933 çултах, пуçланнă. Çав çулччен вăл «Сунталăн» секретарӗнче пулнă, явапла редакторӗнче вара А. Петтоки ӗçленӗ. 1932 çулта парти Тӗп комитечӗн литература организацийӗсене тепӗр евӗрлӗ улăштарма йышăннă постановленийӗ тухнă хыççăн пирӗн критиксем çӗнӗ юрă тапратаççӗ: малтан пролеткультçăсене мухтанă пулсан, халӗ вӗсене хурлама пуçлаççӗ. Аса илер-ха Н. Шупуççынни статйинчи пӗр вырăна: «Çапах та творчество ӗçӗ малалла хăвăртрах кайма тапраннă хушăрах, парти Чăваш обкомӗн культпроп пуçлăхӗ Кузнецов юлташ каланă пек, хăш-хăш писательсем хушшинче урлă-пирлӗ арпашăнса кайни курăнчӗ... Çав урлă-пирлӗ арпашнийӗ çӗрӗк либерализм ăшне кӗрсе кайса ют класлă идейăсем кӗрсе кайнипе килӗштерни пулса тăрать. Вăл оргкомитета ертсе пыракан юлташсенчен пӗри – Петтоки юлташ парти Тӗпкомӗ постановленине тӗрӗс мар «каялла чакни» тесе ăнланнинчен килнӗ... Петтоки юлташ çавăн пек йăнăш ăнлантарнине парти обкомӗ пит татăклă кăтартса çӗмӗрсе тăкрӗ» (Сунтал. 1933. 3–4 №).

Кӗçех А.Петтокие редактортан кăлараççӗ, ун вырăнне Н. Шупуççыннине лартаççӗ. Çав уйăхсенче Ç. Элкерӗн пурнăçӗ те чаплах пулман-тăр. Редактор ăна идеологи йăнăшӗсемпе хăратса тенденциллӗ статья çырма хистет (кунта сăмах «Милли ушкăнӗнчен – «Канаш» союзне» статья çинчен пырать). Те статья килӗшменрен, те ытти сăлтава пула – майӗпен Ç. Элкере секретарь ӗçӗнчен (октябрьте), çулталăк вӗçӗнче редколлегирен те кăларса пăрахаççӗ, ун вырăнне В.Алакӗре тата Н.Кириллова (Патмана) илеççӗ.

Н. Шупуççыннипе Ç. Элкер хушшинчен хура кушак чупса кайнине чăваш халăх поэчӗн «Сунталта» пичетленнӗ «Кăтартуллă республикăшăн,

произведенисен пахалăхĕшĕн» (1933. 8 №) статйин историйĕнчен аван курма пулать. Çав статьян малтанхи вариантĕнче Ç.Элкер «Еркĕн» поэма авторне хытах вăрçнă иккен. Критикăна чăтма пултарайман Шупуççынни вара статьяри хăй çинчен çырнă вырăна чĕрсе пăрахнă. Çакна эпир Ç.Элкерĕн сыхланса юлнă ал çырăвĕсемпе танлаштарса пăхсан аван куратпăр. «Е тата Шупуççыннин «Еркĕн» поэмине илетпĕр, – тесе çырнă Ç.Элкер хăй статйин малтанхи вариантĕнче. – Ку пысăк поэмăна Шупуççынни васкаса, ик-виçĕ уйăх хушшинче çырса пĕтерчĕ. Çавăнпа та поэмин ритмики тĕрĕс мар, сăвă йĕркисем ни силлабикăпа, ни тоникăпа çыхăнман начар сăмах куписем. Тата пуринчен ытларахăшĕ – çак поэмăра панă ĕççем вĕсем, чăваш халăх историйĕ енчен илсен, ниепле те пулма пултарайман пушă фантазиллĕ шухăшсем кăна».

Октябрь уйăхĕнче Ç.Элкерĕн çак йĕркесене кăларса пăрахнă статйи тухать, çав вăхăтрах вăл яваплă секретарь ĕçĕсене туса пыма та пăрахать.

Мĕн çырнă-ши Ç.Элкер «Чăваш çырăвĕн ушкăнĕ» çинчен? Н.Шупуççынни пекех питленĕ-ши вăл ăна е урăхларах каланă?

«Чăваш илемлĕ литератури тĕлĕшпе ĕçлекенсем йышланаççĕ пулин те, ку вăхăтра Шупашкарта (çавăн пекех ытти хуласенче те) вăл литераторсене пĕрлештерсе тăракан нимле организаци таврашĕ те çукчĕ-ха, – аса илет Ç.Элкер. – Ун пек организаци тума хăтланнисем 1921–1922 çулсенче Шупашкарта (Общество ревнителей чувашской литературы) тата 1920 çулта Чĕмпĕрте (литкружок) пулнă пулин те, кусен ĕçĕсем ăнăçман. Шупашкар организацийĕ хăйĕн ĕçĕсене те кăтартман. Чĕмпĕрти литкружок çеç 2 номер «Атăл юрри» ятлă журнал кăларса хăварнă».

Çак йĕркесем журнал редакторне ниепле те килĕшме пултарайман. Пĕрремĕшĕнчен, унта автор А.Милли ĕçне пысăка хурса хаклать. Иккĕмĕшĕнчен, 1922 çулта Н.Шупуççынни Шупашкарти обществăра хăй тăнă, эппин, ун ĕçĕн пĕлтерĕшне хакламан пек пулса тухнă.

Малалла Ç.Элкер А.Миллие «Хыпарта» ĕçленĕ çулсемччěнех лайăх пĕлни, «Атăл юрри» вăл пуçарнипе тухни, хăй Милли чăвашсен пулас

литераторĕ тесе хавасланни, ăна хисеплени çинчен çырать. Çав хушăрах статья авторĕ А.Милли чăваш литературипе интересленекенсене еплерех шыраса тупса хăй тавра пĕрлештерме тăрăшни, хăйĕн укçипе устав кăларни, пичет тутарни çинчен ăшшăн каласа парать. «Рабфакра Милли ушкăнне çырăнас текенсем 30 çынна яхăнах, – аса илет Ç. Элкер. – Уйрăм паллă çынсенчен пирĕн ушкăна Иван Мучи, И.Максимов-Кошкинский, Ф.Павлов, облĕçтăвком секретарĕ Г.Михайлов тата урăххисем те кĕме пулчĕç».

Апрелĕн 29-мĕшĕнче организацилле пуху пуçтарăнать. Пухура 40–50 çынна яхăн пулать. Вĕсем А. Милли докладне итленĕ хыççăн «Ушкăн» уставне йышăнаççĕ, ертсе пыма канаш уйăраççĕ: Милли (председателĕ), Ваçанкка (секретарĕ), Элкер, Шелепи тата Аверкиев (членĕсем).

Çакăн хыççăн «Ушкăн» канашĕ чăваш писателĕсен 1-мĕш конференцине хатĕрленме пуçлать. Ç.Элкер çав тĕлĕшпе А. Милли мĕн чухлĕ тăрăшни, вăй хуни çинчен аса илет. Малалла вăл общество мĕншĕн саланса кайнин сăлтавне лайăх кăтартса парать. «Çак вăхăтрах, – тет вăл, – Милли хăй обществи çине Элменпе Золотов Микулайĕсем енчен сиввĕн пăхнине, унăн программне тиркенине те аванах пĕлсе тăрать. Акă пĕлетпĕр: эпĕр конференци пухма хатĕрленнĕ тĕлеллех, июнь уйăхĕнче, Элменпе Николай Золотов та хăйсем уйрăм чăваш писателĕсен ушкăнĕ тума хатĕрленеççĕ иккен».

Конференци уçăлнă кунсенче Элменпе Н.Золотов А.Милли «Ушкăнне» хирĕçле «Канаш» союз туса хураççĕ, çапла майпа оппозицине кĕрсе каяççĕ. Мĕнле майпа çĕнтереççĕ-ха вĕсем? Чи малтанах, конференцине саламланă пек туса А.Милли хыççăнах сăмах илеççĕ. Элмен парти Чăваш обкомĕ ячĕпе, ыттисем «Канаш» хаçат тата союз ячĕпе салам сăмахĕ калама тухаççĕ те «саламсене каланă хыççăнах, сасартăк Милли программине тиркесе, унăн обществине çĕмĕрмешкĕн тытăнаççĕ».

Ç. Элкер Милли оппоненчĕсен сăмахĕсене те илсе парать: «Милли программĕ вăл хытса шăнса ларнă чăваш аваллăхĕ çинче тапăртатса тăрать... Милли чĕрĕлекен çутă, çĕнĕ пурнăçшăн тăрăшмасть... Милли национализм енне туртăнать!» – тесе кăшкăраççĕ трибуна çинчен хĕрсе кайнă Элменпе

Золотов Н. Пирĕн Милли аптăрать, вăл хăй программĕшĕн вирлĕн хирĕç тăраканни те пĕртен-пĕр çын анчах. Анчах ăна та лайăххăн калама ирĕк памаççĕ».

Акă епле пулса иртнĕ Милли обществине аркатни. Паллах, асаилӳре аркатуçисене тӳрккеслĕх енчен кăтартни журнал редакторне килĕшме пултарайман. Кунта вăл автор Миллие ăш пиллĕн ӳкернине туйман мар ĕнтĕ. Тата çав ушкăн çапла çăмăллăн арканса кайнă тени ун чухнехи «класс кĕрешĕвĕ хаярланса пырать» тенипе ниепле те çураçман-çке! Çакна Н.Шупуççынни аван ăнланнă. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл пĕр номер маларах çеç, Д. Данилов тĕпчевçĕпе тупăшса, лешĕ Милли обществи хăйне хăй арканнă тенине хирĕçлесе, çапла калать: «Çапла литература фронтĕнчи çапăçăва кăтартни нимĕн чухлĕ те чăннине кăтартмасть. «Теорилле» пулма пултарнă тесе шухăшлани оппортунистла теорисене «ют класс организацийĕсемпе вĕсен идейисем çапăçусăрах пĕтме пултараççĕ» тенине тĕреклетеççĕ. Çапла ăнлантарни писательсен речĕпе вулакан массăсен пуçĕсене пăтратни кăна пулса тăрать».

Н.Шупуççыннин çак шухăшне Ç.Элкер тепĕр номертенех хирĕçлет, А.Милли нимĕнле «ют класс организацийĕ» те йĕркелеменнине кăтартса парать. Статья вĕçĕнче вăл Миллие Н.Золотовпа унăн юлташĕсем мĕншĕн айăплани çинчен ăнлантарать: «Милли обществипе «Канаш» союзĕ хушшинчи уйрăмлăха эпĕ конференци хупăннă чух Миллипе Золотов Н. хушшинче пулнă пысăк тавлашуран тин сиссе çитрĕм, – тесе çырать вăл малалла каланă шухăш хăйĕн пулманни, вăл унпа килĕшмесен те пултарни çинчен шахвăртса. – Ку уйрăмлăх «Канаш» союзĕ «Канаш» хаçат платформи çине тăрса чăваш илемлĕ литературинче класлă çул-йĕршĕн кĕрешес, малашне социализмла пурнăç тăвассишĕн кĕрешес задачăсене лартнинче. Милли хăй обществи умне, нимĕнле класлăха та асăрхамасăр, чăваш илемлĕ литературишĕн пурте пĕрле (националистсем те, кулакла писательсем те, пролетарла писательсем те) тăрăшас задача лартнă».

Паянхи кун Миллие айăпланӑ çак сăлтавсем ытла та айван, куштанлану çеç пулни куç умĕнчех. Е тата «Милли чăвашсен авалхи йăлисене идеализацилесе вĕсем умĕнче пуç тайнă» тенине илсе пăхар. Çав çулсенче чиркӳсене аркатнă, масар-çăвасене чыссăрлатнă, ырă йăла-йĕркене тăпăлтарнă, халăх сăмахлăхне пуянсемпе чухăнсенни çине уйăрнă, «чăваш халăхĕ» теме те чарнă пулнă.

Халăхăмăрăн ырă йăлисемпе фольклорăн хакне паянхи кун эпир пĕлсе çитрĕмĕр ĕнтĕ. Çавăнпа та ун чухне Н.Золотов мар, А.Миллиех тĕрĕс пулнă тесе калама пултаратпăр. Вăл çав çулсенче халăх сăмахлăхне, çи-пуçне, археологи палăкĕсене ялтан яла пĕччен пухса çӳренĕ, вĕсене Чĕмпĕрти педтехникум тата Шупашкарти краеведени музейĕсене панă. Экспедицине вăл 1922 çулта тухса кайнă та сакăр уйăхран Шупашкара 44 кĕпе, 3 пин çавра юрă пухса таврăннă. 1923 çулта Пĕтĕм Союзри ял хуçалăх выставкине хутшăннă, унта пĕрремĕш степеньлĕ диплом илме тивĕçнĕ.

А.Милли хăй чăваш ялĕсенче çӳрени, унта мĕн-мĕн пухни çинчен «Чăваш çĕршывне тĕпчекен ушкăнăн» («Общество по изучению Чувашского края») 1923 çулхи ака уйăхĕн 1-мĕшĕнче иртнĕ ларăвĕнче каласа парать. Шăп çав командировка хыççăн пуçăнать те ĕнтĕ вăл «Чăваш çырăвĕн ушкăнне» чăмăртама. Çав ушкăнăн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри халăх сăмахлăхĕпе йăлисене пухса тĕпчесси, пултарулăхра вĕсемпе усă курасси пулнă та ĕнтĕ. Çак ырă ĕçе А.Милли тăшманĕсем, идеологи сферине тӳнтеррĕн куçарса, «аваллăха идеализацилени», «класлăха йышăнманни» вырăнне хунă. Политикăлла ярлăк çакни вĕсене хăйсен авторитарлă влаçне çирĕплетме, хăйсем çеç тĕрĕс тума пултараççĕ тесе калама кирлĕ пулнă.

А.Миллин «Чăваш çырăвĕн ушкăнĕ» еплерех йĕркеленсе саланнине пăхса тухнă май эпир чăваш культура историйĕнчи тĕрлĕ пулăмсене, вĕсен чăн сăлтавĕсене асăрхама пултартăмăр.

Усă курмалли литература

Родионов В.Г. «Чăваш çырăвĕн ушкăнĕ» // Чăваш литератури. Поэтикăпа стиль ыйтăвĕсем: Ăслăлăх тĕпчевĕсен пуххи. – Шупашкар, 1989. – 41–60 с.

1923–1930 ÇУЛСЕНЧИ ДРАМАТУРГИ

Чăваш тĕп театрĕ. 1921–1922 çулсенче Чăваш тĕп театрĕ йывăрлăхсене кĕрсе ӳкет: укçа-тенкĕ çитмен, театра халăх сахал çӳренĕ. Çак лару-тăру чăваш драматургĕсен чунне ыраттармаллипех ыраттарнă. 1922 çулхи утă уйăхĕн 27-мĕшĕнче «Канаш» хаçатра Ф.Павлов «Чăваш тĕп театрĕ» ятлă статья пичетлет. Унта сăмаха вăл ытарлă йĕркесенчен пуçлать: «Тĕнчере мĕн кирлĕ, мĕн пурнакан япалан пурнас тĕсĕ пур, çав пурнать те малалла каять. Мĕн тĕлсĕр пурнать, мĕнĕн пурри-çукки никама та кирлĕ мар, çав пĕтмелле, хăçан та пулсан куçран çухалмалла теççĕ хăш-хăш ăслăлăх çыннисем».

Кунта çыравçă дарвинизмпа диалектика вĕрентĕвĕсене асра тытса каланă теме май пур. Малалла Ф. Павлов хăйĕн шухăшне палăртать. «Вăл, тен, тĕрĕсех-и, анчах хăш чухне кирлĕ япала та, тем чул усăлли те кĕтмен çĕртенех пĕтсе ларать». Сăмаха театр çине куçарса автор лару-тăрăва уçăмлатса та сăнарлатса кăтартать: «Хĕллеренпе такăнкаласа пыракан театр çуркунне, курăк-чечек чĕрĕлнĕ чух, пĕтĕм тĕнче савăнса ешернĕ чух, хăрса ларчĕ, çава тухсан йăлтах та хупăнчĕ. Шупашкарта ĕçлекен чăвашсем, ялсенчен, уессенчен килекенсем пурте шалт тĕлĕнеççĕ. Чылаях та пулмасть мĕн пыракан чăваша савăнтаратчĕ, хăшне култаратчĕ, хăшне хурлантаратчĕ, хăшне кăмăлне çĕклесе йăпататчĕ, халĕ хăйĕн хупăнса лармалла пулчĕ мĕскĕнĕн теççĕ».

Ф.Павлов театр халăха мĕншĕн кирлине сăлтавласа ĕнентерме тăрăшать. «Театрăн ăçта усси пур» пайра çыравçă çапларах усăллă енсем палăртать: 1. Театр – «кунĕ-кунĕпе ĕçлесе, шухăшласа ывăннă çынна канмалли вырăн». 2. Спектакль куракан «хăй пăхса пурнăç тĕлĕшне пĕлекен пулать, тирпейлĕ çынсене курса, тĕреклĕ, пĕр шикленмесĕр тытăнса ĕçе туса пăрахакан çынна курса унăн хăйĕн те вăй, шанчăк хутшăнать. Театр ăна энерги парать». 3. Театр çынна, пурнăçа тĕрлĕ енчен çавăрса кăтартса куравçăн «куçне уçать, тĕплĕрех шухăшлама вĕрентет». 4. Театр халăха тĕн сĕрĕмĕнчен хăтăлма,

чиркӳрен сивӗнме пулӑшать. 5. Театр пурнӑҫ йӗркисене тарӑнрах ӑнланса илме май парать, куравҫӑсене «вӑй та, шанчӑк та» хушма пулӑшать. 6. Театр «ҫын кӑмӑлне юсать, хытӑ чӗрене ҫемҫетет, сив кӑмӑла ӑшӑтать».

Театрӑн пӗлтерӗшне Ф. Павлов ҫав ӳнер тӗсӗ ыттисене малалла яма пултарнинче те курнӑ. «Театрта артист та, художник та, композитор та, ҫыракан та, поэт та, юрлакан та, ташлакан та тенӗ пек, пурте пӗр ҫемье пулаччӗ, – палӑртнӑ вӑл театрӑн синкретизмне. – Театр пулмасан вӗсем кашни расна ӗҫлемелле, хӑшӗ-хӑшӗ кӑна пӗрле пулма пултараччӗ».

Аса илер-ха Ф. Павловӑн «Ялта», П.Осиповӑн «Кушар» тата ытти драмисене. Вӗсенче халӑх юрри-ташши те, йӑли-йӗрки те пысӑк вырӑн йышӑначчӗ. Ахальтен мар ӗнтӗ 1917–1918 ҫулсенче, наци ӑнӗ ҫӳллӗрех шая ҫӗкленнӗ вӑхӑтра, театр мала тухса тӑрать, тӑван халӑха тӗрлӗ клубсене пухӑнма май туса парать, тӑван сӑмахпа та кӗвӗ-юрӑпа, ҫи-пуҫпа тата йӑла-йӗркепе савӑнтарать.

Профессилле ӳнер ӑсталӑхӗ те чи малтан театрта аталанмалла тесе шухӑшлать Ф. Павлов. «Илемлӗ ҫыру ҫинчен каласас тесен театр ҫинчен каласас пулать, – ҫырать вӑл ҫав статьярах. – Тӗрлӗ ҫыракансен, поэтсен пьесисене композиторсем юрласа, мусӑкпа каласа вылямалла тӑваччӗ (музыка); ҫавӑнтах тата ташӑ искусстви те пур (балет), кашни спектакле илемлӗ сӑрӑсемпе ҫырнӑ декорацисемпе лартаччӗ (живопись). Артистсем тӗрлӗ тумтир тӑхӑначчӗ, тӗрлӗ май тӑрса сӑн-сӑпатне, ӳтне-пӳне епле май кирлӗ, апла туса выляччӗ (скульптура). Юлашкинчен тата хӑй театр ҫурчӗ те хитре, илемлӗ, ӑшӗ канлӗ, ҫыннӑн чунне савӑнтармалла пулмалла (архитектура). Пӗр сӑмахпа каласан, театр пур искусствӑна та хӑй ӑшӗнче упраса тӑрать».

Чӑваш наци ӳнерне шӗкӗр хулари Чӑваш тӗп театрӗн аталантармаллине те аса илтерет Ф. Павлов. Ҫав театрӑн вӑйлӑ, тӗреклӗ пулмалла, унӑн ытти (ялсенчи) театрсене ертсе пымалла. «Тӗп театр пӗтсе ларсан ялти театрсем те хупӑнса ларӗҫ, вӗсемпе пӗрле чӑваш искусстви те ҫут тӗнчерен ҫухалӗ», –

çапларах шухăшсем патне çитсе тăрать Ф. Павлов. Вăл аран-аран сывлакан театра çĕнĕ чĕм илсе хăватланма чĕнет, ăна пулăшма йыхăрать.

Чăваш театрĕ вырăс тата тĕнче классикине кăтартни наци драматургине аталанма пулăшни тавлашусăр ĕнтĕ. Çав хушăрах театр чăваш литературин классикине сцена çине кăларни татах та пĕлтерĕшлĕрех. 1921 çулта Хусанта К.Ивановăн «Нарспине» инсценировка туса уйрăм кĕнекен кăлараççĕ. Мĕтри Юман унăн авторне П. Осипов тесе палăртнă (Канаш. 1922. Нарăс, 5). 1922 çулхи кăрлачăн 28-мĕшĕнче Чăваш тĕп театрĕ «Нарспи» спектакле сцена çине пĕрремĕш хут кăларать. Ун çинчен Юман çапларах хавхаланса çырнă: «Çав кун çӳлти тивлетлĕ, ĕмĕр манмиллĕ Кĕçтен сăвăçăн Нарспи вăййине куртăмăр. Çав кун чăваш уяв хӳшĕ (кунта театра çапла каланă. – *В.Р.*) тунăранпа 4 çул тултарнине асăнтăмăр. Çав кун тата чăваш уяв хӳшне хăй асапĕпе, хăй ăсĕпе, хăй вăйĕпе тăвакан чăвашсен чи чаплă, чи мăн уявçине И.С.Максимова хисеп турăмăр. Çак кун эпир чăваш халăхĕн малти ĕмĕтне хамăр куç умĕнче куртăмăр».

Артистсен пултарулăхĕнчен тĕлĕннине те пытармасть статья авторĕ. «Куç умĕнче çĕр çулхи юман пек тĕреклĕ, сĕм вăрман упи пек паттăр чăваш пуянĕ Михетер, унăн ар сăмахĕнчен виличчен тухман, упăшкине хирĕç ĕмĕрĕнче çур ура пусăмĕ пусман мăшăрĕ, çĕр çине вăхăтлăха пĕлĕтрен аннă вĕçен кайăк Нарспи, ун чĕрине çунтарса кĕл тăвакан, кăвакарчăн пек йăваш, шăпчăк пек канăççăр, çӳлелле вĕçен кăмăллă Сетнер – вĕсем пурте чăваш хушшинче ĕмĕртен пурăннă, халĕ те пур вĕсем пирĕн хушăмăрта». Юман Михетерпе мăнаçланни, Тăхтамана телейсĕрпе, Сетнере мăнтарăнпа, амăшне мĕскĕнпе танлаштарса хаклани питех те пĕлтерĕшлĕ. Ахăртнех, артистсем вылянă сăнарсем ун чухне чăннипех те çапла пулса тухнă.

Спектакльпе хавхаланнă Мĕтри Юман пĕтĕм халăх çинчен хăпартланса çапла çырать: «Тăвансем! Чăваш халăхĕ хăватлă, çӳлти тивлетлĕ, аслă чунлă. Начар халăх эпир куран илемлĕхе тăваймасть. Чăваш халăхĕн тĕпсĕр тарăн

ăсĕ пур, малалла пурăнма вĕçĕмсĕр çунатлă шухăшĕ пур, хăй пурнăçне тутă, илем кĕртме çил-тăваллă халĕ пур».

1922 çулхи раштавăн 1-мĕшĕнче сцена çине Ф.Павловăн «Ялта» драми тухать. Ăна Чăваш патшалăх академи драма театрĕ 70 çул хушшинче 7 хут çĕнĕрен лартса панă. Çапла вара, чăваш театрĕн сцени çине наци литературинчи паха хайлавсен геройĕсем тухаççĕ, вĕсем тĕрлĕ ӳсĕмри куравçăсене халăхăмăрăн илемлĕх тĕнчине илсе кĕреççĕ.

Театр йывăрлăхĕсем 1923 çулта та пĕтмеççĕ-ха. Укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен хĕсĕнсе çитнĕрен артистсем шалу илеймеççĕ, спектакльсене халăх сахал çӳрени те алă устарать. Çав хушăрах вĕсем куравçăсене Л.Толстойăн «Власть тьмы» пьеси тăрăх лартнă спектакле кăтартма вăй çитереççĕ. Артистсем тулашри ĕç-пуçран ытларах çын чунне уçса пама тăрăшни вĕсен ăсталăхĕ ӳссе пыни çинчен калать. Çакна рецензи çыраканĕсем те вырăнлă асăрхаççĕ (Канаш. 1923. Çу, 20).

Чăваш театрĕн 1923–1925 çулсенчи тĕп çитменлĕхĕ çапах та професси шайĕнчи артистсем çителĕксĕрри пулса тăрать. И.Максимов-Кошкинский студи уçма темиçе хут пуçăнсан та ăна йĕркелеме укçа-тенкĕ уйăрса памаççĕ. Ывăнса çитнĕ тĕп режиссер 1925 çулхи чӳк уйăхĕнче «Чăвашкино» студине ĕçлеме куçать. Унăн вырăнне М.Юрьева лартаççĕ. Çав пултаруллă артист ун чухне хăйĕн çыравçă ăсталăхне те кăтартма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ: «Чăвашсен иртнĕ, маннă кунĕсем» роман, «Шăхличсем» камит, «Траккапа Пракка» тата «Иртнĕ кунсенчи асапсем» пьесăсем хайланă вăл.

1925 çул вĕçнелле М.Юрьев сцена çине хăй çырнă «Пулхăр патшалăхĕн юлашки кунĕсем» трагедие кăларать. Спектакле официаллă власть сиввĕн йышăнать, унта класс кĕрешĕвне кăтартман, автора вăл нацисен пулман хирĕçĕвне сăнланă тесе айăплать. 1926 çулхи кăрлачăн 23-мĕшĕнче ВКП(б) Чăваш обкомĕн бюровĕ çак ыйтăва ятарласа сӳтсе явать, театрта çав спектакле лартма чарать, режиссера ĕçрен кăларса яма йышăнать. 1926 çулхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕнче труппăна салатса яраççĕ. Кĕркунне Çут ĕç комиссариачĕ

правительствăран студи уçма укçа ыйтни те театра ура çине тăма пулăшаймасть. 1926/27 çулсенчи сезонра пĕр чăваш спектаклĕ те лартма хал çитереймеççĕ.

1927 çулхи кĕркунне Шупашкара П.Осипов куçса килет, «Чăваш сценишĕн хыпса çунакансен ушкăнне» (Общество ревнителей чувашской сцены) йĕркелес ĕçе кӳлĕнет, чăваш студине ертсе пыма пуçăнать. Çак вăхăтран тытăнса Чăваш театрĕн историйĕнчи Осипов режиссер тата драматург тапхăрĕ пуçланать. Кунта малтан унăн «Нарспи» инсценировкипе «Кушар» драмине (1926) кăна кăтартнă пулсан, 1927–1929 çулсенче «Ылханлă йăх», «Икĕ каччăн пĕр шухăш», «Ĕмĕр сакки сарлака» тата ытти пьесисене те кăтартаççĕ. Çак çулсенче Чăваш театрĕ тепĕр хут чĕрĕлсе вăй илет, ăна май наци драматургийĕ те хăватлăн аталанса пырать. Унта П.Осиповпа ăмăртмалла Хумма Çеменĕ («Варвари», «Анюкпа Ванюк» пьесисем), М.Юман («Укăлча касси»), И.Максимов-Кошкинский («Хум», «Атăл пăлхавçисем», «Шăпăрлансем») çанă тавăрса ĕçлеççĕ, чăваш драматургине чылай пуянлатаççĕ. Театрăн куçса çӳрекен труппписем чăваш ялĕсенче вун-вун спектакль кăтартаççĕ, халăха сцена искусствипе савăнтараççĕ.

Кĕçех çĕршыври лару-тăру та, театр пурнăçĕ те урăхланса каять. 1929 çулта театр репертуарĕнче социаллă пĕлтерĕшлĕ, самана сывлăшĕпе сывлакан пьесăсем çителĕксĕрри çинчен калаça пуçлаççĕ. «Айтара» сцена çинчен кăларса пăрахаççĕ. Хумма Çеменĕн «Варвари» пьесине, П.Осиповăн «Трахом юрри» драмине те идеологи тĕлĕшĕнчен пиçсе çитмен тесе хурлаççĕ. Ку вăхăтра И.Максимов-Кошкинский Мускава «Тухăçкино» студине тухса каять, П.Осипов тухтăр ĕçĕпе пурăнма пуçлать.

1930–1932 çулсенче Чăваш театрĕнче, тĕпрен илсен, куçарнă пьесăсем кăтартаççĕ. Н.Айзманăн «Шав», «Йăмраллă ял», М.Трубинан «Килет», Л.Агаковăн «Хăват» пьесисенче колхоз йĕркеленĕвĕ, индустриализаци ыйтăвĕсене хускатнă. Большевиксен идеологийĕпе витĕр çапăннă

хайлавсенчи персонажсем схемăллă, суя пафослă пулса тухнă. Вĕсем пурте нормăланă эстетика картинче калăпланнă.

Чăваш драматургийĕн классикине те тиркеççĕ çав çулсенче. Ф.Павловăн «Ялта» драмине «пурнăç таптаса кайнă» тесе хакласççĕ, авторне вак буржуалла, национализм сĕрĕмĕнчен хăпса çитеймен çыравçă теççĕ.

1932 çулта Чăваш театрне И.Максимов-Кошкинский таврăнать. Вăл «кивелнĕ» пьесăсене юсаса сцена çине кăларма сĕнет, çав шутра «Ялта» драмăна та. Г.Парнепе Н.Айзман драмăн вĕçне пĕтĕмпех улăштараççĕ. Чи малтан пьесăна урядник персонажне кĕртеççĕ вĕсем, ăна Çтаппан тусĕ пек кăтартаççĕ. Ку хайхи Çтаппана класс тăшманĕ пек сăнарлама май парать. Унтан Елюк хăтланăвне улăштараççĕ: вăл Ванюка курсан пĕркенчĕкне хывса перет те упăшки патне ыткăнать, унăн ытамне кĕрсе ӳкет. Туя Муççа патĕнче мар, кулак килĕнче пынă пек кăтартнă. Ванюк кулаксене еплерех пĕтермелли çинчен программăллă монолог калать, Муççа класс кĕрешĕвĕн теорине пĕлекен хресчен пулса тăрать.

Юлашки картинăра Çтаппан пӳртне кӳме евĕр кăтартнă пулнă. Çакна 1936 çулта çыравçăсен пухăвĕнче режиссер çапла ăнлантарнă: «Сценăна кӳме евĕрлĕ илемлетни кулаксен крепоçне, вĕсен пусмăрне туйтарас тĕллеврен килнĕ». Ун чухне çав спектакле лартакансене форма шырас çулпа кайнишĕн хытах айăпланă.

Иоаким Степанович Максимов-Кошкинский (1893–1975). Çак драматург, режиссер тата артист пуçарнипе 1918 çулта Хусанта Чăваш театрĕ çуралать. Артистсем А.Островскин «Ху пурăнас тенĕ пек ан пурăн» ятлă пьесине чăвашла лартса параççĕ.

1920 çулта театрпа унăн ертӳçи Шупашкара куçса килеççĕ. Максимов-Кошкинский чи малтан М. Лермонтовăн «Испанцы» ятлă романтикăлла трагедине чăвашлатса «Чăвашсем» пьеса хатĕрлет, унпа çĕнĕ сезон уçать. Çав çулсенче вăл «Хум», «Атăл пăлхавçисем» тата «Шăпăрлансем» ятлă пьесăсем хайлать.

1925 çулта Максимов-Кошкинский чăвашла кино ӳкерес ĕçе хĕрсех пуçăнать. Вăл «Атăл пăлхавçисем», «Сарпике», «Хура юпа», «Аппайка» тата ытти кинокартинăсем ӳкерет. Çав илемлĕ фильмсене ун чухне пĕтĕм Союзĕпе кăтартнă. «Чăвашкино» студи ĕçĕ-хĕлĕ чăвашăн наци ăнне çĕнĕ шая çĕкленме пулăшнă, çыравçăсене кино поэтики (монтажлăх, кадрлăх) енне вăйлах туртнă.

Ун чухне кинокартинăсем валли сценарисем çырас тĕлĕшпе ятарлă ăмăртусем ирттереççĕ. Тĕслĕхрен, И.Максимов-Кошкинский Тал-Мăрса трагедийĕ тăрăх çырнă «Силпи» сценарие çырса пичетлет (Сунтал. 1928. 5 №).

«Çĕр çĕкленет» пьесăра (1932) Максимов-Кошкинский Февральти революци хыççăн чăваш хресченĕсене çĕр валеçсе панине кăтартнă. Кунта, ун чухнехи теорипе килĕшӳллĕн, чухăнпа кулаксем кăна мар, иккĕленекен вăтам хресчен те пур (Василий Васильевич). Вăл тĕрĕслĕх шыраса большевиксемпе паллашать, влаça хирĕç тăракансемпе кĕрешме пуçăнать.

«Сатурпа Илем» драмăра (1933) автор ӳнерĕн класлă обществăри вырăнĕ пирки çивĕч калаçу пуçарнă. Авторăн позицийĕ Сатур художник сăнарĕнче палăрать. Класлă обществăра интеллигент кĕрешӳрен ниепле те пăрăнса юлма пултараймасть. Уншăн «ылтăн варă» (золотая середина) çук, вăл е халăхпа юнашар, е тăшманпа пĕрле кăна пулма пултарать иккен. Илем музыкçă шухăшĕпе, интеллигенцин политикăна кĕрсе кайма кирлĕ мар. Пурнăç Илеме хăех кĕрешӳ çулĕ çине тăратать. Хайлава автор социализмла реализм меслетне тĕпе хурса çырнă.

Репресси çулĕсенче И.Максимов-Кошкинские буржуалла националист тесе айăплаççĕ, ăна хăйĕн мăшăрĕпе, паллă киноактрисăпа Тани Юнпа, пĕр вăхăталлах (1938) арестлеççĕ, 8 çуллăха хупса лартаççĕ.

Тĕрмерен тухсан Максимов-Кошкинский «Савнисем», «Сенкер двойка», «Ачамăрсем», «Телейлĕ çуркунне» пьесăсем хайлать. Вĕсем пурте вăрçă

вăхăтне социализмла реализм меслечĕпе сăнлаççĕ. «Сенкер двойкăна» автор детективлă-приключениллĕ самантсем сахал мар кĕртнĕ.

И.Максимов-Кошкинский – чăваш культуришĕн ырми-канми ĕçленĕ çын. Ан тив, унăн пьесисенчен чылайăшĕ кивелнĕ пултăр, çапах та вăл пуçарнă театр пурăнать-ха, кино ĕçĕ те паянхи телевиденире вăй илсе пырать. Вĕсен аталанăвĕ ХХ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенчи пек хăватлах марришĕн çĕнĕ, паянхи ӳсĕм яваплă. И.Максимов-Кошкинскипе унăн ĕçтешĕсем хăйсем мĕн тума пултарнине пĕтĕмпех пурнăçланă.

«Уй чӳк» («Эли»). Драмăна И.Максимов-Кошкинский вырăс çыравçин Гарин-Михайловскин «Зора» ятлă пьесине тĕпе хурса йĕркеленĕ, 1924 çулта ăна уйрăм кĕнекен кăларнă. Чăваш тĕп театрĕн сцени çине вăл кăшт маларах «Эли» ятпа тухнă пулнă. 1925 çулта Шупашкарта «Чăвашкино» студи йĕркелесе ярсан унăн ертӳçи «Атăл пăлхавçисем» илемлĕ картина хыççăн «Сарпике» («Зора») ятлă фильм ӳкерме пуçăнать.

Çапла вара, пире Гарин-Михайловскин драми тата Максимов-Кошкинскин (чăваш драматургĕ хăйĕн иккĕллĕ янăракан хушаматне те çав вырăс çыравçине кура илнĕ пулас!) пьесипе кино сценарийĕ паллă. Вĕсене танлаштарса эпир Максимов-Кошкинскин драматургири пултарулăхĕн хăй евĕрлĕхне асăрхама, унăн режиссер ăсталăхне хак пама пултаратпăр.

Вырăс çыравçин пьеси икĕ пайлă тата прологлă. Умĕнчи сценăра Гарри (Раççее каякан акăлчан инженерĕ), унăн йăмăкĕ Мэри, ашшĕ, савнийĕ Маргарита тата çав хĕрĕн ашшĕ, Освальд (Маргаритăна вăрттăн савакан каччă) курăнаççĕ. Хайлаври синкерлĕх Освальдăн çапла иккĕленĕвĕнченех сисĕнет: «Итак, вы все-таки едете, и вас не удерживают проклятья друзей далекого народа, по словам которых культура наша принесет их народу не счастье, а страданье».

Гарри утопист мар, вăл мул тата пасар саккунĕсене мала лартакан çын. Хăйĕн девизне вăл çак сăмахсене илнĕ: «Пĕлӳ, кахал çынсене вăратсамччĕ».

Пĕрремĕш пайри малтанхи картина çерем çинче пулса иртет. Чăваш яш-кĕрĕмĕ уява пухăннă, чӳк пуçĕ (жрец) те унтах. Унăн хĕрĕ (Зора) хăйĕн каччине Зораима туй тăвас ĕçе тепĕр çула хăварма ыйтать, лешĕ килĕшет. Çав хушăра унта Гаррипе унăн ватă тарçи пырса кĕреççĕ. Акăлчан инженерĕ чăваш пикине Зорăна пĕрре курнипех юратса пăрахать.

Автор чăвашсене цивилизацирен пăрăнса юлнă мĕскĕн халăх пек кăтартнă. «Мы, бедные чуваши, без книг, со слов отцов обычай предков строго держим, – ăнлантарса парать хăнана чӳк пуçĕ. – Великий Тура – бог наш добрый, а Ирик злой и на глаза болезнь пускает». Гаррие Йĕрĕх янă хыпарçă вырăнне йышăнаççĕ, Турă Йĕрĕхе иртĕхме ирĕк панă тесе шухăшлаççĕ. Гаррин аяккалла пăхса каланă реплики те çав хаклавлах («Несчастные рабы, – не будете вы скоро ими», «Всегда во всем рабы»).

Иккĕмĕш картинăри ĕç-пуç кӳлĕ хĕрринче пулса иртет. Унтах Зорăпа ашшĕ-амăшĕ пурăнакан пӳрт ларать. Хĕр çĕр варринче шыв хĕррине пырать, ăна Шыври çапла пĕлтерет: «Забудешь дом родной, богов родных забудешь... и вновь вернешься к нам, но знать о том уже не будешь».

Зора хăй Гаррие юратса пăрахнине ăнлансан унăн мăшăрĕ пулма, тăван килĕнчен тухса тарма килĕшет. «Зора, сильна будь: нас подвиг ждет...» – тесе хавхалантарать унăн пулас мăшăрĕ.

Иккĕмĕш пайри ĕç-пуç малтан Гарри керменĕнче пулса иртет. Хăнана Маргарита, унăн ашшĕпе йăмăкĕ çитнĕ. Залра бал-маскарад пырать. Пурте маскăпа çӳреççĕ. Гарри маска хыçне пытаннă Маргаритăна Зора çинчен çапла каласа ăнлантарать: «Мы говорили об искусстве; язычница пред вами... из далекого мира сказок, родина муз, и близки ей вы, и, может быть, возьмете вы ее под свое покровительство». Маргарита тилмĕрсе ыйтнăран чăваш хĕрĕ сăмахсăр юрă юрлать. Гарри лайăхмарланса пуçне пĕкет: вăл Зора юрланинчен вăтанать иккен. Автор Зорăна сăвă çеммиллĕ çапла сăмахсем калаттарать (юпалани пирĕн. – *В.Р.*):

Ах! С каждым днем я что-нибудь теряю.

Давно уж потеряла

родных богов своих,

Давно узнала я,

что темный мрак в моем уме...

Сегодня голос потеряла,

А с ним, быть может, и любовь его...

Гарри Зорăнах юратать иккен. Пăлхавçă чăвашсемпе çитнĕ Зораим (вăл та Зорăна чунтан савать) акăлчан инженерне çĕçĕпе чиксе вĕлерет. Лешĕ вилес умĕн çапла юлашки сăмах калать: «Туман предвечный глаза мне застилает, но все еще тебя я вижу, тебя люблю... Зора... ты прекрасна...» Çунакан керментен тухса тарнă Зора хĕллехи вăрманта шăнса вилет. Шыври калани чăна килет: хĕр тăванĕсенчен хăпать, каялла таврăнса çитеймест, унăн чунĕ çул çинче тухать.

Халĕ Максимов-Кошкинскин инсценировки патне таврăнар. Унти персонажсен ячĕсем пачах урăхла: Эли (Зора), Енел (ашшĕ, чӳк пуçĕ), Энкирей улпут (Гарри), Атнер (Зораим). Хăш-пĕрисен вырăнне (Освальд, Гарри йăмăкĕ, ватă çын т. ыт.те) çĕнĕ персонажсем хушнă. Юманкка (ĕçме юратакан чăваш), унăн хĕрĕ Уркка (Эли хĕр тусĕ), Савантей (Атнер юлташĕ, Уркка савнийĕ), Пикпав (тытăнчăклăрах калаçакан чăваш). Чи пĕлтерĕшлĕ хушма сăнар вăл ӳтемĕш, Элипе Энкирей улпутран çуралнă 16 çулхи ывăл ача. Прологра вăл хăйĕн кукашшĕпе калаçса ларать. Енелтен хăйĕн ашшĕ çинчен ыйтать: «Манăн атте мĕскĕн чăваш тăшманĕ пулас çук. Кала, тархасшăн: кам, кам манăн атте?»

Ватти ерипен асаилӳ авăрне путать: «Ĕлĕк çав вырăнта сĕм вăрман кашласа ларатчĕ. Çурçĕр енчен çил вĕрсен тискер вăрман кашлани пирĕн яла илтĕнетчĕ. Хулаш вырăнчи вăрман чăваша тăрантарса, ăшăтса, хурлантарса, хăратса пурнатчĕ. Анчах самана улшăнчĕ. Таçтан масартан Энкирей улпут килчĕ те пурнăçа шалт тепĕр майлă çавăрса ячĕ. Сĕм вăрмана пĕтĕмпех касса тăкрĕ: хула турĕ. Пирĕн çĕре сутăн илсе унта пăхма хăрушă хапрăк лартрĕ.

Таврари мĕскĕн чăвашсем хăйсен çĕрне пăрахса ун патне тарça кайрĕç. Улпут пире усă тума, инкекрен хăтарма килнĕ тетчĕç, анчах пире чура туса пирĕн пурнăça тĕппипех пĕтерчĕ. Ку сахал! Çак Энкирей улпут ман телее пĕтерчĕ. Пĕртен-пĕр савнă хĕрĕме хăй енне çавăрса улталарĕ, намăс турĕ».

Пĕрремĕш пайри малтанхи сцена уй чӳкĕ ирттернĕ вырăнта пулса иртет. Енел Пихампартан пулăшу ыйтать. Хĕрсем кĕвĕ каласа юрланă хушăра Энкирей улпут пырса кĕрет, чăваш тĕнĕпе пурнăçĕ çинчен ыйтса пĕлет. «Ĕлĕкрех пуян пурăнаттăмăр, халĕ пурнăç хĕсĕннĕçемĕн хĕсĕнсе пырать, – ăнлантарать улпута Енел. – Пирĕн енче ăçта килчĕ унта çĕре улпутсем туртса илеççĕ. Çĕр сахалланнăçемĕн сахалланса пырать. Шыв хĕрринчи вырăнсене, лапăри лайăх çĕрсене улпутсем туртса илеççĕ. Пире вырăнтан вырăна хăваласа начар çĕрсене куçараççĕ. Çулсерен хĕсĕрлесе пыраççĕ. Нумайăшĕ чăвашсенчен хĕсĕрленине тӳсеймесĕр вăрмансене тарса пĕтрĕ».

Çак улпут хĕсĕрлевĕн мотивĕ вырăс çыравçин драминче сисĕнместчĕ, Максимов-Кошкинский ăна пуссах палăртнă. Энкирей кунта хăйне ирĕклĕх пама килнĕ çын пек кăтартать. Енелĕн шухăшĕ урăхларах: «Анчах хăрушă япала вăл ирĕк. Ырă çыннăм, тархасшăн, кай кунтан! Ан тив пире (*чĕркуçленсе*). Хĕрхен мĕскĕн чăваша! Эпир халĕ лăпкă çынсем. Пирĕн асаттесем авал паттăр çынсем пулнă, халĕ эпир пур япаларан та хăратпăр. Тархаслатпăр, хăтар пире ирĕкрен. Ирĕкпе илнĕ пуянлăх кирлĕ мар пире».

Кунта ĕлĕкхи паттăрсен вăхăтне хальхи хăравçăлăхпа хирĕçлетсе кăтартни Мĕтри Юманăн «Шевле вылять» хайлавĕнчи тĕп мотива аса илтерет. Драмăри хăш-пĕр шухăшсем (улпутсемпе çĕр çинчен, ĕлĕкхи пурнăç çинчен каланисем) Юманăннипе пĕрешкелех, сăнарлă чĕлхери пĕрлĕхсем те çук мар («çăкăр мурĕ» йышши тропсем).

Эпир асăрханă пĕр евĕрлĕхе икĕ çыравçă ентешсем пулнипе кăна ăнлантарма çук-тăр. Вĕсем каярах киносценарисем пĕрле çырнине асра тытсан, çав пултарулăхри пĕрлĕх вĕсен чылай маларах çуралнă тесе калама май парать. «Чувашский край» хаçатăн 1922 çулхи пуш уйăхĕн 24-мĕшĕнче тухнă номерĕнче Юманăн «К постановке «Зоры» в Чувашгостеатре» ятлă

статйи пичетленнĕ. 1924 çулта вăл Гарин-Михайловскин пьесине «Сарпике» ятпа чăвашла куçарса уйрăм кĕнекен кăларать. Çапла вара, Гарин-Михайловский пултарулăхĕпе кăсăкланакан çынсенчен эпир пĕр М.Юмана кăна пĕлетпĕр. Максимов-Кошкинский хăйĕн пьесине вăл пулăшнипе çырса сцена çине кăларнă тени пире пĕрре те иккĕлентермелле мар. Юмана пьесăн тепĕр авторĕ тесе шутлани йăнăш пулас çук. Халĕ хайлав патне таврăнар.

Максимов-Кошкинский Атнер сăнарне Зораим сăнарĕнчен уçăмлăрах калăплана. Вăл Енел пек мĕскĕнленме пултараймасть. «Çук, Енел пичче, парăнма кирлĕ мар», – тет вăл хăй савнийĕн ашшĕне тата ял пуçне. Кĕтмен хăнана вара çапла хăюллăн калать: «Ырă çыннăм, эсĕ кунта ирĕк пама килнĕ, анчах пирĕн асаттесем пур япалана та вăрçса, çапăçса илнĕ авал. Çавăнпа эпир те ирĕккĕн паракан япалана илместпĕр. Пирĕн пата килсе пирĕн хушăра пурăнас тетĕн пулсан пирĕн пекех пул малтан, вара тин санпа ĕç çинчен калаçăпăр. Улпутсем чăваш çĕрĕсене туртса илни çитмен, тата хула тăвасшăн эсир. Кирлĕ мар пире хула».

Энкирей хăйне ырă çын пек тытать, ырă ĕç тума килнĕ çын пек кăтартать. Çавăн чухнех вăл Элие курса ăна хăйĕнпе пĕрле лартса килне ăсатать, чуптуса ыталашать.

Иккĕмĕш пайра куравçă Эли Энкирее юратнине, унран çие юлнине пĕлет. Çакăн çинчен Эли Атнере пĕлтерет, хăйне Энкирей качча илме пулни çинчен каласа парать. Тарăхнă каччă çирĕппĕн çапла хуравлать: «Суять вăл. Улпут мĕскĕн чăваш хĕрне качча илет-и? Вĕсем чăвашран кулма анчах пĕлеççĕ. Пире тарçă туни çитмен, тата пирĕн хĕрсенчен кулма тытăннă-и? Чим, эпĕ ăна».

Энкирей Эли пуçне хитре сăмахсем каласа çавăрсах ярать. «Сана юратрăм та хамăн çĕршыва мантăм. Иксĕмĕре пурăнмашкăн илемлĕ çурт турăм. Çав пысăк çуртра эсĕ пысăк пуçлăх пулăн. Санăн тарçăсем туллиех пулĕç. Иксĕмĕр савăнса, хĕпĕртесе пурăнăпăр, ывăл ӳссен виçсĕмĕр ман çĕршыва кайăпăр. Унта пурнăç урăхла».

Юлашкинчен Эли ашшĕ-амăшне пăрахса Энкирейпе тухса тарать. Иккĕленĕвĕ çав-çавах юлнă-ха унăн. «Анчах ан ултала. Эпĕ санăн», – тет вăл пулас мăшăрне.

Элин иккĕленĕвĕ Энкирей килĕнче татах та вăйланать. Вăл упăшкинчен тĕрмене хупса лартнă Атнере ирĕке яма ыйтать, лешĕ килĕшсен тин çапла калать: «Энкирей, савнă Энкирей! Халĕ эс юратнине ĕненетĕп. Мана юратса хăвăн тăшманна каçаратăн *(ыталаса чуптăвать)*».

Энкирей улпут чăваш чиперккине чăнласах юратни унăн Маргаритăна каланă çак сăмахĕсенче те палăрать: «Çук, çитĕ суйма! Тӳрех калас сана: ман арăм пур, эпĕ ăна юрататăп». Çав хушăрах чăвашла пьесăри Энкирей Гаррирен чунсăртарах, чăвашсене вăл выльăхпа танлаштарать, пăлхава путарма салтаксем чĕнсе илет («ГАРРИ. Войска! Зачем войска? Обманов больше нет...»).

Тĕрмерен пăлхавçă чăвашсем хăтарнă Атнер Энкирее рычакпа çапса вĕлерет, ыттисене çапла йыхăрса чĕнет: «Тăвансем! Чарăнăр! Итлĕр! Пĕтĕм хулана вут тĕртсе ярăр. Çунтăр путсĕр хула! Пĕтчĕр пирĕн тăшмансем...»

Максимов-Кошкинскин пьесинчи тăваттăмĕш пай Вăрманпа Шыври мифла сăнарсем пурнăç çинчен каласнипе пуçланать. Вĕсем вăрмана касса пĕтернине хирĕç, хула тăваканĕсене çăкăр мурĕпе танлаштараççĕ. Çав кӳлĕ хĕррине Эли пырса кĕрет, Шыври илĕртсе чĕннине çапла сăвăласа хуравлать:

Шывра хĕрсем те пур-и?Юрлăп уçă сассăмпа...
Аван пулĕ пурăнма... Янратăпăр вăрмана...
Каç пулсассăн хĕрсемпе Кĕвĕ каласа пĕтерсен
Кĕвĕ калама пуçлăпăр... Атнерпеле иксĕмĕр
Эпĕ шӳлкеме, тевет, Шывран тухса çакăнта
шăрçа, Ыталанса ларăпăр...
Шурă кĕпе тăхăнса Аван пулĕ пурăнма...

Шыврин асамлăхĕпе аташса кайнă Эли путса вилет. Атнер çĕççине кăларса çапла калать: «Çутă çĕççĕм! Халиччен эсĕ шăпăр касса мĕскĕн чăваш

халăхне савăнтарса пурăнтăн! Халĕ... халĕ хăвăн хуçуна намăс курасран хăтаран. (*Хăйне çĕçĕпе чикет.*) Эли! Каçар мана, савнă тусăм! Санпа пĕрлех пыратăп (*ӳкет*)».

Чăвашла пьесăри Атнер Зораимран чылай мăнаçлăрах та романтикăллăрах сăнар. Юлашкинчен вăл пĕтĕм айăпа йышăнса халăха хӳтĕлесшĕн пулни курăнать. «Чăвашсене ан тивĕр. Вĕсем пурте айăпсăр, пĕр эпĕ çех айăпли...» – ӳкĕтлет вăл салтаксене. Чунĕ тухиччен хăйĕн савнийĕн ятне асăнать: «Сывă пулăр... Вилетĕп... Э... ли...»

Максимов-Кошкинский Мĕтри Юманăн «Сарпике» пьесине тĕпе хурса «Зора» ятлă кинобоевик ӳкерет. Унта Гарри улпут Сарпикене юратса пăрахать. Чăваш хĕрĕ хăйĕн туйĕнченех улпут патне тухса тарать. Пăлхав çĕкленет. Сарпике чăвашсене пулăшма тăрать. Çакна курнă Гарри ăна персе вĕлерет. Пăлхавçăсем вилекен Сарпикене алă çинче йăтса тухаççĕ.

Кунти хирĕçĕве автор наци ирĕклĕхĕнчен ытларах классен хушшинчи хирĕçӳпе çыхăнтарни сисĕнет. Кинофильмри Гарри – тискер пусмăрçă. Каярах çав сăнара типласа Максимов-Кошкинский П.Осипова унăн 30-мĕш çулсенчи Айтарне («Айтар») калăплама пулăшать.

«Уй чӳк» пьесăра мифла сăнарсемпе усă курни те, чăваш пейĕчĕсен чи паллă фабулине (хĕр шыва сиксе вилнине) тĕпе хуни те Максимов-Кошкинскин Мĕтри Юмана кура кĕртнĕскерсем темелле. Хайлаври Юман (Мĕтри Юман), Савантей (Чĕмпĕр чăвашĕ Г.Савандеев Юманпа туслă пулнă) ятсем кăна мар, ыттисем те символла ятсем пулса тăнă. Ачаллă Эли Хусан ханĕн (Сафа-Гирейĕн) пĕчĕк пепкеллĕ арăмне Çуйăмпикене аса илтерет. Вырăссем Хусана вăйпа туртса илсен вăл башня çинчен сиксе вилнĕ текен халапсем тутарсемпе чăвашсен йышлă пулнă, çавсенчен пĕринпе усă курнă та Максимов-Кошкинский. Çакна хайлавсенчи ачасем пĕр ятлах пулни (ӳтемĕш) тата ханпа улпут ячĕсем (Сафа-Гирей, Энкирей) пĕрешкелрех илтĕнни те ĕнентерет.

Çапла вара, тутарсем хăйсен ирĕклĕхĕшĕн кĕрешни çинчен калакан историлле халап чăвашсен наци ирĕклĕхĕшĕн пынă кĕрешĕвне уçăмлатма пулăшать. Пьесăри Атнер «Шевле вылять» мифологилле поэмăри Тавăш паттăра аса илтерет. «Эпир чăваш паттăрĕсем», – тет вăл хăюллăн, тăшмана куçран пăхса. «Уй чӳк» хайлаври юрату виçĕ кĕтеслĕхĕ наци кĕрешĕвĕн идейине пăхăннă. Хăйĕн тĕп шухăшĕпе вăл Гарин-Михайловскин пьесинчен чылай урăхларах пулса тухнă, наци чăмăртанăвĕшĕн хыпса çунакан интеллигенцин идейисемпе пĕр килнĕ. Çав трагедие ăша хывса ăнăçлă аталантараканĕсен ретне чи малтан М.Юрьева лартмалла.

Михаил Федорович Юрьев (1899–1962) Кавал ялĕнчи (халĕ Вăрмар районне кĕрет) Федор Алексеевич Юрьев хресчен кил-йышĕнче çуралса çитĕннĕ. Вăл 15–16 çулсенче чухне унăн ашшĕпе амăшĕ пĕрин хыççăн тепри вилеççĕ, ултă ачине хăр тăлăха хăвараççĕ. Аслă ачи пулнăран çемье хуйхи-суйхи Михаил пуçĕ çине ӳкет. Хусан университечĕн историпе филологи факультетĕнче вĕренекен студентăн 1917 çулта тăван ялне таврăнма тивет. Шăллĕсемпе йăмăкĕсене вăл ура çине тăратать, авланса çемье çавăрать.

М.Юрьев Чăваш театрĕпе Хусанта вĕреннĕ çулсенчех кăсăкланнă, Максимов-Кошкинскипе паллашса çывăхланнă. Лешĕ ăна хăйĕн театрне 1921 çулта ĕçлеме чĕнсе илет, артиста тĕрлĕ рольсем парса вун-вун спектакльте выляттарать.

Максимов-Кошкинский «Чăвашкино» студине ĕçлеме кайсан хăйĕн вырăнне режиссера М.Юрьева хăварать. 1926 çулхи çу уйăхĕнче унăн Чăваш тĕп театрĕнчен тухса кайма тивет. Ун чухне ăна парти обкомĕ «националистла йăнăшсем» тунăшăн хытах айăплана. Çав хушăрах режиссера хӳтĕлекен хăюллă чăвашсем те тупăннă. Тĕслĕхрен, «Пулхăр патшалăхĕн юлашки кунĕсем» трагедие Н.В.Никольский ун чухне çапла хак панă: «Авторăн писатель-беллетрист таланчĕ, историлле пьесăсемпе интересленни пурах. Çавăнпа та ăна малалла та ĕçлеме, хăйĕн пултарулăхне

вăйлатма сĕнме юрать. Унăн талантне кĕтекен çынсем нумай» (Канаш. 1925. Чӳк, 18).

Театртан кайма тивнĕ, çав хушăрах ирĕклĕхе юратакан драматург çулçӳреве тухать, туркменсен çĕрне çитсе курать. Ку тĕлĕшрен вăл пĕччен пулман. Ирĕклĕхе савакан Хумма Çеменĕпе Петĕр Хусанкай та унăн çулĕпе тинĕс урлă Туркменистана çитеççĕ, чăвашăн аваллăхне тата истори тупсăмне романтикăлла хавхапа шыраççĕ. «1926–1927 çулсенче Совет Союзĕ тăрăх пуçласа çӳресе куртăм, – аса илнĕ П.Хусанкай çав тапхăра. – Эпĕ унта туркменсем патĕнче 9 уйăха яхăн пурăнтăм. Фомин (Хумма Çеменĕ) «Туркменская газета» хаçатра корректорта ĕçлерĕ. Юрьев пирки хроникăра «историк-драматург» тесе çырнине астăватăп. Совет Союзĕ тăрăх çул çӳреме тухнăскер пирĕн пата та çывхарса çитрĕ».

1927 çулхи пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнче П.Хусанкайпа М.Юрьев иккĕшĕ пĕрле сăн ӳкерттереççĕ, çав ӳкерчĕк çине чăваш çыравçи çапла сăвă шăрçаласа хурать:

Чĕрем çунать тăван çĕршывшăн,
Тăван çĕршыв – ама çури.
Тăват йĕрке манран эс йышăн,
Хам пекех Ашхабад чури.

Çак йĕркесенчен эпир чăвашăн мухтавлă ывăлĕсем инçет çĕрте те халăхăмăр пирки шухăшланине, вĕсен унта чăваш тăрăхĕнчи политика лару-тăрăвне пула тăван мар ывăл пек çапкаланса (урăх мĕнле пултăр-ха ама çури ачин пурнăçĕ) çӳреме тивнине пĕлетпĕр. Çав хушăрах ирĕклĕх тени вĕсемшĕн чи кирлĕ те хаклă мул пулнă. «Ман чунăн тӳрĕ кĕпçине Аваймĕ çуклăх, сум хисепĕ», – тесе çырать çавăн чухне Петĕр Хусанкай. Малалла сăвăç ирĕклĕхе хӳтĕлесе çапла калать:

Вĕренлеттермĕп эп хама,
Çамка çине тамга картаймĕç.
Чĕрем çинче чаваланма

Сăмахăм чĕрĕ чух – хăяймĕç!

Ун чухне Хусанкайпа Юрьев хавалĕсем пĕрешкелех пулни иккĕленӳсĕр. Иккĕшĕ те вĕсем халăхăмăр аваллăхĕпе мăнаçланма пултарнă, Çеçпĕлпе ăмăртса тăван чĕлхемĕре мухтанă. Çав тапхăрта Хусанкай «Çеçпĕл Мишши чун хавалне» сăввинче çапла аслă çыхăну курать:

Чĕвĕл чĕкеç евĕр чĕлхе
Ёмĕр кĕвĕленĕ;
Унта Пăлхар пехиллĕхĕ
Юлса чĕлĕхеннĕ!

Пăлхар патшалăхĕн, чăваш аваллăхĕн кĕвви çав çулсенче хытса тата пирчесе пыракан эстетикăна, пролеткульт идеологине хирĕçле тăракан юхăм пулнă. «Чăвашсем вĕт пулнă тет Пăлхар, Асăнсассăнах йĕрессĕм килет», – тет Хусанкай 1925 çулта. Кунта вăл М.Юрьевпа пĕр шухăш-кăмăллă пулни, халăхăмăрăн аваллăхĕпе мăнаçланни тата хальхишĕн пăшăрханни сисĕнет. Ун чухне чăваш аваллăхĕпе Митта Ваçлейĕ те мăнаçланнă, çав хушăрах хăйĕн тантăшĕсене вăл çапла йĕркесемпе чĕннĕ:

Пулхăр çамрăкĕ, илт сассăма,
Малалла, малалла эс пăх халĕ!

П.Хусанкай патне янă пĕр çырăвĕнче сăвăç çапла çырнă: «Ан пăшăрхан, тантăш! Малашне эсĕ те пĕччен çеç пулмăн!.. Сана юлташ каллех хĕрӳ чĕреллĕ чăваш – пулхăр йăхĕнчен çуралнă ывăл-хĕрсем сиксе тухĕç! Ăна эс шанса тăр!..»

Пăлхарлăх чăвашлăхăн синонимĕ, истори пĕлтерĕшлĕ чĕрĕлӳ символĕ пулса тăнинче М.Юрьевăн пайти те пур. Унăн «Пулхăр патшалăхĕн юлашки кунĕсем» трагедийĕ халăха чăмăртанма, иртнипе мăнаçланма, малашлăха «чăваш чĕлхи ячĕпе пĕр пулса» (Çеçпĕл Мишши) утма, класс хирĕçĕвне сивлеме йыхăрнă. Çакă идеологи сыхчисене (сыхласа пурăнаканĕсене) ниепле те килĕшме пултарайман. 1926 çулхи нарăсăн 23-мĕшĕнче ВКП(б) обкомĕн бюровĕ хайлав «истори чăнлăхĕпе килĕшсе тăмасть» текен йышăну

тăвать, театрти спектакльсене чарса лартать. Ахальтен мар çав çулсенче Митта Ваçлейĕ П.Хусанкай патне çапла çырса чунне уçать: «... хальхи вăхăтра çырса парти диктатăрланни лайăхах сисĕнет, ăна ху лайăх туйса тăратăн ĕнтĕ». 1928 çул тĕлне çыравçăсене «пăлхар» сăмахшăнах айăплама пăхаççĕ. «Чăвашран пăрăнса пулхăралла сĕтĕрекенсем, – çуйхашать ун чухнехи пĕр критик, – тӳррĕн каласан, шовинизм лачакине кĕрсе ӳкеççĕ темелле» (Сунтал. 1928. 1 №). Ç.Элкер аса илнĕ тăрăх, çав тапхăрта чăваш халăхĕ тенĕшĕн те класс хирĕçĕвне йышăнмасть тесе хытах айăплана, чăваш ĕç çынни, чăваш ĕç халăхĕ тесе çырма хистенĕ.

Халĕ М.Юрьевăн трагедийĕ патне таврăнар. Хайлавăн тĕп шухăшне унăн ячĕпе харкамçăсен юлашкинчен каланă сăмахĕсенче шырамалла. Пăлхар патшалăхĕ пĕтет, ăна Тухăçран килнĕ Супаттай (Супетей) çарĕ çунтарса çаратать. Пăлхар патшалăхĕн юлашки хунĕ Ильхам хăйне çунтарса ярас умĕн Супаттая çапла пĕлтерет: «Итле, ĕмĕтсĕр çын. Эсĕр пирĕн хулана çĕмĕртĕр. Пирĕн халăха пĕтертĕр. Анчах эсĕр те нумаях чăтаймăр. Сире те вырăссем пĕтерĕç».

Ку ĕнтĕ 1552 çулта Хусан ханлăхĕ пĕтнине пĕлсе калаттарнă реплика. Çав тутарпа вырăс хушшинчи хирĕçӳре пăлхар-чăвашсен хăш енне çыпăçмаллине те систерет пăлхар хунĕ. «Тăван пулхăр çыннисем!.. – залалла пăхса чĕнет аваллăхри персонаж. – Çунтараççĕ тутарсем. Хăçан та пулин тавăрма ан манăр. Çултан çула паянхи кун киле-киле асăнăр».

Çапла майпа автор 1236 çула (Пăлхар патшалăхне монголсем çав çул аркатнă) Хусана вырăссем парăнтарнă вăхăтпа çыхма пултарнă. М.Юрьев шухăшĕпе, ун чухне чăвашсем Хусан тутарĕсене хирĕç кайнин тĕп сăлтавĕ лешĕсем тахçан малтан пăлхар-чăвашсене пăхăнтарнинче пулнă.

Хайлавра эпилог та пур. Унта чăваш халăхĕ тепĕр хут патшалăхлă халăх пулса тăнине (автономи ирĕкĕсене илнине) кăтартса панă. 1920 çулта Чăваш автономи облаçне йĕркелени ун чухнехи интеллигенцишĕн авалхи патшалăхлăха чĕртсе тăратнипе танлашнă. «700 çул пулать тет пирĕн патшалăха çĕмĕрни», – каласать Чăваш автономи кунне уявлама пынă ял çынни.

Тахçан авал чăвашăн хăйĕн ирĕклĕ патшалăхĕ пулни çинчен калакан истори халапĕсем те упранса юлнă. «Чăвашсен ĕлĕк-авал хăйсен патши пулнă, – пуçланать 1911 çулта Самар тăрăхĕнче çырса илнĕ пĕр халап. – Хăш-хăш чăваш каласа кăтартнă тăршшинчен, вăл икĕ Атăл пĕрлешнĕ çĕрте пурăннă. Вăл хула халĕ çук теççĕ. Çеçен хир хурахĕсем хуласене, ялсене çĕмĕрсе, çынсене вĕлерсе çӳренĕ чух хăйне вĕлересрен хăраса чăваш патши тинĕсĕн тепĕр еннех пăрахса тарнă теççĕ».

1909–1910 çулсенче çав тăрăхрах çырса илнĕ тепĕр халапра виçĕ халăхăн – чăвашăн, тутарăн тата вырăсăн – патшисем кашни хăй асла тухассишĕн пĕр-пĕринпе тупăшни çинчен каланă: «Атьăр çывăрма выртар, ирччен камăн пуçĕ вĕçне чечек шăтса тухать, çавă пиртен патша пулĕ», – терĕç тет. Вырăс ирпеле вăраннă та чăваш пуçĕ вĕçĕнче шăтса тухнă чечеке курах каять. Хăпăл-хапăл сиксе тăрать те чечеке çерем касси-мĕнĕпе касса кăларса илет; хăй пуçĕ вĕçĕнчен çерем кассине виçсе касса илет те чечек вырăнне питĕрет, чечекне хăйĕн пуçĕ вĕçне вырнаçтарса лартать».

Улталанса юлнă чăваш патши хăйĕн халăхне тинĕс утти (утравĕ) çине илсе каять. Атăллисем тинĕс урлă каçса каяççĕ, çăпаталлисен вара кунтах юлма тивет. Çав патша хăçан та пулсан «тинĕс урлă кунти çăпаталлă чăвашсене илме килмелле тет». Халăх ĕмĕтне палăртакан çак шухăшсемпе вĕçленет халап.

Çав халапсенче *чăваш хăйĕн патшине (патшалăхне те) ултава пула çухатнă тата пуласлăхра ăна тавăрать* текен мотивсем тăраççĕ. Эппин, М.Юрьев хăйĕн трагедийĕнче халăхăмăрăн çич çĕр çула яхăн упраннă шухăшĕпе ĕмĕт-тĕллевне кăтартса та каласа пама пултарнă. Наци интеллигенцийĕн XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи чи пысăк ĕмĕчĕ вăл *халăх ирĕклĕхĕ, ыттисемпе харăс аталанса пырасси* пулнă. Г.Комиссаров (Вантер), Мĕтри Юман, Турхан Энтри тата ыттисем те халăхăмăрăн аваллăхне тĕпчесе унăн пуласлăхне курнă, йăхташăмăрсене тĕрлĕ пусмăртан (чи малтан наци пусмăрĕнчен) хăтăлма йыхăрнă. Çав идейăна М.Юрьев драматург трагеди жанрĕпе çырса каласа пама пултарнă.

Хайлав фабули çапларах йĕркеленнĕ. Прологра Петĕр патша Пăлхар хули ишĕлчĕкĕсене пырса курнине сăнланă. Унта Карачăм ятлă чăваш та хăйĕн ачипе пынă. Ашшĕ ачине ламран лама куçакан халапа каласа парать. «Çак ванса выртакан чулсем хушшинче ĕлĕк чăваш халăхĕ пурăннă, – ăнлантарать ватти çамрăккине. – Çак пирĕн умри чул çуртра тутарсем пирĕн патшана вутра çунтарнă теççĕ. Çавăнпа унăн тĕсĕ те хуралнă». Юлашкинчен вĕсем çĕр каçма çав ишĕлчĕксем хушшинех вырнаçаççĕ, тĕлĕкре халăх аваллăхне кураççĕ.

Малтанхи икĕ пайри ĕç-пуç 1218 çулта пулса иртет. Çав çул пăлхарсем çурçĕр еннелле кайса Устюг ятлă вырăс хулине илни паллă. Вĕсем çав хулана хăйсен аллине çурçĕр халăхĕсемпе суту-илӳ тумалли çул çинче ларнăран илесшĕн пулнă.

Вăрçăран таврăннă çар пуçĕ Софик Ильхам хун хĕрне Велимене юратать. Пăлхар хунĕн чиперккине Пӳлер ханĕн ывăлĕ Селехмет те савать. Вăл, ултав çулĕ çине тăнăскер, Велимене вăрласа кайма пуçăнать, май килменрен Софике çапла каласа хăварать: «Апла пулсан эпĕ вĕлерĕп. Анчах халь мар. Нумай вăхăт иртĕ, кунсем малалла шутласа та пĕтес çук. Çав малашнехи кунсенче, тен, тĕл пулăпăр. Сывă пулăр».

Çав хушăра Пăлхар хулинче пушар тухать. Софик пулас хăрушă кунсене туйса Велимене çапла калать: «Акă пăх. Селехметĕн малтанхи тавăрăвĕ малашне кун пек çеç пулмĕ. Ăна янипе пулхăр халăхĕ сиен курасси çав пушарăн çулăмĕнче курăнать».

Прологри Карачăм вара çав Софик сиснĕ ĕçе тахçан чăн пулни вырăнне хурса йышăнать. «Пĕр юрăхсăр çын пирĕн патшана çилленсе пире вырăссене сутнă-мĕн», – тесе пĕлтерет вăл хăйĕн ачине.

Чăнлăха куравçă виççĕмĕш пайра пĕлет. 1229 çулта пăлхарсем (Софик тата икĕ пăлхар çынни) вырăс княçĕсемпе тĕл пулаççĕ, пĕр-пĕринпе ултă çул хушши вăрçмалла мар килĕшӳ тăваççĕ. Çавăн чухне пăлхарсен хулине 1220

çулта тĕпĕ-йĕрĕпе çунтарса янă Святослав князь акă мĕн пĕлтерет: «Селехмет пире питĕ усăллă çын. Вăл пулăшнипе эпĕр Ошел хулине те илтĕмĕр...»

Пăлхарсем çак Христос тĕнне куçнă сутăнчăка тытаççĕ. Вăл Пăлхар хулине çунтарса, Ильхам хунпа Софике вĕлерсе хуна хăй ларасшăн пулнă иккен. Çавăншăнах ăна асаплантарса вĕлереççĕ (тăваттăмĕш пайра).

М.Юрьев кунта истори пулăмне хăйне евĕр ăнлантарса пани курăнать. 1229 çулта Пăлхар çĕрĕнче пĕр Христос тĕнне уянă Авраамий ятлă çынна чăнласах асаплантарса вĕлерни паллă. Православи чиркĕвĕ сăваплă çынсен йышне кĕртнĕ Авраамий пăлхар çынниех пулнă теççĕ. М.Юрьев вара çав сăвапа тухнă çынна сутăнчăк сăнарĕпе (Селехметпе) пĕр килтернĕ. Вăл тĕнне кăна мар, тăван халăхне те сутнă çын иккен.

Вĕçĕнчи пайра Пăлхар хунĕн юлашки кунĕсене кăтартнă. Ильхам хăйсем хыççăн мĕн юласси çинчен калаçать. «Хăçан та пулсан пирĕн йăх паянхи куна аса илĕ, – йăпатать вăл Велимене. – Нумай вăхăт иртĕ, шыв та нумай юхса пĕтĕ, пирĕн халăх хăйĕн йăхне çапах шыраса тупĕ. Унччен хăшĕ тутар, хăшĕ вырăс, хăшĕ тата тепĕр йăха çыпăçса хĕн-хур курса пурăнĕç...»

Кунта сăмах чăвашăн çич çĕр çул хушшинчи пурнăçĕ пирки пыни кĕретĕн курăнать: «Вĕсенчен кулма тытăнĕç, çăпатапа çӳретĕç, çĕр-ик çĕр çул иртсен паянхи кун асра та пулас çук. Сапаланчăк, чухăн пурăнĕç».

М.Юрьев трагедийĕнчи тĕп шухăшсемпе мотивсем М.Юманăннипе тӳр килнине асăрхамасăр иртме май çук. Çав хушăрах çыравçă Г.Комиссаровăн тата М.Петров (Тинехпи) ĕçĕсемпе тĕплĕн паллашни те сисĕнет. Уйрăмах юлашки тĕпчевçĕн 1925 çулта пичетленсе тухнă «О происхождении чуваш» кĕнекинчи шухăшсем палăраççĕ унăн трагедийĕнче. «Жестокая борьба на два фронта, с татарами и русскими, длившаяся в начале XIII в. несколько лет, вывела Чувашское государство из строя самостоятельных государств, а их самих поставила в положение побежденного и угнетенного народа со всеми роковыми последствиями, отсюда проистекающими», – çапла хак панă Тинехпи çав синкерлĕх калăпăшне. Малалла вăл вырăс патшалăхĕн наци пусмăрĕнчи вырăнне тĕрĕс палăртнă: «Начатое дикими выходцами из Азии...

довершила дореволюционная русская государственность, варварски хищная и до жестокости тупая. Своей колонизационной и обрусительной политикой она довела чуваш, этих потомков некогда выдающегося и культурного народа, почти до могилы» (58–59 с.).

Трагеди вĕçĕнче (пиллĕкмĕш пайра) пăлхарсем харăсах икĕ çара (вырăссен тата тутар-монголсен çарĕсене) хирĕç тăнине пĕлетпĕр. Ильхам хун Велимене çапла ăнлантарать: «Хĕвел анăç енчен Софик вырăссене хăвалама тытăннă. Пӳлер хулине каялла илнĕ хыпар пур. Чăннипех илнĕ пулсан вăл паянах хăйĕн çарĕпе хĕвел тухăç енне тутарсемпе çапăçма каймалăх пулнă...»

Трагедири уйрăм сăмахсемпе ятсем те (хун, Супуттай, Пулхăр) М.Петров каланă-çырнă евĕрлĕрех пулса тухнă. Çавăнпа та М.Юрьевăн истори тĕлĕшĕнчен тĕп пулăшу параканĕ ун чухне Чăваш патшалăх издательствинче ĕçленĕ Тинехпи пулнă тени иккĕленӳсĕр. Чăваш аваллăхĕн тĕпчевçипе М.Юрьев драматург Элмен ушкăнĕнче тăнă пулин те, вĕсем чăвашăн иртнĕ пурнăçне Мĕтри Юман пекех хаклана, унăн аваллăхĕпе мăнаçланнă. Çапла вара, 20-мĕш çулсенчи чăваш интеллигенцийĕ пăлхарлăх идейине пула тепĕр хут чăмăртанма, аваллăха пуласлăхпа çыхма тăрăшни курăнать. Хăйĕн историне тупнă, унпа мăнаçланма пултарнă халăх кăна çĕнĕ пурнăç йĕркелеме хал çитерессине ун чухнехи интеллигенци сиссе тăнă. Шел пулин те, кĕçех авалхипе хальхине тепĕр хут хирĕçлетме, пăлхарлăх-чăвашлăха класс кĕрешĕвне хирĕçле, кивелнĕ идеологи пек хак пама пуçăнаççĕ.

М.Юрьев хăйĕн трагедине чăннипех юратнăран çуралнă пепкине унти тĕп харкамçă (Велиме) ятне парать. Велиме Михайловна çитĕнсен Хусанти медицина институтĕнчен вĕренсе тухнă, Чернигов хулинче тухтăр ĕçĕпе пурăннă.

1958 çул пуçламăшĕнче М.Юрьев хăйĕн трагедийĕ пичетленнĕ кĕнекене тепĕр хут куçпа курас тĕллевпе Чăваш кĕнеке палатине çитет. «Хам кĕнекеме юлашки хут аллăмра тытса пăхма памарĕç», – ӳпкелесе çырнă вăл çавăн

çинчен Максимов-Кошкинский патне. «Пурнăçăмра малашлăх курăнмасть, çавăнпа та пурăнассăм та килмест, – пĕлтерет вăл хăйĕн театрта ĕмĕрлĕх тупнă тусне 1959 çулхи раштавăн 14-мĕшĕнче çырнă çырăвĕнче. – Эсĕ историшĕн истори турăн, хăвăн ятна-шывна çĕклеме пултартăн, сан çинчен пирĕн хыçран килекенсем мăнаçланса калаçĕç. Эпĕ вара кулăшла пурăнса кулăшлах вилетĕп пулĕ, çĕре кĕрсен некролог çыраканĕ те пулмĕ тетĕп...»

Вăхăт ятсене манăça кăларать кăна мар, вăл вĕсене çĕнĕрен çĕклеме те пултарать. Паян М.Юрьев чăваш драматургийĕн историйĕнчи хăйне тивĕçнĕ вырăна чăннипех йышăнчĕ темелле. Унăн трагедийĕ те чăваш театрне таврăнĕ-ха...

Халĕ хăш-пĕр пĕтĕмлетӳсем тăвар.

Чи малтанах чăваш драматургийĕ театрпа пĕрле аталанса пынине палăртмалла. Малтанласа театр репертуарĕнче ытларах куçарнă пьесăсем пулнă пулсан, 20-мĕш çулсенче, тĕпрен илсен, чăваш çыравçисен пьесисене лартма пуçлаççĕ.

20-мĕш çулсенче драматурги жанрĕсен тĕсĕ чылай пуянланать: комедипе трагикомеди, истори драми, социаллă психологи драми т. ыт.те. Çыравçăсем çиелти ĕç-пуçа мар, геройсен социаллă типлăхĕпе психологи чăнлăхне мала кăларса тăратаççĕ. Ку тĕлĕшрен чи ăста та пултаруллă драматург Ф.Павлов пулнă.

Усă курмалли литература

Романова Ф. Театр, любимый народом. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1973.

Чăваш совет литератури. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1972.

Павлов Н.С. Краткий очерк истории чувашского литературоведения и критики. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1970.

Тани Юн. Аса илес килменнисем // «Хыпар» кĕнеки. 6 №. – Шупашкар. 1993. Нарăс, 2.

ПЕТР ОСИПОВ (1900–1987)

Петр Николаевич Осиповăн пурнăçĕпе пултарулăхне çак тапхăрсене уйăрса пăхма пулать: 1. Шкулпа гимназире вĕреннĕ тапхăр (1918 çулччен). 2. Университетра вĕреннĕ тапхăр (1918–1924). 3. Режиссерта ĕçленĕ тапхăр (1925–1929). 4. Репрессипе вăрçă çулĕсенчи тапхăр (1930–1945). 5. Юлашки тапхăр (1945–1987).

Шкулпа гимназире вĕреннĕ тапхăр. Пуçламăш шкул хыççăн П.Осипов Хусанти арçын ачасен гимназине ăс пухма каять, унтан 1918 çулта вĕренсе тухать. Çав вăхăтра вăл пултарулăх çулĕ çине тăрать, «Икĕ каччăн пĕр шухăш» пьесине çырма пуçлать. «Ку пьесăн тĕрленчĕкĕсене эпĕ 1916–1917 çулсенчех çыркаланăччĕ, – аса илет драматург 1979 çулта. –Яш çулсенче эпĕ ялта каччăсемпе пĕрле улахсене çӳреме юрататтăм. Каникула тăван яла таврăнсан яш-кĕрĕмпе пĕрле çамрăксен уявĕсене кайса курмасăр ирттермен темелле. Туй юррисем, çамрăксен юрри-ташши калама çук килĕшетчĕç мана... Çавăнпа пĕрлех эпĕ тĕрлĕ мыскараçăсен халапĕсене те тăрăшса çыра-çыра илеттĕм, сцена çинчен кăтартмалли картинăсем тăвас пирки те пуçра шухăш çаврăнатчĕ. Хамăр ялта пулса иртнĕ пĕр мыскара çинчен – хаклă тавар сутуçи хĕрарăмла тумланнă каччăран мăшкăл курни çинчен – «Мыскара» ятлă икĕ картинăллă кулăшла пьеса çырнăччĕ... Ун хыççăн эпĕ «Улахра» ятлă тĕрленчĕкрен «Икĕ каччăн пĕр шухăш» çырма тытăнтăм».

«Икĕ каччăн пĕр шухăш». Камитри ĕç-пуç 1916–1917 çулсенче пулса иртет. Пĕрремĕш пайĕнче улах ларакан Санюкпа Улюк ал ĕçĕ тунине кăтартнă. Вĕсем калаçнинчен эпир Санюка икĕ каччă – чухăн Тимушпа пуян ачи Петĕр – юратнине пĕлетпĕр. Хĕрĕ, литературăри традиципе килĕшӳллĕн, чухăнне савать, çавна систерсе ăна тĕрĕллĕ сăмса тутри парнелет.

Камите çыравçă малтан «Улахра» ят панă иккен, унта икĕ каччă ялти сарă хĕршĕн хирĕçнине кăтартас тĕллев тĕпре пулнă. Каярах автор хирĕçĕве çав çулсенче анлă сарăлнă пейĕтсенчи (каччи е упăшки вăрçа тухса кайни, вăл таврăнсан элеке итлесе савнине вĕлерни çинчен калакан юрăсенчи) уйрăлу мотивне кĕртсе вăйлатать. Хирĕçĕве Ф.Павловăн «Ялта» драмин витĕмĕпе те ăнлантарма май пур пек.

Камит жанрĕ сюжета кулăш çулĕпе яма хистет, йывăр лару-тăрăва çăмăллăн татса пама ыйтать. Елюкăн Çтаппана качча кайма килĕшмех тивет пулсан, Санюк вара амăшĕн сăмахне итлемесĕр килĕнчен ыйткаласа çӳреме тухса каять, çапах та хăй юратман Петĕре качча тухма килĕшмест. Пĕр ырă кун çухалнă Санюк та, унăн вăрçăран сывалма таврăннă Тимушĕ те тĕл пулаççĕ, çав кунах туй тăваççĕ.

Пейĕт сюжетне пуçĕпех пăхăннă пулсан ялта Тимуш вилнĕ текен сас-хура сарăлнă хыççăн Санюкăн Петĕре качча каймаллаччĕ, туй вăхăтĕнче Тимушăн яла çитмеллеччĕ. Вара тин вĕсем пĕрле пулнă пулĕччĕç, ултавçа тивĕçлипе тавăрĕччĕç. Психологилле тишкерĕве мала лартманран П.Осипов Санюк сăнарне романтикăлла пĕр енлĕрех, юратушăн тем тума хатĕр çын пек кăтартнă. «Атте, эпĕ Тимушах каятăп», – тет вăл çирĕппĕн.

Пуян хыççăн каякан, эрех ĕçме кăмăллакан, юлашкинчен пуянран писсе ырă персонажсен шутне кĕрекен сăнара малтанласа «Ялта» драмăра курнăччĕ эпир (Муççа). П.Осипов кунта ăна Эрех Ваççи сăнарĕнче малалла аталантарнă. Чи малтан автор Ваççана вырăсла пĕлмен çын пек сăнарланине палăртмалла. Иккĕмĕш пайра Ваççа патне чăвашла пĕлмен хăмла хуçи пырса кĕрет, унран çул кăтартма ыйтать. Çав сценкăна 20-мĕш çулсен пуçламăшĕнче клубсенче хăйне уйрăм кăтартни паллă. Ку сăнарта Ухтерккен хăтланкаларăшĕпе чĕлхи пурри те сисĕнет. «Не расковору», – тет çине-çинех Ф.Павлов харкамçи. «Ты каçаххăй», «Эс мĕн ыйтахăйăш?», «Ĕлексей Иванчă вилехăл тетĕп! Мазар çине каяхăл», – сӳпĕлтетет Эрех Ваççи.

«Икĕ каччăн пĕр шухăш» хайлав, авторĕ каланипе килĕшӳллĕн, 1924 çулта тин пьеса шутне кĕрсе çитет. «Çав çулах ăна эпĕ Хусанти Чăваш педтехникум çумĕнчи драмкружокра лартса патăм», – аса илет каярах П.Осипов. Хăй Шупашкара куçсан вăл çав пьесăна Чăваш тĕп театрĕн сцени çине кăларнă.

Университетра вĕреннĕ тапхăр. Ку çулсенче П.Осипов Чăваш театрĕнче артистра та вăй хурать, тĕрлĕ рольсем выляса хăйĕн сцена çинчи

ăсталăхне ӳстерет. Çав вăхăтрах драматург «Кушар» тата «Кăкламан тымарсем» драмисене хайлать, А.Толстойăн «Усал сывлăш», Ф.Шиллерăн «Хаярлăхпа юрату» драмисене чăвашла куçарать. 1927 çулта «Нарспи» поэма тăрăх пьеса çырать. «Пуçласа çырнă чух ку драма «Пăлхав» ятлăччĕ, – аса илет автор хăйĕн «Кăкламан тымарсем» пьеси çинчен. – Ăна эпĕ Шупашкар уесĕнчи Воскресенски вулăсĕнчи Шĕнерпуç ялĕнче пулса иртнĕ кулаксен пăлхавне курнă хыççăн çырма тытăнтăм... Çав тери тискер чунлисен пăлхавĕ мана хытă хумхантарчĕ, драма çырма хистерĕ. Пьесăна çырнă чух вара мана Чăваш педтехникумĕнче вĕренекен ачасем нумай пулăшрĕç, вĕсемех 1924 çулта пьесăна выляса та кăтартрĕç.

Нумай çул иртсен «Пăлхав» пьесăна эпĕ çитменлĕхсене шута илсе çĕнĕрен улăштарса çыртăм, ятне те улăштартăм. Ку ĕçе Чăваш патшалăх академи драма театрĕн режиссерĕ сĕннипе турăм. «Кăкламан тымарсем» ятлă пулса 1936 çулта вăл сцена çине тухрĕ...»

«Кушар». Драма икĕ вариантлă. Вăл пĕрремĕш хут уйрăм кĕнекен 1927 çулта кун çути курнă, улăштарнă тексчĕ тепĕр вăтăр çултан пичетленнĕ. Чăваш тĕп театрĕн сцени çине 1926 çулхи ака уйăхĕнче тухни паллă (лартаканĕ М.Юрьев). Хайлава автор «Икĕ каччăн пĕр шухăш» пьесăна аталантарса çĕнетнĕ май çырни иккĕленӳсĕр. Эппин, унăн малтанхи вариантне вăл 1924–1925 çулсенче хайланă теме май пур. Драмăн çĕнĕ варианчĕ сцена çине 1935/36 çулсенчи сезонра тухать, ăна Н.Айзман лартнă пулнă.

«Пьесăн ĕмĕрĕ тумхахлă пулчĕ пулсан та, – аса илет каярах П.Осипов, – вăл – манăн чи юратнă произведенисенчен пĕри». Çакна çыравçă хайлавра пулса иртнĕ хирĕçӳсем пурте пекех хăйĕн ентешĕсен пурнăçĕнчен илнĕскерсем пулнипе çыхăнтарать: «Тĕп геройĕ Валькка, унăн ашшĕ Хветюк, чахоткăпа вилекен амăшĕ, Кĕçтенкки пичче, Артеми, Марье, Мирун – пурте вĕсем авторăн тăванĕсем. Маркки пичче кĕтӳçĕ те – автор юратнă сăнар – пĕр енчи çынах».

1927 çулта пичетленсе тухнă кĕнекере çыравçăн умĕнхи сăмахĕ пур. Унта вăл «Кушар» тесе вĕсен енче хĕр пасарне (похxине, таппине) каланă тет. Çав пасар Чăнкасси ялĕн (халĕ Сĕнтĕрвăрри районне кĕрет) улăхĕнче, шыв хĕрринче, пухăннă иккен. Çимĕк кунĕнче ку вырăна таврари ялсенчи çамрăксем пухăнса савăннă, çавăн чухнех каччăсем хăйсем валли хĕр те суйланă. «Хĕрпе каччă паллашасси, хĕр вăрласси е ашшĕпе амăшĕнчен вăрттăн юратакан кавча тухса каясси – çав Кушарта час-часах пулать, – ăнлантарнă драма çыраканĕ. – Манăн драмăри ĕç те çав Кушартан тапранса каять. Çавăнпа пьесăна та эпĕ «Кушар» тесе ят патăм».

Хайлавăн пĕрремĕш пайĕнчи ĕç-пуç пĕтĕмпех Кушарта пулса иртет. Чăнкасси пуянĕн (Кăвак Энтрейĕн) хĕрне Лисука Кутемер ялĕн каччи Валькка уявранах вăрласа каять. Çакна хĕре савакан Чăнкасси каччи Эрхип те (ăна автор «çамрăк усал, пуян» тесе хак панă) хăйĕн юлташĕсемпе чăрмантараймаççĕ. Лисук пуян ачине мар, чухăн Валькана савать иккен. Çав хушăрах вăл иккĕленни те сисĕнет: «Атте-анне мана Эрхипе парасшăн-çке, туртса илмĕç-ши каялла?» Хĕр тем пуласса сиссе (К.Ивановăн «Нарспи» поэминчи юмăç та малалла мĕн пулассине çапла сиснĕччĕ!) акă мĕнле калать: «Ах, Валькка, çапах темшĕн ман чун хускалать. Кушара килнĕ чух хĕпĕртесе килтĕм, кайма тăрсан хăраса ӳкрĕм: санăн пуçна çини пулмĕ-ши? Эрхип питĕ усал-çке!»

Иккĕмĕш пайри ĕç-пуç Кутемер ялĕнче пулса иртет. Кил хуçи арăмĕ чирлĕ, ывăлĕ (Валькка) авланма шухăш тытнă. Унта вăрланă хĕр ашшĕпе амăшĕ тата инкĕшĕ пырса кĕреççĕ. Ашшĕ хĕрне кавча пама хирĕçех те мар иккен. «Маншăн пулсан ĕçкĕ пултăр, урăх нимĕн те кирлĕ мар, пурĕ пĕр кавча парас пулать», – пуян кĕрӳ тупма ĕмĕтленнĕ арăмне лăплантарать Кăвак Энтрей. Инкĕшĕ Лисука чееленсе пахчана илсе тухать те Эрхипсене каялла вăрлаттарса ярать. Çав хушăрах Валькан чирлĕ амăшĕ вилсе каять. «Юрĕ, Лисук! Эсĕ аннене те канăçлă вилме памарăн, манăн пурăнăça та ĕмĕрлĕхе пăсрăн, ял-йыш умĕнче намăса кĕртрĕн!.. – тарăхса калать каччă. – Çак виле умĕнче калатăп: ман аннене хĕрхенсе кăмăл тумарăн пулсан ман

тăшмана та нумай ан мăшкăллаттар... Енчен Эрхипех кайсассăн, хам пĕтем те, анчах ăна кулма памăп!»

Виццĕмĕш пайри ĕç-пуç мухтанчăк Тикка килĕнче пулса иртет. Хăйĕн ывăлне авлантаракан ашшĕ акă мĕнле каппайланать: «...саплăк тумтир тăхăнсах курман-ха ку таранччен, тыр-пул, укçа енчен те Кăвак Энтрейрен юлса пыман, хамăн ачана Эрхипе те унăн хĕрне илме тивĕçлĕ пуль тесе шутлатăп».

Пĕркенчĕк айне тăнă Лисукăн урăх шухăш, вăл хăйне çапла сăмахсемпе айăплать: «Ах, телейсĕр чунăм. Мĕншĕн качча тухрăм-ши? Мĕншĕн çакă туя пуçличчен пуçа çимерĕм-ши? Атте-анне хушнине мĕншĕн хирĕç пымарăм-ши? Хамăн чунăм савнине епле пуçпа пăрахрăм-ши? (*Йĕрет.*)».

Халĕ Елюк («Ялта») иккĕмĕш хут качча кайнă саманта аса илер. Вăл тепĕр хут пĕркенчĕк пĕркениччен хăйĕн пуçне çиме хăтланса пăхать, чунĕ савни вилнĕ тесе ĕненет. Çавăн хыççăн тин хăйне шывран туртса кăларнă Çтаппана çапла калать: «Ман пурнăçа çăлнăшăн – эпĕ санăн». Çав хушăрах вăрçăран таврăннă Ванюк мăйĕнчен те çакăнмасть. Паллах, вăл упăшкине юратнă та, юратĕ те. Çапах та хăйне чарма, туйăмне пытарма хăват çитерет. Çав саманта драматург çапла каласа кăтартнă: «ПУРТЕ. Ах! (*Пурте тĕлĕнсе хытса каяççĕ. Елюк Ванюк еннелле пĕрре ура ярса пусать те ăнтан кайса ӳкме тăрать. Çтаппан Елюка çĕклесе тенкел çине лартать.*)».

«Кушарти» Лисук урăхларах çын. Вăл инкĕшĕн сăмахĕсене («Мĕнле эсĕ çакăнтах юласшăн-ха? Амăшĕ халь вилет, вара епле пурăнас тетĕн? Алăри ачана кам пăхтăр, санăннах пăхас пулать-çке!») илтсенех иккĕленме пуçлать. «Эсĕ ман пуçа йăлтах тепĕр майлă çавăрса ятăн, – тесе хуравлать Лисук хăйĕн чее инкĕшне. – Эпĕ кун пек пуласса пĕлмен, Вальккапа иксĕмĕрех пурăнатпăр пуль тенĕччĕ. Инке, чăнах мĕн тăвас-ха вара ман?»

Лисук иккĕленӳпе юрату хушшинче тăрать, тепĕр чухне вăл йывăрлăхсенчен хăраса ӳкме те пултарать иккен. Салтак ачисем туя пырса кĕмен пулсан пĕркенчĕк айĕнчен тухнă (арăм пулса тăнă) Лисук юратăвĕ

хыççăн каймастчĕ те-и тен? Валькка курсанах вăл унăн патне «куççулĕпе чупса пырать», каçару ыйтать. «Кай, сĕтĕрĕнчĕк! Ан çыпăç ман çума! Ытала пуян упăшкуна!» – çиллессĕн каласа хурать Валькка хăйĕн савнине «Эрхип патне тĕртсе ярса». Юлашкинчен Лисук салтак ачисемпе тухса каять, вĕсем Вальккапа çураçăнаççĕ.

Тăваттăмĕш пайри ĕç-пуç чи малтанхи вырăнтах пулса иртет. Унта Маркки пиччепе ял ачисем каçхи выртмана пухăннă иккен. Ватти Лисука хăйĕн патне пурăнма чĕнет, вĕсем салтака каякансене ир кӳлĕм ăсатса яраççĕ. Валькка Лисукран çапла сăмахсем каласа уйрăлать: «Сывă пул... Тен, хăçан та пулсан каллех тĕл пулăпăр...Тен, пулмăпăр та».

Халĕ вариантсенчи тĕп уйрăмлăхсем пирки каласни вырăнлă пулмалла. Малтанхи текст çапларах вĕçленет: çав декорациех, уйăхлă каç. Çамрăксем юрлаççĕ, выляççĕ. Лисук çитсе кĕрет, Марккие савнийĕн юлташĕнчен çыру илни çинчен пĕлтерет. Вальккапа унăн тусне Артемие пулемет командине илнĕ-мĕн. Пăрахут çинче Валькка сасартăк чирленĕ те ăна Чулхулара антарса хăварнă иккен. «Çук, Маркки пичче! Вилнех вăл, чĕрĕ пулсан пĕр-ик сăмах та пулсан çырмалла... – чĕрине çунтарать Лисук. – Маркки пичче, эп ыранах ун патне Чулхулана каяс тетĕп... Пĕлетĕп, виллине те пулин шыраса тупатăп (*йĕрет*)».

Улттăмĕш курăннинчи ремаркăра драматург çапла çырса кăтартнă: «Лисук пĕччен, ыттисем çывăраççĕ. Лисук тахçанччен çырăвне пăхса вут умĕнче вуласа ларать. Эрхип вăрттăн хыçалтан кĕрсе, йĕри-тавра пăхкаласа итлесе тăрать. Вара çывракансене пăхса тухать. Унтан Лисука, вуласа пĕтерсен, çăварне тутăр хыптарса пăвса пăрахать те вут патне açампа витсе вырттарать, пичĕ курăнать. Вара çырăвне илсе пирус чĕртсе вуласа пăхать те вут çине пăрахса тискеррĕн ахăлтатса тухса каять».

Çак вариантра Лисукпа Валькка та вилеççĕ, Эрхип хăйĕн тарçине вĕлерсе таркăна тухать, юлашкинчен хăй савнă çынна та тискеррĕн пăвса пăрахать. Çакна вăл пĕтĕмпе тавăрас тĕллевпе çапла тăвать. Сюжета çынсен юратăвĕнчен ытларах тавăру туйăмĕ е иккĕленӳ вăйлă пулни аталантарса

пырать. «Хам пĕтем те, анчах ăна кулма памăп», – тет Валькка Эрхип пирки. «Ывăлăм манăн начар ача мар, çынна пусмăрлаттармасть, çын айне пулма юратмасть, сана та çичĕ ютран чипер сыхласа усрĕ-ха», – мухтанать Эрхип ашшĕ Тикка. «Ман тавăрас вăхăт иртмен-ха! – тулхăрать хĕрсĕр тăрса юлнă Эрхип. – Хĕрĕ мана кирлĕ мар. Анчах ку мăшкăла тӳсме пултараймастăп!» Лисук та Валькка салтака кайсан хăй «ял мăшкăлĕ» пулса юласран хăрать. Салтак ачисем Эрхипе «мăшкăл тăваççĕ»: аллисене тăлласа, пăшалне çурăмĕ хыçне çыхса, йĕвенне уринчен çаклатса сĕтĕреççĕ, унтан тăрантас çине лартса яраççĕ.

Хайхи «мăшкăлтан хăрани», «мăшкăлшăн тавăрни» мотивсем автора сюжет хиврелĕхĕшĕн кăна мар кирлĕ пулни курăнса каять. Çав мотивсем тĕп идейăна çавăрăнса каяççĕ. «Пĕр çын та тепĕр çын мăшкăлĕ ан пултăр», – тет драматург. Çак тезис класс хирĕçĕвне кăтартнинчен анлăрах та пĕлтерĕшлĕрех. Кунта пуянпа чухăн пĕр-пĕрне ăнланманни кăна мар, тăванпа çичĕ ют, хамăр ялпа ют ял, çамрăкпа ватă, арпа арăм хирĕç тăрăвĕ те пур.

Чăваш ялĕнчи çынпа çын хушшинчи традицилле хутшăнусем пĕр-пĕрне хисепленипе, мăшкăл туманнипе çирĕп пулнă. 1917 çулхи пăлхавăр хыççăн ялти хутшăнăва класс хирĕçĕвĕпе кăна çыхăнтарса пăхма хистеççĕ. Çав хирĕçӳ хĕрсе пырать текен саманара, чухăн пуянсене пăхăнтарса тăрать текен обществăра «Кушарăн» малтанхи вариантĕнче каланă тĕп шухăш юрăхсăр пулнă. Ахальтен мар авторăн çав драмăн вĕçне 30-мĕш çулсенче улăштарма тивнĕ. Чи малтан вăл Эрхип Лисука вĕлернĕ картинăна кăларса пăрахать, унăн вырăнне эпилог кĕртет. Унти ĕç-пуç Хветюк килĕнче пулса иртет: Лисук Валькасем патĕнче пурăнать иккен, кĕçех унăн савнийĕ вăрçăран аманса таврăнать. «Ёмĕтĕмĕр пирĕн сӳнмен, Лисук! Телейĕмĕр пурах!» – тет вăл чаршав хупăнас умĕн.

Юлашки вариантри Валькка – чăн-чăн революционер. Акă мĕнле сăмахсем калаттарать ăна автор: «Анчах вĕсем маннă: ĕç халăхĕн тумлам юнĕ – улпутсемшĕн вилĕм! Кашни тăлăха юлнă чĕрепе пĕрле пĕтĕм тĕнчери ĕç

халăхĕн вăйлă юн тымарĕ тапать. Революци сывлăшĕ сарăлнăçемĕн сарăлать. Кашни салтак хăйпе пĕрле ялсене, хуласене çĕнĕ вăй илсе килет! Унăн вăйĕ – пролетарилле революцин хĕлхемĕ!»

Лисук ашшĕне пуян çынран вăтам хресчен туни те, Эрхиппе унăн ашшĕне тискертерех сăнласа кăтартни те драма тытăмĕн пĕрлĕхне упраса хăварма пулăшайман. Хăш-пĕр сăнарсен (калăпăр, Эрхипĕн) кирлĕлĕхĕ çĕтнĕ, теприсем (Лисук) тĕссĕрленсе ларнă. Тĕп шухăша пăхăнман самантсемпе хăтланусем йышланни те иккĕмĕш вариантăн ăнăçсăрлăхĕ çинченех калать. Вилнĕ драматургсен хайлавĕсене «юсама» хăйнă (Ф. Павловăн «Ялта» драмине) саманара П.Осиповăн урăхла тума май килменнине ăнланма пулать ĕнтĕ. Кунта çыравçăн айăпĕ çук. Кунта вăхăт синкерлĕхĕ хуçаланать.

Режиссерта ĕçленĕ тапхăр. П.Осипов Хусанта тухтăрта ĕçленĕ çулсенче педтехникумра вĕренекенсен театрне ертсе пырать, тĕрлĕ спектакльсем лартать. 1927–1929 çулсенче вăл Шупашкарти Чăваш театрĕн режиссерĕнче вăй хурать, хăйĕн «Хĕрлĕ хунав», «Ĕмĕр сакки сарлака», «Айтар», «Траххом юрри», «Ылханлă йăх» пьесисем тăрăх спектакльсем лартать. Çак вăхăтра П.Осипов хăйĕн анлă пултарулăхне кăтартма пултарать, çине-çинех ăнăçлă пьесăсем çырать.

«Ĕмĕр сакки сарлака». Драма пирки П.Осиповăн çапла аса илни пур: «1925 çул, хам педтехникумра ĕçленĕ чух, драмкружокри студентсем мана Йăлăмри сюжета иртнĕ выçлăх çулсемпе çыхăнтарма сĕнчĕç. Вара эпĕ ваттисен каларăшĕпе усă курса пьесăна «Ĕмĕр сакки сарлака» ят патăм».

Драма «Сунталăн» 1926 çулхи 10–11-мĕш номерĕсенче пичетленнĕ. «Умĕнхи сăмахра» çыравçă çапла асăрхаттарнă: «Пурте çителĕклĕ чух эпир малаллишĕн шухăшламастпăр, анчах пĕтсе çитсессĕн пĕрне-пĕри кăшла пуçлатпăр, тивĕçсĕр пурăнăça айăплатпăр, хамăрăн айăпсене манатпăр. Пьесăра та икĕ тĕрлĕ çынсем пур: пĕрисем кивĕ йăлана хисеплеççĕ, хăйсен пĕтсе çитнĕ анисем тыр памаççĕ, улăхсенче ути пулмасть; теприсем тыр-пултан аптрамаççĕ, пĕр-ик лав утă тăвасшăн ик эрнене çирĕм çухрăма каймаççĕ, килтех 10–15 лав тăваççĕ. Кив йăла вăйлă, çĕн йĕркене унăн

парăнас килмест; çĕнĕ йăла çапах пĕрехмай малаллах шăвать, çавăнпа ĕмĕр сакки те сарăлсах пырать».

Халĕ çав çулсенчи чăваш хресченĕн пурнăçне аса илер. Чăваш облсовечĕн 1924/25 çулхи отчетĕнче çапла асăрхаттарса çырнă пулнă: «Халăх йышĕ ӳсни, виçĕ пусăллă уйсемпе усă курни тата çĕр çителĕксĕрри, выльăх-чĕрлĕх ăратсăрри, тислĕкпе сахал усă курни, çĕр тулăхлăхĕ чакни – çаксем пурте Чăваш республикинче хресчен хуçалăхĕсене йĕркеллĕ аталанма чăрмантарса тăраççĕ».

1924–1927 çулсенче нумай пусăллă уйсен хисепĕ 12 хута яхăн ӳсет, чăваш хресченĕ нумай çул ӳсекен курăк акма, пахча çимĕç ытларах çитĕнтерме пуçлать. Ун чухне çĕнĕ меслетсене (иртерех акассине, кĕрхи çĕртме тăвассине, кĕрхи тырра çуркунне сӳрессине) халăх патне тĕрлĕ хаçат-журнал урлă çитерме тăрăшнă, тĕрлĕ мелпе хавхалантарса пынă. Ку тĕлĕшрен драмăра П. Осипов çав вăхăтшăн пĕлтерĕшлĕ тема хускатнă ĕнтĕ. Киввишĕн тăракансем (Микуç пичче, Кавĕрле пичче йышшисем) виçĕ пусăллă уйпа усă кураççĕ, вĕсен пуссисем те, кĕтĕвĕпе çаранĕсем те пĕрле. Çак халăх ушкăнне Ишмук Павăлĕ кăна кĕмест, вăл çĕр улми, кăшман акса çитĕнтерет, тĕрлĕ машинăсемпе усă курать. «Эсĕр çур пилĕке тăватă пăт ыраш кӳртетĕр, эп машинăпа акса – виçĕ пăт, кирлĕ пулсан – икĕ пăт çурăпа та çырлахтаратăп, – ăнлантарать çĕнĕ меслетсене хапăл хресчен. – Санăнне акнă чухнех кайăксем çисе пĕтереççĕ, ман пĕр пĕрчĕ те çиелте выртмасть... Эс выççи-тутти пурне те хутăш акатăн, эп алласа шултрисене çех акатăп. Сан ӳсет виç шит, ман ик аршăн, хăш чухне виççĕ те».

Малалла та çапла сăлтавласа калаçать çĕнĕлĕхшĕн çунакан Павăл. Пĕр шутласан, вăл хăйне евĕр агитатор та: «Пĕр клевер акни мана çĕр алă лав тислĕк хакне тăрать... Е тата паранкă, кăшман мĕн чул усă кăтартнине шутласан, эсĕр хăвăр пуссăрта виçĕ çулта ун чухлĕ усă тăвас çук. Эсĕр пĕр ĕнепе пĕр лаша аран усратăр, эп ик ĕне усратăп, племенный вăкăр та пур, сысна та халь пуссан тăхăр пăт таять, кĕркуннеччен вун-вун икĕ пăта

çитеретĕп. Тăват çĕр пăт çĕр улмипе эпĕ тыр илес пулсан та сахалтан çĕр пăт илетĕп...»

Чăн та, малтанласа ялти пурăнăçа схемăллăрах кăтартнăн туйăнать. Ишмук Павăлĕ пурăнăç тăвасси вĕреннинчен килет тесе шухăшлать, хăйĕн хĕрне Верука малалла вĕрентесшĕн вăл. Микуç пичче вара хăйĕн Хветĕрне ĕçрен хăптарасшăн мар, вĕреннин уссине курмасть. Павăла хӳтĕлесе каласнă ывăлне ял комиссарĕ çапла хăртса пĕтерет: «Пĕртен-пĕр ывăлăма паян кунтан ман ылханăм пултăр. Вил, пĕт! Тумлам куççулĕ кăлармăп. Çак шуйттансемпе çыхланса çӳре. Хапха умне пырса выçă йăвалансан та пĕр татăк çăкăр илеймĕн. Памастăп, кӳртместĕп, ылханатăп! Пĕтĕр пурте! Çунса кайăр, выçă вилĕр, йытă вилĕмпе вилĕр!»

Тăваттăмĕш пайри ĕç-пуç выçлăх çул пулса иртет. Хветĕр салтакра, унăн ашшĕ вилес пек чирлĕ, амăшĕ куççăрланнă, ыйткаласа çӳрет. Хайхи Микуçăн ылханĕ хăйĕн тĕлнех пулнă иккен. Ишмук Павăлĕ «ял чирĕпе» (тифпа) чирлесе вилни сюжет аталанăвĕ юмахринчен чылай кăткăсрах пулни çинчен калать.

Автор калас тенине Хветĕр чи вĕçĕнче çапла пĕлтерет: «Вилнисене макăрнипе чĕртес çук, хамăр сывă пулсан, тен, çĕнĕ телей те курăпăр. Çут çанталăк пуласса, вăйлă пулăшу килессе эпĕ шанатăп...»

«Сунтал» вариантĕнче Хветĕр çамрăк власть (тӳре-шара) пулăшасса шанса каласни пур. «Унччен кĕтер! Павăл пичче сăмахĕсене манас мар: выçлăхпа чире çĕнесси вĕреннинчен килет, ăна вырăна кӳртесси – çамрăксенче!» – пĕтĕмлетет пархатарлă харкамçă. Кĕнекере (1960) Хветĕр урăх сăмахсем калать: «Пире Хĕрлĕ Çартан сире пулăшма ячĕç. Малтанлăха типĕтнĕ çĕр улми тата сухари илсе килтĕмĕр. Ыран станцăран турттарса килеççĕ».

Юлашки вариантра выçлăха власть пулăшнипе çĕнтернине палăртса каланă. Кунта малтанхи тĕп идея – пурнăçа çĕнĕлле, хут вĕренсе йĕркелемелле тени – тĕссĕрленнĕ, философилĕх вăйсăрланнă. «Анчах кирек

мĕнле пулсан та икĕ енĕ те хăйĕн хуйхине сиресшĕн, – хайлава ăнлантарнă П.Осипов 1925 çулта. – Малтанхисем çăмăл вăйăсемпе, ĕçкĕпе хăйсене йăпатаççĕ, кайранхисем çĕн пусăсем вăйланса пынипе, ăратлă выльăх-чĕрлĕх хунанипе савăнса хĕпĕртеççĕ. Икĕ енĕ те савăнать. Икĕ енĕ те çитменнипе йĕрет, мĕншĕн тесен «ĕмĕр сакки сарлака», паян лайăх пурăнни ĕмĕре пырас çук, епле те пулсан çĕнĕ çул тупса çитменлĕхе çĕнтерсе пырас пулать».

«Лайăх пурăнăç ĕмĕрлĕхе мар», «çĕнĕ çулсем шырамалла», «çитменлĕхсене çĕнтерсе пымалла» тесшĕн автор «Ĕмĕр сакки сарлака» драмăра. Микуç пичче йышши хресченсем «выçлăх çулах çĕр айне кĕнĕ», Ишмук Павăлĕ пеккисем те «ял чирĕнчен» хăтăлайман. Мĕнпур çăлăнăç вĕреннĕ çамрăксенче пулни иккĕленӳсĕр.

Хайлавра тепĕр шухăш та пур: çын чухăнлăхĕ тепĕр çын пусмăрĕнчен мар, тĕттĕм те вĕренмен çын пулнинчен килет иккен. Кĕçех Павăл пичче йышшисене кулак тесе кил-йышĕпех Çĕпĕре пуç илене ăсатас çулсем çитĕç. Ку вăл çыравçăн шала варăннă, малалла мĕн пулассине пĕлсе-сиссе тăнă чун тăрăмĕ.

«Ылханлă йăх». Çак драма пирки 1980 çулта тухнă «Пьесăсем» ятлă кĕнекере П.Осипов çапла аса илнĕ: «Ку пьесăна эпĕ 1927 çулта январĕн 1-мĕшĕнче çырма тытăннă, хамăр яла хĕллехи каникула таврăнсан. Пулас пьесăн 1-мĕш страницинче çапла çырса хунă: «Сурхури сăри». Çĕнĕ çул ячĕпе Хусанти Чăваш педтехникумне халалласа çыратăп. Уçăпйăх Микула Петри».

Драмăна çырса пĕтерсен çыравçă унăн ятне улăштарать, «Сунтал» журналта (1927. 5–6 №) «Ылханлă йăх» ятпа пичетлесе кăларать. Хайлав Чăваш тĕп театрĕн сцени çине 1927 çул вĕçĕнче тухать.

Пьеса прологран пуçланать. Унти ĕç-пуç 1908–1909 çулсен тĕлнелле ял старостин (Уçăп пиччен) килĕнче пулса иртет. Вăл анчахрах хăйĕн ывăлне Макара авлантарнă иккен те халĕ вара çĕнĕ хăта ĕçки ирттерет. Ял пуянĕ савăнать, хăйĕн йăхĕпе мухтанать: «Пирĕн йăхра начар пурăнаканĕ пĕр çын пур-и?» Каярах çак йăха пĕр Пикавай ятлă чăваш пуçласа яни, вăл пĕтĕм таврари чăвашсене хăратса пурăнни паллă пулать.

Пикавайсен хаярлăхĕ ялти хисеплĕ çынсен (Палли пиччепе арăмĕн) хĕрне (Наçике) качча илнĕ Макара та куçнă. Вăл чунсăр кăна мар, ултавçă та иккен: хăйне юратакан хĕре (Кĕтерука) «саватăп» тесе пурăнать те лешĕ йывăр çын пулсассăнах ăна пăрахса теприне качча илет. Хайхи Кĕтерук Макарсен килне алăри ачине вăрттăн хурса хăварать. Çакăнпа пролог вĕçленет.

Кайранхи пайсенче ĕçсем тепĕр 18 çултан пулса иртеççĕ. Кĕтерукăн хĕрĕ Райкка техникумра вĕренет. Унти комсомол ячейки вĕренекенсен пĕр пайне агитаци ĕçĕпе яла ярать. Çавăн пек йĕрке П.Осипов вĕреннĕ педтехникумра та пулнă. «Ун чухне Хусанти Чăваш педтехникумĕ çумĕнче «Сенкер блуза» ятлă агитбригада вăйлă ĕçлетчĕ, – аса илет драматург çав çулсене. – Хĕллехи каникулсенче агитбригада членĕсем ялсене тухса çӳретчĕç, вĕсемпе пĕрле преподавательсем те каятчĕç (вăл шутра эпĕ – врач). Клубсенче е шкулсенче калаçусем ирттереттĕмĕр, пĕчĕк концертсем, художествăллă гимнастика е пĕчĕк спектакльсем кăтартаттăмăр. Çав вăхăтра тата трахомăпа чирлекенсене пухса уйрăм калаçусем ирттереттĕмĕр, пултарнă таран сиплеме те тăрăшаттăмăр».

Пьесăра та Райккасен ялне унпа пĕрле агроном, тухтăр, обществовед тата Микула ятлă хастар комсомолец каяççĕ. Малтанхисем сцена çине пачах та тухмаççĕ пулсан, Пикавайййăх Микула çав пайсенче тĕп сăнар пек курăнать. Вăл Райккана килĕштерет иккен, «темĕншĕн юрататăп эп сана» тесе хăйĕн сисĕнкĕ туйăмне палăртать.

Виççĕмĕш пайра Макарăн Михаля ятлă куштан ывăлĕ курăнать. Сурхури ĕçкинче вăл ял çамрăкĕсемпе çапăçса каять, Пикавайййăх Микулана çĕçĕпе чиксе пăрахать.

Тăваттăмĕш пайра аманнă комсомолец вилсе каять, унччен пысăк вăрттăнлăх паллă пулать: хуларан килнĕ Микула Макарăн малтанхи савнийĕ хĕр пуçăн çуратнă ывăл ачийĕ иккен. Ăна ашшĕ приюта кайса панă, Кĕтерук вара хăйĕн пепки вилнĕ тесе пурăннă. Хайхи Микула Михаляпа Райккан пиччĕшĕ пулни паллă пулать.

Тĕнче сăмахлăхĕнче вĕлерекенĕ вилнин ашшĕ, пиччĕшĕ е шăллĕ пулнине кайран тин тур паллинчен палласа илни çинчен калакан хайлавсем пайтах ĕнтĕ. П.Осипов Г.Тал-Мăрсан «Кам айăплă?» драмине те питĕ лайăх пĕлни иккĕленӳсĕр. Унта пиччĕшĕ хăйĕн тăван йăмăкне палламасăр чиксе пăрахать.

Сюжета çапларах хиврелетни «Ылханлă йăх» драмăн тĕп шухăшне уçăмлатма пулăшать. Кĕтерук пĕтĕм Пикавай йăхне ылханать. «Пикавай йăхĕ те ĕмĕрлĕхе пырас çук! – тет вăл Макар кулака. – Хăçан та пулсан сире те çĕр çăтĕ-ха! Ав санăн ывăлу ӳснĕ-ӳсмен пусма вĕренчĕ!.. Маттур, Пикавай йăхĕ!.. Пусăр ытларах! Пусăр пĕрне-пĕри, сирĕн пĕтесси курăнса тăрать!.. (*Макара куçран пăхса тăрать те сасартăк ăсран кайса кăшкăрать, Райкка ăна пырса тытать.*) А!.. А!.. Хăвалăр ман çуртран Пикавайсене!.. Хăвалăр ашшĕне хăйĕн ывăлĕ патĕнчен!.. Хăвалăр!.. Ах-ха-ха-ха! (*Ывăлĕ çине ӳкет, Райкка амăшне ыталать.*)»

Ялти хирĕçĕве йăх-таврашпа çыхăнтарса Мĕтри Юман та («Пӳлĕх Йăмри») ăнлантарнăччĕ ĕнтĕ. Авалхи куштансемпе вĕсен тăхăмĕсем каярах кулака тухаççĕ, халăх ылханĕ тивет вĕсене. Çакăн евĕр шухăш марксизмăн классен хирĕçĕвĕн ăнлантарăвĕпе пачах та килĕшсе тăмасть. Ахальтен мар ĕнтĕ каярах П.Осиповăн драмăна çĕнĕрен юсама, Уçăп пичче тусĕсен йышне чиркӳ старостине, Улшуç Мĕтри куштанпа уретник сăнарĕсене кĕртме тивет. Пуянпа чухăнсене вăйлăрах хирĕçлетни те, Кĕтерукран чухăн хĕрĕ туса хуни те иккĕмĕш вариантри тĕп конфликта класс кĕрешĕвĕпе кăна ăнлантарса çитерме пулăшаймасть. Унти тĕп шухăш – усал вăл яланах (ĕмĕр-ĕмĕрех) усал, ламран лама юнпа куçать тени – юлашки вариантра та сисĕнет.

Репрессипе вăрçă çулĕсенчи тапхăр. Ку вăхăтра П.Осиповăн драматурги ĕçĕнчен ирĕксĕрех пăрăнма тивет. 30-мĕш çулсен вĕçĕнче çырнă «Кулленхи симфони» пьесинче автор «социализм çĕнтернĕ çĕршыври» çынсен пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне кăтартнă. Çак çулсенче П.Осипов пултарулăхĕ те нормăланă эстетика çăварлăхĕпе çăварлăхланать. Ун чухне авторăн чылай пьесине юсаса çĕнетме, çав эстетикăна юрăхлă туса çитерме тивет.

Юлашки тапхăрта П.Осипов проза çине куçать, «Элкей таврашĕ» ятлă пысăк калăплă хайлав çырать. Жанр тĕлĕшĕнчен ăна автор роман-эпопея тенĕ. Пĕр кил-йышăн историне ӳкернине шута илсе çав хайлава роман-сага тесе калама та май пур.

«Пирĕн пурнăç хăтлăхра» («Айтар»)

Хайлав ячĕ. Драматург пьеса ятне Сентиерĕн чи вĕçĕнче каланă сăмахĕсенчен илет. Пинерпи ашшĕ хĕрĕпе пулас кĕрӳшне пил панă хыççăн вилсе каять. Ун чухне Сентиер çапла калать: «Ан хурлан, Пинерпи, пирĕн пурнăç хăтлăхра». Кăшт маларах çех çамрăкрахскер (иккĕмĕш вариантра автор ăна Пичура тенĕ) халăха хăтлăха тарма сĕннĕччĕ: «Сирĕн утусем çунса кайнишĕн мар, хамăрăн авалхи тĕнпе йăлана усрас тесен (палăртни манăн. – *В.Р.*) пурĕ пĕр тарас пулать хăтлăха».

Малтан çав хăтлăха (сĕм вăрмана, çын ури çитсе пусман вырăна) Сентиерпе Пинерпи тарасшăнччĕ. «Айтара кайса пуç çийиччен – савнипе пĕрле пĕтем», – тарма килĕшсе калать Пинерпи. Ыттисем вара хăтлăха Христос тĕнне вăйпа кĕртекенсенчен (пьесăра ăна вырăссем тенĕ) тараççĕ.

Тĕп идея. Чăваш халăхĕ хăйĕн улпучĕсен (Айтар йышшисен) пусмăрне тӳснĕ хушăрах наци пусмăрне те чăтса пурăнать. XVIII ĕмĕрĕн 40-мĕш çулĕсенче чăвашсене Христос тĕнне хĕсĕрлесе кĕртеççĕ, чăваш тĕнĕпе йăли-йĕркинчен кулаççĕ, сăваплă вырăнсене (Киремет, чӳк вырăнĕсене) тĕрлĕ майпа варалама хăтланаççĕ. Çак икĕ тĕрлĕ мăшкăла тӳсме тивнĕ пирĕн халăхăмăрăн. Сентиер йышшисем Айтарсене те, тĕне вăйпа кĕртекен тӳре-шарана та парăнмаççĕ, пурнăçа вĕсем хăтлăха тарса тăсаççĕ. Паллах, вăхăтлăха кăна, тӳре-шара шăршласа тупиччен. Сентиер сăмахĕнче перспектива та курăннă пек: «Ялĕ-ялĕпе хирĕç тăрсан эпир Айтарсене мар – вырăссене (тĕне вăйпа кĕртекен тӳре-шарана тесе ăнланмалла. – *В.Р.*) хирĕç тăма пултаратпăр».

1934 çулхи вариантра Айтар хăйне парăнман Пинерпие Киремет йывăçĕ çумне çыхса хуртарать, ăна шыв ĕçтермесĕр асаплантарать. Кунта *чăваш*

тĕнĕпе йăлине упраса хăварас мотив çухалнă, Айтар хăй Киреметрен мăшкăллать. Социализмла реализм меслечĕ хыççăн кайса автора драма вĕçне те улăштарттараççĕ. Малтанхи вариантра Айтара салтаксем персе вĕлереççĕ, Ахтупая Улай хӳтĕленнĕ чухне çĕçĕпе чикет. 1934 çулхи вариант вара çапла вĕçленет:

«Пинерпи кĕтсе тăрать, Айтар та вырăнтан хускалмасть. Пичура,

Сентиер, Улай тата ытти çамрăксем çĕмĕрсе килеççĕ.

Сентиер. Эс манăн савнине выçă вĕлерме шут тытнă тенĕ сасă пур.

Айтар. Унпа сирĕн ĕç çук. Пинерпи мана пиллесе панă арăм, ирĕксĕр илмен. Выçăпа тутă пурăнасси – Пинерпин хăйĕн ирĕкĕ.

Пичура. Мĕншĕн эсĕ ăна йывăç çумне çыхса усратăн, мĕншĕн вăл çак тискер çĕрте, вăрманта? Эсĕ ăна вĕлерме шут тытнă!

Айтар *(кулса)*. Вĕлерме?! Ха-ха-ха!.. Ыйтăр хăйĕнчен, мĕн калĕ... Пинерпи, савнипе шăтăк пӳрте кайăн-и пурăнма е Айтарпа пĕрле – вăл çамрăк арăмĕ валли юри хатĕрленĕ чаплă кил-çурта?

Пинерпие пырса хăрах аллипе ыталать, Пинерпи пуçне усса тăрать.

Сентиер. Пинерпи, санăн юратни икĕ куна та çитмерĕ-и? Е пуянлăх çав тери илĕртет-и?

Пинерпи чĕнмест. Айтар савăнса кулать, пурте Пинерпирен тĕлĕннĕ.

Улай. Ăна хĕнесе пистернĕ, çавăнпа вăл калама хăрать.

Айтар. Ыйтăр хăйĕнчен... *(Сасартăк кайма хатĕрленет.)* Эй, Итупай, çавăрса кил çил çунатсене!

Итупайпа çамрăк хуралçă каяççĕ.

Пинерпи, каяр. Мухтав Киремете, кĕлтунипе çиттĕр. (*Пинерпие çавăтать*.)

Сентиер. Тăвансем, кун пек пусмăра тӳсме пултараймастпăр. Пирĕн улăх утине çунтаракан вăрă-хурахран, пĕччен çынтан хăрамалла-и? Тапăнас! *(Айтар патнелле ыткăнать.)*

Халăх. Тапăнас!

Пинерпи (*сасартăк Сентиер патнелле чупса кайма тытăнать*). Сентиер!.. Çăлсам мана!

Айтар *(хуса çитсе тытса)*. Манăн пулмасан никамăн та ан пул! (*Çурăмĕнчен çĕçĕпе чиксе пăрахать.*) Халĕ ĕнтĕ – ытала хăвăн савнине. (*Хăвăрт тухса каять.*)

Сентиер (*Пинерпи умне чупса пырса чĕркуçленет*). Пинерпи! (*Сиксе тăрса.*) Юн çине юн! Айтар-и, эп-и? Иксĕмĕртен пĕри пĕтес пулать! (*Хыçалтан чупать.*)

Улай. Ял-йыш пусмăр курнипе çиттĕр. Хăвалăр хыççăн!

Пурте Айтар хыççăн чупаççĕ. Сцена хыçĕнче кăшкăрашнисем, пăшал сассисем илтĕнеççĕ. Айтар сцена варрине чупса тухать те пăшалне авăрласа тепĕр еннелле тарма хатĕрленет, анчах çав вăхăтра сасартăк Ахтупайпа ытти ватăраххисем çитсе хупăрлаççĕ; вара Айтар каялла тарма тăрать, анчах тепĕр хут Сентиерпе Улая

тĕл пулать; пăшалне пеме ĕлкĕреймест.

Сентиер (*Айтар патнелле чупса пырса*). Киреметĕн парни Пинерпи мар, эсех пул! (*Айтара çĕçĕпе чиксе ӳкерет.*) Çакăнтан Айтарсен чапĕ сӳнтĕр!

Ахтупай. Тăвансем!.. Сентиер мар, эпĕ хам пулнă куççăр... Намăс!.. Намăс мана, старике!

Сентиер (*хавассăн*). Пуçламăшне тунă – халĕ каяр малалла!

Пинерпи (*ерипен пуçне çĕклесе*). Сентиер...

Сентиер. Пинерпи!

Сентиерпе Ахтупай хавасланса Пинерпие пырса ыталаççĕ.

Çук, эпир пĕтместпĕр, Пинерпи!.. Çĕр çинче ирĕклĕ вырăн пурах!.. Хăтлăх пирĕн хамăр алăра!»

Тĕп сăнарсем. Малтанхи вариантри Айтар кăткăсрах сăнарччĕ. Вăл хăй çынна нихçан та вĕлерменни çинчен темиçе хут чăнласа калать. Унăн йăхĕ ĕлĕкренпех хăватлă пулнă иккен (иккĕмĕш вариантра вăл пăлхавçăсене сутса улпута тухать). Халăха тертлентернĕ хушăрах чăваш улпучĕ наци пусмăрне хирĕç тăрать. Унăн юлашки сăмахĕсем мул çинчен мар (И.Юркинăн «Мул» повеçĕнчи Пăраски еплерех каласа вилнине аса илĕр), урăххи çинчен: «Хамăрăн тĕне лайăх сыхлăр!.. Ылханăр!.. Ылханăр!..» 1934 çулта Айтар сăнарне пĕр хура сăрăпа кăна сăрласа тискерлетнĕ. Кунта вăл хаяр кăна мар, чее те, тăван халăха сутакан пулса тăнă. Ун чухнехи чăн-чăн «класс тăшманĕ» ĕнтĕ.

Ахтупай пирки автор малтанхи вариантра çапла çырнă: «авалхи пуянтарах чăваш». Вăл унта хĕрĕнчен каçару ыйтса вилет. Пинерпи ăна çапла калать: «Эх, атте, хĕрĕн чунне хĕрхенмерĕн, Турра кӳрентертĕн – халь ав хăвăн ылхану хăвнах килсе тухрĕ». Иккĕмĕш вариантри Ахтупай «вăтам хресчен, улпутсене юраса пуянтарах пурнăç шыракан кил-йыш пуçĕ». Пьеса вĕçĕнче вăл чухăнсен енне куçать, Сентиер Айтара вĕлерсен çапла калать: «Тăвансем!.. Сентиер мар, хам пулнă куççăр... Намăс!.. Намăс мана, старике!» Кунта Турра кӳрентернĕ çын вилмест, чухăнсен майлă çаврăнса ӳксе пуянсене хирĕç тăрать. Çапла çырса кăтартмалла пулнă 30-мĕш çулсенче вăтам хресчене. Çапла тума хистенĕ социализмла реализм меслечĕ.

П.Осипов XX ĕмĕрĕн 20–30-мĕш çулĕсенчи чăваш драматургине малалла аталантараканĕсенчен чи хастарри пулнă. Вăл çине тăнăран чăваш театрĕ çĕнĕрен вăй илсе малалла талпăннă, унăн репертуарĕ наци драмисемпе пуянланнă. Çыравçă Ф.Павлов традицийĕсене ăша хывса классика ретне тивĕçлипех кĕме тивĕç «Пирĕн пурнăç хăтлăхра» историллĕ драма хайлама пултарнă, унта вăл наци ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекенсен кăткăс сăнарĕсене кăтартса пама хал çитернĕ. Каярах çав хайлаври класс хирĕçĕвне çивĕчлетме, наци ирĕклĕхĕн идейине хавшатма тивет драматургăн. Çапла майпа пьесăн тепĕр вариантĕ – «Айтар» çуралать.

Усă курмалли литература

Кириллов К.Д. «Айтар» драмăн малтанхи варианчĕ // Чăваш литератури: Поэтикăпа стиль ыйтăвĕсем: Ăслăлăх статйисен пуххи. – Шупашкар, 1989. – 85–111 с.

Родионов В.Г. Чăваш литератури (1917–1930-мĕш çулсем): Вĕренӳ пособийĕ. – Шупашкар, 2005. – 225–239 с.

1923–1930 ÇУЛСЕНЧИ ПОЭЗИ

Çак тапхăрти чăваш поэзийĕ тĕрлĕ енлĕн аталанса пырать. Пурнăçри тĕлĕнмелле пысăк улшăнусемпе кисренӳсем çыравçăсене ушкăнла, социаллă пулăмсене ытларах асăрхама хистенĕ. Çакă вĕсене чылай чухне çара публицистика патне илсе çитернĕ. Хăшĕ-хăшĕ халăхăмăрăн авалхи историне ăнланма, ăна хальхипе танлаштарса пăхма тăрăшнă. Вĕсем пурте ăнланасшăн тата вăхăтсен çыхăнăвне, унăн аталану логикине курасшăн, вулавçăсене каласа кăтартасшăн пулнă.

Çак ăнтăлу литература поэтикинчи шыравсенче те аван палăрать. Ун чухне поэзире чи мала лиро-эпика тухса тăрать.

Лиро-эпика

Николай Иванович Шелепи (1881–1945) поэмăсем хайлама 1910-мĕш çулсенчех пуçланă («Ваçанка», «Çарăмсанпа Хăнтăрçа», «Константинополь хулине туни çинчен чăваш ваттисем калани»). 1922 çулта вăл Шупашкара пурăнма куçать, çĕнĕ сăвă-юрăпа поэма хайлать. Унăн пултарулăхĕнче малтанах палăрнă икĕ туртăм вăй илет. Истори темине тарăнлатса тата халăх халапĕсене илемлетсе çыравçă темиçе сăвăлла хайлав кĕвĕлет. Çав хушăрах вăл халăхăн хальхи пурнăçне сăнаса, ырă улшăнусемшĕн савăнса публицистикăллă поэмăсем те çырать.

«Эссепе» – чăваш халăхĕн аваллăх халапне тĕпе хурса çырнă сăвăлла хайлав. Çавăн ятлă чăваш каччи хăйĕн ăсĕпе «пĕтĕм тĕнче халăхне тĕлĕнтерсе» пурăннă. Вăл «Хăй патшалăх тăршшĕне, Чиккине те пĕлмен тет, Ун пек чаплă ăслă çын Çĕр çинче те пулман тет».

Çав чăваш патшине «мĕнпур вилнĕ хĕр чунне патша пулса тăракан» асамçă юратса пăрахать. Лешĕ тепĕр асамçăн пĕртен-пĕр хĕрне кацча илес-

тăвас тенĕ чух çак «тĕнчери чи чаплă асамçă» сунарçă-йĕкĕте илĕртсе те улталаса хăй пурăнакан вăрман варринчи ылтăн çурт патне илсе çитерет, унăн ăнне пĕтерсе пуçне çавăрса ярать. Юлашкинчен çапла чунне уçать çав асамçă:

Кăмăл турăм эпĕ халĕ Санăн мăшру пуласшăн
Сана качча пымашкăн, Турăм эпĕ ку ĕçе,
Ĕмĕр пĕрле савăнса Сана хытă юратса,
Патша пулса тăмашкăн. Çавă хĕртен кĕвĕçсе.

Тем тери ăслă çыннăн ăнне те пĕтерме пултараканĕ тупăнатех иккен. Юрату вучĕпе хыпса çунакан асамçă чăваш патшине çавăрса ярать, ăна качча тухать.

Кунта Шелепи Пӳлер хулинчен инçех мар вырнаçнă Хĕр тăвĕ текен вырăн çинчен калакан халапа асра тытса çырни сисĕнет. Çав ту айĕнче качча кайман хĕрсен чунĕсем пуçтарăннă-мĕн. Вĕсене монгол эшкерĕсем Пӳлере вăйпа илнĕ чухне çавăнта чĕрĕллех чикнĕ, çĕрпе витсе хунă. Çапла вара, çыравçă юрату виçĕ кĕтеслĕхĕ валли аваллăх халапĕсенчи сюжета тупма пултарнă. Хайлав жанрне сăвăлла халап тесе палăртмалла.

«Уксак Тимĕр Пӳлере илни çинчен». Хайлава сăвăланă халап кăна тесе калама унти лирикăлла çаврăмсем йышлă пулни чарать. Çыравçă Пăлхар ĕмпӳлĕхĕ пĕтнĕ самантсене (кунта вăл Уксак Тимĕре Чăн-пуç-ханпа – Чингисханпа – пăтраштарса янă. Çакă хайлавăн синкерлĕ хавхине вăйлатать кăна) çырса кăтартнă. Çĕр çул ытла каярах пулса иртнĕ ĕç-пуç çинчен калакан халапа тĕпе хурса вăл чăваш-пăлхарăн ирĕкĕ епле пĕтнине ăнлантарнă. Кунта халăх пĕрлĕх-ырлăхне уйрăм çын хăравçăлăхĕ-шиклĕхĕпе хирĕçлетсе кăтартнă. «Саркайăк пек савăнса» пурăнакан халăха пĕр «Шуйттансемпе пĕр пулса, Темĕн те пĕр хăтланса, Çӳçне-пуçне тустарса» çӳрекен вупăр карчăка пула тăшман эшкерĕ тĕп тăвать:

Пĕтĕм Пӳлер çĕршывне Халăх юнне, куççульне
Хупăрласа илчĕçĕ, Çырма пекех юхтарчĕç...

Тĕнче пĕтнĕ евĕрлĕ Калама та хăрушă
Çĕр кисретсе килчĕçĕ. Усал ĕçсем турĕçĕ;
Унăн мĕнпур пурлăхне Çĕр кăкрине юнпала,
Тусан пекех тустарчĕç, Куççульпеле çурĕçĕ.

Автор-калуçă: «Çĕр çинчен çухалчĕ Чăваш чаплă Пӳлерĕ», – тесе хуйхăрать, халăхне пăрахса тарнă патшана питлет. Лешĕ хăйĕн пуçне вилĕмрен тарса анчах хăтарать иккен. Çак халапран илнĕ ĕç-пуçа калуçă чунне ыраттарса каласа парать. Паллă ĕнтĕ: вăл халăха чунтан-вартан юратать, ăна сутаканĕсене вара чĕререн кураймасть. Ахальтен мар калуçă Пӳлер çуннине курсан виле çинчи пек çапла сăмахсем калать (сасă кăларать):

Эх, Пӳлерĕн ырлăхĕ Эх, çĕршывĕ, çĕршывĕ,
Ăçта кайса кĕчĕ-ши? Эх, Пӳлерĕ, Пӳлерĕ
Ку тискер ĕç çĕр çинче Пĕтĕм халăх ырлăхне
Хăçан кăна пĕтĕ-ши? Тăшмансене пиллерĕ.

Шелепин çак хайлавне пĕчĕк поэма-реквием тесе калама та пулать пулĕ.

«Çĕрпӳ пасарĕ» поэма очерка аса илтерет. Калуçă хăй курни-илтнине, шухăшлани-туйнине çырса кăтартать. Пĕр тĕлĕнет вăл, пĕр савăнса хурланать, хăйĕн туйăмне палăртать:

Хăмачĕсем, сӳсменсем,
Ӳнерчĕксем-чĕнĕсем,
Чейникĕсем-чейĕсем,
Тăманисем чейисем.

Юлашки йĕркери ăнлавсене ытти япаласемпе пĕр рете лартма ниепле те май килмест пек ĕнтĕ. Е тата çынсем те япалан курăнакан вырăна илсе пăхар-ха:

Тата чӳлмек-чашăксем,
Тилхеписем-пушшисем,
Тухья-хушпу тăхăннă
Йăлтăр-ялтăр пуçĕсем.

Кунти калуçă курать кăна мар, вăл илтет те («Йăхăл-йăхăл кулнисем, Темĕн те пĕр пуплени, Пĕр-пĕрне ӳкĕтлени. Вăрттăн-вăрттăн итлени, Кирлĕ маршăн питлени»), тишкерӳсем тăвать, кайран мĕн пулассине пĕлсе хăрать:

Сăмаварĕ, хунарĕ,
Тем чул сутуç тутарĕ
Чăваш халăх хăватне
Хусаналла шутарĕ.

Çак пасар хĕвĕшĕвĕ калуçă пуçĕнче пурнăç пирки тĕрлĕ шухăш çуратать:

Эх, Çĕрпĕвĕн пасарĕ,
Пурĕ пĕрех пыраççĕ,
Пурăнăçра кирлине
Пурте унта шыраççĕ.

Çӳремĕччĕç чĕтресе, –
Нуши тĕртет хыçĕнчен,
Ĕмĕр-ĕмĕр килекен
Мелĕ çапла çут тĕнчен.

Автор-калуçă çапла философиллĕ пĕтĕмлетӳ тăвать:

Эх, пурăнăç, пурăнăç,
Темиçене пăрăнăç,
Хăшне тилĕ тăлăпĕ,
Хăшне алăк хăлăпĕ.

Çапах та пасара нуша хистенипе кăна пымаççĕ иккен. Хурт çăвăр уйăрнă чухнехилле курăнан вырăна пыраканĕ «Савать Çĕрпӳ пасарне Пĕтĕм чунпе, чĕрипе, Ыран пасар тесессĕн Çывăрмасть пуль çĕрĕпе». Укçи пур-и е çук – «Тем пысăккăш савăнăç Пулать пасар чăвашшăн». Унта, çав хĕвĕшӳпе сĕрлевре, пурнăç вĕресе тăни тĕкĕр çинчи пек курăнать. Эппин, пасар пулсан халăхсем те пурăнĕç-ха, хуртсем çăвăр янăн хунасах пырĕç-ха. Çапла шухăшсем патне илсе çитерет пире автор.

«Шупашкар» (1927). Çак поэма-очерка Шелепи Чăваш Республикин тĕп хули çинчен çырнă. Анчахрах пĕчĕк те тĕттĕм кĕтес пулнăскер, çĕнелсе çĕкленме пуçаннă вăл. Сăвăç çав улшăнусене йĕркипе каласа парать. Çывăх вăхăтрах Шупашкара пĕтĕм тĕнче пĕлĕ:

Эс те! Университет!
Тарăлтатса чупĕçĕ,

Часах унта курăнăн. Чăваш чаплă поэтсем,
Ун чух сана, Шупашкар, Çыракансем тухĕçĕ.
Тĕнчипеле пĕлĕçĕ, Тĕрлĕ хапрăк-савотсем
Океансен леш енчен Çĕрĕн-кунĕн çухăрĕç,
Сана курма килĕçĕ. Таçти патшалăхсенчен
Тăрамвайсем тăр-тăр-тăр! Йăхравçăсем йăхăрĕç.

Поэтăн чĕрине ыраттаракан япаласем те пур-ха çак шĕкĕр хулара. Хулăн сасăллă пупсем чиркӳсенче халăха типĕ тытма чĕнсе каланă хушăрах хăйсем хырăмĕсене «тем те чышаççĕ» иккен.

ӳт чĕлхенĕн шăмми çук,
Тем те калĕ чармасан,
Хам мĕн курни-илтнине
Чĕрем тӳсмест çырмасан, –

тет те автор-калуçă çапла питлеме пуçлать:

Пахчисенче улмисем Пĕрне-пĕри çухаран
Юн пек хĕрлĕ пиçеççĕ, Яра-яра илеççĕ,
Пивнойсенче ĕçкине Хăшне çапнă кĕлте пек
Ĕне пекех ĕçеççĕ. Лăстăр-лăстăр силлеççĕ.

Пасар кунĕсенче вара «Хăшĕ вилнĕ шапа пек Пылчăк çинче выртаççĕ, Хăшин-хăшин кĕсйинчен Укçисене вăрлаççĕ».

Çапах та лайăххи ытларах иккен тĕп хуламăрта: Атăл хĕрринче ырă яш-кĕрĕм уçăлса çӳрет, кино курса киленет. Çавăнтах анатран шурă пăрахут хăпарни курăнать, вĕт-шак кимĕсем урлă-пирлĕ кумаççĕ, йăлăм енĕ куça илĕртет. Автор-калуçă каллех пуласлăха курать: чăваш халăхĕ Йăлăм торфĕпе усă курĕ, «хапрăк-савот» туса лартĕ. Вара пĕтĕм тĕнче çынни кунта килсе тĕлĕнĕ.

Шелепи хăйĕн очерк-поэмине мухтав юррипе вĕçлет.

Сăвăç çак поэмăра хальхипе авалхине пĕр тĕвве ăнăçлă çыхма пултарнă. Ирĕке тухнă халăх хăйĕн авалхи мухтавне тавăрать, тĕнчене тепĕр хут, ку

хутĕнче чăваш ятпа тухать. Çав çулсенче Н.Марр теорийĕ анлă сарăлнă пулнă, унпа килĕшӳллĕн, тĕрĕк-пăлхарсем шумер цивилизацийĕнчен тухнă тенĕ. Çак теорие ун чухнехи чăваш интеллигенцийĕн пĕр пайĕ хавхаланса та пĕр тиркевсĕр йышăннă. Çак аваллăх романтики Н.Шелепие те çĕклентернĕ, çав хавхапа вăл хăйĕн «Шупашкар» поэма-очеркне те хайланă.

Сăвăç куçару ĕçĕнче те курăмлă çитĕнӳсем тунă. Тутарла лайăх пĕлнĕ май вăл тăванла халăх поэчĕсене хастар куçарать, çав шутра Х.Такташăн «ӳкĕнĕçлĕ юрату» поэмине те. Ку хайлава ун чухне тĕрĕкле, узбекла, крым тутарĕсен чĕлхине куçарса пичетленĕ пулнă. Поэма сюжечĕ тĕрĕк халăхĕсен юрату пейĕчĕсеннипе пĕр евĕрлех: унта çамрăксен юрату хутшăнăвĕсем пирки çырнă. Х.Такташ поэминче Сăпани комсомолка пĕр типографире ĕçлекен наборщика юратса пăрахать, йывăр çын пулса тăрать. Хайхи пулас мăшăр тата ашшĕ йĕп пек çухалать.

Сюжетăн традицилле аталанăвĕ хĕр хăйĕн çине алă хунипе вĕçленмеллеччĕ, автор вара кунти ĕç-пуçа пачах урăх çулпа ярать. Сăпани ывăл çуратать, «тĕнчене пĕр чун хушăнать». Поэма вара юмахри пек вĕçленет:

Акă алăк уçса пĕр çын
Ерипен Сăпани патне пычĕ.
Ачи çине чăр! пăхса илчĕ,
Куçне аллипе хупласа тăчĕ.
– Сăпани, каçар мана, – тесе
Пуçне Сăпани çине хучĕ.
Килĕшрĕç вĕсем. Майлашрĕç ĕçсем.
Загспа пĕрлешрĕç пурнăçĕсем.
Çакă пулать Сăпанипе наборщик
Юрату сăввисен вĕçĕсем.

Н.Шелепин «Выçлăх мĕлки», «Ĕçкĕ-çикĕсене», «Кивĕ ӳсел акатуйĕ», «Кĕпер хывни» ятлă поэмисем те пур. Вĕсене пурне те публицистика

стилĕпе, ялти ĕç-пуçа çырса кăтартнăн хайланă: е ĕçлĕ вăхăта ӳкернĕ, е кану-уява сăнланă. Çак очерклăх чăваш литературин çав çулсенчи тĕп палли пулнă ĕнтĕ. Çав хушăрах сăвăç аваллăхпа çыхăннă романтикăллă поэмăсем те хайлать, паянхи пурнăçра аваллăх паллисене курать.

Илья Ефимович Тăхти (1889–1938) хăйĕн «Элихун» поэмин тĕп пайне (вăл 1979 çулта тухнă кĕнекене V сыпăк пек кĕнĕ) 1918–1923 çулсенче çырнă. Ăна эпир маларах пăхса тухнăччĕ. I пайне çыравçă 1921 çул вĕçнелле çырса пĕтерни паллă. Вăл хăйне евĕрлĕ ум сăмах пек вуланать. Тĕрлĕ халăхăн хăйсен ячĕсене çĕклекен чаплă çыннисем пулнине аса илсе, халăхăмăр хушшинчех ăна хурлас текенĕсем пуррине палăртса вăл çапла калать:

Эпĕ çакă çырура Пĕр сыппине – кăтартса
Чăваш халăх ĕлĕкхи Çырса хума «Элихун»
Пурăнăçĕн сыппине – Пуçлас терĕм поэма.

Хăйĕн хайлавĕнче И.Тăхти Хусана илнĕ вăхăта кăтартма шухăшланă. «Чăвашсем Хусан вăрçи вăхăтĕнче пурăнни çинчен çырнă «Элихун» ятлă поэма пур ман», – пĕлтерет çыравçă пĕр ал çыру умĕнче. Анчах та поэт 1923 çул хыççăн XVI ĕмĕрти ĕçсем пирки мар, хăй çуралса çитĕннĕ тăрăхра XVIII–XIX ĕмĕрсенче пулса иртни çинчен (II–IV пайсене «Асатте каласа панисем» ятпа пĕрлештерме май пур) хайлать. Вĕсене вăл 1924 çулта çырнă пулас, çавна май хăйĕн хайлавне темиçе ĕмĕрте пулса иртнĕ ĕçсене кĕртме палăртнă. 1906 çулта çырса илнĕ çак халаппа та усă курма шутланă-тăр поэт: «Атăл леш енчен хĕлле пĕр пĕчĕк ачана тăлăп çанни ăшне чиксе каçарнă. Çав ача çак пирĕн яла – Элпуçне лартнă. Ураскассине Çĕнçырма, Çĕн Элпуçне Кив Элпуç ларма пуçланă чух уя вăкăрсем янă пулать, вăкăрсем выртнă вырăна ял лартнă».

1924 çулта «Ĕçлекенсен сасси» журналта çапла пĕлтернĕ: «Тăхти Илйи «Элихун» ятлă пысăк историллĕ роман çырса пĕтерет». Çав çулхинех поэт хайлавăн çырнă сыпăкĕсене М.П. Петров (Тинехпи) урлă Мускавран Шупашкара парса ярать, «Сунтал» редакцине кĕрсе пама ыйтать. Шел пулин те, ал çыру пичетленеймест, ăна авторне каялла ярса параççĕ. «Элихунăн» ум

сăмахĕ вара пуçĕпех çухалать. Çак фактсем И.Тăхтие хытах тарăхтараççĕ. Çав лару-тăрура сăвăç VI сыпăка çырса пăрахать. Унта поэтăн малтан палăрсах кайман иронилле стилĕ лайăх сисĕнет, каярах вăл çыравçă пултарулăхне палăртакан тĕп ен пулса тăрать.

Мĕнле стиль-ха вăл, поэтăн 1925 çулта вăй илсе хăватланнă стиль? Енчен те маларах çырнă хайлавсенче («Колчак», «Пупсене», «Пуп таврашĕн мункунĕ», «Акахвист») автор-калуçă хайлаври субӳектран (харкамçăран) кулнă, ăна питленĕ пулсан, Тăхтин çĕнĕ хайлавĕсенчи автор-калавçă чи малтан хăйĕнчен тăрăхлама тăрăшать.

«Элихунăн» VI пайне пĕтĕмпех çав мелпе хайланă. Акă епле çавăрттарма пуçлать вăл сăмаха:

Пĕле-тăран тăвансем!
Ырă сунан тусăмсем!
Мана наян тетĕр пуль.
Сирĕн сăмах чăн-чăнах:
Эпĕ наян-кахал çын.

Малалла автор-калавçă хăйĕн наянлăхĕ ĕçре епле палăрни çинчен каласа парать. Вăл «Куштансемпе тĕпелте Ура явса ларма» та, ĕçкĕ-çикĕ тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳреме те, «Чĕлĕм-табак ĕмтерсен, Сăра-эрех ĕçтерсен... Тĕке майлă шăлсассăн... Тар тухиччен тавлашма» та «нихçан уткас мар» иккен. Хайхи И.Тăхтин 1926 çулта пичетленнĕ «Ярмуш» ятлă калавне аса илетĕн: унти харкамçă та çавăн йышшискерех-çке!

Малалла «çичĕ çулти Элихун» (кунта автор хăйĕн поэмине çапла ытарласа каланă) епле Шупашкарта çĕтсе çӳрени, ăна критиксем редакци шкапне хупса хуни, унтан вăл тухса тарни çинчен приключенилесе çырса кăтартнă. Хăйĕн ывăлĕ çухалнăран кулянса автор-калавçăн сухалĕ те «пĕрчĕн-пĕрчĕн шуралать». Вара:

Пуçри çӳçĕм тăкăнса
Пĕтĕмпелех пĕтрĕ те,
«Кукша» тесе хушамат
Вара мана кăларчĕç, –

Аслă Мускав хулинче

пĕлтерет вăл. Çав харкамçăпа пĕрлешсе кайнă çыравçă карма çăвар маскине те тăхăнса илет:

Эпĕ çапла çырнăран, Çвара карса каласан
Ыр çын, эсĕ ан тĕлĕн. Сала кайăк кайăк пек
Мĕншĕн тесен, ху пĕлен, Çунатланса вĕçеççĕ,
Чĕлхе çинчи сăмахсем Тем тĕслĕ те пулаççĕ.

Çерçийĕ вара, тăнсăрскер, ăслă çынсен сукмакĕ çинче ура айне пуласса чухламасăр (каллех «тăнсăр – ăслă» хирĕçлев кунта) «тăлтти-тăлтти сиккелет». Çырнă сăмахĕ çавнашкал пулас-тăвас пулсассăн уншăн автор хăйнех ӳпкелеме ыйтать.

Вулавçă умне «ахăлтатса култарма пултаракан» сăмах ăсти-çыравçă сăнарĕ тухса тăрать. Вăл кăна хăйĕн пирки: «Акă этем Тăхти – Хывăннă-çке нăхти» е: «Анра поэт Тăхти, Сăвă çырма «ахти» йышши сăмахсем калама хал çитернĕ.

И.Тăхтие килĕшсе кайнă çĕнĕ стиль екки автора лиро-эпикăран такмаклăх, унтан та ытларах халаплăхпа пародилĕх енне туртса кĕрет. Çыравçă прозăна кăмăллама пуçлать, хайла (сказ) мелĕсене ăша хывать. Çаксем çинчен каярах уйрăм калаçу пулĕ-ха. Хальлĕхе вара кунта каланисене çапла пĕтĕмлетер: вăхăт улшăнăвĕ Тăхтин çырас мелне хăвăрт улăштарса пынă. Малтан вăл лиро-эпикăна аваллăх романтикипе пырса кĕнĕ пулсан, кайранхи публицистика хĕрӳлĕхĕ ăна питлевпе хайла тата «сăмах çавăр-ттарăвĕ» патне илсе çитерет. «Элихунăн» жанрне (кайранхи вариантне) поэма-хайла тесе палăртма пулать.

Малтанхи Тăхти ĕçне 20-мĕш çулсенче Н. Шелепи, Ç. Элкер, Н. Шупуççынни тăсаççĕ. Çамрăк çыравçăсене ытларах урăх поэмăсем килĕшеççĕ.

Виктор Ефремович Рсайăн (1906–1970) 1927 çулта харăсах икĕ поэма пичетленет. «Аслати умĕн» хайлавра автор чăваш хресченĕн (Мишукăн) империализм вăрçи вăхăтĕнчи пурнăçне ӳкерсе кăтартнă. Унăн аслă ывăлĕ

«Хыт çапăçса «Керки хреçне» те илнĕ, Патшашăнах вăл вилнĕ юн хăсса...» Вăтам ывăлĕ çулталăк каялла хыпарсăр çухалнă... Кам айăплă çакăншăн?

Ватă Мишук аллине уснă. Кинĕсем килĕнчен тухса кайнă, халĕ ав кĕçĕн ывăлне (Ваçлее) те вăрçа илсе каяççĕ. Стришна (старшина) ачи Кирле, Ваçлейĕн хĕрне Клавьене хапсăнаканскер, ялта асса çӳрет, каччă хыçĕнчен çăхав (патшана хирĕç калаçать тесе) çырать. Окопра Ваçлейпе ытти салтаксем пăлхав çĕклеççĕ, çакăншăн Мишукăн кĕçĕн ывăлне персе пăрахаççĕ.

Ашшĕ, Мишук, пĕлмест: – Мĕн-ма вĕлернĕ,
Мĕн-ма çухатнă ман ывăлăма?
Мĕн тунă вăл? Кама, хăçан хĕненĕ?..
Патша, патша, тавай ывăлăма!..

Çак поэмăна Моисей Федоров тишкерӳçĕ çапла хак парать:

«...Поэмăри типсем вăйлă, хастар психологиллĕ типсем темелли çук. Мĕншĕн апли паллах. Тĕп типсем – пĕри ватă, пĕри çамрăк... Ватти авалхи пурнăçран уйрăласшăн мар, кив йĕркепе тытăм çине шанса тăрать. Çамрăкки кив йĕркене юратмасть, ăна улăштарасшăн. Ватти пекех, çамрăкки те кив пурнăç пусмăрĕнчен, тыткăнĕнчен хăтаракан çулсене чухламасть. Вăл пур инкекне патшара – пĕр уйрăм çынта – шырать. Патша çĕр улпучĕсемпе капиталистсен йĕркине сыхлакан йытă иккенне пĕлмест.

Çавăнпа та ĕнтĕ икĕ типĕ те хресчен типĕ пулнă пирки поэмăн тĕвви те тĕрĕс мар. Поэми те хресчен психологиллĕ поэма пулса тăрать.

Хресчен психологийĕ коллектив психологийĕ мар. Хресченĕн хăйĕн интересĕ çиелте тăрать. <...> Поэмăра халăх сывлани ик йĕркене хисепе илмесен курăнмасть те. Уйрăм çынсем çеç курăнаççĕ. Уйрăм çын ирĕклĕхĕ (воля) халăх, класс ирĕклĕхĕпе килĕшсе пымасть пулсан ним те мар. Произведенире апла мар. Класс сывлани курăнмасть» (Сунтал. 1927. 4№).

Малалла критик хайлава вулавçăсемшĕн ăнланмалларах çырмалли пирки, ун пек чухне «паян кунхи задач(ă)сене пăрса хăвармалла марри»

çинчен калать. Çак рецензире вăхăт сывлăшĕ («класс сывлăшĕ») аванах палăрать.

«Пăхăр чĕлĕм» поэмăна В.Рсай шăпах «класс сывлăшне» кĕртме шухăшланă. Лекçей чухăн Кантратич хуçа патне тарçа кĕрĕшет. Лешĕ ăна выçăллă-тутăллă усрать, ĕçленĕшĕн пĕр пус укçа тӳлемесĕр хăваласа ярать.

Тĕнче вăл тĕрлĕ иккен. Ĕнер тарçă пулнă Лекçей паян комбед, ялта вăл хăй хуçа. Акă вĕсем Кантратичăн пытарнă тыррине шыраса тупаççĕ.

Унтан
Пăшал сасси
Çурлать хаяррăн,
Пуш шăтăкра Кантратич йынăшать.
. . . . . .
Кам пĕлмест?
Тĕнче вăл тĕрлĕ...
Паян пур пулсан –
Ыран эс çук!
Революцин сăнĕ – хĕрлĕ!
Революцин пур –
Вĕри утюг!..

Çын пăлхавăр тумалли материал кăна иккен. Пĕри теприне пусмăрлать, вăхăт çитсен лешĕ пĕрремĕшне хăрушшăн тавăрать. Чăнах та вĕри утюгах ĕнтĕ революци – никама та хĕрхенмест вăл. Унăн лозунгĕ те хăрушă: «Паян пур пулсан – ыран эс çук!»

«Пăхăр чĕлĕмре» пăлхавăрăн чунсăрлăхĕпе çынлăхсăрне В.Рсай питĕ тĕрĕс кăтартнă. Кунта шухăшласа кăларнă класс кĕрешĕвĕ мар, уйрăм çын тавăрăвĕ хуçаланать. Рецензентсем те çакна çийĕнчех асăрхаççĕ, Лекçей чухăнсен сийĕнчен тухни палăрмасть тесе ӳпкелеççĕ. «Революцин вăйĕ те, хăрушлăхĕ те, хастарлăхĕ те – мĕльюн-мĕльюнта. Мĕльюнсем пуçне çĕклерĕç. Мĕльюн туларĕ, аркатрĕ кивĕ тĕнчене!» – вĕрентет «Пăхăр чĕлĕм» авторне Сутухха текен критик.

Çапла вара, В.Рсай хăйĕн поэмисене хайласа чи малтан чăваш хресченĕн психологийĕпе традицилле ăнланăвне кăтартса панă темелле. Çавна пулах вăл сăнланă революци гуманизма хирĕç тунă ĕç пек пулса тухнă.

В.Рсайăн поэтикăри çĕнĕлĕхĕ вăл – калаçу интонацине вăйлатса уйрăм сăмахсене пусарах калама тăрăшни, Çеçпĕл Мишши кĕртнĕ силлабо-тоника сăввине Ç.Элкерпе П.Хусанкай хыççăн малалла аталантарма ăнтăлни.

Çак çулпа **Митта Ваçлейĕ** (1908–1957) те утнă. «Савни парни» поэминче (1927) вăл мал ен хĕрарăмĕ ирĕке тухнине кăтартать. Харкамçă хăйĕн савнине (лирика геройне) хĕрлĕ ялав парнелет, унта çапла çырнă пулнă: «Эсĕ те, хĕрарăм, çынах халăхра!»

Сăвăçăн тепĕр лирикăллă поэми «Сĕрĕмре» ятлă (1927). Хайлав çичĕ пайран тăрать. Малтанхи тăватă пайĕнче лирика харкамçи савнийĕпе каласать, вĕренес тĕллевпе ялтан тухса кайнăшăн хăйне ăнланма ыйтать. Ачалла юратупа çунмалли вăхăтсем иртсе кайнă уншăн, «тăвăлпа çунатланнă поэтăн» пуçне «урăх хуйхă хуçать». Поэт пин çул аталаннă пăлхар чĕлхипе культурине чăвашра курать, вĕсем çĕнĕ саманашăн кирлĕ пулма пăрахасран пăшăрханать, чĕрине ыраттарать. Улттăмĕш пая çапла сăмахсемпе вĕçлет пирĕн сăвăç:

Пулхăр çамрăкĕ, илт сассăма,
Малалла, малалла эс пăх-халĕ!
Пирĕн çиçĕм вăйсем, мĕн, сахал-им,
Çук-им пирĕн çĕнелнĕ Сăмах!

Çĕнелнĕ Сăмахĕ вăл тăван литературăмăр, «ирĕк Атăл юррине» шăратакан сăвăç-юрăçсем. Поэт хăйĕн çĕнĕ идеалне аваллăхра мар, аваллăха тăсакан çĕнĕ пуласлăхра курать. Унта чăваш чĕлхипе паркаланнă, çĕнелнĕ Сăмах хуçаланĕ. Тарăн тымарлă йывăçăн вулли тăн-тăн пулакан.

Вăхăт çыравçăсене индустриализаципе коллективизаци, класс кĕрешĕвĕ çинчен çырма хистенĕ, çавна май поэзире эпикăллă калу мелĕ хуçалансах пынă. С.Есенин витĕмĕнчен хăпнă Митта агротакмаксем, маршсем çырма пуçлать. «А.Безыменскипе А.Жаров сăввисене юратарах параттăм, çырасса та

вĕсем майлă çырма пăхаттăм», – аса илнĕ поэт çав çулсенче. Ăна В.Маяковскин эпики куç пăвать, «Хулăн сас» («Çĕр чĕлхи») ятлă лирикăллă-публицистикăллă поэма çырма хавхалантарать. «Ку яхăнта вăран часрах! – вăхăт паллине систерет сăвăç. – Вăранмасан – Ĕне пăрушĕ Сана чăмлак пек чăмласран Питех хăрушă». Хайлавра риторика нумай, сюжет туртăмĕ вăйсăр, сăнарсем те шупкарах.

1930 çулхи ака–çу уйăхĕсенче хайланă çак поэмăра колхозлă ялти традицилле хирĕçĕве (пуянпа чухăн хирĕç тăрăвне) кăтартнă. Пуян Иваныч кулак сăмахĕпе пĕрлешӳллĕ хуçалăх майлă, ĕçĕпе вара хирĕç тăрать. Ун йышши трафаретлă фабулăсенче яланах чухăн çын тупăнать (кунта – Куçма), вăл кулакăн чăн-чăн сăн-питне кăтартать.

Митта Ваçлейĕн 20-мĕш çулсен вĕçĕнче палăрнă хăй евĕрлĕхĕ кĕçех соцреализма çырлахтаракан сăвăсем хыçне пытанать. Тепĕр хут вăл 50-мĕш çулсенче кăвак хуппи пек уçăлса илет («Тайăр» юрăсен ярăмнех аса илер).

1929 çулта «Сунтал» журналта М.Аттайăн («Икĕ виле»), В. Алакĕрĕн («Хирĕçле хум»), финн поэчĕн Рунебергăн («Канюк тăпри», куçаруçи Хумма Çеменĕ) поэмисем пичетленеççĕ. Çав çулсенче А.Петтоки хăйĕн «Çирĕм иккĕ (ятсăрсем)» поэмине хайлать. Н.Эхмин (вăл кĕçех Юрату сăмсахĕ çинче çакăнса вилет) пĕчĕк поэма хайлать. Мĕнле çитĕнӳсем пур-ши çав поэмăсенче?

М.Аттай приключени евĕрлĕ фабулăпа усă курса Макçăм хĕрлĕ армеецпа унăн ашшĕне ял халăхĕ вăрă вырăнне хурса вĕлерни çинчен каласа парать. Ывăлĕ ашшĕпе (Элекçейпе) чирлĕ амăшне (Маринене) курма виçĕ кунлăха килет. Çул çинче ĕшеннĕскер, «Хурама айĕнче хĕрлĕ паттăр Суйлансах çывăрать ним пĕлми». Шăпах çав вăхăтра тата çав тĕле лаша вăрри хăвалакансенчен тарса çитет, лашине пăрахса хăварать те хăй шăвăнать. Хăвалакан халăх çывăракан Макçăма вăрă вырăнне хурать. Пăлхавăрччен старшина пулнă Митюкка хĕтĕртнипе ывăлĕпе ашшĕне те вĕлереççĕ. Ял пуянĕ çак чухăнсене пăлхавăр хыççăн унăн çĕрне вĕсене касса панишĕн курайман иккен.

Сăвăç чăваш ялĕн çав çулсенчи синкерлĕхне, тенденциллĕрех пулин те, аван кăтартма пултарнă. Поэмăри ырă сăнарсем вилни РАПП критикĕсене çырлахтарма пултарайман. Ун йышшисем поэта: «Событисене ним тĕлне пĕлмесĕр шĕвĕлентерсе пырать. Революци Аттай каланă пек пулса пынăши?» – тесе ӳпкеленĕ.

Поэтăн тепĕр рецензенчĕ (Л.Шпач) ăна хӳтĕлесе çапла хуравланă: «Икĕ вилере» кăтартнă событи – революцин пĕр енĕ. Ниепле хастарлă, талантлă поэт-писатель те революцие пĕтĕмĕшпе, унăн пĕтĕм анлăшпе кăтартма пултараймасть пĕр япалара» (Сунтал. 1929.7 №).

В. Алакĕр поэминче продразверстка тата 1921 çулхи Чаппан вăрçи çинчен çырнă. Çĕпритун кулакпа унăн эшкерĕ виçĕ коммунара (Гурипе унăн юлташне Аврама тата Пракух Якурне) вĕлерме тăраççĕ. Кунти саккун пĕр шелсĕр:

Революци саккунĕ – хаяр вăл...
Эс вĕлертĕн пулсан – эс те вил!..

Поэт калăвĕнче И.Тăхтин традицийĕсем («Колчак» стилĕ) сисĕнеççĕ (уйрăмах пуян ĕçкине кăтартнă вырăнта). Вăл хайлава лирика çаврăмĕсене ăста вырнаçтарнине те палăртмалла. Тĕслĕх илсе пăхар-ха:

Кантур ялĕнче лăпкă ыйăх.
Каç çутă, тăп-тăрă, уяр.
«Восстани!..» –
Туятни эс, уйăх?
Куратни, çыврать коммунар?
Вăрат-ха, вăрат-ха, вăрат!
Куратни, çыврать коммунар?
Çук. Чĕнмерĕ, чĕнмерĕ çут уйăх:
Вăл темшĕн салху та сивлек, –
Коммунар çемйине
Вăратмарĕ...
Васкаса, сиккипех килчĕ хуйăх:

Коммунар Гурие вăратмарĕ, –

Хуйхăпа вилĕм сĕнчĕ пулас.

Сăвăç çапла чĕрĕлетсе кăтартнине сулахай критиксем йышăнма пултарайман. «Уйăх вăл чĕнмест. Алакĕр мар, такам ыйтсан та чĕнес çук. Уйăх вăл ним те туймасть те, чĕнмест те. Вăл «песпартийнăй», «аполитичнăй» япала. Пуплес мар унпа», – шăл йĕрет автортан Кели (Сунтал. 1929. 9 №). Критик поэмăра революци саккунĕ çинчен çырса кăтартнă йĕркесене авторăн «ӳсĕмне палăртакан кăмăллă сăнлăхсем» тесе шутлать, çав шутрах «Пуç чашкийĕ саланчĕ, Пуç мимийĕ çăрăлчĕ юрпа» текен икĕ йĕркене те!

М.Аттай поэмипе пĕрешкелтерех хайлав («Юхать, шăвать...») Н.Эхмин те хайлать, унăн жанрне сăвăç «эскиз» тесе палăртать. Унта ял пуянĕ-дьяконĕ Платон ятлă чухăн хуралça вăрă ятне кĕртет, пуçне çапса çурать. Çирĕк ятлă тепĕр чухăн хуларан салтаксем илсе килет. Каллех юн юхать.

А.Петтокин поэми ыттисенчен ăнăçлăрах пулса тухнине палăртмалла. Унта çирĕм икĕ хĕрлĕ армеец колонна умĕнчи разведкăна каять. Пĕр тĕттĕм çĕр вĕсем шуррисем чарăннă яла пырса кĕреççĕ, тăшман штабĕнчисен сехрисене хăпартаççĕ. Юлашкинчен çав паттăрсене персе пăрахаççĕ.

Сăвăç хайлава лирика çаврăмĕсемпе харăсах вырăнти калаçу сăмахĕсене йышлăн кĕртнĕ. Кунта П.Хусанкайăн «Çирĕм улттă» поэминчи уйрăм кĕвĕçемĕ те сисĕнет. Поэтăн гуманизмĕ ытти тантăшĕсеннинчен вăйлăрах палăрать: вилекен паттăрсене курса çут çанталăк йĕрет, чĕрĕ юн типĕ çерем çинче юхни вĕре çĕлене аса илтерет т. ыт. те.

Чăваш лиро-эпикине аталанма тĕрлĕ куçарусем те пулăшнă. Çак ĕçе Н.Шелепипе пĕр вăхăтрах Хумма Çеменĕ те пуçăннă. 1928 çулта вăл Франци поэчĕн Анри Килпон «Карл Либкнехт» поэмине, тепĕр çултан финн поэчĕн И.Рунебергăн «Канюк тăпри» хайлавне чăвашла ирĕклĕ куçарса пичетлет. Юлашки поэмăн фабулине финсен шаланкă кайăк (вырăсла ăна канюк теççĕ) еплерех пулса кайни çинчен калакан халапа тĕпе хурса йĕркеленĕ.

Канюк старикĕн ултă паттăр-ывăл çитĕннĕ. Вăл вĕсене хăйĕн кӳрши пек ачашласа çитĕнтермест, çирĕп пăхса ӳстерет. Пĕртăвансем пĕр-пĕрне хӳтĕленине курса ĕненнĕ ашшĕ çапла калать:

Ача пулса ачалла Ялан çапла пурăнма,
Ачашланса ӳсмерĕр. Тăванлăхпа çыхăнма
Эпĕ кунта пĕр-пĕччен Вăйăр сирĕн çитĕ-ши?
Сирĕншĕн те, хамшăн та Тупа тăвăр, ачамсем:
Палăртмасăр хурлантăм; Ху тăванун хавасĕ
Паян тинех ăшăма Хăвăннипе пĕр пултăр;
Çителĕклех пусартăм. Пĕрне хуйхă пулсассăн
Тинех эсир пĕрлешрĕр, Пурте пĕрле хуйхăрăр!
Тинех пултăр пĕртăван. Хăрушлăхра, инкекре
Анчах ĕмĕр-ĕмĕрех Пĕр çын пекех кар тăрăр!
Ялан çапла пулĕ-ши?

Çак поэмăри пĕртăванлăх, пĕрлĕх шухăшĕ ун чухнехи класс кĕрешĕвĕн теорийĕпе килĕшсе тăман, ăна пуçĕпех юрăхсăра кăларнă. Ачасен ашшĕ-амăшне хирĕç тăмалла тенĕ вăхăтра пичетленнĕ поэмăри ĕç-пуç çапла йĕрпе каять: яла ют тăшман тапăнать, ывăлĕсем тăван çĕре кар! тăрса хӳтĕлеççĕ. Çав вăхăтра Кĕркури ятли савнă хĕрĕпе сывпуллашать. Вăл вăрçă хирне çитнĕ тĕле унăн тăванĕсем вилнĕ ĕнтĕ. Унта ашшĕ çапла ылханнине илтет:

– Кĕркури!.. Намăс питӳ ăçта сан?
Мана хуйхăртма, Тартăн эс хăрушлăхран.
Тăвансене пăрахма Ылханатăп сана эп.

Каччă тăшмансене йĕрлесе тупать те вилнĕ тăванĕсемшĕн тавăрать, аманнăскер килĕнче ашшĕ ытамĕнче куçне ĕмĕрлĕх хупать. Пысăк инкеке ватă Канюк чĕри тӳсеймест.

Çак куçарупа Хумма Çеменĕ чăваш лиро-эпикинчи фольклорпа истори тематикине малалла тăсать, тăванлăх тата пĕрлĕх идейине ялав пек çӳле çĕклет. Унăн традицине 30-мĕш çулсенче Мĕтри Юман («Шахнамэ»),

П.Хусанкай («Калевала»), И.Ивник («Давид Сасунский») ăнăçлă аталантараççĕ. П.Хусанкай А.Пушкинăн «Евгений Онегинне» куçарни вара çав çулсенчи чи пысăк çитĕнӳсенчен пĕри пулса тăрать.

20–30-мĕш çулсенче чăваш лиро-эпики икĕ тĕп сулăмпа аталанса пырать. Пĕрремĕшĕнчисем халăхăмăрăн авалхи пĕрлĕхĕпе мăнаçлăхне пĕр çухатмасăр паянхи пурнăçра курасшăн, вĕсем паянхине иртнĕ вăхăтăн тăсăмĕ пек кураççĕ. Иккĕмĕшĕсем вăхăта яланах хирĕçлетме кăмăлласççĕ, хайлаври геройсене те вĕсем яланах ырă е усал енсене ушкăнласççĕ. Кунта çыравçăн тенденцилĕхĕ уççăнах курăнать. Çав фонра И.Тăхтин çыру стилĕ уйрăммăн тăрать. Ун хайлавĕсенчи автор-калуçă ырă еншĕн уççăн хыпса çунакан калуçă сăнарне кулăша кăларать, компрометацилет. Çавна май унăн харкамçисем мĕнпур çĕннине çирĕпленсе ларни, традицилли витĕр кăна кураççĕ. Ку тĕлĕшрен вăл ăрусене хирĕçлетмест, пĕрне тепринпе сыпăнтарса пырать.

Жанр тĕлĕшĕнчен *сăвăлла халапсемпе юнашарах поэма-реквием, поэма-очерк, поэма-хайла, публицистикăллă тата лирикăллă поэмăсем* аталанаççĕ. Ç. Элкер вара сăвăлла калавпа очерк тата повесть, сăвăлла эпос жанрĕсене, П. Хусанкай сăвăлла роман тата «Тилли юррисен» жанрне (ун пирки кайран тĕплĕн калаçăпăр) алла илеççĕ, чăваш эпика поэзине çĕнĕ шая çĕклеме хал çитереççĕ. Н.Евдокимов юптару жанрне малалла аталантарать.

Усă курмалли литература

Родионов В.Г. Чувашская лиро-эпика первой трети XX в. // Этнос. Культура. Слово: Сб. статей. – Чебоксары, 2006. – С. 491–531.

Лирика

20–30-мĕш çулсенчи чăваш лирикинче темиçе юхăм –туртăм палăрать. Чылай чухне вĕсем пĕр сăвăç пултарулăхĕн тĕрлĕ тапхăрĕнче сисĕнеççĕ: малтан пĕр туртăмлă çыравçă каярах тепĕр енне каять, поэзирен прозăна куçать т. ыт.те.

Çав çулсенче вырăс литературинче пролетари поэзийĕ тата çĕнĕ хресчен поэзийĕ чечекленни паллă. Çак икĕ юхăма чăваш литературинче те асăрхама май пур. Çапах та кунта хамăр çыруллă сăмахлăхăмăрăн хăй евĕрлĕхне шута

илмесĕр май çук. Социаллă куçпа пăхсан чăваш çыравçисем пурте çĕр ĕçчен ачи-пăчи пулнине, вĕсен тымарĕсем яла туртăннине, ытларах вĕсем хресчен пурнăçне пĕлнине куратăн. Çав çĕр çыннин культурине ăша хывнă, унăн сĕткенĕпе çитĕннĕ çыравçăсенчен пĕрисем *тулашалла* (тĕнчене, курманни еннелле, пулассине, космоса) туртăннă, теприсем – *ăшалла, шалалла* (тăван кĕтес, çывăххи еннелле, аваллăха, чун-чĕре енне). Çутлăхпа наци ирĕклĕхĕн идейисем те чăваш çыравçисемшĕн хаклă тата актуаллă пулнă çав çулсенче.

Çеçпĕл Мишши сăввисенче вăйлă палăракан иртнипе пулассин хирĕç тăрăвĕ чăваш поэзийĕнче хăйне евĕрлĕ шаблон-калăп пулса тăрать. Çав çулсенчех *тимĕрçĕ, сунтал, сăнчăр, хĕç, вучах* сăнарĕсем сăвăран сăвва куçаççĕ. Европăран килекен индустри цивилизацийĕ хресченĕн традицилле пурнăçне сивлеме хистет. Сăвăçсем çĕнĕ тĕнчене çут çанталăк вăйĕсене пăхăнтарнинче кураççĕ. «Çут çанталăк Вăйлă вăйĕ Пирĕн алра час пулĕ. Хурçă машшин, Тимĕр машшин ĕçлĕ ялти ĕçсене», – хавхаланать Г.Алентей харкамçи («Ирттĕр кивĕ ĕмĕр», 1923). Вăл пуласлăхра «Тимĕр этемсем тимĕр машшинсемпе пурнасса» шанса тăрать. «Кунта пурнăç – машшинра, Кунта пурнăç – тимĕрте! Фабрик-завод трубинчен Хура тĕтĕм явăнса Чунлă пекех хăпарать», – хăпартланса каласать И.Викторовăн хулана пурăнма куçнă харкамçи («Пролетари эп пултăм», 1924). Çак «тимĕр-тăмăр цивилизацийĕн» чирĕ Н.Ваçанккана, А.Петтоккине, М.Аттая тата ытти чăваш çыравçисене те ерет. Пĕр хушă индустри ыйтăвĕсем П.Хусанкая та канăç памаççĕ («Магнит ту» поэма, ытти уйрăм сăвăсем).

Ялсене трактор-машина пырса кĕни хресчен пурнăçне çăмăллатни, тĕрлĕ заводсем çĕкленни хресчен пурнăçĕнчен хăпнă çынсем валли ĕç вырăнĕсем туса пани кĕретĕнех курăннă ĕнтĕ. Çапах çав çитĕнӳсем чи малтан хресченшĕн мар, патшалăх машинишĕн ĕçлени те куçкĕрет. Колхозсем туса илнĕ тырра-пулла, тĕрлĕ çимĕçе патшалăх заказĕ тесе йӳнĕ хакпах илсе каясси йĕркеллĕ пулăм пулса тăнă. Хресчен хăйне килти хушма хуçалăхпах тăрантса пурăннă. Колхоз пурлăхне вăл нихçан та хăйĕн тесе шутламан. Çапах та сăвăçсем чи малтан ял сăн-сăпачĕ улшăннине, техника

цивилизацийĕн лайăх енĕсене асăрхаççĕ, ăна совет влаçĕн çитĕнĕвĕпе тӳррĕн çыхăнтараççĕ.

Большевиксен чи пысăк та мухтава тивĕçлĕ çитĕнĕвĕсем наци политикинче курăннă. Автономи республикисемпе облаçĕсем йĕркелени патша саманинче пусмăрта пурăннă халăхсен харкам ăнне темиçе хут çӳлерех çĕкленме пулăшнă. Çак факт «пусмăр – ирĕклĕх» оппозиции çирĕплетмелли сăлтавсенчен пĕри пулнă. Çавăншăнах хăйсен нацине юратакан, уншăн кĕрешме хатĕр çынсем пурте тенĕ пекех совет влаçĕ енне çавăрăнса ӳкеççĕ, киввине сивлесе пусмăрлăхран ирĕклĕхе туртăнаççĕ. Ерипен çак çут çанталăкран килекен туйăма политикăпа тата идеологипе хутăштарса яраççĕ. Пусмăр вырăнне иртнĕ пурнăç (унта лайăххисем те пулнă-çке!), ирĕклĕх вырăнне хальхи совет чăнлăхĕ (действительность) йышăнаççĕ. Хайхи халăх сăмахлăхĕпе традицилле çи-пуç та, килти хатĕр-хĕтĕр те кивелнĕ тĕнче паллисем пулса тăраççĕ. Çак кĕвĕсем хушăран аваллăха савакан сăвăçсен те илтĕнкелеççĕ. «Арăмсем, тек шӳлкеме Мăйăра ан çакăр», – чĕнсе йыхăрать Митта Ваçлейĕн автор-калуçи («Çĕр чĕлхи», 1930, 1932). Вăл «Кив лашанăн хӳринчен Трактор фончĕ» тума ĕмĕтленет. «Пуç çинче ман кивелнĕ аçам... Ăна хам пăрахам шырлана», – ашшĕне пĕлтерет В.Рсайăн хулара пурăнакан лирика харкамçи («Çыру»,1926).

Кунта çыравçăсем хăйсен тивĕçне мĕнре курнине пăхса тухни питех те кăсăк. Чи аслисенчен пĕри Н.Шелепи çапла çырать: «Хăш-хăш чухне ăшăм çуннипе, Хăш чух савăннипе юрларăм». Вăл «чăн-чăнласа» та юрланă, «юри юптарса» та çыркаланă иккен. Н.Шупуççынни авă К.Иванов хăйĕн чĕрине «чăвашшăн хĕрсе пурăннипе» çунтарса пĕтернĕ тесе шутлать. Çеçпĕл Мишши те чăваш чĕлхи ячĕпе пĕр пулса ĕçлеме йыхăрать, сăвăçăн кĕрешӳçĕ пулмаллине, унăн халăх хушшинче ĕçлесе пурăнмаллине аса илтерет. «Юратнă халăх хушшинчен Ан тухтăрччĕ нуша сасси, Ан пултăрччĕ çак çĕр çинче Вĕлересси, çаратасси», – ĕмĕтленсе çырать хури-шуррине сахал мар курнă Ç.Элкер. Уншăн пĕтĕм тĕнче çурхи кунсемпе çиçмелле, халăх ырă

пурăнмалла. Трубина Марфи Чĕкеçе (Хумма Çеменне) «Вутлă-хĕмлĕ шухăшсем» калама, юррисене уççăн та çирĕппĕн янратма сунать. Çамрăк Митта Ваçлейĕн сăвăçĕ пуçтахланать, вăл С.Есенин харкамçин хулиган маскине тăхăннă:

Юрла, поэт, ташла эс, çуйăх,
Йăпат хăватлă Улăпа!
Сĕтĕрĕнет аманнă уйăх, –
Çапса ӳкер ăна чулпа!

Кунта Улăп тесе поэт каланă сăмаха çапла ытарланă. Çапах та Митта лирикинчи харкамçăн чăн-чăн сăнĕ-сăпачĕ пачах урăхла: вăл тăван халăхшăн, унăн чĕлхишĕн хыпса çунать. Ку тĕлĕшрен вăл П.Хусанкая çывăх тăрать. Вĕсем иккĕшĕ те уйрăм çын туйăмĕпе халăх юратăвне çураçтарма пултарнă:

Чи лайăх юррăмсем те паян саншăн,
Пĕр саншăн çеç юрлассăм ман килет;
Мĕншĕн тесен эс те çунан чăвашшăн,
Мĕншĕн тесен – эс те пулас поэт...

(*П.Хусанкай.* «Икĕ çыру»)

Вырăс пролеткультçисем хыççăн каякансем урăхларах кĕвĕ ĕнĕрленĕ:

ĕçсĕрсене мар, илемĕпе чапланнине те мар,
Хĕр ачана юратнипе асапланнине те мар, –
Ĕçпе пиçĕхнĕ йывăр пурнăçлă çынсемшĕн
Юрлатпăр эпир – ĕçпе ӳсĕрĕлнĕ, халь килнĕ сăвăçсем.

(*Г.Алентей*. «Пирĕн сăвă»)

Г.Кели сăнарĕсем тата çăрарах: «Поэт вăл тупă. Чĕринчен Юнне сăхса вăл авăрланчĕ». Сăвăç «Ĕçри илемлĕхшĕн, Пулас этемлĕхшĕн, Çитес ыраншăн» пăлхав юрри юрлама тивĕç иккен.

Илле Тăхти вара сăвăç тĕллевĕпе унăн çĕр çинчи миссийĕ тата шăпи пирки ыттисенчен чылай урăхларах шухăшланă. Çавăн тупсăмне тупиччен поэтăн хăш-пĕр сăввине пăхса тухăпăр.

Сăвăçăн «Элихун» поэминчи VI пай пирки каласса илнĕччĕ ĕнтĕ эпир. Çав хайлавăн II пайĕнче автор ячĕпе каланă çапла йĕрке пур:

Хам та кукша халь эпĕ, Кукша чĕлхи суеçĕ.
Асатте те ман пекех Çавăнпа та хамăрăн
Кукша пуçлă старикчĕ. Йăх-тĕп çинчен каласа
Кукша тесен, пĕлетĕр: Мухтанмашкăн шутлатăп.
Кукша кăмăль мухтанчăк,

Вулавçă умне мухтанчăк та суеçĕ автор сăнарĕ тухса тăрать. Мĕн тума кирлĕ пулнă-ши çыравçа çав «шĕшлĕ çине утлантарса чуптаракан» çын сăнарĕ?

И.Тăхтин 1924 çулта хайланă «Хĕлле» сăввинче кĕнекене кĕртмен çапла йĕркесем пур:

Сĕм вăрманта тунката Пурăнатпăр çавнашкал
Кăмпаланса, мăкланса Каххăм, каххăм ӳсĕрсе,
Çĕрсе ларать теççĕ-çке. Чире-чĕре йăхăрса,
Эпĕр ĕнтĕ çавăн пек – Кĕсен-çăпан юхтарса.
Мĕн ватăлса виличчен

Кунти харкамçă вар хытиччен култаракан мар, вăл пурнăç çинчен хуйхăрса шухăшлакан, çитменлĕхсене йышăнакан тата вĕсене пысăклатса та вăйлатса кăтартакан çын. Икĕ тĕслĕхĕнчи автор-харкамçă та хăйсене курнăçланса мĕскĕнлетеççĕ. Урăхла каласан, сăмаха вĕсем хăйсем юри вылятнине систерсе мĕскĕнленеççĕ. Вулавçă çакна туять пулин те çав автор-халапçă хăш сăмахне чăн, хăшне вăлтса каланине пĕтĕмпех уйăрса илме ĕлкĕреймест.

«Çав-çав çĕрте, çав çĕрте» сăвва (1924) вĕçне çитичченех çав мелпе çырнă. 1924 çулхи чӳкĕн 22-мĕшĕнче Тăхти хайлав çинчен акă мĕн çырса хурать: «Тепĕр хут пăхса тухрăм. Иван Викторович вуланă хыççăн çĕнĕ улшăнусем кĕртнĕ май хайлаври юмахлăхăн сывлăшĕпе анлăшне малтанхи пекех хăвармалли хама та курăнчĕ».

Сăввăн стилĕ юмахлăхпа халаплăх енне туртăнни унăн ятĕнчех палăрать. Пĕр вариантра вăл «Пуп кушакĕн юмахĕ» ятпа тăрать. Çав хушăрах юмах пек вуланакан «тет» пайĕ хайлав çурринчен те сахалтарах. Унта автор-харкамçă «Асамăça-карчăка, Çеттуй юмăç-вĕрӳçе, Кăтра пупа асăнса» çырнă. Хура халăхăн чăххисем çăмарта тăва пуçласан, ĕнесем пăруланă хыççăн сарă çусем шăратма тытăнсан, çĕнĕ тырра авăртса кĕрпе тусан пуп таврашĕ питех те савăнать тет. Вĕсем ял тăрăх сĕренри пек, уй чӳкĕнчи пек пуçтарса çӳреме тухаççĕ тет. Ун пек чухне чӳк пуçĕлле кĕлĕ сăмахĕсем калаççĕ тет. Хăйсем ыйтнине памасан вара вĕрӳçĕ пек вĕреççĕ-сураççĕ, ылханаççĕ тет. Пупĕ те, юмăçĕ-вĕрӳçи те пĕрех иккен: вĕсем хура халăха улталаса пурăнаççĕ.

Малалли калу кĕтмен çĕртен палт! çаврăнать. Вуланă май автор-харкамçă хăй те пуп пекех вăрă таврашĕнчен тухнине пĕлетпĕр. «Вăрă йăли-саккунне Хура пупран кая мар Муштак пекех чухлатăп», – тет вăл хăйĕн çинчен. Хайхи ырă та «Колчакри» пек ыттисене питлекен калуçă вырăнне пачах урăх сăнар калăпланать. Вăл вулавça хăй лаша вăрри Шаккурăн ывăлĕ пулнине çине тăрсах ĕнентересшĕн.

Хайлавăн пĕр вариантĕ çапла йĕркесемпе вĕçленет:

Манăн юмах сыпăкне
Çич çĕр çитмĕл татăкне
Татăкласа шутласа
Илĕр пурте тавçăрса.

Тепĕр вариантĕн вĕçĕ кăшт вăрăмрах:

Çич çĕр çитмĕл татăкне
Татăкласа тавăрччăр,
Çулне-йĕрне тупайччăр.
Юмах юман тăрринче,
Çулĕ çыру ăшĕнче.
Çак юмаха çыракан,
Пуп кушакĕ теекен
Пăрис, пăрис тесессĕн
Шурă хута чăрмалать;
Чĕрни вĕçне хуратса
Армак-чармак чавкалать.

Хайхи юмаха çыраканĕ чаплă лаша вăррин ывăлĕ те мар иккен. Вăл хăйĕн сăн-сăпатне асамлă юмахри асамçă пек, «Арçури» поэмăри арçури пек пĕр вĕçĕм улăштарма пултарать. Писевĕ (маски) вара йышлă унăн: курнăç-мухтанчăкăн, мĕскĕн ăçти çукăн, чаплă вăрă-хурахăн, çăвар картарса итлеттерекен халапçăн...

«Çĕнĕ çул» сăвва (1924) И.Тăхти чăваш сăмахлăхĕнчи кĕлĕ тата пил тексчĕсен стилĕпе калăпланă. Сăвва «Канаш» хаçата ярса панă чухне вăл çапла ăнлантарнă: «Вăл сăвва эпĕ чăвашсем чӳк тунă чух кĕл тунă майлă çыртăм». Кунти автор – «эпĕ» кĕлĕ калакан чӳк пуçĕ пек курăнать, вăл Турăпа куçа-куçăн тăрать, çĕр çине космос ытамĕнчен пăхать. Хайлаври тĕнче – чăвашăн тĕнчекурăмĕ, унти шухăшлав-сăнарсем те чăвашăн традицилле пурнăçĕнчен илнĕскерсемех. Харкамçă çут çанталăкăн йĕрки арканасран асăрханать, тĕнче тĕрекне çирĕплетме тăрăшать. Тĕнчен, космосăн хăйĕн тыткăчи пулмалла, унти япаласен хăйсен еккипе çӳремелле, çĕр çинчи пурнăçа сиен кӳмелле мар вĕсен:

Хĕвел, уйăх, çăлтăрсем
Хăйсем хывнă çулпала,
Çĕр ырлăхне тивмесĕр,
Чипер çулпах çӳреччĕр.

Çынна тырă-пулăпа пахча çимĕç ăнса пулни çырлахтарса çитермест. «Çил-тăвăлтан, сив пăртан Чипер тăтăр çанталăк. Вут-кăвартан – хуйхăран Тӳлек пултăр самана». Усал сăмах тивесрен те, йывăçа тăвăл çапса ватасран та «Аша ырлăх упратăр». Чĕрĕ чуна чĕрĕлĕх, халăха вара ырлăх пурнăç кирлĕ иккен. Çаксене пурне те сунать сăвăри «эпĕ».

«Чăваш поэтсене. Мухтав юрри» (1925). Çыравçă сăвва салтак юррисенче тĕл пулакан мелпе кĕвĕленĕ. Хăй 1908–1914 çулсенче вĕрентсе пурăннă Тавăт-Шĕмшеш тăрăхĕнче çав юрра çапла юрланă пулнă:

Атти ывăлĕ пуличчен
Хăрăк турат пулас-мĕн,

Кĕрхи çилпе ӳкес-мĕн,

Çурхи шупа юхас-мĕн.

Çавнашкал тӳнтер метафора (çут çанталăка чĕрĕлетсе кăтартни мар, çынран çут çанталăк япали туса хуни) М.Федоровăн «Арçури» поэминче те тĕл пулать. Тăхти ята кăларнă жанр пачах хирĕçле пĕлтерĕшлĕ: ку юрă вăл – хурланупа ӳкĕнĕç юрри, тăван халăхĕ йышăнман (тен, тивĕçлипе хисеплемен) сăвăçăн чĕре ыратăвĕ. Çав чĕре ыратăвĕпе чун пăлханăвĕн хăйсен сăлтавĕсем пур.

1924 çулта И.Тăхти хăй çырнисене Мускавран Шупашкара парса ярать те хурав-хыпар кĕтсе илеймест. Унăн хăш-пĕр ал çырăвĕсене е юри çĕтереççĕ, е тиркесе тăкаççĕ. «Сахар» сăвва хакласа пĕр критик хĕрлĕ кăранташпа çапла çырса хурать: «Нельзя ожидать путной вещи». Çав алпах «Чăваш поэтсене» ал çырăвĕ çине çапла çырса хуни пур: «Çакна çыраканĕн ăс-тăнĕ вырăнтан сикнĕ пулас».

Поэта унăн литературăмăра кĕртнĕ çĕнĕ стилĕшĕн те, тĕрлĕ писевпе (маскăпа) усă курнăшăн та, сăвă техникине (силлабо-тоникăна) пăхăнманшăн та, пĕр пуçланă хайлава вĕçлесе çитерменшĕн те ятланă. Çав лару-тăру сăвăçăн чунне кӳтерсе çитернĕ те ĕнтĕ. Вăл хăйне тăван ашшĕ-амăшĕ, тăван халăхĕ ылханнăн, тăлăха кăларнăн туйма пуçланă. Вуласа пăхар-ха сăввăн пĕр варианчĕ çине поэт çырса хунă сăмахсене: «Эпический характер положением народа. Крик отчаяния – оскоминка – безнадежность. Диалог – беспардонный оптимизм. Почему черток, что с Вами? Во всей глубине тут вся темнота, <нрзб> огромный исторический груз». Кайран йĕркесем умне автор тепĕр хут «Почему?» тесе хăйĕнчен хăй ыйтса çырнă.

Халăх асĕнче пин-пин çул упранакан, амăшĕ хăйĕн тăван ывăлĕсене ылханни çинчен калакан халапăн (саксук халапĕн) черетлĕ ахрăмĕ-ши ку? Тăлăх турат юррисене çĕнĕ куçпа хакласа кăтартни-ши çакă? Е чăвашла сăвă çырса поэт хăйне нихăçан та тăрантарса пурăнма пултарайманнине туйса ӳкĕнни-ши?

Чăваш халăх умĕнче Уй хапхисен тăпсине
Аслă ятпа тăракан, Ялтан яла ларăр та
Пĕтĕм тĕнче пĕлекен Иртен-çӳрен хапхана
Чăваш поэт çыруçсем! Уça-уça хупнă чух
Ватă-вĕтти, чĕпписем! Чăррик-чаррик! çухăрăр, –
Юпа пулăр пурсăр та.

ĕмĕрхи ылхан çав-çавах пурнăçланасса сиссе чун тĕпĕнчи пĕр шанăçсăр сасса кăларать поэт. Вăл пĕлсе тăрать: чăваш çыравçисен мĕнпур савăнăçĕ те юпа пулнăскерсене «Кĕрен-тухан урапин Тĕнĕл пуçĕ перĕнни» кăна пулĕ.

Çапла вара, Тăхти чăваш сăвăçисен шăпи пирки мĕн шухăшланине пĕлтĕмĕр. Вĕсен пархатарлă ĕçĕ тертпе асапланăва çаврăнать иккен. «Сăвăсене ӳкерсе, Çамка тирне хытарса Асапланса лариччен» вăл пĕр-пĕр кайăк е кăпшанкă пулнин усси ытларах тенĕ пек пулса тухать. Паллах, ӳкĕнсе те чĕрине ыраттарса калать вăл çав ылхана куçакан сăмахсене. Çак ылхан тивнĕ телейсĕр ывăлăн писевĕ (маски) ун чухнехи чăваш çыравçисемпе критикĕсемшĕн пачах та ăнланма тата ăнлантарма май çук мел пулнă. Хăшĕ-пĕри И.Тăхти чăнласах ăс-тăнран тайăлнă пулĕ тенĕ. Пĕр-пĕрне ăнланайманни çыраканĕсен ăсĕ-пуçĕ, культури хăш шайра пулнинчен килни тавлашусăр ĕнтĕ. Литература институтĕнче вĕренекен поэтăн вĕçевĕ хуралтă çийĕнче сиккелесе çӳрекен сăвăç-кайăксеннинчен вуншар, çĕршер хут çӳлерех пулнă. Чăваш лирики валли вăл çĕнĕ çул уçса панă.

Виктор Ефремович Рсай (1906–1970) чăваш лирикине 1924 çулта «Тĕттĕмлĕхре» сăвăпа пырса кĕнĕ. Унти лирика харкамçи – çур ĕмĕрне пуп хушнипе пурăннă тата пуян чышки айĕнче ирттернĕ чухăн хресчен. «Юлташ мана Пырса вăратрĕ, Тĕрĕс çула кăларчĕ...», – хăюлăхне палăртать ĕнерхи мĕскĕн çын. Халĕ вăл хаярланнă, тен, ытлашшипех те:

Юлашкинчен Вăрăм çӳçе!..
Çапса çурăп, ...Леш пупа
Çапса куçран Питне сурăп

Çухатăп Ылханса!

Çав çулсенче пуп таврашне пуянсемпе пĕр сак çинех лартнă, вĕсене пурне те пусмăрçăсем тесе сивленĕ. Халăха çавнашкал классем çине уйăрса пĕр-пĕрне хирĕç тăратнин «çимĕçне» 30-мĕш çулсенчи репрессисенче курмалла-тăр. Хальлĕхе çав тĕп тăву сăмах шайĕнче кăна пынă-ха. Шупашкарти совпартшкула вĕренме кĕме хатĕрленекен ялти çамрăксен ячейкин секретарĕ В.Рсай та çав самана пăтравĕнчен пăрăнса юлма пултарайман ĕнтĕ.

Çав вăхăтарах хайланă «Патрак» сăввинче те палăрать марксизм çĕкленĕ хирĕç тăру проблеми. Çапах та кунта сăвăç илемлĕх мелĕсене тарăнрах ăша хывса пыни сисĕнет. Сăввăн композицине те (ыйту-хурав мелĕпе шăрçаланăскерне), çемĕ йĕркеленĕвне те (вырăс романтикĕсем анлă усă курнă дольника) вăл М.Лермонтовăннипе пĕрешкелтерех калăплана. Çакă пĕр евĕрлĕх çамрăк çыравçа К.Ивановăн куçарăвĕсем (уйрăмах М.Лермонтовăн «Иван ĕмпӳпе çамрăк сыхлавçă тата сатур Калашник хуçа çинчен хунă юрри») паллă пулнинчен тата килĕшнинчен килнĕ-тĕр. Ун чухнехи Рсайăн кăмăлне ытларах пăлхавăрлă харкамçă килни унăн ытти хайлавĕсенче те сисĕнет. «Юлташа» сăввинче (1926) вара М. Лермонтов куçарăвĕн поэтики тата çемми каллех çиеле тухать. Унта тĕпре пусăм черетленĕвĕпе сыпăк пĕр танлăхĕ мар, çуркамсен (дольники) хăйне евĕрлĕ йĕркеленĕвĕ (вĕсене сикчĕ-цезурăсем уйăраççĕ), вĕсенчи интонаци пусăмĕ малта:

Е хĕр чĕри вĕри юнна Е
Çулăмпалw хыптарчĕ-и?
Тăпра çинче ӳснĕ пĕвна /
Шур кĕл тусw вĕçтерчĕ-и?

Ç.Элкер харкамçи ялпа вăрмана хирĕçлетет, юлашкинчен канлĕх тупать пулсассăн, В.Рсай ытларах чухне *çил стихийине* кăмăллать. Акă пĕр сассăр вăрманта харкамçă шухăшлăн, вăйсăррăн утать малалла («Çамрăк», 1926). «Утсан-утсан кайса ӳкетĕп – Хĕлхем те çук йĕри-тавра!..» текен герой сасартăк чĕрĕлсе каять:

...Анчах ак тăр! Çил килсе çитрĕ.

...Вăрман та тулчĕ сасăпа...

Эпĕ те сĕрĕмрен тасалтăм,

– Çапăçусăр пурнăç мар! – терĕм.

Çак *сĕрĕм мотивне* Рсай хыççăн Митта Ваçлейĕ ăнăçлă аталантарать, çав ятлă поэма та хайлать. Ун пирки эпир маларах каласнăччĕ ĕнтĕ.

В.Рсайшăн çил вăл кĕрешӳ хевтине-вăйне виçсе пăхмалли май та. Акă лирика харкамçи тăман витĕр тăван ялнелле утать, «Хирсе хирĕç çапан çил» унăн «Уçă пуçне анратать», «Çӳлтен çăван çемçе юр» куçĕсене «куçăхлать» («Тăманра», 1926). «Кĕркунне» сăвăри (1926) «Сивĕ çил ав пуш капана туснă, Сивĕ çил хуплана хĕвеле». «Хĕлле» сăвăри (1926) харкамçă Çеçпĕл Мишши сăввисенченех куçнă тейĕн.

Çук, çук, пулмасть! Йăваш пулма пит йывăр.

Йăваш пулма халь шăп çанталăк мар, –

тет вăл çемçе уя усал çил ыталанине, ăна тустарнине курсан. Харкамçă çав «çемçе уя» атă тăхăнса тăман çинчех сыхлама хатĕр иккен.

1926 çул варринелле В.Рсай пултарулăхĕнче вырăс литературинчи çĕнĕ хресчен поэзийĕн темисемпе мотивĕсем, уйрăмах С.Есенин сăввисен çеммипе интонацийĕ сисĕнме пуçлать. Поэт уйрăм çынпа (амăшĕпе, ашшĕпе, аппăшĕпе, савнийĕпе) каласать, вĕсем патне çыру çырать, каçару ыйтать. Ашшĕ ячĕпе янă çырура («Çыру», 1926) сăвăç çапла çырать:

Ман шăпа саннипе танах мар,

Юррăм та янăрать урăхла.

Шур старик, черккӳне тайăлтар,

Юлашки хут парам хам алла.

Сăвă 1927 çулта тухнă «Çамрăк вăхăт» кĕнекере çак çаврапа вĕçленет:

Ан çиллен. Çилленни аван мар.

Çĕлене никам та юратмасть.

Ăнлансам... атте, эп санăн мар –

Кив çуна ярăнма юраймасть...

2004 çулта тухнă «Çырнисен пуххинче» çак çаврана урăхларах пичетленĕ: унти иккĕмĕш йĕркере «Усала никам та юратмасть», тăваттăмĕшĕнче «Сан çуну ман çула юрамасть» тенĕ. Улшăнусем чăннипех авторăн пулсан, вăл каярах (60-мĕш çулсенче-ши?) хăйĕн çамрăк чухнехи чăрсăрлăхĕпе максимализмне сивленĕ теме май пур.

Хăйĕн ашшĕне çĕленпе танлаштарнине асра тытса поэта Ваçанкка çапла каланă: «Витя, аçу çинчен тек ан калаç – Çĕн тăванусем çĕлен пекех авкаланаç...» Ашшĕнчен хăпнине сивлесе тата сăвăçăн пуласлăхне сиссе çапла çырнă-ши кунта?

В.Рсая *уй мотивĕ* те тыткăнлать. Вăл пĕрре савнин, тепре тăван амăшĕн курăнать сăвăça. Хăйне «уй-хирĕн хура ывăлĕ», «уй-хир сăвăçи» вырăнне лартаканскер, тăтăшах уялла туртăнать поэтăн чунĕ-чĕри:

Ирĕк сăвăç пулса юрлас килет,
Ула уйăхпа тусланасшăн эп...
Ача пекех ачашланса
Уйăм хунать.
Çут çăлтăр пек йăл-ял тукаласа
Чĕрем çунать.
Каяр, савни, каяр ак уялла...
Уй хумĕсем çинче ачашланам.
Юрлам, сана савсах юрлам
Куççуль тăкса,
Каяр, савни, чечексем пуçтарам
Пуça тайса.

(«Каяр, савни», 1926)

В. Рсайăн харкамçи яланах тăван кĕтесе (уя, вăрмана, яла) туртăнать, аса илӳ авăрне путать. Çамрăк чухнехи пуçтах (С.Есенинăн хулиган маскине аса илер) халĕ кистен вырăнне кĕсле ярса тытнă, чĕкеç евĕр юрра шăратать

(«Кистенĕм çук»). Анчах та юрă такăнма, сăвăç вара пăр çинчи «çемçелнĕ тур тиха» пек шуса ӳкме те пултарать иккен («Аппа патне», 1927):

Кăшт яка çĕртех çĕре ӳкетĕп,
Эс пĕлен, ӳксен вĕт тăма хĕн,
Хăш чухне çĕре выртсах йĕретĕп,
Халь сисетĕп, пурнăç – сивĕ хĕл.

Пуппа пуян пуçĕсене çапса çурма хатĕр малтанхи харкамçă мар кунта. «Пулхăр çĕрне-шывне» хытă юратакан поэт пурнăçа урăхларах курать:

Усал пурнăç саншăн ĕçлемерĕ,
Эпĕ пултăм чухăн çын – поэт.
Çамрăк юнăм юрăшăн вĕрерĕ,
Çамрăк пуçăм çавăншăн пĕтет.

Хăй вăхăтĕнче Çеçпĕл Мишшине çырма хавхалантарнă Лука Эрхипне халаллана сăввинче В.Рсай харкамçи хăйĕн кун-çулне кĕр кунĕпе танлаштарать. Сăрт çинче тапалашакан ут пек туять вăл хăйне. «Уринче мĕскĕнĕн такан мар...», – шухăша каласа пĕтермесĕр нумай пăнчă лартать автор. Паллă ĕнтĕ: ут уринче çирĕп *тăлă*, çав тапалантарать ăна. Кам тăлланăши çав мĕскĕне? Кунта сăвăç виçĕ пăнчă лартса хăй уççăн калас тенине çырма май килменнине ытарлăн систерет. Малалла вăл çав çулсенчи общество пурнăçне çут çанталăкпа танлаштарать, çапла ытарласа пĕтĕмлетет:

Çивĕч çил таврара пит улларĕ,
Çамрăк ӳт вăл çиле чăтаймасть.
Кĕркунне мана та ак тулларĕ,
Çавăнпа ман кĕсле савнаймасть...

1927 çулта пичетленнĕ «Çамрăк вăхăт» кĕнекене кĕнĕ 25 сăвăран чи юлашки вăл, ярăма вĕçлекенни. Çав усал çанталăк мотивĕ поэтăн ытти хайлавĕсенче те сисĕнет. Кĕнеке ум сăмахĕнче Н.Золотов: «Çĕнĕ юррăн кĕввине ăнланса илейментенех, – тет сăвăç пирки, – вăл хăйне тĕллĕн уйрăм çул шыраса çӳренĕренех, çĕнĕ пурнăç тума хатĕрлекен комсомол хушшинче

пиçĕхсе çирĕпленейменренех комсомолтан та, совпартшкултан та тухса ӳкет».

Хăйĕн çулне, хăйĕн сасне шыракан сăвăçшăн çав 1926–1927 çулсем чăннипех те усал çанталăкăн туйăннă ĕнтĕ. Ахальтен мар вăл «Шавла» хайлавĕнче çапла çырать:

Тăван çĕршывăм ман – шур пирлĕ,
Тăван çĕршывăн çитсă çук.
Хальхи кунсем пур хытă тирлĕ,
Хальхи кунсен ăшшийĕ çук.

Хальхи çанталăк хытă урнă,
Хальхи çанталăк алхасать.
Ăна Элкер поэт та курнă,
Вăл та хĕн-хуршăн ахлатать.

Ç.Элкер хăйĕн «Хĕн-хур айĕнче» хайлавĕнче XVIII ĕмĕрти ĕç-пуçа сăнлани паллă. В.Рсай ăна «хальхи çанталăкпа» çыхăнтарни питех те кăсăк.

Вăл çулсенче чăваш пултаруллă сăвăçи-çыравçи тĕнче тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳрени пирки Митта Ваçлейĕ çапла çырнă (1927):

Тӳсет ман тус,
Тӳсет вăл çич ютра...
Çыврать те пуль
Хӳменĕн хыçĕнче...
Тăван çĕршыв –
«Чечеклĕ çĕн утрав» –
Туй халĕ эс –
Мĕнле вăл çут тĕнче!

Тăван çĕршыв,
Çĕнелнĕ теç сана.
Ăçта сăну,
Çĕнелнĕ сан сăну?
Эс çĕнелмен!
Сан пуçлăх – тăмана.
Пĕтсех пĕтмен
Сан ирсĕр сăттану!

Малалла поэт чăваш çĕршывĕн хуçисем çăхана тухни, вĕсем халăха вырăслатас çул çине тăни çинчен ытарлă хаклать. П.Хусанкай патне янă çак сăвă-çырура каланипе В.Рсай туйăмĕ-шухăшĕ пĕр килеççĕ. Кĕçех В.Миттапа

П.Хусанкайăн калас тенине чылай чухне пытарма тивет. В.Рсай вара сăвă çырас ĕçрен пуçĕпех сивĕнет, И.Тăхти пек прозăна куçать, ытарлăх мелĕсемпе ытларах та ытларах усă курма пуçăнать.

Василий Егорович Митта (Митта Ваçлейĕ) (1908–1957) – чăваш лирикине В.Рсайпа пĕр вăхăтрах пырса кĕнĕ çыравçă. Хăйĕн чи малтанхи сăввисенчех вăл тăван çĕр, тăван ен кашни çыншăн хаклă пулнине палăртса çырать. «Çуралнă çĕршыв Маншăн пит чаплă; Манăн çамрăк чун Унта кăмăллă», – тет çамрăк Миттан лирика харкамçи. Тăван енре кайăкĕ те хитререх юрлать, чечекĕ те илемлĕрех иккен («Çуралнă çĕршывра», 1924). Çак *тăван çĕр мотивĕ* поэт пултарулăхĕнчи тĕп мотивсенчен пĕри пулса тăрать. Тăван çĕр çинче тăвансем пурăнаççĕ, унта тăван чĕлхе янăрать. Хайхи тĕп кĕвĕ тĕрлĕ çемĕсемпе пуянланса каять.

Вăхăтне кура çынни тенешкел, сăвăç хăй пурăннă саманаран иртме пултарайман. Кĕрешӳ чирĕн вирусĕсем тăванлăх темипе çырнă хайлавсене те ереççĕ. Авă Митта Ваçлейĕн «Çамрăк тăвана» сăввинчи (1925) харкамçă «Усал тăшмана Тĕппех пĕтерме» тупа тăвать:

Этем тăшманне
Пурпĕр пĕтереп!
Мулăн тымарне
Тĕппех сирпĕтеп!

Кĕрешӳçĕ хаярлăхĕ пуçтахлăха, вĕлерекене кăларни те хăратмасть харкамça. «Чăтаймасть чунăм Тăшман пĕтмесĕр! Çав хаяр мулăн Пуçне çĕмĕрер!» – хăй тĕллĕнех приговор çырать вăл. Сăвăра çине-çинех тĕл пулакан кăшкăру паллисем, кунти субӳекта аффектлă, хĕрсе кайнă вăхăтра кăтартни çинчен калаççĕ. «Ялкор сăввинчи» (1926) харкамçă та хăйне ирсĕрлĕхсене пĕтерекен вырăнне хурать. Хаçата çырнă хыççăнах «хай тăшман пиçет» иккен: тепĕр эрнеренех ялкорăн тăшманне(!) тĕрмене лартаççĕ те!

Çапах та поэтăн митталăхне çак вăхăт заказĕпе çырнă сăвăсем мар, урăххисем тăваççĕ. Акă Вăрмар станцийĕ «Кĕрлет, шавлать тăван чăвашпа» («Çĕнĕ çĕрелле», 1926). «Хуйхăллă чăвашсем» макăраççĕ иккен, тăван уй-хирне ӳпкелесе инçетри Çĕпĕрелле çул тытнă вĕсем. Кунти лăс вăрман та «Хăй илемне курса савăнман Чăвашсене пăхать хурлăхлă». Вырăнтан тапраннă пуйăс та «*Чăваш чунне сиссе* (палăртни манăн. – *В.Р.*) хуйхăпа Мĕкĕрттерчĕ пĕтĕм чĕринчен». Лирика харкамçи философилле шухăша путса çапла ытарлăн ыйтать:

Çӳлтен шăван тĕксĕм пĕлĕтсен
Ăçта-ши ертсе пыран тӳр çулĕ?
Çакă чăваш çынни-тăвансен
Ăçта иртсе кайĕ-ши кун-çулĕ?

Çав çулсенче, «тăван чăваш» тесе çырнишĕнех айăплама пултарнă вăхăтра, Митта çапла калани питех те пĕлтерĕшлĕ. Хăйĕн П.Хусанкай патне ярса панă пĕр пичетленмен сăввинче («Ăшăм çунать...», 1927) поэт хăйĕн чунне ытларах уçать. Унта вăл чăваш çĕршывĕ çĕнелейменни, мĕншĕн тесен унăн пуçлăхĕ «тăмана» пулни пирки пăшăрханнине палăртать.

Шеллеп сана, Капла пулсан
Çĕршывăм, эп чунтан. Чĕр Вилĕм каччу та
Сан хуçусем Ак сан пата
Халь тухнă çăхана! Час килĕ хăтана, –

тесе чунне ыраттарать лирика харкамçи. Вăл тăван чĕлхе шăпишĕн пăшăрханать, халăхăмăрăн «ылтăн ывăлĕсем» тĕрлĕ çĕре сапаланса кайнишĕн кулянать.

Поэт пултарулăхĕнчи тепĕр тĕп кĕвĕ вăл – *илем мотивĕ*. «Тĕнчере хĕрĕх те пĕр илем теç, – Пурте пирĕн пулĕç вĕсем», – хавхаланать лирика харкамçи («Тĕнчере хĕрĕх те пĕр илем теç...»,1927). «Аслă çĕршывăн илемĕ» поэта «çурхи телейре» тĕне кĕртнĕ иккен. Çавăнпа унăн юрри иксĕлми, çăлкуç евĕр, «вăрман аслă уйĕ», хир-çаран евĕр. Çав илемсене пĕлнине «çак тĕнчен

тупсăмне тупнипе» танлаштарать харкамçă. «Чĕлхен тивлетлĕ илемĕ», «пулхăр чăн яш арĕн» чиперлĕхĕ, çут çанталăкăн илемĕ, çĕнĕ пурнăçăн çĕнĕ илемĕ... «Ачаллах илемшĕн çуннă куçăм Илеме ачашлĕ вăл тинех», – тесе пĕтĕмлетет харкамçă, хăйне ирхи çĕршывăн чăн ачипе танлаштарса («Анкăминкĕ пуçăм, хура куçăм...», 1928). Халĕ вăл пур çĕрте те илем курмасть ĕнтĕ. Хăйне сас килменни ӳкĕнтерет «мăнтарăн сăвăçа» («Çĕнĕ тупа», 1928):

Çапах илем пулмарĕ-мĕн Е темĕскер чĕнет пĕри
Çак пирĕн ĕмĕрте... Айванлăн сĕрĕмре,
Хăшне хула бульварлăхĕ Çапла чечек сĕнетпĕр-и
Сĕткенлĕн ĕмĕртет. Чăн çамрăк ĕмĕре?!

Хăй сĕрĕмре пулни çинчен чи малтан В.Рсай, кайран Митта Ваçлейĕ çырнă тенĕччĕ маларах. Çак çăмăл шӳт кайран вĕсем çумне куршанак пек çыпăçать, 30-мĕш çулсенче айăпламалли тĕп сăлтавсенчен пĕри пулса тăрать. Вĕсен аслăрах тусне П.Хусанкая та çаваннăнах турткалаççĕ. Çапах та çак виçĕ сăвăç пĕр-пĕрин патне хытах туртăннă. Вĕсем хăйсен вăй-хăватне туйса сиснех ĕнтĕ. Çав хушăрах поэзи çине çав виçĕ талант виçĕ куçпа пăхни сисĕнет. В.Рсай çав çулсенче поэзирен пуçĕпех сивĕнет терĕмĕр. П.Хусанкай 1931 çул хыççăн В.Маяковскилле çырса хăйĕн оппоненчĕсене çырлахтарать, çав хушăрах «сунтăх валли» те хайлать, вырăс классикине, финсен эпосне чăвашла куçарать. Митта Ваçлейĕн вара чăн поэзирен суя оптимизмлă сăвă-поэма тĕнчине тума тивет. Çав хушăрах халăх сăмахлăхĕпе куçару ĕçне пуçĕпех кĕрсе каять. Çав лару-тăрура поэт хаçат редакцийĕнче ĕçлеме пăрахса яла тухса каять, чĕрине ыраттарса çапла калать:

Ку пурнăçра пурте-мĕн проза,
Поэзисем кирлех те мар.
Çта çĕр улми, унта чăн роза
Яраймĕ нихăçан тымар.
Поэзисĕр кĕпер хываççĕ,
Унсăрăнах кӳлеç çиле.

Халь ыр çынсем сăвă çырмаççĕ,
Эс те ан çырнă пул, Ваçлей...
(«Уç çырупа калаймăн нимĕн...», 1929)

Кунта сăвăç сăмах вылятни мар, илем ăнлавĕ чăн пурнăç прозипе пырса çапăнни, хирĕçĕве кĕни курăнать. Мала каллех класс кĕрешĕвĕ, «чунсăр тимĕре» савни тухса тăрать. «Кам çул урлă выртнă – Хăюллăн çеç таптăр. Кам йĕрĕнчĕк ертнĕ – Шăлса вăркăнтар», – тесе çырать сăвăç 1932 çулта («Тăвалла маршĕ»). Вăл классăр, ултавсăр çĕр-шывра пурăнма ĕмĕтленет. «Çиçтертĕр çиçĕм Класлă çивĕч сисĕм», – тет тепĕр сăввинче («Çиçтертĕр çиçĕм», 1932). Класс хирĕçĕвне пурнăçран мар, марксизм теорийĕнчен илни кĕретĕнех курăнать кунта. Тăшман тупма йывăр мар тенĕн, чăххине чарман кӳршĕре те тăшмана, çĕнĕ пурнăçа «сăтăр тăвакана» курма пултарнă çав саманари хресчен. Мĕн шыран – çавна тупатăн тенĕ. 30-мĕш çулсенче тăшман («кулак», «националист», «вак буржуй») валли чавнă шăтăксене 1937–1938 çулсенче çав çыравçăсем хăйсемех кĕрсе ӳкнĕ, вăл шутра Митта Ваçлейĕ те. Çапах та кунта поэта ыттисенчен уйăрса хак памалла. Совет влаçĕн наци политики чăнлăха тивĕçтермест, чĕлхе политики хушăран тĕрĕс мар (ку ĕнтĕ «вырăслату-меттислату» тенине темиçе хут çемçетсе калани пулнă) тесе калаканĕ чăваш çыравçисенчен чи пĕрремĕш вăл пулнă. Атăлçи халăхĕсенчен çак проблемăна малтанласа удмуртсен поэчĕ К.Герд лартнă пулсан (1932), Митта Ваçлейĕ çак чăн шухăша 1937 çулхи ака уйăхĕнче çыравçăсен пухăвĕнче пĕлтернĕ. Кĕçех поэта пуç илене яраççĕ, илемрен вун икĕ çуллăха пистереççĕ. Унччен темиçе çул маларах Митта тĕрме пирки тĕлленме те пултарайман-ха, çакна унăн сăввисенчи пуç иле мотивне пăхса тухни те кăтартса парать.

1932 çулта хайланă «Çиçтертĕр çиçĕм...» сăввинче Митта (те телее, те инкеке ĕнтĕ) концлагерь (пуç иле) мотивне пуçласа ĕнĕрлет. Тĕрмере ларманскерĕн ăнлавĕ ытла та абстрактлă-ха:

Юлташ!
«Концлагерь» хăруш мар,

Нимрен усал та хăрушши –
Вăл чирлĕ чĕресен шăрши,
Нимрен усал та хăрушши –
Вăл халь те чĕрĕ «авалхи».
Шăп çак тĕле ярать тымар
Леш çĕрĕшнĕ кăмпа вăрри.
Ак çта вăл чи-чи йывăрри,
Ак çта «хăрушă Соловки».

Иккен аваллăх çинчен каланă çĕрте «Куштан та пуяна, Шыра эс çакăнта Тĕп пулнă кулака». Вĕсем харкамçăшăн Соловкирен те (Шурă тинĕсри утрав çинчи мăнастир. Унта концлагерь вырнаçнă пулнă) хăрушăрах-мĕн. Турри вара çакна юри тĕрĕслеттерсе пăхать тейĕн: Митта Ваçлейĕ вунă çул ытла концлагерь «ырлăхне» курнă хыççăн акă мĕнле йĕркесем кĕвĕлеме пуçлать:

Куллен-кун хăшкăла-хăшкăла
Хырăмшăн хырăмпа шăвăнан.
Çынлăхран кăларан мăшкăла
Хăçанччен тӳсмелле-ши, тăван?..

(«Чул çыран хĕрринче»)

Çапла вара, Митта пултарулăхĕнчи пуç иле мотивĕ пачах тепĕр май çаврăнса тухать. Поэт класс тăшманĕсем концлагерьтен те хăрушăрах текен «Сармантей саманинче» «Анăçран тухăça çитиччен Хырлăх мар-мĕн, хурлăх вăрманĕ» пулнине пĕтĕм чунĕ-чĕрипе ăнланса илет.

Сăвăçăн 30-мĕш çулсенчи публицистикăлăхĕ те çав саманана тивĕçтерес тенипех çыхăннă. Лирикăна пуçĕпех сивленĕ тапхăрта сăвăçсен урăхла çырма майĕ те килмен пулĕ. Хăй калас тенине поэт иртнĕ пурнăçа ӳкернĕ май каланă, хăйĕн шухăшне вăл тĕрлĕ куçарусенче палăртнă. Акă А.Пушкинăн «Борис Годунов» трагедийĕн куçарăвĕнче влаçпа хура халăх проблеми питех те пĕлтерĕшлĕ. 1937 çулта куçарнă хайлав çак ремаркăпа вĕçленет: «Халăх чĕмсĕр». Ун чухне унран лайăхрах калама ниепле те май килмен-тĕр.

Митта сăввисенче чăваш йăли-йĕрки, традицилле мифологийĕ хуçаланать. 1933 çултан пуçласа сăвăç халăх сăмахлăхĕпе кăсăкланма пуçлать. 1936 çулта вăл хăйĕн тăван ялĕнче пурăнакан Каттис Мишшинчен чылай юрă-кĕвĕ çырса илет. Унта çапларах йĕркесем те тĕл пулаççĕ:

Хура вăрман хĕрри ай тĕтреллĕ,
Тĕтрисене сирме ай çилсем пур.
Пирĕн çамрăк пуçсем ай нушаллă,
Нушисене сирме ай турри пур.

«Пирĕн телейсене йăт çинĕ» текен харкамçăллă юрăсем ун чухнехи такмак кĕввисемпе çураçăнса тăманни те хăратмасть Миттана. Тен, çав юрăсенче вăл хăйĕн ĕнерĕвне, чун киленĕçне тупнă та? Ярăма вĕçлекен çавра вара поэтăн пулас пурнăçне каласа панăнах туйăнать:

Ах темесен сывлăш та ай тухмасть-çке,
Пĕр курмасăр ĕмĕр иртмест-çке.
Ах-ах тенĕ сывлăш та ахах пулмĕ,
Хуйхăрнă чĕрере те çу пулмĕ.

Митта лирики тепĕр хут 50-мĕш çулсенче чечекленет, сăвăç чăн-чăн илем патне тепĕр хут таврăнать.

30-мĕш çулсенче чăваш поэзийĕнче чылай улшăну пулса иртет. Маларах ят илнĕ сăвăçсен тĕп пайĕ (Н.Шупуççынни, М.Трубина, Ç.Элкер, Хумма Çеменĕ, В.Рсай) прозăра тухăçлăрах ĕçлет, калав-повесть хайлама пикенет. Н.Шупуççынни хăйĕн «Еркĕн» ятлă ăнăçсăр поэми хыççăн «Тинĕс хĕрринче» новелла, «Тĕрленĕ енчĕк» тата «Кĕтмен кучченеç» калавсем, «Ишек» ятлă повесть, аса илӳ тата çулçӳрев очеркĕсем çырать. М.Трубинапа Ç.Элкер хăйсен вăйĕсене прозăра маларах та тĕрĕслеççĕ, çавна пула 30-мĕш çулсенче повеçсемпе роман-хроника тата роман жанрĕсемпе хĕрсех ĕçлеççĕ.

Нестер Кириллович Янкас (1909–1942) та çав çулсенче «çепĕç юрă паяншăн шывак» тесе çырнă, «ĕç шавне мухтакан кĕвĕсем» кĕвĕлеме кăмăллана. «Хурçă юрăсемшĕн» сăвăра (1929) поэт Маяковскилле йĕркисене çапла купалать:

Кам та кам илтейĕ кăна
паянхи тапхăрта таврара
сăвăра хăй çинчен
пĕр салхусăр халĕ
сăнлать, – «чăн поэт»
çав ят.

Н.Янкас Маяковский вилнĕ (ун чухне вăл перĕнсе вилнĕ текен официаллă шухăш çӳренĕ, тĕрĕслĕхĕ вара халиччен те паллă мар-ха) хыççăн «Маяковскипе курнăçни» сăвă хайлать, унта вăл поэтсен халсăрлăхне хирĕç тăрать. Çут çанталăк хăй пилленĕ ĕмĕре çынран хăех каялла илмелле. Çак саккуна аркатакана сăвăç пурнăçри хăравçă дезертирпа танлаштарать. «Сăвăсемпе, кĕрешӳпе, ĕçпе çанталăк суннă ĕмĕре илсе пурнар халь пурнăçри пур тивлетпе!» – чĕнсе йыхăрать вăл чĕррисене.

Çак сăвва поэт 1935 çулта «Маяковский тупăкĕ çине» ятпа пичетлет. Сăмах май каласан, малтанхи вариантра «Маркс, Ленин хывнă тракт» тенĕ, кайран ăна «Ленин, Сталин хывнă тракт» сăмахсемпе улăштарнă. Çакна Н.Янкас хăех çапла тунă-ши е ăна цензура хистесе çĕнеттернĕ-ши?

1932 çулта «Сăвăсем» ятпа тухнă кĕнекин ум сăмахĕнче Н.Янкаса çапла ятласа илнĕ: «Поэт хăйне коллективран ăраснах уйăрса тăратать. Çавăнпа та унăн шухăшĕсем субӳективлă кăмăлтан тухса пыраççĕ. Кунта поэтăн уйрăмлăхĕ, индивидуаллăхĕ, «эп» тени мала тухса тăрать». Сăвăçă çут çанталăк идиллийĕ ăшне путать, çара эстетика тыткăнне парăнать, чечексемпе, «кăтра çӳçлĕ» хурăнсемпе киленет, вĕсемпе тĕлĕкри пек ирĕлсе калаçать тесе айăплаççĕ. Тĕрĕссипе чăн-чăн поэзи пахалăхĕсемшĕн ятланă ăна, коллективизаципе класс кĕрешĕвĕ çинчен кăна çырма хистенĕ.

Н.Янкас лирика çулĕ-йĕрĕнчен пăрăнман. Чи малтан вăл пейзаж лирикине кăмăллана, çĕнĕ сăнар-ӳкерчĕксем шырама юратнă. «Шетмĕ шывĕ хĕрринче» сăввăн (1939) пуçламăш çаврисене илсе пăхар-ха:

Симĕс-симĕс улăхра Шетмĕ тăрăх çул хывать –

Пăс юхать – шăрça тăкать. /нчĕ-ылтăн çул хывать.
Шурăм пуçĕ тухăçра Шетмĕ шывĕ тĕк тăрать,
Вăй вылять, хĕвел тухать. Кĕмĕл кăкăрĕ çине
Ялкăшса хĕвел тухать, Çил анать те кустарать
Шетмĕ тăрăх хĕм тăкать, Вĕтĕ-вĕтĕ хумсене.

Малалла та çавăн пекех юхса пыраççĕ сăвă йĕркисем. Тепĕр сăвăра поэт Атăл шывне «шап-шур каракуль хумсем» тесе сăнарлать. «Çавал шывĕ – тĕкĕр – ĕмĕт тӳпене. Çыран тăрăх вĕтлĕх Чӳхет кăтрине» йышши ӳкерчĕксем те асра нихăçан манăçми юлаççĕ. Н. Янкас сăввисенче улăхпа хир те «саспа чӳхенет», кĕр еннелле «çу тумĕ тутăхать».

«ӳкĕтлĕ каç» («Колхоз çамрăкĕсен каçĕ») ятлă пĕчĕк поэмăри Емелкке пуяна сăвăç çапла каласторать: «Мĕншĕн телейсĕр пултăн Çак тивлетлĕ çĕршывра?!» Авторăн «Маннă тусăма» сăввинчи лирика харкамçи урăхла пуплет:

Телей хĕвелĕ пулчĕ маншăн
Хам çырнă сăвă; çĕршыва
Юнпа çырмасăр, çук, паманччĕ
Эп хам сăвва!

Н. Янкас хăйĕн телейне поэзире тупнă. Анчах та «тивлетлĕ çĕршыв» юратнă ĕçĕнчен уйăрать ăна: çыравçа 1941 çулта нимсĕр-мĕнсĕр айăпласа тĕрмене лартаççĕ. Çавăнччен çулталăк маларах поэт «Ăсату» ятлă сăвă шăрçалать:

Йĕрес килет. Куççуль тухмасть. Каятăп эп инçе-инçе...
Пĕлетĕп: кирлĕ мар йĕме. Ан ман... Упран инкексенчен.
Халь нимĕн те пусараймасть Кам юратать – çав нумайччен
Тулса капланнă чĕреме. Кăвар усрать хăй чĕринче!

Сăвăç Улатăр лагерĕнче «шăнса, выçăпа касăлса» (Ç.Элкер) пурăннăран 1943 çулта çĕре кĕрет.

XX ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче чăваш поэзине вĕри чĕреллĕ çамрăк сăвăçсем çитсе кĕреççĕ. Вĕсенчен пĕри И.Ивник пулнă.

Иван Николаевич Ивник (1914–1942) чи малтан ăста лирик пек паллă. 1936 çулта вăл «Редактор асăрхаттарни» сăвăра хăйне çамрăксем, хĕр пикесем çинчен çырнишĕн айăплама пăхни çинчен каласа парать. Акă мĕнле асăрхаттарать сăвăçа редактор:

Татах-çке санăн кĕмĕл сывлăш,
Татах çурхи пахча.
Тума май çук-и урăх çаврăм –
Шухăшласа пăхсам.

Чăн та, Ивник лирики çут çанталăка туртăннă, кĕвĕлĕхе кăмăллана. Ахальтен мар вăл чи хитре каланă сăмахсем юрра тивĕçнине çапла палăртать:

Эп илтĕм çыру. Курсамччĕ эс, кур,
Кашни пуплеврех çуркунне сăнĕ пур.
Кашни пуплеврех çут илем, юрату,
Кашни пуплевех илĕртет: юрă ту.

И.Ивник – састаш (рифма) ăсти те. Çав хушăрах унăн сăввисенчи йĕрке вĕçĕсем кăна мар янăраççĕ, кашни çавра хăй уйрăм кĕвĕпе ĕнерĕнет. Поэт тул çутăлнă, сывлăм ӳкнĕ самантсене кăмăллать, улăх илемĕпе киленет. Официаллă идеологсене çураçтарас тĕллевпе çырнисенче те унăн чĕлхи сĕтеклĕ, кĕвви юхăмлă. Уйрăлу, вилĕм çинчен çырнă «Манăçми юрă» сăввине вăл халăхра çырса илнĕ пейĕт (сюжетлă юрă) пек ăнлантарнă. Тĕрĕссипе поэт ăна хăех хайлани иккĕленӳсĕр. Халăх юррисен стильне ăша хывнă сăвăç кунта ун чухне кăтартма юраман туйăмсене палăртать. Сăвă çапла йĕркесемпе вĕçленет:

Лапкам-лапкам та юр çăвать,
Ыр ут юртать, йĕрсем юлаççĕ.
Эпех вилсессĕн мĕн юлать?
Çак сăвăсем юлсан юратчĕ,
Пĕр нимĕн те юлаймĕ урăх.

Йĕретĕп эпĕ çавăнпа.

Çак йĕркесене чĕре витĕр кăларса çырнă И.Ивник тепĕр ултă çултан тарăна кайнă чирне çĕнтереймесĕр çĕре кĕрет. Çапла пулса тухасса поэт малтанах сиснĕ тейĕн çав. 1939 çулта вăл Арменирен (унта вăл Ç.Элкерпе эрменсен эпосĕн юбилейне паллă тума кайнă пулнă) килне çапларах йĕркесем çырать: «Мĕн пулĕ-ши ыран-виçмине (çитес, курас вăхăтсенче), мĕн пулĕ-ши, тен, кунта çырнă сăвăсем юлашки сăвăсем пулĕç – пĕлме çук».

Поэтăн чĕлхи вĕçне чĕрене ыраттаракан сăмахсем мĕншĕн килнĕ-ши? Вăл 30-мĕш çулсен пуçламăшĕнчех шăмă туберкулезĕпе (Çеçпĕл Мишши те çав чирпе асапланнине аса илĕр) чирленĕ иккен. 1939 çул тĕлне сăвăç йывăрланса çитет, пушкăрт кăмăсĕпе сывалса пăхать, тепĕр çул Крымра сипленет. Вăрçă вăхăтĕнчи выçăллă-тутăллă пурнăç И.Ивник сывлăхне хавшатсах çитерет. 1942 çул пуçламăшĕнче сăвăç тухса çӳреймиех пулать, вырăнпах выртма тытăнать. Çав самантсенчен пĕринче вăл «Ылхан» ятлă сăвă хайлать. Градаци мелĕпе ăнăçлă усă курса кунта «хура ылхана» «çĕр çĕклейми ылхан» таран хаярлатса кăтартнă. Поэт этемлĕх хаярлăхне хăйĕн витĕр кăларса Гитлер çине ӳкерет, хаяр чĕлхи вĕрет, ылхан сăмахĕсемпе ылханать. Сăвă вĕçĕ Çеçпĕлĕн çак сăмахĕсене аса илтерет:

Усал курăк та ан шăттăр
Ман тăпра çине:
Çĕр çурăлтăр та çĕр çăттăр
Вил шăммăмсене.

И.Ивник чăваш ылхан сăмахĕсене Çеçпĕл пек хăйĕн çине мар, «халăха асап кӳрекен» (Гитлер) çине сулать.

Ивник лирики пейзажа та, юрату туйăм-сисĕмне те хапăллать, уншăн философилĕх те ют мар. Тепĕр чĕлхерен куçарнă чухне поэт чи малтан хăйĕн чунĕнчи хĕлĕхсемпе пĕр ĕнерӳллĕ хайлавсене суйласа илет. Вăл С.Есенина питĕ хаклани, унăн чи паха сăввисене куçарни паллă. Вырăс поэчĕн

«Отговорила роща золотая...» ятлă ултă çавраллă сăввине Ивник хăйне май куçарнă. Кунта унăн есенинлăхĕ те, харкамлăхĕ те аван курăнать.

Çак тапхăрта поэзире чылай ят палăрнă. 1930 çулта çырнă «Юлташа» сăввинче И.Караттай хăйне чăвашсен çич çĕр çиччĕмĕш поэчĕ тесе палăртать, сăввинче вăл хулапа яла хирĕçлетсе çырать:

Хулара, чăнах, «йĕпе сăмси те»
Чăвашран халь те кулма пăхать.
Хăш-пĕри тата «тăван» тени те
Мăннăнах мана пуçран сăхать.

Çак сăвăра С.Есенинпа П.Хусанкай кĕввисем сисĕнеççĕ. Сăвăç тăван сăмах-юрă пуласлăхĕшĕн чылай шухăшлани палăрать.

20-мĕш çулсенче Н.Ваçанкка ячĕ кĕрлесе кăна тăнă. Вăл çамрăклăх çинчен экспериментла сăвăсем сахал мар çырнă, хăйĕн шухăлăхĕпе чылай çынна тĕлĕнтернĕ. Унăн хăш-пĕр сăввисенчи çĕнĕлĕхĕ тури чăвашсен сăмахсăр юррисем майлăн янăранă:

Вăшăл-вăш-ш-ш! Вă-ă-ш-ш-вăш!
У-у-ух! Иш-иш-ши! И-и-ш-ш-и!

Кунта сăвăç тинĕс шавне çапла евĕрлесе сăнланă. Утнине вăл каллех евĕрлесе кăтартать:

Тăрсти-тăрст, тăрст-тăрст!
Тăрăст, тăрс-тăрст-тăрст!
(«Тинĕс хĕрринче», 1925)

30-мĕш çулсенчи лирикăра чылай сăвă харкамçи схемăллă пулса тухнă, унти шухăшсем декларациллĕ пулнă. «Тепĕр тесен, – шухăшлать çакăн пирки В.Канюков, – çамрăксем хывакан поэзин çак «ӳсĕм такăнчăкне» тӳссе ирттермеллех те пулнă çав. Çĕршывăн улăпла хусканăвĕ çамрăксене тĕлĕнтерсе-каçăхтарса пăрахнă, мĕн курни пирки шухăшласа илме ĕлкĕриччен кăшкăрса ярас килтернĕ».

Сăлтавĕ улшăнусенче кăна пулсанччĕ! Вăхăчĕ çĕнĕлĕхпе кăна мар «ах» та «эх» тетернĕ çамрăк сăвăçсене, критика чукмарĕ те ахлаттарнă çул çинчен

пăрăнма хăйнисене. Кунта П.Хусанкайпа В.Рсая тылланисене кăна аса илер. Çапах та 30-мĕш çулсенче чăваш лирики аталанман тесе калама май çук пулĕ. Маларах асăннă ятсем çумне ыттисене те хушма пулать: Я.Ухсай, С.Шавли, А.Алка, А.Кăлкан, М.Ястран т.ыт.те. Тĕнчере вăрçă-харçă шавĕ вăйланса пынă майăн чăваш лирикинче сыхлăхпа вăрçă мотивĕ ерипен вăй илсе пыма тытăнать.

Чăваш поэзийĕнче вăрça питлекен гражданла лирика 30-мĕш çулсен иккĕмĕш çурринче илтĕнмеллех янăрама пуçлать. 1936 çулта Ç.Элкер «Фашизма хирĕç», П.Хусанкай «Федерико Гарсия Лорка» хайлавсем çыраççĕ, каярах вăрçă мотивĕ чылай поэт сăвви-поэминче вырăн тупать.

Илле Тукташ (1907–1957) хăйĕн «Шурă кăвакарчăн» сăввине 1938 çулта хайланă. Каярах çав чуна пырса тивекен сăмахсем чăннипех вăрçă юрри пулса тăнă. «Ăсату», «Ăмăрт кайăк», «Пурнăçпа юрату» тата ытти сăввисенче те поэт патриотла шухăш-кăмăл палăртнă. «Вилĕме çĕнтерни» ятлă сăвăра (1945) поэт аманнă салтака операци туни çинчен каласа парать. Акă васкавлăн юн кирлĕ. Вăл çукран медсестра хăйĕн юнне парать салтак пурнăçне çăласшăн.

И.Тукташ хăйĕн сăввисене халăх юррисен поэтикипе, илемлĕх мелĕсемпе усă курса шăрçалама кăмăллана. Çавăнпа та вĕсем çăмăллăнах кĕвве хывăнаççĕ, илемлĕ юрă пулса тăраççĕ. «Тăван çĕршыв» ятлă кĕреке юрри вара Чăваш Республикин гимнĕ пулма тивĕçрĕ.

Тукташ чăваш поэзине вăрçă çулĕсенче прозăллă сăвăсем çырса та пуянлатнă. Çак жанрпа унччен И.Юркинпа Г.Кореньков тата М.Юман темиçе хайлав çырнă, 20–30-мĕш çулсенче вăл манăça тухнă темелле. И.Тукташ çав жанра çĕнĕрен чĕртсе тăратать, «Лантăш», «Шăпчăк», «Аманнă салтак», «Савăнăç хĕвелĕ», «Хăна юрри» тата ытти сăвăсем çырать. Вĕсем кĕске, çав хушăрах вăйлă туйăмлă, сăнарсем символла пĕлтерĕшлĕ, риторика фигурисемпе пуян, предложенисем инверсиллĕ. Тĕслĕхшĕн «Шăпчăк» ятлă прозăлла сăвва илсе пăхар-ха:

«Ку вырăнта чечекленсе чие пахчи ӳсетчĕ, чие пахчинче кашни каç, кашни ир шăпчăк юрă шăрататчĕ.

Хавасланса тухатчĕ çамрăк хĕр пахчана, лăпкă кӳлĕ хĕррине, шăпчăк юррине итлеме.

Анчах хура инкек килсе çапăнчĕ кĕтмен самантран. Хаяр аслати кĕрлерĕ те, çурăлса вут тухрĕ. Тĕнче тӳпинчен çĕр çине вутлă сăнăсем çума пуçларĕç.

Кĕвви татăлчĕ пахчари сарă кайăкăн, урăх илтеймерĕ çамрăк хĕр унăн илемлĕ юррине. Вара вăл алла ашшĕ пăшалне илсе хаяррăн çапла тупа туса сăмах пачĕ:

– Тавăрăп! Хамшăн та, пурнăçшăн та, шăпчăкшăн та тавăрăп!»

Кунта чие пахчи тăван çĕршыва, шăпчăк савăнăçлă та тăнăç пурнăçа, хаяр аслати вутлă вăрçа пĕлтерсе символлаççĕ.

Вăрçă çулĕсенче аслă çулсенчи сăвăçсем те хăйсен тарăхăвне палăртаççĕ, сăвă-поэма хайлаççĕ. Ç.Элкер «Юншăн юн», «Хаярлăх сăмахĕ» сăвăсем, «Вăл вилĕмсĕр» поэма çырать. Н.Шелепи вара «Тăршшĕ ик метр, урлăш пĕрре – территори кирлĕ Гитлера» ятлă сăвă ылхан хайлать. Унти лирика харкамçи Гитлера халăх мифологийĕнчи тискер сăнарсемпе пĕрпеклетет: этем мурĕ, çĕленсем, юн ĕçенсем, синкерлĕ юн тинĕсĕ... Ытти сăнарсем те халăх ăнлавĕ-сăмахлăхĕпе çыхăннă: вутлă çумăр, чуралăх сăнчăрĕ, ирĕклĕхĕн чаплă çутисем, çумăр пек куççуль, çава тĕпĕ, вилĕм сĕлеки...

Владимир Бараев (1910–1942) 1940 çулта «Али паттăр» ятлă сăвăлла юмах çырса пичетлет. 1941 çулта вăл вăрçа каять, Сталинграда хӳтĕленĕ çĕре хутшăнать, çавăнтах паттăрсен вилĕмĕпе вилет. Поэтăн вăрçă сăввисем оптимизмлă, харкамçă хăйĕн юлташне: «Кил, Суворовла çапар-ха Вилĕм çамкинчен!» – тесе йыхăрать. («Юлташа».) Е вăл К.Симонов сăввин еккипе чăваш хĕрĕнчен хăйне кĕтсе илме ыйтать: «Эс хыттăн кĕт мана, хĕр тантăш, Тăс аллуна, кĕтсе илсем!» («Чăваш хĕрне».)

Уйăп Мишши (1911–1970) – поэзие 30-мĕш çулсен пуçламăшĕнче кĕнĕ сăвăç. Псевдонимне вăл Н.Шелепи ăна галстуклă пионер чухне «уйăп

пĕсехеллĕ» тенĕрен çапла илнĕ иккен! Поэтăн «Çурçĕр çăлтăрĕ» ятлă сăвви (1935–1936) вăрçă умĕнхи поэзин чи паха тĕслĕхĕсенчен пĕри пулса юлчĕ. Сăввăн малтанхи тата вĕçĕнчи икшер йĕрки аллитераципе (пĕр йышши сасăсемпе пуçланакан сăмахсемпе) пуян. Хайлаври харкамçă çĕршывăн чиккине сыхлать. Çĕнĕ çул каçĕ вĕсем савнийĕпе йĕлтĕр çине тăрса «вăрман тăрăх вĕçтереççĕ». Кунта пейзажпа юрату лирики гражданла лирикăна çаврăнаççĕ, вĕсенчен хăшĕ ытлараххине палăртма та хĕн. Çурçĕр çăлтăрĕ – харкамçă савнийĕн символĕ. Ăна вăл кирек хăçан та, кирек ăçта пулсан та курма, савнийĕпе çӳренĕ самантсене аса илме пултарĕ.

1943 çулта Уйăп Мишши «Малалла, хĕвел анăçнелле!» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларать. Поэт хăйĕн сăввинче тăшмана сывлăш çавăрма памасăр хăвалама йыхăрать, ăна аркатма, çунтарма чĕнет. «Фронтри туссене» хайлавра автор чăваш çыравçисене çĕнтерӳпе таврăнма ыйтать:

Таврăнăпăр тăван Шупашкара.
Вутра çуралнă сăввăмăрсене
Ун чух кăларса хурăпăр вара
Çуратнă халăх-йышăмăр умне.

Кĕçтук Кольцов (1916–1943) вăрçа унăн малтанхи кунĕсенчех ăсаннă, Карели фронтĕнче пулнă, йывăр аманса госпитальте вилнĕ. «Карели фронтĕнчен» сăвва поэт вилес умĕн икĕ уйăх маларах хайланă, унта вăл тăшмана чăваш юмахĕсенчи сăнарсемпе (пуçне татнă çĕлен, çăхан) калăплать. «Лирикăллă калаçури» харкамçă тăван енĕшĕн тунсăхлать, ăна вăл юмахри пек сăваплăн курать. «Кĕт мана» ятлă сăвви (ăна вăл вилес умĕн темиçе кун малтан хайланă) вара К.Симоновăн «Жди меня» хайлавĕпе пĕр кĕвĕллĕ, çав хушăрах вăл питĕ чăвашла:

Кĕт мана, кĕт, çĕмĕрт куçлă хĕрĕм,
Сан пата эп пурпĕр çаврăнап.
Ахаль мар калаççĕ: «Пурнăç йĕрĕ
Вăл çăка çулçи пек çаврака»...

Сăвва автор çапла йĕркесемпе вĕçлет:

Кĕт мана, кĕт, мăкăнь питлĕ хĕрĕм,

Çĕмĕртсем шап-шурă вăхăтра!..

Чăваш поэчĕсенчен вăрçăра Иван Викторов (1901–1944), Марк Аттай (1905–1942), Илья Думилин (1911–1942), Максим Ястран (1916–1942), Василий Васькин (1917–1942) т.ыт.те пуçĕсене хураççĕ. Вĕсем хăйсен сăввисене Тăван çĕршыв тăшмана çĕнтерессе шанса, ĕненсе çырнă. Хăйсен паттăрла ĕçĕсемпе вĕсем ĕмĕрлĕхех халăх асĕнче юлчĕç.

Усă курмалли литература

Хусанкай А. Кĕрле, пăлхавăрлă сăрнайăм! / Митта В.Е. Çак юрра эп ахаль мар юрларăм: Сăвăсем, куçарусем. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1990.

Митта Вăçлейĕ. Çырнисен пуххи. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2004 (I т.), 2005 (II т.).

Янкас Н. Телейлĕ çул. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1985.

Воронцов Г.И. Иван Ивник. Пурнăçĕпе пултарулăхĕ. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1982.

Чăваш совет литератури. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1972.

ÇЕМЕН ЭЛКЕР (1894–1966)

Кĕрхи çăлтăр

Ç.Элкер куçне ĕмĕрлĕхех хупсан П.Хусанкай унăн тупăкĕ умĕнче çапларах сăмахсем каланă:

Чăваш çăлтăрĕсем яп-ялтăр,

Шултраланаççĕ кĕрхилле:

Ав Кĕвенте, Ала, ав Алтăр...

Çӳлте те пурнăç çĕртилле!

Эс ху та çăлтăр хушаматлă,

Пĕр ярăм çăлтăрччĕ: Элкер!..

Каятăн... Çут тĕнче – самантлăх,

Çĕртен шăтса çĕрех кĕрер.

(*П. Хусанкай*, 1966)

Сăнанă-и эсир кĕрхи тӳпене çĕрлесенче? Вăл яп-янкăр та тăп-тăрă. Çăлтăрсем шултăра, куçĕсене чарăлтарсах пăхаççĕ çĕр çине.

Тăрăлăх. Тасалăх. Вĕçсĕрлĕх. Вилĕмсĕрлĕх.

Унталла та кунталла тӳп-тӳрĕ йĕрсем çуталса тĕссĕрленеççĕ. Çăлтăрсем ӳкеççĕ. Сӳнеççĕ. Вилеççĕ.

Самантлăх. Уçăлми куç хупкăмĕ...

Ман умра Ç. Элкерĕн вилес умĕн çаптарнă сăн ӳкерчĕкĕ выртать. Кĕрхи кунсенче ӳкерттернĕскер. Юлашки. Поэтăмăр сулхăн пӳлĕмрен хĕвеллĕ урамалла тинкерет. Унăн куçĕсем тĕмсĕлнĕ, шухăшĕпе вăл вĕçсĕр тӳпере ярăнать, тен, аса илӳ авăрне чăмнă. Кĕрхи Элкерĕн кĕрхи шухăшĕсем. Кĕрхи çăлтăрăн ӳксе çуничченхи пĕр саманчĕ. Çĕр хăвачĕ хăй патне туртса илнĕ самант. Çĕре тавраăнас умĕнхи курăм. Кăвак хуппи пек хăналăх хапхи хыçа юлнă самант. Умра тăрă тасалăха, вĕçсĕр вилĕмсĕрлĕхе çитерекен çул выртать. Умра – Сĕт кӳлĕ...

* * *

Чăн-чăн Элкере эпир паян кунччен те пĕлместпĕр-ха. Унăн пултарулăхне хăрах енлĕн кăна çутатнă, çыравçăн официаллă сăн-сăпатне гипсланă. Элкерĕн «Шурăм пуç килсен» е «Вăрçă кунĕсем» çеç мар, унăн «Хурапа шурă» повеçĕ те, хăй вăхăтĕнче пичетленмен сăввисемпе аса илĕвĕсем те чылай. «Хĕн-хур айĕнче» поэмăн темиçе варианчĕ (редакцийĕ) упранать. Пĕринче Чаккана революционер пек кăтартнă, тепринче вăл – чăваш халăхĕн патриочĕ. Кун кĕнекинче çырнисемпе çырусем çыравçăн чун-чĕрине тарăнрах туйма, унăн ĕмĕт-тĕллевне тĕрĕсрех ăнланма пулăшаççĕ.

Мĕнлерех çутăлнă-ши поэзи тӳпинчи Элкер çăлтăр? Мĕн канăççăрлантарнă поэтăмăра, ăçта шыранă çăлăнăç? Мĕншĕн хĕнпе хур, хурапа шурă? Мĕншĕн вăл урăхла мар, Элкерле çырнă, тата мĕнре палăрать çав стиль?

Вун-вун ыйту çăмхаланать, çиппин вĕçне тупма ыйтать...

Хĕлхемрен хыпнă вут. Çĕнĕ вăхăтри çутлăх Анăçран Тухăçалла куçса пыни паллă. Çавăнпа та чăвашра вăл чи малтан Сăр шывĕ тăрăхĕнчи ялсене çитсе кĕрет. Хĕрлĕ Чутайпа Етĕрне хутлăхĕнче чăвашран та вĕреннĕ çынсем тухма пуçлаççĕ, вĕсенчен паллăраххисем словарь тăвас, кĕнеке куçарас ĕçе пуçăнаççĕ (Ермейпе Григорий Рожанскисем, Петр Талиев т. ыт. те).

XIX ĕмĕрĕн 40–60-мĕш çулĕсенче чăваш çутлăхĕн тĕп пайăрки Çавал тăрăхне çитет. Халĕ тури чăвашсемпе харăс çав ĕçе анат енчисем те хастар хутшăнаççĕ (М. Дмитриев, Г.Филиппов). Çав юхăм пуçĕнче малтан В. Вишневский, каярах Н.Золотницкий тăраççĕ. Çав çулсенчех Н.Ильминскин мăсăльман тĕнĕпе кĕрешекен вĕрентӳ системи йĕркеленсе пырать, вăл чăваш хушшинче 70-мĕш çулсенче анлăн сарăлать. Чăваш ĕçĕн пуçне И. Яковлев тухса тăрать. Çав тапхăрти чăваш çутлăхĕ анатрисен хăвачĕ-хевтипе аталанать.

Çырулăхăмăрпа культурăмăр аталанăвне тăрăхсем çине уйăрса пăхни традици пĕлтерĕшне ытларах курма май парать. Хĕрлĕ Чутай тăрăхĕнче авă çапларах çыхăну пур: Рожанскисем – Н.Базилевский – В.Лебедев. Етĕрне – Шупашкар хутлăхĕнче: Петр Талиев – В. Громов – Чăваш Хвети – С. Михайлов (Янтуш)... Пăва тăрăхĕнче: И.Яковлевпа унăн вĕренекенĕсем т. ыт. те.

Çакăн пек тепĕр пĕлтерĕшлĕ тăрăх вăл Кушлавăш уйĕ, Ç.Элкерĕн тăван енĕ. Кунта çутлăх ĕçĕ 1865 çулта Кушлавăш чиркĕвне ĕçлеме Иван Петрович Оточев (1837–1876) пуп куçсан пуçланать. Вăл 1860 çултан пуçласа Хусанта тĕн семинарийĕпе училищинче чăваш чĕлхине вĕрентсе пурăннă, Н. Золотницкипе çывăх туслашса кайнă. Каярах, священника тухсан, Кушлавăш тăрăхĕнчи чăваш ачисене вĕрентме пуçăнать. Унăн чи юратнă вĕренекенĕсем Пĕчĕк Упакасси каччи Митрофан Дмитриев тата Хураçырма хĕрĕ Ксения Тимофеева пулнă. Кĕçех М.Дмитриев хăйсен ялĕнче шкул уçать, таврари чăваш ачисене тăван чĕлхепе вулама-çырма вĕрентет. Çав шкула Ç.Элкер ашшĕ – В.Федотов – та çӳрет.

И.Оточев Кушлавăш тăрăхне илсе çитернĕ хĕлхем çамрăк чăвашсен чĕрине чĕртсе вутлантарать, çутлăх ĕçне кӳлĕнтерет. М. Дмитриев каярах паллă музыкант-педагог ятне тивĕçет, вăл К.Тимофеевăпа пĕрле чăвашсен малтанхи профессилле музыкантне И.М. Дмитриева (вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ĕçленĕ, Ф. Павловпа С. Максимов композиторсене, А. Букаревăпа К. Эсливанова юрăçсене анлă çул çине кăларнă) çитĕнтерет, Д. Филимонова тата ытти чăваш ачисене çутлăх ĕçне кӳлĕнме пулăшать.

Ç.Элкер ашшĕ хресчен ĕçне пăрахман пулсан та хăй вăхăчĕшĕн вĕреннĕ те мал туртăмлă чăваш пулнă. Çакна эпир вăл Н.В. Никольский патне янă çыруран та куратпăр. Унта çапла çырнă: «Эй, тăвансем, эпĕ сирĕнтен сăмах ыйтасшăн, каласа парăр-ха мана, тархасшăн. Акă çапла эсир 1908 çулхи календарь çине çырса янăччĕ, вăл 56–62-мĕш страницăсем çинче, томас-шлакпа, фосфорапа, селитрăпа çĕре çемçетесси çинчен çырса янăччĕ, томас-шлакпа тырă лайăх пулать тесе çырнăччĕ эсир, мĕнле вăл пĕр çуллăха анчах тырă лайăх пултарать-и? Çав япаласене эпир çырса ярса илесшĕн, тулĕккĕ çтан илмелли адресне пĕлместпĕр. Халь эпир первай проба илсе акса хăварасшăн, вара ăна кура, тырăсем лайăх пулсан, тата нумайтарах çырса илме пултаратпăр. Тата пирĕн çĕрсем пĕр пек мар, тăмлă çĕр, хăйăрлă çĕр, хура тăпраллă çĕрсем пур пирĕн, çакă тĕрлĕ çĕрсене пурне те çемçетет-и вăл, çавсене çырса ярăр. Пирĕн кăçал кунта, çитменнине, ыраш калчисем начар юлчĕç». Çемен Элкерĕн пиччĕшĕ Егор Васильевич çырăва çапла вĕçлет: «Тата ыйтам сирĕнтен: чăвашла газет кăларма май çук-и сирĕн? Эсир пĕр вăхăтра кăларнăччĕ, халь ма пăрахрăр, цензор хушмасть-им чăвашла газет çапма? Тата поляксем, грузинсем, нимĕçсем валли ма газетсем кăларма чармаççĕ, пирĕн чăвашăнне ма чараççĕ?»

Çапла вара, пулас çыравçăн кил-йышĕ «Хыпар» хаçата та, чăваш календарĕсене те тăтăшах вуласа тăни, хресчен ĕçĕнчи çĕнĕлĕхсене асăрхама тăрăшни иккĕленӳсĕр. В.Федотов хăйĕн ачисене чăвашлăх туйăмĕ парса çитĕнтернĕ. Чăваш хаçатне кăларма мĕншĕн чараççĕ тени те хăй вăхăчĕшĕн

хăюллă ыйту пулнă. Ç.Элкер мĕн ачаранах чăваш кĕнекине тата халăхăмăра юратса çитĕннĕ теме пултаратпăр. Ахальтен мар вăл 1917 çулта «Хыпар» хаçатра чĕлхе, вĕрентӳ ыйтăвĕсене хускатса хĕрӳ статьясем çырать, халăхăмăр пуласлăхĕ çинчен шухăшласа чĕрине çунтарать. Çав ăшри вут унăн мĕн юлашки сывлăшĕ тухичченех упранса юлма пултарнă, П.Хусанкая тата ытти çыравçăсене чăвашлăхшăн çунма йыхăрнă.

«Хĕн-хур курса пурăнтăмăр...» Ç.Элкер 1917 çулта çапла çырать: «Эх! Эпир чăвашсем вырăспа тутар хушшинче авалтанах хурлăх, хĕн-хур курса пурăнтăмăр, хамăр сикмен пиркиех каллех юлатпăр вĕсен ури айне. Вĕсем вĕренеççĕ, çуталаççĕ, эпир çаплипех пурнăпăр, кайран каллех пиртен кулма пуçлĕç...»

Ç.Элкер пултарулăхĕнче «хурлăх», «хĕн-хур» сăмахсем яланах тĕпре темелле. Çав хушăрах ку ăнлавсен пĕлтерĕшĕ уншăн тĕрлĕ тапхăрта тĕрлĕрен пулнă. Вун ултă çулта вăл, авă хăй вĕренме каяйманнине хуйхă вырăнне йышăнать. Çав хушăрах килĕнчи лашана вăрлани те уншăн пысăк хуйхă.

Тепĕр ултă-çичĕ çултан, тĕнче вăрçи вучĕ витĕр тухсан, Ç.Элкерĕн хĕн-хурĕ – тыткăнри салтак инкекĕ:

Çиме начар панăран,
Ĕçĕ ытла йывăртан
Тыткăнри çын тӳсеймест:
Вăй-хал кайса вăл чирлет,
Хĕн-хур курать е вилет...
(«Тыткăнра»)

1917 çул тĕлнелле Ç.Элкер уйрăм çын хуйхи çинчен мар, тăван халăхăмăр шăпипе телейĕ çинчен шухăшлама пуçлать. Пур халăх та чĕрĕлет, чăмăртанса пĕрлешет, ирĕклĕхшĕн кĕрешет. Çак ĕçре чăваш мĕншĕн çывăрса юлать? Ĕлĕк ытти халăхсем чăвашсенчен вĕсем сахаллине тата тĕттĕммине кура мăшкăлланă. Эппин – вĕренмелле, çĕнĕ шкулсем уçмалла, пуçсене çĕклесе çут çанталăка йĕри-тавра пăхмалла! Вара тин тĕттĕм чăваш хĕн-хур курма, хăйĕнчен мăшкăллаттарма пăрахĕ.

Ç.Элкер чăвашсене вырăссем хĕсĕрлесе пурăннишĕн вĕсене тавăрма чĕнмест: «Вĕсем çапла пиртен хĕсĕрлесе-мăшкăлласа кулнисене эпир часах манаяс çук, анчах çавах та вырăссемпе те, тутарсемпе те малашне ĕлĕкхине ас туса, вĕсем çине çилленсе, вĕсемпе çапăçса-вăрçса пурăнас мар! Яланах пуринпе те килĕштерсе пурăнма тăрăшар!!! Пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăннине нимĕн те çитес çук».

Ç.Элкер хăйĕн пĕрремĕш историлле поэмине чи малтан «Хĕн-хур айĕнче» мар, «Айăпсăр таркăн» ят пама шутланă. Çакă вăл поэмăн шухăшласа хунă тĕп шухăшĕнчен килнĕ. Чаккан пĕр айăп çук çинчен (Пахомка йышшисем айăпа кĕрсе таркăна тухнă) таркăн пулса тăма тивет. Мĕнпурĕ те вырăс тӳре-шари юлашки тире сĕвиччен пусмăрланăран, вырăсран тухнă вăрă-хурах инкек кăтартнăран.

Поэмăри сăмах наци ирĕклĕхĕ çинчен, чăваш хресченĕн (хутла пĕлменскерĕн) вырăс тиек-пурмисĕн куçĕнчен пăхса пурăнма тивни çинчен пырать.

Ку вăл малтанхи вариантра. Каярах поэтăн конфликта социаллăх еннелле ытларах та ытларах куçарма тивнĕ, çакă вара наци танмарлăхĕ, ютшăнăвĕ çинчен çырнисене кăларса пăрахма хистенĕ. Тĕслĕхшĕн çавăн пек кăларса пăрахнă пĕр çаврана илсе кăтартар (вăл 1925 çулта тухнă вариантра пичетленнĕ):

Çак икĕ халăх часах пĕрлешмен,
Сĕм вăрман витĕр сукмак та хуман,
Пĕр-пĕрин патне кайман, çӳремен,
Ютшăнса тăрса пĕрле пурăнман.

Икĕ халăх пĕр-пĕринчен ютшăнни çинчен калани 1930 çулти тата кайранхи ытти вариантсенче те çук.

Тепĕр тĕслĕх. Малтанхи вариантсенче Пахом çыннисем Чакка патне пырса кĕрсен унран ĕçмелли-çимелли ыйтаççĕ, хăратса та илеççĕ. Эппин, вĕсем чăваш ялне çаратма (чухăнне е пуянне – вырăс халăхĕсемшĕн пурпĕ-

рех) пынă. Юлашки вариантра Пахом çыннисем яла Чаккана хăйсен енне çавăрма, ăна пулăшма пынă иккен.

Çапла вара, «Хĕн-хур айĕнче» поэмăн тĕп идейи икĕ сийлĕ: малтанхи тата кайранхи. Малтанхин тĕп шухăшĕ чăваш наци пусмăрĕн тата унăн ирĕклĕхĕн ыйтăвĕсем тавра явăнать. Каярах çав шухăша автор социаллă пусмăра тата класс кĕрешĕвне вăйлатса тĕссĕрлетнĕ. Сăлтавĕ вара 30-мĕш çулсенче парти классен кĕрешĕвĕ (çыравçă кирек хăш вăхăта çырса кăтартсан та) яланах тĕпре тесе вĕрентнинче.

Çав çулсенче чылай поэтăн икке пайланма тивет: пĕрне официаллă пичет валли çырмалла, теприне – хăйĕн хыпнă чунне пусарма. П.Хусанкай авă Сталина мухтаса çырнă хушăрах вилĕмсĕр «Тилли юррисем», «Юлашки пăлхар» поэма хайлать, унта вăл Турхан Энтри ячĕпе революцие сивлет, мала наци идейине кăларса тăратать.

Ç.Элкерĕн чăн поэзийĕ те вăхăтра кун çути кураймасть. Поэт ытларах çут çанталăка туртăнать, йывăр самантсенче, Чакка пек, вăрмана тарма кăмăллать:

Тухатăп та утатăп,
Вăрмана та пыратăп;
Ирĕкри уç сывлăша
Çăтатăп çеç хам ăша.
(«Çăлăнăç», 1919)

Çавăн пек ирĕклĕх тупса поэт хăйне каллех ыррăн туять, çĕнĕ сăвăсем хывать.

Официаллă идеологи аслăрах çулсенчи çыравçăсене епле пулсассăн та хăйĕн майлă çавăрасшăн пулнă, хăй хушнипе юрлаттарма тăрăшнă. Вырăсра М.Горькипе çапла хăтланнă, чăвашра – Н.Шелепипе тата Ç.Элкерпе. Революциччен чипер сăвă-поэма хайлама пултарнă Шелепи куççăр кăна мар, поэзи сассисĕр те тăрса юлать. Элкертен вара «çĕнĕ пурнăç юрăçи» туса хураççĕ. Шел, поэтăн мăнкăмăллăхĕ çителĕксĕр пулнă, хăйне вăл вĕренмен

çын вырăнне хунă, çавна май «нумай вĕреннĕ» идеолог-критиксене ĕненнĕ, вĕсем каланине итленĕ.

Ç.Элкер мухтав юррисем çырассинчен çут çанталăка кăна мар, халăх сăмахлăхне те тарнă. Чылайăшĕ ăнăçлă пулса тухнă, çапах та вĕсене пурне те пичетлеймен поэт («Сахрун мучи калавĕсем» т. ыт. те). «Выçлăх аллинче» поэма та кун çути курайман, мĕншĕн тесен унти тĕп герой выçăпа вилни критик-цензорсене çырлахтарма пултарайман.

Официаллă хутсенче Ç.Элкер «чухăн хресчен» ывăлĕ шутланнă, чăннипе вара вăтам хресчен кил-йышĕнче çитĕннĕ. Çыравçа çакăншăн айăплама кирлĕ мар. Вăл кăна мар-çке, Ф. Павлов та хăй Кушлавăш чиркĕвĕнче юрланине пытарнă. Унсăрăн совет органĕсенче ĕçлеме май килмен-тĕр. Самани çапла пулнă, пытарăнчăк пулма хистенĕ.

Куртăмăр ĕнтĕ, поэтăмăрăн кун-çулĕпе пултарулăхĕ эпир пĕлнинчен чылай кăткăсрах та нумай енлĕрех. Çакă вăл сăвăç «хурлăх», «хĕн-хур» сăмахсене тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕрен пĕлтерĕш панинчен те аван курăнчĕ.

«Ху чĕлхӳне ан хурла!..» – тесе ят панă Ç.Элкер 1917 çулта «Хыпарта» пичетленнĕ пĕр статйине. Унта вăл çапла калани пур: «Кам хăй чĕлхине юратмасăр унтан йĕрĕнсе тăракансене Турă та юратмĕ, ун пек халăхсем Турă умĕнче те, ытти халăхсем умĕнче те малалла каяймĕç, вĕсем пурăннăçем пĕтсе çĕр çинчен çухалсах пырĕç...» Е поэтăн тупăкĕ умĕнче П.Хусанкай каланă сăввăн тепĕр икĕ çаврăмне илсе пăхар-ха:

Эс канăçсăрччĕ. Кансĕрлеттĕн.
Мĕн кирлĕ пулнă? – Хушăн мар:
Эс халăх кăмăлне пĕлеттĕн,
Чăвашшăн сапрăн шĕл кăвар.
Çав шĕл кăвар – чăваш сăмахĕ,
Чечен чĕлхе – чăваш чĕлхи.
Вăл упрансассăн – хам хамах эп,
Упранмасан – эп çын мĕлки...

Пирĕн пек ют халăх патшалăхĕнче пурăнакан халăхсен чĕлхе ыйтăвĕ яланах тĕпре тăнă. Официаллă чĕлхе тăван чĕлхе мар пулсассăн атте-анне чĕлхин сумĕпе пĕлтерĕшĕ чылай кая юлать, вăл кил-йышра усă курмалли чĕлхерен çӳлерех çĕкленеймест.

Чăвашăн тепĕр инкекĕ вăл чĕлхене (йăла-йĕркепе çи-пуçа та) тĕнпе çыхăнтарса пăхнинче. Чăн чăваш тĕнĕпе пурăнакансем, енчен те вĕсем тутар тĕнне уяма пуçларĕç пулсан, тутарла кăна каласма пуçланă. Чăваш тĕнĕ – чăваш чĕлхи, тутар тĕнĕ – тутар чĕлхи. Çак принципа пула чылай чăваш тутара тухса пĕтнĕ, пуçне хыртарса тӳпеттей тăхăннă.

Чăваш хушшинче вĕреннĕ çынсем курăна пуçласан çак чир татах та шалалла кайнă: вырăс тĕнне кĕнĕ вĕреннĕ чăваш хăвăртах вырăсланса кайнă, чăваш ĕçĕнчен пăрăннă, ачи-пăчи вырăс пулса çитĕннĕ. Паянхи кун, ял чăвашĕ хулана-мĕне йышлăн куçнă тапхăрта, çак чир хула халăхĕ хушшинче те сарăлчĕ, халăхăмăр пĕтсе ларасси патне илсе çитерчĕ.

Ç.Элкер çак хăрушă чире 1917 çултах асăрханă. Тĕрĕссипе ку тĕлĕшпе вăл К.Иванов шухăшне малалла тăсаканĕ пулнă. Аса илер-ха вилĕмсĕр «Нарспи» авторĕн «Хальхи самана» ятлă пĕчĕк поэмине:

Анчах чăваш хушшинче
Чунĕ хытнă çынсем те
Тапаланма пуçларĕç,
Тăрса çапла каларĕç:
«Чаплă вырăн тупасчĕ,
Часрах улпут пуласчĕ».
Тĕрлĕ çутă тӳмешĕн
Тĕнки тухать ав лешĕн;
Чăвашла та каласмасть,
Тăванне те астумасть...

Ç.Элкер те вĕреннĕ чăваш çынни чăвашла каласманшăн чунтан пăшăрханать. Ун шучĕпе, хăйсен чĕлхине, хăйсен тăван халăхне питĕ хисеплесе юратакансем кăна ытти ют халăхсене хăйсенчен мăшкăллама памĕç. «Ху чĕлхӳне ан хурла!» – тет вăл кашни чăваша чĕлхе ячĕпе пĕр пулма чĕнсе. Ку тĕлĕшрен Ç.Элкер Çеçпĕл Мишшинчен маларах вăраннă, наци идейипе Октябрьти революцичченех çунма пуçланă (каярах, 1921 çулта, Çеçпĕл Ваçанкка патне «Чăваш чĕлхи ячĕпе пурте пĕр пулар!» тесе çырать).

Наци идейи тенĕрен Ç.Элкерĕн 60-мĕш çулсен пуçламăшĕнче хайланă икĕ çавраллă сăввине аса илни вырăнлă. Унта çыравçă хăйĕн пурнăç тĕллевне аван кăтартса панă. Кирек ăçта ĕçленĕ, кирек хăш жанрпа çырнă пулсассăн та унăн яланах пĕр тĕллев – чăвашлăха çĕклесси («Ĕçленĕ хĕрĕх çул таран Чăвашлăха савса чунтан») – пулнă.

Çав чăвашлăхшăнах Ç.Элкере 30-мĕш çулсенче айăплама пăхнă. Тĕслĕхрен, 1938 çулта пĕр критик поэт çинчен элеклĕ статья çырса «Красная Чувашия» хаçата, МГБ тата ВКП(б) чăваш обкомне çитерет. Çав çăхаври хăш-пĕр йĕркесемпе паллашар-ха: «... С.Эльгер на всем протяжении своей «деятельности» только и делал, что рьяно защищал буржуазных националистов. Этого-то он тщательно скрывает от партии и советской общественности... Давно пора разоблачить этого махрового националиста и «литератора» С.В.Эльгера, ибо он своим «творчеством» приносит непоправимый вред социалистическому строительству».

Çакăн пек çăхав хыççăн пуç илерен (ссылкăран) хăтăлса юлма ун чухне май пулман-тăр. Çав хушăрах чăваш идеологĕсене пĕр япала хăратнă: ватă çыравçăсем хушшинче тĕслĕх илмелли çын юлманни, чăваш Горькийĕ çукки.

Çав лару-тăрура Ç.Элкерĕн икĕ çул пулнă: е тĕрмере çĕрмелле, е пуç илерен хăтăлса официаллă идеологсен читлĕхĕнчи «сар кайăк» вырăнне йышăнмалла. Пĕрремĕш çулĕпе кайма çамрăклăх вăй-халĕ те, çирĕп ĕненӳпе мăнаçлăх та сахал мар кирлĕ-çке! Элкер ун чухне хĕрĕх тăваттăри вăрçă инваличĕ, икĕ ача ашшĕ пулнă. Тата çамрăк П.Хусанкай тĕслĕхĕ те мĕне тăрать. Вăл, репрессирен хăтăлса юлнăскер, мухтав сăввисемпе пĕр вăхăтрах вилĕмсĕр «Тилли юррисем», «Юлашки пăлхар» тата ытти ăнăçлă сăвă-поэма хайлама пултарнă. Ç.Элкер иккĕмĕш çула суйласа илет. Чи малтанах ăна хистесе статья çыртараççĕ, унта вăл хăш-хăш çыравçа мĕншĕн репрессилени çинчен каласа кăтартать. Ку вăл ватă поэтăн сăмахĕ пулнă, халăх ăна лайăхрах ĕненме пултарнă. Çавăн чухне çырнă сăмахсемшĕн поэт кайран мĕн виличчен ӳкĕнсе пурăннă, хăйне айăплă тесе шухăшланă.

Ç.Элкер суйланă çул вăхăтлăх компромисс çулĕ пулни халĕ пире пачах та иккĕлентермест. Çапла, «Хĕн-хур айĕнче» поэмăна класс кĕрешĕвĕ кĕртнĕ вăл, вăйсăр вариантсем çырнă. Çапла, «Шурăмпуç килсен» роман, революципе класс кĕрешĕвне мухтакан ытти сăвă-калав хайланă. Ун чухне пурте çапла çырнă, урăхла çырма вара майĕ те пулман. Çав хушăрах наци идейинчен пĕрре те хăпман поэт. Ку туйăм унăн ят-сум илсе пынă майăн вăйлансах пынă, вăхăтăн-вăхăтăн çиеле тапса тухнă.

50-мĕш çулсен вĕçнелле писатель пултарулăхĕнче тепĕр хут «кăвак хуппи» уçăлать. Çыравçă «Хурапа шурă» повесть çырать, малтан кăларма май килтереймен сăввисене çĕнетсе пичетлет. Çав çулсенче вăл чăваш чĕлхипе культурин пуласлăхĕ пирки хытах пăшăрханать.

60-мĕш çулсен пуçламăшĕнче наци интеллигенцийĕ хăюллăрах пулма пуçлать, наци политикинчи хăш-пĕр ĕçсене уççăнах сивлеме пăхать. Çак ĕç пуçне интеллигенци шур сухалĕ Ç.Элкер тăрать, официаллă идеологсене «канăçсăрлантарма» (П.Хусанкай) пуçлать. Паллах, ун пеккисене нихăçан та пуçран шăлман, ята-сума та пăхса тăман. Ку хутĕнче те парти обкомĕ халăхăмăрăн поэтне вырăна лартма тата унăн çăварне хуплама васкать: парти конференцийĕнче Элкере хытах айăплаççĕ, национализмпа сехрене хăпартаççĕ. Шиклĕрех çыравçăсем «кĕрĕк пĕркенме» васканă, Ç.Элкертен пăрăнса çӳреме тăрăшнă, вăл çырнисене пичетлеме пăрахнă. Хута кĕрекенсем те пулман мар. Кунта чи малтан П.Хусанкай ятне асăнмалла. Вăл Элкерĕн обкома янă çырăвĕсене нумайлатса çыравçăсем, ытти творчество çыннисем патне çитерме хăраман, ватă поэтăмăра хӳтĕлеме чĕннĕ. Каярах çак ĕçе С. Шавли, Хв. Уяр тата ытти хастар çыравçăсем хутшăнаççĕ.

Çапларах лару-тăрура иртнĕ поэтăмăрăн юлашки çулĕсем (вăл 1966 çулхи авăн уйăхĕнче çĕре кĕрет). Чĕлхемĕре хӳтĕлесе, культурăмăр пуласлăхĕшĕн чунтан пăшăрханса уйрăлнă вăл пирĕнтен. Тӳре-шарашăн вăл канăçсăрлантараканĕ тата кансĕрлекенĕ пулсассăн, хура халăхпа

интеллигенцишĕн яланах пулăшаканĕ, малта пыраканĕ пулса юлчĕ. Пирĕншĕн вăл – наци çăлтăрĕ, идеал енне çул кăтартаканĕ.

Сăмах, поэзи, сăмахлăх. Тухăçпа Анăç литературисене тĕплĕн тишкернĕ ăсчахсем мĕнпур классикăлла литература илемлĕ ăнĕн (художественное сознание) виçĕ пысăк тапхăрне тӳссе ирттернĕ теççĕ. Пĕрремĕш тапхăр – архаика тапхăрĕ. Ун чухне илемлĕх ăнĕ мифопоэтикăллă пулнă. Çав сăмахлăхшăн автор та, жанр категорийĕ те ют. Сăмахăн пĕлтерĕшĕ синкретикăллă пулнă, унăн илем пĕлтерĕшĕ ытти пĕлтерĕшсенчен уйрăлса çитеймен-ха.

Иккĕмĕш тапхăра традици е норма тапхăрĕ (традиционалистская эпоха) тесе палăртаççĕ. Çакăн чухне стиль виçисем çирĕпленеççĕ, вĕсем жанр категорийĕсем урлă нормăланаççĕ. Хайлав авторĕ паллă пулсассăн та чи малтан вql канон тасалăхĕшĕн тăрăшать, унăн хăй евĕрлĕхĕ илемлĕх мелĕсен çĕнĕлĕхĕнче палăрать.

Çак традици тапхăрĕн юлашки çăвăр тапхăрне те палăртаççĕ (Тухăç литературисенче вăл пачах та пулман, Анăç литературисенче вара XV–XVIII ĕмĕрсенче чечекленнĕ теççĕ). Унăн тĕп палли – стиль категорийĕпе тан жанр категорийĕ çирĕпленсе çитни. Халĕ ĕнтĕ литература материалĕ те, стиль те жанртан тухать, хайлав поэтики те ăна кура йĕркеленет.

Виççĕмĕш тапхăр Европăра XVIII ĕмĕрте, хăш-пĕр Тухăç литературисенче (Анăç литературисен витĕмне пула) XIX ĕмĕрте пуçланать теççĕ. Çав тапхăрта литературăра илемлĕ ăнăн историлле типĕ вăй илет, вăл историзм принципне, индивидуаллăха тĕпе хурать. Çакăн йышши текстсенче тĕпре стиль е жанр мар, автор хăй тăрать. Литературăра романтизм е реализм пулăмĕ вăйланса пырать.

Тĕнче литературисем тӳссе ирттернĕ çак виçĕ тапхăр витĕр чăваш литератури еплерех тухнă-ши? Пирĕн çыруллă литература питех те çамрăкне пула, тен, вăл тĕрлĕ илемлĕ ăна активсе те курайман?

Тĕпчевçĕсем çакна палăртаççĕ: халăх сăмахлăхне тĕплĕнрех пĕлекенсем çыруллă литературăмăра япăхрах чухлаççĕ, вулама юратакансем вара

фольклорпа (сăмах вĕççĕн çӳрекеннипе, кĕнекесенчи текстсемпе мар) туслах мар. Чи кăсăкраххи вара поэзипе проза хушшинчи: халăх поэзийĕ халăх прозипе мар, çыруллă поэзипе пĕр çыхăра тăрать иккен, халăх прози те ытларах çыруллă проза енне туртăнать.

Мĕн çинчен калать-ши çакă? Пĕрремĕшĕнчен, фольклорпа литература питĕ тачă çыхăнура пулни çинчен, вĕсен уйрăм жанрĕсем пĕр-пĕринпе çывăхланни çинчен. Иккĕмĕшĕнчен, фольклор-литература (урăхла ăна сăмахлăх е сăмахлă культура тетпĕр) пĕрлĕхĕнче чи пысăк ушкăнсем фольклор тата литература мар, поэзи тата проза иккен. Каярах кăна вĕсем халăх поэзийĕ тата çыруллă поэзи çине пайланаççĕ.

Çакăнта çырса кăтартнă курăм, тĕпрен илсен, хресченсемпе рабочи-служащи хушшинче сарăлнăскер. Интеллигентсем вара çакнах кăштах урăхла, Европа çыннисемлерех, ăнлантараççĕ. Яланах çапла ăнланнă-ши вĕсем?

XIX ĕмĕрте тата XX ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш интеллигенцийĕ фольклорпа литературăна пĕр-пĕринчен уйăрсах кайман, вĕсене пĕрлĕхре курнă теме май пур. Çав тапхăрта халăх прозине сăвăласси анлăн сарăлать. Каярах ку ĕçе Ç.Элкер те кăмăлласа пăрахать. Малтан вăл халăхăмăрăн йăлийĕрки çинчен каласа панине сăвăлать («Сахрун мучи калавĕсем»), унтан истори халапĕсемпе юмахсене, мифсене сăвăласа пичетлет («Улăп», «Тăрнаккайпа тăрнасем», «Çĕвĕç Йăван», «Селтти» т. ыт. те).

20–30-мĕш çулсенче литературăмăрта тепĕр туртăм – фольклорпа литературăна хирĕçлетсе пăхасси вăй илет. Пролеткультçăсем классен кĕрешĕвне тĕпе хурса халăх сăмахлăхне пуçĕпех сивлеççĕ, унпа усă куракансене хаяррăн тапăнаççĕ. Тĕслĕхрен, вĕсем А.Милли литература ушкăнĕ валли çырнă устава та аваллăха, фольклора тĕпе хунă тесе сивленĕ, ушкăнне аркатса тăкнă. Сăмах май каласан, çавăн чухне Ç. Элкер А. Миллипе пĕрле пулнă. «Канаш» хаçатра ĕçленĕ пирки çеç унăн канашçăсене хирĕç кайма май килмен.

Репресси çулĕсенче *сăмахлăх* (словесность) ăнлава хытах сивлеççĕ, манăça кăлараççĕ. Халĕ пирĕнтен чылайăшĕ сăмахлăх тесен чи малтан фольклор пĕлтерĕше аса илет. Чăннипе вара сăмахлăх вăл фольклор тата çыруллă литература тексчĕсенчен тăрать. Чăваш сăмахлăхĕнче вĕсем пĕр-пĕринпе пачах та хирĕçмеççĕ. Литературăмăр пирĕншĕн Çĕнĕ вăхăт ачи пулсассăн, халăх сăмахлăхĕ вара темиçе сыпăкри аслашшĕ-асламăшĕсене пĕрлештерсе тăрать. Эппин, çав ача – ваттисен тăхăмĕ, пĕрчĕкĕ.

Ç.Элкерĕн литературăмăрти вырăнне, унăн хайлавĕсенчи жанр туртăмĕсене туллинрех пĕлес тĕллевпе татах та пĕчĕк экскурс тăвар-ха. XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш халăх сăмахлăхĕнче эпир асăннă виçĕ тапхăртан малтанхи иккĕшĕ питĕ вăйлă пулнă-ха. Мифопоэтикăлла илемлĕ ăн чăвашăн йăли-йĕркинче, мифологийĕпе мифĕсенче палăрнă, традицилле, канонланнă ăн вара ытларах чухне жанрсенче, сăмах тексчĕ йăла-йĕрке текстне жанр урлă пăхăннинче палăрнă.

Мĕншĕн паянхи чăваш атте-анне, тăван кил çинчен çырнă юрăсене ытларах кăмăллать? Мĕншĕн тесен юрă тени чăвашăн паян кун та йăла-йĕрке картинчех-ха, чăваш ăна тăван-пĕтен патне хăнана кайсан е хуларан ватă ашшĕ-амăшĕ патне çитсен кĕрекере юрлать. Композиторсем çакна аван туяççĕ.

Литературăмăрта çапла мар-и вара? Малтанхи çыруллă текстсене аса илер-ха. Акă Чăваш Хвети юрри-такмакĕ. Вĕсем пурте улах ларнă çĕрте каламаллисем. Каярах чăваш поэзийĕ юмах-халап жанрĕн паллисене илет (вĕсене те улахрах каласа панă-çке). М. Федоров çав юмах-халап жанрĕпе çырнă «Арçури» хайлава сăвă тесе те пăхать.

90-мĕш çулсенче çыруллă поэзи анатри чăвашсен ĕçкĕ-çикĕ юррисен картинче те аталанать. Çакна эпир Турхансен лирикинче аван куратпăр. Сăмах май каласан, пĕртăван Турхансенчен пуçласа чăваш çыруллă поэзийĕнче индивидуаллăх, автора тĕпе хурасси палăра пуçлать.

Виççĕмĕш тапхăрти илемлĕх ăнăн типĕ чăваш халăх сăмахлăхĕнче, чи малтан истори халапĕсенче, тĕрлĕ пейĕтсенче вăй илсе пынă. Индивидуаллăх

ытларах хĕр йĕррисемпе юпа тата некрут юррисенче вăйлă палăрнă. Уйрăлун хурлăхлă кĕвви Пӳлер патшин хĕрĕсем акăш пулса вĕçсе кайни çинчен калакан халапрах илтĕнет. Каярах уйрăлу мотивĕ вăрçă çинчен хывнă пейĕтсенче, юрату пейĕчĕсенче янăрать, сюжета йĕркелеме пулăшать. Чăвашсен ытларах телейсĕр юрату, ашшĕ-амăшĕ урăххине качча панăран сарăмсăр вилнĕ хĕрсен шăпи çинчен калакан пейĕтсем аталаннă. Ахальтен мар ĕнтĕ çак сюжетпа чи малтан индивидуаллăха, автора тĕпе хуракан чăваш поэчĕ Турхан Яккăвĕ усă курать («Варуççи» хайлавра). К.Ивановпа Трубина Мархви те, ытти çыравçăсем те усă кураççĕ çак сюжетпа.

Халĕ çыруллă прозăна пăхар. И. Яковлев букварĕсенчи кĕске калавсем, И. Иванов, О.Романов, И. Юркин хайлавĕсем пурте пекех тĕслĕх урлă вĕрентсе каланисене аса илтереççĕ. Чăвашсен çав ятсăр жанр питех те анлă сарăлнă. Чăн пулни, ялти уйрăм çын опычĕ, хăтланăвĕ урлă вĕрентесси чăвашшăн питех те характерлă, типлă. Ваттисен сăмахне ăнлантарса-уçса пани теес килет çав жанра.

Çапла вара, XX ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш литератури халăх сăмахлăхĕн жанр системинчен уйрăлса тухма ĕлкĕреймен-ха. Çав хушăрах чăваш илемлĕ ăнĕ ĕмĕрсен чикки тĕлне тĕнче литературин илемлĕ ăнĕнче тĕл пулакан виçĕ тĕсĕпе те паллашма ĕлкĕрнĕ. Çавăнпа та чăваш илемлĕ шухăшлавĕн аталанăвне çыруллă литература картине хупса лартни хамăра чухăнлатниех пулать. Пирĕн сăмахлăх ватă, вăл архаика тапхăрĕнчен пуçласа индивидуаллăха, историе тĕпе хуракан тапхăрчченех аталанса, çав тĕрлĕ тапхăр сийĕсене упраса пынă.

Илемлĕхе тĕпе хунă литература системи, хăйне халăх сăмахлăхĕпе оппозицире, хирĕçлевре тăнă пек туяканскер, ахăртнех, 20-мĕш çулсенче вăйлăн палăрма пуçлать. Çапах та çав çулсенче те, каярах та çыравçăсен хайлавĕсенче йăла-йĕркепе йăла пурнăçне ӳкересси малти вырăнтах тăнă темелле. Ун чухне чылай çыравçă фольклор материалĕ пуçтарнă, çав çухалса пыракан сăмахлăх сийне упраса хăварма тăрăшнă. Паллă ĕнтĕ, чĕрĕ традици пурнăçран çухалса пырать пулсассăн вĕсем культура еткерне куçаççĕ, илемлĕ

литературăра, ăслăлăх тĕпчевĕсенче, тĕрлĕ пичетленнĕ пухăсенче упраначчĕ. Кайран çав культура еткерĕ пулнă традицисем çĕнĕ культурăн тĕп паллисенчен пĕри пулса тăраççĕ. Эппин, «этнографизмпа» тулса ларнă литературăн культурăри хăйĕн пĕлтерĕшĕ, уйрăм функцийĕ пур. Çавăнпа та вăл е ку хайлава культурăмăрăн пĕтĕмĕшле историлле контекстĕнче лартса пăхни тĕрĕсрех. Ĕнер çитменлĕхĕн курăнакан ен ыран ытарлăн çуталса ялтăртатма пултарать. Йăлтах халăхăмăрăн тĕрлĕ вăхăтри пурнăçĕн тĕллевĕсем еплерех пулнинчен, нацин харкам ăнĕпе идеалĕнчен килет. Ун пек чухне культура еткерĕ çӳпçери пек пăнтăхмасть, çи-пуçа çутатса куçа илĕртет, шăнкăр-шăнкăр сассипе чĕрене хăпартлантарать.

Çакăнта каланисем Ç.Элкер çырнисемшĕн те пулчĕç. Этнографилĕхшĕн, очерклăхшăн, чăн пулнине натурализмларах ӳкерсе кăтартнишĕн ӳпкелеме пăхатчĕç çыравça. Тĕрĕссипе хăй тӳссе ирттернине çырасси, халăх пурнăçне тĕплĕн сăнласси, çут çанталăка сăнама пултарасси йăлтах халăхăмăрăн хăй енлĕхĕнчен, унăн чунĕпе ăнĕнчен, туйăмĕнчен килет. Чăн-чăн чăвашла хайлавра характер аталанăвĕ те, романсенчи эпикăлла шухăшлав та çук пулма пултарать.

Элкер геройĕсем характер тĕлĕшĕнчен аталанмаччĕ, вĕсен шăпине Мăн Турă хăй çырнă. Çĕр çинчи çыннăн тĕллевĕ – çав шăпапа çураçасси, тем тĕрлĕ йывăр пулсассăн та хуçăлмасăр юлма пултарасси. Ава «Хурапа шурă» повеçех илер. Ленăпа Сергей хăйсен шăпине май килнĕ таран илемлетме тăрăшаççĕ. Мĕн тăвăн, вĕсен пурнăç çулне пĕрле утса тухма май килмен, Пӳлĕхçи пӳрмен. Çав хушăрах юрату тасалăхне упраса хăварасси йăлтах хăйсенчен килет иккен. Пĕрле пулмалла туман пулсассăн таса юратăва ӳт-тир шайĕнчи выльăхла туйăмпа варалама кирлех-ши? Нацтӳçпе Попов шайне анса ларни мĕн патне илсе çитернине вулавçă аван ăнланать. Вуланă май эпир Шăпа кĕнекине йĕрлетпĕр, унăн вăрттăнлăхĕсене ăнланатпăр.

Повеçĕн ятĕнче те халăхăмăрăн философийĕ курăнать: хурапа шурă. Хура хыççăн шурă килет, шурă хыççăн каллех хура таврăнать. Уйăх тулать,

катăлать, каллех çурлаланать... Çак çаврăнура çынсен шăпи хуллен шăвать, хурипе шуррине те тутантарать. Пулса иртекен ĕçсем Вăхăт еккине пăхăнаççĕ. Геройсене тĕрлĕ вăхăтра, тĕрлĕ вырăнта куратпăр, вĕсен кăткăс хутшăнăвĕпе кăсăкланатпăр.

Кирек хăш жанрпа çырсассăн та Элкер чунĕпе поэт пулнă. Ахальтен мар вăл йывăр вăхăтра уй-хире е вăрмана тухса утать, йывăç-курăкпа, улăх-çаранпа калаçать:

Эй, Кушлавăш, ешĕл уй, –
Çут ачалăхăм сăпки!
Пĕл, ăнланччĕ мана, туй:
Эс ман пурнăç кăвапи.

(«Киле таврăнсан»)

Пирĕн кашниннех хамăрăн пурнăç кăвапи пур. Çав хушăрах Чăваша çуратакан Амапа та кăвапаранах çыхăннă эпир, çав Ама кăкăрне ĕмнĕ, çав Амаран калаçма-пуплеме вĕреннĕ, чĕрçийĕ çинче утьăкка сикнĕ. Чăваш Сăмахĕпе, Поэзийĕпе тата Сăмахлăхĕпе те пĕр эпир. Ç.Элкер те çакна ача çулĕсенчех сиснĕ, ун пирки çапла аса илнĕ: «Мана ытларах поэзиллĕ япаласем килĕшетчĕç, вĕсене вара чĕререн киленсех вуланă». Пурнăçĕ вĕçĕнче çырнă сăввинче те çав шухăшах пĕлтернĕ:

Чăн-чăн поэт пулман пуль эпĕ,
Мана тĕсмест-тĕр ун хисепĕ.
Анчах поэзие юратнă,
Унпа пуçа çех хытă ватнă.

Чăваш халăх поэчĕн ятне тивĕçнĕскер, вăл сăвăран мĕн виличченех писмен, чун-чĕререн юратнă. Çапларах çын пулнă поэзи тӳпинчи Элкер çăлтăр...

Элкер поэзийĕ. «Хĕн-хур айĕнче»

Çыравçă пурнăçĕпе пултарулăхне çак тапхăрсем çине уйăрса пăхма пулать: 1. Ачалăх, вăрçăпа тыткăн тапхăрĕ (1894–1916). 2. Ирĕклĕ çырнă

тапхăр (1917–1930). 3. Репрессипе вăрçă тапхăрĕ (1931–1945). 4. Юлашки тапхăр (1946–1966).

Ачалăх, вăрçăпа тыткăн тапхăрĕ. 1906 çулта чăвашла «Хыпар» хаçат тухма пуçлани ял çыннисене савăнтарнă, пурăнма хавхалантарнă. Тепрер çултан хаçат хупăнни хресченсене хытах хурлантарать. Хăшĕ-пĕри, вăл тухма пăрахнине пĕлменнисем, хаçат редакторĕ пулнă Н.В.Никольский патне тĕрлĕ ыйтупа çырусем çырнă.

1910 çулхи январĕн 4-мĕшĕнче Пысăк Упакасси ялĕнчи (вăл ун чухне Хусан кĕпĕрнин Етĕрне уесне кĕнĕ, халĕ Чăваш Республикин Йĕпреç районне кĕрет) Василий Федотов кил-йышĕ Никольский патне Хусана çыру çырса янă. Кил хуçи, çырма-вулама М. Дмитриев шкулĕнче хăнăхнăскер, тырă тухăçне ӳстермелли мелсем пирки ыйтса пĕлесшĕн. Аслă ывăлĕ Якур чăвашла хаçат кăларма май килет-ши тесе ыйтать. Çемен хăйĕн вĕренес килни, вĕсен лашине вăрланăран вăл хăйĕн пĕлĕвне ӳстерме инçете кайма пултарайманни çинчен кулянса пĕлтерет. «Çапла ĕнтĕ, укçа çук пирки паянхи кун та килтех пурăнатăп, ним тума та çук, – тесе пăшăрханать пулас çыравçă. – Темĕн чул манăн кĕнеке вулас килет... Халĕ ялти учительтен кĕнекесем иле-иле вулатăп, анчах ĕнтĕ эпĕ вуламан кĕнеке шкулĕнче те юлмарĕ. Халĕ кĕнеке вула пуçласанах килтисем ятлаççĕ, ĕçсĕр теççĕ. Ман ăçта çав тĕрлĕ нумай кĕнеке вуласа ăша лăплантарас-ши?»

Малалла вăл çиме çăкăр çитменни, хăй пĕр-пĕр ĕçе вырнаçма, учитель пулма ĕмĕтленни пирки çырать.

Империализм вăрçи тухсан пулас çыравçă çапăçу хирĕнче пулать, аманса тыткăна лекет. Çав çулсене аса илсе вăл кайран «Вутпа тăвăл витĕр» роман-хроника хайлать (1930–1935). Ç.Элкерĕн çак тапхăрне пурнăç материалне пухнă, хĕн-асап курса çитĕннĕ вăхăт тесе хакламалла.

Ирĕклĕ çырнă тапхăр. 1917 çулта Ç.Элкер «Ху чĕлхӳне ан хурла», «Чăваш хаçачĕ» тата ытти статьясем çырать, вĕсене çĕнĕрен тухма пуçланă «Хыпарта» пичетлесе пырать. «Асăннă статьясем эпĕ литературăра ĕçлеме

пултарнине кăтартса пачĕç, – аса илет каярах Ç.Элкер. – Тал-Мăрсапа Ф.Павлов çак статьясене вуласан: эсĕ чăвашсен пулас журналисчĕ е писателĕ те пулма пултаратăн тесе хучĕç». Çапах та вăл малтан ытларах поэзи енне туртăннă. Ку çыравçă пĕчченлĕхе, ирĕклĕхе кăмăлланинчен килнĕ пулĕ. Ытлашши каласман, хăйне çынран каярах лартаканăн туйăмĕ ăшра капланнă, сăвă йĕркисене хывăнса хут çине çырăннă. Унăн чи малтанхи сăввисем пурте вăрçă кĕввипе çыхăннă. Вĕсенчи лирика харкамçи е тыткăнри пурнăçа ӳкерсе кăтартать («Тыткăнри лакăрта», «Тыткăнра», 1917), е вăрçă хирĕсене аса илет («Вăрçă хирĕсенче», 1918). Акă хуйхăллăн кашлакан чăрăш айĕнче пĕр салтак вилсе выртать, «Çĕршывĕ енне тĕттĕме пăхса» ашшĕ-амăшĕпе, тус-тăванĕпе сыв пуллашать. Харкамçă çырса кăтартнипе çырлахмасть, чĕрине ыраттарса шухăша та путать вăл:

Шуралса тухать шурăмпуç çути,
Вашлатать хуллен сулхăн нӳрĕ çил.
Мĕскĕн çамрăкăн карăлчĕ тути...
Эх, мĕскĕн салтак, камшăн пĕтрĕн-ши?

К.Ивановăн куçарăвĕсенчи дольникпа Н.Шупуççыннин вăрçă сăввисенчи силлабикăна çывăх кунти çемĕ. Малашне çав ритм Ç.Элкер пултарулăхĕн тĕп паллисенчен пĕри пулса тăрать. Уншăн вăл критиксенчен пĕрре кăна мар сăмах илтет. Акă «Чăваш литературин çулĕсемпе сукмакĕсем» статья авторĕ (Сунтал. 1929. 6 №) Шупуççыннине, Элкерпе Шелепие «кивĕ формăпа» (силлабикăпа тесе ăнланмалла) çырнăшăн ятлама пăхать. «Силлабикăран пуçланакан конструкцилĕх – çуралмасăрах вилнĕ форма», – хĕрӳленсе çырать «Ç.Х.» псевдонимлă автор (Элкер ăна Паймек тесе палăртать).

«Сунталăн» 9-мĕш номерĕнче Элкер хуравĕ çапăнса тухать. Унта вăл статья авторĕ силлабикăна сивлени пирки çапла калать: «Чăваш сăвви-поэмисен формисене, вĕсен техникине вырăс форми техникипе виçме майĕ çук. Мĕншĕн тесен чăваш чĕлхин саккунĕсем, унăн сăмахлăх йĕркисем вырăссенни пек мар, пĕтĕмпех урăхла. Ку пĕр енчен. Тепĕр енчен тата –

пирĕн чăваш сăвви-поэмисем валли шыраса тупнă, çирĕплетнĕ формăсем те çук-ха. Сăввăн кашни йĕркинех пĕр сăмахран е ик-виç сăмахран çеç туса ăна усăсăр капалантарса янипе те çĕнĕ форма тесех мухтанмалли çук». Элкер ун чухне модăна кĕрсе пынă Маяковскилле юпаласа çырнине ырламанни сисĕнет кунта. Çав хушăрах вăл «мĕн пулни-иртни çинчен пысăк поэмăсем çырса пынă чух ĕç-хĕл рифмăсенчен хăтăлмашкăн йывăр» пулнине палăртать. Калăва тĕпе хунă сăвăсенче, чăн та ĕнтĕ, глагол састашран хăтăлма йывăр. Элкер вара лирикăра та эпикăллă калу енне туртăннă.

Çыравçă чăваш поэзине лирик пек пырса кĕнĕ. 1918 çулхи çĕртме уйăхĕнче хайланă «Киле таврăнсан» сăввинчи лирика харкамçи, вăрçă хирĕнче темиçе çул пулнăскер, тăван еншĕн хытах тунсăхлани сисĕнет. Унта вăл Кушлавăш уйĕпе çапларах пуплет:

Хуть таçта пулам, ĕçлем – Чĕреме касать суран;
Пуçăмрах ман çак илем. Хуçăк турат типнĕ пек
Вĕсенчен инçе кайсан – Саншăн типшĕретĕп тек.

«Хура вăрман хушшинче...», «Çăлăнăç» сăвăсенче (1919) харкамçă çут çанталăкпа калаçать, унта вăл хăйĕн ирĕклĕхне тупать:

Салху шухăш хупласан,
Пуç ыратсан, ăш çунсан
Пурччĕ ман пĕр çăлăнăç –
Аслă уйри пурăнăç.

Çапла вара, Ç.Элкер сăввисенче *тăван ен, çут çанталăкри ирĕклĕх мотивĕсем* палăрса çитеççĕ. «Пурнăç кăвапи» те, «çут ачалăхăн сăпки» те иккен сăвăçăн тăван çĕршывĕпе улăхĕ-вăрманĕ. Кунта илемпе çăлăнăç упранать. Элкерĕн пейзаж лирики çепĕç те çутă тĕссемпе пуян. Çав хушăрах ӳкерчĕк çăмăллăнах философилле шухăша çавăрăнать. Тĕслĕхрен, «Хаваслă самант» сăвăри (1922) лирика харкамçи çу пуçламăшĕнчи хĕвеллĕ кунпа киленет, юлашкинчен çапла шухăш патне çитсе тухать:

Анчах асту, çак илем Иртнĕ çĕр пин ĕмĕрсем –
Ĕмĕре мар – саманта, Миçе хут вăл вылянман!

Мĕнпур лĕпĕш, чечексем – Малашне те вăл çаплах
Пурте кĕске вăхăта. Тек вылянĕ хăй майпе,
Çапла иккен çут тĕнче Çак илем те яланах
Чĕрлет, вилет вăл ялан; Тухĕ, сӳнĕ вăхăчпе.

Çак вилĕмпе чĕрĕлӳ ылмашăвĕн кĕвви, *вăхăт мотивĕ* Ç.Элкерĕн ытти хайлавĕсенче те тĕл пулать. «Çамрăклăхпа уйрăлни» сăвăри (1923) лирика харкамçи шуса иртекен çулсене хумсемпе танлаштарать. Çав «хыçри инçете» юлакан çулсем унăн асĕнчен тухмаççĕ, вĕсем ăна «текех илĕртеççĕ». Харкамçă ĕмĕр иртнине туять, çамрăк çулсем вара чи хаклине, «чăн ирĕклине» ăнланать:

Сыв пулăр, сыв пулăр, чăн ирĕк çулсем ман,
Нихçан та сире эп тепрер курас çук,
Каçхи метеор вĕçсе сӳннипе тан
Иртет ĕнтĕ пурнăç, ăна чарма çук.

Пысăк Вăхăт (Большое Время) талккăшĕнче икĕ тĕнче вĕçсĕрлĕхĕ курăнать. Çут çанталăкра юхăм шыв вĕçсĕр-хĕрсĕр анаталла шăвать, «малалла каять, Кайни вырăнне урăх çуралать» («Икĕ тĕнче», 1919). Шыв çинчи кăпăксем тĕрлĕ: «Мăнни, вĕтти те, çап-çутă, шап-шур». Вĕсем шунă майăн сӳнсех пыраççĕ. Çын пурнăçĕ те кăпăк пекех иккен:

Пирĕн çĕр çинчи пин ĕмĕрсем те
Çав юхăм шыв пек юхса иртеççĕ,
Этем йăхĕнчи мĕльюн çынсем те
Ĕмĕрсем тăрăх ишсе сӳнеççĕ.

Çапла вара, уйрăм çын пурнăçĕ çут çанталăкри кăпăк ĕмĕрĕн кăна курăнсан та этемлĕх тĕнчи пĕтмест. Çапах та çын вăл кăпăк мар, ăна малалла туртакан вăй пур. Этем «тутлă, хаклă ĕмĕтпе» ӳссе çитĕнет, «Тулăх пурнăç тупасса Текех шанать, ĕненет» («Ĕмĕт», 1922). Тупни çырлахтармасть ăна, чылай чухне «Кĕтнĕ ырлăх вырăнне Часах хĕн-хур тĕл пулать, Пысăк шанчăк

çулĕ çинче Инкек тăрса карталать». Çавăн пек чухне çынна йăпатса малтан мала туртаканĕ мĕн-ши вăл?

Ĕмĕр çынпа çӳрекен
Сӳнми ĕмĕт мар-и ку?
Чăн та ĕмĕт! Çав иккен
Пурнăç тытан хаваслу!

Элкер сăввисенчи лирика харкамçин пысăк ĕмĕчĕ – тăван чĕлхепе тăван халăхăмăр «çут тĕнчере тан пулни», ăна ытти халăх пусманни («Тĕрлĕ йывăç-курăксем...», 1918). *Тăван чĕлхемĕр мотивне* Элкер Турхан Яккăвĕпе К.Иванов хыççăн çине тăрсах аталантараканĕсенчен пĕри пулнă. Çеçпĕл çĕре кĕрсен вăл унăн сăввисенчи çак мотива эстафетăри пек малалла тăснă. 1923 çулта хайланă «Таптаннă, хăртаннă чăваш ĕç çынни» сăввине поэт çапла вĕçленĕ (вăл çаврасене автор «Çырнисен пуххине» теме пула кĕртмен):

Тăван чĕлхене савакан юлташсем,
Тапранăр хастарлă – ĕçе пуçăнар!
Хăватлăн янраччăр чĕлхен кĕввисем,
Кал-кал çул, пĕтми çул ун валли уçар.
Тапранăр, тимленĕр, чĕлхе ăстисем,
Чĕре вут-хĕмне ялкăшсах çиçтерер:
Октябрь тивлечĕн Сунталĕ çинче
Туптар чĕлхене, хăйрар, çивĕчлер!

Çав ĕçе «Пирĕн чăваш çĕршывне Çурхи илем кĕриччен, Ялсем, уй-хирсем çине Хĕвел çути ӳкиччен» – эппин, XX ĕмĕр пуçламăшĕнчех – К. Иванов пуçаннă. Вăл

Чуралăхри чĕлхене
Шанчăк пама курăннă,
Тухас сăвăç туссене
Çул кăтартма пуçаннă.
(«Нарспи авторне», 1925)

«Тăван чĕлхен сухине кӳлĕннĕ» поэтăмăрăн ĕмĕтне, шанăçне ăша хывнă Элкер 1926 çулта «Мĕн хаваслăхпа, мĕншĕн ман пурнас?» ятлă хăйне евĕр программăллă сăвă хайлать. Шел пулин те, «Çырнисен пуххине» (I том, 155 с.) çав хайлавăн вăйсăртарах, ватлăх çулĕсенче юсанă вариантне кĕртнĕ. «Самана» кĕнекере (Шупашкар, 1928) вăл çапла пуçланать:

Мĕн хаваслăхпа, мĕншĕн ман пурнас?..
Пурăнас тесен пĕр хаваслăх çеç:
Тăван чăвашăн ятне хăпартас,
Ун чĕлхишĕн виличчен ĕçлес...

Харкамça чап та, хисеп те кирлĕ мар. Тăван чĕлхемĕр ĕмĕрсем хушши таптанни, ăна тăшмансем хурлани хистет çав çынна чăваш чĕлхишĕн ĕçлеме. Хайлав ырă шанăçлă йĕркесемпе вĕçленет:

Тăван чĕлхешĕн чунран ĕçлесен
Унăн хăватне курса ĕненер;
Ăна ĕмĕрлĕх вилми чун кĕрсен
Ун тăшманĕсем сирлессе пĕлеп.

Камсем-ши вĕсем чăваш халăхĕпе унăн чĕвĕлти чĕлхин «çĕлен пек хаяр» тăшманĕсем? Вĕсем Ылтăн Урта ханĕсем, Мускав патшисем, çичĕ ĕмĕр хушши халăхăмăра туланăскерсем! Монголсен «урхамахлă тискер çарĕсем» Пăлхар-чăваш çĕршывне тĕп тунă, Мускав патшин йыттисем чăваша «тытса сăнчăрланă Христос чиркӳнчен». Çапла вара,

Умлăн та хыçлăн улт-çич ĕмĕрте
Вутра та эс çуннă, шывра та исленнĕ,
Хăвăн юратнă тăван çĕрĕнте
Таçти ют чура пек салхуллăн çӳренĕ.

(«ЧАССРăн автономи кунне», 1924)

Элкер сăввисенчи тăван халăхпа чĕлхе мотивĕсем тăван çĕр кĕввипе уйрăлми çыхăннă. Ку тĕлĕшрен сăвăç Çеçпĕл традицийĕсене малалла аталантарнă, «историн мăн çулĕ çинчи» халăхăмăрăн хыçĕпе умне те курма

пултарнă. Иртни патша саманинчен тытăнса аваллăхри ирĕклĕ çĕршыв таптаничченхи, чаплă хуласем ишĕличченхи («Н.И.Ашмарин», 1921) ĕмĕрсенех çитет пулсассăн, умри – çывăхрах. Вăл – чăваш «хăйне хăй хуçа» пулса тăнă (автономи ирĕкĕ илнĕ) вăхăт. Çав хушăрах ХХ ĕмĕрĕн çитменлĕхĕсем те чылай-ха: вăл çынсене «вĕçе-вĕçĕн хуйхă» кӳрет иккен:

Саманасем иртеççĕ – çук-ха чăнлăху:
Е вăрçă... е выçлăх – çав-и ырлăху?!
Пиншерĕн, пиншер ав çара тăлăхсем,
Уксак та чăлах, хăлхасăр, суккăр,
Аманнă, чирленĕ инвалид çынсем
Тулчĕç çĕр çине хисепсĕр, шутсăр!
(«Çирĕммĕш ĕмĕре», 1926)

Лирика харкамçи çапла этемлĕх Тĕнчипе куçа-куçăн каласни унченхи чăваш поэзийĕнче пулман тесен те юрать. Чи малтан вăл Турхансен хайлавĕсенче тĕл пулать. Çапах та вĕсен харкамçи ытларах чухне çут çанталăк пулăмĕсемпе (тăвăлпа, çумăр пĕлĕчĕсемпе), «тискер сăнлă йывăрлăхпа», йывăç-курăкпа пуплет. Элкер харкамçи вара вăхăтпа, ĕмĕрпе, этемлĕхпе каласма кăмăллать. Ку тĕлĕшрен унăн тĕнчи социаллăрах та талккăшлăрах, урăхла ăна *социаллăхран тухакан космослăх* (социально детермированный космизм) тесе ăнлантарма пулать. Çав туртăм вăл çулсенче вырăс поэзийĕнче те вăй илни паллă.

Çапла вара, Элкер 20-мĕш çулсенчи чăваш лирикинче Çеçпĕл ĕçне тăсаканĕ пек палăрса юлнă. Вăл тăван халăхпа çĕршыв тата чĕлхе мотивĕсемсĕр пуçне вăрçă, тăван ен кĕввисене кăмăллана. Философилле сăввисенче поэт ытларах чухне Пысăк Вăхăт категорийĕпе шухăшлать, унăн харкамçине вилĕмсĕрлĕхпе вилĕмлĕхĕн кăткăс çыхăнăвĕ илĕртет. Çулла «Сакăлта çыр хĕрринче Хăй ăçтине йăлт манса» чалхăрса ларакан сарă чечек сивĕ кĕрпе лачăрах шăнса ларать иккен. Çав вырăнта «Хăрнă чечек тĕпĕ çеç Ларать çилпе чĕтренсе!» («Хăрнă чечек», 1923). Харкамçă çын ĕмĕрĕ те

чечекĕнни пек кĕске пулнине аса илтерет, çавна манса кайма юраманнине систерет.

Элкер эпика енне ирĕклĕ çырнă тапхăрăн малтанхи çулĕсенчех туртăннă. Унăн чи малтанхи сăвăлла баллади (Н.Ваçанкка ăна эпикăллă поэма тенĕ) «Селтти» (1919) пулнă. Унта çав ятлă тăлăх карчăк «чипер этем çинченех» тулли лав айне пулса сарăмсăр вилни çинчен çырса кăтартнă. Вилнĕ амăшне курнă чирлĕ Кулюçăн чунĕ те çав çырмарах тухнă иккен. Вĕсен чунĕсем арçурине çаврăнаççĕ, çĕрлесенче иртен-çӳрене хăратаççĕ. «Çапла вĕсем нумайччен Çӳçентернĕ халăха, Çампах Селтти çуртĕнчен Ял та тарнă аякка...»

1919 çулта сăвăç «Сахрун мучи калавĕсем» ятлă поэма хайлать. Ятне кура унăн жанрне сăвăлла калав е очерк тесе палăртма та май пур. Унти пайсенче чăвашăн йăла-йĕркепе çыхăннă пурнăçне çырса кăтартнă. Чăваш йăваш пулсассăн та питĕ тӳсĕмлĕ те çирĕп иккен. Хăйĕн ĕçĕ пирки вăл хăнара та манса кайман, кĕлĕ-юрăра та асăнсах тăнă. Хайлавра автор чăвашăн йăлапа мифла пурнăçне çулталăк çаврăнăшĕнче (çуртан пуçласа хура кĕрччен) хăй еплерех курса хаклани тĕпре тăрать. Кунти калуçă автортан уйрăм тăрать, вăл каласа пани тĕрлĕ хайлавсемпе пулни-иртни халапĕсен стильне çывăх.

20-мĕш çулсенче Элкер халăх халапĕсене сăвăланипе çырлахмасть, унăн хальхи пурнăçĕ пирки те эпикăлла хайлавсем çырать. «Выçлăх аллинче» ятлине (1921–1922) сăвăç выçлăх çулсенчи пурнăçран илсе çырнă сăвăлла калав тесе ăнлантарнă. Кунти ĕç-пуç та çурхи уяр кунсенче пуçланать те хĕл вĕçĕчченех тăсăлать. Малтан автор пĕтĕмĕшле ӳкерчĕк кăтартнă: «Вĕри вут хĕвел çӳле улăхать, Хăватлă çути ун çĕр питне хĕртет, Симĕс уйсене типĕтсе хăртать. Чечен йăвăç-курăк шывшăн антăхса Çеçки вĕçсене пĕтĕрсе лартать. Улăхри çаранлăх çунса, сарăхса Пушă хир тĕслĕн выртать».

Чухăн Лариванăн кил-йышĕ пысăк, ачи-пăчи вĕтĕ. Кил хуçи аптранă, унăн пуçĕнче тĕрлĕ шухăш явăнать:

– Пăтравлă самана! Çак-çке пĕтерет...

Нимĕн те ҫитмест, кирек мĕн хĕсĕк!..
Патшалăх парасси ĕмĕтре сахал, –
Ҫулĕсем пăсăк, машинсем ҫĕмрĕк!..
Пур ĕнтĕ икĕ ҫул – вилес е тарас?
Ăҫта та пулин пĕрех пĕтмелле:
Тухас та утас ҫав Ҫĕпĕр еннелле...
Анчах кил-йыша мĕнле хăварас?!

Кĕҫех «ҫăхана ҫăхан кранклатса хăвалана» вăхăтсем ҫитеҫҫĕ. «Ҫаралнă, ҫарансăр Ҫавал улăхĕнче» аптранă халăх молебен ирттерет, мăн чӳкне те тăвать – ҫумăрĕ ҫав-ҫавах ҫумасть. Выҫăпа касăлса ҫитнĕ ҫынсем пĕрин хыҫҫăн тепри тăкăнма пуҫлаҫҫĕ. Лариван мăшăрĕ те куҫне хупать.

Выҫăхса ларакан ялсем хушшинчен
– Выҫ вилет!.. тенĕ ятсем тухаҫҫĕ,
Йĕкелпе, улмапа пурăнакансенчен
Ахлатнă сассем чуна ҫураҫҫĕ.

Нарăс вĕҫнелле Лариван та вилет, куҫне хупиччен хăйĕн тăватă ачин пуласлăхĕ пурне шанса ĕненет. Иккен ялта выҫă ача-пăча валли апат ҫурчĕ уҫаҫҫĕ, хăшĕ-пĕрне Мускавах яраҫҫĕ. Ҫапла хыпара илтсе вăл леш тĕнчене ăсанать.

Элкер ҫак поэма ҫинчен 1926 ҫулта ҫапла ҫырать: «Ку сăвăлла калав вĕҫне улăштармалла пулать. Вăл пĕр ҫулталăкпах пĕтмелле мар, унăн ытамĕ 5–6 ҫул ытла ытамласа тăмалла. Лариванăн вилмелле мар; унта 1923–1925 ҫулсенчи тыр-пул ҫитменлĕхĕсене те кăтартса парса Ларивана ҫĕнĕлле хуҫалăх шухăшне шырама вĕрентмелле. 5–6 ҫултан Лариванăн аслă ывăлĕ Мускавран таврăнать, вăл ашшĕне ҫĕнĕлле пурăнма хăнăхтарать».

Кунта эпир вăхăт, обществăри лару-тăру ҫыравҫăн шухăшĕсене еплерех витĕм парса улăштарма пултарнине куртăмăр. Поэт малтан выҫлăх хăрушлăхне, вăл илсе ҫитернĕ инкеке ӳкерес тенĕ. Каярах чăваш хресченĕ улшăнса пынине кăтартни кирлĕрех тесе шутлама тытăнать.

Хайлаври ĕç-пуçпа сăнарсене Элкер чăн пурнăçран илнĕ, вĕсене илемлĕн типласа кăтартма тăрăшнă. Автор сюжета аталантарма, калăва тĕп сăнар тавра çыхма пултарнине те асăрхатăн çак хайлавра. Йĕркесем вăрăмран текст йывăррăн, прозăри пек вуланать. Лирика çаврăмĕсем çукки те Элкер кунта чăн-чăн эпик пек курăннине çирĕплетет. «Выçлăх аллинче» хайлава проза саккунĕсене тĕпе хурса хайланăран çак поэмăна сăвăлла калав тесе калама та май пур.

Халăхăмăрăн пурнăçне анлăн кăтартас туртăм Элкерĕн çултан-çул вăйланса пынă. Çакна унăн 1927 çулта хайланă «Улăпсем» ятлă сăвăлла эпосĕ те аван кăтартать. «Сунталта» пичетленнĕ вариантăн (1927. 10 №) ум сăмахĕнче поэт çапларах каланă:

«Улăп ятне асăннине пур çĕрти чăвашсем хушшинче те илтме пулать. Анчах мĕнлескер, кам пулнă çав Улăп? Ун çинчен никам та пат татса ăнлантарса параймасть. Ваттисенчен нумайăшĕ: «Улăп вăл сĕм авал темле тĕлĕнмелле çӳренĕ питĕ пысăк пăхаттир пулнă», – теççĕ. Тепле сайраран, хăшĕ-пĕрисем çеç вăл мĕнле çӳрени çинчен калаçкалаççĕ. Анчах тĕрлĕ вырăнти чăвашсем тĕрлĕ май, урăхларах калаçаççĕ.

Улăп юмахĕ вăл – чăваш халăхĕн сĕм авалхи пурнăçĕ çинчен пĕлтерекен юмах. Çакнашкал юмахсем вырăссен те «Илья Муромец», «Святогор» текеннисем тата урăххисем те пур. Хусанта вилнĕ Катанов профессор çырнă тăрăх, Улăп çинчен калакан юмахсем тĕрĕк халăхĕсем хушшинче те пур. Анчах ку халăхсем ăна пурте Улăп темеççĕ, хăшĕ Алăп, хăшĕ Алиф теççĕ. Унăнах кăркăссен Атша ятлă Улăпĕ çинчен çырни пур (Известия Казан. общ. археологии и этнографии. Т. 13. Вып. 1). Анчах Атша Улăп ытла та сĕм авалхи ĕмĕрсенче пурăнать. Чăвашсен Улăпĕ – чăваш халăхĕн вăл выльăх кĕтĕвĕсемпе çӳрессине пăрахса çĕр ĕçĕ çине куçас умĕнхи пурнăçĕ çинчен пĕлтерекен юмах. Ку Улăп ватă амăшĕ калакан сăмахсенчен аван палăрать. Апла пулсан чăвашсен Улăпĕ кăркăссен Атшинчен чылай кайран пурăннă.

Эпĕ ку поэмăна Улăп çинчен чăваш хушшинче калакан татăк-кĕсĕк халапсене пухса, хăшне-пĕрне «Атшаран» илсе тата хамран та шухăшласа çырнă. Автор. 1927 çул, августăн 15-мĕшĕ».

Каярах Элкерĕн хайлавне тĕпе хурса çак ĕçе Çуйăн Хĕветĕрĕ пуçăнни паллă. «Ноябрь уйăхĕнче пĕр çĕнĕ автор çырнă фольклор япалине тӳрлетсе тинке тухрĕ, – тесе çырать вăл 1947 çулта В. Хурамал патне. – Улăп çинчен çырнă япала ку. Пуçламăшĕ кăна-ха. Эпĕ 2000 йĕркене яхăн тӳрлетрĕм. Тӳрлетсе кăна мар, нумай тĕлте хамăнах сăвăласа хума тиврĕ. Авторĕ 5000 строка çырса панă, малалла çырать. Пĕтĕмĕшле çырсан 30–40 пин йĕрке пулма пултарать. Ăна лайăх çырса йĕркелеме пĕлсен вăл япала чăннипех те чăваш халăхĕн эпосĕ пулса тăрать. Çавăнпа та ку ĕç мана питĕ хытă интереслентерет».

Каярах (1961 çулта) поэт Çуйăн Хĕветĕрĕ çырнинче халăхăннипе уйрăм авторăнне уйăрса пăхма кирли пирки каланă, илтнĕ хальлĕнех прозăлла çырни вырăнлăраххине астутарнă. Кунта эпир Элкер сăвăлла эпос йĕркелес ĕмĕтрен сивĕнсе çитнине, сăмахлăха мĕнле илтĕнет, çавăн пек çырса хумалли принципсем çирĕпленсе çитнине куратпăр.

«Улăп» эпосра Элкер Ахрат улăп Эсремет ятлă усал паттăрпа çапăçнине ӳкерсе кăтартнă. Юлашкинчен «Вил пек Эсремет ӳтне Ярать Ахрат тинĕсе, Ун Хăямат йыттине Пăрахать хăй шăтăкне». Пурăнсан-пурăнсан вăл амăшĕпе кĕмĕл пăлан йĕррипе анăçалла куçса каять, Атăл хĕрне çитсе тухать. Кунта Ахрат вĕтĕ, «çĕр ĕçлекен этемсене» курать. Амăшĕ ăна малашне унăн ачи-пăчинчен те çавнашкал вĕтĕ çынсем юласса, улăпăн йăхĕ ĕрчесе каясса пĕлтерет.

Эпосра автор чăваш халăхĕ тухăçран анăçа куçса кайни, вăл Атăл çине çитсе вырнаçни, кĕтӳ кĕтсе çӳреме пăрахса çĕр ĕçне пуçăнни пирки сăнарлăн çырса кăтартнă. Çыравçă халăхăмăрăн историне тарăн пĕлни, халăх сăмахлăхĕнчи илемлĕх саккунĕсене аван чухлани сисĕнет хайлавра.

Çапла вара, ирĕклĕ çырнă тапхăрта поэт хăйĕн тĕп сăвви-поэмине хайлама, тăван литературăра хăйне тивĕç вырăн тупма пултарнă. Унăн поэзийĕ эпика анлăхĕпе, лирикăри хăйне евĕр мотивсемпе тата сăвă кӳлепипе уйрăлса тăрать. Чăваш силлабо-тоники енне вăл хăйĕн çулĕпе утнă, Çеçпĕлĕн поэтикăри традицийĕсене малалла тăснă.

Репрессипе вăрçă тата юлашки тапхăрсем. Çак тапхăрсенче Ç.Элкер тĕпрен илсен проза хайлавĕсем çырать, хăйне драматургире тĕрĕслесе пăхать. Унăн ку вăхăтра хайланнă сăввисем публицистикăлла сăмахсене çывăх, вĕсем çирĕпленсе çитнĕ соцреализм эстетикипе çураçăнса тăраççĕ. Хушăран малтанхи тапхăрта палăрнă туртăм кĕввисем те илтĕнсе каяççĕ. Çакна «Çулла ку...» сăвăра та асăрхама пулать. Çу иртсе пынă вăхăта сăнланă унта. Элкер ун пек чухне вулавçа яланах уй-хире, унтан вăрмана илсе çитерет. Кунта «Типшек çулçăсем... çурхи çеçкесем! – Пĕр сассăр ӳкеççĕ тăван туратран», хăмăр пĕлĕтсем «хĕвел айнелле» хуллен шăвăнаççĕ. «Унтах – çула тухнă хура хăлатсем Майпе ярăнаççĕ тĕнче хĕрнелле...»

Лирика харкамçи çут çанталăка сăнаса çапла пĕтĕмлетет:

Хĕвел йăлкăшать-ха, çанталăк вĕри,
Анчах синкерленчĕ çут тĕнче хĕрри.
Сив кĕр те çитмен-ха, инçе вăл, инçе,
Çавах ун чаршавĕ – çанталăк çинче.

Çут çанталăкри пулăма асăрханă харкамçă çакна çын пурнăçĕ çине куçарса шухăша путать:

Çаплах пурнăçра та, çур ĕмĕр иртсен
Темле сисĕм-туйăм тытать кăмăлна;
Вăю та нумай-ха, ватту та çитмен,
Анчах ак шеллетĕн васкан кун-çулна.

(«Çулла ку...», 1940)

Ку тапхăрта çыравçă «Тырă вырнă чух, ирхине» (1937), «Ирĕклĕхшĕн, миршĕн!» (1940–1941) тата «Вăл вилĕмсĕр» (1943–1945) ятлă поэмăсем çырать. Пĕрремĕшĕнче вăтам хресчен хăйĕн кил-йышĕпе колхоз майлă

çаврăнса пынине ӳкерсе панă. Пĕрлешӳллĕ хуçалăх хирĕнче комбайн çӳрет, грузовик тырă турттарать пулсан, Хĕлип ав ĕлĕкхиллех тăрмашать, пур ĕçре те «хăйĕн йĕркипе» хăтланать. Соцреализм саккунĕсемпе килĕшӳллĕн юлашкинчен вăтам хресчен колхоз уссине ăнланса илет те унта кĕрсе çамрăк хĕрĕпе ытти ачи-пăчине савăнтарать.

Иккĕмĕшĕнче пĕрремĕш империализм вăрçине хутшăннă салтаксен пĕр пайĕ усăсăр юн тăкнине ăнланма пуçланине, çавна пула атакăна кайманнине каласа панă. Çар сучĕ çав салтаксене персе пăрахма хушать. «Конвойсем те чунсăр мар» иккен: вĕсем тивмелле мар переççĕ, хăйсен офицерне итлемеççĕ, юлашкинчен ăна та, сутăнчăк унтера та персе пăрахаççĕ.

«Вăл вилĕмсĕр» поэмăра Ленинграда хӳтĕлесе вилнĕ Иван Смирнов взвочĕн паттăрла ĕçĕ çинчен каласа кăтартнă. Çав чăваш ачин интернациллĕ взвочĕ нимĕç танкĕсене хирĕç тăрать, çуран салтаксене малалла кайма памасть. Çавăн йышши çапăçусенчен пĕринче Смирнов пулеметчик паттăрсен вилĕмĕпе вилет.

Хайлава Элкер хаçат материалĕсемпе усă курса çырнă пулсан та унти ĕç-пуç питех те ĕнентерӳллĕ те чĕрĕ пулса тухнă. Автор хăйĕн геройĕсен чунчĕрипе хавхине, кăмăл-туйăмне уçса парас тĕллев лартнă, вĕсен хăтланăвне психологи тĕлĕшĕнчен сăлтавлама пултарнă. Хăвăрт пулса иртекен ĕç-пуçа тата пуçри шухăша вăрахлатса каласа парас ăсталăх Элкерĕн питех те пысăк пулни курăнать çак поэмăра. Ретардаци мелне пула çыравçă ĕç-пуçа, тавралăха кăна мар, шухăш-туйăма та черетлесе, тĕплĕн каласа кăтартма пултарать. Паттăрлăх хавхипе вĕресе тăракан йĕркесем тĕрлĕ сыпăкра тĕрлĕрен çемĕпе вуланаççĕ. Хайлавра халăх сăмахлăхĕнче тĕл пулакан мифла сăнарсем те сахал мар, вĕсем паттăрсемпе тăшмансене тĕрĕсрех хак пама пулăшаççĕ кăна.

Хăйĕн «Вун саккăрмĕш çул» ятлă эпикăлла хайлавне Ç.Элкер *драмăлла поэма* тесе хаклана. Унăн малтанхи вариантне 1948 çулта «Тăван Атăлта» пичетленĕ, 1954 çулта юсаса çĕнетнĕ вариантне уйрăм кĕнекен кăларнă.

Хайлав фабули чăваш литературишĕн çĕнĕ мар темелле. Исси (хут çинче Лиза) ятлă хĕре çĕрме пуян ывăлĕ Каврук тата чухăн Левен юратаççĕ. Фабулăна хиврелетме хĕрĕпе ашшĕн (Энтрин) кăмăлĕсем пĕр килменни (хĕрĕ чухăна савать, ашшĕ вара пуянпа тăванлашасшăн) пулăшать. Çак традицилле конфликта автор питех те оригиналлă вĕçлет. Хăйне çураçнă чухне Исси килĕнчен тухса тарать (тутар çыравçин М. Акйĕкĕтĕн «Хисаметдин мулла» повеçĕнче те Ханифа хăйĕн туйĕ пуличчен чӳречерен тухса тарать). Тарăхнă Каврук Энтрине ватă карăкпа танлаштарсан хĕр ашшĕ çийĕнчех çапла хуравлать: «Эп – карăк, эсĕ – тăмана!» Çĕрме пуян хулăм укçине каялла илсе чикет, «Левенпеле çыхланиччен Ассун еннех пуçа таяс» тесе шухăшлакан хăтине акă мĕн калать:

Тĕп пултăр путсĕр хăрăк-харăк!
Илетĕп хамăн укçана...
Айта, Каврукăм... сурса хур та
Ĕçмеллине пуçтарса тух!
Энтри сăнне тек куç ан куртăр.
Ăçта ун намăс? Шулĕк! У-ух!..

(Энтри çине сурать те тухса каять.)

Левенпе Каврук пĕр-пĕринпе хĕршĕн кăна мар хирĕçеççĕ. Вĕсем – *лăпкă чăваш ялне ун чухнехи хула хирĕçĕвне илсе килнĕскерсем*. Яла пăтратса хăварнă хыççăн пĕрремĕшĕ Хĕрлĕ çара, тепри вара шуррисен çарне каяççĕ. Çакăн пек пуласса сиснĕ Каврук Левене малтанласа вăйăра курсанах çапла шухăшласа илет:

Ялти пур çĕтĕк пĕтĕмпех
Ун хыççăн кайĕ... ĕç начар!
Çак чăрсăр çын ял хушшинче
Пуçлать ак пăтă пĕçерме, –
Пур шăтăк-шатăк килсенче
Наянсене хĕтĕклеме,
Яла тӳнтерлĕн çавăрма,

Ыр çынсене тăпăлтарма.

Хускатĕ пур пек кĕлмĕçе.

Тӳсмешкĕн çук ун пек ĕçе!

Граждан вăрçине большевиксем провокацилесе тапратни, вĕсем репресси çулĕ çине тăни, малтан пĕрле пулнă социал-революционерсене таптаса хуни паллă ĕнтĕ. Ялсенчи хирĕçӳсем те çав большевиксен политикине пула сиксе тухаççĕ. «Вун саккăрмĕш çул» поэмăри калуçă позицийĕ большевиксен енче пулсан та автор унта чăваш ялĕ епле пайланса арканнине тĕрĕс çырса кăтартнă. Левен большевик яла таврăнсан хăйĕн тавра чухăнсене пухать, хуларан килнĕ рабочисем пулăшнипе вĕсем пуянсен тыррине туртса илме пуçăнаççĕ. Пуян çынсем Левене чарăнма ыйтса тархаслаççĕ. Каврук вара çапла айăплать: «Ялта чĕртетĕн эс пушар. Совет сан урлă çул уçать...» Тепри Левене ял-йыша хӳтĕлес вырăнне ăна «хулана сут-нăшăн» ӳпкелет. Таçти хула рабочийĕ выçă ларнишĕн хăйне çаратнине ăнланма пултараймасть вăл (автор ăна «куштан» тенĕ). Ун шухăшлавĕ логика тĕлĕшĕнчен тĕрĕс, пурнăç çине Левен пек романтик куçлăхĕ витĕр мар, реалист пек пăхать çав хресчен. Хула çыннисем «Вĕсем хăйсен çукран аптраççĕ. Эпир ак пур çинчен паян Выççа юлатпăр...» «Пин пăт шыраççĕ пĕр манран!..» – тарăхать пус çумне пус хушма хăнăхнă Ассун пуян. Çак тарăхăва та ăнланмалла пек ĕнтĕ.

Пăлхавçă пуянсене тытса чаракан рабочисен сăмахĕсене аса илер-ха: «А, ну-ка, волки, в угол встать!»; «Ну, волчье племя, собирайся. Раз и два... Шагом марш!» Чăваш хресченĕшĕн хула çыннисем ют халăх пулни уçăлса çитет. Çавăнпа та пуянсем хăйсен тыррине парасшăн пулманнине вĕсем чухăнсене хирĕç тăнипе кăна ăнлантарма май çук пулĕ.

Автор хăйĕн хайлавне чăн пурнăçри фактсем çине тĕренсе çырни (Элкер тăван ялĕнче шăпах çав поэмăра кăтартнă çулсенче ĕçленĕ) ăна историлле чăнлăха тĕрĕс курма май панă. Çакна саккăрмĕш сценăчченхи ĕç-пуç пирки калама пулать. Малалла вара чăнлăхран пăрăнни сисĕнет. Çакна Элкерĕн

«Сантăр хĕрĕ – сар Васса» сăввине (1919) вуласан ăнланма пулать. Унти хĕр хăйĕн савнийĕ Хĕрлĕ çарта пулнăран тунсăхлать, çапла ĕмĕтленет:

– Эх, кăшт вырăсла пĕлсен –
Кайăттăм хрунта,
Кĕркурипех çӳресе
Тӳсĕттĕм йăлтах!

Сăвăри хĕр ĕмĕтне автор поэмăра чăн туса хурать: Исси ялти «нĕрккес» мар чухăн çамрăксемпе (унта наяннисем те пур иккен!) хăйĕн ирĕкĕпе фронта тухса каять. Каякансем «Коммунарсен юррине» юрлаççĕ:

Пире ним хăруш мар: вăрçи те, нуша та,
Улпутсем тек пире хăратаймĕç.
Нихçан та парăнас çук, нихçан та, нихçан та
Коммунарсем чура пулса лармĕç...

Кунта Тăван çĕршывăн аслă вăрçи хыççăнхи хавха аванах сисĕнет. Паллах, 1941–1945 çулсенчи халăх романтики, çĕнтерӳ хавхаланăвĕ 1918 çулта пулма та пултарайман. Ун чухне Кушлавăш уйне чăнласах çитнĕ хĕрлĕ салтаксем кăмакара пиçсе выртакан çăкăрсене те пуçтарса çӳрени, хресченĕн (вăл пуян е чухăн пулнине пăхмасăрах) юр-варне вăйпа туртса илни паллă.

Хăйсен ирĕкĕпе Хĕрлĕ çара йышлăн кайни те ун чухнехи чăнлăхпа тӳр килмест. Элкер хăй те 1919 çулта хайланă «Хура вăрман хушшинче...» ятлă сăввинче вăрманта пытанса çӳрекен дезертира курни çинчен çапла калани пур:

Хĕрлĕ çара каясран
Пытаннă вăл – шиклĕ тир.
Пур-ха ун пекки паян...

Ун чухнехи хресчене вăрçă йăлăхтарса çитерни, вăл икĕ çарĕнче те хăй ирĕкĕпе пулманни иккĕленӳсĕр. Кунта фашистла Германие çĕнтернĕ хыççăнхи çĕкленӳллĕ хавха тата романтикăлла курăм хуçаланать. Вăлах хайлав пуçламăшĕнче реалистла çырса кăтартнă ĕç-пуçпа ӳкерчĕксене хĕссе

кăлараканĕ, фабулăна романтизм çулĕпе яма пулăшаканĕ. Элкер пултарулăхĕнчи çапларах пулăм унăн «Хĕн-хур айĕнче» хайлавĕн 1947 çулта пичетленнĕ вариантĕнче те курăнать.

«Хĕн-хур айĕнче». Хайлав малтанласа «Сунталăн» 1925 çулхи 8-мĕш номерĕнче пичетленме пуçланă. Унта автор çапла ăнлантарнă: «Айăпсăр таркăн» ятлă историлле поэмăн малтанхи сыпăкĕ». Хайлав умне икĕ эпиграф кĕртнĕ: «Пурнăç – хӳри пăрнăç» (ваттисен сăмахĕ); «Ни пурмис мар, ни тиек мар – Пуççапмасăр кĕмелле мар» (авалхи юптаруллă юмах). Поэма 1926 çул пуçламăшĕччен (1 №) V сыпăк таран пичетленнĕ. Кайран вăл тепĕр хут 1928 çулта (7 №) тин çапăнма пуçланă, 1929 çул пуçламăшĕнче юлашки XIII сыпăкĕ («Шăннă вăрман хӳттинче») кун çути курнă. Унтах вăл малалли сыпăксенче мĕн пулса иртессине каласа панă.

Çак журналта пичетленнĕ текста хайлавăн *пĕрремĕш вариантĕ* (редакцийĕ) тесе хакламалла. Ăна Элкер 1923–1928 çулсенче хайлани паллă. «Хĕн-хур айĕнче» поэмăна 1923 çултах çырма пуçланăччĕ, – аса илнĕ сăвăç 1931 çулта çапăнса тухнă кĕнекин ум сăмахĕнче. – Ун хыççăн ăна пĕр-икĕ тапхăр та çырма пăрахса, çулталăк-çулталăкĕпе вырттарнисем те пулчĕç. Анчах поэмăн малтанхи сыпăкĕсем («Сунталра») çапăнса тухнă пирки тата вулакансенчен нумайăшĕ ăна çырса пĕтермех ыйтнă пирки ку поэмăна юлашки çулсенче те пулин çырса пĕтермеллех килчĕ. Çакăнпа пĕрлех поэмăн «Сунталра» çапăннă сыпăкĕсене те чылай çĕнĕрен тӳрлетсе якатмалла пулчĕ. Анчах 6–7 çул ăна пролетари литературин паянхи задачисемпе çыхăнтарса çитерме ниепле те май пулмарĕ».

Ум сăмаха 1930 çулхи юпан 20-мĕшĕнче çырнине шута илсен, поэмăн *иккĕмĕш вариантне* Элкер 1929–1930 çулсенче йĕркелесе çитернине пĕлетпĕр. Унта вăл пилĕк çĕнĕ сыпăк хушнă, хайлав вĕçне «пролетари литературин задачисемпе çыхăнтарса» урăхлатнă. Ку редакци 1931 çулта уйрăм кĕнекен пичетленсе тухнă.

Хайлавăн *виццĕмĕш вариантне* Элкер 1946 çул вĕçĕпе 1947 çул пуçламăшĕнче йĕркелени паллă. «Декабрьпе январьте тата февралĕн пуçламăшĕнче хамăн «Хĕн-хур айĕнче» поэмăна çĕнĕрен тӳрлетсе тухрăм, – пĕлтерет вăл пĕр çырăвĕнче. – Икĕ главине (VII, IX главасемччĕ пулас) кăларса пăрахрăм. Вĕсен вырăнне çĕнĕрен виçĕ глава (750 йĕрке) çырса хушрăм. Поэмăна ĕнер Чăвашгиза тăратрăм ĕнтĕ. Пуçăм çинчен тахçантанпа капланса тăракан пысăк çĕклеме илсе пăрахнă пекех пулчĕ. Поэма тексчĕн чылай вырăнĕсене тӳрлетрĕм. Хăш-пĕр уйрăм сăмахсене улăштарасси те сехечĕ-сехечĕпе шухăшлаттарчĕ. Нумай ыйхăсăр каçсем ирттермелле пулчĕ. Восстани тапхăрне сартăм. Çав кирлĕрехчĕ унта».

Ку вăл Элкерĕн 1947 çул тĕлĕнчи курăмĕ, ăнланăвĕ. Хайлаври ĕç-пуçа ытлашши революцилетсе янине ун чухнехи литертурăра вăй илнĕ романтикăлăхпа ăнлантарма кирлине маларах каланăччĕ ĕнтĕ.

50-мĕш çулсен вĕçĕнче «Хĕн-хур айĕнче» хайлавăн виццĕмĕш вариантне вырăсла куçарма пуçăнаççĕ. Куçаруçăсем автора поэма вĕçне улăштарма, хусахсемпе (вĕсене Пахомка çынни Ивашка ертсе çӳрет-мĕн) пĕрле пултарма, ирĕклĕхшĕн кĕрештерме сĕнеççĕ. Кăмăлсăр пулсан та, Элкер çак вĕçленӳпе килĕшет, виццĕмĕш редакцин вĕçне куçаруçăсем сĕннĕ пек улăштарать. Çапла майпа хайлавăн *тăваттăмĕш вариантĕ* çуралать. Ăна автор 1960 çул тĕлнелле юсаса çырнă, çав çулах чăвашла тата вырăсла пичетлесе кăларнă.

Пĕрремĕш редакцин хăй евĕрлĕхĕ. «Сунталăн» 1928 çулхи 7-мĕш номерĕнче (унта VI сыпăк пичетленнĕ) редакци çапла ăнлантарни пур: «Ку историлле поэмăн пуçламăшĕ V сыпăк таран <...> çапăннăччĕ. Ун чух поэми çырăнса пĕтеймен пирки ăна малалла çырса пĕтернĕ». Çавăнтах I–V сыпăксенче мĕн пулнине çапла каласа панă: «Пĕр-икĕ çĕр çул ĕлĕк чăваш çĕршывĕ питĕ вăрманлă пулнă. Вырăс улпучĕсем хĕснинчен хăтăлас тесе тата ирĕклĕ çĕр шыраса чăвашсем сĕм вăрмансен тĕпнелле куçа-куçа ларнă. Сĕм-сĕм вăрмансем варринче пĕчикçĕ ялсем пулса тăнă. Çавăн пекех Кĕçĕн Çавал вĕçĕнче те Кĕçĕн Кушлавăш ялĕ пуçланнă. Пăкачав пăлхавне пусарнă хыççăн

патша тарçисем ку улахри яла та часах тупаççĕ. Ял куланай (хырçă) йăвăррипе аптăрать. Куланай татайманнисене пурмиссем хулăпа çаптарса хĕнеççĕ. Чакка ятлă çамрăк чăваша та хĕнеççĕ, вăл аран сывалать. Çак ялтах Алапит пуян пурăнать. Вăл Чаккана чылаях хур кăтартнăскер. Çав вăхăтрах Кушлавăш енне Пăкачавпа пĕрле çӳренĕ пăлхавçă – халь пытанса çӳрекен Пахомкка хусах – пырса çитет. Унпа пĕрле йывăр пурнăçран тарнă таркăн хресченсем çӳреççĕ. Вĕсем пурте хăйсене «хусахсем» теме юратаççĕ. Таркăнсем улах ялсенче кĕретех çӳреççĕ. Вĕсем пуянсене хăратаççĕ, Алапите çаратаççĕ. Малтанхи хут Чакка патне те кĕрсе ĕççе çиеççĕ. Алапит, хăйне çаратсан, ку ĕçе таркăнсем Чакка хĕтĕртнипе турĕç тесе кĕвĕçет».

Хайлавăн çак фабулине автор хăех çырса пани иккĕленӳсĕр. Хурахсем хăйсене ирĕк хусахпа танлаштараççĕ пулсан та, яла вĕсем çаратма пыни Чаккана каланă çак сăмахсенчен те курăнать:

– Тавай эс пире шăрттан е сĕт-çу!
Паран тăк халех пар, хамăр лайăх чух,
Унсăрăн пуçна çиетпĕр, асту!.. –
Терĕç хаяррăн тискер этемсем.
Тутăх хĕçсемпе вăльт-вальт вылятса
Чаккана харăс хăмсарчĕç вĕсем,
– Ваклатпăр халех!.. – терĕç хăратса.

Хусахсем кайсан ял çинчи «çунатлă сăмах юмаххи Пĕрре çине иккĕ ӳссе хăпарать». Пуринчен те ытларах шар курнă Алапит вăрă-хураха хăйĕн çине тĕллеттерекенĕ Чакка тесе шухăшлать, ун çинчен «шалпă пама кантура чупать».

VI сыпăкра вăл халăха Чаккана хирĕç тăратса ăна çыхса пăрахтарасшăн. Тевенеш старик Алапитпе Чакка хушшинчи хирĕçĕвĕн тĕп сăлтавне (пĕрремĕшĕ иккĕмĕшне салтака суттарнине, тиексене мулпа илĕртсе хăйĕн ывăлĕ вырăнне Чаккана салтака яртарнине) пĕлет, пухура çав вăрттăнлăха калама пуçăнать. Çакна тӳсеймен «Алапит ăна ярать те илет, Ăш-чик урнипе,

чĕрĕк самантра Ватă шăм-шака вăл хуçса ӳкерет». Пухăва пырса кĕнĕ Чакка шăртланса каять, Алапитпе унăн Итрен ятлă ывăлне «тăн кĕртсе илет».

Тевенеш ял халăхĕн пĕрлĕхĕшĕн, влаçри тӳре-шарапа вырăс чиркӳçисене чăвашăн тĕп тăшманĕсем пек курать çав ватă. Хăйĕнчен каçару ыйтма пынă Алапите вăл акă мĕн «хĕрӳллĕн, хыттăн хурать каласа»:

– Алапит!.. асту:
Мĕскĕн чăваша нихçан хур ан ту.
Пурмис-тиекпе, вырăс пупсемпе
Явăçма явăç; анчах чĕрӳпе
Ан пул вĕсемшĕн чăн-чăн тĕрĕс тус,
Çиелтен кăна шуçса пырса кус!..
Чăваш çынни те вĕсем май пулсан
Пĕтес пать вара – мĕнле пурăнан!
Канлĕн сывлама пулмĕ апла май,
Халь те вĕсенчен тӳсетпĕр нумай.

Çакăнта хайлаври тĕп хирĕç тăру уççăн курăнать. Тӳре-шараран сĕм вăрман варрине тарса хăтăлнă чăваш пĕр хушă çăтмахри пек ырă курса пурăннă. Кĕçех пуçлăх таврашĕ вĕсене шыраса тупать, хырçă-марçă хырса «Чухăн халăха вăл пăвса минретет». Кун пек чухне ял çыннисен пĕр чăмăр пулса наци пусмăрçисене хирĕç тăмаллаччĕ ĕнтĕ. Çук çав, ялта «чăваш чăвашах çиет», пĕри теприн инкекĕшĕн савăнать.

Пĕрремĕш вариантри конфликт ял интересĕсене хӳтĕлекенсемпе (ватă Тевенеш, Чакка) хăйсемшĕн кăна хыпса çунакансем (Алапитпе сутник, чее Текей) хушшинче пулса иртет. Мулпа та пурмис-тиек тивлечĕпе ял хуçи пулма ĕмĕтленекен *сутăнчăк чăваш сăнарĕ* халăх сăмахлăхĕнче анлă сарăлнă. Хусан ханлăхĕ вăхăтĕнче ун йышши чăваш Урасмет пулнă. Айтар (П.Осиповăн «Айтар» драминчи сăнар) прототипĕсем XVI–XVII ĕмĕрсенче пăлхавçă чăвашсене сутса турхана тухнă, çапла майпа пуйса кайни паллă.

Элкер çак истори чăнлăхне питĕ лайăх ăнланнă. Унăн Алапичĕ – çав сутăнчăк чăвашсен XVIII ĕмĕрти ĕмĕлки.

Хура халăха хӳтĕлекенсем хушшинче ытларах Тевенеш йышшисем тĕл пулаççĕ. Ял çыннине пĕр-пĕринпе хирĕçтересшĕн мар, пуçлăхсене те çураçтарма тăрăшаççĕ ун пеккисем. Малтанах Чакка та «пурмиса пуç çапса калать», çапла тилмĕрет:

Тăлăххăн ӳсрĕм, –
Темĕн те тӳсрĕм!..
Тырри-çке пулмасть...
Укçи тупăнмасть...
Эх, мĕскĕн, мĕскĕн... тинех пĕтрĕм пулĕ,
Ним те мар вĕсемшĕн çыннăн куççулĕ!..

Вĕçне çитнĕ Чаккана пуппа тиечук шăртлантарса яраççĕ: вĕсем турăш куçĕсене шăтарнăшăн виçĕ тенкĕ тӳлеттересшĕн пулаççĕ.

Шалт кӳтсе çитнĕ, шăртланнă Чакка
Тек чăтаймарĕ пуппа чечука;
Пĕрех кăшкăрать вăл, хаяррăн пăхать,
Сасартăк пупа çӳçрен çулăхать:
– Эсир-и эсре-е-ел, шуйттан çилхисем!
Çăтасшăн чĕрлех чăвашăн пуçне...
Ак сире, на вăт, хĕсме вĕрентем!
Пурпĕр пĕтетпĕр – ан кĕт ыррине, –
Тесе вăл пуçлать пупа лăскама.

Çакăн пек хăтланнишĕн хăйне каçарас çуккине ăнланнă Чакка ирĕксĕртен таркăн пулса тăрать. Халĕ ĕнтĕ вăл урăхла шухăшлать: «Мĕн-ма шăна пек имшеррĕн пурнас?! Упа-кашкăрпа – упах пулмалла!» Элеке пула таркăна тухнă Чаккана хӳтĕлесе Тевенеш патшалăх йĕркисене çапла питлет:

Тискер, пит усал!.. Мĕнрен лайăх тес?
Тӳсми куланай çултан-çул ӳсет,

Сутник те хĕсет, пупĕ те сĕвет,

Хресчен çĕрне улпут йышăнать,

Кантур патакки чĕр юн юхтарать...

Малтан хура вăрманта шăллĕпе тарса пурăнакан Чакка хăйĕн килĕнчи лаши-ĕнине кантур çыннисем илсе кайнине пĕлсен тăшманĕсене тавăрас тĕллевпе Пахомкăна шырама каять. Çак пĕрремĕш редакцин малалли ĕç-пуçне автор хăй çапла çырса ăнлантарнă:

«XIV. Чакка килĕнчен тарнă хыççăн эрне яхăнран Пахомка шайккине тупса ялне тавраăнать. Таркăнсем сутникпе Алапите вĕлереççĕ, вĕсен пурлăхĕсене çаратаççĕ. **XV.** Кантура çунтарса яраççĕ; унта ларакансене тата Чакка пурлăхне те çăлса илсе таркăнсем каллех Чакка çемйипе пĕрлех сĕм вăрманти улах вырăна пытанаççĕ. **XVI.** Çуркуннехи вăхăт. Чакка çемйи таркăнсемпе пĕрле улах çĕр пӳртсенче пурăнать. **XVII.** Таркăнсене сасартăк «апшурни камантă» текен салтак ушкăнĕ çитсе хупăрлать. Пахомка сывă юлнă юлташĕсемпе тарса хăтăлать. Чакка çемйи-мĕнĕпех алла çакланать. Камантă пуçлăхĕ ахвитсер Ятаринпе Тайпине кантура ăсатать. Чаккана Пахомкăна йĕрлеме хăйпе пĕрле илет. **XVIII.** Чакка, Пахомкăна тытса пама пулса, «апшурни каманта» вăрман тĕпнеллех илсе каять. Çĕрле, салтаксем çывăрнă вăхăтра, вăл аранах вĕçерĕнет те тарать. **XIX.** Кунĕпе чупса çĕрле пулнă вăхăтра Чакка Кушлавăш уйне тухать. Уйра Мики юрри сассипе лашасемпе выртакансем патне пырать. Микирен лаша илсе çав çĕрлех вăл хăй çемйине çăлма кантура вĕçтерет. **XX.** Тул çутăласпа кантура çитсе Чакка малтанах хуралçă салтака вĕлерет, унтан арăмне путвалтан кăларса Мики лаши çине иккĕн утланаççĕ те тарма пуçлаççĕ. Анчах пӳртре çывракан хуралçă салтаксем йытă харлатнипе сиксе тухса Чаккасене хăваласççĕ. Вĕсем пăшалпа персе малтан Тайпине тивретеççĕ, унтан лашине чикелентереççĕ. Тайпи вилет. Чакка хăй тарса хăтăлать. **XXI.** «Апшурни камантă» ялсенче çĕмĕрет. Чакка пĕр вăхăта пытанса пурăннă хыççăн нимĕн сас-чӳсĕр таçта кайса çухалать. **XXII.** Чакка çухални шăп 20 çул иртет. Ватăлнă Текейпе

Итрен Текейĕн тарçине – тăлăх Арлана – илсе арман чулĕ илме Чĕмпĕре каяççĕ. Çуллахи шăрăх кун вĕсем Чĕмпĕре çитсе Атăл хĕррине анаççĕ. Çав вăхăтрах Атăл тăрăх паршăсем туртса хăпарнă пурлаксем çыран хĕрринче канса лараççĕ. Пурлаксем хушшинче йăвăр ĕçсемпе курпунланнă, хуйхăпа кăвакарнă чирлĕ Чакка та пур-мĕн. Вăл Текейпе Итрене паллать. Тĕлĕнеççĕ лешсем. Арлан хăй ывăлĕ иккенне пĕлтереççĕ. Чакка хурланать. Текейпе Итрен каçару ыйтса Чаккана тăван ялне таврăнма чĕнеççĕ. Чакка килĕшмест, унăн Чулхулана çитмелле, унта вăл хăйпе пĕрле Арлана та илсе каять. **XXIII.** Чĕмпĕртен тухса Шупашкар енне çывхарсан Чаккан чирĕ вăйланать. Ăна пурлаксен ĕретĕнчен кăларса укçа тӳлемесĕрех пăрахса хăвараççĕ. Виличчен вăл Арлана хăй пурнăçĕ çинчен тĕппипех каласа пĕлтерет. Арлан унăн виллине Атăл хĕрринчи юман ращине пытарать. Ашшĕ тăпри çине ларса Атăл хумĕсем çине нумайччен пăхса шухăшлать. Унтан, ашшĕ паллаштарнă тĕнчен тĕрлĕ енĕсем çинчен шухăшласа, ирĕксĕр тăван çĕршывĕ еннелле танкăшать» (Сунтал. 1929. 1 №).

Çак вариантăн вĕçĕ ыттисенчен урăхларах пулнине ĕнентерес тĕллевпе автор каласа панă фабулăна туллин илсе кăтартма тиврĕ. Хайлава чĕрĕлетекен, сывлăш кĕртекен *приключенилĕх* унăн тĕп идейине пачах та уçăмсăрлатмасть. Патшапа наци пусмăрĕнчи пурнăç чăваш ялне чăмăртама мар, аркатма май парать тет автор. Чунĕсем пулсан чул хушшинче те усрăпăр текен философипе çырлахнă халăхăмăр пĕр сассăр ахлатать те тӳсет, вĕçне çитсен кăна вăл пурпĕрех пĕтмелле тесе хирĕç тăрать. Çавăн пек сăнар вăл Чакка, йăваш чăвашран «хĕрӳ чĕреллĕ» (Тайпи сăмахĕсем) пулса тăнăскер, *пусмăрпа сутăнчăклăха* хирĕç тăма хăю çитернĕскер. Ку тĕлĕшрен Чакка чăннипех те чăваш халăхĕн патриочĕ.

Чăваш литературинче сутăнчăклăх темине И. Юркин, К. Иванов пуçласа хускатнă, М. Юрьевпа П. Осипов психологи тĕлĕшĕнчен тарăнлатнă. Элкер çав феноменăн тĕп сăлтавĕсене пур енлĕн кăтартса пама тăрăшнине палăртмалла. Яла тытса тăракан Алапит-Текейсен хăвачĕ пурмис-тиексен

умĕнче йăпăлтатнипе вĕсен мăшкăлне тӳсме, çав хушăрах элеклеме те ĕçе-пуçа хăйсене май çавăрма пултарнинче кăна иккен. Вĕсем чунĕпе хăравçă та чее, ялтан хулана тухсан ыттисем пекех мĕскĕн. Кунта класс хирĕçĕвĕ мар, чи малтан чăваш ялĕнче тымар янă *куштанлăх*, унпа çумăнах çӳрекен *сутăнчăклăх* (тăвана-пĕтене, ял-йыша, халăха, тĕне сутни) палăрать. Вĕсем вара обществăн социаллă аталанăвĕпе мар, халăхăмăрăн конкретлă историйĕпе çыхăннă.

Хайлаври историлĕхе те чи малтан çав куштанлăхпа сутăнчăклăхăн уйрăм тапхăрти хăйне евĕрлĕхĕнче (кунта – пурмис-тиек умĕнче йăпăлтатакан, ял хуçи пулма ĕмĕтленекен, мулшăн чунне пама хатĕр чăваш хресченĕ) курмалла. Пăкачав ячĕ те конкретлă вăхăта мар, ытларах чун туртăмне (ирĕклĕхе) символлать. Пахомка çинчен калакан вырăнти халапсене тĕпе хурса Элкер ăна малтан чăннипех Пăкачав çынни тесе ĕненнĕ. Ун çинчен çырнине Чулхулана çитсе вуласан вăл 1926 çулхи çурлан 28-мĕшĕнче çапла çырса хурать: «После того, как прочел названную книгу, мне стало ясно, что, называя Пахомку – вожака шайки разбойников – осколком пугачевщины, я ошибся. Оказывается, он жил значительно позже после пугачевского бунта».

Хăш вăхăтри ĕçсене çырса кăтартнă-ши Элкер? Пахомка XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче çаратса çӳренĕ, Пăкачав XVIII ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче çĕмĕрттернĕ, чăвашсем Кушлавăш уйĕнче XVI ĕмĕртенпех пурăнма пуçланă. Тĕне те çав тапхăртах кĕме тытăнни паллă. Улпутсем чăваш хресченĕн çĕрĕсене XVII ĕмĕртен пуçласах туртса илсе пынă.

Хайлавра ӳкерĕннĕ вăхăт *патшапа наци пусмăрĕ чăваша халсăрлатса хăварнă, мĕскĕне кăларса çитернĕ вăхăтпа* тӳр килет. Çав самана XVII ĕмĕр пуçламăшĕнчен мĕн XX ĕмĕрчченех хуçаланнă.

Иккĕмĕш редакцин хăй евĕрлĕхĕ. 1929–1930 çулсенче çырнă редакцине Элкер çак тĕп улшăнусене кĕртнĕ: 1. «Икĕ юнав хушшинче» (XIII) сыпăка хушса унта Алапит сăнарне вăйлатнă. Хусах-таркăнсем Кушлавăш

енне каллех çитеççĕ, ĕçме-çимелли пуçтарса çӳреççĕ. Вăй вĕсен енчине туйнă Алапит Пахомкăпа унăн çыннисене «пылпа çу пекех чыслать» иккен, çав хушăрах «чĕри-чунĕпех кĕтет пурмиса». 2. Алапите пуянтарах çын пек кăтартнă: хусахсем унăн кĕмĕл укçине пĕрремĕш редакцири пек 60 тенкĕ мар, 300 тенкĕ таранах çаратаççĕ. 3. Элкер «Инкек çине синкек», «Улпут хресченĕсем патĕнче», «Салтаксен тискерлĕхĕ» тата «Чакка – ял-йыш сутĕнче» сыпăксем хушнă. Ĕç-пуç çапла пулса иртет: аманнă Чакка Кульцав улпучĕн аллине лекет, çĕрле ăна вырăс хресченĕсем тарма пулăшаççĕ. Салтаксем Кĕçĕн Кушлавăш ялне тĕппипе çунтарса яраççĕ. Ял халăхĕ Чаккана суд туса тӳрре кăларать.

4. Чакка Чĕмпĕртех вилет, унăн ывăлĕ Илюш (малтанхи вариантра – Арлан) ашшĕ юлташĕсемпе бурлакра çӳреме килĕшет.

Иккĕмĕш вариантра ытти халăхсен те пуянĕсемпе чухăнĕсем хирĕçеççĕ, чухăнсем чухăнсене пулăшаççĕ текен шухăша вăйлатнă. Салтаксен тискерлĕхĕ пирки тĕплĕнрех çырса кăтартнă. Ун чухнехи пролетариат никĕсĕ бурлаксем пулнине, вĕсенчен каярах рабочисем йышланса каяссине, вĕсем пĕрлешсе аслă пăлхавăр тăвасса систернĕ. Çакна пролетари литературин ун чухнехи ориентирĕ, ăнтăлмалли тĕслĕхĕ теме юрать.

Иккĕмĕш вариант туллирех, чĕлхе тĕлĕшĕнчен якарах пулсан та вăл пĕрремĕшĕнчен çӳлерех тăрать тесе калаймăн. Çав хушăрах унта малтанхи тĕп идея вăйлах палăрать. Текей те малтан Тевенеш ăнланса илнĕ тĕрĕслĕх патнех çитет:

Мĕскершĕн вăрçас, ял-йыш, тăвансем!
Вырăссемшĕн пулсан – эпир пĕр усал...
Итрен е Мики? – пĕлмеççĕ вĕсем.
Вĕсемшĕн эпир пурпĕр – сĕм чăваш;
Апшурни камант кăтартрĕ кăна.
Тавай, тăвансем, пурнар пĕр канаш...

Виççĕмĕш редакци. Кунта Текее юри чееленнĕ пек кăтартнă. Малтан Текее Ериле старик мухтатчĕ. Ку вариантра вара Мики акă мĕн калать:

Нихçан та эпир санпа пулас çук!

Манмастпăр: эс те, шăлкăн йытăлла,

Çыртаттăн вăрттăн хăвăр вăйлă чух.

Виççĕмĕш редакцине Элкер «Пăлхав», «Уес хулинче» тата «Çапăçу» сыпăксене кĕртет, «Алапит ĕçки» вырăнне «Кĕр сăри» ятлă сыпăк туса хурать, унта чухăнсен ĕçкине хушса кăтартать. Кунти Чакка – атеист та, улпут таврашне пĕтерме ĕмĕтленекен пăлхавçă та:

Унтан кăшкăрать вăл:

– Тискер кантура

Халех кĕллентерĕр пĕр çӳп юлмиччен...

Вара ыткăнатпăр уес хулине.

Ăна йышăнатпăр влаçсем сисиччен.

Тытатпăр, хупатпăр выç пуçлăхсене.

Влаça йĕркелетпĕр аван çынсенчен...

Пире курса тухĕç ялсем, вулăссем,

Çĕкленĕç талккишпе ытти уессем...

Чаккан çĕнĕ сăнарĕ романтикăлла пулса тухнă. Вăл ял пуянĕсемпе кăна мар, влаçпа та (патшалăх тытăмĕнчи çынсемпе) кĕрешет, пысăк пăлхав çĕклеме ĕмĕтленет. Çакă пурнăçлама май килмен ĕмĕтне вăл хăйĕн ывăлне халалласа çапла калать: «Илюшăм, тăнла... аçусен ĕçне – Халь сирĕн чĕртсе, туса пымалла... Çав пирĕн ĕмĕт çиттĕр хăй вĕçне...». Паллă ĕнтĕ: çав ĕçĕн вĕçĕ – 1917 çулхи юпа уйăхĕнчи пăлхавăр. Çав пуласлăха васкатма Илюш бурлак пăявне туртма кĕрĕшет... Çав перспектива суя пулнине вырăс куçаруçисем туйман мар ĕнтĕ. Çавăнпа та вĕсем Илюша бурлака мар, чăваш ирĕклĕ хусахĕсене шырама яртарма сĕнеççĕ. Çапла майпа йĕркеленет тăваттăмĕш вариант. Çак юлашки икĕ редакци те, малтан органикăлла хайланнă текст çумне хушăнса-сыпăнса йĕркеленнĕскер, ăнăçсăр пулса тухнă. Поэмăна тепĕр 17 çултан юсаса çĕнетнĕ чух автор тĕнчене малтанхинчен урăхларах туйса

курнă, репрессипе вăрçă вăхăчĕсене тӳссе ирттернĕ вăл. Çавăнпа та 68 çула кайнă Элкер «Хĕн-хур айĕнче» поэмин тăваттăмĕш редакцийĕ пирки: «Эпĕ ăна илемлĕх енĕпе те, идейи енчен те татах та çӳллĕрех вырăна хăпартрăм» тесе каланине тиркевлĕ куçпа пăхса ăнлантармалла. Кашни хайлавăн хăйĕн çырнă вăхăчĕ тата çавăн чухнехи авторĕ пур. Пĕр çырăннă текстри автор сăнарĕ çирĕпленсе, пĕр улшăнмасăр юлать пулсан, çыравçă вара çулсерен улшăнса пырать. Çак тĕлĕшрен те пирĕншĕн поэмăн малтанхи икĕ редакцийĕ пĕлтерĕшлĕрех тата хаклăрах пек. Унăн историлле вырăнĕ чăваш литературин 1923–1930 çулĕсенче çирĕпленнĕ. Çавăнпа илĕртет вăл пире, паянхи вулавçăсене.

Элкер прози

1917 çулта «Хыпар» хаçатра пичетленнĕ хăйĕн статйисен вĕçне Ç. Элкер «Кушлавăш çынни Семен В.Эльхерин», «С.В.Э.», «С.Э.» тесе кăтартнă. Пĕррехинче унпа пĕр çуртрах пурăнакан Г.Тал-Мăрса ăна çапла каланă: «Эпĕ сана Эльхерин теместĕп, мĕншĕн тесен мана хушамату «херин» тесе вĕçленни килĕшмест. Ăна Эрхел е Элкер темелле. Улăштарас пулать хушаматна». Хăйĕн литературăри псевдонимне те вăл Элкер пекех тавраш ятне кĕртсе лартнă.

Çав вăхăтра чăваш çыравçисен вăрттăн ят илес туртăм вăйланать. Çак пулăма вĕсем чăваш ячĕ-шывĕ христиансен пулнишĕн çырлахманнипе, наци ăнĕ ӳссе пынипе ăнлантармалла. Пĕрисем пĕр-пĕр пахалăхлă япалана символланă (Çеçпĕл, Ахах, Юман), теприсем хăйсен ятне йăх-таврашра шыранă (Милли, Тал-Мăрса, Элкер). Çак туртăм вăл е ку çыравçăн пултарулăхне хăй евĕрлĕ çулпа кайма пулăшнă. Тăван йăх, ял аваллăхне пĕлме тăрăшни юлашкинчен чăваш халăхĕн историйĕ патне илсе çитернĕ. Ун йышши çыравçăсем калура ытларах чухне аса илӳ çине таянаççĕ, аваллăх халапĕсене кăмăлласççĕ. Пурнăç ыйтăвĕн чылай хуравне вĕсем историре шыраççĕ.

Малтанхи Элкершӗн истори факчӗ вăл – хăйӗнпе пулса иртни. Çулсем шунă майăн çав пулса иртни хакланса та сăвапа куçса пырать. Ытларах чухне çав ĕç-пуç асапланупа çыхăннă. Асап тăвӗ çине утакан харкамçă тӗрлӗ хӗн-хур тӳсет, çавна май вăл сăвапа тухса пырать. Элкер поэзийӗнчи Лариван («Выçлăх аллинче»), Чакка («Хӗн-хур айӗнче»), Иван Смирнов («Вăл – вилӗмсӗр») йышшисем вилсе апостолсене çывăхланаççӗ, чăннипех те вилӗм-сӗрленеççӗ.

Элкерӗн прозăри харкамçисем урăхларах сăн-сăпатлă. Вӗсене автор пурне те ĕнентерӳлӗх куçӗпе пăхса калăплана, аталануллăн кăтартма тăрăшнă. Çак принципсем соцреализм меслетӗнчен тухса тăни паллă ĕнтӗ. Фабула-сюжетсене марксизм вӗрентӗвӗнчен мар, хăйӗн пурнăçӗнчен илни Элкере хытса ларнă эстетика картинчен тухма, ирӗк сывлăшпа сывлама май панă. Çакна унăн «Вăрçă кунӗсем» («Вутпа тăвăл витӗр») роман-хроникинче (1930–1935) аван курма пулать.

Жанр енчен пăхсан çак хайлав автобиографиллӗ повеçе çывăхрах тăрать. Çыравçă 1939 çулта «Вăрçă кунӗсем» ятпа пичетленнӗ хайлава истори факчӗсемпе тата пулăмӗсемпе пуянлатса 1949 çулта ăна çӗнӗ ятпа пичетлет, жанрне роман-хроника тесе палăртать. Тӗрӗссипе хайлав тенденциллӗрех те схемăллăрах пулса тухать. Унăн чи вăйлă сыпăкӗсем – автор хăй тӳссе ирттерни çинчен çырса кăтартнисем.

Кушлавăш уйӗнчи пӗр ялта çирӗм çул пурăннă Семен Васильева 1915 çул пуçламăшӗнче салтака илеççӗ, Пенза кӗпӗрнинчи Мокшан хулинче çар вăййине вӗрентеççӗ. Пилӗк эрне хушшинче «çамрăк салтаксен шухăшӗ вылять, юнӗ вӗрет». Вӗсем хăвăртрах фронта çитсе таракан тăшмана хăваласшăн.

Салтаксен романтики пӗрремӗш çапăçурах сӗвӗрӗлет. Çакна калавçă (хайлава тӗп харкамçă каласа панă пек йӗркеленӗ) çырнинчен пӗлетпӗр: «Юлашки кунсенче пирӗн салтаксем пит те салхуланса çитрӗç. Вӗсен утти те йывăрланчӗ... Выçă та хуйхăллă салтаксем ним чӗнмесӗр, тарăхнăн сӗнксе

утса, пиншер мăшăр ура сăтăрса хускатнипе вĕçекен хăмăр тусана çăтса пыраççĕ».

Пĕр çапăçура ураран аманнă Çемен тыткăна лекет, тĕрлĕ хĕн-хур курса асапланать. Виçĕ хут операци сĕтелĕ çинче пулнă чăваш каччи юлашкинчен ура çине тăрать, инвалидсен лагерьне лекет. Унтан вăл ытти инвалидсемпе пĕрле Раççее таврăнать. Пĕр хушă Питĕрти госпитальте вăй пухсан тăван ялне çитет, Хусанта сывалать.

Çак кăткăсах мар фабулăллă хайлаври тĕп харкамçă пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç-пуçа курать (тĕнче вăрçи, Питĕрти пурнăç, Граждан вăрçи), вĕсем çинчен уйрăм çын куçĕпе çырса кăтартать. Тĕрĕссипе унта чăн пулнипе шухăшласа кăларнине уйăрса пăхма майĕ те çук. Çапах та хăш-пĕр сăнарсене (Февралев, Цыганов, Барта, Щербаков йышшисене) автор идейăллă содержание соцреализм меслечĕпе килĕшӳллĕн йĕркелес тĕллевпе кĕртни иккĕлентермест. Вĕсем хăйне евĕр идея-сăнарсем пулса тухнă, вăл е ку идеологи тĕлĕшĕнчен ытла та тĕрĕс калаçаççĕ е хăтланаççĕ. Çав çынсене сăнланă чух автор ытларах вĕсен сăмахĕсене каласа парассишĕн тăрăшать. Çакă уйрăмах хайлав вĕçĕнче сисĕнет.

Ç.Элкер хăйĕн повеçне «Вăрçă кунĕсем» ят пани унти ĕç-пуçа хăй вăрçăра пулнă вăхăтпа (1915–1916) çыхăнтарнинчен килнĕ. Çапларах шухăшланă та вăл унăн малтанхи вариантне çырнă çулсенче (1930–1935). Çав хайлав чăннипех те автобиографиллĕ повесть пулнă. Унта пейзаж пĕлтерĕшĕ капашсăр пысăк, детальсем те йышлă, вăхăт ерипенрех шăвать. Çак малтанхи варианта чи ăнăçли тесе шутламалла.

Ç.Элкерĕн тепĕр повеçĕ (ăна автор роман тенĕ) «Шурăмпуç килсен» ятлă. Ăна автор 1940 çулта уйрăм кĕнекен кăларнă, 1952–1953 çулсенче çĕнĕ сыпăксем хушса хайлава чылай пысăклатнă. Шел пулин те, çав тулли вариант та ăнăçлах пулса тухайман: унти идея-сăнарсем (Бурцев большевик, Любимов пуп) малтанхи редакцири пекех схемăллă, чĕрĕ мар, лозунг сăмахĕсемпе каласа кăмăлласççĕ. Автор унта Долбиловпа Вера Ивановна юратăвне хушса кăтартни хайлава чĕрĕлĕх кĕртет ĕнтĕ. Çĕнĕ вариантра

И.Я.Яковлев тата ытти паллă çынсем те пур, хайлаври талккăш (ĕçсем Турханта тата Етĕрнере те пулса иртеççĕ) нумай анлăланнă. Çав улшăнусем хайлава роман жанрĕ енне чылай сулăнтараççĕ. Çапах та унти калăва нумай сийлĕ тата стильлĕ тесе калама çук пулĕ.

Ĕç-пуçа çăралатни, характерсене типласа тата аталанура кăтартни хайлава эпикăлăх сĕмĕ кĕртеççĕ, чи малтан соцреализм эстетикин тĕп енĕсене аса илтереççĕ. 30-мĕш çулсенче çыннăн ĕçри паттăрлăхĕпе çĕршыв хуçалăхĕ ура çине тăнине сăнлани уйрăм çын пурнăçĕпе туйăмне çырса панинчен пĕлтерĕшлĕрех тесе ăнланни çыравçăсене ушкăнла ĕçе сăнлакан проза патне илсе çитернĕ. Чăваш хресченĕн ăнне улшăнура кăтартма кăмăллакан Ç.Элкер те çав çулсенче поэзирен прозăна куçса каять. Çапах та вăл сăвăç пулни «Шурăмпуç килсен» повеçре те палăрать.

Хайлаври харкамçăсене Ç.Элкер чăн пурнăçран илни иккĕленӳсĕр. Калăпăр, Муççа çыравçăн ашшĕне Ваççана, Леврен Ç.Элкере хăйне, Çитăр Иванĕ хăйсен ялĕнчи И.Сидоров хресчене аса илтереççĕ. «Иван Сидоровăн арăмĕ вырăс майриччĕ те, çавăнпа ăна ялта «Майра Иванĕ» тетчĕç, – каярах аса илнĕ çыравçă. – Сидоров ялта шкул çурчĕ лартас пирки тата двухклассăй шкул уçас пирки хытă тăрăшрĕ: пухусем пухса приговорсем тутарчĕ, хăй вăйĕпех уесри земски управĕсене кайса çӳрерĕ... Вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн инспекторĕпе И.Я.Яковлевпа тата Хусанти учительсен семинарийĕнчи чăваш преподавателĕсемпе (Кузьма Сергеевпа, Ф.Н.Никифоровпа тата ыттисемпе те) çыхăну тытса тăратчĕ, вăхăтран-вăхăт вĕсем патне ятарласах курса каласма тесе кайса килетчĕ. Аслă ывăлĕ унăн Чĕмпĕр шкулĕнче вĕренетчĕ...»

«История родного края» кĕнекере (Чебоксары, 1993. Ч. 1) Н.А. Почуев учителе (вăл социал-демократсен Кăрмăш–Етĕрне–Васильсурск ушкăнне йĕркелекенĕсенчен пĕри пулнă) арестлени çинчен калакан документ пур (276 №). 279-мĕш номерлĕ документра Туçи вулăсĕнче (унта Ç.Элкерĕн тăван ялĕ те кĕнĕ) социал-демократсен ушкăнĕ ĕçлени пирки каланă. Тĕп активистсем çаксем пулнă: В.Богоявленский тиек, Таисия Будникова тата Анна Андреева

вĕрентекенсем, Будниковăн тăванĕ, Юхтанов, Беляев, Почуев, Долбенков. Вĕсем патне Тимахви Хури пырса çӳренĕ (350–353 с.).

1905–1907 çулсенче Кушлавăш салинче (вăл ял Пысăк Упакассинчен виçĕ çухрăмра ларать) чăннипех те революцилле ушкăн ĕçлени паллă. Ăна ертсе пыраканĕсем М.П. Долбиловпа Н.И. Почуев вĕрентекенсем (вĕсем иккĕшĕ те Етĕрне хули çыннисем) пулнă. Пĕрремĕшĕ Кушлавăшри, иккĕмĕшĕ Зеленовка ялĕнчи шкулсенче ĕçленĕ, гектографпа тĕрлĕ листовкăсем нумайлатса салатнă.

Çапла вара «Шурăмпуç килсен» повеçри сăнарсемпе хăш-пĕр ĕç-пуç чăннипех пулса иртни иккĕленӳсĕр. Çав хушăрах унта автор типласа, пулма пултарассине пулнă пек туса кăтартни те сахал мар. Сăмахран, Муççапа ытти чухăнсем земство пуçлăхне хирĕç тăни, стражниксемпе çапăçни (Улăхкассипе Уйкасра) чăннипе пулса та иртмен. Çыравçăн пурнăçа революцилле ăн еплерех улшăнса пынине кăтартас тĕллевĕ кĕрттернĕ вĕсене.

Çав çулсенчи чăваш çĕр ĕçченĕсем пĕр-пĕринпе хирĕçнин тĕп сăлтавне Ç.Элкер тĕрĕс асăрханă. Çĕр хĕсĕк пулни тарăхтарнă та вăрçтарнă вĕсене. Паллах, çав хирĕçӳсене класс кĕрешĕвĕпе кăна ăнлантарни çителĕксĕр. Наци пусмăрĕ вăйланса çитнине те, ялти куштан-сутăнчăксем влаçпа пĕр чĕлхе тупнине те курмалла кунта. Социал-демократсем улпут çĕрĕсене вăйпа туртса илме йыхăрни чăвашшăн мар, вырăс хресченĕшĕн кăна юрăхлă пулнине ăнланнă Муççа йышшисем. Çакна Ç.Элкер ăнăçлă кăтартма пултарнă. Кирек мĕнле пулсан та çак çыравçă хăйĕн прозипе чăваш романĕ енне çул хывни, вăл ăна чи малтан историлĕхпе пуянлатни иккĕленӳсĕр.

Элкер калавĕсем. Ç. Элкер калавĕсем чылай чухне пулни-иртнине каласа пани пек пулса тухнă. Чăвашсен пулмасла халапĕсене («Тăрнаккайпа тăрнасем», «Çĕвĕç Йăван») илемлетсе çĕнетме кăмăлланăскер, çыравçă хивре те кĕтмен çĕртен урăхла çаврăнса ӳкекен ĕç-пуçа çырса кăтартма та кăмăллана. Çав *приключенилĕхпе ăнсăртлăх*, унăн шучĕпе, *çыпăçусăр* тата *ĕнентерӳсĕр* пулмалла мар. Çавăншăнах вăл М.Данилов-Чалтунăн «Тайга

паттăрĕсем» ятлă калавне тиркенĕ. Паттăрлăх хавхиллĕ хайлаври сăнарсен хăтланăвĕ ĕнентерӳллĕ пулмаллине тĕрĕсех асăрханă Элкер. Шăпах çав енпе уйрăлса тăрать те ун пултарулăхĕнчи приключенилĕх. Тĕслĕхрен, «Вутпа тăвăл витĕр» хайлаври ĕç-пуç та, хăш-пĕр тĕлпулусем те енчен енне çавăрăнаççĕ, ăнсăртран пек (калăпăр, Çемен Хусанта Бартăпа Щербакова тĕл пулса каласни) курăнаççĕ. Çав хушăрах ун чухне венгрсемпе Питĕр рабочийĕсем Хусана шуррисене хирĕç çапăçма чăннипех пырса çитни паллă. Эппин, çав çынсемпе тĕл пулнине ĕненме те май пур.

«Унтри» калава Ç.Элкер сăваплă пурăнăç жанр тытăмне тĕпе хурса йĕркеленĕ. Тĕп харкамçă ачаран тĕрлĕ асап (унта анекдотпа мыскарасем те сахал мар) тӳссе çитĕнет, юлашкинчен сăвапа тухать (хисеплĕ пекарь ударник пулса тăрать). «Куштан» калава тĕлĕкрен пуçлани те автора интрига енне сулăнтарать. Кунти тĕп герой («пит те хаяррăн» каласакан Хаяров) сатира журналĕнче питлемелли çын, вăл хăйĕн тĕлĕкне пурнăçа кĕртет, ял пуянĕсем пулăшнипе вулăс старшини пулса тăрать. Урăх самана çитсен çав тăранми куштан нимсĕр-мĕнсĕр тăрса юлать.

Çак икĕ калавăн тытăмĕ пĕр евĕрлех, вĕсенчи тĕп харкамçăсем кăна хире-хирĕçлĕскерсем: Унтри пурнăçне Турă курса тăрать, Хаярова шуйттан хĕтĕртет. Чăваш литературинче çав ыйтусене Игн.Ивановпа И.Юркинран пуçласах хускатнă, Элкер те унта хăйĕн сăмахне каланă.

«Кашкăрсемпе çапăçни» (1963). Çак калав Ç.Элкерĕн пултарулăх лабораторине кĕрсе курма, çыравçă чăн пулнă факта илемлĕ хайлава еплерех вырнаçтарнине пĕлме май парать. 1926 çулхи çĕртмен 1-мĕшĕнче 16 сехетре Ç.Элкер хăйĕн тăван тăрăхĕнчи Йĕкĕс вăрманĕнче «Кашкăрсем» ятлă пулни-иртни çырса хунă. Çав кун кĕнекинчи пĕр вырăна илсе пăхар-ха: «Акă çатракара пĕчĕк çапă хуçăлни илтĕнчĕ. Пăхап сылтăм енне. Ку мĕн? Çын-и е пĕр-пĕр тискер кайăк? Кайăк пулас çук, хыттăнах шатăртаттарать. Пăхап. Шăпăрт выртап. Акă унччен те пулмасть, пăхнă енчен, хунав хурăнсем хушшинчен, пĕр сарă хăмăр тĕслĕ лемсĕркке пысăк йытă пекскер сикрĕ тухрĕ! Ку мĕн?! Лесник йытти мар-и? Çу-ук! Ытла та пысăк! Ара, чим,

кашкăр пулĕ-çке! Хайхи ман паталлах чупса пырать. Хăй мана сисмест-ха. Мĕншĕн тесен эпĕ сывламасăр шăппăн выртатăп. Эх-их, ун хыçĕнчен каллех тепри силленсе тухрĕ. Чĕре картах сикет. Мĕн тăвас? Икĕ кашкăр – пысăк кашкăрсем! Ун пек кашкăрсене эпĕ çуралнăранпа та курман. Çынсем каланине анчах илтнĕ. Карттин çинче курнă тата Питĕрте 1916 çулта зоологи пахчинче курнăччĕ. Анчах вĕсене те лайăх тĕсесех пăхман. Акă халь – куç умĕнчех тискер, пысăк кашкăрсем. Тапăнаççĕ пулĕ-и мана? Мĕн тăвас? Кăшкăрас-и е вилнĕ пек шăпăрт выртас?»

Илсе панă йĕркесенче те, маларах та калавçă мĕншĕн выртнине ăнлантарни çук. Вăл «тин чечекленнĕ лантăш çулçисем татса çыртакан хурт-кăпшанка» хăвалани çинчен кăна каланă. Калавра вара харкамçă «шап-шурă шăрçа сапаки пек курăнса ларакан чечеклĕ лантăш аврисене пĕр ывăç» татса çыхать те «тинех канасчĕ тесе сарăрах симĕс мăк кавирĕ çине» тăсăлса выртать. Иккен унăн килне çитме татах та пилĕк çухрăм утмалла.

«Чылай выртрăм. Урасем канчĕç. Ĕнтĕ тăрас та çул енне утас тесеттĕм. Кĕтмен çĕртенех хырлăхра хăрăк çапă çатăрт! хуçăлни илтĕнчĕ. Çаврăнса пăхрăм. Хура хăмăр йытă курăнса кайрĕ. Ку кашкăр мар пулĕ-ха, лесник йытти пулмалла. Лесникĕ хăй çулпа иртсе пырать пулĕ тетĕп...

Вăрман варринче пĕччен выртнине лесник курсан, вăл аван мар шутлама пултарассăн туйăнчĕ. «Мĕн туса выртать ку этем сĕм вăрман хушшинче? Вăрă мар-и вăл е пĕр-пĕр ухмаха ернĕ ĕçсĕр сĕтĕрĕнчĕк?» – тесе калĕ терĕм. Çавăнпа, йытти сисмесен лесникĕ хăй кураяс çук-ха кунта тесе, пĕр сиккеленмесĕр шăпăрт выртма шутларăм. Мана, вĕтлĕх хунав хушшинчи çынна, «йытти» курмасăр та иртсе кайма пултарать. Эпĕ ăна, хамран чылай аякраскерне, лайăхах куратăп ĕнтĕ. Акă вăл, пуçне çĕрелле чиксе каюра шăтăкĕсене чавкаласа тăнăскер, хăвăрт хусканчĕ те ман еннеллех чупса пыма пуçларĕ. Çывхарнăçем ун кĕлетки пысăкланчĕ, вăрăмланчĕ. Эппей! Йытă мар-çке ку... Каллех кашкăр! Мĕнле вара, хурарах сарă тĕслĕ тата?! – тĕлĕнсех кайрăм эпĕ. Унччен те пулмарĕ, çакăн йĕррипех хыçалтан тата тепĕр кашкăр чупса килни курăнчĕ. Манăн «шарлас мар, хусканас мар, тен, курмасăрах

иртсе кайĕç» тенĕ шухăш пушшех те çирĕпленчĕ. Пĕр сиккеленмесĕр выртатăп. Анчах эпĕ ĕмĕтленни пулмарĕ».

Калавра автор лесник пирки мĕн шухăшланине, мĕншĕн «пĕр сиккеленмесĕр шăпăрт» выртнине тĕплĕн ăнлантарнă. Çав хушăрах аса илӳ вырăнне (тахçан кашкăр курни пирки) кăларса пăрахнă. Çакăн йышши *сăлтавлу* Ç.Элкер прозин пĕрремĕш хăй евĕрлĕхĕ темелле.

Халĕ икĕ текст еплерех вĕçленнине танлаштарса пăхар:

«Хăрамах та пĕлмерĕм. Анчах çумра нимĕн те çуккипе çӳçеннĕ пек пулса Йĕкĕс шывĕ енне утрăм. Ахаль мар çав паян вăрмана кĕнĕ чухнех умран хура çĕлен шуса каçрĕ. Çапла паян çĕлен те куртăм. Халиччен лайăхах курман кашкăрсене те курса килентĕм. Паянхи кун телейлĕ пулчĕ» («Кашкăрсем»).

«Çан-çурăм çӳçенни çаплах иртсе каймасть-ха. Чĕре вырăнта мар. Лăпланма тесе хăрăк каска çине лартăм. Юлашкинчен хама тапăннă кашкăра пĕр хĕç-пăшалсăр çĕнтернипе хавасланса тăтăм та çул çине тухса уй еннелле утрăм.

Ахальтен мар ку вырăна «кашкăр путмарĕ» теççĕ. Чăнах та нумай пулас кунта вĕсем тесе шухăшласа илтĕм çулпа пынă чух.

Ялта паллă сунарçăпа калаçрăм.

– Тĕксĕм хăмăр тĕслĕ кашкăрсем пур вĕсем, анчах та сайра. Сăрă кăваккисем пек мар, питĕ хаяр теççĕ вĕсене. Юрать-ха ху çине сиксе ларайман. Хăвăн ăсу çитнĕ тата! – терĕ вăл хуллен кула-кула.

– Ара, этем-çке-ха! Этем тени пур тискер кайăкран ăслăрах, чеерех! – терĕм хама мухтанă сунарça» («Кашкăрсемпе çапăçни»).

Калаври ĕç-пуçа çыравçă пĕтĕмпех илемлĕ идейăна пăхăнтарнă. Çавăнпа та унпа çыхăнман детальсене вăл кăларса пăрахнă. Кун кĕнекинче çырнине чăн пулнине пурне те кĕртнĕ. Харкамçă кашкăрсемпе çĕлен курнă куна телейлĕ тесе шутлать. Калав идейи вара ятрах палăрать: «Этем тискер кайăкран ăслăрах та чеерех».

Ç.Элкер хăйĕн калавĕсен *тĕп шухăшне ятран пуçласа юлашки йĕрке таранах пăхăнтарма тăрăшнине* унăн иккĕмĕш хăй евĕрлĕхĕ тесе калама май пур. Ун пек чухне идейăна уçса пама пулăшман детальсем ытлашши.

Çыравçă калав фабулине чăн пулнинчен ытларах хиврелетсе яни курăнать. Кун кĕнекинче кашкăрсене хăратни çинчен çырнине сакăр йĕркене вырнаçтарнă. Калавра вăрманти çав тискер кайăксене харкамçă икĕ хут курнă пек пулса тухнă. «Эпĕ вăйлă этем иккенне чухласан вăл хăвăрт çаврăнса çӳçе тĕмĕсем хушшине кĕрсе çухалчĕ», – тесе çырать автор. Кайран пырса перĕннĕ икĕ кашкăра та хăратма ăс çитерет калавçă. Çапла вара çак «пĕррехинче» текен калавра эпир Ç. Элкерĕн *çыпăçуллă тата ĕнентерӳллĕ приключенилĕхне* куратпăр. Ăна тепĕр хăй евĕрлĕх тесе палăртнăччĕ ĕнтĕ.

«Хурапа шурă» повесть (1960). Хайлав ячĕ. Ят хыçĕнче яланах тĕп шухăш тăрать. Çакна чăваш çыравçисем XIX ĕмĕртех шута илнĕ. Турхан Яккăвĕ хăйĕн поэмине тĕп харкамçă ячĕпе «Варуççи» ят парать. Ун хыççăн çак мелпе К.Иванов («Нарспи»), Н.Шупуççынни («Хитре Чĕкеç», «Пĕтелмей»), Ç.Элкер («Унтри»), Трубина Мархви («Мучар»), М.Чалтун («Якур», «Лизавета Егоровна»), Ухсай Яккăвĕ («Тутимĕр», «Кĕлпук мучи»), П.Хусанкай («Таня») т.ыт.те усă кураççĕ. Çапла туса вĕсем хайлаври ĕç-пуç ята кăларнă çын тавра пынине кăтартаççĕ. Чылай чухне çав героя романтика е питлев сăрĕсемпе ӳкерме тăрăшаççĕ.

Ленăпа Сергей юратăвĕ пирки çырнă хайлава Ç.Элкер малтан «Лена санитарка» ят панă. Автор тĕп шухăша çав сăнар урлă каласшăн пулнă. Повеçе пичете хатĕрленĕ чухне редакторсем хайлав ятне улăштарма сĕнеççĕ. Çапла вара, çыравçă «Хурапа шурă» ят патне çитсе тухать. Философиллĕ сĕмлĕ повесть геройсен пурнăçĕнче савăнăçĕпе юнашарах хуйхи, телейĕ çумĕнчех инкекĕ çӳрени çинчен каласа кăтартакан хайлав пек пулса тухать. Çав-çавах унта тĕп вырăнта Лена тăрать.

Сăнарсен тытăмĕ. Лена сăнарне калăплама Сергей, Наçтӳç тата Попов сăнарĕсем пулăшаççĕ. Аса илер-ха çамрăк санитаркăпа Сергей хушшинчи

хутшăнăва. Хĕр юратăвне пула унччен хуçăлса ӳкнĕ Сергей çĕнĕрен чĕрĕлсе тăрать. «Манăн каллех пурăнас килекен пулчĕ», – тет калавçă. Тепĕр вырăнта Сергей Кашăк Хĕветĕрне çапла пĕлтерет: «Пирĕн ун чухнехи юрату ахаль юрату мар-çке-ха вăл, таса юрату пулнă. Елена Яковлевнăн чи малтанхи юратăвĕ мана ун чухне, тин çеç вăрçăра çĕмĕрĕлсе пурнăç шанчăкне çухатнă çынна, темĕнле имлĕ эмел ĕçсе сывалнă пек çĕнĕрен чĕртсе ячĕ, хамăр ялти савнă хĕр пăрахнипе салхуланнă инвалида çутă ĕмĕт хушса пачĕ. Унăн таса юратăвĕ мана пурăнас килекен турĕ, пурнăçшăн кĕрешме хавал чĕртсе ырми вăй кӳчĕ».

Наçтӳç сăнарĕ Ленăн тепĕр енне палăртма пулăшать. Акă вăл Сергей арăмĕ урăх арçынсемпе ермешсе çӳренине пĕлсен мĕн калать: «Тĕлĕнетĕп эпĕ: мĕнле вăл саккунлă мăшăру пур çинченех урăх çынпа пурăнмалла?! Мĕншĕн ху мăшăрна суймалла, улталамалла?! Мăшăрланнă чух пĕрле пурăнма сăмах панă тăк – пурăн!..»

Лена – туйăм хыççăн кайса мăшăр хушшинчи сăваплă тасалăха вараламан çын. Редактор кĕскетнĕ пĕр вырăнта Сергей хăйĕн вĕри туйăмĕпе Ленăпа çывăхланасшăн пулни çинчен çырса кăтартнă. Сергей ытамĕнчен вĕçерĕннĕ ĕлĕкхи савни акă çапла калать: «Ют мар та, эпĕ упăшкаллă арăмне эсĕ пĕлетĕн-çке-ха? Юрататăп-и, юратмастăп-и ăна – пурĕ пĕр хамăн мăшăра улталама юрамасть».

Ленăпа Сергей пĕр-пĕрне малтан та юратнă, халĕ те юратаççĕ. Сергей туйăм хыççăн кайма та хатĕрччĕ. Лена килĕшменни ăна çапла шухăш патне илсе çитерет: «Чĕре туртни хыççăн кайма юрамасть. Чĕре туртнине ăс-пуçа пăхăнтарас пулать». Ку ĕнтĕ пурнăçра туйăм кăна мар, кăмăл-сипет те пур тенине, çавăнпа ăса та итлемелле тенине пĕлтерет.

Попов сăнарĕ Ленăн чунне туллин уçма пулăшать. Упăшки эрех ĕçе-ĕçе супнине те, ун пек чухне килĕнчен туха-туха тарса тĕрлĕ çĕрте çĕр каçнисене те тӳссе ирттернĕ çав хĕрарăм. Çав-çавах мăшăрне усал сунман, Наçтӳç пек ыттисемпе улталаман. «Упăшкам пур çинченех мĕнле чунпа урăх арçын

ытамне кĕрсе çыпçăнам-ха эпĕ?! – тĕлĕнсе хуравлать Лена хăйĕн пĕрремĕш юратăвне. – Çук, ун пек пулма нихçан та килĕшместĕп. Çакна ан ман!..»

Поповсен кил-йышне туртса пыраканĕ, тăрантарса усраканĕ ĕçкĕç упăшки мар, чирлĕ арăмĕ пулни те çав сăнара тĕрĕс хак пама май парать. Лена çĕре кĕрсен тепĕр икĕ-виçĕ эрнеренех Попов хуйхине эрехпе пусара-пусара арăмĕн вил тăпри çинчех вилсе каять. «Аннене вăл питĕ нумай нуша кăтартрĕ, çавăнпа вĕсене юнашар пытарас мар», – терĕ Сима ашшĕне пытарма пынă кӳршисене», – каласа парать калавçă. Кунта автор çапла майпа Попов хăйĕн арăмĕпе тăван хĕрне мĕн тери нушалантарса çитернине ĕненмелле кăтартса панă. Лена хăйĕн упăшкине юратман, чунĕпе вăл яланах Сергей çумĕнче пулнă. «Пирĕн ун чухнехи юрату вăл иксĕмĕрĕнне те ĕмĕрлĕхех чĕресене, пуçсене кĕрсе юлнă, – ăнлантарать Сергей хăйсен юратăвĕ çинчен. – Эпир çав юрату çинчен каласмасан та ăна туйсах тăратпăр. Çав туйăмпа халь пĕр-пĕрне ырă тус-юлташ пек хисеплесе пурăнма пултаратпăр».

Çак сăмахсене илтекен Кашăк Хĕветĕрĕ пуçне пăркаласа иккĕленет, юрату ĕçĕ ун пек пулмасть пуль вăл тесе хуравлать. Лена сăнарĕ урлă автор пире апла юрату пулма пултарнине пуçĕпех ĕнентерет. Ахальтен мар Лена Сергее чунне уçса çапла сăмахсем калать: «Эпĕ сана юратни вăл – чи малтанхи таса юрату. Çавăнпа та эпĕ ăна хам виличчен те манас çук».

Тĕп идея. Юратăва мăшăр тата амăшĕ тивĕçĕсемпе хирĕçтерме кирлĕ мар тет автор. Сергейпе Лена шăпине Мăн Турă хăй çырнă. Геройсем ăна саманапа çыхаççĕ. «Пирĕн пурнăç çулĕсене вăл кĕтмен çĕртен пĕрлештерчĕ те, вăлах пĕр хĕрхенӳсĕр хăвăрт уйăрса ячĕ...» – пурнăç тупсăмĕ пирки шухăшласа калаçать Лена. Вăл хăйсем уйрăлнишĕн никама та айăпламасть. Çĕр çинчи çыннăн тĕллевĕ – çав шăпапа çураçасси, тем пек йывăр пулсассăн та хуçăлмасăр юлма пултарасси, тасалăхпа сăваплăха упраса хăварасси. Вĕсене пĕрле пулма пӳрмен пулсассăн таса юратăва ӳт-тир шайĕнчи выльăхла туйăмпа варалама кирлех-ши? Çав тасалăхпа сăваплăх çынна тĕрĕс çултан пăрăнасран, Наçтӳç тунă йăнăшсене тăвасран упраса сыхлать.

Нӑçтӳçпе Попов шайне анса ларни мӗн патне илсе çитернине вулавçӑ аван ӑнланать. Вуланӑ май эпир Шӑпа кӗнекине йӗрлетпӗр, пурнӑç кӑткӑслӑхӗпе вӑрттӑнлӑхӗсене ӑнланма тӑрӑшатпӑр. Повеçӗн ятӗнче халӑхӑмӑрӑн философийӗ курӑнать. Хура хыççӑн шурӑ килет, шурӑ хыççӑн каллех хура таврӑнать. Уйӑх тулать, катӑлать, каллех çурлаланать... Çак çаврӑнура çынсен шӑпи хуллен шӑвать, хурипе шуррине те тутантарать. Пулса иртекен ӗçсем вӑхӑт еккине пӑхӑнаççӗ. Геройсене тӗрлӗ вӑхӑтпа саманара, тӗрлӗ вырӑнта куратпӑр. Çаксене пӗрлештерсе автор чӑваш пурнӑçӗн панорамине туса хурать, халӑх эпикине йӗркелет.

Прототипсем. Ç.Элкер яланах хӑй тӳссе курнӑ ӗç-пуç çинчен çырнӑ, историлле хайлавӗсене халӑхра çӳрекен халапсемпе истори документчӗсем çине таянса калӑплана. Çавӑнпа та вӑл тунӑ чылай сӑнарӑн прототипӗ пур.

«Хурапа шурӑ» повеçри калавçӑ (Сергей) автор хӑй пулни иккӗлентермест. Çав хушӑрах Лена сӑнарне çыравçӑ темиçе çынран илсе идеаллӑ кӑтартнӑ тени тӗрӗсрех пек. «Вутпа тӑвӑл витӗр» роман-хроникӑра Семен Васильевӑн тӑван ялӗнче Клавти ятлӑ савнийӗ пур пек кӑтартнӑ. Элкер хӑйӗн малтанхи юратӑвӗ пирки çапла çырнӑ: «Манӑн ачаш та таса юратӑвӑм питӗ хыпса çуннӑран Вассана курман чухне канӑça çухататтӑм... ун патне вӗри те кӑвар сӑмахсемлӗ çырусем çыраттӑм... Хуравсем кӗтсе илейменрен çак туйӑм вӑраххӑн сӳнме пуçласанах Вассана курмассерен каллех вӑранатчӗ. Çав малтанхи юратӑвӑм ӗмӗрлӗхех чӗрене кӗрсе юлчӗ. Кайран эпӗ вӑл та мана юратнине пӗлтӗм. Пирӗн ӗмӗтсене вӑрçӑ путарчӗ, ӗмӗрлӗхех уйӑрса ячӗ. Эпӗ хам инвалида тухнӑ хыççӑн авланас шухӑш тытман. Эпӗ Хусана кайсан вӑл пӗр лайӑх йӗкӗте качча тухрӗ. Çакӑншӑн кӑмӑллӑ юлтӑм».

Лена сӑнарне калӑплана чухне çыравçӑ хӑйӗн пӗрремӗш юратӑвне асра тытнӑ темелле.

Лена биографине аса илтерекен тепӗр сӑнар пур çав роман-хроникӑра. Вӑл – Настя санитарка. Унпа Семен Васильев Хусанта сывалнӑ чухне паллашать, темиçе хут кинона кайса килет. Автор пире Настя Семена

килĕштернине кăтартать. Çав Настьăпа Ленăн амăшĕсем вырăс, ашшĕсем вара чăваш. Ахăртнех, çыравçă Лена сăнарне Хусан больницинче туслашнă хĕртен илсе те калăпланă. Элкер Нурăс больницинче чăнласах выртнă, анчах та унта вăл нимĕнле хĕрпе те паллашман. Хусанти паллашăва Нурăса куçарни çыравçа хĕрпе каччă уйрăлса кайнине сăлтавлама кирлĕ пулнă.

Попов кил-йышĕн прототипĕ те пулнах-тăр. Çемье ĕçкĕç кил хуçине пула арканнă тĕслĕхе таçта та, кирек хăш саманара та тупма йывăр мар. Наçтӳç сăнарне те Ç. Элкер чăн пулнă çынран илсе калăпланă. Унăн, хăй аса илнĕ тăрăх, 1923–1927 çулсенче Анастасия ятлă «арăм пекки» пулнă-мĕн. Çав пурнăçри хĕрарăма повеçе кĕртсе автор Ленăн идеаллă сăнарне вăйлатнă. Тен, малтанхи ăнăçсăр мăшăрланăвĕ çинчен аса илнĕ май çирĕпленнĕ унăн çак хайлава çырас шухăшĕ? Кирек мĕнле пулсан та сăнарсене вăл хайлавăн тĕп идейипе çураçтарса калăплани, çавна май геройсене хăйсен прототипĕсенчен урăхларах сăнлани иккĕленӳсĕр.

Ç.Элкер халăх пурнăçне социаллă куçпа пăхса тишкерекен эпик кăна мар, вăл туйăмпа кăмăл-сипет, ăс шайлашăвĕсем çинчен философилле шухăшлакан тишкерӳçĕ те. Çакна унăн «Хурапа шурă» повеçĕ те ĕнентерет.

Очерксемпе статьясем. Ç.Элкер çулçӳрев очеркĕсем те, историпе этнографи очеркĕсем те (уйрăмах юлашки çулсенче) хайланă. Çавăн йышшисенчен чи пĕлтерĕшли – «Кушлавăш уйĕ» ятлă очерк (1961–1966). Кунта истори документчĕсемпе юнашарах илемлĕ халапсем (Эрхитсав, Хунтеркке, ялсем пулса кайни, чиркӳ çунни çинчен) тĕл пулаççĕ. Хăш-пĕр ĕç-пуç çинчен Ç.Элкер хăйĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэминчех çырса кăтартнă. Статистика ĕçĕсене пĕтĕмлетес тĕллевпе вăл XIX ĕмĕрти чиркӳ хучĕсене (метрика кĕнекисене) пĕтĕмпех пăхса тухнă, хăйĕн тымарĕсене те шыраса тупнă.

Ç.Элкерĕн хаçат-журнал валли çырнă статйисем те кăсăк. Вĕсенче вăл пĕтĕм халăха кирлĕ ыйтусем хускатать, çакă ятсенченех курăнать: «Ху чĕлхӳне ан хурла», «Пурнăçра икĕ япала кирлĕ», «Йывăр вăхăт», «Чăваш

хаçачĕ» (пурне те 1917 çулта çырнă), «Чăваш йышĕ хăвăрт ирĕлет» (1959), «Хам чăваш, ачасем – вырăс» (1959) т.ыт.те. 67 çула çитнĕ Элкер халăхăмăра, унăн чĕлхипе культурине упраса хăварас тĕллевпе парти обкомне темиçе çыру та çырса пăхать. Çав историлле хутсем И.Я.Яковлевăн халал сăмахĕсемпе, Çеçпĕл Мишшин çырăвĕсемпе пĕр ретре тăраççĕ. Çыравçăн тĕрлĕ аса илĕвĕсем те («Милли ушкăнĕнчен – «Канаш» союзне», «Хăрушă тĕлĕк хыççăн», «Г.В.Зайцев – Тал-Мăрса») тăван литературăмăршăн питĕ пĕлтерĕшлĕ. Паянхи кун вĕсем илемлĕ хайлав пек вуланаççĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ пичетленмен, кунсерен çырса пынă типтерсенче упранать.

Усă курмалли литература

Родионов В.Г. Çеçпĕл çулĕпе // Литература еткерĕ: Ăслăлăх статйисен пуххи. – Шупашкар, 1991.

Элкер С.В. Хурапа шурă / Пухса хатĕрлекенĕ В.Г. Родионов. – Шупашкар, 1994.

ПЕТĔР ХУСАНКАЙ (1907–1970)

Кам пулнă-ши пирĕн юратнă сăвăçăмăр, мĕнле шухăш-ĕмĕтпе пурăнса ирттернĕ-ши вăл хăйĕн ĕмĕрне? Куç тĕлне пулнă йĕркесене илсе пăхар-ха:

Президент портфелĕ те курман,
Министра та лараймарăм эп.
Пысăк мар пĕр чинăм çеç пур ман:
Хусанкай пулса çĕре кĕреп, –

тесе сăпайлăн çырнă аслă поэтăмăр хăй çĕре кĕриччен пилĕк çул маларах.

Тепĕр икĕ çултан сăвăç хăйĕн çинчен акă мĕн калать:

Эп – Петĕр Хусанкай. Чăваш.
Çитсе çывхартăм утмăла.
Хам халăх пек ĕçчен, йăваш,
Пăртак пуçтах та пулмалла...
Эп – Петĕр Хусанкай. Поэт.
Çапла професси пур ку чух.

Мана халь çăкăр çитерет
Чăваш чĕлхи. Эп унсăр çук.

Хăйĕн пурнăçне пĕтĕмлетсе вăл «Пурăнать-ха, пурăнать...» сăввинче (1967) çапла çырни те пур: «Пĕтĕм пурнăçăм – умра. Йăлт. Кĕнекипех. Вулама, хама кура, Çăмăл мар питех». Çĕр çинче пурăннин тĕллевне вун тăхăр çулхи П. Хусанкай çапла палăртнăччĕ:

Çĕр çинче юратнă эп пĕр халăх,
Уншăн çеç пурнассăм ман килет.
Ун валли эп ĕмĕр асăнмалăх
Хăварасшăн юрăллă тивлет.

Çыравçă хăйĕн сăваплă тĕллевне утмăл çула çитсен те улăштарман. «Савнă халăхăм! Ялан Санăн сассупа Юрламашкăн эп чунтан Тунăччĕ тупа», – тет поэт юлашки çулĕсенче хайланă маларах асăннă сăввинче. Вун сакăр çулта «Чăвашпа пĕрле эп хĕпĕртетĕп, Хурлансан та – чăвашпа пĕрле», – тесе çырнăскер, çав тĕп идеала вăл мĕн виличченех пуçран кăларман, куçран вĕçертмен. Чи юлашки йĕркисем те ун чăвашлăхпа çыхăннă (савнă мăшăрне вăл 1970 çулхи пуш уйăхĕн 2-мĕшĕнче çапла çырса панă: «Верук – эс те чăваш сасси. Тавсси! Тавсси! Тавсси!»).

Хусанкай лирики

Хусанкай хăйĕн пĕр сăввине «Вуншар çулпа шутлатпăр ĕмĕре» тесе пуçланăччĕ. Унăн пултарулăхне те вунă çуллăхсемпе тапхăрласа пăхма май пур.

Ачалăх çулĕсем. Петр Петрович Хусанкай (чăн хушамачĕ – Казанков) Тутарстанăн Элкел районне кĕрекен Сиктĕрме ятлă чăваш ялĕнче 1907 çулхи кăрлачăн 22-мĕшĕнче çуралнă. Çав кун историре «юнлă вырсарни кун» пек, Ленин вилнĕ кун пек паллă пулнăран поэт 1931 çулта çапла çырнă:

Телейлĕ эп – ман менелник нихçан та
Çăмăл хаваслă пулас çук ĕнтĕ.
Çуралнăшăн çынлах хаваслансан та
Çул пуç çукки карать сĕм юпăнчă.

П. Хусанкай «çăмăл хаваслă пулманни телее» тенине ытарлă калани вырăнне хумалла. Çамрăклах вăл халăх нушинчен хăйĕн нуши, халăх пурнăçĕнчен хăйĕн пурнăçĕ тухса тăнине ăнланма пултарнă. Çакна ăнланма ăна амăшĕн чĕлхи пулăшнă. «Пирĕн патра ютран килнĕ шкул ачисем хваттерте пурăнкалатчĕç те, çавсен çумĕнче хам тĕллĕнех вулама-çырма тĕшмĕрткелеттĕм. Пиллĕкре-улттăра чухне шкула кайрăм, анчах «пĕчĕкçĕ-ха» тесе илмерĕç. Вĕренме саккăртан тин тытăнтăм, – аса илет поэт каярах хăйĕн ачалăхĕ çинчен. – Тăван чĕлхе вăйĕпе илемне чи малтан мана «Нарспи» туйтарчĕ... Вуласса пĕчĕкçĕллех вуласа тухсаттăм. Пĕрре аттепе анне кӳршĕ яла туя кайнă та пирĕн патра хĕрсем улаха юлнă. Ак хайхисем Сетнерпе Нарспи валак патĕнче тĕл пулни çинчен юрла пуçларĕç... Хĕрсем çывăрма выртсан эпĕ ăнсăртран хурăнташ хĕрĕн пуçелĕкĕ айĕнче пĕр кĕнеке кĕтесси куртăм. Систермесĕр туртса кăлартăм та пурте лăплансан вула пуçларăм. Вăл Чĕмпĕрте 1908 çулта тухнă «Чăваш юмахĕсемпе халапĕсем» пулнă-мĕн. «Нарспи» тĕлне çитсен эп тĕлĕнсе хытсах кайрăм. Ун чухне хам пĕр çиччĕре-саккăрта çеç пулнă пулас. К.В. Иванов ятне эпир нумай кайран – «Нарспие» шкулта класĕ-класĕпе валеçсе халăх умĕнче вула пуçласан тин – пĕлтĕмĕр. Ун чухне вара чăвашла çырас килсе кайрĕ».

Тăван чĕлхемĕре юратма пулас çыравçа Наталия Яковлевна учительница вĕрентнĕ. Вăл ачасене И.Тургеневăн «Бежин çаранĕ», В.Короленкăн «Вут куçĕсем» калавĕсене чăвашла куçарса паллаштарнă. Çав çулсенчех пулас сăвăç А.Пушкинăн, М.Лермонтовăн, Л.Толстойăн хайлавĕсене вуласа тухать, шкул ачисем валли литература журналĕ кăларас ĕçе хастар хутшăнать.

20-мĕш çулсенчи пултарулăхĕ. 1923–1925 çулсенче П.Хусанкай Хусанти чăваш педтехникумĕнче ăс пухать, çав çулсенчех «Сунтал» журналта хăйĕн малтанхи сăввисене пичетлесе кăларать. «Эпĕ тĕрекленсе çитмен ал-урапах «хастарсен цехне» пырса кĕресшĕн çуннă... – çырнă каярах поэт. – Ман ĕмĕтĕн тӳпи Шупашкар пулнă». 1925 çулта вăл Шупашкара çитет. «Вĕренчĕкле çыркаланă сăввăмсене пичетлесессĕнех мана ятлăрах

поэтсем асăрхарĕç», – аса илнĕ çав вăхăт çинчен П.Хусанкай хăйне пулăшнă Ç.Элкерпе Хумма Çеменне тав туса.

1926–1927 çулсенче поэт Азипе Кавказ тăрăхĕнче пулать.

Çамрăк романтик вырăнтан вырăна пуйăспа та, пăрахутпа та, тĕвепе те, ашакпа та куçса çӳрет, çуран та сахал мар танккать. «Çăкăр-тăварлăх укçа-тенкĕ ăнсăртран леккеленĕ тĕрлĕ ĕç ĕçлесе тупăнкалатчĕ: е эпĕ вокзалсемпе пристаньсенче чăматан çĕклеттĕм, е кавир-палас силлеме кĕрĕшеттĕм, вутă касса-çурса параттăм», – аса илнĕ çыравçă тепĕр хĕрĕх çул иртсен.

Туркменистанăн тĕрлĕ районĕсенче статистик пулса та ĕçлет поэт, тĕрлĕ халăхсен пурнăçĕпе, вĕсен йăли-йĕркипе паллашать. «Каçхи каравансен килĕшӳллĕ шăнкăрав кĕвви, чикĕри сăрт-ту хыçĕнчен хăпаракан асамлă уйăх, ун çине пăхса Риза-Шах Пехлеви гаремĕнчи хурланакан ман ĕмĕтри перси хĕрĕ тата ытти те кĕретчĕ ман канăçсăр сăввăмсене, – аса илет çав самантсене çыравçă. – Эпĕ Вăтам Азие Есенинăн «Перси кĕввисене» ытараймасăр кайнăччĕ-çке. Манăн ун чухне Саади, Хафиз, Фирдоуси, Омар Хайям сывлăшĕпе сывлас килетчĕ».

Чылай сăввине П.Хусанкай ярăмласа çырнă. Унăн çав туртăмĕ халăхăмăрăн традицилле шухăшлавĕпе тачă çыхăнни иккĕленӳсĕр. ХХ ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш литературинче малтан тĕпре пулнă тавлăклă тĕнче туйăма (цикличное мироощущение) аталануллă (иртнипе хальхинчен пулассине) тĕнче туйăм (мироощущение в линейном, историческом пространстве и времени) хĕсме пуçлать. Çеçпĕлшĕн вăхăт иртнипе хальхи урлă малашлăха шăвать, çавна вăл сăввисенче вăйлах палăртать. Ç.Элкерпе унăн ĕçтешĕсем те Çеçпĕл çулĕпех утаççĕ, çав хушăрах вĕсен пултарулăхĕнче традициллĕ тавлăклăх сисĕмĕ çав-çавах вăйлă палăрать. Çакă лирикăра сăвăсене тема тĕлĕшĕнчен ярăмлама тăрăшнинче тата мотивсен пĕрлĕхĕнче кăна мар, поэмăсемпе повеçсем пĕчĕкрех жанр тексчĕсен çыххисем пек пулса тухнинче те курăнать. Ун пирки эпир Хусанкайăн лиро-эпикине тишкернĕ

май тĕплĕнрех каласăпăр. Халĕ вара сăвăç лирикинчи паллăрах ярăмсене пăхса тухар.

«Уяртсан» кĕнекери сăвăсем (1923–1927). Хайлавсенчи лирика харкамçи çут çанталăкри мĕнпур чĕрĕ чуна хисеплет, вĕсене сăхă çынсенчен хӳтĕлеме тăрăшать. Ыраш пĕрчи те уншăн «вĕтĕ чĕрĕ чун», хăй каснă йывăçран вара каçару ыйтать:

Каçар мана, каçар эс, çамрăк хыр!
Сана эп касрăм выльăх чунĕпе,
Этем сăхă, этем вăл харам пыр –
Вылять пур чĕрĕ чунăн юнĕпе.
(«Хыр туя»)

Тĕрлĕ чĕрĕ чуна, ӳсен-тăрана сăваплани, çут çанталăка турăлатни (обожествление) С.Есенин пултарулăхĕнче те пысăк вырăн йышăнать. Çак пĕрпеклĕхе витĕмпе кăна ăнлантарма май килмĕ. Вĕсенче иккĕшĕнче те ял çыннин, çĕр ĕçченĕн куçĕпе туйăмĕ палăрать, вăл çут çанталăка хисеплени сисĕнет. Çакă вара хулана çитнĕ ял çыннине икке пайласа янă. Пĕр енчен, ял çамрăкĕ хула цивилизацийĕн ырлăхĕсене курса ĕненнĕ. Тепĕр енчен, çав ырлăха илсе килекен цивилизаци чунсăр-чĕресĕр пулнине, вăл çут çанталăка хĕстерсе пынине те ăнланнă.

Есенинпа Çеçпĕл вилĕмĕсене П.Хусанкай «хулан тискер культурипе», вăл ялтан тухнă çамрăксене «авнипе» сăлтавлать («Ответ», 1926). Чылай чухне çав хирĕçĕве кăтартакан сăвăсене çыру пек евĕрлесе хайланă: хулара пурăнакан ывăлĕ ялти амăшĕ патне çыру ярать. «Анне çырăвĕ» тата «Ответ» сăвăсене иккĕшне пĕр çыхăра пăхсан кăна тĕплĕн ăнланма пулать. Амăшĕ ывăлĕ патне хăйĕн тăлăх пурнăçĕ питех те йывăрри çинчен ӳпкелешсе çырса пĕлтерет. Ялта вăл пĕр-пĕччен. Акă çур аки çитет, унăн вара вăрлăхĕ те çук:

Тырри те пур, те çук, Сан ывăлу çырать, –
Ăна пĕлмĕç, – Тесе тăмĕç,
«Куланайне!» – Нушах вĕсемшĕн

Тесе хĕстерĕçĕ. Сан темскер ĕçĕ.

Çырăва вуласа тухнă харкамçă «такам çине» çилленет, «такамсене» сурса вăрçать. Ăна пĕр çын теприне пулăшманни, выçса вилекене асăрхаманни тарăхтарать. Лирика харкамçи хăй те тертленет, çав хушăрах халăхшăн хыпса çунать. Шел, çакна ăнланмаççĕ те, пĕлмеççĕ те чăваш çыннисем. «Анчах халь мана тĕплĕ пĕлеймĕç, Ма тесессĕн... выльăх-ха чăваш», – пĕтĕмлетет харкамçă.

Çак хаяр хаклава амăшĕн çырăвĕнче каланă шухăшсене шута илсессĕн тин тĕрĕс ăнланма май пур. «Такам» текенсене (вĕсем харкамçă хытă юратакан халăх хушшинчех пулнине асра тытар) тарăхнăран çапла каласа хурать сăвăри сăнар. «Хыр туя» сăвăра харкамçă хăйне выльăх чунĕпе танлаштарнăччĕ, «Тăван поэта» сăвăра (1925) «Этем тени ĕнтĕ выльăх мар, Мĕншĕн татас çунан ĕмĕте?..» – тенĕччĕ. Эппин, «выльăх» тени «чурăс чунлă», «ĕмĕт-тĕллевсĕр» ăнлавсене çывăх тăрать. Амăшне те хĕрхенмен, сăвăçа та ăнланма пултарайман çынсене шута илсе çапла калать иккен хĕрӳ чунлă та мал ĕмĕтлĕ харкамçă. Унăн ĕмĕчĕ-тĕллевĕ чăваш тавра çаврăнать, ĕçĕ-хĕлĕ чăвашшăн пулса пырать.

Ярăмри сăвăсене çыхса тăраканĕ – чăваш-пăлхаршăн çунса тăракан, ăна савни-тусран маларах лартакан çамрăк харкамçă. Вăл Çеçпĕлпе Есенин çинчен, тăван поэзи çинчен шухăшлать, чĕрине илемшĕн çунтарать. Çак пĕрремĕш кĕнекинчех П. Хусанкай интеллигенци поэчĕ пек палăрни питех те пĕлтерĕшлĕ. Сăвă хывăм тĕлĕшĕнчен Çеçпĕлĕн силлабо-тоникине аталантарни вара тăван поэзин малашлăхне çул уçма пулăшнă.

«Хура пĕркенчĕк» сăвăсен ярăмĕ. Кунта мĕн пурĕ вун тăхăр хайлав, вĕсене поэт 1926 çулхи юпа уйăхĕнчен пуçласа 1927 çулхи ака уйăхĕччен Ашхабад хулинче хайланă. Лирика харкамçи – çул çӳреме хавас романтик, вăл тухăç пурнăçне ытараймасть, хăй унăн пĕр пайĕ пулнине туять. «Чăвашсем-и е туркмен-тутар-и – Пурте Ази тăвĕсен çынни, – ăнлантарать тухăç хĕрне. – Çавăнпа çак ешĕл хĕвел тухăç Яланах туртатчĕ ман чуна». Çав хушăрах лирика харкамçи çĕрĕ-шывĕшĕн, шурă юрлă та çил-тăманлă

тăрăхшăн хытах тунсăхлать. «Кăмăла туртать тăван çĕршыв, Тунсăхларĕ чунăм Атăла, Аякран килет пек хыр шăрши», – тунсăхне систерет вăл хăйĕнчен уйрăлса юлакан тухăç хĕрне. Харкамçăн савнийĕ тăван енĕнче те пур-ха. Иккĕшĕн хушшинче иккĕленсе тăрать яш каччă. «Тусăмçăм! Эс-и? Леш-и? Кам çумĕнче ирĕлес-ши? Пурĕ пĕрех мана та», – чунне уçать йĕкĕт. Вăл çамрăклăхăн çиелти илемĕпе, вăхăтлăх юн вылявĕпе киленме кăмăллани сисĕнет. Çакна харкамçă хăй те туять. Вăл ыранхи кун мĕн каласса та, хăш хĕрĕпе пĕрле пуласса та пĕлмест-ха. Иккĕленӳ вара шанманлăха куçать: «Хам та пĕлместĕп халĕ: Тахăш малтан улталĕ? Темĕн телейĕм пӳрĕ, тахăш манпа чăн тӳрĕ?»

Ярăмри харкамçă С.Есенин сăввисенчи лирика геройне питех те çывăх, çав хушăрах вăл лăпкăрах, хулиганлăха кăмăлламасть. Ун пирки Хусанкай «Уяртсан» кĕнекинче çапла çырнăччĕ:

Кирек мĕн кала, тăванăм, кирек мĕн кала:
Ухмахах еретĕп пуль эп Есенинпала.
Пирĕн халăх питĕ лăпкă, сăпă çын пăлхар;
Вырăс юрăçĕ Есенин пĕртте апла мар.
Хупаха та эрехе мухтать вăл юрринче,
Пĕр-пĕр чикĕ е чарулăх пит унтан инçе.
Никама та пăхăнмасть вăл, ӳксе пуççапмасть,
Чĕрине çăлса илсен те лирине памасть.
Арăслан пек хăш чухне вăл хыттăн ахăрать,
Тепĕр чух пĕчĕк ача пек мĕлкерен хăрать.

Çамрăк Хусанкай Вăтам Азие С.Есенинăн «Перси кĕввисене» ытараймасăр çитсе ӳкнĕ тенĕччĕ маларах. «Хура пĕркенчĕк» ярăма ахальтен мар вăл çапла йĕркесенчен пуçлать: «Урхамахăм пит канăçсăртан Эп инçе çула ăна юрттартăм». Харкамçă чей ĕçме чайханана кĕрет, чей çурчĕн хуçипе каласать. Çакăн пекрех сăвă С.Есенинăн та пур («Улеглась моя былая рана...»). Икĕ сăввинче те харкамçăсем хуçа хĕрне куç хываççĕ. Вырăс поэчĕн

геройĕ чăрсăртарах, вăл хĕрпе вăхăтлăх киленӳшĕн тĕл пуласшăн, «хуçа пахчинчи кĕл чечеке татса илесшĕн». Чăваш çыравçин харкамçи çакăн çине урăхларах пăхать. «Активмесĕр юлнă кучченеç Çиме ларнă çимĕçрен те тутлă!» – тесе пĕтĕмлетет вăл. Тепĕр сăввинче Хусанкай çав шухăшах урăхла каланăччĕ:

Малашлăх, сăвăç, эс шанни,
Пуласлăхшăн чĕрӳ сан таптăр.
Телей – ăна хăвалани.
«Хуса çитейрĕм, тытрăм», – терĕн тĕк –
Эс чи хăрушă тыткăнта,
Санран тек нимĕн те кĕтмеççĕ...

Халĕ «Хура пĕркенчĕк» эпиграфне аса илер. Унта та çав шухăшах варăннă: ытарайми чиперпе вăхăтлăх киленни унăн илемне яланлăхах çĕтерет. Сăвăсенчи Перси хĕрĕ (Хамаспюр, Наадă, Лалă) – поэтăн ĕмĕтĕнчи хĕрĕн романтикăлла сăнарĕ. Чăваш сăвăçи унпа Есенин поэзийĕн витĕмне пула «ĕмĕтре ыталаннă». Ахальтен мар ĕнтĕ ярăма вĕçлекен сăвă юрату лирикин картине шăнăçаймасть.

Малалла-ха пурнăç, малалла.
Эп пăртак чăваш ятне çĕклесшĕн.
Ман юман пулса кашламалла,
Хунавран эп тивĕç пиçĕхмешкĕн.
Малалла-ха пурнăç, малалла...

Лирика харкамçи пулас пурнăçра хăйне шурри кăна мар, хури те кĕтнине туйса çапла ытарлать: «Ман тĕлтен çанталăк çурма çутă». Ку ĕнтĕ юрату лирики ерипен гражданлă тата философиллĕ лирикăна куçса пыни, вĕсем пĕр-пĕринпе çураçăнма пултарни çинчен калать.

Кунта тепĕр шухăша та палăртса хăварар. П.Хусанкай С.Есенина «ĕмет» тесе вĕçĕмсĕр айăплани паллă. Тĕрĕссипе чăваш сăвăçи вырăссен паллă поэчĕпе кăткăс хутшăнăва – диалога – кĕрсе çырнă тени тĕрĕсрех пулать. Есенинăн пуçтахланăвĕ, унăн хулиганлăхĕ вырăс чунĕн анлăхĕпе, унăн

стихийипе çыхăннă. Вырăс поэчĕн харкамçи – чухăн, килсĕр-çуртсăр, вырăнтан вырăна куçса çӳрекен çын. Чăвашсем ун йышшисене е тăлăх турат (ача-пăча пулсан), е пуçтаракан (ыйткалакан) тенĕ. Вырăсла «бродяга» тенине сăмахсарсенче «çапкаланчăк, сĕтĕрĕнчĕк, сулланчăк, каскăн» тесе куçарнă. Пĕрремĕшсене чăваш çынни хĕрхеннĕ пулсан, иккĕмĕшсене хытах питленĕ. Хусанкай харкамçи «бродяга» мар, вăл курса çӳрес тĕллевпе çула тухнă çын («тĕнче касса çӳрекен»). Çав хушăрах харкамçă тăван енне пĕрре те асĕнчен кăлармасть. Вăл «пăртак чăваш ятне çĕклесшĕн», хунавран юман пулнăн хурапа шурра курса пиçĕхесшĕн. Эппин, ярăм авторĕ С.Есенинпа тупăшать, хăйĕн илем курăмĕпе туйăмне халăхăмăрăннипе çураçтарма тăрăшать.

«Савни» ярăм (1923–1936). 65 сăвăран 46 хайлавне автор 1923–1931 çулсенче, ыттисене вара 1932–1936 çулсенче çырнă. Унта П.Хусанкай юрату çине тĕрлĕ вăхăтра еплерех пăхни, лирика харкамçи хăш еннелле улшăнса пыни аван сисĕнет. Малтанхи сăвăсенче вăл – ялти савнине пăрахса инçете «тĕнче касса пурăнма» тухса кайнă вĕри юнлă, паттăр чĕреллĕ йĕкĕт. Уйрăлăва пула çухатупа тунсăх çунтарать харкамçă чĕрине. Туйăм савнипе юнашар пултарасшăн, ăсĕ вара юрату чун сăнчăрĕ пуласран шикленет. Вĕсен хирĕçĕвĕ харăсах телейпе асап кӳрет:

Каçарсам мана, вылянчăк шухăш,
Каçарах, вĕçерĕннĕ чĕре!
Телейпе асап ялан вăл хутăш,
Йĕкĕреш çӳреççĕ тĕнчере.
(«Ăшунта мĕскер ларать-ши санăн...»,
1928)

Малтанхи сăвăсенчи харкамça хăй пек вĕри чĕреллĕ савни кирлĕччĕ. Вăл унпа чи малтан этем, унтан тус-тăван пуласшăн, унăн чун тасалăхĕпе чĕри вĕрилĕхне туясшăн. Акă унăн тĕп ыйтăвĕ:

Анчах ху... мĕскер мана эс парăн?

Мĕнпе хаклă пирĕн самана?
Е чура пек мĕскĕн сăмах «арăм»
Çырлахтарĕ тетĕн-и мана?
(«Кирек кам пулсассăн та эс халĕ...»,
1928)

30-мĕш çулсен пуçламăшĕнче хайланă сăвăсенчи харкамçă çине-çинех аса илĕве путма кăмăллать, хăйне хĕр хыççăн «ӳксе ӳпне-питне... Сĕм хăямат тĕпне» утма хатĕр пулнишĕн айăплать. Халĕ унăн ĕмĕчĕ урăхларах иккен:

Пăхасчĕ çех, итлесчĕ çех
Сивлек философла,
Анчах чĕр сисĕм хĕртрĕ тек
Вĕрин сывла-сывла.
(«Мĕн-ма апла иккеннине...», 1930)

«Тĕнчи сарлакаланнă» харкамça «ăсанан яш кун-çул» хурлантарать, юрату хыççăн кайса тăван халăха сутма май çуккине вăл лайăх ăнланса илет. Çапла вара, тап-таса юрату лирики гражданлă лирикăпа çураçу тупма пултарать. Поэт философилĕх енне хытах туртăнать, сăвăсенче космосла титанлăх сăнлăхĕсем те курăнкалаççĕ. Çак ярăм П.Хусанкай пултарулăхĕ еплерех ӳссе пынине, вăл 30-мĕш çулсенче «Тилли юррисем» хайлама пиççе çитнине аван кăтартса парать.

«Мерчен тумлам» сăвăсен ярăмĕ (1926–1927). Сывлăм курăка çитĕнтернĕ евĕрлех пултарулăха та мерчен тумлам кирлĕ иккен. Пултарулăх çыннине урăх мĕн кирлĕ-ши? Чи малтан поэта тĕрĕссине çырма ан чарччăр, ăна ан вĕренлеччĕр. Тата чĕрине пуласлăхшăн таптартăр вăл, вĕçĕмсĕр хăйĕн телейне хăвалатăр. Пултарулăх саманчĕ пĕр хушăрах савăнăç та, асап та, иккĕленӳ те, çĕкленӳ те иккен! Çаксене харкамçă тĕрлĕ вăхăтра тата вырăнта туйса ăнланать. Хăй те çыраканскер, вăл ытти чăваш сăвăçисемпе калаçать, вĕсен хуйхине сирме тăрăшать. Хăйĕнчен аслисен тата пултаруллисен ретне вăл чи малтан Çеçпĕле, унтан Элкере лартать, сăвă метрики пирки вара çапла

калать: «Силлабик – суха пуç вăл, тоник – трактор» («Çурхи октавăсем», 1928). Ку шухăша сăвăç темиçе çултанах улăштарать, чăваш поэзийĕшĕн икĕ метрики те хаклă пулнине вăл тĕрĕс ăнланса илет.

«Кăнтăр кĕввисем» сăвăсен ярăмĕ (1927–1931). Кунти лирика харкамçи те пултарулăх çынниех. «Ирĕккĕн тĕнче касан» Азирен иккĕмĕш хут кăнтăра (Хура тинĕс хĕрне) çитет, тинĕс стихийине туять, тăван еншĕн тунсăхлать. Унăн пĕр ĕмĕт: «таптăрччĕ çаплах поэзи ирĕккĕн, тӳртен». Çынсем тинĕс хĕрринче савăнса каннă чухне сăвăç чăн сăмахне калама май çукран асапланать, этем асапĕ-телейĕ пирки шухăшлать, хайлав çине хайлав хывать. Вăл Çеçпĕлпе Есенинăн çурма çулта чарăннă шăписемшĕн туллин юрласшăн, «чакма-сăмахĕсемпеле» хĕлхем пĕрĕхтересшĕн. Амăшĕн тӳсĕмлĕ те лăпкă чунне-кăмăлне аса илни сăвăçа кăтăрнă тинĕс умĕнче те лăплантарма пултарать:

Ак тинĕс кăтăрма пăхать,
Çил улшăнать. Эп шав тӳлек.
Эп инçетрен хама чĕнетĕп:
Йăлт парăн урă ăслăха;
Хам чурăс сисĕме пӳлеп
Илемлĕ ĕнерӳшĕн эп.
(«Эп таврăнăттăм халь яла...»)

«Урă ăсланса пыни» поэта политика ăнлавĕсемпе усă курма та хистенĕ. Çапах та вăл хăй калас тенине çĕр çул каярах пулса иртнĕ ĕçе хакланăн пĕлтернĕ:

Ăнлантăм поэта. Е ун
Сиксе вĕрен чĕрипеле
Тĕрме-патшалăхра чăтас?
Вăл туртăннă аяккалла.
(«Тăхлан тӳпе. Горизонтра...»)

П.Хусанкай «ирĕккĕн тĕнче касса» çӳренине те вăл хăй Пушкин пирки каланă пекех ăнлантармалла-тăр. Çак çулçӳрев ярăмĕсенче пултарулăхпа юрату хирĕçĕвĕ кăна мар, пултарулăхпа ирĕксĕрлӳ хирĕçĕвĕ те сисĕнет. Çав хушăрах тĕнче каскăнçине тăван чĕлхеллĕ çĕр хăйĕн патне магнит пек туртни вăйлă палăрать.

30-мĕш çулсенчи пултарулăхĕ. Ку тапхăрта «çурма çутă çанталăкăн» хура каçĕ хуçаланнă. 1926 çулта сăвăç «Вĕренлеттермĕп эп хама, Çамка çине тамга лартаймĕç», – тенĕ. 1930 çулта та: «Мана халь тӳнтереймĕн. Мана кӳпкенĕ Вут тукмакĕпех», – тесе çырать-ха. Çав хушăрах поэтăн ăшри кăмăлĕпе чун пăлхавне ыттисенчен пытарма тивет. 1928 çулта сăвăç «Юратăва юратакан сахал-мĕн, Халь тракторсем кĕрлеççĕ сăвăра» тесе ӳпкелешнĕччĕ («Пушкинпа каласни» поэмăра). 30-мĕш çулсенче чунĕпе лирик сăвăçăн официаллă влаça çырлахтаракан публицистикăллă-риторикăллă хайлавсем çырма тивет («Сулмак». 1, 2 кĕнекесем, «Магнит ту» поэма). Халь вăл В.Маяковские Турă вырăнне хурать, çавна май пусмаласа çырать. С.Есенина «хавшак чĕреллĕ паттăр» тет. Лирикăра поэт тарăн шухăшлăх, философилĕх, экзисценци енне туртăнни те вăйлах палăрать. Çавăн йышши хайлавĕсене вăл самана лăпланса çитсен кăна пичетлет. Карелпа финсен эпосне, Пушкинăн «Евгений Онегин» сăвăлла романне куçарнă май сăвăç халăх чунĕпе ăс-хакăлĕ, ăнĕпе философийĕ пирки сахал мар шухăшлать, «Тилли юррисем» ятлă хайлав çырма мехел çитерет.

Жанр тĕлĕшĕнчен вăл малтанхи ярăмсен тăсăмĕ пек, вĕсен тӳпи пек пулса тухнă. Чăвашăн ярăмлă шухăшлавĕ, маларах палăртнăччĕ ĕнтĕ, вăл тĕнчене тавлăклăн (циклично) туйнинчен, çут çанталăк вăхăчĕсем (çур, çу, кĕр, хĕл) пек çаврăнса тăрать тесе ăнланнинчен килнĕ. Тĕп харкамçă çав вăхăтпа çураçăнса (çурĕ-çăвĕпе савăнса, кĕрĕпе киленсе, хĕлле пурнăçпа вилĕм çинчен шухăшласа) пурăнать, çавна май ярăмри тĕрлĕ сăвă-юрă хывăнать. Вăхăт тавлăкĕ вырăнне талккăш улшăнăвĕ те йышăнма пултарать. Ун пек чух вара вулавçă умне «тĕнче касан» харкамçă тухса тăрать. Акă

мĕнле ăнлантарма пулать П. Хусанкай ярăмĕсенчи харкамçăн тĕп енĕсене. Сăвăçăн ярăмлă шухăшлавĕ унăн каярахри пултарулăхĕнче те малта тăрать.

30-мĕш çулсенче çыравçă пултарулăхĕнче тепĕр пысăк улшăну пулса иртет. Литературăра публицистикăпа проза вăй илнĕ май Хусанкай харкамçи те хăйĕн туйăмĕнчен ытларах ытти çынсем çинчен, пĕр-пĕр ĕç-пуç çинчен каласа пама кăмăллать. Çакна поэт эпика енне сулăннипе ăнлантарма май пур.

«Хамăр ялсем» сăвăсен ярăмĕ (1935–1940). Кунти харкамçă ытларах калавçă пек, хайлаври иккĕмĕшле е виççĕмĕшле çын пек курăнать. Унăн тĕллевĕ – ял е хăй «астунă сăн-сăпатсене» кăтартса парасси. Хăшĕ-пĕри (Уняхви старик, Сар Миккен) темиçе сăвăра та тĕл пулать. Вĕсем пурте ватă çынсем, хăшĕсен сăнарĕсем (калăпăр, Карпа Ваçукĕн) ял-йыш асĕнче кăна тăрса юлнă. Теприсем вара калавçăпа юнашарах пурăнаççĕ, çĕнелсе пыракан пурнăçран юлас шухăш çук вĕсен. Ава Сарамат пичче шăпăр каласа Виктор ятлă студент-пианистпа тупăшса ăмăртать («Тавлашу», 1936), Йăкăнат пичче çĕнĕ пурнăç юрри хывса шăрантарать («Йăкăнат», «Пархатар юрри», 1939). Çав сăвăсенче суя оптимизм çук тесе калаймăн – соцреализмăн совет пурнăçне идеалласа та илемлетсе кăтартма ыйтакан принципĕсем çав саманари чылай çыравçа чăн-чăн пултарулăх çулĕнчен пăрнă. Критиксем Хусанкая «вăл хăйĕн чунĕнче чаваланать, хальхи пурнăçа тата çынсене кăтартмасть» тесе вăрçнă.

П.Хусанкай сюжетлă сăвă ярăмĕсем çырма пуçланине наци характерĕн тĕрлĕ енĕсене кăтартса парас тенипе кăна ăнлантарни çителĕксĕр. Вăхăт хистевĕпе ыйтăвĕ те пур кунта. Унсăрăн Ухиме инке савăнăçĕ (вăл раскулачить тунă çынсен пурçăн тутăрне туянса çыхать) теприсен куççулĕпе юнашарах пулнине, телее çын инкекĕ çинче тупма май çуккине ăнланса илеймĕн. Пысăк художник пулни кăна çăлать çакăн йышши сăвăсен авторне. Кунта вăл малтанласа çынсен тĕрлĕ портретне ӳкерме, эпика калăвне йĕркелеме хăнăхать. Каярах çав опыт ăна чи малтан «Аптраман тавраш» хайланă чухне кирлĕ пулать.

40-мĕш çулсенчи пултарулăхĕ. 1941–1942 çулсенче поэт Хусанта тухса тăракан «Хĕрлĕ ялав» хаçатра ĕçлет, ака уйăхĕнче фронта тухса каять. Дон шывĕ çинче, Сталинград патĕнче, Брянск фронтĕнче, Украина çĕрĕнче пулать, Польшăна çитет. Унта ăна 1944 çулта йывăр амантаççĕ. Пĕр хушă госпитальте сывалнă хыççăн 1945 çулхи çĕртме уйăхĕнче вăл килне таврăнать.

Вăрçă çулĕсенче сăвăçăн чунĕ тепĕр хут уçăлать, çыравçă халăхăн хуйхи-суйхине тарăннăн туйса илет. Фронта тухса кайиччен П.Хусанкай «Таня» ятлă поэма хайлать, унта Зоя Космодемьянскаян паттăрла ĕçĕсем çинчен каласа парать. Хайлав вулавçăсене паттăрлăх туйăмĕпе хавхалантарнă, вĕсене тăшмана хирĕç тăратнă.

«Шухăшăмçăм, шухăш...» ярăма П.Хусанкайăн вăрça кайиччен тата фронтра çырнă сăввисем кĕнĕ. Вĕсенчи лирика харкамçи çапăçу хирĕнче те мăшăрĕпе хĕрне, тăван енне аса илет. «Çумăр, çумăр, çумăр...» сăвăри харкамçă вăрça тухса каять, чирлĕ поэта (И.Ивнике) çеçпĕл çеçкисем парса хăварать. «Çул çинче» сăвăри герой фронта ăсанать, çул çинче хĕрпе паллашать, хăй сывă таврăнасса шантарать. Сăвăсенче çине-çинех вилĕм мотивĕ тĕл пулать. Анчах та çав вилĕм пурнăçа малалла яма пулăшать. «Пĕр вилĕмпе пин çыншăн килчĕ пурнăç», – тесе çирĕплетет харкамçă.

«Кĕвĕленмен юрăсем» ярăмра (1945–1952) сăвăç тепĕр хут юрату лирики патне таврăнать. Кунти харкамçă вĕри чĕреллĕ çамрăкран ытларах тем тĕрлĕ йывăрлăх тӳснĕ, хуçăлман савни пек курăнать. «Сиктĕрме» ярăмра (1946–1961) вара поэт «Хамăр ялсем» темине чылай тарăнлатать, несĕлсемпе ялсен аваллăхне сăнлать, Питтăпай турхан пирки пĕлтерекен халапсене ăнлантарса парать. Кунта хальхи çынсене ытлашши хитрелетсе кăтартни çук. Харкамçă ялтан тухса кайнă çамрăксене ӳпкелесе акă мĕн калать: «Çунат ӳссен çапла çав эпĕр: Йăва тĕлне те пит пĕлместпĕр, Атте-анне те ют пек, тен...» («Вĕрентекен», 1948). Сăвăçсем ытларах çын тĕнчине çут çанталăкпа танлаштараççĕ пулсассăн, «Хĕллехи ир» сăвăра (1948) поэт тавралăха çыравçă тĕнчипе (шур хут çинчи пăнчăсемпе пуçхĕрлĕ лартнă «кайăксем»,

сăнлăхсем т. ыт. те) çывăхлатса пăхать. Ку вара тĕп шухăша çапла çавăрса калама май парать:

Лере мăн Улăп тĕмĕпе
Хурал юпи курнать таçтан.
Курнайăттăм эп çакăн пек
Хам çакăнтан куçса кайсан...

50–60-мĕш çулсенчи пултарулăхĕ. Ку вунă çуллăхсенче П.Хусанкай ытларах çулçӳрев ярăмĕсем хайлать: «Кĕл чечек çĕршывĕн йăл кулли» (1959–1960), «Кавказ сăввисем» (1959–1966), «Румынири май» (1959–1963), «Пăлхар ярăмĕнчен» (1960–1963), «Хушка хумсем» (22.IV–15.V.1963. Дубулты), «Инçе вĕçев» (октябрь 1963 – ноябрь 1964). Вĕсенче сăвăç ют çĕрте тăван ен ытларах хаклăн туйăннине пĕлтерет, чăваша ытти халăхсемпе танлаштарать. Поэт хăйĕн иртнĕ кунне-çулне философилле пĕтĕмлетме, çитсе курман çĕрсене васкавлăн курса ĕлкĕрме тăрăшать. Кун-çул тӳпине çитнĕ сăвăçа вилĕм мотивĕ кăмăла киле пуçлать:

Хăçан, ăçта куç хупасса курмастăн:
Таçти Европăра е Азире...
Пĕр-пĕр палла эп тивĕçлĕ пулсассăн –
Чăваш сăмахĕ пултăр ман сире.

(«Хушка хумсем»)

Тепĕр сăввинче («Инçе çула пуçтарăнатăп...») поэт «шăлан йĕппиллĕ чăтлăх витĕр чăнлăх уçлăхне» тухни çинчен калать. Лирика харкамçи хыçра юлнă çула çапла хак парать:

...Тумхахлă та иккен, хура та
Эс утнă çул çак çĕр çинче.
Куçа хупса аса илсессĕн –
Мана мĕн чухлĕ тӳнккемен!
«Аванччĕ пĕрех хут вилсессĕн!» –
Тени те пулнă пулĕ тен.

Çапах та купăсăм кун-çулĕ
Итлекене ахаль пухман.
Тен, йăнăш сас та тухнă пулĕ,
Анчах та урмăш сас – тухман!

«Йăнăш сас» тесе мĕне шута илсе каланă-ши? Паллах, хăйне тӳнккенĕ критиксемпе официаллă идеологсен хаклавĕсене йышăнса калани мар ку. «Ĕнер тиркени – халь пахалăх, Паян мухтани – тен, пиçеймĕ», – тесе çырать поэт 1964 çулта («Поэзи вăл – уйрăм патшалăх»).

30–40-мĕш çулсенчи тӳнтер социологилĕхпе минренĕ критика П. Хусанкайăн вăйлах мар, çав хушăрах ун чухнехи лозунгсемпе уйрăм çынсене мухтанă хайлавĕсене ырланă. Çавсене каламасть-ши поэт йăнăш сасă тесе? П.Хусанкайăн малтан тиркенĕ хайлавĕсем (20-мĕш çулта çырнисем, 30-мĕш çулсенче сунтăха хунисем) чăн-чăн поэзи ахахĕ пулни иккĕленӳсĕр.

Халал сăввисемпе сăмахĕсем (1927–1970). Çак жанр чăваш поэзийĕнче çителĕклех аталаннă. Вăл е ку çынна, тĕрлĕ юбилей кунĕсене халалласа çырнă хайлав чылай сăвăçăн пур. Çапах та чăваш поэзийĕнче халал сăввисен чăн-чăн ăсти тесе пĕр П.Хусанкая çеç калама пулать. Кама-кама халалласа çырман-ши вăл: Н.Я.Бичурина, К.В.Иванова, Н.И.Ашмарина, Çеçпĕл Мишшине, И.Тăхтине, Ç.Элкере, Н.В.Никольскипе В.Г.Егоров профессорсене, О.И.Ырсем артисткăна, М.С.Спиридонов художника, Г.Я.Хирбю композитора...

Асăннă жанрпа çырнă сăвăсем ыттисенчен халал пуррипе кăна мар, публицистикăлăхпа та уйрăлса тăраççĕ. Çакăн йышши йĕркесене сăвăç хăйĕн кĕнекисене парнеленĕ май е урăх сăлтавпа шăрçаланă. Ун пек чухне поэт вичкĕнрех пулма, чун тĕпĕнчи шухăшне уççăнрах пĕлтерме май килтернĕ. Кăна эпир П.Хусанкайăн чылай хушă пичетре пулман халал сăввисенче аван куратпăр. Тĕслĕхрен, 1960 çулта Шупашкарта литература музейĕ уçăлнă ятпа ирттернĕ митинг хыççăн (ку ĕç К.В.Иванов çуралнă кун пулса иртнĕ) поэт çапла йĕркесем çырса хурать:

Кĕçтенттин вăл – телее!
Халăхăм, çакна пĕлсем.
Аслатасчĕ музее!
Шухăшлар-ха, чăвашсем!

Хусанкайăн хусанкайлăхĕ сăвăç вуншар çул малашрине курма пултарнинче те аван палăрать. Вăл литературăри обӳективлăха, пурнăç чăнлăхне мĕн çĕре кĕричченех çухатман. Илпек Микулайне 50 çула çитнĕ ятпа саламланă сăввинче поэт темăсемпе спекуляцилекен «делецсене» вырăнлă йĕплесе илнĕ. Малалла вăл вĕсене шеллесе те пăхать:

Чăнне калас тесессĕн
Шел çав коллегăма.
Çын питĕ ĕлкĕресшĕн
Саманапа пыма!

Çав вăхăтри самана еплерех пулни халĕ пире паллă. Япалана хăйĕн ячĕпе калама юраманни чылай çыравçа юмах яртарнă е чĕмсĕрлетнĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ П.Хусанкай та çав çурма чăнлăх вăхăчĕ çинчен каласа çитермест: «А самани... Э, юрĕ... Эс, шăллăм, урăх пек...»

Чăваш литературинче халал сăввисем яланах самана сăн-сăпатне тĕрĕс ӳкернипе палăрса тăнă. Илер-ха К.Ивановăн И.Яковлева халаллана «Хальхи самана» сăввине. Унта поэт çут тӳмеллĕ, тиек-тӳрене тухнă чăвашсене, тăван чĕлхене, культурăна юратман каçрашкасене хытах питлет. Каярах чĕлхемĕре хӳтĕлесе кăвар чĕреллĕ Çеçпĕл Мишши сахал мар сăвă хайланă. П.Хусанкай Ç.Элкере халаллана пĕр сăввинче (ăна вăл 1966 çулта çырнă) çак проблемăна хăйĕн вăхăчĕпе шайлаштарса хускатать. Элкере, тăван сăмаха чунтан-чĕререн савакан çынна, тĕрлĕ «кансĕрлевçĕсем» тапăннинчен хӳтĕлет. Çурма чăнлăха хирĕç тăрса поэт-трибун çапла ыйтать:

Çапла-им Ленин хушнă, калăр?
Çапла-им сĕннĕ Мускавран?
Чăваш ĕçне тăвар-ха хамăр
Пур танлă халăхпа пĕр тан.

Поэт халăхăмăрăн, культурăмăрăн, чĕлхемĕрĕн пуласлăхне шанса ĕненет, пурнăçа çĕнĕ йышши çыравçăсем килессе шаннине палăртать.

П.Хусанкай хăйĕн халал сăввисенчен улттăшне паллă литературоведа, СССР Педагогика наукисен академийĕн член-корреспондентне М.Я.Сироткина халаллана. Вĕсенчен пĕринче поэт хăй çав жанрпа мĕншĕн çырма кăмăллани çинчен çапла калать:

Савăнма е пухура, Çавăн майлă сăввăмсем
Е каçхи кĕрекере Вĕçрĕç çывăх та инçе,
Йăпанас йăлам пурах Пичетре пулман вĕсем –
Сăвăпа хĕре-хĕре. Тусăмсен чĕрисенче!

«Архивсен арчинче таçта» упранса юлнă çав сăвăсене «пулас кандидатсем» тĕпчессе шанса çырать поэт:

Ах, пĕрре те уншăн мар Тĕрмешетпĕр тĕрлĕрен:
Ыратса тапать чĕре: Çил те, тăвăл та улать...
Чĕрĕ чух сума сăвар Пĕтĕм мул-перекетрен
Пĕр-пĕрне çак тĕнчере. Ырă кăмăл çеç юлать.

П.Хусанкайăн халал сăввисем сахал мар. Вĕсене, тĕрлĕ парне кĕнекисенче, юбилей хучĕсенче упранакан йĕркесене, пĕр çĕре пуçтарса та çитереймен-ха. Хусанкай хăйĕн васкаварлăн, экспромтла çырнă халалĕсенче те чăн-чăн поэт тата чăваш пек ӳкерĕнсе юлнă. Чăвашлăх идейине Çеçпĕл хыççăн алла илсе, хăйĕн хыççăн килекенсене вăл эстафета пек парса хăварма пултарнă. Пĕр халалĕнче («Влас Паймена», 1967) çав идейăна чĕнӳ евĕрлĕ формăласа çапла каланă:

Хамăр халăх ячĕпе Асăнап сана чĕнсе:
«Чăмăртанăр, чăвашсем!» Пур вăя, тăван, парар
Тенĕ аслă ĕмĕтпе. Хамăр халăхăмăра!

«Çамрăк чăваш поэчĕсене каланă сăмах». Çак сăмаха П.Хусанкай халăх умĕнче юлашки хут каланă (Çамрăк çыравçăсен канашлăвĕ, 1969, чӳк). Поэт çамрăксене халаллана шухăшсем çаксем:

«Хăвăртан малтан йывăр тертпе çул хывнă тăванăрсене сума сăвăр. Пĕрне-пĕри хисеплĕр, туслă пурăнăр. Мал ĕмĕт ячĕпе, ăсталăх ячĕпе сиксе тавлашăр, тупăшăр, ăмăртăр, çухаран çавăрса тытасса çитĕр, анчах урăр çĕре лексенех пĕрне-пĕри ал парăр. Ан манăр: эсир пĕр аслă самана çыннисем, пĕр халăх йышĕ, пĕр класс сасси. Поэзи хурал пӳрчĕ мар, унта карланкăпа çĕнтерейменĕ. Çеçпĕл сăвăçсем патне янă çырăвĕсенче «чăваш чĕлхи ячĕпе пĕр пулар» тет. Ку нумая пĕлтерекен япала. Этем ĕмĕр пурăнаймасть. Хăрнă йывăç вырăнне çĕнĕ хунав шăтать. Пĕр йăннă сасă вырăнне вуннă янраса кайтăрччĕ!..

Эсир наци малашлăхĕшĕн сăмах татмалли çынсем. «Халăхсене вĕсен литературипе виçеççĕ», – тенĕ Виктор Гюго. Чăваша малашне сирĕнпе виçĕç. Сулмаклăрах пусасчĕ сирĕн çав тараса çине!..

Тепĕр манăн тахçанхи шухăш: чĕлхене вĕренĕр! Тĕнче поэзине оригиналтан куçарас ĕçе хатĕр пулăр... Шанчăк – сирте, яш-кĕрĕм, хĕр упраç...»

П.Хусанкай лирики пирки çапла пĕтĕмлетсе калама пулать. Малтанхи çулсенче сăвăç ялпа хула, традициллипе техника цивилизацийĕ, тăван çĕрпе илĕртӳллĕ, çав вăхăтрах ютă, инçетри çĕрсем, юратупа пултарулăх хушшинчи хăйĕн вырăнне шырать. 30-мĕш çулсенче сăвăçăн, саманине кура, эпикăлăхпа публицистикăлăх енне сулăнма тивет. Çав хушăрах поэт халăх сăмахлăхĕн сăнарлăхĕпе шухăшлăхне тата илемне ăша хывать, тарăн философилĕхе путать, экзистенци туйăмĕ-сисĕмне вăйлатать. 40-мĕш çулсенче вăл тепĕр хут юрату лирики патне тавpăнать, малтанхи эпикăлăха вăйлатать. Сонет, рондо, газель, рубаи тата ытти сăвă кӳлеписене те чăвашлатнă поэт литература историне чи малтан *сăвăсен ярăмĕ* жанра аталантараканĕ пек кĕрсе юлчĕ. Çав жанр сăвăпа поэма хушшинче тăни, вăл лирикăллă поэмăна çывăх пулни паллă. Унăн тухăçлăхне уйрăм сăвă тепĕр сăвăпа хутшăнас туртăмлă пулнипе кăна мар, наци шухăшлавĕн хăй евĕрлĕхĕпе те, вăхăт ыйтнипе те ăнлан-тармалла.

Хусанкай лиро-эпики

20-мĕш çулсенчи пултарулăхĕ. Поэмăсем хайлама П.Хусанкай 1927 çулта пуçăннă. Çакăн пирки сăвăç акă мĕнле аса илнĕ: «1926 çулхи кĕркуннерен пуçласа 1927 çулхи çуллаччен манăн пĕрремĕш хут Чăваш çĕршывĕнчен инçенелле тухса çӳремелле пулчĕ. Эпĕ Вăтам Ази тăрăх пайтах хутларăм. Юлашкинчен Ашхабадран Красноводска, унтан Каспи тинĕсĕ урлă Баку хулине çитрĕм. Çирĕм ултă Баку комиссарĕн трагедиллĕ шăпи çинчен шухăшланă майăн эпĕ çав материалсемпе интереслентĕм... Вара 1927 çулхи çулла, Бакуран Сталинград урлă Атăлпа Шупашкара таврăнсан, С.В.Элкер хваттерĕнче, виçĕ ир хушши садра ĕçлесе, çак «Çирĕм ултă» поэмăна çырса пĕтертĕм...»

«Сунталăн» 1927 çулхи 7–8-мĕш номерĕсенче (вĕсем пĕрле çапăннă) çапла пĕлтерни пур: «Хусанкай поэт пĕр ярăм «Хура пĕркенчĕк» ятлă сăвăсен пуххи çырса пĕтернĕ. Халĕ «Питтăпай» ятлă драмăллă поэма çырать. Питтăпай – халăх геройĕ. Халăх ун çинчен 300 çула яхăн асăнать».

«Тăван çĕршыв» ятлă статйинче (1941) П.Хусанкай çапла каланă вырăн пур: «Иштăпай – Питтăпай турханăн шăллĕ пек хисепленет халăх асĕнче. Питтăпай турхан – Сиктĕрме таврашĕнчи пур ял та сума сăвакан ăру пуçлăхĕ. Ăна Аслă Петĕр ĕмпӳ ашшĕ Алексей Михайлович панă хута ку таранчченех усраççĕ. Çав хут çинче чăвашсем ыттисемпе пĕрле, патшаран пушăт сӳме, мăйăр пуçтарма, хăмла татма ирĕк ыйтни палăрать. Питтăпай çинчен ак çакăн пек юрă сыхланнă:

Питтăпайăн ачисем Ялан кĕмĕл сулăллă,
Ялан симĕс атăллă, Питтăпайăн хĕрĕсем –
Питтăпайăн кинĕсем Шĕлтĕр укçа умĕсем...»

Çак статьяри шухăшсемпе юрра П.Хусанкай «Несĕл» ятлă сăвва (1948) кĕртнĕ. Анчах та поэтăн 1927 çулта асăннă драмăллă поэми тĕпчевçĕсен аллине ку таранчченех лекмен-ха. Хăй вăхăтĕнче пичетленмен (пичетлемен тени тĕрĕсрех пек) хайлавăн ал çырăвĕ çухалнă пулас. Ăна сăвăç историлле

эпос евĕрлĕрех çырнă, халăхăмăрăн пĕр паттăр ывăлне çĕклену́ллĕ хавалпа сăнарланă.

Çав вăхăталлах поэт чăвашăн тепĕр мухтавлă ывăлĕ çинчен «Хури» ятлă поэма çырать (12.08. – 28.10.1927), ăна çийĕнчех пичетлесе кăларать (Сунтал. 1927. 11 №).

«Çирĕм улттă» (1927, çулла). Поэма пĕлтерĕшĕ пирки П.Хусанкай хăй çапла калани пур: «Хамшăн пулсан çав поэма идейипе кăна мар, чăваш поэзийĕнчи çĕнĕ шкул – Çеçпĕл шкулĕ – çирĕпленсе пынине тепĕр тĕслĕхпе кăтартса панă пирки те хаклă туйăнать. Ун чухнехи критика та ăна çаплах хакланăччĕ». Паллах, Баку коммунарĕсене идейăшăн паттăррăн пуç хунă пек романтикăласа сăнлани героикăллă хавхасăр пулма пултарайман. Влаçсене çырлахтаракан тематика П.Хусанкая хăйĕн шухăшĕсене калама та чăрмантарман. Çакна каярахри кăларăмсене кĕртмен (кĕрттермен тесе ăнланмалла) йĕркесенче те курма пулать: «Вырăс, вырăс – тĕнче кĕлĕмçи», «Хĕвел тухăç çыннийĕ çапах Иртнине манас çук ĕмĕрне», «Хĕвел тухăç çынни те халь тăвĕ Юррине хăй тăван чĕлхипе» т. ыт. те. Чăваш наци ăнĕ у́ссе пыни те сисĕнет хайлавра. Çакна вăл çав çул хайланă ытти поэмисенче анлăрах кăтартма пултарать.

Поэтикăри çĕнĕлĕх тĕлĕшĕнчен те пĕлтерĕшлĕ ку поэма. «Хура пĕркенчĕк» ярăмри евĕрлĕ сăвă çемми те, çавра ушкăнĕсемпе ярăмласа пыни те хайлавăн хăй евĕрлĕхне йĕркелет. Уйрăмах кунта сюжетăн классикăлла аталанăвĕ палăрăмлă. Ун пирки ятарласа ăнлантарни кирлĕ.

Халăхсен авалхи синкретикăлла искусствинче, Леонардо да Винчи каланă терминпа усă курсан, *ылтăн касăк* (золотое сечение) принципĕ пуç пулса тăнă. Çав принцип ку́лепе йĕркелессипе тачă çыхăннă. Унпа музыкăра та, архитектурăра та, халăх поэзийĕнче те тухăçлă усă курнă. Тĕп палли акă мĕнре: хуть те мĕнле аталану та вăхăтăн виççĕмĕш чĕрĕкĕччен хĕрсе, хăпарса пырать. Шăп та лăп виççĕмĕш чĕрĕкре кульминаци (эпир ăна мехел тейĕпĕр)

саманчĕ çитет. Вăл ылтăн касăкăн вырăнĕ пулать те ĕнтĕ. Çав икке пайланнă татăкăн малтанхи пайĕ 0,618, кайранхи пайĕ 0,382 вăрăмăш.

Çак мехел илемлĕ хайлавра асăннă пропорципе тĕл пулсан çеç вулавça чăннипех хускатать, интереслентерет. Кульминаци вунă пайран малтанхи улттăшĕнче хĕрсе пырсан, кайранхи тăватă пайĕнче ерипен сивĕнет пулсассăн кăна эпир лăпкăлăх, килĕшӳлĕх туйма пултаратпăр иккен. Çакă вăл çын психикипе çыхăннă пулăм.

Халĕ сăмаха çемĕ мехелĕ çине куçарар. Сăвă çеммин йĕркеленĕвĕнче те мехел вырăнĕ пурах-тăр. Аса илер-ха халăх юррисенчи çемĕ йĕркеленĕвне. Юрă сăввисен йĕркисем пирĕн чылай чухне 4 Ă 3 кӳлепеллĕ сыпăк ушкăнĕсенчен тăрать. 7 Ă 4 кӳлепеллисем те (ытларах анатри чăвашсен) тĕл пулаççĕ. Çав сыпăк ушкăнĕсен пропорцийĕ халăх сăввинче çирĕпленнин тĕп сăлтавне те мехел (ылтăн касăк) принципĕнче курмалла-тăр. Урăх мĕнпе ăнлантарма пулать-ши çав архитектоникăллă сăвă йĕркисем тĕнчери тĕрлĕ халăхсен (пĕр-пĕринпе нихăçан та хутшăнман халăхсен) пуррине?

Çемĕ мехелне эпир халăх сăввин йĕркисене пĕлтерĕшсĕр сасăсемпе кăларса та туйса илетпĕр: ай-хай-хай-хай/ ай-хай-хай (çак татăксене çапла çемĕпе туй ачисем кăшкăрса калаççĕ), ай-яр, ай-яр/ай-яр-ах (туй арăмĕсен юрринчи хушса юрламалли) т. ыт. те.

Ахальтен мар вилĕмсĕр «Нарспи» авторне те халăхăмăрăн çак сăвă кӳлепи килĕшнĕ. Çав ылтăн касăк принципĕ «Нарспин» сăвă йĕркисенче çеç мар, сюжетĕнче те вăйлă палăрать. Эппин, поэт гармони енне ăнтăлнине эпир содержанире çеç мар, формăра та курма пултаратпăр.

Халĕ П. Хусанкайăн «Çирĕм улттă» поэмине илер. Хайлавăн сюжечĕ акăлчан капитанĕ Ретшинальтăн пуçĕнче Баку комиссарĕсене вĕлерес шухăш çуралнă тĕлте хĕрсе çитет. Каярах çак оккупантăн идейи еплерех пурнăçланни, мĕнпе вĕçленни çинчен çырса кăтартнă. Ку ĕнтĕ развязка пайĕ. Мехел вырăнне поэт хăех палăртнă: вăл икĕ йĕркине ыттисенчен курсивпа уйăрнă:

Пĕр никам та пĕлмест халĕ –
Темшĕн
Кирлĕ пулнă кун чухлĕ салтак.
Ретшинальт купере пĕчченех-мĕн
Çирĕм улттăшăн пусă алтать.

Поэма кульминацийĕ, мехелĕ çак çавраран пуçланать те тепĕр виçĕ çавра çав шайра тăрать, каярах вара майĕпен чакма пуçлать.

Халĕ хайлаври мехел вырăнне ылтăн касăк вырăнĕпе шайлаштарса пăхар. Поэмăра мĕнпурĕ 68 çавра. Эппин, ылтăн касăк тĕлĕ 37–40 çаврасем тĕлнерех пулмалла пек (4 Ă 3 ă 7 е 40 Ă 30 ă 70 çавра). Илсе кăтартнă çавра поэмăра вăтăр çиччĕмĕшĕ. Шăп та лăп хĕрĕхмĕш çаврара (!) кульминаци хăйĕн тӳпине çитет.

Ылтăн касăк принципне тĕпе хурса çырнă хайлавсем П.Хусанкайăн сюжет шайĕнче те, сăвă çемми шайĕнче те сахал мар. Ку тĕлĕшрен тĕпчемелли-сăнамалли пайтах.

«Хури» (1927, кĕркунне). Хайлав жанрне автор вунă юрăллă поэма тенĕ, пĕтĕмпех виçĕ картлă (стопаллă) амфибрахи виçипе çырнă. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш картсен вĕçĕнчи сыпăксен вырăнне сикчĕ (цезура) кĕрсе ларнă. Çакă йĕркесене татса, кĕвĕлесе те уйрăм сăмахсене пусса калама хистет. Ун йышши çемĕллĕ поэма вăрăм пулма пултараймасть. Чăваш студенчĕсене халаллана хайлава çамрăк вулавçă валли, поэзири çĕнĕлĕхсене ал хапăллисемшĕн çырнă. «Ирĕкпелен тăван» Хурине (чăвашсен паллă эсер-студентне) халăха «пăлхав юрри вĕрентнĕшĕн» Çĕпĕре пуç илене яраççĕ. Фабула калăвĕн çипĕ лирикăлла çаврăмсене ярăмăн-ярăмăн шăрçаласа çыхнă, автор тĕп харкамçăн ăшри туйăмĕсене тулли кăтартма пултарнă. Автор-калуçă çине-çинех риторикăлла ыйтусемпе е кăшкăрусемпе усă курать, çакă вара экспрессиллĕ интонацие татах та вăйлатать.

Чăваш халăхĕн «кĕлленнĕ кăвар чĕреллĕ» паттăрĕсем (çав шутрах Питтăпай турхан та) çинчен поэмăра çапла пĕтĕмлетсе каланă:

Çухалнă ята Анчах ятсăрри

Тупсан Миçен,
Чуну хĕпĕртет Çĕклентĕр тăпри
Пуль сан. Вĕсен!

Ку ĕнтĕ çамрăк вулавçăсене халăхăмăрăн аваллăхне, унăн мухтавлă çыннисене пĕлме йыхăрниех. Çав тапхăрта критиксем çыравçăсене хальхи çĕнĕ пурнăçпа унăн çыннисем çинчен çырма хистенĕ.

«Пушкинпа каласни» (1928). Çак хайлавăн тĕп харкамçи – ăна çыракан сăвăç, «чăваш поэчĕ». Вăл Мускавăн Тверь бульварĕнчи Пушкин палăкĕ патĕнче ларать, вырăс поэчĕпе хăй тĕллĕн каласать («Юнашарах эп сирĕнпе ак лартăм Йĕркелемешкĕн хамăн шухăша»). Малтанах вăл сăвăç шухă пулни унăн генилĕхне пач пĕтерменнине, ăна çĕр çул иртсен те манăça хăварманнине пĕлтерет. Ытарлă сăмахăн вĕçĕ хӳрипе те пулин чăваш поэтне пырса тивет.

«Мăшкăл-элек» тӳснĕ халăхăн сăвăçне Евгений Онегин «тĕнче çути сая ярса» пурăннăн курăнать, хĕршĕн дуэле тухни те çĕн саманашăн юрăхлă мар пек туйăнать. «Хĕрсем халь наркăмăш пекех-ха маншăн», – пĕлтерет харкамçă. Уншăн чи кирли вăл чĕрене сӳнтерменни тата поэзие шăнтманни. Сăвăça пессимист тесе айăплаççĕ, юрату лирикине йышăнмаççĕ иккен. «Юратăва юратакан сахал-мĕн, Халь тракторсем кĕрлеççĕ сăвăра», – ӳпкелешет харкамçă, Татьяна Ларина идеалне асра тытаканскер. Сăвăç-саманташĕсене сăмахпа тĕртсе илме те (И. Тăхти стилĕпе) манмасть вăл:

Ухмах пуçпа
Çапла эп шухăшлатăп:
Чупса тухас килсессĕн ку чухне –
Перу вĕçне
Пăртак çыртса кăшла та
Тĕрле плакат
Çĕршер йĕрке кунне!

Графомансен ячёпе çырнă шухăшсем поэмăра татах та пур. «Нарспи» авторёпе Çеçпёл Мишшине манни, «чёррисенче пархатар» пулманни кулянтарать палăк умёнчи сăвăçа. Анчах та харкамçăн шанчăкё пур: сăвăçсем çёнё çул шыраççё, Çеçпёл традицийёсене аталантараççё.

Хайлав вёçёнче «Сыв пулăр Хам сире çывхариччен!» тесе çырнине темиçе тёрлё ăнланма пулать. Поэт тиркевçисем П.Хусанкая вăл Пушкин шайне çитесшён тесе айăплана (сăвăçё çывхарма кăна ёмётленнё пулсан та). Тепёр тесен, апла каланинче мён япăххи пур-ши? Кашни ача пысăк çын пулма, салтак генерал пулма ăнтăлать тёк –сăвăçăн мёншён генилле Пушкин енне туртăнмалла мар ёнтё?

Ку вăл вăхăт тăрăлтарса çитернё шухăш. 1929–1930 çулсенче урăхла лару-тăру пулнине ун чухнехи хаçат-журнала вуласан аван чухлатăн. Хăйне чее кулак, артист тесе айăплакансене поэт «Хупă çырура» (1931) çапла хуравлать:

Эсир, ман çулăма пёлмесёр
Манпа чёрре кёрекенсем,
Тёрёс тăватăр пуль те эсёр
Мана халь штык вёçне тирсе.
Эсир шутлатăр пуль – вăт парти
Ун чух вăл тытнă тёрёс çул...
Комсомолтан тухмалла марччё
Тата ытти те тейёр. Çук.
Мана ку çырлахтараймасть пек,
Хăть «контрреволюци» тем.
Эп янтă çулпала пымастăп,
Пыман, нихçан та пымăп теп!

Поэт революци идейисене тезисла калакансене те, çён трактор çинчен кăна çыракансене те, «вёри чей ёçес» шутлисене те сивлет:

Эп йоркшир сысни пек хăнчăр куçлăн
Умри кункрана тăрăнман сăмсапа.

Манăн сăмах – е çĕнтерĕн, е хуçăлăн, –

Чĕрем кĕлленсе сӳниччен хĕм сапап.

«Литлаххан» таврашĕнчи çыравçăсене асра тытса çырнă сăмахсем хаяр та пĕр шелсĕр, автор вĕсене чĕре тĕпне çитиччен тарăхни сисĕнет çав пичетленмен хайлавра.

Поэтăн «Пушкинпа каласни» поэмине чылайăшĕ ăнланман, вăл «таса ӳнер» тĕслĕхĕ тесе тиркенĕ. Моисей Федоров, ун чухне Мускав университечĕн историпе философи факультетĕнче ăс пухакан талантлă студент, П.Хусанкай патне 1929 çулхи юпан 6-мĕшĕнче янă çырăвĕнче çапла çырать: «Конечно, я не согласен с мнением некоторых, а, может быть, и всех (потому что все так думают), которые требуют от тебя воспевания трактора, колхоза и т.д. И этот путь не менее гибелен (он гибелен в смысле надрыва таланта, а первый – гибелен в <нрзб> смысле), чем «аваллăх савăкĕ». Нет, иными путями должно пойти твое творчество».

Тĕпчевçĕ тепĕр статьяра («Пуçлакан поэтсен пултарулăхĕ», 1929) калани те П.Хусанкая хӳтĕленме май панă. Акă çав йĕркесем: «Тракторпа кооператив çинчен сăввисене пичетлесшĕн çех асăнакан приспособленцăсен малаллăх çинчен шухăшлас пулать, приспособленцăсене мар, чĕререн çĕнĕ пурнăçа парăннă çынсене кĕтет самана!»

«Поэтпа миссионер» (1929–1930). Хайлава çырни пирки П.Хусанкайăн çапла аса илӳ пур: «Петр Чайковский композиторăн пурнăçне тăсакан пăрахут çине чĕрĕ композитор Павăл Хĕветĕрĕ ларман пулсан эпĕ нихăçан та «Поэтпа миссионер» çырас çукчĕ» («Тĕл пулусем», 1931). Тепĕр вăтăр ултă çултан сăвăç çав тĕл пулăва каллех аса илет («Здравствуй, Нарспи!», 1967). Унта вăл композитора хăй поэмин хура вариантне вуласа патăм тесе çырнă.

П.Хусанкай пăрахутпа Хусаналла 1928 çулхи кĕркунне кайнă пулсан (Чĕмпĕр чăваш шкулĕн юбилейне), поэмине сăвăç 1929 çулта çырма пуçланă тесе палăртать. Эппин, чăвашла аса илӳре калани тĕрĕсрех пек пулса тухать.

«Пушкинпа каласни» поэма пичетленсен унăн авторне çĕнĕ пурнăç çинчен мар, хăйĕн чунĕнче чаваласа, хăйне мăнна хурса çырать тесе айăплана. Çак лару-тăру поэта *пултару ĕçĕ* (сăвăç) тата *самана (тӳре-шара*) проблемăна малалла аталантарма хистенĕ. Пушкинпа власть хирĕçĕвĕ проекциленсе Хусанкайпа тӳре-шара ăнланманлăхне уçăмлатнă. Ку кăна мар-ха. «Нарспи» авторĕн трагедине те П.Хусанкай çав хирĕçӳрех курнă. Çапла майпа Чĕмпĕр шкулĕпе ун пуçлăхĕн (И.Я.Яковлевăн) сăнарĕ поэмăра хура тĕспе сăрланать. Хайлав çапла çаврасемпе вĕçленет:

Кĕнекине унтан пăрахрĕ,
Пирусшăн тăсрĕ аллине.
– Сыв пул, Бастили, семинари,
Манран эс илтĕн кирлине.
Ху та мана пайтах чыс патăн:
Туберкулез. Катар. Çитет...
Сыв пул эс те, туяллă ватă!
Ан ман ӳркевсĕр йĕкĕте.
Тен, пушкăрт хирĕсен кăлканĕ
Шăтса тӳрлетĕ чирĕме.
Вăранĕ халăхăм – ăнланĕ
Ман сая кайнă ĕмĕре...

Поэмăри тĕп шухăш поэтăн татăлнă ĕмĕчĕ пирки мар (каярах автор хайлава тĕпрен улăштарнă, Яковлев сăнарне «çемçетсе» хирĕçĕве урăх çулпа янă), шăпах *сая кайнă çамрăк* ĕмĕр çинчен. Юлашки вариантра поэт чирне автор хура реакципе сăлтавланă пулсан, малтан вăл урăхла ăнлантарнă: чир сăлтавĕ Библи куçарттарнинче иккен. Паянхи кун унти «Юрăсен юрри» тĕнче поэзи классикин тĕслĕхĕ пулни тавлашусăр ĕнтĕ. Поэмăна хайланă вăхăтра (ун чухне чиркӳсене çĕмĕрнĕ, тĕн кĕнекисене вута пăрахса çунтарнă) ăна чăвашла куçаракансен ĕçĕ чура ĕçĕн курăннă-тăр.

«Поэтпа миссионер» поэмăна хайланă чухне П.Хусанкая пĕр тĕп шухăш çавăрса илнĕ: К.Иванов çамрăклах чирлесе вилнин сăлтавĕ тĕнпе реакци саманинче тата уйрăм çынсенче (Чĕмпĕр чăваш шкулĕн пуçлăхĕпе мусăкçă Мефистофельте). Паллах, çав тĕп сăнарта поэт хăйне те курнă. Ахальтен мар вăл çав çулсенче М.Юрьева халаллана пĕр сăввинче Чăваш республикин тӳре-шарине хытах вăрçать, талантсене пулăшманшăн пăшăрханнине пĕлтерет.

«Сона» (1929) тата «Майра инке, е сенкер тынас» (1930) хайлавсенче П.Хусанкай юратури çирĕплĕхпе ултавлăх ыйтăвĕсене хускатнă. Пĕрремĕшĕнче çурçĕрте пулса иртнĕ ĕç пирки çырса кăтартнă. Унти тăватă çын хĕрарăм пирки сăмах пуçараççĕ. Вара Морей ятлă лопарь хăйĕнпе чăн пулнине каласа парать. Вăл Сона ятлă хĕре юратать, унпа инçетри Тăварлă Кӳлĕ хĕрне тюлене кайма пуçтарăнать. Вĕсен çумне пĕр Такана ятлă каппайчăк çыпăçать. Хайхи кĕçех вăйран каять. Апата сая яраканскере, кӳлĕ хĕрне çитме пурпĕрех пултарайманскере Сона револьверпа персе пăрахать. Çул çинче вĕсем тепĕр шăнса вилекене тĕл пулаççĕ (кайран вăл хĕрĕн пиччĕшĕ пулни, хăй вăхăтĕнче унăн пурнăçне çăлни паллă пулать), ăна каллех çиме партармасть Сона. Юлашкинчен хĕр хăй те утайми пулать. Иккен вăл хăйне тивекен аш тӳпине çимесĕр пухса пынă, иккĕшĕнчен пĕри те пулсан çитес çĕре çиттĕр тенĕ. Çакна юрату хăвачĕ çапла хăтлантарнă. Вилме те вăл çапла сăмахсемпе вилет:

«...Çук, ан хăвар ман кăмăла,
Шансах вилес килет сана.
Малтан мала, малтан мала
Çулу сан кайтăр яланах.
Сан умăнта ман пĕтрĕ парăм,
Ак сывлăш та пĕтет ĕнтĕ...
Нумай пуян, чипер хĕрарăм
Тĕл пулăн эс ĕмĕрӳнте.

Анчах пĕри те Сона чухлĕ
Юратмĕçĕ вĕсем сана...»
Асап тумламĕ – вил куççулĕ
Тухса шăнса хытать Сонан...

Хĕрĕн юратăвĕ вĕçсĕр-хĕрсĕр тертпе, хăватлăхпа тата чăтăмлăхпа хутăшса пиçет. Морей калавçăн пĕтĕмлетĕвĕ кĕскен янăрать: «Çапла: телей уççи – асап».

Иккĕмĕш хайлавĕнчи хĕрарăмăн юратăвĕ иртĕхӳпе тата пуянлăхпа çыхăннă. Кунти чăваш комиссарĕн майри, Лариса ятлăскер, упăшки çула тухсан ют арçын ăшши туйма шухăш тытать. «Эп темле приложени евĕр Çĕленнĕ упăшка çумне», – тет вăл хăйĕн хваттерне илĕртсе кĕнĕ пĕр сăвăç йĕкĕте. Упăшки ăнсăртран таврăнни те аптратса ӳкермест ăна: «хĕрарăмла хăвăртлăхпа» (поэт ăна шӳтлесе «большевикла хăвăртлăхпа» танлаштарать) пуçтарăнса-тумланса ларать вăл, еркĕнне чӳречерен тартма та ĕлкĕрет. Калав-çă майра инкерен тĕлĕнет пулсассăн, чăваш «выдвиженцинчен» тăрăхласа кулать кăна мар, ăна питлет те.

П.Хусанкайăн идеалĕ Сонăн тăванлăхпа пурнăçран хаклăрах хуракан юратăвĕ пулни иккĕленӳсĕр. Кунта хула цивилизацийĕн кăмăл-сипет арканăвĕ пурри те палăрать. Ял каччи, ĕнерхи хресчен, хулана çитсе вырăсланнă та интеллигентлă тӳре-шара пулма шутланă. Çук çав, таса юратăва укçа-çармапа, «сарă сăран портфельлĕ» пулнипе тупма çук иккен.

Çак икĕ поэма ун чухнехи официаллă власть ыйтнине ниепле те тивĕçтерме пултарайман.

30-мĕш çулсенчи пултарулăхĕ. Ку тапхăрта П.Хусанкай ытларах публицистикăлăх тата философилĕх енне сулăнни пирки маларах асăнса иртнĕччĕ ĕнтĕ. В.Маяковскине евĕрлесе сăвăç тĕрлĕ поэма хайлать, йĕркесене хуçса картлашкалать, титанла лирика харкамçине калăплать. Паянхи кун вĕсенчен чылайăшĕ кивелнĕ, истори факчĕ пек кăна тăрса юлнă. Çапах та çав çулсем çыравçăшăн усăсăр иртнĕ тесе калама май çук. Уйрăмах сăвăç *çыру*

жанрĕпе ăнăçлă ĕçленине палăртмалла. «Чăваш калавçине Петĕр ывăлĕ Мĕтри Юмана... уç çыру», «Хупă çыру», «Çыру (Влас Паймена)» тата ытти хайлавĕсенче те вăл пултарулăхпа чăн пурнăç хушшинчи хирĕç тăру пирки шухăшлать. Ку тĕлĕшрен çав текстсем халал жанрне питех те çывăх тăраççĕ.

«Атăл куçĕ» поэмăна 30-мĕш çулсенче çырнă, вăл çĕнĕ ĕмĕр пуçламăшĕнче (2002) кăна кун çути курнă. Ăна «Вĕçленмен поэмăсенчен» пая кĕртнĕ. Хайлаври тĕп герой Шупашкартан Чĕмпĕрелле «Тургенев» ятлă пăрахутпа çул тытать. Вăл чăвашсен ватă çыравçи, историкĕ, «Кĕмĕл Пăлхари» ятлă хайлав авторĕ. Хусанта пăрахут çине Пăлхар хулин ишĕлчĕкĕсене чавма каякан студентсем лараççĕ. Вĕсенчен пĕри – Эрнепи – чăваш хĕрĕ. Унпа паллашнă май ватти çапла пĕлтерет:

Пĕлетри: Атăлăн пур куçĕ.
Сайра çынна вăл уçăлать,
Кăвак хуппи пекех иккен.
Кăвак хуппи – телей пӳрӳçĕ,
А Атăл пăрĕ – усала:
Синкер-сехре пулать, инкек.

Атăл куçĕ курăнни «саманасем улшăнасса», «хура халăх хуйхине» систерет иккен. Ватă ĕмĕрĕпех Атăл куçĕпе тĕлленнĕ: «пĕр кам кăна, Мĕнле чĕлхепеле кăтартĕ, Хăш чĕлхере уçăп эп, Тăван йăха пĕлсе, ăна?..»

Малалла ватă пассажир пысăк пĕтĕмлетӳ тăвать:

Çапла эп тарăхнă. Вăл пулчĕ –
Çав эсĕр çул тытан Пăлхар.
Халь – ишлĕк... хупă куç... сĕм каç...
Мĕскер курман çав Атăл куçĕ?!
Мĕнле сехре хăппи, хăр-хар
Трагедисем унта выртаç!

Поэмăн вĕçĕ пур. Вăл тĕпчевçĕсене «Юлашки пăлхар» ятпа паллă.

«Юлашки пăлхар» – «Атăл куçĕ» ятлă романтикăлла поэмăн вĕçĕ – «Поэтпа миссионер» хайлавăн йĕкĕрешĕ темелле. Иккĕшĕнче те И.Яковлевпа

К.Иванова, Чĕмпĕр шкулне кăтартса хак панă. Хакĕсем вара пачах урăхла. «Юлашки пăлхарти» Яковлев «Нарспи» авторне акă мĕнле калать:

«Британь музейĕнчи пĕр-пĕр
Историллĕ пăта та хаклă.
Ун пек пăта çеç мар эпир,
Ăна шантараканĕ çак вăл!» –
Çапла каларĕ Кушкăсем
Чĕтревлĕ аллипе хавассăн
Çыракана вăй-хал сĕнсе
Малтан «Нарспи» итленĕ хыççăн.

Поэмăри тĕп герой (Анат Энтри) 30-мĕш çулсенчи официаллă политикăпа хирĕçĕве кĕрет. Ăна чăвашлăх чакса пыни пăшăрхантарать, революци ĕçĕ-хĕлĕ килĕшмест. Вăл хăйне «пултарулăхпа илем, ăслăлăхпа чăнлăх этемĕ» тесе хаклать. Çак чăваш интеллигенцийĕн пĕрремĕш сыпăкĕнчи герой 30-мĕш çулсенчи çамрăксене йышăнмасть:

Сире хавхалантаракан
Чăрсăрлăхăр, васкавăр сирĕн –
Вăл ют мана, вăл вырнаçмасть...
Ăна ăс мар, чĕрем ман сирĕ.

30-мĕш çулсенче официаллă идеологи çамрăк ăрăва аслисемпе хирĕçтернĕ, ачисем ашшĕсене хирĕç тăнине ырланă. Поэмăра аслă ăру позицийĕ палăрать:

Çук килĕшӳ. Çук, çук, ан ыйтăр:
ОТЦЫ И ДЕТИ, шăллăмсем!
Пулаймăпăр çав сирĕн йыттăр,
Сĕнккеймĕпĕр «пошол» тесен.

Анат Энтри хăй çине алă хурать, çамрăк ăрăва вăрах кун-çул сунса хăварать.

1938 çулта П.Хусанкая контрреволюцилле ушкăнра тăрать тесе айăплаççĕ, тĕрмене лартаççĕ. Сучĕ тепĕр çулхине çурла уйăхĕнче тин пулать.

Ăна чăваш эсерне Хурине халалласа çырнă поэмăшăн («Хури», 1927) персе вĕлермелли статьяпа айăплаççĕ. Сăвăç чăваш эсерне ытлашши мухтаса паттăрла сăнар пек ӳкерсе кăтартнă имĕш. Политика йăнăшĕсемлĕ сăвă-поэма шутне çаксене кĕртсе айăпланă автора: «Çирĕм улттă», «Улмуççиллĕ Тĕрлемес», «Çĕр йĕркелӳ» поэмăсем, «Рот фронт», «Кавказра», «Тĕлĕнмелле тĕлĕк» т. ыт. сăвăсем те. Çав хайлавсене кайран тепĕр хут пичетленĕ чухне вăл хăйне айăпланă йĕркесене улăштарнă.

Поэт хăйне тĕрмере мĕнле туйнине унăн «Ют çурт...» сăввине (1938) вуласан пĕлме пулать:

Хăвна хупсан тулти вара – Пралукĕ вĕççĕн склад тавра
Епле пулсассăн та – паха, Çӳрен йытта та тунсăха
Илемлĕ, илĕртӳллĕ, тунсăх, Пĕлтерейместĕн – çавă хурлăх!
Йыт сăнчăрĕ пек сăввăм ман
Карăнкалать çавран-çавран,
Пĕр сассăр пăвăнать чăн юррăм...

Поэтăн чăн юррине пăвса çитереймеççĕ. Çав синкер çулсенче, литература анине соцреализм çумĕ пуснă вăхăтра, П.Хусанкай сунтăхра упрамалли пысăк хайлав – «Тилли юррисем» – çырать.

40–50-мĕш çулсенчи пултарулăхĕ. Ку тапхăрăн тĕп палли – поэт «Аптраман тавраш» ятлă хайлавне пичетлесе кăларни (1957).

«Аптраман тавраш» сăвăлла романа Петĕр Хусанкай хăй 1941–1954 çулсенче çырнă тесе палăртать. Анчах та поэт хăш-пĕр сыпăкĕсене маларах – 1939 çултах çырнă. «Натали кĕпе тĕрлет» сыпăк чи малтан 1939 çулта «Ĕç хĕрарăмĕ» журналта, унтан 1941 çулта «Çамрăк большевик» хаçатра (апрелĕн 15-мĕшĕ) пичетленсе тухнă. Сăвăлла романти ватă Элтиван, Йăкăнат утарçă тата Сар Миккен портречĕсене те каярах «Хамăр ялсем» ятлă ярăма кĕнĕ сăвăсенчех лайăх уçса панă. Çапла вара, эпир сăвăлла романăн хăш-пĕр геройĕсене автор кăтартнă вăхăтран чылай маларах куратпăр.

Петĕр Хусанкай вăрçă умĕнхи çулсенче чăвашсен çав вăхăтри пурнăçне сăнлакан пысăк произведени çырма тĕв тунă. Поэт вăрçă тапраннă кунсенче «Аптраман таврашăн» чи малтанхи вариантне çырма пуçăннă, анчах та ĕçе çурма çултах пăрахăçлама лекнĕ – автора пулас произведени валли суйласа илнĕ жанр килĕшмен. Вăл «Аптраман таврашне» малтанласа сăвăлла драма евĕрлĕрех çырма пуçăннă. Çав вариантра хăш-пĕр геройсен ячĕсем те, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе сăн-пичĕ те урăхларах пулнă-ха. Акă еплерех çырать вĕсем çинчен автор: «*Элюк асатте* – Аптрамансенчен чи ватти, сакăр вуннăра пырать. Хыткан та яштак старик. Салтак. «Якур хĕресĕ» илнĕскер. Хĕресне те, аслашшĕн – тĕп Аптраманĕн – медальне те («Не нам, не нам, а имени Твоему») карчăкĕн çӳпçинче усрать. Хурт ăсти. Сĕрме купăс калать. Ват çын мелĕпе тăсарах каласать. Хĕрĕнкĕрех чухне е пĕр-пĕр урăм-сурăмпа хавхаланса çĕкленсен – кăшкăрашарах пуплеме те пултарать. Çамки тавра кăшăл – е пушăтран, е пĕр-пĕр хăю татăкĕнчен: «çӳç-пуç тирпейĕшĕн». Сухалĕ çăрах мар, янахĕ çинче кăна.

Савнепи (Сăпани) асанне – «чăн-чăн чăвашран», вăрттăн тĕне кĕрсе венчетленнĕскер. Урăх чиркĕве кĕрсе курман. Сурпанне пăрахма пултараймасть. «Пиртен тухнă йăла мар». Сурпан-тавраш уншăн – мăшăрлану палли, тӳрĕлĕхпе варлăх символĕ, хĕрарăм чысĕ, тасалăхĕ. Тĕш-мĕш усравçи. Стариккин сăмахĕнчен тухаймастех. Çитмĕлсенче.

Илле пичче – Элюк асаттепе Савнепи асаннен ывăлĕ. Аллăран иртсе пырать. Пĕрремĕш тĕнче вăрçин салтакĕ, нимĕç тыткăнĕнче пулнă. Хут пĕлет. Тирпейлĕ колхозник. Ачисене вĕрентсе кăларасшăн тем тӳсме те хатĕр. Сăмаха ытлашши вакламасть.

Кулине – Илле пиччен мăшăрĕ. Çемçе кăмăллă хĕрарăм.

Герман (Кервен) – Аптрамансен çăвар уççи. Юратнă ывăл. Кăçал Мускав университетне пĕтерсе аспирантурăна юлнă. Историк. 24 çулта.

Энтри – Герман шăллĕ, колхоз пахчаçи. Мичуринран пуçне никамах та йышăнасшăн мар. Çĕр, тăпра çынни. Тĕрлĕ гуманитарлă ăслăлăхсем уншăн

пулсан – тĕлĕк, халап. Вăтам шкул пĕтеричченех пахча-сад ĕçне вăрăннă. 20 çулта.

Натали кăçал вăтам шкул пĕтернĕ. Аслă шкула кĕрес ĕмĕт вĕçтернĕ хĕрĕн ыйхине. Çум çумланă хушăрах хатĕрленет. Германпа Энтри йăмăкĕ. 18 çулта (малтан «17 çулта» тесе çырнине туртса хунă. – *В.Р.*).

Тамара Турхан – Натали тусĕ. Кăçал мединститутăн пĕрремĕш курсне пĕтернĕ. 19 çулта.

Палля – Аптрамансенчен чи кĕçĕнни. 14-ра. Вĕренет. Çулла сӳре сӳрелет, «хĕл каçмалăх ĕç кунĕ тăвать». Сăвă çыркалать.

Иван Ильич Самаев – колхоз председателĕ. 40 çулалла.

Якку – сельисполнитель. Çулланнă çын. (Малалли картинĕсенче чылай урăх çын хутшăнмалла пек.)»

Пĕрремĕш вариантра Илле пичче ашшĕ Элюк ятлă пулнă пулсан, ытти вариантсенче çав герой Хĕветĕр ятпа тĕл пулать. Малтанхи вариантра Илле мăшăрĕн ячĕ те пулман, автор çав герой калаçăвне «амăшĕ» тесе палăртса пынă. Каярах çеç «Кулине» тесе хушса çырнă. Пĕрремĕш вариантра поэт Энтри сăнарне урăхларах туни курăнать. Кунта вăл кăштах «тĕттĕмрех» пек, пурнăç уттинчен юларах пынăн туйăнать. Автор çак героя пĕрремĕш вариантра виçĕ çул çамрăкрах кăтартнă. Юлашки вариантра Энтри çар службинче те пулса курнăскер ĕнтĕ, кĕркунне вăл тăван ялне пуçĕпех таврăнма ĕмĕтленет. Юлашки вариантра автор Самаева Иван Исаевич тесе чĕннĕ пулсан, малтанласа вăл «Иван Ильич» пулнă-ха. Унăн юратнă сăмахĕ чи малтанхи вариантра «чăваш» пулнă. Каярах автор çак «героя» «юлташ» сăмахпа калаçтарать.

П.Хусанкай «Аптраман тавраш» ятлă сăвăлла драмăна вун пĕр картина таран çырнă, пĕрремĕш пайĕ вăрçă пуçланнипе вĕçленнĕ. Çырнă картинăсенче Энтри пачах та курăнмасть, ăна вăл, ахăртнех, иккĕмĕш пайĕнче кăтартма шутланă. Сăвăлла пьеса çырни хăйĕн картинчен кăларманнине поэт çийĕнчех туйса илнĕ пулмалла – вăл çав вăхăтрах хăй суйласа илнĕ жанра пăрахăçласа «Аптраман тавраш» ятлă поэма çырма пуçăнать. Каярах автор пĕрремĕш

вариантри сценăсемпе те усă курать: драма элеменчĕсене кăларса пăрахса вĕçленеймен драмăри вун пĕр картинăна «Пĕрремĕш кун» ятлă сыпăка кĕртет.

«Илемлĕ литература» журналăн 1942 çулта тухнă тăххăрмĕш кĕнекинче П.Хусанкай «Аптраман тавраш» поэмăн уйрăм сыпăкĕсене пичетлесе кăларать.

Автор вĕсене вăрçă пуçланнă уйăхсенчех çырнă пулнă. Мĕнпурĕ 6 сыпăк кĕнĕ.

«Аптраман таврашăн» иккĕмĕш варианчĕ чылай улшăннă. Кунта Энтри тĕп герой пулса тăрать, паттăрла ĕçсенче курăнать. Хăй вăхăтĕнче критиксем поэмăри паттăрла ĕçсенчен чылайăшĕ схемăлла пулнине асăрханă, пичетре çырнă, сӳтсеявусенче асăрхаттарнă. Çакна поэт каярах хăй те туйса илет. «Разведкăра» сыпăка юлашки вариантран пачах кăларса пăрахать. Ак еплерех çырать вăл «Сывпуллашу» сыпăкра:

Çыра пуçларăм эп пăртаккăн Салтак кутамккине çакмасăр,
Салтак çинчен çав çулхине. Унпа çунмасăр пĕр вутра,
Анчах тӳрех калап: салтакăн Сăмах витти те манăн, ахăр,
Нуши ӳкменччĕ пуç çине. Çукрахчĕ пулĕ çав хутра.

1946 çулта «Аптраман тавраш» ятлă уйрăм кĕнекен тухнă поэмăн ытти сыпăкĕсене те автор хăй вăрça тухса кайичченех е кайнă хыççăнах çырнă. Поэмăна 9 çĕнĕ сыпăк кĕнĕ.

Петĕр Хусанкай хăйĕн «Аптраман тавраш» поэмине (ун чухне ăна автор «сăвăлла роман» темен-ха) 1948 çулта тухнă «Сăвăсемпе поэмăсем» ятлă кĕнекене малтанхинчен пĕр улăштармасăр кĕртнĕ.

Поэт çав произведение, тĕпрен илсен, 1954 çулта çырса пĕтернĕ. Çав вăхăтра вăл çĕнĕ произведенире юсамалли-çĕнетмелли вырăнсем чылай пулнине те ăнланнă. Çакна автор пичетленме васкаманнинчен те чухлама пулать. 1954 çулхи июнĕн 16-мĕшĕнче Чăваш патшалăх кĕнеке издательстви П.Хусанкай патне «Аптраман таврашăн» ал çырăвне июлĕн 15-мĕшĕнчен кая

мар хатĕрлесе пама ыйтса çыру çырнă пулнă, унсăрăн çав произведение 1954 çулхи планран кăларса пăрахасси çинчен пĕлтернĕ.

Поэт ал çырăвне издательство кăтартнă вăхăт тĕлне хатĕрлесе çитереймен, вăл «Аптраман таврашне» тепĕр хут тĕплĕн юсаса тухнă, çĕнĕ сыпăксем хушнă. Автор 1954 çулта «Ялавра» сăвăлла романăн «Ыт-тĕкел», 1955 çулта «Тăван Атăлта» «Сарлака çунат» сыпăкĕсене пичетленĕ. Унта вăл вĕсене «Поэма сыпăкĕ» тесе каланă-ха. 1957 çулта «Çамрăк коммунист» хаçатра пичетленнĕ «Ашшĕ çырăвĕ» сыпăка та «Аптраман тавраш» поэмăран» тесех палăртнă. Çапла вара, автор хăйĕн произведенине 1957 çулчченех поэма тесе шутланă, çапла ятпа пичетленĕ те. Çав çулах асăннă хайлавăн «Коммунист тесе хисеплĕр» сыпăкĕ «Советская Чувашия» хаçатра вырăсла тухать. Унта вара ăна «роман сыпăкĕ» тесе асăннă. Каярах тĕпчевçĕсем çав произведение «сăвăлла роман» жанрĕпе çырнăскер теме пуçланă.

«Аптраман таврашăн» тĕп вариантне автор литература аслă курсне вĕренме каяс умĕн юсаса-çырса пĕтернĕ.

1957 çулта уйрăм кĕнекен тухнă «Аптраман тавраш» ятлă сăвăлла романа, ун умĕнхи вариантпа танлаштарсан, тата 16 сыпăк хушăннă. Автор тĕп варианта малтан пулнă «Разведкăра» тата «Натали Петĕре фронтран çырать» сыпăксене кĕртмен.

Петĕр Хусанкай сăвăлла романти геройсен шăпине, хăшĕсен ячĕсене те пурнăçран илнĕ. Акă, Сумбай Петĕрĕн прототипĕ Анат Тагилте пурăннă Сумбаев Петр Николаевич пулнă иккен. Çакăн çинчен П.Сумбаев çапларах аса илет: «Хусанта вĕреннĕ чухне эпĕ... чăваш чĕлхине вĕренме çӳреттĕм. Хам профком членĕ пулнă май Петĕре хамăр общежитие вырнаçма пулăшрăм. Çакăнтан вĕренсе тухичченех эпир туслăн пурăнтăмăр.

Пушă вăхăтра Петĕр Çĕпĕрти аптраман чăвашсем çинчен, ман Сумбай хушамат камран, хăçан пулса кайни çинчен мана пĕрмай калаттаратчĕ. «Аптраман» сăмах вара ун çăварĕнчен каймастчĕ. Асаттепе асанне мĕнле калаçнине темиçе хут ыйтса çыратчĕ. Çакна та калам. Ман аннепе Петĕр

Хусанкай амăшĕ те Варвари ятлă пулнă... Каярах, чăваш писателĕсемпе пĕрле тĕл пулсан:

– Паллашăр, ку Сумбай Петĕрĕ, ман герой! – тетчĕ».

Аптраман Энтрийĕн сăнарĕ поэтăн хăйĕн пурнăçĕпе тачă çыхăннă. Аполлон Иванч Турхан ятлă герой вара Турхан Энтрине аса илтерет. Иккĕшĕ те учитель, Н.И.Ашмарин словарьне тунă çĕре хутшăннă:

Ашмарин словарьне уçатăп:
Сайра пулин те, скобкăра
Унта эп хам ята вулатăп, –

тет Хусанкай геройĕ.

Петĕр Хусанкай «Аптраман таврашне» хăйĕн «Суйласа илнисен» виççĕмĕш томĕнче кăларма шутланă, çав тĕллевпе 1970 çул тĕлне ал çырăвне те хатĕрлесе хунă пулнă. Унта, тĕпрен илсен, 1957 çулта пичетленĕ варианта кĕртнĕ, хăш-пĕр сăмахсене çеç улăштарнă.

Петĕр Хусанкайăн 15 çула яхăн çырнă сăвăлла романĕ чăваш тата совет литературин еткерлĕх çӳпçине хурăнчĕ, халăхăмăрăн кун-çулне анлă сăнлакан эпикăлла хайлав пулса юлчĕ.

«Тилли юррисем»

Мĕн вăл хайлавăн пултарулăхлă историйĕ? Кирек хăш хайлава та автор малтан çырма шухăш тытать, унтан ăна сăнлавлать, чылай чухне темиçе хут юсаса çĕнетет, вара пичете хатĕрлесе çитерет. Юлашкинчен, корректура вуланă хыççăн тин, вăл кĕнекере çĕнĕ çăкăр пек пиççе çитет.

Хайлава çырма пуçăнинченхи шухăш (шухăш тыту) ăна çырнăçемĕн улшăнса пыма пултарать. Чылай чухне авторăн шухăш тытăвĕпе сăнлавĕ пĕр килеççĕ. Çыравçăшăн сăнлав пĕлтерĕшлĕрех пулсассăн, тĕпчевçĕн иккĕшне те пĕлме тăрăшмалла. «Çыравçă мĕн каласшăн пулнине чухламасăр пултарулăх пĕтĕмлетĕвне ăнланма çук», – тенĕ Д.С.Лихачев. Çав хушăрах вăл самана автора еплерех витĕм кӳнине те сăнамалли пирки каланă.

Вăхăт паллисем тата жанр. 30-мĕш çулсенче çĕршывра халăх сăмахлăхне пухса тĕпчес юхăм вăй илет. Кашни халăх хăйĕн эпосĕ пирки

шухăшлама, ăна пичетлесе кăларма ăнтăлать. Ку ĕçе чăваш çыравçисенчен чи малтан Ç.Элкер пуçăнать. «Сунтал» журналăн 1927 çулхи 10-мĕш номерĕнче вăл «Улăп» ятлă сăвăлла хайлав пичетлесе кăларать. «Ку поэмăна, – ăнлантарать поэт ум сăмахра, – Улăп çинчен чăваш хушшинче калакан татăк-кĕсĕк халапсене пухса, хăшне-пĕрне «Атшаран» (казахсен паттăрлăх эпосĕнчи пĕр текстран. – *В.Р.*) илсе тата хамран та шухăшласа çырнă».

П.Хусанкай çав çулхине Ç.Элкер пахчинче «Çирĕм улттă» поэмине çырса пĕтерни паллă пире. Эппин, икĕ поэт пĕр-пĕрин поэмисене вуласа тухнă, çырнă тапхăрта канашласа илме те пултарнă.

1933 çулта карелпа финсен «Калевала» ятлă эпосне академилле кăларăм туса пичетлеççĕ. М.Юман çине тăнăран çав эпосăн рунисене (юррисене) чăвашла куçарас ĕçе П.Хусанкай та хутшăнать, малтанхи рунине («Тĕнче пулса Вейнемейнен çурални») пĕтĕмпех куçарать. Юман çырни тĕрĕсех пулсан, çав эпоса пĕтĕмпех куçарса пĕтернĕ пулнă.

П.Хусанкай «Калевала» кӳлепине çывăх, эпос евĕрлĕ хайлав çырма тĕв тунине тĕрлĕ фактсем çирĕплетеççĕ. 1937 çулта поэт 35 юрăран тăракан «Тилли такмакĕсем» хайлав çырса хурать. Вăл ăна пичетлеме васкамасть-ха, мĕншĕн тесен çав çулсенче хайлав кун çути курма пултарайманнине пĕлсе тăрать.

Кайран, «Тилли юррисем» пичетленсе тухсан (1962), автор хайлава çырнă çулсене çапла кăтартнă: 1933–1940. Малтанхи çулĕ поэт «Калевала» куçарма пуçланă тапхăрпа тӳр килет. Юрăсенчен тăракан хайлавăн пĕрремĕш вариантне Хусанкай 1933–1937 çулсенче çырни иккĕленӳсĕр. 1936 çулта автор ум сăмаха («Мехел тени мĕскер тени пулать?..») хайлани паллă.

П.Хусанкай Ç.Элкерĕн «Улăпĕнчи» виççĕмĕш сăпатри калу мелĕпе мар, пĕрремĕш сăпатри калупа усă курнин хăйĕн сăлтавĕ пур. Туркменсен «Гçр-оглы» эпосĕ прозăпа сăвă хутăшĕнчен тăрать. Виççĕмĕш сăпатри калăва прозăланă, пĕрремĕш сăпатрине – сăвăланă. Чăваш халăх юррисем, тĕпрен илсен, пĕрремĕш сăпатран каласа юрланă текстсем. Çак уйрăмлăх поэта

харкамçă ячĕпе çырма хистенĕ. Хайхи эпос жанрĕ те лирикăна куçса кайнă: тĕпре автор калăвĕ мар, харкамçăн калăвĕпе шухăш-туйăмĕ, унăн чун тăрăмĕ тăнă. Эпосри историлĕх вырăнне философиллĕ-этологиллĕ шухăшлав мала тухнă. Çапла вара, ытти халăхсен эпосĕ шайĕнчи хайлав çырас кăмăллă поэт пачах урăх жанр вăрттăнлăхĕсем патне çитет. Кунта пурнăç тупсăмне йĕрленĕ. Халăхăн пин-пин çул пуçтарăннă ăсĕпе çирĕпленнĕ кăмăлне ӳкернĕ. Харкамçă философиллĕ ыйту лартса унăн хуравне шырать (ытларах кайран хушнă юрăсенче). Ку тĕлĕшрен «Тилли юррисем» тухăçра анлă усă курнă дастан жанрĕпе пĕрешкел. Çакна калу юрăçă ячĕпе йĕркеленни те, уйрăм юрăсем *газель, рубаи* жанрĕсене çывăх пулни те çирĕплетсе параççĕ. Çав хушăрах хайлавра эпос поэтики те сисĕнет (ум сăмах, калăва юрăсемпе шăрçалани). Харкамçăн биографине шăвакан вăхăт фонĕнче (ачалăх, арлăх, ватлăх) туйтарнине те эпос паллиех темелле.

Композици хăй евĕрлĕхĕ. «Тилли юррисен» 1937 çулхи вариантне пурĕ 35 юрă кĕнĕ тенĕччĕ, çав шутрах ум сăмах («Мехел тени...»). Хайлавăн юлашки вариантне автор тепĕр 20 юрă хушнă, пĕр малтанхи юррине пуçĕпех çĕнетнĕ («Ай-хай ылтăнăм çук...»), чылайăшне вырăнпа улăштарнă. Юлашки вариант композицийĕ çапларах курăнать (цифрăсемпе малтанхи вариантри юрăсене палăртнă; **Ç** – çĕнĕрен хушнă юрă; | – темăсемпе мотивсен чикки): 1 | 2 | **Ç1** Ă 28 Ă **Ç2** Ă 7 Ă **Ç3** | **Ç4** Ă 33 Ă 13 Ă 9 Ă 6 | **Ç5** Ă 4 Ă 8 Ă **Ç6** Ă 5 Ă 17 Ă 14 Ă 29 | **Ç7** Ă 16 Ă 11 Ă 24 Ă 32 Ă16а | **Ç8** Ă 23 Ă 30 Ă (27 Ă 25) Ă 3 Ă **Ç9** | 26 Ă **Ç10** Ă **Ç11** Ă | 35 | **Ç12**(10) Ă **Ç13** Ă **Ç14** Ă **Ç15** | 20 Ă 12 Ă 31 Ă 19 Ă **Ç16** Ă **Ç17** Ă 22 Ă 21 Ă **Ç18** Ă 15 Ă 34 Ă **Ç19** (вĕçĕ) Ă 18 Ă **Ç20** Ă Ç21 |

Малтанхи вариант композицине мĕне пула аркатма тивнĕ-ши поэтăн? Çыравçă чи малтан темăсемпе мотивсене ушкăнлас тĕллев тытнă иккен: ачалăх, ар-каччă, салтак темисем (2–6); çамрăк юрăç пурнăçĕ (Ç5 – 29); хăна-вĕрле юррисем (Ç7 – 16а); иртнипе килес самана шухăшĕ (Ç8 – Ç9); пурнăç тупсăмĕ (26 – Ç11); утарçă (35); хуйхă-суйхă (Ç12 – Ç15); ватлăх, пурнăçпа вилĕм (20 – Ç21).

Темăсемпе мотивсене ушкăнлас йăла тухăç поэзийĕнче анлă сарăлнă. Тĕслĕхрен, Саадин «Бустан» ятлă кĕнеки (ăна тухăçра *диван* теççĕ, чăваш чĕлхине *тăвам* формăпа кĕнĕ: тăвам ырă, тăвам çӳретекен) çапларах темăсене пайланнă: тĕрĕслĕх, ăслăхпа шухăшлу çинчен; ырăлăх çинчен; юрату, юратупа ӳсĕрĕлни тата пуçа çухатни çинчен т.ыт.те. Çак мелпе Хусанкай та усă курать. Хăш-пĕр темăна вăл чылай анлăлатать (хуйхă-суйхă; ватлăх, пурнăçпа вилĕм темисене), çĕнĕ юрăсем хушать.

Хушнă юрăсен шухăшĕпе кӳлепи. Поэт хушса çырнă юрăсенчен иккĕшĕ пурнăç тупсăмĕ, тăваттăшĕ хуйхă-суйхă тата улттăшĕ ватлăх, пурнăçпа вилĕм çинчен çырнăскерсем. Хайхи çыравçă хайлаври юрăсене темăсемпе мотивсем тăрăх ушкăнлани кăна мар, вăл «Тилли юррисене» философипе этологи сĕмне ытларах кĕртме тăрăшни те курăнса кайрĕ. Çакна ытти тĕслĕхсемпе те çирĕплетме пулать. Малтанхи вариантăн 26-мĕш юрринче «Тĕнче тамашине тупас» тенĕ, кайран ăна автор «Çак пурнăç тупсăмне тупас тесе» йĕркепе улăштарнă. Ун хыççăн çĕнĕрен кĕртнĕ икĕ юрăри сăмах шăпах пурнăç тупсăмĕ пирки пырать («Калăр-ха мана, калăр...», «Ниçта та ярса пусма аптратăн...»)

Малтанхи вариантра ача çитĕннине палăртакан юрăсем («Шурăмпуçсем килеççĕ шуралса...», «Тăват касра тăватă савни», «Шурăмпуçпе вăрантăм ыйхăран...») пулман. Вĕсене сăвăç эпос традицийĕсене асра тытса кĕртнĕ. «Калевала» геройĕ те, тĕрĕк халăхĕсен эпосĕсенчи паттăрсем те малтан çуралаççĕ, çитĕнсе паттăр ĕçсемпе палăраççĕ, кайран ватăлаççĕ. Тилли паттăрлăхпа мар, хăйĕн юрăçă-философ пултарулăхĕпе чапа тухать.

Кайранхи варианта Хусанкай Тилли арăмĕн («Итле эс, ыр хĕрт-сурт, вучах ăсти!..») тата Сарпай ятлă йыттин («Вăр çаврака кăшкар пек уçланка...», «Ĕмĕтсем чĕлĕм тĕтĕмĕпе...», «Ватăлатпăр пуль, Сарпайăм...») сăнарĕсене кĕртет. Ку юрăсем Тиллин биографине уçăмлатма (тĕп геройăн мăшăрĕ пур) тата эпос паллисене вăйлатма (унта паттăрпа юнашар тиха çитĕнет, кунта – йытă) пулăшаççĕ. Акă мĕн калать Тилли хăйĕн йыттине:

Сар Сарпайăм! Иккĕн эпĕр
Йĕкĕрлешнĕ йĕлтĕр пек.
Хăрахшар шăва пĕлместпĕр
Пурнăç хирĕн кĕрчĕпе.

Ватлăх, пурнăçпа вилĕм темисен ушкăнне поэт кайран 6 юрă кĕртет тенĕччĕ маларах. Вĕсенчен чылайăшне рубаи евĕрлĕ рифмăланă (АААБА), газельри пек пĕрешкел састашли те пур. Сăнарлăх енчен пăхсан çав юрăсем поэтăн «Хамăр ялсем» ярăмĕнчи сăввисене питех те çывăх.

Вĕсенчи темăсемпе мотивсем те пĕрешкелех (вилĕм, ватлăх). «Элтиван» сăвăри харкамçă ав тĕрĕкпе вăрçнă (Тилли те «Капкас» енче çапăçса çу́ренĕ), вăл Тилли пекех «анчăклă» сунарçă. Çак сăвва поэт «Тилли юррисене» çырса пĕтернĕ çул хайланă (1940).

«Хамăр ялсем» ярăм çав çулсенчех пичетленни унти сăвăсене автор реализм меслетне асра тытса çырнинчен килнĕ. «Тилли юррисене» вара поэт «сакăр тĕслĕ самана» самайланасса шанса сунтăхра усранă. Хушса çырнă юрăсенче автор «вилĕм куçĕнчен» пăхни сисĕнет. Ун пирки поэт «Хушка хумсем» ярăмра çапла çырнăччĕ:

Хăрах кăна-мĕн вилĕм куçĕ: Хăлхам ман илтрĕ, куçăм курчĕ,
Пĕчченлĕх камерăн тĕнни, Эп астăватăп пĕтĕмпех.
Пăшал кĕпçин качаллă пуçĕ – Халичченех сип-сивĕ хурçă
Ак «вилĕм куçĕ» текенни. Тăнлав çумне тивертнĕ пек.

П.Хусанкай Шупашкар тĕрминче 1938 çулхи кăрлач уйăхĕнчен (ăна кăрлачăн 20-мĕшĕнче тăван ялĕнче арестленĕ) пуçласа 1939 çулхи çурла уйăхĕччен (çав уйăхăн 8-мĕш кунĕнче пулса иртнĕ суд ларăвĕнче сăвăçа ту́рре кăларнă) ларнă. «Элчелĕм çитрĕ. Куçăм хупăнать...» сăвва (вăл «Тилли юррисен» вĕçĕнче тăрать, эпир ăна Ç21 номерпе палăртрăмăр) тетраде автор пĕрремĕш хут 1961 çулта, ярăмри сăвăсене тепĕр хут вырнаçтарнă чухне, çырса хурать. Аялта поэт çапла палăртнă: «Ку – тĕрмере сăвăланнăччĕ. Çырмасăр усраннă пуçра. 19 уйăх!» Тĕрмерен тухсан та вăл ăна хут çине çырса хума васкаман, кăвар тытса пĕр шар курнăскер, хытах асăрханнă ĕнтĕ.

Çапла вара, «Тилли юррисен» юлашки вариантне сăвăç хăй тĕрмерен тухнă хыççăн (1939–1940) çырса пĕтернĕ тени тĕрĕсрех пек. Унта халăхăмăрăн пин-пин çул пухăннă ăсĕ, пурнăç философийĕ курăнать. Поэт çав хайлава тĕнче поэзийĕн сĕткенĕпе шăварса тӳпене çитиччен çитĕнтерме мехел çитернĕ.

Пĕр сăввинче П.Хусанкай «Эпир – тăван чăвашăн пуласси, Пирĕнпеле вăл малалла çул уçĕ» тенĕччĕ. Поэт халăхăмăра тĕнче çулне уçса пачĕ, ятлă-сумлă халăхсен кĕрекине иртсе ларма пулăшрĕ. Чăваш халăхĕн хевти-пултарулăхне Хусанкайпа виçеççĕ!

Усă курмалли литература

Петĕр Хусанкай. Ăслăлăх статйисен пуххи. – Шупашкар, 1988.

Иванова Н.Г., Федорова С.В. Петĕр Хусанкайăн илемлĕх тĕнчи («Тилли юррисем» сăвă ярăмĕ тăрăх). – Шупашкар, 2007.

Хусанкай, Петĕр. Çырнисен пуххи. 6 томлăх. – Шупашкар, 1997–2006.

1923–1930 ÇУЛСЕНЧИ ПРОЗА

Дмитрий Петрович Петров (Мĕтри Юман) (1885–1939) – чăваш прозипе драматургийĕнче чылаях палăрнă çыравçă. Хăй вăхăтĕнче вăл чăвашсен сулахай эсерĕсен партине йĕркеленĕ, 20–30-мĕш çулсенче повеçсем, «Укăлча касси» ятлă пьеса çырнă. «Пурлăх комиссарĕ» калавĕнче (1927) М.Юман Йăлăмри янкар (торф) заводне никĕсленĕ çĕрте вăй хуракан ĕçченсене сăнласа панă тени тĕрĕсех мар пулĕ. Хăшĕ-пĕри унти Хунар ятлă тĕп харкамçăн прототипĕ С.П. Петров (вăл 1926–1937 çулсенче Чăваш ВКП(б) обкомĕн яваплă секретарĕ пулнă) тесе калани те тӳрре килмест-тĕр. Калавра тĕпре пĕр чăваш çыннин пурнăçне конкретлă вăхăтпа çыхăнтарса кăтартни тата каласа пани тăрать. Вăл вăхăт – Чăваш облаçĕпе республикине ура çине тăратнă 20-мĕш çулсем, çăпаталлă-чăпталлă тăрăха индустри çулĕ çине кăларнă тапхăр. Хунарăн кун-çулне никамах та ăмсанас тееймĕ: ӳпке чирĕпе асапланать, çумри мăшăрĕ ыттисемпе савăшать, çакна курса тăракан амăшĕ чĕрине çунтарса пурăнать... Çав хушăрах çак харкамçă тĕллевлĕ, вăл

пысăк шухăш-ĕмĕтпе çунса çӳрет. Лача кăмрăкĕ кăларакансене Хунар çапла каласа хавхалантарать: «Ĕç йывăр тесе ан йӳçĕнкеленĕр. Мĕн вăй çитнĕ таран эпĕр сире пулăшăпăр. Мĕн çитмесси пулсан тӳрех хама калăр. Лачака кăмрăкĕ – пирĕн хисепсĕр пысăк пурлăх. Ăна пула эпир промышленность тума ĕмĕтленетпĕр...»

Калавра Атăл, вăрман сăнарĕсене ăста кăтартса панă, çыравçă пейзаж ӳкерме пултарни кĕретĕн курăнать çак хайлавра. Çапах та çара публицистикăллăрах тата схемăллăрах пулса тухнăн туйăнать «Пурлăх комиссарĕ». Кунта идея, ăна чăн пурнăçран илнĕ пулсан та, илемлĕх шайне ларсах çитеймен пек туйăнать.

«Пӳлĕх Йăмри» мифологилле калава автор темиçе халапран йĕркеленĕ. Чакан ятлă калавçăпа Пукан Çичпӳрт ялĕн хурал пӳртĕнче çĕр каçаççĕ. Тăрна юмахçипе Кашкăр халапçи пулмасла халап-юмах яраççĕ. Вĕсем тăрнасемпе кашкăра Пӳлĕх Йăмри тивлечĕпе итлеттерме май килни çинчен суйса тыттараççĕ. Шур сухаллă ватти вара аваллăх халапĕ каласа кăтартать.

Мĕне пĕлтерет-ши хайлаври *Пӳлĕх Йăмри* сăнарĕ? Вăл чи малтан сăваплă вырăн, чӳк вырăнĕ, йăх-ăру чапне çĕклекен кĕтес. Ваттин тепĕр халапĕнче (ăна вăл *совет юмахĕ* тет) çав мифла сăнар *Пихампар Хурăнĕ* пек тĕл пулать. «Çичкилре çичĕ çырмара авал пулнă аслă ырсем, хăшĕ вăтам сăвапсем, хăшĕ кĕçĕн киреметсем, – малтанхи вăхăта сăнласа кăтартать шур сухал. – Пуринчен те вĕсенчен пулнă пĕри асли – вăл пулнă Пихампар Хурăнĕ, Çичкил ялĕн тытăмĕ».

Çичкилте йĕрĕхсем йышлă пулнă, вĕсен пурин те пĕр сиплĕх: «Çичкил ялĕн ырлăхĕ, Çичкил халăхĕн пурлăхĕ, ăру-несĕл канлĕхĕ, атте-анне пиллĕхĕ» «пĕрлехи сăваплă кăмăл» пек тăрса юлнă.

Хайхи Пӳлĕх Йăмри (Пихампар Хурăнĕ) чăвашăн тĕнчи, пин-пин çул пухăннă культури, ăс-тăнĕ пулни курăнса каять. Чăваш киремет-йĕрĕхсене (хăйĕн чăн тĕнне) пăрахнă пулсан та çав ĕненĕвĕн сăваплă сиплĕхĕ ăна тĕрек

парса тăнă. Ку вăл йăлтах яла Мăн Хаяр пырса кĕриччен çапла пулнă. «Ак çак кăшăла Мăн Хаяр çĕмĕрет ... татать».

Пĕр «çерçиленекен ача» Мăн Хаяр вăл Мăн Хавал пулĕ, «нушапа пиçнĕ этемсен хаяр хавалĕ» тесе ыйтать шур сухаллă ватăран. Лешĕ нимĕн те чĕнмест. Маларах вăл ун çинчен çапла каланăччĕ: «Этем те мар, кайăк та мар, пирĕшти те мар, шуйттан та мар – çĕрте çĕрмен, вутра çунман хăямат».

Ял халăхне йĕкĕлтет вăл, юлашкинчен урмăштарса ярать ăна. Ĕмĕр илтмен-курман самана тапранать: автан вăкăр çине сикет, путек кашкăра хирĕç тăрать. Çак саманана халапçă «вырăсла тамаша» тет.

М.Юман кунта революцине ун хыççăнхи саманана ытарласа кăтартнă. Çав «вырăсла тамаша» (класс кĕрешĕвне тĕпе хунă хирĕçӳ) чăвашăн пĕрлехи сăваплă кăшăлне татса аркатать.

Социал-революционерсем яла пĕр чăмăр (кăшăл) пек курнине аса илсен хайхи Мăн Хаяр (ăна вырăсла «Великая Злоба» тесе куçараççĕ) класс кĕрешĕвĕ çинчен калакан вĕрентӳ (марксизм-ленинизм теорийĕ) пулни курăнса каять. Çав Хаяр чăваш ялне арăш-пирĕш пăтрантарать. Куçук старик ĕмĕрхи сиплĕхре пурăнатчĕ, ваттисене Пихампар Хурăнĕ айне асăнса хыватчĕ. Хайхи кăмăлне нимĕн те çитмен Мăн Хаяр тăванпа тăвана хирĕçтерсе ярать. Куçукăн аслă ывăлĕ пуянсен ушкăнне, вăталăххи чухăнсен коммунине, кĕçĕнни вара Чулхулана каяççĕ. Ял арканчĕ. Куçук Мăн Хаяр йĕкĕлтенипе хăйне амăшĕ çуратнă вырăна сăвапсăра кăларать (Пихампар Хурăнне касса ярать). Пуянсен ĕçкинчен урмăшса тухнă аслă ывăлĕ Куçука ăнсăртран çапса пăрахать.

«Совет юмахĕ» тени ĕç-пуç совет влаçĕ вăхăтĕнче пулса иртнине систерет. Мăн Хаяра (революцине унăн большевикла вĕрентĕвне) пула чăвашăн сăваплă тăнăçлăхĕ арканать, çут çанталăка хирĕçле ĕçсем (автан вăкăр çине сикет, путек кашкăра хирĕç тăрать) пулса иртеççĕ.

М.Юман çак шухăшсене мĕншĕн ытарласа каланине ăнланма йывăрах мар ĕнтĕ. 30-мĕш çулсенче класс кĕрешĕвĕ хĕрсе пырать тени вăл çут

çанталăкран мар, Мăн Хаяртан (çавăн чухнехи пурнăçпа политикăран) килнине çыравçă лайăх ăнланнă.

Ку вăл çывăх вăхăта, социаллă тата политикăллă лару-тăрăва шута илсе ăнлантарни пулчĕ. Тен, çав ытарлă шухăша варса хума çыравçă чăннипех ăнтăлнă-тăр. Çав хушăрах чăваш тĕнчинче пин-пин çул упранакан, ламран лама куçса ХХ ĕмĕре çитме пултарнă ăнлав-идея та курăнса тăрать ку хайлавра. Вăл – Ырăпа Усал хирĕçĕвĕ, кунта вĕсем Пӳлĕх (Пихампар) тата Мăн Хаяр пек сăнарланнă. Ял çыннисен пурнăçĕ çав икĕ вăй хирĕçĕвĕ хушшинче иртет. Мăн Хаяра пула тăванпа тăван хирĕçет, сăваплă вырăна сăвапсăрлатаççĕ. Çак шухăш К.Иванов хайлавĕсенчех («Тимĕр тылă», «Нарспи») вăйлă палăрнă. М.Юман ăна уçăмлатса тата тарăнлатса çитерет. Тĕп сăлтавĕ тăванлăх туйăмĕ вăйсăрланса пынăран мар, Усал (Шуйттан) хаярланса алхаснăран килет иккен. Çакă (усал таврашĕ хаярланни) пĕтĕмпех вăхăтпа çыхăннă-мĕн. Юмахсенче ырă енчисем çĕнтеретчĕç, К. Ивановăн хайлавĕсенче пĕри теприне çĕнтереймест е икĕ енĕ те пĕр-пĕрне парăнмасăр вилеççĕ. М.Юман вара Мăн Хаяр Пӳлĕхпе Пихампартан чылай вăйлăраххине каласа ĕнентерет. Çыравçă хăйĕн хайлавне халăхăмăршăн ăнланма çывăх хирĕç тăрăва тĕпе хурса йĕркелени, унти ытарлăх тата шухăш тарăнăшĕ (вăл вулавçăсемшĕн тĕрлĕ шайлă пулма пултарасси иккĕленӳсĕр) «Пӳлĕх Йăмрине» 20-мĕш çулсенчи чи лайăх калавсенчен пĕри тесе калама май парать.

М.Юманăн ытти калавĕсемпе новеллисем («Юкьел упăтисем», «Алă хыпанĕ», «Ĕç уççи», «Силус нӳхрепĕ», «Алпастă», «Пуян Петĕр» т.ыт.те) те пур. Вĕсенче çыравçăн психологилле сăнар тăвас ăсталăхĕ, ытарлă чĕлхи аванах палăрать. Çапах та çав хайлавсем «Пӳлĕх йăмри» шайĕнче шăранса тухнă тесе калама çук пулĕ.

Семен Фомич Фомин (Хумма Çеменĕ) (1903–1936). Çыравçă чăваш литературине 1919–1920 çулсенче кĕнĕ. Ун чухне вăл ытларах сăвăсем хайланă. 1923 çулта Хумма Çеменĕ «Выçлăх çулсем» ятлă прозăлла хайлав

çырать, ăна тепĕр çултан уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларать. Повеçри ĕçсем 1921–1922 çулсенче чăваш ялĕнче пулса иртеççĕ. Тĕп геройăн – Ваçукăн – ашшĕ суккăр, ачисене вăл вĕрентме тăрăшать. Пиччĕшĕ çарта çыруçăра ларать, шăллĕ вара пĕчĕк-ха.

Ака хыççăн çумăр пĕрре те çуман. Ял халăхĕ çумăр чӳкĕ туса ирттерет – усси пулмасть. Халăх çулçă пашалăвĕ чăмлать, йĕкел пуçтарса авăртать. Пĕрисем çĕн çĕре кайса выçлăхран хăтăлса юласшăн, уншăн та тăккаланма тивет. Авă Ваçук ашшĕн йыснăшĕ Ваçлей «Çĕрпӳ хулине кайса çурă пăт пыл, çурă пăт çу пĕтерчĕ. Унсăрăн хут туса памаççĕ».

Ваçук ашшĕ Праххи Куçми, сăмаха çийĕнчех персе яма юратманскер, тарăхать: «Акă ĕнтĕ выçлăх! Сăмса айнех перĕнчĕ. Çĕн çĕрелле тарасшăн этемми... кайичченех хулли çунтарать.– Совет вăл лайăх теççĕ Яка Йăваш Михали йышшисем,– чинавниккисене те хамăртанах суйлаççĕ теççĕ. Кам суйланă-ха ĕнтĕ çав хуларисене? Ах, пĕлмелле мар, пĕлмелле мар хальхи саманана...»

Акă выçăпа вилекенсем пулчĕç, кунсерен çын пытараççĕ. Автор çак лару-тăрăва çапла кăтартать:

«Тин-тан!! Кран-н-н!!! тет чан сасси.

– Эпир пурнайрас çук, эпир вилетпĕр, – теççĕ çыннисем.

– Кранк! Кранк! Эсир вилетĕр, – теççĕ çăхансем».

Ялти пĕчĕкрех ачасене Мускава илсе каяççĕ, вăл шутра Ваçук шăллĕне Юкура та. Ăсатнă чухне çул çинче Ваçук шухăша путать: «Çӳлтен хур кайăксем карталанса ăшă çĕрелле вĕçсе каяççĕ. Вĕсем выçă яла анса та пăхасшăн мар, пĕрмай малалла вĕçеççĕ. Анчах манăн ялах юлас пулать. Мĕншĕн çынна та вĕçмелле туман-ши? Кайăк пек, эпĕ те пĕр çĕрте килĕшмесен тепĕр çĕре вĕçсе кайса пурăнаттăмччĕ. Нимле выçлăх та, нимле вилĕм те ун чух мана хăратмĕччĕ!..»

Акă выçăпа аптăраса çитнĕ амăшĕпе хĕрĕ кӳршĕсен сурăхне вăрласа пусаççĕ. Тарăхса çитнĕ халăх вĕсене хĕнет. Кусем тепĕр икĕ эрнерен çĕре

кĕреччĕ. Хăшĕсем вĕсене шеллеччĕ. Ваçук амăшĕ Укçук аппа шеллекенсене çапла калать: «Çапла çав вăл, вилсессĕн хĕрхенекен пур, виличчен никам та хĕрхенесшĕн мар. Çын пĕтнине юратать, çав пурăнтăрччĕ, ăна çапла пулăшасчĕ теекен сахал».

Повеçри ĕç-пуç хивре мар, вăл пĕтĕмпех выçлăх мотивĕ аталаннипе çыхăннă. Çуркунне хыççăн çулла, унтан кĕрпе хĕл çитеççĕ. Çав вăхăт иртни ял çыннине асап хыççăн асап кӳрет. Ĕç хресченĕн хăйĕн философийĕ. Ваçлей амăшĕн сăмахĕсене аса илер-ха: «Пурăнма пĕлнине мĕн çиттĕр ĕнтĕ! Çынсем таса çăкăр çинĕ чух эпир çулçăпа хутăштарса çирĕмĕр... Чăн, чăн. Аллу-уру ан амантăр та, пуçу сывă пултăр, вара пурнать этем...»

Унпа калаçаканĕ тата вирлĕрех калать: «Ĕçлесен, тăрăшсан чĕрĕ пуç вилмест тесе ахаль каламан пуль ваттисем. Эпир нихçан та çынна макăртман, çын ĕçĕпе пурăнман, хамăрăннипех пурăннă».

Сăмах кунта выçăпа вилнисем пирки пырать. Чылай чухне кил хуçисем хăйсем айăплă: тырра ăслăлăх вĕрентнĕ пек вăхăтра акмаççĕ, хăшĕсем аякран пулăшасса шанаççĕ, кахалраххисем те çук мар. «Çĕн çĕртен килекенсем пĕри те телейлĕ мар, – тесе вĕçлет Хумма Çеменĕ хăйĕн повеçне, – хăшĕ лере вилсе юлнă, хăшĕ кунта килсен вилет, хăшĕ çӳреме каять».

«Станцăра». *Калав ячĕ.* Хумма Çеменĕн хайлавĕсенче «станцă» сăнарĕ тăтăшах тĕл пулать. Малтан пăхса тухнă повеçре çĕн çĕре кайма пуçтарăннă выçă çынсем станцăра ларнине тĕплĕн çырса кăтартнă. «Кирек хăш станцăна пыр, пуринче те тăп-тулли çын, – каласа парать автор. – Кашни станцăрах çĕн çĕр çыннисем шăналăксенчен, сăхманĕсенчен хушăсем тунă та лартса каясса кĕтеççĕ... Çĕн çĕр çыннисем станцăсенчех тем пек нуша кураççĕ: çумăрне те, сиввине те тӳсеççĕ».

Кунта станци – пĕр пурнăçран тепĕр пурнăçа куçмалли вырăн, хăйне евĕр чикĕ. «Тутарла чăваш» калавра та станци – ирĕклĕ тĕнче пуçламăшĕ. Акă пĕр тутарланнă чăваш мĕн калаçать: «Ирĕклĕ кайăк пек пулса пур çĕре те çитес килет. Мĕн вăл килте пурăнакан чăваш? Тĕнче курмасăр ĕмĕрне

ирттерет. Çавăншăн юратмастăп эпĕ чăваша. Акă тутар... пултарать тутар! Юрататăп эпĕ ăна. Маттуршăнах юрататăп».

Пуйăсра геройпа пĕрле пыракан калавçăн та ирĕклĕ пулас килсе каять: «Эпĕ те пулăттăмччĕ ирĕклĕ кайăк. Вĕçĕттĕм те кайăттăм Туркестана, Капкаса е Урала, е... Инçетри Хĕвел тухăçне. Ёмĕр-ёмĕрĕпеле пăчăхса ларнă кивĕ киле, кивĕ яла пăрахăттăм та çĕнĕ çĕрсем, çĕнĕ хирсем, вăрмансем урлă пĕр çӳрĕттĕм уçăлса».

«Штрум» повеçре Тĕрлемес станцийĕпе чугун çул сăнарĕсем уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Чугун çул хĕрринче хĕрлисем ним айăпсăр ачана ăнсăртран персе вĕлереççĕ. Пуйăспа салтаксем Тĕрлемес станцийĕ енне çул тытаççĕ, унта шуррисем иккен. Юлашкинчен Михаля ятлă калавçăпа чухăн Кирук пуйăс çине ларса шуррисемпе çапăçма каяççĕ.

Халĕ тишкерме хатĕрленнĕ калав патне таврăнар. Кунта икĕ хире-хирĕçле тĕнче, пурнăç çине пăхни ӳкерĕннĕ – Георгипе Сабира тĕнчисем. Вĕсем ниçта та мар, станцире курнăçаççĕ (станци – икĕ пĕр-пĕриншĕн ютă тĕнче вăхăтлăха пĕрлешнĕ вырăн). Юлашкинчен пĕри Мускавалла, тепри Хусаналла кайни те вĕсем нихăçан та пĕрле пулмасса систерет.

Хайлав сюжечĕн контексчĕ. Каччă ăнсăртран курнă хĕре юратса пăрахни çинчен калакан калав И.Ахахăн пур. «Сарă хĕр» хайлаври калавçă пуйăс çинче пĕр хĕрпе паллашать. Çĕрле пулнăран вăл малтан унăн сăнне те курмасть. «Мĕн çинчен калаçмарăмăр пулĕ эпир унпа ку каç! – хавасланса пĕлтерет калавçă. – Çинçе уçă сассипе ăшри вута чĕртсех ярать... Епле савăнăçлă, епле кăмăллă ку ангел сассине итлесе пыма! Шухăшласан урăх нимĕн те кирлĕ мар çав! Пурнăç темĕн чул пулсан çав сарă хĕршĕн эпĕ темиçе çĕр çул та пурăнма хатĕр!..»

Калавçă сарă хĕре кун çутипе курсан тĕлĕнсех каять: «Чипер, калама çук чипер! Çӳçĕ сар ука пек, çӳç хĕррипе кăтраланать, куçĕсем кăвак шăрçа пек, пит çăмартинчи кулă чипер выляса кăна тăрать. Сарă хĕре курсан такам та ухмаха ермелле!..»

Каччăна хĕр кăмăлĕпе те, пичĕ-куçĕпе те килĕшнĕ. Хайлав çапла вĕçленет: «Тен, халь вăл сарă хĕр мана манса кайрĕ пулĕ, анчах унăн тĕсĕ, ун сăмаххисем, ун çемçе аллисем, кăвак куçĕсем ман шухăшран нихçан та тухас çук... Ăçта-ши халь çав сарă хĕр?»

«Станцăра» калавра та Георги Сабирăна çул çинче курса паллашать. Ăна та хĕрĕн илемĕ илĕртет. Çав хушăрах хĕр «тем парсан та эпĕ ялта пурăнассăм çук... ĕçлесех вилес пулать» тесе калани Георгие шухăша ярать. Сабирăшăн хĕрелнĕ пек, кăшт намăсланнă пек пулать каччă. Хĕр ял пурнăçĕпе çыннисене малалла та тиркешсе каласать. Йĕкĕт ăшĕнче икĕ вăй кĕрешет. «Чипер вăл, çав тери чипер!.. Анчах шухăшĕ унăн... ăс-пуçĕ унăн... – ăшне çунтарать Георги. – Ах, чипер вăл, ытла чипер!.. Юратрăм эпĕ ăна, хытă юратрăм... Анчах эпĕ пĕр тĕрлĕ шухăшлатăп, вăл тепĕр тĕрлĕ...»

Юлашкинчен Георги Сабира çине урăхла, ултавлă та суя чипер çине пăхнă пек, пăхма пуçлать. Çапла хăвăртах сӳнет ăнсăртран хыпса илнĕ юрату кăварĕ.

В.Рсайăн «Пушар» ятлă повеçĕнче (1928) чухăн Веньямин пупăн чипер хĕрне Таньăна пĕрре курсах юратма пуçлать. Анчах та пуппа арăмĕ хăйсен хĕрне шурă офицера качча парасшăн. «Хĕрлисем вĕсем Иуда пек çынсем. Хĕрлисем Раççее нимĕçе сутнă, Христос тĕнне вараласççĕ, – тенĕ ашшĕ. – Ун пек çынсем кунта та, пирĕн ялта та пур. Вĕсем иккĕн: Энтрипе çамрăк ача – Веньямин. Вĕсем яла сутаççĕ, яла пăтратаççĕ, Турă çуртне хирĕç, чиркĕве хирĕç пыраççĕ».

Хĕр пăлханать, вăл шурă офицерпа Веньямина çураçтарасшăн. «Ах! Усал-çке ман атте. Веньямин пуçне касса йывăç çине çакасшăн ...» – йĕрет хĕр.

Акă пуппа арăмне шуррисемпе пĕрле персе вĕлерме станцăна илсе каяççĕ. Веньямин Таньăна хĕрхенсе унăн ашшĕ-амăшне тивтермест.

Пушар. Пуп çурчĕ çунать. Веньямин, ялтан кайма пуçтарăннăскер, Таньăна хăтарас тесе çунакан çурта сикет... «Унтан вăл каялла тухман, – вĕçлет В.Рсай хăйĕн повеçне. – Вăл унта Таньăна шыранă. Анчах Таня...

Таньăна ашшĕсем хăйсемпе пĕрле илсе кайнă: Веньямин çăлнă пачăшкă хăй çуртне тĕртсе ярса Мăньялтан тухса тарнă пулнă».

И.Ахах калавĕнчи каччă сарă хĕрĕн шухăш-кăмăлĕпе ăсĕ-пуçне пĕлсех те каймасть-тĕр. Тен, ăна вăл кирлех те мар. В.Рсай повеçĕнчи Веньямин хăй савакан çын тăшмансен йышĕнчен пулнине пĕле тăркачах юратать ăна. Ку тĕлĕшрен Хумма Çеменĕн Георгийĕ ăспа пурăнаканрах пек пулса тухнă.

Хайлаври психологизм. Çыравçă тĕп харкамçăн характерĕ аталаннине ĕнентерӳллĕ кăтартнă. Малтан Георги çапла калатчĕ: «Эх, Сабира! Юрату вăл, хăй часах чĕрене пăчăртаса илсессĕн, никама та тиркемест. Çын пурте пĕрех мар-и? Пĕр чĕлхе çеç ăрасна. Эпир пурте пĕртăван».

Кавча хĕр мăн кăмăлланни килĕшмест. Çапах та «вăйран кайичченех Сабирăна çав тери хытă юратса кайнăскер ăна-кăна часах маннă пек пулать».

Калаçу хресчен ĕçĕ çине куçать. Георги хăй çав ĕçе юратни çинчен пĕлтерет. «Ах, – тет Сабира, – тем парсан та эпĕ ялта пурăнассăм çук... Хуларах пурăнма лайăх...» Георги хăйĕн килти тăванĕсене аса илет. Унăн ашшĕ-амăшĕ – ĕçрен таракансене шутсăр курайман çынсем. Вĕсемпе, пуринчен ытла амăшĕпе, танлаштарса пăхать те Георги Сабирăшăн намăсланнă пек пулать.

Хĕрĕ яла хурланăçемĕн Георгин чунĕ унран сивĕнсе пырать. Халĕ ĕнтĕ вăл Сабирăна хăй юратни çинчен пĕлтернишĕн те намăсланма пуçлать. Çапла вара, пурнăç çине пăхни тĕрлĕрен пулни юрату кăварне сӳнтерсех лартать. Автор çав улшăнăва, чун-чĕре пăлханăвĕн юхăмĕ-аталанăвне ĕненмелле кăтартма пултарнă.

В.Рсай психологизм мелне Хумма Çеменĕнчен вĕренсе пынă, «Пушар» повеçре çав меле тĕпе хурса чăваш психологиллĕ прозине çĕнĕ шая çĕклеме пултарнă.

Ăс е туйăм? Пĕр енчен пăхсан, Хумма Çеменĕ хăйĕн Георгине ăспа кăна пурăнакан çын пек кăтартнă темелле. Пăхăр-ха: «Пушар» повеçри Веньямин хăйĕн тăшманĕн хĕрне хăтарма вута сикет, çавна йăлтах юрату çапла хăтлантарать.

Кунта тепĕр уйрăмлăха манса каймалла мар. Таня Веньямина ăнланма тăрăшать, Сабира вара хăйĕннех перет: «Ах, астуман та, вăл çĕр ĕçне, хура тăпрана хирĕç каланăшăн çилленчĕ пулмалла. Апла пулсан, хăй тем пек кăмăла каять пулсан та эпĕ ăна килĕштерме пултараймастăп... Хура тăпра тытмасан та пурăнатпăр».

Сабира хулара савăнса пурăнма хăнăхнă, вăл çичĕ-сакăр çынна юратма (юратмах-ши?) ĕлкĕрнĕ. Тӳррĕн каласан, çăмăлттай хĕр вăл. Çакна Георги чĕрипе туйса илет, вĕсен тĕнчисем пĕр пулманнине ăнланать. Тĕрĕссипе, каччăн ăсĕ хĕр туйăмĕ суя пулнине ăнланма пулăшать. Эппин, кунта тĕпре ăспа туйăм хирĕçĕвĕ тăрать. Çакна Георги Сабира амăшĕпе пăшăлтатса илнинченех сисе пуçлать: «Тен, шанас çук, лайăх марскерсем пулĕ вĕсем тенĕ шухăш Георги пуçĕнче çав тери хăвăрт, сисĕнкĕсĕр вĕçсе илчĕ».

Хумма Çеменĕн «Пирĕн вăй!.. Вăй!..» калавĕнче (1924) комсомола кĕнĕ ачасемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕ хушшинчи хирĕçĕве сăнласа кăтартнă. Пĕр енчен пăхсан, Турăпа пупсенчен кулакан Куçука унăн ашшĕпе амăшĕ хытах хăтăрни те, кил хуçи хăйĕн ывăлне çавăншăн хĕнени те йĕркеллех пек темелле. Ара, ачи ашшĕ-амăшĕн ĕненĕвне хисеплемест-çке, тата хирĕç тăрса çапла сăмахсем калама хăять: «Ячейкăна кайса пĕлтеретĕп... е ял советне... Ним айăпсăр хĕнеме, вĕлерме саккун çук».

Куçук ашшĕ – Кĕркури – çав тери хаярланман та пулĕччĕ, ăна çапла пулма хĕтĕртекенĕ пур, вăл – унăн тантăшĕ Лариван. Калуçă ăна çапла сăнлать: «Хура сăхманлă, чее куçлă, якарах тумланма юратать. Алла кĕрекен тĕрлĕрен таварпа услам тăвать, ялта пит Турра кĕлтăвакан çын пек çӳрет, кашни урам тăваткалĕнчех, кашни çын патĕнчех «коммунсене» çиме юратать». Вăл хĕтĕртнине пула ял йĕкĕчĕсем комсомолецсем пухăнакан çурт чӳречин кантăкĕсене çĕмĕреççĕ, ытти сăтăрла ĕçсем тăваççĕ. Юлашкинчен комсомолецсен пухăвĕнче пулса курнă Кĕркурипе тепĕр ачан амăшĕн кăмăлĕсем çемçелеççĕ, Лариван вĕсен ачисем çинчен элеклесе панине хăйсем курса ĕненеççĕ.

Хумма Çеменĕн «Мирун» (1924), «Чалăш пӳрт» (1925) тата ытти калавĕсенче ял çыннин улшăнăвне кăтартса панă. «Тутарла чăваш» калаври (1926) калавçă ирĕке вĕреннĕ, ирĕке юратакан çынпа тĕл пулни, ăна ăмсанни çинчен каласа парать. Хăйсен юратăвĕшĕн хĕрсен те кĕрешмелли çинчен çыравçă «Хĕр хăюлăхĕ» калавĕнче (1928) аса илтерет. Хумма Çеменĕн харкамçи кĕрешĕве кăмăллать. Акă «Тинĕс çинче» илемлĕ очеркри (1928) калавçă сăмахĕсем: «Эй, пурнăç! Сана калатăп халь: шавла эсĕ те хумсем пек. Шавла, кĕрле, чĕн хытăрах. Ялан кĕрле çавăн пек, шавла! Вăй хушăнать пирĕн апла!» Вăй хăватне туйма кăмăллакан калавçă пурăнас ĕмĕтлĕ: «Ах, пурăнасчĕ, пурăнасчĕ. Ĕçлес, пултарас, кĕрешес. Пултару хăвачĕпе, ĕçпеле аяла тăвас тăшмансене». Кунта вăл çакăнса вилнĕ Çеçпĕлпе (тен, Эхминпе?) тупăшать пек.

«Орфей чĕрĕлсе тăни» калава (1936) çыравçă пĕр композитор каласа пани пек йĕркеленĕ. Нимĕç Иванĕ сĕрме купăсçă хăйĕн пултарулăхĕпе тепĕр вăтăр çултан тĕлĕнтерме пуçлани çинчен каласа панă унта, çавна май çĕнелсе пыракан пурнăçа соцреализм куçĕпе пăхса мухтанă.

Хумма Çеменĕ повеçсем те çырнă. «Штрум» хайлава (1924) вăл прозăлла сăвă жанрĕпе çырнă. Унти уйрăм блок-сăнарсем пулса иртекен ĕç-пуçа çут çанталăка сăнлани урлă ăнланма пулăшаççĕ: «Кĕрхи çумăр вĕттĕн пĕрĕхет» – «халăх шăппăн кĕрлет»; «хаяр, сивĕ çăлтăрсем» – «çиллĕ, усал, хаяр сасăсем...» Поэтика тĕлĕшĕнчен кăсăк пулсан та «Штрум» идеи тенденциллĕ. Çак хаклав «Ача чухнехи» повеçшĕн (1924–1931) те юрăхлă. «Выçлăх çулсем» (1923) ку тĕлĕшрен ăнăçлăрах пулса тухнă: хайлавра чăнлăх тапса тăрать. Маларах ун пирки çула май каласа хăварнăччĕ. Кун-çула май каласа хăварнăччĕ. Кунта пĕр шухăша палăртни кирлĕ: çыравçă пултарулăх ĕçне идеологи позицийĕнчен (пуç пулса тăракан власть куçĕпе пăхса) кĕрсе каять пулсан, унăн хайлавĕ чылай чухне суя проблемăллă тата хирĕçӳллĕ, тенденциллĕ пулса тухать. Енчен те вăл пурнăçри обрективлă пулăмсене (выçлăх çулĕсене ӳкерсе пани вĕсен йышне кĕрет) сăнлас тĕллев тытсан, унăн

хайлавĕ илемлĕхпе чăнлăх тĕлĕшĕнчен ăнăçлăрах калăпланать. Тĕслĕхрен, выçлăх çулĕнчи пурнăçа сăнланă чух класс кĕрешĕвĕ ирĕксĕрех кайри вырăна кайса ларать. Çапла пулса тухнă та И.Тăхтипе Ç.Элкерĕн тата Хумма Çеменĕн хайлавĕсем.

«Йӳçлĕ-тутлă» (1936). Хайлавăн малтанхи сыпăкĕсене пичетленĕ чухне унăн жанрне «роман» тесе палăртнă. Паллах, авторĕ ăнсăртран вилсе кайман пулсан çав хайлавăн малаллипе вĕçĕ те çырăннă пулĕччĕç. Çапах та вăл романа çаврăнса тухма пултарни хытах иккĕлентерет. Тĕп сăлтавĕ – калу пĕр тĕп харкамçă тавра пынинче, унта нумай стиль палăрманнинче. Çавăнпа та хайлава «повесть» тесе калани тĕрĕсрех пек. Кунта автор ĕç-пуç хиврелĕхне мар, харкамçăн ăшĕнчи хирĕçӳ-иккĕленĕвне, туйăмĕпе ял хавхи-хавалĕн çураçусăрлăхне кăтартас тĕллев тытнă. Çавăнпа та Кĕркури ятлă тĕп харкамçă хăйĕн кашни хусканăвне, калаçăвĕ-хутшăнăвне тĕплĕн шухăшласа тăвать, хăйсен таврашĕн ятне ярасран хытă асăрханать. «Виçеллĕ пул, кирлĕ мар çĕре сăмсуна пырса ан тĕк!» – тет ăна халь Искентерсен юнĕ. «Хăюллăрах пул, каялла ан чак, мĕн эсĕ хăратăн?.. Сан пек маттур та хăрасассăн мĕн пулĕ вара?» – тет такамсен юнĕ».

Акă епле хирĕçеççĕ çамрăк йĕкĕт ăшĕнче ушкăнли тата харкамли. Такамсен юнĕ мар вăл, пĕртен-пĕр Кĕркури «эпĕлĕхĕ», харкамлăхĕ, хăй евĕрлĕхĕ. Çав вăй Кĕркурие чипер Марье енне туртать. Ял кулли пулассинчен шикленни качча хăйĕн туйăмне пусарма хистет, Марье туйăмне туякан унăн юлташĕ Кĕркурие темиçе хут ĕнтĕ хăйсен урамне вăйăа пыма йыхăрать. Каччă чĕннĕ çĕре кайма шухăш тытсассăнах «ăшри сасăсем çавăнтах пĕр-пĕринпе хиркелешме тапратаççĕ». Пĕр сасси кайма сĕнет, тепĕр сасси Марье ашшĕ иртнĕ çул «пĕртен-пĕр хĕрĕме çирĕп мар çĕре, уйрăлса тухмалли çĕре парасса ан та шанăр» тесе каланине аса илтерет. Виççĕмĕшĕ вара хĕрĕн пуян ашшĕне çиллентерсе ан мĕскĕнлен, тавраш ятне усалпа ан асăнтарах тесе ӳкĕтлет. Ун пек чухне яланхи пекех ыттисене асра тытни, урăхла каласан ушкăнли, çĕнтерет.

Нарспипе Сетнер («Нарспи») хăйсен туйăмне кăна мала лартатчĕç, ыттисене (ашшĕ-амăшне, ял-йыша) итлесси çукрахчĕ вĕсен. Елюк («Ялта») ыттисене (Ванюка, Çтаппана) ăнланма тăрăшатчĕ, анчах та ăна хăйне ăнланмастчĕç. Кĕркури вара чи малтан хăйне ăнланмасран шикленет. Çакăн пек психологилле лару-тăру та синкерлĕх патне илсе çитересси иккĕленӳсĕр. Çав вĕç малтанхи сыпăксенчех сисĕнет.

Литературăри психологизма хытах сивленĕ çулсенче, хăш-пĕр çыравçă çав мелпе çырнăшăн хăйне каçарма ыйтнă вăхăтра, Хумма Çеменĕ «Йӳçлĕ-тутлă» психологиллĕ повесть хайласа пысăк хăюлăх кăтартни паянхи кун та тĕлĕнтерме пăрахмасть. Илемлĕх тĕлĕшĕнчен те çав хайлав шăранса тухнă.

Виктор Ефремович Рсай (1906–1970). 1925–1929 çулсенче прозăра Виктор Рсай ячĕ çирĕпленсе пырать. Унăн калавĕсем хăйне евĕрлĕ, сăнарсен характерĕсене шалтан уçса панипе илĕртеççĕ. «Хĕр ĕмĕрĕ» ятлă пĕчĕк калавра (1926) тин çеç качча тухнă Уçтука сăнласа кăтартнă. Ăна ашшĕ-амăшĕ хăй юратман Куштан Çтаппана вăйпа качча панă. Лешĕ «Уçтука хăйĕн аллине илнĕшĕн савăнать. Урăх нимĕншĕн те мар». Уçтукăн чĕри вара Мируншăн çунать, çав-çавах чиркӳре венчете тăнă упăшкипех пурăнма шухăшлать. Пĕррехинче упăшки килне ӳсĕр таврăнать те Уçтука пуçĕнчен вут пуленкипе çапса вĕлерсе пăрахать.

Кунта автор хĕрĕн ашшĕ-амăшне айăплани сисĕнет. Чĕлхе вĕçне «Нарспири» калуçă сăмахĕсем килеççĕ: «Çапла иртрĕ пурăнăç, Пуçĕ пĕтрĕ çамрăклах, Ашшĕ-амăш ухмахран Пĕтрĕ хуйхă-суйхăпах».

«Сăхман айĕнчи ача амăшĕ» калав (1926) фабули те юрату пăтăрмахĕсемпе çыхăннă. Чипер Ваçлин хĕрĕ Санюк та сăнран-пуçран ашшĕне хывнă пулнă. Вăл çĕрсене Петĕр ятлă каччăпа ирттерет. Темиçе уйăхран çав йĕкĕт урăх хĕрсем çине пăхма, Санюкран тарса çӳреме пуçлать. Лешĕ хĕр пуçăн ача çуратать те пĕвери вакка сиксе вилме пуçăнать. Ачи çине пăхать те уншăн пурăнма тупа тăвать. Çав хушăрах чунĕ пирчет, сăпкари ачине те вăл çапла калать: «Асту, ӳссен никама та ан ĕнен...»

«Уçă хапха» калавра (1927) кил-йыша аркатаканĕ яла пырса çитнĕ официаллă идеологи пулса тăрать. Чăваш ялне продразверстка юхăмĕ çитет. Чухăн Кĕркурипе тепĕр темиçе чухăн çынна ял пуянĕсен тыррине пухса станцине ăсатма хушаççĕ. Кĕркури савнийĕн Клавьен ашшĕ – Никандр Иванович – ялти çĕрме пуян пулнăран вăл чи малтан çав çынна тапăнать. Лешĕ пулас кĕрӳшне улахра хĕнеттерет. Хайхи йĕкĕт асапланса вилсе каять. Тарăхнă Клавье ашшĕ хăйĕн тыррине ăçта пытарнине пĕлтерет. Çав тырра тиесе тата Никандр Ивановичпа икĕ качча илсе каяççĕ. Кĕркурин ухмаха тухнă ашшĕ çĕрме пуянăн арăмĕпе хĕрне пуртăпа касса пăрахать.

Хайлава автор çапла сăмахсемпе вĕçлет: «Хав! хав! тискеррĕн вĕрет уçă хапхаран йытă. Масар çине шăтăк чавма каякансем иртсе кайрĕç... Хапха уçă. Хапхана никам та хупмасть... Хапхана вун саккăрмĕш çулта уçса хăварнă».

Мĕншĕн уçă-ши çав хапха? Автор вулавça чăваш ялĕ икке пайланса кайнине кăтартать, шухăша путарать. Клавье йышшисем яла хирĕçтересшĕн мар. «Ах, Кĕркури, Кĕркури, мĕн тăватăн эс? – ăшĕнче калаçать Клавье. – Мĕншĕн аттепе çыхланмалла пулнă сан, мĕншĕн? Ытти çынсем, хулари çынсем выçă вилеççĕ пулсан, вĕсем патне тырă ăсатса яма ялта урăх çынсем çук-и мĕн? <...> Ма пĕр-пĕринпе вăрçмалла-ха, ма вăрçмасăр, çапăçмасăр пурăнма юрамасть?!»

Хăйне евĕрлĕ чĕнӳ пек илтĕнеççĕ ун сăмахĕсем. Клавье чăтаймасăр çак юрра юрласа ярать:

Савни ура çинче, атте ура çинче,
Атте пуртă тытнă, савни – кинжал.
Атте пуртă çĕклет, савнин кинжал çиçет...
Калăр, тантăшсем: кам усал?

Клавье ашшĕпе савнийĕ хушшинче тăрать. Малтан вăл ашшĕне сутмасть, пытарнă тырă вырăнне Кĕркурие те каламасть. Савнине ашшĕ вĕлерттерсен хĕр урăх енне çаврăнса ӳкет, пытарнă тырра тупса парать.

Хайхи кил саланчĕ. Унăн хапхинчен кĕрсе тухан çук. Кил хуçипе арăмĕ те, вĕсен хĕрĕ те вилчĕç. Мĕншĕн? Çакăншăн кам айăплă? Автор хуравне тупма вулавçă валли хăварнă. Тен, вăл калас тенĕ шухăш хайлав ятĕнче пытарăннă?

«О хĕвел!» калавра (1928) В.Рсай хăйĕн психологиллĕ сăнар калăплас пултарулăхне аван кăтартнă. Алă çулхи Пурттас Кузьми 1917 çулхи нарăс уйăхĕнче Тапанвар пасарне ыраш сутма каять, çул çинче вăл хăйĕн пурнăçне, тĕнче вăрçин терчĕсене аса илсе пырать. Çыравçă калăва аса илĕве çул çинчи çут çанталăка ӳкерсе кăтартнипе ытарлăн черетлесе йĕркеленĕ. Юнаш ялĕн ватă хресченĕ тишкерӳçĕ-философ та. Автор çав харкамça акă мĕнле шухăш калаттарать: «Ой, хĕвел, таса хĕвел, ăçтан пула пĕлнĕ-ши эс, хĕвел, этемрен çав тери аякраскер, çав тери аслă, çав тери йăваш хĕвел, мĕн шухăшлатăн-ши эс этемлĕх çинчен – сан таса, пĕр вĕçĕмсĕр уйусем, улăхусем çинче ылтăншăн çăтăхса юн юхтаракан этемлĕх çинчен?»

Ватă хресчене ăнланмалла: унăн пĕртен-пĕр ывăлне Петькана вăрça илсе кайнă, вăл унтан таврăнаймасан та пултарать. Кунта автор уçăмсăрлăх тăвать, çавна пула вулавçăн ăшри сăнарлăвĕ (воображение) вăйланасса шанать вăл. Хайлав вĕçĕнче Кузьма хăйĕн ывăлĕшĕн макăрни çынсем революцишĕн савăннине хупласа хурать. Ахальтен мар ĕнтĕ çынна савăнăç кӳрекен, хăйĕн «кĕмĕлне уçă кăмăллăн сапалакан» хĕвел «хăвăртрах анса ларма васкать», кĕмĕлĕсене каялла илет.

Калавра «Космос (Хĕвел) – этемлĕх (çынсем)» хирĕç тăру тĕпре тăрать. Çак тытăм «Революци – Кузьма (уйрăм çын)» хирĕç тăру пуласса та систерет пек. Тепĕр çыравçă революци çинчен илтнĕ Кузьмана килне савăнăçлăн янă пулĕччĕ. В.Рсай вара çак харкамça йĕртерет. Унăн инкекне нимĕнле пăлхавăр та хуплаймасть иккен. Çапла мала лартса кăтартнă прозаик уйрăм çын харкамлăхне, унăн телейĕпе савăнăçне.

В.Рсайăн 30-мĕш çулсенче çырнă хайлавĕсем, кунта «Тăпра калаçать» повеçе (1930–1931) те кĕртмелле, малтан çырнисенчен ăшăхрах та

схемăллăрах пулса тухнă. Куншăн çыравçа айăплама кирлĕ мар, вăхăчĕ çапла пулнă-çке. Тата пур çын та пĕр мар çав. Хусанкай ав хуçăлмасăр юлнă, чăн-чăн илемлĕ хайлавĕсене сунтăх валли те пулсан шăрçаланă. В.Рсай вара хуçăлмаллипех хуçăлнă. 1955 çулта та вăл хăйне çырма хавхалантарса пынă А.Талвир патне çапла çырса пĕлтернĕ: «... на днях приступлю к писанию. Что выйдет – не знаю, боюсь, не разучился ли, не потерял ли я все, что у меня было. Словом, нахожусь в состоянии робости и даже страха. Боже мой, что со мной сделал Ялавин!.. Скованность, скованность и еще раз скованность – вот основное ощущение, дорогой друг».

Сăмах кунта С.Ялавинăн «Кулацкий звонарь» рецензийĕ (Красная Чувашия. 1935. Май, 12) пирки пырать. Çакăн хыççăн В.Рсайăн литературăри çулĕ хупăнса ларать, вăл, тĕрĕслĕх тупайманскер, çырма пуçĕпех пăрахать.

Ефрем Васильевич Еллиев (1907–1942) пултарулăх çулĕ çине социализмла реализм меслечĕ çуралса çирĕпленнĕ тапхăрта тăнă. Ун чухне пур çыравçăн та колхоз юхăмĕн хуранĕнче пиçмелле, социализм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешекенсене хĕç-пăшаллантаракан хайлавсем çырмалла пулнă.

Çиелтен пăхсан Е.Еллиев калавĕсем ун чухнехи «колхозлă ял юрăçисеннинчен» нимĕнпе те уйрăлса тăмаççĕ. Çапах та вĕсенче гармони, килĕшӳлĕх çукки вăйлах палăрать. «Ним те пĕлме çук ку чухне. Пурнăç темĕскерле хуçăк! Хуçăк тĕлте эпир! Тĕреклĕх енне куçса лармалла ĕнтĕ», – çырать çыравçă хăйĕн кун кĕнекинче. «Ăслă çын – тĕрексĕр çын, – шухăшлать вăл Гете пирки. – Иккĕленнĕ вăл, тупайман чăн çирĕп тыткăч».

Акă «Чĕн тилхепе» калаври тĕп герой та (Самай) иккĕленет, вăл хăйĕн тĕрекне çухатнă. Колхозăн чĕн тилхепине улăштарса юлнă арăмĕ ним пулман пек, «хăйне хăй тĕрек тупса, лăпкăн» каласать. Самай ăшĕнче икĕ сас илтĕнет. Пĕри колхоз пурлăхне тавăрса пама ыйтать, тепри вара «кил çумне» туртать, колхозшăн пĕр тилхепе темех мар пек туйăнтарать. «Хăшне итлемелле? Хăшĕн енне сулăнмалла? Е варрипе пымалла-и? – харкамçă шухăшне пĕлтерет калуçă. – Нимĕскер те пĕлмест Самай. Темĕскер кĕтет-ха вăл.

Темĕскер çине тăрсах тĕккелесе кĕтет. Тахăш аяккинчи вăй илсе хăш енне те пулсан тĕртсе ярасса кĕтет».

Хуçалăх пухăвĕнчи калаçу («Япала этеме пăхăнтарать... Çитĕ вăхăт: этем япалана пăхăнтарĕ...») Самая ăшăтса ярать. «Малта шанмалли пур пек туйăнчĕ, тасалмалли, çĕнелмелли», – пĕлтерет Самай çинчен калуçă.

Героя арăмĕ мăйĕнчен ыталани те ăна чĕн тилхепе пăвнăн тĕллентерет. Хайлаври тилхепен символла пĕлтерĕшĕ пур – *харпăрлăх туйăмĕ*. Шăпах çав туйăмпа ушкăнлăх туйăмĕ хушшинче тăрать харкамçă. Юлашкинчен Самай тилхепене тавăрса парать, килне «çăмăллăн таврăнать».

Чунри хирĕçĕве кăтартма кăмăллать Е.Еллиев. Çав хушăрах ытарлăхпа тата шахвăрту мелĕсемпе ăнăçлă усă курнă вăл, хăй пурăннă самана тытăмне вăрттăн тиркештернĕ.

Сергей Васильевич Ялавин (1898–1961) хăйĕн «Çул çинче» калавне мĕншĕн çапла ят панă-ши? Унта качча каяс хĕр Улькка аппăшĕ патне кайма çула тухнине куратпăр. Амăшĕ ăна каça хирĕç ярасшăн мар (М.Федоровăн «Арçури» поэмипе К.Ивановăн «Тимĕр тылă» балладине аса илĕр-ха, вĕсенче те çула каça хирĕç тухаççĕ-çке!). Уйрăмах вăрман витĕр каясси хăратмалла пек. Унта каça хирĕç усал-тĕсел вăранасси те пулĕ. Хайлав ятне çапларах парса автор мĕнпур ĕç çул çинче пулассине систерет.

Тĕп тема. Хайлаври пурнăçпа вилĕм теми тĕпре пулнине С.Ялавин чи малтанхи предложенирех палăртать, вăл мĕн вĕçне çитичченех тăсăлать. Акă ватă юманăн вăрăм пурнăçĕ çинчен, çав вăрман хуралçи «чĕрĕ чунсем» пурнăçшăн епле кĕрешнине астуни çинчен шухăшлать. Кайсан-кайсан пĕр çамрăк чечеке такам мурĕ таптанăшăн тарăхать, ăна тăратса лартать; хурлăхлăн куклатакан куккукран хăй миçе çул пурăнассине пĕлтерме ыйтать. Вăрмана пырса кĕнĕ Урттемейпе Эрхип те пурнăçпа вилĕм çинченех калаçаççĕ. Çак витĕр тема тепĕр пысăк ыйтăва хускатма пулăшать. Вăл – çын шăпин тупсăмĕ.

Символсем. Хайлаври чи пĕлтерĕшлĕ символ вăл – лĕпĕш. «Шурă лĕпĕшсем вĕçсе çӳреççĕ вĕт-ха? Ульккаç та çавсем пекех, – ăнлантарать калуçă. – Лĕпĕш вăл темле пĕчĕк çурăкран та кĕрсе кайма пултарать».

Лĕпĕшĕн тепĕр енне те систерет автор: вăл çăмăллăнах инкеке лекме пултарать. Ахальтен мар усал шухăшлă Урттемее хĕр «шурă лĕпĕшĕн» курăнать.

Хурчка тӳперен çĕрелле вичкĕн куçĕсемпе Урттемее сăнани, ăна палласа илейменни пирки çырать автор. Юлашкинчен арçын хăй çăткăн кайăка тухать: «Тапкаланать, чăх чĕппи хурчка аллинче çапкаланнă пек çапкаланать Ульккаç». Ку ĕнтĕ малтанхине хирĕçле символ.

Хайлаври пуплев сийĕсем. Кунта виçĕ пуплев сийĕ палăрать: автор-калуçăн, Ульккаçăн тата Урттемейĕн. Вĕсем пĕр-пĕринпе çураçăнса тăраççĕ, çав хушăрах лексикăпа интонаци тата кĕвĕлĕх тĕлĕшĕнчен палăрмаллах уйрăлаççĕ. Тĕслĕхрен, Урттемей çăварĕнчен çапла сăмахсем тухаççĕ: «тăмана, мĕлке пуç, такама тытса хĕнес килет, вилсен час çĕрес мар тетĕн-им? Ан кăшкăр, чорт!» Ульккаç чĕлхи вара çемçе те çепĕç. Автор-калуçă вĕсене тĕрлĕ сăмахсемпе сăнлать. Илемлĕ детальсем урлă автор Урттемейĕн пĕтĕмĕшле характерне кăтартать. Ăна çыравçă йывăр сисĕмлĕ калу мелĕпе ӳкернĕ, Ульккаça – савăнăçлă, çутă калу ĕнерĕвĕпе. Малтан çав савăнăç туйăмĕ тĕнчене çутатать, кайран вăл шиклĕх, хăрушлăх енне куçса пырать. Пĕр кайăк тăтăшах астума-асăрханма кирлине систерме пуçлать.

С.Ялавин хăйĕн калавĕн тĕп шухăшне «социализм тăвас ĕçе» пăхăнтарман, вăл чĕрĕ туйăмсем урлă уйрăм çын трагедине кăтартма тăрăшнă. Ку тĕлĕшрен унăн «Çул çинче» калавĕ паянхи кун та илемлĕх тĕслĕхĕ вырăнĕнче тăрать.

Хăй вăхăтĕнче çак çыравçăн ыттисенни пекех идеологи тата политика айăплавĕпе айкашни те пулнă. Паянхи кун тӳре пулмăпăр, вĕсенчен хăшĕ элек çулĕ çине маларах тăнине тĕпчемĕпĕр. Тен, литература историне пăхнă чухне çак ĕç кирлех те мар.

Марфа Дмитриевна Трубина (1888–1956). Чăвашсен хĕрарăм çыравçи литература ĕçне XX ĕмĕр пуçламăшĕнчех пуçăнать. Малтан вăл халăх халапĕсене сăвăлать, кайран çепĕç лирикăна кăмăллать. 20-мĕш çулсенче çыравçă ача-пăча сăввисемпе калавĕсем хайлать. Унăн кăмăл-сипет ыйтăвĕсене хускатнă калавĕсем («Марине», «Хăнаран» т.ыт.те) ăнăçлăрах пулса тухнă.

Мускаври сӳезда хутшăннă çыравçă пичетре хăйĕн çапла шухăшĕсене палăртать: «Совет писателĕсем умне сӳезд кăларса тăратнă тĕллевсем мана хамăн ăсталăха ӳстерсе пыма, пирĕн çĕршыв пурнăçа туптакан çынсен кунне-çулне, социализмла паттăрлăхпа тулли паянхи куна анлăраххăн та тĕплĕнреххĕн сăнама хушаççĕ». Вăл хăйĕн проза хайлавĕсене çĕнĕ, хытарса çитернĕ эстетика виçисемпе пăхса-хакласа çырать. Пурнăçа лайăх пĕлни унăн сăнарĕсенчи чĕрĕлĕхпе кăткăслăха ăсталама май парать.

«Мучар» повеçе (1933) М.Трубина класс кĕрешĕвĕ çивĕчленсе пырать текен шухăша тĕпе хурса çырнă. Çапах та хайлаври сăнарсем чĕрĕ те ĕнентерӳллĕ пулса тухнă. Тĕп герой – Мучар – малтан чухăн пурăннă, кайран вăтам хресчене тухать, пуян хĕрне кавча илсе суту-илӳпе аппаланма хăнăхать. Пĕр хушă ялтан тухса кайса каялла таврăнать. «Çука ертĕм, тĕп пултăм», – тесе суять вăл çынсене, мĕнпур укçине ылтăн-кĕмĕле куçарса пыраканскер.

Мучар сăнарĕ – хытса ларнă, килпетсĕр, тискер сăнар. Вăл колхоз юхăмне хирĕç çын, çав хушăрах чухăна персе усал ĕç тума тăрăшать. Ăна хирĕçле сăнара унăн кӳршинче Савин Михалинче куратпăр. Вăл ырă чун-чĕреллĕ пуян хресчен, колхоза кĕме те хирĕç марскер. Ял пуçлăхĕсен ăнкарусăрлăхне тата тавçăрусăрлăхне пула Михалана кулаксен йышне кĕртеççĕ. Хресчен хуçăлнă. Вăл хăйĕн çăлăнăçне ыттисем пекех ял учительницинче шырать. Юлашкинчен тĕрĕслĕх çиеле тухать: Михалана тӳрре кăлараççĕ, ăна тĕп тума ĕмĕтленнĕ Мучара тытса каяççĕ.

«Хӳтĕ вырăнта» повесть (1940) çыравçăн ӳсĕмне кăтартать. Кунта автор çын чунне усал енне çавăрма йывăрах мар пулнине каласа парас тĕллев тытнă. Таса çынах усал серепине лексе йăнăш хыççăн йăнăш тума, юлашкинчен пуçĕпех пĕтме пултарать (Михук, Лидюк, Кавĕрле йышшисем). Ильин прокурор та суяна хирĕç тăрса çитерекен пек мар, пĕр хушă вăл йăнăшса та илет. Ипполитпа Турханов – хытса ларнă тăшман сăнарĕсем, вĕсем Мучарпа пĕрешкелех. Ырă енчи сăнарсен (Иванов, Таня, Санюк, Ваççук, Тимофеев) аталанăвĕ çук пулсан та вĕсене автор пурнăçăн тĕрлĕ лару-тăрăвĕнче кăтартать. Вĕсем пĕрре савăнаççĕ, тепре йĕреççĕ е пăшăрханаççĕ. Тăшмансем вара чееленсе каласма тата хăратма кăна пĕлеççĕ.

Марфа Трубина эпика енне социализмла реализм меслечĕ çирĕпленсе, эстетика нормăланса, хытса пынă май туртăннă. Çавăнпа та унăн повеçĕсем ун чухнехи идеологипе тата пурнăç чăнлăхĕпе çураçăнса килĕшеççĕ. Çыравçă ĕç çыннин кăткăс сăнарне калăплама хăнăхса пынă. Тăшман сăнарĕ пĕр сăнлă пулсан, ырă енне туртăнаканĕсене çыравçă пур енлĕн те кăтартма тăрăшнă.

Чăваш прозинчи кулăш поэтикине И.Тăхти хыççăн И.Мучи малалла аталантарать.

Иван Илларионович Илларионов (Мучи) (1885–1946) – «Капкăн» журнала йĕркелесе яраканĕ, чылай кулăшла калавсемпе фельетонсен авторĕ. Унăн геройĕсем – кивĕ йăласемпе тĕшмĕшлĕхрен хăпса пыракансем («Кĕрхи кунти тамаша», «Мĕскĕн Упанкка», «Хурах, хут вĕрентеççĕ!», «Тĕшмĕш чăпти»).

Ку вăхăтра прозăра И.Тукташ («Вăкăр çырми» повесть), В.Краснов-Асли («Тăвалла» роман), А.Талвир («Ылтăн ту», «Эсĕ инженер пулатăн» повеçсем), Л.Агаков («Пĕрре, çуркунне» повесть), М.Данилов-Чалтун («Лизавета Егоровна» калав) тата ытти çыравçăсем те ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Çапла вара, чăваш прози 1923–1940 çулсенче палăрмалла ӳсĕмсем тунă. Мифологилле прозăпа юнашар реализмла проза хăвăрттăн аталаннă, çыравçăсем геройсен характерĕсемпе психологине, вĕсен типне калăплама

хăнăхнă. Публицистикăлăхпа пĕр вăхăталлах романла нумай стильлĕ шухăшлав вăй илсе пынă.

Усă курмалли литература

Родионов В.Г. «Чăваш çырăвĕн ушкăнĕ» // Чăваш литератури: поэтикăпа стиль ыйтăвĕсем. – Шупашкар, 1989. – 41–60 с.

Трубина Мархви. Çырнисен пуххи. 2 том. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1970.

Мĕтри Юман. Суйласа илнисем. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1997.

Ефрем Еллиев. Çĕнĕ ăнланупа ăнлантару. – Шупашкар, 2002.

ИЛЛЕ ТĂХТИ (1889–1938)

Илья Ефимович Ефимов (Тăхти) 1889 çулхи авăн уйăхĕн 4-мĕшĕнче халĕ Чăваш Республикин Тăвай районне кĕрекен Нӳшкасси (Çĕн Эльпуç) ялĕнче çуралнă. 1897 çулта Эльпуçĕнчи прихут шкулне вĕренме кĕрет, тепĕр çултан хăйсен ялĕнче уçăлнă пуçламăш шкула куçать. 1899–1903 çулсенче пулас çыравçă Сĕве хулинчи мăнастир шкулĕнче, 1903–1908 çулсенче Хусанти учительсем хатĕрлекен семинарире вĕренет. Кайран 1914 çулччен Тавăтри земство шкулĕнче (халĕ Чăваш Республикин Элĕк районне кĕрет), тепĕр вĕренӳ çулĕ Превозное ялĕнчи училищĕре (халĕ Удмурт Республикин Сарапул районне кĕрет) вĕрентсе пурăнать. 1915 çулта ăна вăрçа илсе каяççĕ. Пĕр хушă Ĕпхӳри тĕн семинарийĕнче ăс пухать, Г.Комиссаровпа пĕрле Чăваш наци ушкăнне йĕркелес ĕçре тăрăшать. 1918–1919 çулсенче Шăхранти (хальхи Канаш хулинчи) учительсен семинарийĕнчи кăтартуллă шкулта, 1919–1922 çулсенче Мускаври Çут ĕç комиссариачĕн инспекторĕнче, 1922–1924 çулсенче ача çурчĕн пуçлăхĕнче ĕçлет. 1924 çулхи чӳк уйăхĕнче çыравçă В.Брюсов ячĕллĕ Литературăпа художествăсен аслă институчĕн студенчĕ пулса тăрать, тепĕр çултан Мускаври Пĕрремĕш патшалăх университечĕн этнологи факультечĕн литература уйрăмне вĕренме куçать, унта 1928 çулччен ăс пухать. Аслă пĕлӳ илнĕ хыççăн И.Тăхти Шупашкара таврăнать, Чăваш тĕп

педтехникумĕнче чăваш чĕлхипе литератури вĕрентме пуçлать. ӳпке чирĕпе аптраканскере тепĕр виçĕ çултан инвалида кăлараççĕ. Нумай вăхăт чирлесе пурăннă хыççăн 1938 çулхи нарăсăн 22-мĕшĕнче И.Тăхти Шупашкар больницинче вилсе каять.

И. Тăхтин çырас ăсталăхĕ те, пурнăçа ӳкерес мелĕ те мĕн пуçламăшĕнчен вĕçне çитичченех пĕр стильлĕ тата пĕр шайра пулман. Çавăнпа та унăн пурнăçĕпе пултарулăхне тапхăрласа пăхни питех те кирлĕ. Çакăн пек тапхăрсем çине пайлама пулать: 1. 1905–1918 çулсенчи пултарулăхĕ. 2. 1919–1924 çулсенчи пултарулăхĕ. 3. 1925–1930 çулсенчи пултарулăхĕ. 4. 1931–1937 çулсенчи пултарулăхĕ.

1905–1918 çулсенчи пултарулăхĕ. И.Тăхти пултарулăх ĕçне халăх сăмахлăхĕпе кăсăкланнă май кĕрсе кайнă. 1905 çулта вăл Н.Никольский ыйтнипе тĕрлĕ халапсем («Пăкачав», «Ялсем мĕнле пуçланса кайнă», «Ыраш пучахĕ мĕншĕн кĕске», «Ят хурса яни»), йăла-йĕрке çинчен каланисене («Çын вилсен тăвакан йăла-йĕрке», «Тырă акакан каланă кĕлĕ»), мифла сăнарсем çинчен каланисене («Арçури мĕнрен пулать», «Хĕрт-сурт») пухать. 1906 çулта пулас çыравçă семинарире алпа çырса кăларакан «Шурăмпуç» журнал валли «Мĕн курни, мĕн илтни» ятпа тепĕр виçĕ халап çырса парать. Вĕсемпе усă курса вăл каярах илемлĕ хайлавсем çырать. Тĕслĕхрен, Çĕн Пуянкассинчи Вестĕртен çырса илнĕ истории халапне тĕпе хурса И. Тăхти 1924 çул тĕлне сăвăлла-прозăлла калав хайлать, ăна вăл «Элихун» поэмăн иккĕмĕш пайне вырнаçтарать. Çавăнтах çыравçă тăван тăрăхĕнчи ялсем пуçланса кайни çинчен калакан халапсене кĕртсе ярать.

«Эпĕ çуралнă çĕршыв» (1907). Хайлав жанрне çырнисен пуххинче тĕрленчĕк тесе палăртнă. Сăмахсарта çав сăмаха вырăсла «зарисовка, наброски, путевые заметки» тесе куçарнă. Хайлаври калавçă чи малтан аса илĕве тĕпе хуни, унта вăл истории халапĕсене, ваттисем аса илнисене каласа пани курăнать. Вăл темиçе яла танлаштарса тишкерӳ те тăвать: «Чӳрече хупписене сăрламан, сăрлама укçа кирлĕ, пирĕн ялти чăвашсем пуян мар,

çавăнпа хутахай хыççăн пит каймаççĕ... Ĕç хыççăн йăванарах çӳресен, апата тутлă çисессĕн вара çултан çула çитерсе пырасси питĕ хĕнĕ».

Юнашар Энĕшпуç ялĕнчех (çав ялтан И. Тăхтин амăшĕ, Каюк таврашĕнчи Трахвинĕн Укахви ятлă хĕрĕ тухнă) урăхла иккен. Унта ĕçкĕ-çикĕпе вылянмаççĕ, «çут тум тăхăнса, пасар тавраш илсе» укçисене пĕтермеççĕ. Çав ял пуянĕсем те арманти вырăссемпе ĕçсе çӳремеççĕ. «Ĕçес тесен – укçа пур вĕсен, сăра тăвас тесен – салат нумай вĕсен. Сăра пит ĕçмеççĕ вĕсем; эрехе те çулталăка четвĕртрен ытла пĕтермеççĕ вĕсем», – малалла пуянсем «шутлă çынсем» пулнине ĕнентерет çыравçă. Кунтах пĕрремĕш хут ял пупне хак пани пур: «Пуп ун патне пырсан пупа çăмарта пĕçерсе парас пулать, мĕншĕн тесен унăн хырăмĕ çăмах яшкине юратмасть, пултран шӳрпине те ун таса тути сыпаймĕ».

Çак 20-мĕш çулсенче вăйлах палăракан ирони стильлĕ, тишкерӳллĕ хайлава синкретикăллă жанрпа (унта пейзаж та, публицистикăллă пĕтĕмлетӳ те пур) – очерк жанрĕпе – хайланă. Унти тĕп шухăш (чухăнлăх ĕçкĕ-çикĕпе иртĕхнинчен, яка тумланма тата пуп таврашĕпе туслашма тăрăшнинчен килет тени) çыравçăн «Финляндияра пурăнакан халăхсем» ятлă очеркĕнче (1908) те сисĕнет. Финсемпе белоруссен, литвасен пурнăçĕ çинчен çырнă хыççăн автор еврейсем пирки калама пуçлать: «Еврей еврее пур çĕрте те пулăшма, ăс пама тăрăшать. Эрех хăйсен аллинче пулсан та еврей, вăл çын ĕмĕрне кĕскетнине пĕлсе, ĕçмест».

Çапла вара, И.Тăхти хăйĕн малтанхи очеркĕсенче, тĕпрен илсен, çутлăх ыйтăвĕсене хускатни курăнчĕ. Вĕсенче çыравçăн иронийĕ те (таса туталлă пуп тени хăех мĕне тăрать!) сисĕнет.

«Ухливан вутăша улталани» ятлă юмаха (1908) И.Тăхти хайла мелĕсене упраса çырса илме тăрăшнă. Вуланă чухне куç умне хайлаçă сăнарĕ тухса тăрать. Илсе пăхар-ха хăш-пĕр вырăнсене: «... кӳлле ялт! чĕвĕнчĕ»; «Хайхи вутăш, каланă пек, «ĕшт, ĕшт!» тесе пырать шĕшкĕ тĕмĕсем хушшинче. Сасартăк сиксе тухрĕ мулкач, шĕшкĕ çапсем, тĕмсем, тункатасем урлă ярна

пырать. Вутăш та ун хыççăн: «Ан кай-ха, тан тăрса чупар!» – тесе, икĕ уран чупса ырса, тăват уран пырать...»; «... ырнăскер пуçне усса пы-ырать Ухливан патне».

Çапах та çав юмах хайлаçă сăнарне хăй кăна калăплайман пулĕччĕ: кунта итлевçĕ (вулавçă) тимлĕхĕ Ухливанпа вутăш ачи хушшинчи тупăшăва йĕрлĕччĕ. Юмахран юмахлă калав туса уйрăм кĕнекен пичетлеме шухăш тытнă И.Тăхти унăн пуçламăшне («Ĕлĕк-авал Ухливанпа матки пурăннă. Вĕсен икĕ ывăл, виçĕ хĕр пулнă. Ухливанпа матки темĕн чул ĕçлесе те пурнăçне çитереймен. Ултă çултанпа Ухливан пĕр кӳлĕ хĕрринчи шĕшкĕ катине тĕплесе вир акса тăнă») туртса хурать те калавçă-хайлаçă сăнарне кăтартакан абзацсем кĕртсе лартать. «Пĕрре, хĕлле, каç пулттипе кӳршĕри Пилеш Мĕтри патне кайрăм шăкăлтатса ларма» текен йĕркесем калу чăн пулса иртнине аса илни пек сыпăнса пырасса систереççĕ. Ваçка ятлă калавçă юмах ăсти иккен.

Хĕллехи çĕр вăрăмран чăваш çынни çĕрĕпех ал ĕçĕпе тăрмашать: улахри хĕрсем каччăсем çине пăхса ларнă вăхăтрах икĕ йĕке таран турахуп çиппи авăрлама, арçынсем виç çăпата хуçса тăваттăмĕшне тавăрса хума пултараççĕ. Авă Ваçка юмахçă кӳрши те юмах итлеме хатĕрленсе çăпата кантри явма пуçăнать. Хăйĕн пултарулăхне кăтартиччен «Ваçка пичче, юмах яма ăстаскер, акă мĕн калать: «Эпĕ çитмĕл çичĕ юмах пĕлетĕп; хĕрĕх те пĕр халап, утмăл тăхăр юмах пĕр чара нӳхреп шывĕ ĕçсен аса килет, хĕрĕх те пĕр халап икĕ саккăр, хăрах тăххăр ăскăч пыл шывĕ сыпсан тин чĕлхе вĕçне çитет. Халĕ сире, итлессĕр питех килет пулсан, çитмĕл çичĕ юмахран пĕрне ярса кăтартам».

Юмахлă калавăн икĕ пайне çыхаканĕ – Ваçка юмахçă сăнарĕ. Вăл пĕрремĕш пайри тĕнчере пурăнать, çав хушăрах тепĕр пайĕнчи ĕç-пуçа та пĕлет, хăй куçĕпе курнă ăна («çитрĕ те сиксе анчĕ», «йĕри-тавра пăхрĕ»...). Вулавçă юмаха вуланă чух та ăна калаканĕн сывлăшне туйса пырать. Лешĕ те

манса каймасть хăйне итлекене. Пĕр вырăнта вăл çапла калани те пур: «Ухливана çакă çеç кирлине юмах итлекен те пĕлет».

Хайлав тĕп шухăшĕ унăн ятĕнче палăрманни иккĕленӳсĕр. Ухливан вутăша улталани çинчен калаканĕ хăй тĕпре тăрать кунта. Вăл сăмах ăсти, хăйне евĕр асамçă. Вăл сăмахпа ахăртиччен култарма кăна мар, выльăх-чĕрлĕх хунавне хăртма та пултарать («Юмах янине путексем илтсен сурăх ĕрчемест»). Шăпах çавăн пек çын ячĕпе И.Тăхти каярах çапла çырнă:

Çилленме мар, вăрçма мар,
Хурлантарас шутпа мар,
Хĕрхенсе-çке ман сăмах
Этем ывăль-хĕрсене
Çапла пырать сыпăнса
Аялтан та çӳлелле,
Шмакка кĕпçи сыпăкле.
Шыв хĕрринче ӳсекен
Вăрăм шмакка кĕпçилле
Ман сăмах та çӳлелле
ӳснĕçемĕн вĕçĕнче
Шур чечеке лартăрччĕ,
Иртен-çӳрен çынсене
Ырă шăршă пултăрччĕ,
Юр айĕнчен тухакан
Кĕрен чечек çеçпĕл пек
Тутлă шăршă сартăрччĕ.

Сăмах шăмакка пек сыпăкăн-сыпăкăн ӳссе чечеке ларма, таврана тутлă шăршă сарма пултарать иккен. Сăмах ăстин тĕп тĕллевĕ те сăмах çумне сăмах хушса çынсене çав сыпăнун илемĕ-ырлăхĕпе савăнтарасси-мĕн. Çак ытарлăхра И.Тăхти пултарулăхĕн тĕп енĕ курăнать. Унăн хайлавĕсенче ĕç-пуç черетленĕвне мар, чи малтан *сăмахсен сыпăнăвне* сăнамалла, вĕсем çурнă чечек шăршине туймалла.

1910 çулта И. Тăхти хăй вĕрентекен ачасенчен тĕрлĕ юмах-халап, юрă-сăвă çырса илни, вĕсен пĕр пайне тепĕр çултан «Тавăт, Мĕлĕш, Шураç юррисем. Туй юррисем» ятпа Хусанта уйрăм кĕнекен кăларни паллă. Пичетленмен текстсен хушшинче çыравçă хăш-хăш ял чухăн е пуян пулнине палăртни пур, çав вырăнсенчен хăшне-пĕрне илсе пăхар-ха:

«Тавăтăн çĕр тӳремрех, тырă питĕ лайăх пулакан вырăн. Вĕсенĕн тырă пулман çул сайра. Анчах унта халăх питĕ ĕçкĕллĕ, ӳркевĕçрех, питĕ ятахай.

Халăх çинче ятлаçаççĕ, ĕçе тĕрĕс тумаççĕ, эрех шутсăр нумай ĕçеççĕ. Çавăнпа Тавăтра халăх начар пурăнать...

Павлушкăнĕсен çĕр сăртлă, начар, тырă та начар пулать. Вăл ялта питĕ ĕçлеççĕ. Унти çынсем пурте пуян, никамăн та укçа çĕр тенкĕрен кайи çук. Павлушкăнĕнче эрех ĕçекен çукпа пĕрех...»

Çак йĕркесем И. Тăхтин очеркĕсенчи шухăшĕсемпе тӳр килеççĕ. Çутлăх идейисене çав очерксем кăна мар, «Хураç» («Ĕçчен çын») калав та пăхăннă. Унти тĕп харкамçă чухăн пурăнни вăл кахал тата ĕçкĕç пулнинчен килет иккен. Хураç сăвăлла шухăшласа каланă сăмахсене çыравçă Н.Некрасовăн «Юрăсем» ярăмри «У людей-то в дому – чистота, лепота...» сăввин куçарăвĕнчен илни паллă. Вырăс сăвăçи чухăн хресчене пусмăрлани çинчен çырнă пулсан, И.Тăхти вара çав сăмахсене ялти ĕçкĕçпе кахала калаттарать. Ку вăл çыравçă ун чухне çутлăх идейисене мала лартнине пĕлтерет.

Чи тĕлĕнмелли калав ячĕпе унăн шухăшĕ каллех тӳр килменнинче: çав кĕнеке «Пуян пулас килсен çак кĕнекене ил» ятпа пичетленнĕ. Хайхи пуяс ĕмĕтлĕ çын туянать те ăна ĕçлемесĕр, вăй хумасăр пуйма май çукне ăнланса илет. Е тата çав хайлавах 1926 çулта панă çĕнĕ ята илер-ха: «Ĕçчен çын». Вулавçă пĕр ӳркевсĕр çын çинчен вуласа пĕлме хатĕрленет, Хураç чухăн пулнинчен тĕлĕнет. Хайлав ятне кĕртнĕ сăмаха (ĕçчен) хирĕçле пĕлтерĕшпе ăнланмаллине вăл вуланă май тин ăнланса илет. Хайлав ячĕсен пĕлтерĕшĕ И. Тăхтин пачах урăхла, вĕсене чылай чухне тĕрлĕ вулавçăран ансатраххисене асра тытса пыни сисĕнет. Çакă автор пĕр хайлавах темиçе сийлĕ шухăш варма тăрăшнипе те çыхăннă.

Халĕ çыравçă пултарулăхĕн малтанхи тапхăрти паллăрах енĕсене тепĕр хут палăртса тухар.

1. Çутлăх идейисемпе хавхаланнă çамрăк Тăхти очерксем çырать, «Хураç» ятлă калав хайлать. Каярах (10-мĕш çулсенче) вăл романтикăлла хавха енне сулăнать («Элихун»).

2. Халăх сăмахлăхĕнчи тĕслĕхсене çыравçă текста автор идейине ăста пăхăнтарса кĕртсе лартма пултарать. Ун пек чухне вулавçă фабула йĕркеленинчен ытларах сăмахсене хайла мелĕсемпе сыпăнтарса пыракан калавçă-хайлаçă пултарулăхĕпе паллашать, сăмах техĕмĕпе киленет.

3. Тăхти хайлава тĕрлĕ шайри вулавçă валли тĕрлĕ шухăш варса хума ăста пулни палăрать. Çавна пулах хайлав ячĕсем унăн тарăн идейипе çураçăнса тăмасан та пултараççĕ.

1919–1924 çулсенчи пултарулăхĕ. Çак тапхăрта И.Тăхти поэзи жанрĕсемпе çырнине вăл романтикăллă калăва çывăх тăракан сатирăллă калу енне куçса пынипе ăнлантармалла. Автор хăй «Колчака» поэма тенипе килĕшмен, ăна вăл политикăлла памфлет тенĕ. «Таса туталлă пупсене» кăмăлламанни çыравçăн 1917 çулта хайланă «Пара слов о чувашской литературе» ĕçĕнче те вăйлах сисĕнет. Ăшă йĕплев тăрăхлава çаврăнса çитет. «Колчакри» кулăш çыннăн хăтланăвĕпе сăн-питне юри кулăшла ӳкерсе-сăнласа панине пула йĕркеленет. Кунта Н. Шупуççынни витĕмĕ («Пĕтелмей», «Чĕлĕм») те сисĕнет. Чăваш кулăшĕ 1919 çул тĕлне чылаях аталанни, ăна И. Тăхти витĕр пĕлсе тăни иккĕленӳсĕр.

Ку тапхăрта хайланă калавĕсемпе статйисем («Ачапа асламăшĕ», «Пуп таврашĕ») çыравçăн тенденциллĕрех пулса тухнă, вĕсем унăн пултарулăхĕнче паллă вырăн йышăнса тăмаççĕ.

1925–1930 çулсенчи пултарулăхĕ. Ку тапхăрта И. Тăхти романтикăлла эпикăлăхран калуçăн тăрăхлавĕ-питлевĕ урлă çав тулашри питлеве (вăл тĕрлĕ социаллă сийсенчен кулни пулнă) шалти питлев енне (кунта чи малтан калуçă хăйĕнчен тăрăхланине) çавăрса яма пултарнине палăртмалла. Çыравçа харкам тăрăхлу хăйне хăйшĕн мар, стиль тума, тарăн шухăш варма кирлĕ.

Унпа пĕр харăсах Тăхти калури монтажлăх мелне (уйрăм ӳкерчĕксем кăтартса йĕркеленĕ калăва) алла илсе пырать. Акă «Çанталăк» калаври (1925) пĕр вырăн: «Тĕрлемес. Станцă. Юман вăрман. Çуртсем. Ыраш пусси. Чукун

çул. Вакунсем. Калла-малла пăравус çӳрет кăшкăрса. Тĕрлемес çил арманĕ авăрать».

Çине-çине абзацсем пулни, ӳкерчĕке сахал сăмахпах ӳкерсе пани, курăма пысăкран пĕчĕклетсе, сыпăнтарса пыни Тăхтин тăтăшах тĕл пулать. Акă çапла мелпе вăл хăйĕн «Ăслă, аслă, чаплă, сумлă паттăрсем» калавне (1926) пуçлать те çав мелпех ăна вĕçлет. Кунта вара пĕчĕк курăм каллех пысăккине куçса каять: «Пушăт, мунчала, тавăрнă çăпата, шĕшлĕ сĕтел-пукан çинче. Сак çинче кĕпе. Икĕ кантăк, хĕвел, пӳрт. Хурăн, йăмра – урамра. Пĕр ял, улăм витнĕ ял».

Калуçă куçĕ вулавça сĕтелпе сак çинчен чӳречe витĕр урама кăларать, ерипен çӳлтен ял çине пăхтарать.

Çак стиль енне туртăнни çыравça сăвăланă калуран монтажлă калу патне илсе çитерет. Поэзире «уссăр сăмах» нумай тесе шухăшлать вăл. Хăйĕн «Элихунне» пичетлесе кăларма май килменни ăна «Чăваш поэтсене» сăвва (ăна автор «Мухтав юрри» тенĕ) çырма хистет. Пĕр критик ал çыру çине «Çакна çыраканĕн ăс-тăнĕ вырăнтан сикнĕ пулас» тесе палăртнă.

Е 1927 çулта çырнă çак йĕркесене илер-ха:

Тăпăр-тăпăр тăпăртатса
Пурнăç путлĕ пулмарĕ;
Лапăр-лапăр лапăртатса
Сăвă путлĕ пулмарĕ.

Тĕлĕнмелле пулин те сăвăç хăйĕн сăввинче лапăртату (нумай сăмахласа кайнине) курать. Критиксем те унăн поэзине ăнланса çитереймен çав çулсенче. Тĕслĕхрен, «Выçлăх çул» пирки И.Кириллов 1926 çулта çапла каланă: «Çыраканĕн çитменлĕхсем чылай: 1) ăшĕ енчен – шухăшланă картина таса, вăйлă кăтартайманни; 2) техника енчен тĕкĕл-тĕкĕл тесе пынинчен урăх нимĕн те çукки...»

Тепĕр çĕрте («Самана сăвви») И. Тăхти çапла та çырнă:

Юплĕ юмах пулас çук Тĕллĕн-тĕллĕн тĕвĕсĕр,

Сирĕн умри çыру та. Тепĕр çĕрте кĕвĕсĕр,
Çыраканни çырă мар, Сыпăнмасăр пыраççĕ
Сăмаххисем кăтра мар; Манăн сăмах-юмахсем.

Çыравçă-калавçă хăйне сăмах сыпма пĕлменшĕн ӳпкеленĕ пек пулса тухать. Паллах, ытарлу мелĕпе çапла çырать ĕнтĕ вăл, çапах та халăхра «Кĕпçе пултăр сыпăклă, Сăмах пултăр татăклă» тесе каланине («Колчак») астусах тăрать вăл. Халăхра сыпăнуллă текстсем питĕ йышлă (вĕрӳ-суру чĕлхисем, сыпăнуллă юрăсем). Унта кĕрекен текстсене монтаж мелĕпе йĕркеленĕ: «Çӳллĕ-çӳллĕ тусем пур. Тусем çинче чулсем пур. Чулсем çинче сар арча, Сар арчара йĕс тура». Çав сыпăнуллă меле ăша хывнă та ĕнтĕ çыравçă. Монтажлăх, хайлалăх, хайлаври шухăшăн нумай сийлĕхĕ, калавçă-автора мĕскĕнлетсе каластарма (ку вăл харкамçă мĕскĕнне пачах та пĕлтермест) тăрăшни – çаксем пурте И.Тăхтин хăйне евĕрлĕ стильне йĕркелеççĕ. Çыравçăн прози ыттисеннинчен чăвашларах пулса тухнипе уйрăлса тăрать. Халăхăмăрăн сăмах вылятаслăх хевтине туйса вăл нимĕнех те каламалли çук тенĕ тĕлтенех каламалли тупать. Чылай чухне автор геройсен ячĕпе каласать, вĕсен шухăшлавĕ-курăмне, чĕлхине палăртать. Ытларах чухне çав харкамçă сахал вĕреннĕ хресчен, вăл пурнăçри ырă улшăнусене çийĕнчех ăнланса та ĕлкĕреймест.

«Иптеш» калаври (1928) Тăхти пурнăç çĕнĕлĕхĕсене карчăкĕнчен каярах ăнланса пырать. Автор Тăхтапие уçă агитаци сăмахĕсене калаттарни кулăшла, хирĕçле эффектлă пулса тухнă:

– Хамăр ĕçлемесен пире çын ĕçлесе парас çук. Хамăр пурнăçа хамăр тумалла эпир. Чăваш ĕç халăхĕн те парти ертсе пынă çулпа пырса хăйĕн пурнăçне социализм патнелле çывхартмалла, – тет ман карчăк.

– Тăхтапи! Эсĕ мана ахаль каламастăн пулмалла: карчăк, эсĕ коммунистсен партине манран вăрттăн кĕнĕ пулмалла, – тетĕп эпĕ.

«Хамăр пурнăçа хамăр тумалла эпир» тенинче «эпир» мар, «пирĕн» пулмаллаччĕ. Карчăк сăмахĕ вырăсларах çаврăнса тухни ахальтен мар, автор

ăна юри çапла çырнă. Çав мел урлă вăл карчăк каланисенчен тăрăхлать. Чăн пурнăçра тĕттĕм хресченĕн арăмĕ ытла та мал ĕмĕтлĕ, теори енчен çирĕплетнĕ шухăшсене калани пулман-тăр. Ку каллех Тăхти тăрăхлавĕпе çыхăннă.

Тăхти «Иптеш» калавра çав вăхăтри çыравçăсен ирĕклĕхĕ хĕсĕннине те аван систерет. Пĕри ăна ятласа çапла çыру çырать иккен: «Иптешлер! Эсĕ çыркаланисене хăшне сайра хутра вулакалатăп та тĕлĕнетĕп. Эсĕ те тĕпсакайĕнче тĕнче курмасăр пурăнасшăн. Пурнăç малалла кайнине сисместĕн, чухламастăн. Ял хуçалăхĕ мĕнле майпа çĕнелсе пырать; чухăнсем, ватăсем халĕ пурнăç тумашкăн куллен-кун кĕрешнине эсĕ сисместĕн пулмалла.<...> Чăваш ĕç халăхĕ те хальхи саманара çитĕнсе, ӳссе, çутăлса пынисене ма çырса пымастăн вара эсĕ?»

Официаллă идеологсем çыравçăсене шăпах çавăн майлă ятланă ун чухне. И. Тăхти çавна пĕле тăра хăйĕн калу стильне ытарлу çулĕпе чуптарнă. Çав мелпех вăл çĕнĕ пурнăç хресчен психологине, ăнланăвĕпе шухăшлавне хистесех улăштарни çинчен çырнă.

Е тата тĕп герой хăйне катăкрах çын пек тыткаланинех аса илер. «Иптеш» калавра вăл арăмĕнчен ухмахрах пек курăнать. «Мун-ча-ла» калавра та (1928) харкамçă çапла пĕтĕмлетӳ тăвать: «Мĕн тăвас тен, ухмах пуль çав эпĕ, ман карчăках ăслă пуль çав, çынсемех тăнлă-пуçлă пуль çав». Хайлав ячĕ вара харкамça тĕллесе хак партарать: мун-ча-ла! Тăсса, интонаципе каласа хакламалла харкамça. Ку ятра автор позицийĕнчен ытларах вулавçă хаклавĕ палăрать.

Чылай чухне калавçă Тăхти ятлă. Çавăнпа та айванрах вулавçă ăна автор хăй тесе шухăшлама пултарнă. Çакна И.Тăхти юри çапла йĕркелесе (автор сăнарĕпе калавçă сăнарне пĕрлештерсе) хăйĕн чăн шухăшне йĕркесен хыçне пытарнă. Ку мел ăна тӳрремĕн айăплассинчен сыхланма май панă.

Тăхтин прози чăваш сăнарлă шухăшлавне çĕнĕ шая çĕкленме пулăшнă. Авторпа геройсен тĕнчисем пĕр марне кăтартни ун чухнехи прозăшăн питех те пĕлтерĕшлĕ. Çыравçăсем хăйсен шухăшне тенденциллĕ, çиеле кăларса

калани, геройсене схемăласа калăплани хайлавсене шупкалатнă. Ку тĕлĕшрен Тăхти урăх: вăл геройсене ирĕке ярса, чылай чухне ухмаха суптарса каластарать. Ун пек вырăнсенче автор позицине палăртма çăмăлах мар.

«Шерхулла» (1925). Калавра (унăн малтанхи варианчĕ «Туй» ятлă) И. Тăхтин «Ухливан вутăша улталани» хайлавăн традицийĕсем курăнаççĕ. Автор хăй вун пилĕк çул каялла çырса илнĕ туй юррисемпе усă курса калавçă сăнарне калăплать. Лере харкамçă тĕнчи юмах тĕнчинчен чылаях уйрăлса тăратчĕ пулсан, кунта вĕсем пĕрешкелех. Уйрăмлăхĕ вара юмахне калаканĕ калавçă хăй, «Шерхуллара» юрлаканĕсем туй çыннисем пулнинче. Тата тепĕр уйрăмлăх: Шерхулла сăнарĕ унăн калаçăвĕ, юмах ярас ăсталăхĕ енчен кăна мар, унăн хăтланăвĕ, ĕçĕ-пуçĕ енчен те ӳкерĕнсе калăпланать. Приключениллĕ ĕç-пуç ыттисенчен урăхларах çын сăнарне кăтартма хистенĕ. Шерхулла шăпах çапла çын: вăл çурма тутар, çурма чăваш; яланах яка, ытти арçынсенчен урăхларах тумланать; юрласа-ташласа хăй çине пăхтарма пултарать. Пĕр сăмахпа каласан, тĕлĕнтермĕш çын вăл Шерхулла.

Хайлава Шерхулла ятлă кĕтӳçĕ хăйĕнпе чăн пулса иртнĕ ĕç çинчен каласа панă пек йĕркеленĕ. Выльăха хисеплекенскере халăх та юратнă, ĕçкĕ-çикĕ, чӳк пăтти, туй таврашĕнчен чĕнмесĕр хăварман ăна. Пĕррехинче, çимĕк умĕн пĕр-икĕ кун маларах, вăл ял халăхĕпе пĕрле Штанаша (малтанхи вариантра – Атмалкассине) хĕр илме тухса каять.

Автор тĕп харкамça ялтан туя епле тухса кайни, туй ачисем мĕнле сăмахсем каласа юрлани çинчен калаттарать те каллех тепĕр аса илӳ авăрне путарать. Малалла Шерхулла хăй ача чухне тутар сапантуйĕнче пулнине, унта тутарла юрласа тĕлĕнтернĕшĕн пĕр пуян ăна тӳпеттейпе шурă шлепке парнеленине аса илет.

Калу каллех туй патне çаврăнса çитет. Халĕ вулавçă куçĕ умне ахаль кĕтӳçĕ мар, шурă шлепкеллĕ-тӳпеттейлĕ, юрра питĕ хавас хусах каччă сăнарĕ тухса тăрать. Унпа юнашар ларса пыракан Юс Митюк арăмĕ ăна ытараймасăр çапла ăшшăн калаçать: «Шерхулла пичче, Штанаша пырса кĕнĕ чухне эпĕр

иксӗмӗр хытӑрах юрлӑпӑр, санӑн сассу лайӑх, ман Митюк пӗртте юрлама пӗлмест, эсӗ юрра хуçкаласа, илемлӗ çавӑрса яран, санпа юрлама пит çӑмӑл».

Çак «сарӑ, хитре хӗрарӑм» килӗштерет Шерхуллана. Лешӗн туйӑмне вара çыравçӑ çапларах танлаштарса кӑтартать: «Çанталӑкӗ те уяр та, вӑрман илемлӗ, пӑхасах килет, ем-ешӗл ларать. Митюк матки те илемлӗ, çӳçӗ сарӑ, çӳç çинчен çӗнӗ масмак çыхнӑ. Чӑтмалла мар, пӑхасах килет Митюк маткине».

Çак вырӑнтан пуçласа хайлаври туй мотивӗпе çураçуллӑн Шерхуллапа Наçтаç чӗрисен туртӑнӑвӗ вӑй илсе пыма пуçлать. Мӑшӑр пулса вӗçекен кулюккасене аса илсе юрлаççӗ-и е пулас кинӗн илемне ырлаççӗ туй ачисем – вулавçӑ юнашар ларса та юрласа пыракан Шерхуллапа Наçтаça куçран вӗçертмест, малалла мӗн пуласса чӑтӑмсӑррӑн кӗтет. Туй мешехи хӗрсех пырать. «Хӗрнӗ майӗпе пулмалла, Митюк арӑмӗ çуталса кайнӑ, авкалана-авкалана юрлать. Митюк арӑмӗ хӗрсенчен те чипер. Мана хӑйӗн кӑвак куçӗпе пӑха-пӑха илет».

Хӑйӗн арӑмӗ хусах кӗтӳçпе ӑмӑртмалла юрлани, вӗсем пӗр-пӗрин çине пӑхкалани килӗшмен Юс Митюкне. Çакна сиснӗ Наçтаç Шерхуллана çынсем курмалла мар çапла асӑрхаттарса хурать: «Шерхулла пичче, эсӗ паян сыхлан. Сана Митюк çилленнӗ, таçта хӗнеттерӗ, эсӗ пӑрӑн вара».

Туй еккипе килӗшӳллӗн пулса иртеççӗ ӗçсем. Акӑ туйпа хӗр каччисем «сатур кӑшкӑрса пӗр-пӗрин çине ташла-ташла пырса çапӑнаççӗ». Хирӗç тӑру хӗрсе пырать, вӑрçӑ-харçӑ тапранас вӑхӑт çитет. Штанаш каччисене хирӗç пыракан Митюк çав хушӑрах Шерхуллана та куçран вӗçертмест. Лешӗ тарнине курсан ӑна çапла каласа хӑвалать: «Çав хӑямат тутарне тытӑр, Шерхуллана тытӑр».

Хӑй епле тарнине калавçӑ сӑнарлӑн, хайла стилӗпе каласа парать: «Эпӗ хӑпӑл-хапӑл, часрах картана тытрӑм та чӗвӗнтӗм карта урлӑ пахчана.

Хытӑ сикнипе, карти те çӳллӗ те, ман пуçри тӳпеттей хӑта картишне пуçран хывӑнса ӳкрӗ юлчӗ.

Тӳпеттей тарам, тăрса юлтăр тесе, пахчаран итеме, итемрен ял хыçĕпе каялла пăха-пăха таратăп.

Уя тухрăм. Хĕвел анасси чылай. Уй урлă, çырмасем урлă тӳрех, кĕтӳ яриччен çитес тесе, ярăнтартăм».

Хайлав çакăнпа кăна вĕçленнĕ пулсан вăл тап-таса приключениллĕ, çав хушăрах ăшăх шухăшлă калав пулса юлатчĕ. Автор тĕллевĕ урăхла: вăл тĕп шухăша палт! тепĕр май çавăрса хурать. Акă тепĕр ир «хĕвел сап-сарă кулса тухать». Тимлĕрех пăхать те Шерхулла хăйĕн патне Митюк арăмĕ «кула-кула пăхса» (каллех юратуллă танлаштару) пынине курать. Лешĕ хĕвĕнчен (чĕре çумĕнчен!) çухалнă тӳпеттейне кăларса тыттарать Шерхуллана, çапла вăрттăн сăмахсем калать: «Ăна Митюкран вăрттăн, вăл курасран каçхине Штанашран хĕве чиксе таврăнтăм».

Хĕвел çутине (илеме, савăнăçа) тӳсме пултарайман çĕр шăтăкĕнчи тискер кайăк пек упăшки (ахальтен мар вăл Юс Митюкĕ) туйран килнĕ чух арăмне çапса пĕтернĕ иккен. Шерхулла Наçтаça кĕр çитсен хăйĕнпе пыма çапла каласа чĕнет:

«– Тĕнче аслă... Пĕр-пĕр çĕре кĕтĕве кайса кĕрĕшĕпĕр те... Халĕ кĕтӳçсене те пурăнма лайăх-çке. Совет пулăшать пире. Кĕтӳç, патрак, чухăн, вăтам, пролетари аллинче хальхи пурнăç, хальхи самана пирте, тĕнче пурнăçĕн хăлăпне тытатпăр ĕнтĕ эпĕр хамăр».

Хĕрарăм тĕнче касса çӳреме килĕшмест, хăйĕн пĕчĕк ачине шеллет вăл. Ман шутпа, ку вăл савнă çыннине кӳрентерес мар тесе тупнă сăлтав кăна. Тĕрĕссипе Наçтаça килсĕр-çуртсăр, тĕнче касса çӳремелле пулни хăратать. Вăл ял кĕтӳçи «тĕнче пурнăçĕн хăлăпне» нихçан та тытаймасса пĕлет. И. Тăхти кунта калавçа юри хăпартлантарса тата çурма официаллă, Наçтаça килĕшмелле мар каластарнă. Шерхулла хăй каланине хăй те ĕненсе çитерменни сисĕнет. Вăл калав тăршшĕпех хайла мелĕпе çавăрттаратчĕ сăмаха. Яш кĕтӳçĕ Наçтаça юлашкинчен калани «Иптеш» калаври Тăхтапи

сăмахĕсемпе пĕрешкелех, уншăн ют сăмахсем, официаллă пичетри сăмахсем. Çапла калани хыçĕнче авторăн иронийĕ тăрать. Вăл сăмахăн чăн пĕлтерĕшне йӳнетсе ярать, кулăша кăларать. Çав ироние тарăн вулавçă кăна туйса илме пултарать.

Хайхи нихçан та аптраман, туйсенче юрласа ташлама пултаракан Шерхуллан курăнман синкерлĕхĕ çывхарни курăнса каять. Кашнин (кулюкка-кăвакарчăнсен те) мăшăрĕ, ачи-пăчи, тăван кил ăшши пур. Наçтаçшăн та хакли пур – çитĕнекен ачи. Шерхулла кĕтӳçĕн вара шлепкипе тӳпеттейсĕр пуçне урăх нимĕн те çук. Çав хушăрах хăйне «тĕнче пурнăçĕн хăлăпне» тытатăп тесе ĕненсе пурăнать вăл. Мĕншĕн 20-мĕш çулсенчи ял чухăнĕсен, комбед çыннисен чăн-чăн сăнарĕ теес мар ăна?

Çапла вуланать паянхи кун «Шерхулла» калав. Унти ирони пытарăнчăк, ăна ансатрах вулавçă туймасан та пултарать. Тĕслĕхшĕн 1937 çулта пичетленнĕ «Сиенлĕ калавсен сборникĕ» статьяри (авторĕ Н.Степанов) çак йĕркесене илсе пăхар-ха:

«Шерхулла вăл – кĕтӳç ячĕ. Калава кĕтӳç хăй каласа панă пек туса çырнă. Калавăн малтанхи 14 страницине вуласан, калаври ĕç Октябрьти Аслă революциччен нумай малтан пулнăн туйăнать, анчах юлашки 15-мĕш страницинче автор «Совет пулăшать пире» тесе хурсан, вулакан шалтах пăтранса тĕлĕнсе каять, мĕншĕн тесен калавра совет тапхăрĕнчи пурнăçăн тĕпренчĕкĕ те çук.

Калав тăрăх, Шерхулла кĕтӳç питĕ чыслă çын, ялти ĕçкĕ-çикĕ, чӳк пăтти таврашĕ унсăр çимеççĕ. Калав тăршшĕпех кĕтӳçĕн хаваслă, илемлĕ пурнăçĕ шерепеленет, вăл пуян туйне хисеплĕ хăна пулса каять. Тăхти шучĕпе, эксплуатацилекен классен юлашки (кулаксем) ялти пролетариатпа – кĕтӳçсемпе, батраксемпе – хăш вăхăтранпа пуян туйне каймаллах туслашнă-ши? Тĕрĕссипе кулак килĕнче кĕтӳç нихăçан та чыслă хăна пулман, пулма та пултарайман. Кĕтӳçе хисеплесе туя чĕнме мар, «туй илемне пăсатăн» тесе

пуянсен туйĕн яхăнне те яман. Анчах Тăхти тӳрĕ ĕçлесен кĕтӳç те пуян килĕнче чыслă та хисеплĕ пулма пултарать тесе вĕрентет.

Тата çак калавра автор те кĕтӳç пурнăçĕ çинчен, те туй çинчен çырнă? Уйăрса илме хĕн...» (Сунтал. 1937. 12 №).

Çак критик ансат вулавçă кăна мар, вăл чи малтан политика хуралçи пулни, илемлĕ текста пачах та ăнланма пултарайманни курăнать. Ун йышшисем Тăхти иронине туймаççĕ, каланă сăмаха тӳррĕн кăна ăнланаççĕ. Çав хушăрах хаклавра тĕрĕс асăрханă вырăнсем те çук мар. Хăйĕн «Самана» сăввинче (1917) çыравçă ял халăхĕ пуяннипе чухăнни çине мар, куштаннипе мĕскĕнни çине уйрăлса кайнине палăртать. Чухăнлăх ытларах чухне кахаллăхпа тата ĕçкĕ-çикĕпе çыхăнни çинчен те пĕрре кăна мар çырнă вăл. Эппин, Шерхулла кĕтӳçе хисеплĕ çын пек кăтартнине ĕненме пулать. Вăл пачах та мĕскĕн мар, куштан теме те çук ăна.

И. Тăхти хăйĕн хайлавĕсенче чăваш тĕнчине, унăн наци характерне кăтартас тĕллеве сюжет-фабула йĕрлессинчен маларах лартать. Ку тĕлĕшрен унăн «Çиçĕм çăмахĕ» калавĕ (1927) питех те курăмлă. Унти харкамçăсен тĕнчи – вĕренмен чăваш хресченĕн пурнăçĕ-шухăшлавĕ. Вăл çут çанталăк илемне туять, сăмах-çăвартан та, çи-пуçран та тирпейлĕ. Çав хушăрах, хăй тĕнчинчен тухса курманскер, ытти хула-çĕрсем пирки сахал чухлать. Унăн шухăшлавĕпе, апат таврашĕ вут çулăмĕ çинче кăна пиçме пултарать, электричество тенине вĕсем çунакан вутăн (вăл кăмака вучахĕнче çунать, тĕтĕм-сĕрĕм кăларать, савăт-сапана хăрăмлать) кăна курма пултараççĕ. Çапах та çакăн йышши калавсем мар палăртаççĕ Тăхтин тăхтилĕхне.

«Матюк аппа» хайлав (1927) малтанласа 1930 çулта «Калавсемпе сăвăсем» кĕнекере пичетленнĕ, ăна унта «çырса пĕтермен повесть» тесе кăтартнă. Автор хăй хайлавĕн ал çырăвĕнче «повесть пуçламăшĕ» тенĕ.

Çийĕнчех ыйту çуралать: мĕншĕн çырса пĕтереймен-ши автор çак пĕр пуçланă хайлава? Унăн малалла ĕçлемелли планĕ те пулнă-çке?

Хуравне шыриччен çав планпа паллашар-ха: «20. Х. 27. Çак шыв тăрăх ансан, пĕр-пĕр яла тухăпăр-ши? Утатпăр шыв тăрăх. 1. Делают сулă. 2. Беседа их на сулă о том, куда они выйдут. 3. Увидели Матюк аппа на скале. 4. Неожиданная буря при подӳезде к ней – на близком расстоянии. 5. Дикие звери, водяные. «Усал шывра та пур-мĕн». Буря, напряжение. Я не умею плавать – йысна умеет. 6. Страшное напряжение. 7. Просыпается от сна. Разговор с отцом. 8. 2–3 дня проходят. 9. Получают письмо. 10. Содержание письма. 11. Ответное письмо и т.д. 12. И конец».

Хайлавăн пичетленнĕ пайĕнче çапларах ĕçсем пулса иртеççĕ: Тăхти ятлă калавçă кил-йышĕпе пĕрле çывăрма выртать те тĕлĕк курма пуçлать. Вăл тискер кайăклă темле сĕм вăрманта пек, пĕчченех пек. Пĕр тигр çăварĕнче çын кăшкăрнине курах каять çакă. Лешĕ харкамçăн Шăнчасри Макçăм йыснăшĕ иккен. Икĕ аллине икĕ пуртă тытнă хăй. Хайхи Тăхти йыснăшне хăтарать те вĕсем пĕр чăпар кайăк кăтартнипе пысăк шыв патне çитсе тухаççĕ, сулă туса анаталла анма шутлаççĕ. Çакăнпа вĕçленет пичетленнĕ текст. Ку пайра çырни планăн чи малтанхи пункчĕпе (сулă тăваççĕ) вĕçленет.

И. Тăхтин уйрăм упранакан тата тĕрлĕ ятпа пичетленнĕ икĕ калав («Йысна!», «Салам») пур, вĕсене иккĕшне те хире-хирĕç янă çырусем пек йĕркеленĕ: пĕрремĕшне Тăхти ятлă калавçă Çĕпĕрти йыснăшĕпе аппăшĕ патне янă, иккĕмĕшне инçетри тăванĕсем хуравласа çырнă. Çак кĕнекере уйрăм ятсемпе вырнаçтарнă текстсем «Матюк аппа» хайлавăн вĕçĕ пулни иккĕленӳсĕр. Малтанхи план улшăнни лайăхах сисĕнет кунта (çырăвĕсене Тăхти тĕлĕк курнă хыççăн темиçе кунран мар, тăватă çул хыççăн тин çырнă). Çак улшăну авторăн ăспа йĕркеленнĕ шухăш тытăвĕ (замысел) ăша хыву (воплощение) пулса çитейменнине кăтартса парать. Çыравçă малтан ăспа йĕркеленĕ плана çырнă чух пăхăнманни (тен, пăхăнма пултарайманни?) «Элихун», «Выçлăх çул» поэмăсене, чылай калава хайланă чух курăнать. Уйрăмах калăпăшĕ пысăкрах пулмалли хайлавсене вĕçлесе çитереймест çыравçă. Тен, çав текстсем хăйсем ниепле те вĕçленеймеççĕ И.Тăхтин? Вĕсенче тĕпре сюжет-фабула йĕркелесси тăмасть-çке?

«Матюк аппа» патне таврăнар-ха. Тĕлĕкри ĕç-пуç фантастикăллă, асамлă юмахсенчи пек. Вулавçă фабула йĕрленинчен ытларах калавçă çăварĕнчен тухакан сăмах ăнсăртлăхне е вăл ытти сăмахсемпе еплерех çыпăçса пынине сăнать, унăн сăнарне калăплать. Сăмахĕ вара пăлт та палт! çаврăнать, харкамçăсене тĕрлĕ енчен курма пулăшать. Тăхтипе унăн йыснăшĕ – хăйсем пурăнакан вырăнтан инçех çӳресе курманскерсем, вĕсен тĕнчи – вĕренмен чăваш хресченĕн тĕнчи, унăн кăмăл-сипечĕ, пурăнăçĕ. Сулă туса тăван килне çитсе ӳкме ĕмĕтленекен йыснăшĕн авă еплерех оптимизм тапса тăрать:

«– Ан кулян, пирĕн çул уçă. Çак аслă шыв пирĕн çул пулать. Иксĕмĕре икĕ пуртă пур пирĕн. Йывăçсем те пур кунта. Йывăç касса, çак тымарсемпе çыха-çыха сул пĕрени пек тăвăпăр. Сул пĕрени çине ларса шыва майăн кайăпăр. Тен, Атăл хĕрне, Куславкканах тухăпăр. Сул пĕренине Куславкка вырăсĕсене сутăпăр, сутса пĕтерейменнине Петрав вырăса парăпăр. Куславккара, Сапронин лавккинче, Матюк аппу валли шурă тутăр илесчĕ-ха, – тет йысна».

Йыснăшĕн ăсĕнчен тĕлĕннĕ Тăхти те пĕрене сутнă укçапа арăмĕ валли сарă тутăр, амăшĕ валли шурă тутăр, ашшĕ валли хура карттус туянма ĕмĕтленет. Ку кăна мар-ха, сулă çине вăл килĕнчи мунча кăмаки валли чăмăр чулсем те хурать. Суя хутаççи иксĕлми Тăхтин. Вăл йыснăшне чулсенчен сысна апачĕ хумалли такана тума шутланине пĕлтерсен, лешĕ ĕненмесессĕн те ăшшăн çапла хуравлать: «Тискер вăрмантан иксĕмĕр пĕрле çăлăнса тухрăмăр, чăпар кайăк та ырă кăмăллă пулчĕ те, эпир çӳрес çул, пĕлме çук, вăрăм-и, тен, çавăнпа пĕр-пĕрин сăмахне тиркешлес мар, ырă кăмăлпа мĕн каланă, çавă пултăр, – тет Макçăм йысна ман çине ăшшăн пăхса».

Йыснăшĕ сулă хӳри тăвас тесессĕнех харкамçăн шухăшĕ тепĕр çулпа чупма пуçлать, калаçăва пурнăç, çынсен хушшинчи хутшăну енне çавăрса ярать (сулă хӳри – этем хӳри).

«– Юрать, йысна, сулă хӳри кирлĕ.

Этем йăхĕ хӳреллĕ ан пултăр. Кимĕ, прахут, сулă хӳресĕр шыв тăрăх çӳреймĕç; этем хӳреллĕ, этем тилĕ пек вăрăм хӳреллĕ пулсан, этемсем пĕр-пĕрин хӳрине тапта-тапта çынна такăнтарĕç».

Харкамçăн *шухăш юхăмĕ ирĕклĕ,* вăл *сăмахăн нумай пĕлтерĕшне* асăрхаса-палăртсах пырать. Кунта çирĕп логикăна пăхăнса пыракан калу мар, сăмах сăнарлăхне, ассоциацилĕхне, унăн хевтине хиврелетсе пыракан калу хуçаланать. Çав калу харкамçăн тĕнче курăмĕпе туйăмне калăплать.

Хайлав вĕçĕнче («Йысна!») хӳре мотивĕ тепĕр хут тĕл пулать. Апла-капла кукăрткаласа çырнă çырăвĕнчи чăваш сас паллийĕсенче те харкамçă пурнăç ӳкерчĕкне курать: «Хӳреллĕ, чăвашла сас паллисен хӳрисем ытла кукăр-макăр, йытă хӳри пек пулаççĕ пулсан та ман кăмăл хӳреллĕ маррине эсир çапах чухлатăр ĕнтĕ...

Хăш-хăш сас паллисем, тăрне калпак лартнисем, кĕвĕç, выçă, çăтă куштан Хветĕр пилĕкне тытса, калпакне чалăш лартса пирĕн умран иртсе кайнă пекех пулаççĕ те, сас паллисем апла пулсан та, манăн кăмăл шур хут пек шурă иккенне пирĕн йыснапа аппа сисĕç-ха...»

Харкамçă сăмах çавăрттарнă, «сӳпĕлтетнĕ» хушăрах пурнăç йĕрки-тытăмĕ пирки те шухăшлать: «Çапла ĕнтĕ вăл пурнăç – пĕри вилет, тепри чĕрĕлет, ӳсет, çӳрет... Тем чул пуян, куштан, чаплă çын пулсан та вилĕмрен хăтăлни никам та çук»; «Çынтан мала иртес мар, çынтан кая юлас мар, виçеллĕрех пурăнас пурнăçа; алла пилĕке тытса çӳрес мар, пĕççе явса ларас мар тесе шухăшлатăп эпĕ».

Халĕ Çĕпĕртен янă çырăва («Салам») пăхса тухар. Чи пуçламăшĕнче калавçă хыпар илни çинчен çапла пĕлтерет:

«Пирĕн йысна-аппа Çĕпĕре кайнă.

Çав аппапа йысна пĕр кунах писме янăччĕ.

Йысна та Çĕпĕртен çыру ячĕ пире. Виçĕм кун илтĕмĕр йысна çырăвне.

Йыснасен писмине илнĕ кун, каçхине, ĕне те пăруласа пачĕ пирĕн.

Çавăнтанпа ĕнтĕ икĕ хут уйран уçласа çирĕмĕр.

Ăш витере пăртак пăтратса паратпăр та, пăрушĕ валли те, хамăр валли те, хăй начар пулин те, уйранлăх сĕт антарать пирĕн ĕне.

Пăтăпа уйран сыпа-сыпа çиме пит уçă вара».

Çыру илни çинчен пĕлтерме пуçтарăннă калавçă (вăл автор мар) ăçта кăна çитсе перĕнмерĕ: ĕне пăрулани, уйран уçласа çини, ĕне сĕт антарни çинчен каласа пачĕ вăл вулавçа. Çыру хутаççи (конверчĕ) пирки те калама ӳркенмест калавçă: вăл шап-шурă, çапах та çул çинче кăштах лапăртаннă иккен. Çавăра-çавăра пăхать те хаклать калавçă çав çырăва, çав хушăрах унта мĕн çырнине пĕлтерме васкамасть-ха. Çакă вара авторшăн çырура пĕлтерни мар, калавçа, унăн пуплевĕ-шухăшлавне кăтартасси хаклă пулни çинчен калать.

Çырăвĕнче йыснăшĕсем колхоз йĕркелени, тасатнă вăрлăх акни, куштан Хĕветĕр ывăлĕнчен хăрама кирлĕ марри çинчен тенденцилле куçпа пăхса каланă. Çыру ун чухнехи хаçатсен чĕлхипе вĕçленет: «Совет влаçĕ куштан Хĕветĕрсене кăна мар, Шаккура та чарнă.

Совет влаçĕ хăватĕнчен Чемберленсем те чĕтрене ернĕ».

Çак сăмахсене калав авторĕ мар, унти харкамçă (тĕлĕкре аташса çӳрекен Тăхти йыснăшĕ) каланине манмалла мар. Айванрах вулавçăшăн (критиксемшĕн те) кунта нимĕнле уйрăмлăх та çук пек. Ăша хывнин ансат модельне йĕркелесе, *суя автор сăнарне* калăпласа И.Тăхти: 1) ансат (тенденциллĕ) вулавça çырлахтарать; 2) хайлавăн чăн хаклăхне тарăн вулавçă валли йĕркесем хыçне пытарать; 3) хайлаври шухăша темиçе сийлĕ тăвать.

Хăшĕсем И.Тăхтин илемлĕ хайлавĕсенчи суя тенденцилĕхе (чылай чухне автор çав идейăсене профанацилет, юрăхсăра кăларать) публицистикăлăх пек кураççĕ. «Матюк аппари» харкамçăн маларах илсе кăтартнă сăмахĕсене те çав куçпа пăхса хаклама пулать. Юнашар тăракан абзаца вулатăн та çав уççăн каланă публицистикăллă шухăш сĕвĕрĕлет каять. «Чупрăм-чупрăм – çитеймерĕм, хăва çатан урлă каçаймарăм; çыртăм-çыртăм – сăмах вĕçне тупаймарăм, *хам чĕрери шухăша пĕлтереймерĕм* (палăртни манăн. – *В.Р.*)», –

хăй маларах каланинче чĕрери шухăшĕ çуккине систерет автор харкамçă урлă.

Тăхти хăйĕн хайлавĕсенче каласа памасть, каласа *кăтартать*. Кунта та çавнашкал: автор пире чăваш çыннин тĕнчине илсе кĕрет, унăн хăй евĕрлĕхне кăтартать. Çак тĕллеве пурнăçланă чухне хайлава тĕрлĕ вырăнта вĕçлеме пулать, вĕçĕ-хĕррисĕр çырса кайсан та унта кăтартнă çын типĕ (вăл индивид палли мар, ушкăн палли) улшăнмасть. Акă мĕнле ăнлантармалла Тăхти хайлавĕсем вĕçленменнине (вĕсем вĕçленме пултараймаççĕ те).

«Сĕр. Пĕр. Сам. Канур» (1928–1929). Хайлав малтанласа И.Тăхтин «Калавсем» кĕнекинче (1930) кун çути курнă. 1979 çулта тухнă кăларăма ăна кĕртмен, «унта тĕл-тĕл вирьялсен каласăвне анатрисенчен кĕçĕне хурса тăрăхлани сисĕнет» тесе асăрхаттарни кăна пур.

Хайлава калавçă ячĕпе çырнă. Вăл анатри чăваш иккен, хăйне пуклак чĕлхеллĕ те катăк тăн-пуçлă çын вырăнне лартать:

«Катăкрах çав эпĕ. Çавăнпа пуль, ни анатри чăвашсем, ни тури чăвашсем, вирьялсем, эпĕ çырнă пеккине пит вуланиех туйăнмасть.

Çынсем каласаççĕ, пуплеççĕ, сăмахлаççĕ, çынсем çыраççĕ – çăкăр çине пылпа çу сĕрсе çинĕ пек, пĕр стакан чей çине икĕ кашăк сахăр, виçĕ кашăк хăйма ярса ĕçнĕ пек тутлă пулать вара çынсен çыру-сăмах таврашĕ. Ман сăмах-çыру унашкал пулас çук çав. Хам çара пуç, кукша эпĕ, ман çыру-сăмах-юмах та кукша-çке ĕнтĕ, мĕскĕн пулать çав ман çыру-пуплев».

Çак калавçă-харкамçă ыттисен ырă кăмăллă каласăвне итлесен, вĕсен вырнаçуллă çырнисене вуласан кĕвĕçӳпе тулса ларать иккен. Пурне те ярса илме хапсăннăран вăл урамăн пĕр енĕпе хăй, тепĕр енĕпе вара арăмне уттарать: «Çапла вара, пĕр вăхăтлăха та пулин, арăмпа иксĕмĕр аслă урама хамăр алра тытрăмăр çав».

Çак «ыйăхлă, наян, ӳркенчĕк, кахал ятне кăна илтнĕскер», малтан анатриллерех çыркаланăскер, турисемле çырсан хăйне вулама пуçламĕç-ши

тесе шухăшлать. Пуçлать хайхи сăмаха хуçкалама, аса илӳ çумне аса илӳ çыхма. Унччен çапла тав тăвать:

«Нурăс, Çавал, Хучаш, Выл, Сăр, Турат, Ункă, Пошкăрт таврашĕнче ĕлĕк ман маçак пулă сутса çӳренĕ, вирьялсен çăкăр-тăварне ман асатте нумай çинĕ. Вирьял юлташсем! Ман маçака çитарнă çăкăр-тăваршăн тавтапуç, тавсе сире.

Хам ача чухне, унта-кунта сĕтĕрĕнсе çӳренĕ чухне, Кĕтне, Пăла, Сĕве, Атăл тăрăх çӳренĕ чухне анатри чăвашсен çăкăр-тăварне эпĕ çимен мар, çинĕ – анатри чăвашсен сĕтел хушшинче ларнă эпĕ, тавсе сире, анатри чăвашсем, сĕтел хушшине лартса мана апатлантарнăшăн».

Калавçă автор ирĕкĕнчен тухать пек: пĕрре хĕвел ăшши çинчен («анатрисене, вирьялсене – кама ăшшăнтарах пăхать-ши çав хĕвел»), тепре çав ăшăра çара пуç çӳресе хăйĕн ăс-хакне ӳстересси çинчен пакăлтатать вăл. Сăмах йĕркине çухатнă калавçă вылясах каять: «Пĕтрĕм поль, çухалтăм поль, аташрăм поль, кокшă пуçра ман шанчăк çок, сăмахсен тилкепи ман алыран тохса ӳкрĕ полас, мин тувас-хе».

Уйрăм вырăсларах каланă сăмахсем хыççăн калавçă тепĕр майлă хуçкаланать: «Итак, значит, значит, я продолжаю анатрилле çырма».

Мĕнле çынна сăнарланă кунта И.Тăхти? Вирьял каласăвĕнчен тăрăхлать-ши вăл? Мар, паллах. Кунта вăл чăваш çыннин пĕр типне ӳкерсе кăтартать. Çакă малалла çырнинче питĕ аван курăнса каять. Калавçă ирсерен, серте-çăмах яшкине «тин уçланă уйранпа сыпа-сыпа» çисе тăрансан, арăмне темиçе чĕлхепе тав тума манса каймасть: «хăйпăт хатынăм – дорогой карчăклар, тауссе синекке, милой мой шена». Мăшăрĕ вара çармăс акценчĕпе хуравлать.

Халь хайлав ятĕнчи сăмахсене аса илер. Литература чĕлхинче вĕсем Эсир, Эпир тата (Вĕ)сем тенипе тӳр килеççĕ. Чĕлхери тĕрлĕ калаçусене тата тĕрлĕ чĕлхесене асра тытса каламан-ши çапла? Илсе пăхар-ха Ахматулла эфенди пирки çырнă вырăна:

«Ахматулла асаттене пит юратнă, мĕншĕн тесен – потому что пирĕн асатте тутарла пит ăста, çыпăçуллă пупленĕ».

Аслашшĕ тутарла, мăнукĕ вара тутарла та, вырăсла та пĕлеççĕ-мĕн. Нумай чĕлхе пĕлни калуçă пачах та ухмах пулманнине кăтартса парать. Попугай ăна «дурак» тесе чĕнни те, вăл хăйне хăй тăтăшах хурлани те витерӳсĕр вулавçăшăн.

Тискер кайăк пахчинче (зоопаркра) çӳренине аса илет калавçă. Çав хушăрах сăмахне карчăкĕ çине куçарать:

«Тепĕр çын çĕлен-калтаран пĕртте хăрамасть те, эпĕ ачаранах çавнашкал питĕ хăравçă çын. Ман карчăк тăрс-тăрс утса çӳре пуçласанах халь те чĕтрене ереп вара эпĕ. (Карчăкăм утса çӳрекен вырăна юман хăмасене улăштарса çăка хăма, çичĕ хăма саваласа, якатса сартăм эпĕ пӳрт урайне. Çăка хăмасене хурăн савăлпа хытара-хытара савăлласа тухрăм, урай хăмисене лайăх хĕстертĕм, хытартăм та, ман çине çилленнĕ чухне хыттăн-хыттăн пусса утса ман карчăк çапах кисрентерет çав урайне, карчăкăм утса çӳренипе ман хавшак чĕрем ăвăс çулçи пек лăстăртатса силленет вара. Сӳс тăлă шĕвтерсе ик урине тăлласан та хыттăн-хыттăн сиксе утса мана хăратма пăрахмĕ çав ман карчăкăм. Пурнан ĕмĕрте, хам ухмах пирки, эпĕ çапла та шухăшласа пăхнă çав. Хам карчăк, хĕрарăм çинчен апла-капла шухăшланăшăн хальхи саккун ĕнтĕ каçартăрччĕ мана)».

Çак абзац автора мĕншĕн кирлĕ пулнă-ши? Калавçă шухăша кăтартса уçăмлатма (хăй читлĕхри çĕлентен хăранине сăлтавласа çырни) кăмăлланине ӳкерес тĕллевпе кĕртнĕ-ши ăна? Тен, калавçă хăйне саккуна пăхăнакан çын пек кăтартасшăн пулни кирлĕрех автора? Çапла шухăшлама тепĕр абзацри çак сăмахсем май параççĕ:

«Сывă пул, ăслă пул, пысăк пул, куштан пул, ял пуç пул, стришна* пул, пуян пул тесе анне мана пĕчĕккĕ чухне маннă пашалу, пиçмен, тачка çăкăр çитермен: çăкăр, кукăль сăмси, çăмарта хĕрли çитеретчĕ те, çапах ăслă, пысăк пулаймарăм, ял пуç, куштан, вăйлă пулаймарăм, стришна пулса икĕ лашапа

çӳреймерĕм, пуян, стришна пулнă пулсан, мана колос лишить тăватчĕç ĕнтĕ хальхи саккунпа».

Халĕ калавçă аслашшĕнчен тигр-арăслан таврашĕ мĕншĕн хаяр тата вăйлă пулни пирки ыйтнине аса илер. Çав «тискер кайăксем ирĕкре, вăрманта пурăнаççĕ, тем те пĕр çиеççĕ. Çавăнпа вĕсем вăйлă; сывă пулсан хаярланма та, куштанланма та пулать вара».

Сывă, вăйлă çынсем куштанланма пултараççĕ, пуян, ăслă пулаççĕ тенипе пĕр килмест-и çакă? Канур ятлă çын та витаминлă апат çинĕрен паттăра тухнă иккен. Паллах, калавçă вулавçăсене пахча çимĕç ытларах лартма чĕнсе çырни тĕп шухăш мар кунта. Вăл çиелте выртакан, ансат вулавçă ячĕпе калани кăна. Калавçă хăй те ăслă-тăнлă çынах, вăл калас тенине юри уçăмсăрлатса пытарать, ухмаха перет. Ача чухне ăна попугай «ухмах» тесессĕнех вăл çав кайăка «чăмăрласа кăтартнă». Кайран (ватлăхра-ши, совет саманинче-ши?) кăна вăл саккун пăсасран кăна мар, арăмĕн уттинчен те шикленме пуçлать. Е çапла çырса шăнман пăр çине лартать-ши вăл вулавça? Чăмăр кăтартса мар, ухмаха персе те чееленсе пурăнма вĕреннĕ иккен çав калавçă. Акă мĕнле чăваш типне калăпланă кунта И.Тăхти.

1931–1937 çулсенчи пултарулăхĕ. И.Тăхтишĕн çак тапхăр чи йывăрри тата асапли пулнă. Пĕр енчен, литературăри цензура пăркăчне хытарса çитернĕ, çавна пула ирĕклĕрех çырнă калавĕсене пачах та пичетлеме май килмен. Тепĕр енчен, çыравçăн сывлăхĕ çулсерен хавшаса пынă. Вăл хăй нумаях пурăнаймасса туйса тăнă. 1935 çулхи çурла уйăхĕнче черетлĕ сывалу хыççăн И.Тăхти утмăл килограмм тайнă пулсан, 1937 çулхи ака уйăхĕнче 45,7 килограма çитиччен чакнă.

1936 çулхи кĕркунне И.Тăхтине Тутарстанăн Аксу, Элкей тата ытти районĕсене халăх юрри-сăмахĕсене пухма яраççĕ. Çакăн çинчен вăл В.Толстов-Атнарский патне янă çырăвĕнче (5.12.1936) çапла пĕлтерет: «Кĕркунне, йĕпе-сапара, уйăх хушши çул çӳресси çăмăлах мар ĕнтĕ чирлĕ çынна. Уна эсир, Валериан Григорьевич, лайăх пĕлетĕр. Чăвашла сăмах пур вара вăл – шăла çыртса-тӳссе çӳрерĕм çав тесе калама юрать пуль ун çинчен.

Тепле тӳсрӗм вара. Хам та шухăшлап кайран. Тӳсесех тесен этем пит нумай тӳсме пултарать пуль çав тесе шухăшлатăп. Чăтăм пулсан, пит часах аптрамасть, тен, вăл çын. Чăтăмлă çын вăл теççĕ вара хăш-хăш çын çинчен <...> Çул çӳресси çăмăл мар ват çынна, чирлĕ çынна...»

Н.Шупуççынни çамрăк чухне вĕрентекен пулса ĕçленĕ тăрăхра çӳресе И.Тăхти нумай сăвă-юрă çырса илет. Çав юрăсенчен пĕрне икĕ чăваш сăвăçĕ, Н.Романов аса илнĕ тăрăх, ыталашсах юрланă иккен. Сăмахĕсем вара мĕн пуласса сиссе юрланăскерсем, Турă пӳрнине палăртаканскерсемех-мĕн:

Хура вăрман çийĕ шап-шур тĕтре,
Тата мĕн çăвасси юлнă-ши?
Çамрăках пуçăм, айван чунçăм,
Тата мĕн курасси юлнă-ши?
Хура вăрман çийĕ шап-шур тĕтре,
Шап-шур пулсан та мамăк мар.
Ăçта çитсессĕн та пĕр хĕвел,
Çакă çутă тĕнче тамăк мар.
Хура вăрман çийĕ пит тикĕс,
Кăçал акса тунă кантăр пек.
Уйăрлатпăр, тăван, уйăрлатпăр
Кантăр çинчен пуса татнă пек.

Кĕçех Н. Шупуççыннине арестлеççĕ, И. Тăхти юлашки кунĕсене пурăнса ирттерет. Çĕре кĕриччен уйăх маларах, «Сунталăн» 9-мĕш номерне аллине илсен, хăй çинчен çырнине вуласан çыравçă мĕн шухăшланине эпир нихăçан та пĕлеймĕпĕр ĕнтĕ. НКВД следователĕсен хучĕсене тĕпе хурса çырнă статьяра («Халăх тăшманĕсене тĕпĕ-тымарĕпех кăкласа çĕмĕрсе тăкар») И. Тăхти çинчен çапла çырнă пулнă: «Тилĕ пек чееcкер, кушак пек йăпăлтискер, вăл «Шерхулла» калавсен кĕнекинче ĕлĕкхи чăваш ялне совет вăхăтĕнчи чăваш ялĕ туса кăтартать. «Нянине, паппине» «поэминче» фашистсем килесси çинчен тĕлленет, тăшман чĕлхипе чăваш халăхĕ çинчен, унăн

çыруçисем çинчен тӳсме çук мăшкăлла чĕлхепе çырать. «Поэмăн» пайĕсене иртнĕ çулта пичетленĕскер, вăл юлашки пайне редакцинчен илсе тухса тарма ĕлкĕрнĕ. Çапла тепĕр пытанса юлнă тăшманăн сăн-пичĕ».

Çапла лару-тăрура çĕре кĕнĕ И. Тăхти.

1927 çулхи ака уйăхĕнче çырнă хучĕсем хушшинче çыравçăн *чĕрĕ тип* (живой тип) тесе палăртни пур. Çав тип психологи тĕлĕшĕнчен кăна мар, пуплев-калу енчен те кăтартуллă пулма пултарать. И. Тăхтин стилĕ çырура та (маларах илсе кăтартнă çырăва аса илĕр) вăйлах палăрать. 1935 çулта «Колчак» ятлă кĕнеки тухсан çыравçă унти çитменлĕхсене асăрхаса вĕсем çинчен хаçат урлă пĕлтерме шухăш тытать. «Кĕнеке çырас ĕçе çыраканни витĕр чухлайман пирки, тĕрлĕ çĕрте авторăн тăн çитмен майĕпе, унта-кунта йăнăшсем пулнă вăл кĕнекере», – пуçлать И.Тăхти хăйĕн çырăвне. Редакци асăрхаттарăвĕ пирки çапла йĕплет вăл: «10-мĕш енче паллă туса çырни пур: «Качча кайнă хĕрĕн хăйматлăх ашшĕне ун упăшки вăртах тет» тенĕ. *Хăйматлăхпа вăртах* пĕр сăмах-ши вара?! Харпăр хăй сăн-пуçне çухатса хăçан пĕр çĕре çăрăнса кайнă-ши вара вăл сăмахсем?! Çăмахпа пашалу иккĕш те пĕр япалах-çке тенĕ пекле пулмас-ши апла вăл. Унашкал «чаплă сăмах-йăмаха» ăнланма хамăн та тăн çитеймес-çке те...»

Ухмаха пени çех мар кунта, ытларах кĕнекери ăнлантарăва çыраканĕнчен кулса тăрăхлани сисĕнет. Калавсенче те çаплах: ухмах супаканĕ пĕртен-пĕр калавçă кăна, авторĕ вара иронилет, калавçăн шухăшне пач хирĕçле çавăрса хурать.

«Парăм – 777 тенкĕ» калав (1931) И.Тăхтин стилĕ аталанса пынине кăтартать. Унти калавçă юри ухмаха пемест темелле, вăл хăйне пачах та мĕскĕнлетмест. Пурнăçри пур ĕçе-пуçа çавскер укçа çине куçарать, вăтăр çул хушшинче кама миçе тенкĕлĕх парăма кĕнине «учета илсех» шутлать. Авă амăшĕн варĕнче тăхăр уйăх пулнине те, хăйне сăпкара сиктерсе ăна чăрмантарнине те шута илнĕ ĕнтĕ калавçă. «Индивидуаллă пурнăçпа пурăнса пулнă парăмсем» тет вĕсене çак харкамçă.

Халĕ парăмсен хуçи пĕрлешӳллĕ хуçалăха кĕнĕ, «малашне ман пурнăç та зажиточнăй пулать» тесе ĕмĕтленет вăл. Кунти автор иронийĕ харкамçă сăмахĕсене юрăхсăра кăларать. «Çав асăннă парăмсене пятилеткăра пара-пара татапах ĕнтĕ» тени вара «*колхоз*» ăнлава кăна мар, «*пятилетка*» сăмаха та йӳнетсе ярать, мĕншĕн тесен вĕсене пурнăçра юратупа тивĕç мĕн иккенне чухламан чурăс чĕреллĕ этем пекки калать.

Хайлаври шухăш яланхи пекех темиçе сийлĕ пулса тухнă. Калавçа ансат ăнланаканĕшĕн вăл çиелтех выртать. Тарăн шухăшĕ вара колхозсем тĕвĕлентернĕ вăхăтри чĕрĕ типа кăтартнинчен йĕркеленет. Вăл юратусăр, пархатарсăр ывăл. Мĕн пурне вăл укçа çине куçарса виçет те хаклать. Шăпах ун йышшисем планпа (пилĕк, вунă çуллăхсемпе) пурăнаççĕ те ĕнтĕ. Ку вăл текстран тухса, çав хушăрах хайлав авторĕн логикине аталантарса каланă шухăш.

«Помидор» калавăн пултарулăхлă историйĕ

Хайлава çырнă вăхăт. И.Тăхти ал çырăвĕсем тĕпрен илсен Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн (ЧПГĂИ) архивĕнче упранаççĕ. «Помидор» калавăн ал çырăвĕ те çавăнтах. Хальлĕхе хайлав пуçламăшĕн тăватă вариантне тупма май килчĕ. Вĕсенчен иккĕшне пачах та вĕçлемен, тепĕр иккĕшĕн пĕр вĕçĕ кăна иккен. Унта çапла çырса хуни пур: «1935-х». Ку ĕнтĕ хайлава çав çулта çырса пĕтернине пĕлтерет.

Икĕ вĕçленмен текста автор тĕрлĕ вăхăтра çырни иккĕленӳсĕр. Пĕрремĕшне (ВТ редакцие) И.Тăхти хăйĕн тăван ялĕнче пахча-çимĕç бригадин бригадирĕнче ĕçленĕ хыççăн (1933 çулта) хайланă тесе калама май пур. Çав варианта вăл бригадир отчечĕпе юнашарах, пĕр тĕслĕ чернилпах çырса кайнă. Текст вĕçĕнче урăх чернилпа «13.1.35 г. Чуварлей» тесе палăртнă. Çакна шута илсе çав вĕçленмен варианта автор 1934 çултан кая мар хайланă тесе çирĕплетмелле. Ку ал çыру – чи пĕрремĕш тулли мар вариант.

Тепĕр вĕçленмен вариантне (ВП редакцие) ыттисенчен каярах хайланă (1936 çултан мала мар). Çакна хут калăпăшĕнчен (çавăн йышши хут çине автор шăпах 1936 çулта çырнă) пĕлме пулать.

Çак вариантсене мĕне пула вĕçлесе çитерменни çинчен каярах калаçăпăр-ха. Хальлĕхе вара çакна палăртар: И.Тăхти хăйĕн «Помидор» хайлавĕн редакцийĕсене 1934–1936 çулсенче çырнă.

Калав варианчĕсем. Архивра хайлав пуçламăшĕнчен вĕçне çитичченех пĕр ал çырура упранмасть. Унăн малтанхи пĕр пайĕ (1–14 листисем) 7 управ единицинче (упр. ед.) икĕ вариант таранах пур. Пĕри 379–392, тепри 65–73 листасенче упранаççĕ. Кĕнекене 379–392 питсенчи вариант (редакци) кĕнĕ, вĕçĕнче Г.Юмарт (вăл 1979 çулта тухнă кĕнекене пухса кăлараканĕ) çапла палăртнă: «Малалли V, 208, 78–92 лл.» Кĕнекене мĕншĕн шăпах çак редакцие кĕртнине ниçта та ăнлантарман.

Текстологилле танлаштару çакна кăтартса пачĕ: хайлавăн пĕрремĕш тулли варианчĕ (ПТ редакцийĕ) 379–392 питсенче упранакан текст пулса тăрать. Унта туртса улăштарнă вырăнсене автор иккĕмĕш тулли вариантра (ИТ редакцире) юсанă пек çырса хунă е малтанхиллех çырни çумне çĕнĕ улшăнусем кĕртнĕ. Танлаштарса пăхар-ха (кайран хушнă е улăштарнă вырăнсене курсивпа палăртнă):

1. «Ерипе çапла калать ку çын: – Улю кин, ман килес! Кин, Улю кин! Эп килтĕм те-ха. Çывран пуль эс; ан хăра-ха, – тет» (379 л.).

2. «Ерипе чĕнет (*çапла калать* тенине туртса хунă) ку çын: – Ман килес, Улю кин. Кин, Улю кин. Эп килтĕм те-ха... Çывран пулĕ эс; ан хăра-ха *çĕрле килнĕрен* (манран тесе çырнă та туртса хунă), – тет *пӳрте кĕнĕ çын. Анчах ку çын сассине хирĕç тĕттĕм пӳртре никам та чĕнекен çук*» (65 л.).

1. «Çи-ха эс, тăранах çи, *çул çинче çӳрекен çыннăн хырăм выçать* (кайран хушса çырнă), – тет Улю хăй хăнине» (382 с.).

2. «Çи-ха эс, тăранах çи; çул çинче çӳрекен çыннăн хырăм выçать, – тет Улю хăй хăнине (66 л.).

Малтанхи тулли вариантăн юлашки страници çапла сăмахсемпе вĕçленет: «Унтан кайран Америке ытти çынсем те кая-кая курнă. Табака, помидора, çĕр улмине Америкрен илсе килнĕ» (392 л.).

Иккĕмĕш тулли вариантăн вĕçĕ чылай туллирех: «*Кристобальрен* кайран Америке ытти çынсем те кая-кая курнă. Табака, помидора, *паранка* Америкрен исе килнĕ, – *тет Улю хăни*.

Хайлавăн ПТ варианчĕ 14-мĕш листа варринче вĕçленет (392 л.). Çак хут листин тепĕр енче кăранташпа çырса хунă план пур. ИТ вариантăн юлашки питне вара вĕçне çитичченех çырса тултарнă (73 л.). Çак фактсем те икĕ редакцирен хăшĕ маларах, хăшĕ каярах çырăннине палăртма пулăшаççĕ.

Хайлавăн иккĕмĕш пайĕ пĕр вариантлă кăна. Ăна малтанхи пайăн иккĕмĕш варианчĕн тăсăмĕ тесе шутламалла. Хайхи пирĕн куç умне çапла ӳкерчĕк тухса тăрать: 1934 çулта И.Тăхти çыру формипе йĕркеленĕ калав хайлама пуçăнать, анчах та ăна малалла çырма чарăнать. Çав вăхăталлах вăл тулли вариантăн пĕрремĕш редакцине 14-мĕш пит таран çырса хурать. Çавăн чухнех е кăштах вăхăт иртсен автор малалла çырмалли планне палăртать, ăна юлашки страницăн тепĕр енне çырса хурать.

И.Тăхти хайлав патне тепĕр хут 1935 çулта таврăнни иккĕленӳсĕр. Çав çулхи хутсем хушшинче хайлавăн 18-мĕш листи упранса юлни те, унта калаври сăвăлла вырăнсене тĕрлĕ вариантпа çырни те çакăн çинченех çирĕплетеççĕ. «Тур, тур, помидор» сăввăн виççĕмĕш вариантне çырса хунă хутăн тепĕр енче Чăваш издательствин 1935 çулхи планне И.Тăхти хăйĕн «Калăпсăр хуçнă çăпата» ятлă кĕнекине кĕртме ыйтса çырни пур. «Помидор» калава та вăл унтах пичетлесе кăларасшăн пулнă-тăр.

Хайлавăн иккĕмĕш тулли вариантне И.Тăхти «Сунтал» журнал редакцине илсе кайнă пулас. Унăн пуçламăш страницинче çапла виза лартни пур: «Отпечатать на машинке в 3-х экземплярах, в «Сунтал» срочно. В.Алагер» (65 л.). Журналта пичетлеме май килменрен çыравçă хăйĕн калавне чăваш хаçатне илсе каять. Çакна упранса юлнă тепĕр хутран пĕлме пулать. Унта çапла виза лартнă: «Уважаемый тов. Тăхти! Ваш материал,

конечно, очень хороший. Но для газеты слишком большой, а помещать отрывками нет никакого смысла, ибо ценность материала теряется целиком, ибо помещать – займет примерно 15 номеров. Очень сожалею. П <нрзб>. 25.V.36 г.».

Палăртнă кĕнекине те кăлараймасть И.Тăхти. Пичет пуçĕнче тăракансене «Помидор» калав йышши хайлавсем мар, идеологи тĕлĕшĕнчен уçăмлă çырнисем кирлĕ пулнă. 1935 çулта И.Тăхтин «Колчакне» тепĕр хут пичетлеççĕ, çĕнĕ хайлавĕсене вара тиркесе тăкаççĕ.

Çав çулсенче «Помидор» калавăн нихăш вариантне те кун çути кăтартма май килмен. Кил-йышлă çын ют арăм патне кайнине çырса кăтартнишĕн мар, урăххишĕн тиркештернĕ çав хайлава. Иккĕмĕш тулли вариантри Ашак Иванĕ мĕн шутланине аса илер-ха: «Председатель пирĕн уншăн ал çупма те хушать-ха, те хушмас-ха». Ун чухнехи вăтам хресчен, класс кĕрешĕвĕн куçĕпе пăхсан, çапла сăмахсене калама пултарайманни кĕретĕнех курăнать. Çавăнпа та критик-редактор таврашĕ автора унти класс хирĕçĕвне уççăнрах кăтартма сĕнни иккĕленӳсĕр. Çапла сăлтавпа кăна ăнлантарма пулать «Помидорăн» вĕçленмен пĕр редакцийĕ (ăна эпир ВП редакци терĕмĕр) çуралнине.

Çак вариантăн пуçламăшĕ И.Тăхти хучĕсем хушшинче темиçе те тĕл пулать. Пĕр вырăнта тăватă йĕрке кăна: «Çĕрле, тĕттĕм. Çур çĕр çитет. Чылай выртса та Ашак Иванĕ çывраймарĕ. Ку тăруçăн ыйăх вĕçнĕ унăн шухăш пуснипе».

Тепĕр çĕрте çĕнĕрен пуçласа икĕ страница çурă çырса кайнă та каллех чарăннă. Виççĕмĕш хутĕнче вăл малтан çырнине якатса куçарса хунă, анчах та вĕçне çитичченех куçарса çитермен. Сăлтавĕ калава çĕнĕрен юсаса ăспа çырнинче пулас. Акă мĕнле юхăмпа кайнă унти калу:

«Çĕрле, тĕттĕм. Çур çĕр çитет пуль.

Чылай выртса та çывăраймарĕ Ашак Иванĕ. Шухăш пуснипе ку тăруçăн ыйăх вĕçнĕ унăн. Аптраса çитнĕ вăл – тем тумалла малашне.

Тухрĕ вăл итеме. Кĕчĕ арпалăха. Ларчĕ каска çине хӳме çумне таянса. Каска çине вырнаçарах ларчĕ, хӳме çумне лайăхрах сĕвенчĕ, ал сыппине пĕçĕ тĕлне туса аллине пĕççи çине хучĕ; пĕвне лăш ярса ларчĕ Иван.

* * *

Пулни, иртни, курни çинчен шухăшлать вăл.

Иван ашшĕ тăлăх ӳснĕ, чухăн пулнă.

Тӳрем çĕр, хăртнă, лайăх анасем кулак, куштансен аллинче пулнă. Тырă та ишĕлсе пулнă кулаксен, – тутă пурăннă куштан, кулаксем.

Ăçта çамка, хăяккăн, шырлан – çавă пулнă Ивансен çĕрĕ, чухăнсене тыттарнă унашкаллине. Тырă пулман Ивансен хăрăк çĕрте.

Улттăн пĕр тăван пулнă Ивансем: тăватă ывăл, икĕ хĕр.

Сивĕ, хура пӳртре выçă ларнисене аса илет Иван, – сăр-р çӳçенсе каять ун çан-çурăмĕ.

Çитĕннĕ вăхăтра урамра, вăйăра кулак ачи-пăчи Ивансене ум яман: хĕненĕ, чулпа вăркăнтарнă, йытăпа вĕслетнĕ, мăшкăллана. <...>

Куртăмăр ĕнтĕ: çак ВП редакцие (вăл калавăн пуçламăшĕ пек вуланать) автор «пуян-чухăн» хирĕçлеве тĕпе хурса çырма пуçланă, анчах та малаллине çырса кайма хал çитереймен. Çак йĕркесене хайлава кĕртсе лартни илемлĕ текста чылай шупкалатма пултарнине ăнланнă ĕнтĕ автор. Çавăнпа çав варианта малалла çырса каймасăр чарăнса тăнă пирĕн пултаруллă Тăхти.

«Помидор» калавăн вĕçленмен тепĕр (ВТ) редакцийĕ те пур терĕмĕр. Ăна эпĕ чи юлашкинчен, И.Тăхтин кун кĕнекийĕнче асăрхарăм. Ку текстри калăва çыравçă калуçă ячĕпе çыру пек йĕркеленĕ. Хальлĕхе малтанхи икĕ страница ытла çырса кайнă вырăна татса хăварăпăр та малалла вуласа кайăпăр: «Сăмах-юмах сыпăкне йĕркеллĕ, илемлĕ сыпăнтарса пыма чухлаймасăрах эп санран, шанчăклă çынтан, тĕплĕ ыйтса пĕлесшĕн: пур-ши вара вăл çĕр çинче Америк ятлă çĕршыв, е Америк тенине мошенниксем шутласа кăларнă-ши халăха улталама, е манашкал çынтан кулмашкăн аслă

шыв леш енче Америк иккĕ пур тесе каламан-ши ăна? Тата пăртак итлесемччĕ-ха эс мана, ырă кăмăллă, тăнлă юлташ!

Пĕрре эпĕ çапла куртăм. Пирĕн ялта пиртен виç кил урлă пĕр арăм пурнать, пĕччен арăм, тăр пĕччен. Колхоз Кулюк теççĕ ăна. Никамах та пĕлмес эп ун патне кайкаланине. Пускил лăплансан карăм Кулюк патне. Пӳрт алăкне уçрăм. Пӳртре тĕттĕм.

– Ман килес, – терĕм майпе. Килях, иртсе лар текен-мĕн илтĕнмес те.

Кулюк кинĕн кушакки пур та унăн, хура кушак. Ун кушакки те мана пит юратать те вара.

Пĕç, пĕç, пĕç-пĕç-ç терĕм те, кравать çинчен ман патна сиксе анчĕ те ман ура тавра мăр-мăр мăрлатса, ман урана сĕркеленсе çаврăнать.

Йыхăрса, ачашласа Кулюк кинĕн кушаккине алла илтĕм те:

– Чукка-чукка, сирĕн ыттисем килте çук-и-мĕн? – тесе ыйтап кушакран. Мăр, мăр тет кушак, эп çех-ха, хуçисем килте çук та-ха тенĕ пек туйăнать мана кушак мăрлатни.

Кулюк манран пытанман-и-ха ку тесе эпир, кушакпа иксĕмĕр, кăмака хыçне, тĕпеле хыпашлакаласа та пăхрăмăр, никам та çук пӳртре».

Çак ВТ варианта автор 1935 çулхи кăрлачăн 13-мĕшĕччен çырса хуни паллă тенĕччĕ маларах. Ун чухне çыравçă Чуварлей санаторийĕнче тин кăна сипленме пуçланă. Ку редакци хайлавăн чи малтанхи варианчĕ тесе шухăшлама тĕрлĕ фактсем (кунти хĕрарăм урăх ятлă пулни, хăш-пĕр предложенисем тулли текстăн пĕрремĕш вариантĕнчипе пĕрешкелреххи т. ыт. те) май параççĕ.

Çапла вара, тĕрлĕ редакцисем пулса кайнине çапларах черетлентерсе ăнлантарма пулать. 1. Чи малтан И.Тăхти çыру мелĕпе хайланă ятсăр калав çырма пуçăнать (ВТ редакцие). 2. Çав вăхăталлах вăл тулли редакцин малтанхи пайне 14 страница таран çырса хурать, малалла мĕн-мĕн çинчен çырмаллине палăртать. 3. Малтанхи пая çĕнĕрен юсаса тухать те хайлавăн

вĕçне çырса пĕтерет («1935-х» текен редакци). 4. ВП редакцие çырма пуçăнать те ăна вĕçлемесĕрех пăрахать.

Аталануллă поэтика, куçкурăм. *ВТ редакци.* Çак варианта И.Тăхти хăй питĕ килĕштернĕ çыру евĕрлĕ хайлама пуçаннă. Кунти калавçăпа (рассказчик) автор сăнарĕ пĕрешкел, калăва калавçă куçĕпе пăхса йĕркеленĕ.

«Хĕрхен мана, тархасшăн, çав сăмахсене эс никама та ан кала, ман писмене никама та ан парсам, пĕр сан çине çех шанап ĕнтĕ эпĕ. Ан ятла мана.

Ун пек-кун пек вăрттăн сăмахсене сана та, савнă юлташ, пит сасартăках каласа пама хăяймастăп-çке-ха. Хаклă юлташ! Майперех, сăмахран сăмах, сыпăкран сыпăк сыпăнтарса пырăпăр эпир иксĕмĕр унашкал япаласене те. Мĕн тăвас тен ĕнтĕ, хам айăплă пирки совет çĕршывĕнче хăюллă пурăнма хăйса çитеймен те-ха эпĕ. Хаклă юлташ! Ку саманара эс мана пурăнма тăн-ăс парăн, ман пулнă йăнăшсене, пула-пыран йăнăшсене, ик еннелле сулăннисене, тăвайккинелле туртăннисене, тӳрлетсе пырăн-ха эсĕ... çăкăр-тăвар çиме вĕрентĕн-ха эсĕ мана».

Калавçă сăмаха кукăртса сăмах «вĕренне» малалла явать: «Çĕнĕ пурнăç хыççăн хăваласа çăпата çăтăласран* хăраса, çăпата çăтăлсан çара уран çӳреме ура шăнĕ, урана шăрпăк та кĕрĕ тесе шикленсе эп аспуккине те çĕнĕлле вĕренеймен вит-ха; кив аспуккине те аран-аран ликвитаци ăс парса вĕрентрĕ те мана, ухмаха.

Уна-куна пĕлменрен эс манран кулса çапла та калама пултаран мана: «Азбуки арманта, веди глаголь вăрманта, Добро еси живите, зело иже каки <нрзб>, люди мысли наши <нрзб>, Рды слово титло, Иван пуçĕ пыйтло, Азбукине пĕлетне, пĕр чĕл çăкăр çиетне. Азбуки арманта, сан пак ухмах вăрманта», – тесе те калан. Тем каласан та сан сăмахна эп хурлас çук.

Йӳтенĕскер ку, ватă çын пуль ку, анранăскер пулмалла ку, сăмаххи-юмаххи вырнаçуллă мар тейĕн мана эс. Çамрăках мар та эпĕ, – çапла калам-ха эпĕ сана, эс вара ман çул-йĕре часах тавçăрса илĕн. Çав-çав çĕрте, çав çĕрте аслă вăрман пулнă тет. Çавă вăрман варринче çавра пыллăх пулнă тет. Çавă

пыллăх варринче сĕтлĕ кӳлĕ пулнă тет. Сĕтлĕ кӳлĕ варринче çавра утлăх пулнă тет. Çавă çавра утлăхра тăлăх карчăк пулнă тет. Çавă тăлăх карчăкăн вун улт çулхи хĕр пулнă. Тăлăх карчăк хĕр ачи, вун улт çулхи хĕр ача, пĕрре шыва кĕнĕ чух шурă акăш пĕр ушкăн хăй патнелле ярăнса, ишкелесе пынине курах кайнă çавă хĕр. Ишкелесе майĕпе сарă хĕре акăшсем пăхса пынă кармашса.

Вара çавă хĕр ача çапла ыйтнă вĕсенчен:

– Шурă, хитре акăшсем, эсир капла пит йышлăн – çĕрĕн те пуль эсир? – тет. Малта ишсе пыракан аслă акăш хĕр çине именерех пăхнă та вара çапла каланă:

– Пирĕн чухлĕ виç хут илсен, миçе пулни çумне тата çавăн чух хушсан, кун çумне тата тваттă хушсан тин çĕр пулать.

Миçе акăш пулнине виç хут ӳстерсен, ун çумне иккĕ хушсан эс вара, хаклă юлташ, эп миçерине часах чухласа илен. Сăмах майăн каласан, тата тват-пилĕк пятилетка пурнасчĕ те-ха ман. Пурнăç тути тутланса пынипе малашне самани майăн этем ĕмĕрĕ те, выльăх-чĕрлĕх ĕмĕрĕ те вăрăмлансах пырать пуль те-ха ĕнтĕ вăл. Пурнассине пурнăпăр-ха та ăна. Ку таранччен ман пурнăç ...»

Çапла çырса пĕтермесĕрех вĕçлет И.Тăхти хайлавăн пуçламăш пайне (малаллине умнерех илсе кăтартнăччĕ ĕнтĕ). Ăна вăл каярах çырса пĕтерме палăртнине çавăнти асăрхаттару сăмахĕсем пĕлме пулăшаççĕ: «Йăнăшсене тӳрлетмелли çинчен çырма астăвас пулать».

Калавçă çырура малтан хăй еплерех çын пулни çинчен çырать, миçе çула çитнине пĕлмелли сăвă çеммиллĕ задача парать. Унтан вăл вулавçăран Америка çинчен ыйтать. Çав çĕршыв çинчен калавçă кӳршĕ тăлăх арăм патĕнче унăн çĕрлехи хăнинчен илтнĕ ĕнтĕ. Эппин, малалли ĕç-пуç калавăн тулли вариантĕнчи пекех пулмаллаччĕ. Çапах та автор çак ВТ редакцие вĕçлесе пĕтермест. Сăлтавне вара автор суйласа илнĕ калу мелĕ тĕп шухăша туллин уçса пама май паманнине ăнланса илнинче курмалла-тăр.

Тăхти хăйĕн калавĕсене çыру пек йĕркелеме 1926 çултах пуçаннă («Шăллăма шырама эп Мускава кайни» хайлавăн пуçламăшĕ). 1928 çулта вăл çак мелпе «Салам», «Йысна», «Çыру», «Иптеш», 1934–1935 çулсенче «Чипер Альтук», «Тимахви шăллăм», «Альтюç аппа», «Алло, Окитаро, алло», «Капнер-Мауса-Капнер» калавсем хайлать. Вĕсенче пуринче те ĕç-пуç харкамçă каласа пани урлă кăна пулса пырать. Ансат вулавçă вара калуçăпа автора уйăрса илмесен те пултарать, уншăн хайлаври шухăш ытларах чухне пĕр сийлĕ кăна. Калу калавçă ячĕпе йĕркеленмен чухне сăнарлă идейăна темиçе сийлĕ тумалли майсем нумайрах пулаççĕ.

ВТ редакцири тĕп герой-калавçă çине-çинех йăнăш тăвакан, икĕ еннелле сулăнакан çын иккен. Хăйне вулавçăран та, ытти çынсенчен те катăкрах пек кăтартакан харкамçă, паллă ĕнтĕ, автора ирони тума кирлĕ. Чылай чухне çав харкамçă хăтланкаларăшĕ çирĕпленнĕ хаклăхсене йӳнетсе, ăнлавсене шупкалатса ярать. Çак редакцири калавçă калани-çырни те çавăн патнех илсе çитернĕ пулĕччĕ. Хăйне ухмахпа танлаштарнă хушăрах хайхискер тĕрлĕ задачăсем шутлаттарать, этем ĕмĕрĕ вăрăмланасса шанса ĕмĕтленет. Кунти ирони сăмаха йӳнетсе ярать, каланă шухăша хирĕçле пĕлтерĕш çуратать. И.Тăхтин хайлава çырма пуçланă чухнехи шухăш тытăвĕ (замысел) çыру авторĕ хăйĕн кӳршĕри тăлăх арăмăн кăмаки хыçĕнче пулни, унта мĕн-мĕн илтнине çырса кăтартассипе çыхăнни паллă. Ку вара калăва приключенилĕх енне сулăнтарать. Ун пек чухне автор харкамçăпа пĕрлешсе кайманни ла-йăхрах. Хайхи монтажлă композици йĕркеленме те меллĕ, тĕп героя тулашран сăнлама та ал май пулса тăрать.

ПТ редакци. Ку варианта автор монтаж мелĕпе йĕркелесе пуçлать. Унта харкамçă хăтланăвне тулашран ăнăçлăн ӳкерсе кăтартнă: «майпе-майпе... Тухрĕ йăпшăнса», «Унталла-кунталла пăхкаларĕ. Карта çуммипе...», «пĕр сассăр уçса», «ура вĕççĕнтерех утса» т. ыт. те. Арçын кӳршĕри тăлăх арăм патне улаха кайнине эпир автор харкамçăн утти-çеммине кăтартнинченех

чухласа илетпĕр. Кунти ирони каланă сăмаха йӳнетмест, харкамça кулăшла лару-тăрура кăтартма, унăн чăн-чăн çитменлĕхĕсене палăртма пулăшать.

Хайлава çыравçă виççĕмĕш страницăран параллельлĕх мелĕпе çырса кайнă. Кунта монтажлă композицие параллельлĕ композици ылмаштарать. Акă хăнапа Улю каласа-каласа апат çиеççĕ, кăмăрт-кăмăрт тутарса чăмлаççĕ. Кăмака хыçне пытанни хăйĕн шăлĕсем мăка пулнине аса илет, «ним тума та çук, начар çын эпĕ. Çакнашкал пытанкаласа, хĕсĕнкелесе ларсах ĕмĕр иртет ĕнтĕ ман» тесе пĕтĕмлетет. Е хăна помидора, помидорпа тунă апата питĕ килĕштернине палăртсанах Иван тепĕр шухăша путать. Тăршшипех çапла: хăна пĕр-пĕр шухăш каласанах кăмака хыçĕнчин ăшри монологĕ каять, вăл сăмаха хăйĕн çине куçарать, аса илме пуçлать.

Çак редакцири сăнарлă шухăш помидор тавра пуçтарăнса символла пĕлтерĕш илет. «Улю кин помидорĕ пекки ăçта пултăр ĕнтĕ вăл» тени Иван ăна çикелесе куркаланине систерет. «Çак çынна ертсе килмен пулсан, сан помидора та иксĕмĕр çиеттĕмĕрччĕ пуль те ăна» – хăй çимелли çимĕçе (вăл унта улаха çӳренине аса илсен çав çимĕç мĕне ăнлантарнине чухлама йывăрах мар) тутанма май килменшĕн пăшăрханса шухăшлать кăмака хыçĕнчи.

Çапах та Иванăн ăшĕнчи шухăшĕ-аса илĕвĕ чи малтан икĕ хирĕçле тĕнче пуррине кăтартать. Пĕри – хăюллисен, Кристобаль йышшисен тĕнчи. «Вĕсем вутра та çунмаççĕ, шывра та веç путмаççĕ, – пĕтĕмлетет çак харкамçă. – Эс пур – килте те, кӳршĕре те, ял-йышра та тĕпеле иртме хăяймасăр çӳрен; кушак кайăк пек, кăмака хыçĕнче хĕсĕнсе пурăнан çав пурнăçа».

Çак икĕ тĕнче пирки Тăхти мар, герой каланине шута илмелле. Автор шухăшĕ çав хăюллă тата халăх умне тухма шикленекен çынсене хирĕçлетсе кăтартнинче кăна тăк, вăл ытла та çиелте курăнса выртни тĕлĕнтермеллеччĕ пире. Ку литература тĕлĕшпе аслă пĕлӳ илнĕ Тăхтишĕн ытла та ансат пулнă пулĕччĕ. Тен, кунта харкамçă каланă шухăшран та тарăнрах идейăна шырамалла.

Маларах эпир ПТ редакци 14-мĕш листа варринче вĕçленет тенĕччĕ. Хут листин тепĕр енче малалла мĕн çинчен çырмаллине палăртни пур. Ăна умĕнхи пек хура чернилпа мар, кăранташпа çырнă. Акă çав текст: «а) ытла кĕске юрамасть; б) вопрос полновесно разрешить в ярких формах; в) моменты интриги.

Очень кратко эпилог.

Улю – 2 ача – **качча каять** те постановл. **цека парт. о быте.**

1. Агроном платит алименты.

2. Улю вышла замуж 2 раза.

3. Кăмак<а> хыç<ĕнчи> раскаялся, вступ<ил> в кол<хоз>, 6 чл. д<ети> восп. их.

Улю ударница-бригадир и т. д.»

Кунта автор кăмака хыçĕнчине ӳкĕнтерме (ВТ редакцири çак сăнара аса илер-ха) палăртнă. Çĕрлехи хăна агроном пулнине те, вăл кайран Улюна алимент тӳленине те çак планран кăна пĕлетпĕр эпир. Хайхи Тăхти ятарласа интрига пирки мĕншĕн шухăшланине те чухласа илме пулать: вăл унпа вулавçа тыткăнласшăн. «Помидор» тутаннă агронома алимент тӳлеттерме палăртни авторăн тĕп шухăшĕ хăш енне сулăннине, мĕншĕн вăл калавне çапла ят панине аван кăтартать. Юратăва символлакан çимĕç пулнă хушăрах хăюлăха аса илтерсе тăракан япала та иккен çав помидор.

ИТ редакцире малалли урăхларах пулса тухнă. Кунта чи малтан Испани çинчен çырса кăтартнă. Иван çывăрса кайнă ĕнтĕ, калăва автор куçĕпе курса йĕркеленĕ. Çавăнпа та пӳртри каласăва илтекенĕ автор-калуçă хăй кунта. Шăрчăксем чĕриклетнине те хăех илтет вăл, хăнапа Улю савăшăвне ытарласа евĕрлет. Унтан кăмака хыçĕнче çывăраканĕн тĕлĕкне каласа пама пуçăнать.

Çак вырăнтан пуçласа каллех монтажлă композици каять. Çав мелпе Иван пӳртрен епле тухса шăвăннине кăна мар, кайран мĕн-мĕн пулса иртнĕ ĕçсене çиелтен кăна, кĕскен асăнса иртни кунти вăхăта хăвăрт шутарма май парать. Хайлав архитектоникине пăхсан унăн тĕп пайĕ пӳртри вăхăтпа

çыхăннине, унта вăл питех те ерипен шунине асăрхатăн. Çак ретардаци (вăрахлату) мелĕ автора каласусемпе аса илӳсем тата шухăшлусемпе тĕлĕксем кĕртме май парать.

Ку редакцире ыттисенче курăнман тепĕр сăнарлă шухăш палăрать, вăл *тинĕсе пăраху* мотивĕпе тачă çыхăннă. Акă Улю хăни Кристобале матруссем шыва тытса ывăтасшăн пулни çинчен калать. Иван вара çапла тĕлĕнет: «Ара, çынна шыва путарма хатĕр этем Кристобаль вăхăтĕнче те пулнă-мĕн вăл».

Халĕ Иван тĕлĕкне аса илер. Унта та вăл паттăр матруссене курать. Лешсем вара «прахут çинчен çăпаталлисене, шур йĕмлисене шыва вăркăнтараççĕ».

Вĕсен юррин пĕр пайне кĕнекене кĕртмен. Акă çав сăмахсем:

Мы фашисты Масти разной
Высшей марки, Сразу с лету
Чистой крови. Бросай в воду.
Мы породы Европейцы,
Наилучшей, Неарийцы,
Первой группы, Все семиты,
Род арийцев. Азияты
Темнокожих, Недостойны
Жизни «грязной» С нами жить.
Желтокожих,

Тĕлĕк кураканне те ывăтаççĕ пек çав «матруссем, пит паттăрскерсем, сап-сарă çынсем».

Çак иккĕмĕш тулли редакцине малалла тăснă май автор ахальтен мар Испани çинчен çырса панă. Çав йĕркесене хайланă чухне Испанире граждан вăрçи пуçланнă. 1934 çулхи октябрьте Франко генерал ертсе пынипе ĕç çыннисен пăлхавне хаяррăн путараççĕ. Ун чухне Испани реакционерĕсем Муссолинипе туслашаççĕ, çав фашистпа килĕшӳ тăваççĕ.

Европăра фашистла çĕршывсем ураланни, вĕсем демократие аркатни, çынсене тĕрмене тытса хупни ун чухне чылайăшне шухăшлаттарнă. И.Тăхтин çапла çырнă йĕркесем те пур:

Кранкки-кранкки çăхан пур –
Мĕн вилнĕшĕн савăнать,
Виле какай пуçтарать.
Франкки-франкки Франко пур,
Фашист-кашкăр пулать вăл,
Çăханран та тискер-çке.
Испанире чĕр-çилам
Вĕлерттерет халăха,
Вилĕм купи купалать,
Вилĕм купи ӳснĕçем
Чунтан-вартан савăнать.

Тепĕр ал çырура унăн фашистсем пирки çапла сăвăласа калани пур:

Вĕсем, хăйсен шучĕпе,
Нимĕçе те яппуна,
Итальянцă çыннине
Этем шутне шутлаççĕ.
Вырăс, француз, чехсене,
Турккăсене, ыттине,
Вакă <вулама йывăр> çынсене
Этем картне картмаççĕ.
Тирĕс купи вырăнне
Анчах пире хураççĕ.

Кунта И.Тăхти Гитлерăн «высшая раса» текен çĕнетнĕ (яппунсем германи чĕлхиллĕ халăхсен шутне кĕмен пулсан та вĕсене, хăйсен союзникĕсене, пуç пулса тăракан халăхсен йышне кĕртнĕ) идеологийĕ-теорийĕ пирки çырать.

Çапла вара, Испани фашисчĕсем пирки калавра калани авторăн шухăшĕ пулни, вăл вулавçа Иван ăнланнинчен те ытларах тепĕр шухăш пĕлтересшĕнни курăнса каять. Мĕнле хаклăхлă куçкурăмпа (ценностная точка зрения) пăхса каланăскер-ши çав сăнарлă идея?

Хайлава мĕнпур редакцисене шута илсе тепĕр хут тĕплĕн аса илер-ха. Тишкерме меллĕрех пултăр тесе калава пайсерен пăхса тухăпăр.

Хăна сĕтел хушшине ларичченхи пай. Кунта эпир чи малтан Ашак Иванĕ (Улю кӳрши) кам пулнине, вăл мĕнлерех пурнăçпа пурăннине пĕлетпĕр (каярах çав пурнăç уçăмланса çитет). Вăл Улю патне çĕрлесенче хăнана пыркалать иккен, çакна арăмĕнчен те, ял-йышран та пытарма тăрăшать. Улю хăй те унпа пĕрре кăна мар пытанмалла выляни, ăна «помидор» çитерни паллă пулать. Монтажлă композиции пула вулавçă кĕркуннехи тĕттĕм çĕре, унтан пĕр чăваш ялĕнчи урама, унта карта çумĕпе йăпшăнса пыракан çынна курать, унпа пĕрле пӳрте кĕрет. Çапла вара, эпир чăваш ялĕнче кĕрхи пĕр çĕр тăлăх арăм пӳртĕнче мĕн пулса иртнине пĕлетпĕр, Иванпа Улю пурнăçĕпе кăштах та пулин паллашатпăр. Çак курăм, çакă куç пĕтĕмпех малтанхи тапхăрпа çыхăннă. Унăн хăйĕн хаклăхĕ пур.

Кăмака хыçĕнчи итлесе ларнă пай. Кунта Улю кӳршин сăнарĕ уçăмланса çитнипе пĕрлех çĕнĕ хаклăх çирĕпленет. Хăна каласа панă май кăмака хыçĕнчи пысăк пĕтĕмлетӳсем туса пырать, вăл хăйне çĕнĕ куçпа курма пуçлать. Çав çĕнĕ хаклăхлă куç малтанхи пайра палăрнă хаклăхпа хирĕçĕве кĕрет. Çапла вара, параллельлĕ композиции пула эпир Ашак Иванĕ улшăнса пынине куратпăр. ИТ редакцире çех тĕл пулакан пĕр вырăна илсе пăхар-ха:

«– Ах, Улю кин! Ĕлĕкхи вăхăтра пулсан, хăв тăн-пуçупа эс те, çав патша майри мар пулсан та, тиек майри пулса, виç лашапа çӳремелле-мĕн те ярăнчăклă кӳме çинче стришнапа юнашар ларса; сан апла пурăнма та тăн çитмелле те. Пĕлес çук, таçта патшасем, Изабелла çинчен каласаканскер, сан ку хăну та çемски начальник тавраш пулнăскер мар-ши-ха? Тивесси сан сăмахху, Улю кин, манах тивет. Ара, чăн ĕнтĕ сан сăмах, Улю кин! Çын

çӳресе такăрлатнă çулпа çӳресси мĕнех вăл. Вăл ним те мар çын çулĕпе çӳресси. Хăйне валли çĕнĕ çул уçайман çын, манашкалли, пит начар çын ĕнтĕ вăл. Çапла та вăл, Улю кин! Мĕн тăвас тен! Пурнас пулать çуралнă япала, – тесе шухăшлать кăмака хыçне пытанни».

Танлаштарăвĕ те кивĕ пурнăçран илнĕскер Ашак Иванĕн. Ахальтен мар Улю алă çупнине сивлесе вăл çапла калать: «Çапах та Кристобальшĕн ал çупма пирĕн ялсем мар-çке вăл. Председатель пирĕн уншăн ал çупма те хушать-ха, те хушмас-ха. Кристобаль, сан хăну сăмаххи тăрăх, авалхи çын пулать те-ха вăл. Ал çупни харам ан пултăрччĕ» (палăртнă сăмахсем ИТ редакцире кăна пур. – *В.Р.*). Çак редакцире Улю кӳрши епле çывăрса кайнине те аван сăнланă. Акă хăна табакпа помидора тата çĕр улмине те Америкăран илсе килни çинчен пĕлтерет: «– Ара, исе килмесĕр. Исе килни лайăх япала. Кучченеç килех тăтăр; эпир çиех тăрар тенĕ ваттисем, – тесе шухăшлать те татах анаслать, ыйăхлать, пуçне усать; ларнă çĕртех, ыйăх пуснипе, çывăрса каять кăмака хыçĕнчи пĕрене çумне сĕвĕнсе».

Кăмака хыçĕнчи çывăрса ларнă пай. Кунта пӳртри калаçава пĕр автор-калуçă кăна илтет. Испани çинчен сăмах пырать унта. Автор хăй те кăмака хыçĕнче ларнине çак сăмахсем пĕлме пулăшаççĕ: «Улю вырăн хатĕрлерĕ пулмалла. Салтăнса выртрĕç пулас». Хайхи сăмаха шăрчăк чĕриклетни çине куçарать автор, савăшу самантне питĕ ытарлăн каласа çапла вĕçлет: «Ыйха кайрĕç-и, тен, пурте (мăшăр шăрчăк та, Улюпа унăн хăни те. – *В.Р.*), канса çывраççĕ пулас».

Малалла автор-калуçă çĕрлехи тӳпене (космоса) ӳкерсе парать: «... çăлтăрсем йăлтăртатса пăхаççĕ пĕри те пĕри. Çĕр çинче этем епле пурăннине курса чухласшăн пуль те ĕнтĕ вĕсем (палăртни манăн. – *В.Р.*)». Çак сăмахсем авторăн пулни иккĕленӳсĕр.

Этем çĕр çинче епле пурăннине чухлаттарас текенĕ автор хăй терĕмĕр. Вăл Улю кӳршине Кристобаль халапне итлеттерсе Иван пурнăçне çĕнĕлле курма пултарттарчĕ. Ашак Иванĕ тĕнчере Кристобаль йышши хăюллă, хăна

евĕрлĕ нумай пĕлекен çынсем пуррине пĕлчĕ, вĕсем идеал пулмаллине (Улюшăн кăна мар!) ăнланчĕ.

Ивана тĕлĕк тĕллентерсе автор татах та тем каласшăн-ха. Çак пурнăçра хăюллă та маттур пулни çителĕксĕр иккен. Авă хăюллисем пĕр-пĕринпе вăрçаççĕ, пĕрисем теприсене карап çинчен пăрахаççĕ (Испанири лару-тăрăва сăнлакан сăвва аса илер), расистсем ытти халăхсене выльăх вырăнне хураççĕ, шыва тытса переççĕ. Иваншăн пĕр-пĕринпе вăрçакан çынсем пурте пĕрех: вĕсем хастар, маттур. Автор вара вĕсене уйăрса пăхма хистет. Унта «сап-сарă çынсем» (фашистсен «таса раса» идеалĕ çутă çӳçлĕ ариецсем пулнине, чăвашсем вара ун йышшисене «сарă çын» тенине асра тытса çапла каланă Тăхти) тата «çăпаталлисемпе шурă йĕмлисем» (кунта автор хура халăха çапла ытарласа каланă) пур. Пĕрремĕшĕсем ариецсене кăна çын вырăнне хураççĕ, ыттисене пурне те тинĕсе пăрахма хатĕр. Çак нацистсен идеологине хирĕçле гуманизм (пĕтĕм этемлĕхе юратакан) идейине кăларса тăратнă автор.

Хайхи хайлавра Иванăн традицилле хаклăхĕ тата вăл хăна каласăвĕ хыççăн улшăнни çинчен каласа пани, унтан авторăн космос куçĕпе пăхса каланă шухăшĕпе курăмĕ пурри курăнса каять. Çынна хăюллă пулса тӳрĕ çулпа çӳрени те çителĕксĕр иккен. Унăн яланах ырă енче пулмалла (Испанири ĕç-пуç фонĕнче реакцине сивлесе демократи енне туртăнмалла).

Кайран пулса иртнĕ пай. Кунта Иван Улю килĕнчен мĕнле тухса тарни, ун хыççăн мĕн-мĕн пулса иртни çинчен каланă. Вăл колхоза кĕнĕ ĕнтĕ, помидор лартса тума ăста çын. Хăйĕн арăмĕпе те килĕштернĕ Иван. Пĕтĕм халăха тĕлĕнтерсе вĕсем акатуйра тутăр вĕçтерсе ташлаççĕ. Иванĕ вĕçĕмсĕрех помидор усси пирки юрлать. Вулавçă пĕлет ĕнтĕ: унăн пĕлнĕлĕхĕ Улю хăнин каласăвĕнчен тухса тăрать. Эппин, Иван помидор уссине (тен, ыттине те!) Улю патĕнче хăна каласăвне илтнĕ хыççăн ăнланса илнĕ. Ахальтен мар вăл колхоза кĕрет, ударник пулса тăрать, хуçалăхне чылай çирĕплетет.

Малаллине автор хăй курман, вăл «пулать» тени урлă кăна каласать. Çапах та вулавçă Иван помидор ăсти пулса кайнине пуçĕпех ĕненет.

Халĕ маларах çырнисене çапларах пĕтĕмлетсе тухар:

1. «Помидор» калавра виçĕ хаклăхлă куç пур: Улю кӳршин малтанхи куçĕ-курăмĕ; унăн çĕрлехи хăна сăмахĕсене илтнĕ хыççăн çирĕпленнĕ çĕнĕ хаклăхлă куçĕ; авторăн çын пурнăçне космос шайĕнчен пăхса хаклакан куçĕ.

2. Ашак Иванĕн тĕнче туйăмĕ, çавна май куçкурăмĕ те аталануллă, çав хушăрах вăл çĕннине традициллипе танлаштарса кăна йышăнать. Чăннипе каласан, çĕнninче киввине, улшăнманнине курма хăнăхнă çав чăваш çынни.

3. И.Тăхти «Помидор» калава тĕрлĕ поэтика мелĕсемпе усă курса çырса пăхнă. Харкамçă çырăвĕ пек йĕркелени автора çырлахтарман. Çав мел аталануллă куçкурăмшăн, нумай сийлĕ сăнарлă шухăшлавшăн тăвăр та ăнăçсăр пулнине ăнланса илнĕ вăл. Социологи енне сулăннă ВП редакцие те вĕçлеймен автор.

4. Хайлаври калăва çыравçă монтажлă тата параллельлĕ композицисемпе ăнăçлă усă курса йĕркеленĕ. Малтанхи мелĕ курăм проекцине космос шайĕнчен пӳртри кăмака хыçĕ таран пĕчĕклетсе кăтартма май панă. Тепĕр мелĕ вара калăва ăшри монолог çулĕпе яма, харкамçăн улшăнса пыракан чунне-чĕрине туйса ăнлантарма пулăшнă.

5. «Помидорти» кулăш çыру евĕрлĕ хайланă калаврисенчен урăхларах пулса тухнă. Кунта çыравçă «Колчак» поэма-памфлетри, «Шерхулла» калаври ăсталăха (камитле лару-тăру, ĕç-пуç, хускану) малалла ăнăçлă аталантарма пултарнă.

6. «Помидор» евĕрлĕ темиçе куçкурăмлă тата хаклăхлă хайлавсене Б.Успенский тĕпчевçĕ *анекдотпа* танлаштарнă. Кунта М.Бахтин палăртнă *нумай саслăх* (полифони) паллисем та аванах сисĕнеççĕ.

Вĕçĕнче çапла каламалла: И.Тăхти – чăваш литературин чăн-чăн классикĕ. Унăн «Помидор» ятлă калавĕ вара çыравçăн чи паха та вулавça антăхтарма пултаракан вилĕмсĕр хайлавĕ. Ун йышшисемпе тăван сăмахлăхăмăрăн тӳпине виçеççĕ!

* * *

30-мĕш çулсенчи чăваш прози эпикăлăх енне сулăнса пырать тени çур чăнлăх кăна-ха. Чăн та, официаллă пичетре çав туртăм курăмлăх пулнă ĕнтĕ. Çав хушăрах чăваш прози (чи малтан Хумма Çеменĕпе Илле Тăхти калавĕсенче) психологилĕхе, харкамçăсен чун-чĕрине сăнлассине, ăшри хирĕçӳсене кăтартассине мала ытларах лартма пуçланине палăртмалла. Чăваш прозине илемлĕ сăмах нумай саслăхĕ, нумай стильлĕх çитсе кĕрет. Шел, 40–50-мĕш çулсенче çав ен прозăра вăй илсех çитеймест-ха. Хв. Уяр, Ю.Скворцов тата ытти хăш-пĕр çыравçă çав И.Тăхти эксперименчĕсене малалла аталантарма пултараççĕ. Çапла майпа чăваш прози хăрах енлĕн эпикăлăх енне сулăнма пăрахать, психологийĕпе нумай саслăха та тĕп сулăм пек йышăнать.

Усă курмалли литература

Тăхти, Илле. Поэзи. Проза. Публицистика. – Шупашкар, 1979.

Родионов, Виталий. Мастер чувашской малой прозы (Илле Тхти) // Лик. – 2006. – № 2.

КРИТИКĂПА ЛИТЕРАТУРА ПĔЛĔВĔ

Чăваш илемлĕ критики пирки эпир ку таранччен тĕрлĕ вырăнта кăштахшарăн та пулин калаçкаласа илнĕччĕ ĕнтĕ. Кунти сăмах ытларах чăваш литература пĕлĕвĕ (илемлĕ процесс аталанăвĕ тата теори историйĕ) пирки пулĕ.

Чăваш литература историйĕ йĕркеленсе аталанни. Литература историйĕ ăнсăртран çырăнма пултарайманни пуриншĕн те паллă. Чи малтанах общество ăнĕ тăван çырулăх, тăван литература пĕлтерĕшне туйни, унăн пуçламăшĕпе аталану çулĕ пуррине курни кирлĕ. Чăвашсен Çĕнĕ вăхăтри (Новое время) çырулăхĕ 1769 çулта пичетленсе тухнă «Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка» кĕнекерен пуçланать. Çав çыру паллисемпе кайран мĕн Н.И.Золотницкичченех усă курнă, чăвашла кĕнекесем кăларнă. XIX ĕмĕрĕн 30–40-мĕш çулĕсенче В.П.Вишневский, В.А.Сбоев тата ытти хăш-пĕр тĕпчевçĕ чăваш çырулăхĕ те, литература чĕлхи те пурри çинчен каланă. 50-мĕш çулсенче С.Михайлов (Янтуш) хăйне

чăвашсен малтанхи писателĕ тесе çырать, 1853 çулта «Чувашские разговоры и сказки» ятпа литература антологийĕ пичетлет. 1908 çулта И.Я.Яковлев тăрăшнипе чăваш литературипе фольклорĕн икĕ хрестоматийĕ («Чувашские сказки и предания», «Образцы мотивов чувашских народных песен и тексты к ним») кун çути курать.

Çапла вара, ХХ ĕмĕр пуçламăшĕ тĕлне чăваш литератури пурри, вăл аталанни пуриншĕн та паллă пулса тăрать.

Чăваш обществин историлле шухăшлавĕ те çав тапхăртах çирĕпленсе çитет. Н.И.Ашмарин «Болгары и чуваши» (Хусан, 1902) кĕнеке кăларни Н.В.Никольский, Г.И.Комиссаров тĕпчевçĕсене, Турхан Энтри сăвăçа хавхалантарса ярать, вĕсене халăхăмăр кун-çулĕ çинчен çĕнĕ ĕçсем çырма вăй хушать. Историлле курăм тата шухăшлав ерипен ытти ăслăлăхсене те куçма пуçлать.

Илемлĕ литература авалхи тата çĕнĕ сийсенчен тăрать текен шухăш чăваш интеллигенцийĕн XIX ĕмĕртех çирĕпленсе çитет. С. Михайлов (Янтуш) хыççăнах çак шухăша И.Я. Яковлевпа Юркка Иванĕ калаççĕ, вĕсем илемлĕ литературăна *халăх сăмахлăхĕ* тата *çыруллă литература* çине уйăрса пăхаççĕ.

Чăваш сăмах пултарулăхне чи малтан системăлаканĕ Гурий Иванович Комиссаров пулнă. 1911 çулта кун çути курнă «Чуваши Казанского Заволжья» статйинче вăл çапларах классификаци сĕннĕ: сăмах пултарулăхĕ халăх сăмахлăхĕнчен тата литература пултарулăхĕнчен тăрать. Иккĕшĕ те поэзипе проза ушкăнĕсене пайланаççĕ. Халăх сăмахлăхĕн жанрĕсен шутне тĕпчевçĕ ваттисен сăмахĕсене, кĕлĕ тата чĕлхе сăмахĕсене, шӳтлĕ диалогсене, юрăсемпе такмаксене, юмахсене тата легендăсемпе халапсене кĕртет. Чăваш прозинче вăл дидактика, тĕн тата илемлĕ проза курать.

1916 çулта пичетленĕ «Программăра» Г.И. Комиссаров çапларах классификаци тăвать: «Творчество словесное. Чувашская народная лирика. Слова песен. Распределение песен по группам. Хĕр йĕрри. Хĕр çум юрри. Припевки, употребляемые во время игр. Стихи детские. Стихи шутливые.

Песни сатирические (такмак). Народная драма. Шутливые разговоры (комедия). Диалоги с трагическим содержанием. Песни, исполняемые несколькими хорами и солистом (опера). Сказки. Пословицы и поговорки. Загадки. Песни исторические. Духовные стихи. Древние молитвы (между прочим, молитва за пчел). Стихи, произносимые во время свадьбы (пуса каччи, мăн кĕрӳ). Нет ли басен и притч? (Предания, легенды и наговоры тоже относятся к произведениям словесного творчества, но о них было в другом месте)...»

Классификаци тунисĕр пуçне вăл уйрăм жанрсене тĕпчесе ĕçсем те çырнă. Чĕмпĕрте вĕреннĕ çулсенче Н.И.Ашмарина çăварни, калăм юррисене, çимĕк йĕркипе çумăр чӳкĕнче каламалли сăмахсене тата ытти тĕслĕхсене пухса панă. 1914 çулта çамрăк тĕпчевçĕ чăваш эпосĕн уйрăм сыпăкĕсене (мăн кĕрӳ такмакне мифла эпос шутне кĕртеççĕ) уйрăм кĕнекен пичетлет, çав çулсенчех (1913) «История перевода книг на чувашский язык» ятлă ĕç çырать.

Г.И.Комиссаров, малтанласа ытларах халăхăмăрăн историйĕпе тата сăмахлăхĕпе кăсăкланаканскер, юлашкинчен литература историне те тĕпчеме пуçăнать. Унăн çавăн йышши пĕрремĕш очеркĕ «Чăваш халăхĕ малалла кайĕ-ши, каймĕ-ши» кĕнекинче çапăнса тухать.

«Чăвашăн литератури те пуçланса кайнă, – тесе пĕлтерет автор чăвашăн пуласлăхĕ пуррине шанса. – Авал чăвашсем хутсене арабла çырнă. Вĕсем мĕн çырни ку таранччен пурăнайман: тутарсемпе, вырăссемпе вăрçнă хушăра, хуласем çуннă вăхăтра вута кайса пĕтнĕ. Çава (масар) çинче, вил тăпри çине хунă чулсем çине çырнă халапсем анчах халь палăрса тăраççĕ».

Кунта автор Атăл çи пăлхарсен XIII-XIV ĕмĕрсенчи чăвашла вуланакан чул юписем çинчен калаçать. Эппин, вăл чăваш çыруллă литературине çав ĕмĕрсенченех пуçланă.

Çыруллă литературăн иккĕмĕш тапхăрĕ, Г.И.Комиссаров шучĕпе, XVIII ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче йăл илет. Кунта вăл чи малтан Ермей Рожанскин

куçарăвĕсене асăнать, çав çын чăвашла тухнă пĕрремĕш кĕнеке авторĕ пулнине палăртать. Малалла тĕпчевçĕ вулавçăсене Петр Талиев, Иван Русановский тата Григорий Рожанский ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа кăтартать, XIX ĕмĕр пуçламăшĕнчи куçарусемпе паллаштарать.

Çак очеркра эпир Н.И.Золотницкин вĕренекенĕсен ячĕсене тата ĕçĕсене малтанласа илтетпĕр: Митрофан Дмитриев, Григорий Филиппов, Василий Васильев чăвашсем.

Г.И.Комиссаров И.Я.Яковлевпа унăн вĕренекенĕсен ĕçĕсене те тивĕçлĕ хак пама пултарнă. С.Тимрясов, А.Рекеев, Бюргановский, Д. Филимонов, А. Петров, Н.Охотников, П.Васильев тата чăваш интеллигенцийĕн ытти ывăл-хĕрĕ тăрăшнипе Чĕмпĕр шкулĕнче тăван чĕлхепе кĕнеке кăларас ĕçе чĕртсе яраççĕ. Чĕмпĕр традицийĕсемех каярах Хусана куçнă: унта чăваш ĕçĕсене малтан А.Рекеев, каярах Ф.Н.Никифоров тата Н.В.Никольский туса пынă.

Г.И.Комиссаров хăйĕн очеркĕнче чăваш культурин вучахĕ вăйлансах пынине, ерипен чăвашсен пĕрремĕш хаçачĕ тухма пуçланине, М. Федоров, И. Юркин, К.Иванов, Н. Шупуççынни, Т. Кириллов тата ытти çыравçăсем те хăйсен хайлавĕсене çырса пичетленине аван кăтартать. Чăваш литератури пуласлăхне шанса хăйĕн очеркне çапла сăмахсемпе вĕçлет: «Халĕ пирĕн литература хăватлах мар, анчах вăл хăватланасси малалла... Халĕ çамрăк чăвашсем, хаçатсене çыркаласа, чăвашла ăста çырма вĕренеççĕ. Çав çамрăк чăвашсенчен ӳлĕмрех чаплă, кревнай кĕнекеçĕсем тухма пултараççĕ».

Г.И.Комиссаровăн çак ĕçне чăваш литература историйĕ çинчен çырнă *чи малтанхи очерк* теес пулать. Ăна вăл халăхăмăр кун-çулĕпе кăсăкланнă, унăн сăмахлăхне тĕпченĕ май çырма пуçаннă. Çав вăхăтра тăван литература историйĕ тăван халăх историйĕн уйрăлми пайĕ пулса тăнă. Интеллигенци хура халăха хăйне хăй хисеплеме вĕрентесшĕн çуннă. Ыттисенчен нихăш енчен те катăк марне кăтартас туртăм сăмахлăха, унтан çырулла литературăна тĕпчеме хавхалантарнă.

Чăваш литератури çинчен хура халăх умĕнче тухса каласакансем те тупăнаççĕ çав тапхăрта. Тĕслĕхрен, Хусанти чăваш вĕрентекенĕсен ушкăнĕн

1917 çулхи раштав уйăхĕнчи пухăвĕнче (унта 300 çынна яхăн пухăннă) И.Тăхти «Чăваш литературин историйĕ» ятлă доклад туса панă. Унта вăл кашни халăхăн сăмах вĕççĕн çӳрекен литератури пурри çинчен каланă. Каярах «Хыпар» хаçатра И. Тăхтин çак сăмахĕсене илсе кăтартнă: «Литература халăхăн мĕнпур чаплăлăхне кăтартать. Этемĕн ăс-шухăш, чĕре, чун вăйĕ çавăнта ӳкет; халăхăн пурăнма пултарни, пурăнăç хăвачĕ пĕтĕмпе литертур[ăн]а кĕрет... Çавăнпа эпир, чăвашсем, хамăрăн литература историне питĕ вĕренмелле...»

Докладçă халăх сăмахлăхĕпе çыруллă литературăна, Г.И.Комиссаров пекех, истори куçĕпе пăхмалли çинчен каланă. Хăйĕн сăмахне вăл: «Эпир чăваш халăхĕ, чăваш историйĕ, хамăр литература ячĕпе пĕрлешер!» – тесе вĕçленĕ. Çав пухура Н.В. Васильев тухса каласнă, вăл чăвашсене наукăсем, поэзи кирлине палăртнă.

Çапла вара, 1917 çул тĕлне чăваш обществин ăнĕнче тăван литература историллĕ (аваллăхлă, аталану çулĕ-йĕрлĕ) текен шухăш çирĕпленнĕ. Çак пулăм чăваш литература историне туллин, наука тишкерĕвĕ çине таянса çырма майсем уçса панă. Анчах та вăрçăллă коммунизм тапхăрĕ, 20-мĕш çулсен пуçламăшĕнчи выçлăх чăваш литературин историне тарăнрах тĕпчеме чылай чăрмантарать. Çав тапхăрта ытларах литература портречĕсене çывăх статьясем пичетленеççĕ: К.В. Иванов çинчен Т. Туринге, К.В. Репин, К.Пăртта, А. Иванов, Н. Золотов (Ют), М.П. Петров, Н.Шупуççынни, Хумма Çеменĕ (Чĕкеç Ç.), И. Ахах çинчен И. Максимов-Кошкинский, П.Хусанкай т. ыт. те çыраççĕ.

Литература портречĕ çырас тĕлĕшпе çав çулсенче уйрăмах Хумма Çеменĕ палăрать. 1923 çулта «Канаш» хаçатра вăл Ваçанкка (ноябрĕн 16-мĕшĕ), Н. Шупуççынни (ноябрĕн 11-мĕшĕ), Çеçпĕл Мишши (ноябрĕн 16-мĕшĕ), Ç.Элкер (ноябрĕн 18-мĕшĕ), Лапсăркка (ноябрĕн 18-мĕшĕ) тата Трубина Мархви (ноябрĕн 23-мĕшĕ) çинчен çырнă статйисене умлăн-хыçлăнах пичетлет.

Портретсем тухнă май пичетре чăваш литературин совет тапхăрĕнчи аталанăвĕ пирки те калаçма пуçлаççĕ. 1922 çулта И.Максимов-Кошкинский чăваш совет драматургийĕ çинчен икĕ ĕç çырса пичетлет, 1925 çулта «Канашра» чăваш совет литератури ыйтăвĕсемпе дискусси пуçланать. Çав калаçăва Исаев Мĕтри, Хумма Çеменĕ, Г.Титов тата С.Андреев хутшăнаççĕ. Çав çулсенче революцичченхи чăваш литературине тĕпчесси те тарăнланса пырать.

Çапла вара, 1917–1925 çулсенче чăваш литература историйĕ йĕркеленсе тата çирĕпленсе пыни куç умĕнчех. Вăл литература критикипе юнашар утнă, хăйĕн уйрăм енĕсене аталантарнă. Литература историне йĕркелеме критика статйисенчен ытларах историпе этнографи, чĕлхе пĕлĕвĕпе фольклористика пулăшнă. Ахальтен мар ĕнтĕ Г.И.Комиссаров пĕр хушăрах историк-этнограф та, фольклорист-литературовед та пулнă.

Чăваш литература историйĕн наукăлла курсĕ çирĕпленсе хăйĕн малтанхи утăмĕсене тунă вăхăт 1926–1928 çулсемпе тӳр килет. Çакă вăл чăваш литературине аслă шкулсенче вĕрентме пуçланипе тачă çыхăннă.

1926 çулта Хусанти Хĕвел тухăç педагогика институтĕнчи малтан пулнă «Чувашское национально-лингвистическое отделение» вырăнне «Чăваш чĕлхипе культури» уйрăм туса хураççĕ. ГУС (Патшалăх ăслăлăх канашĕ) кăларнă программăпа килĕшӳллĕн çав институтăн 4-мĕш курсĕнче чăваш литературин историне вĕренмелле пулнă. Çак курса йĕркелесе пыма Ĕпхӳрен тин çеç куçнă Г.И. Комиссарова хушаççĕ. Уншăн литература историне çырасси тин çеç пуçаннă ĕç пулманнине эпир пĕлетпĕр ĕнтĕ. 1926 çулта тĕпчевçĕ «Чăваш халăхĕн халаплăхĕ» ятлă курс çырать, тепĕр çултан «Чăваш фольклорĕпе литература вĕрентĕвĕ» курс хатĕрлет. (Çак курссем чăваш халăх сăмахлăхĕпе çыруллă литератури çинчен çырнă çав вăхăтри чи тулли очерксем пулнă.) Çав хушăрах вăл чăваш шкулĕсенче тăван литература вĕрентес ыйтăва пичетре хускатать, программа проекчĕсене пичетлет.

8 çул вĕренмелли шкулта Г.И. Комиссаров чăваш литературине ак çапла темăсем çине уйăрса вĕрентмелле тесе çырать:

V класра:

1. Чăваш ялĕ тата чăваш хресченĕн ĕçĕ: а) хальхи чăваш ялĕ; ă) ĕлĕкрехри чăваш ялĕ; б) чăваш хресченĕн ĕçĕсем; в) ялти халăх сийĕсем; г) ял тытăмĕ; д) хресчен психологийĕ; е) чăваш ялĕнчи йăласем, праçниксем, савăнăçсем; ĕ) ялти çĕнĕ уявсемпе йăласем; ж) чăваш ялĕн халăха çутта кăларас ĕçĕ; з) ялăн аваллăхĕ.

2. Хула тата хулари халăхăн ĕçĕ. Чăваш хресченĕпе капиталисчĕсем.

3. Ялпа хула çыхăнăвĕ.

VI класра:

1. Тăван çĕршыв, чăваш халăхĕн хуçалăхĕ тата чăваш хуçалăхне çĕклентересси: а) чăваш çĕршывĕ; ă) чăваш хуçалăхĕ; б) чăвашсен авалхи пурнăçĕ; в) чăваш хуçалăхĕпе пурнăçне çĕклентересси.

2. СССРпа унăн хуçалăхĕ: а) хальхи; ă) ĕлĕкхи.

VII класра:

1. СССРта хресченсемпе рабочисен ĕçне тата пурнăçне йĕркелени.

2. СССР халăх пурнăçне çĕклентересси.

3. Хальхи тĕнче хуçалăхĕ.

VIII класра:

1. Ĕлĕкхи тĕнче хуçалăхĕ.

2. Хура халăх ĕçпе пурнăçа çăмăллатассишĕн вăрçни, çапăçни: а) ют çĕрте; ă) Раççейре.

б) чăваш хушшинче (чăваш историйĕ): авалхи самана; Мускав самани; XVIII ĕмĕр; XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурри; XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурри; XX ĕмĕрĕн пуçламăшĕ; 1905–1906 çулсенчи революци; реакци вăхăчĕ; империализм вăрçи вăхăчĕ; Аслă революци вăхăчĕ; граждан вăрçи; выçлăх.

3. Канаш йĕрки.

Хальхи литература.

Г.И. Комиссаров чăваш литературине вунă çуллă шкулсенче, техникумсемпе рабфаксенче, совпартшкулта тата ытти вăтам пĕлӳ паракан шкулсенче вĕрентмелли программа та туса хатĕрленĕ. Çав программа никĕсне вăл истори тапхăрĕсене тĕпе хурса вырнаçтарнă:

IX класра:

I. Халăх халаплăхĕ (поэзийĕ).

1. Халăх халаплăхĕ епле çуралать (ĕç юррисем, утă юррисем, ташă юррисем, вăйă юррисем, йăла юррисем, паттăр юррисем, кĕлĕсем, чĕлхе сăмахĕсем, халапсем, юмахсем, сăнавсем, ваттисен сăмахĕсем).

2. Халăх халаплăхĕ сыхланса упранни, çĕнĕрен çуралса тата улшăнса пыни.

3. Чăвашсен халăх халаплăхĕнче халĕ мĕн-мĕн тăрать.

4. Халăх халаплăхĕн кĕлеткисемпе чĕлхи.

5. Чăвашсен халăх халаплăхне пухни.

6. Чăваш халăх халаплăхне тĕрĕслесе пăхни: тĕрлĕ вăхăтра юрламалли юрăсем, сăвăсем, ваттисен кĕллисем, чĕлхе сăмахĕсем, халапсем (юмахсем), легендăсем, историллĕ халапсем, сутмалли юмахсем, ваттисен сăмахĕсем, çанталăк сăнавĕсем, тĕшмĕшле сăнавсем, тĕлĕк уççисем, ырă сунмалли, виртлемелли, тула тухнă чух каламалли сăмахсем...

7. Халăх халаплăхĕн пахалăхĕ тата ăна епле пухасси.

II. Чăваш чĕлхипе çырнă çыру халаплăхĕ.

1. Пăлхар патшалăхĕ, Ылтăн Урта тата Хусан патшалăхĕсем вăхăтĕнче чăваш чĕлхипе çырнă çырулăх.

2. Мускав патшалăхĕ саманинче чăваш чĕлхипе çырас ĕç епле тăнă? (Тĕттĕм вăхăт.)

3. Раççей империн крепосла саманинчи чăваш чĕлхипе çырнă çырулăх.

4. Вырăс промышленность капиталĕн саманинчи литература.

X класра:

1. Империализм саманинчи чăваш литератури.

2. Аслă революци саманинчи чăваш литератури: а) халăх поэзийĕн пуххисем; ă) куçарнă илемлĕ литература; б) оригиналлă илемлĕ литература:

– калавсемпе повеçсем;

– сăвăсем;

– пьесăсем;

в) чăваш литературине тишкерес ĕç (критика).

3. Литература юмахĕсем:

– халăх халаплăхĕ революци сывлăшĕпе çĕнелни. Унăн малалли çулĕ;

– чăвашсен çырнă литературин малалли çулĕ.

4. Кĕнекепе тата çырупа усă курма вĕрентесси.

Куртăмăр ĕнтĕ: Г.И.Комиссаров чăваш литература историне IX–X классенче туллин, халăх сăмахлăхĕпе тата çырулăх историйĕпе пĕрле вĕренттерме ĕмĕтленнĕ. Вăл çырулла илемлĕ литературăмăрăн тымарĕсене кăтартасшăн, вĕсен сĕткенĕсем еплерех туратсем тăрăх куçнине сăнасшăн пулнă.

Чăваш литература историйĕ çинчен Г.И. Комиссаров каярах çапла ăнлантарнă: «История чувашской литературы есть наука, которая показывает жизнь искусства, создающиеся словами чувашского языка литературные произведения, литературные течения и стили, и обу́ясняет развитие, борьбу, изменение этих течений и стилей основным фактором, вытекающим из экономики, борьбою классов и деятельностью, зависящими от этого основного фактора и определяемыми им и непосредственно действующими на литературу психоидеологическими факторами» (*Комиссаров Г.* К вопросу о построении Курса Истории чувашской литературы. – Казань, 1931. – С. 4–5).

Хусанти Хĕвел тухăç педагогика институчĕн студенчĕсене Г.И.Комиссаров чăваш литературине вĕрентнĕ çеç мар, тĕпчеттернĕ те. Унăн вĕренекенĕсем 1927–1928 çулсенче çырнă хăш-пĕр ĕçĕсене аса илер-ха:

1) Империализм саманинчи чăваш литератури (М.Н.Николаева);

2) Капитализм тапхăрĕнчи çырулăх палăкĕсем тата куçару литератури (М.Н. Николаева);

3) «Хыпар» хаçат (М.А. Максимова);

4) П.Н. Осипов – чăваш драматургĕ тата вăл çырнă драмăсем (М.А. Максимова);

5) Трубина Марфи пултарулăхĕ (Н.А. Резюков);

6) Чăвашсен юптаруллă тата кулăшла литератури (П.П.Петров);

7) К.В. Иванов пултарулăхĕ (Сергеев);

8) «Словесность» (халаплăх), «литература», «поэзия», «народная словесность» тата «фольклор» сăмахсене ăнлантарни (Николаев);

9) Ваçанккан «Тимĕрçĕ лаççи» (М.А. Максимова);

10) Н.В. Шупуççынни (М.Н. Николаева);

11) Хусанкай пултарулăхĕ (П.И. Павлов);

12) «Нарспи» чăваш пурнăçĕ çинчен каласа кăтартать (В.Порфирьев);

13) XVIII ĕмĕрте чăвашла куçарнă ал çырусемпе кĕнекесем (А.М.Шумилов);

14) Чăваш драматургĕсем: Акимов, Ефремов, Павлов (М.Сергеев);

15) 1780–1860 çулсенче куçарса çырнă тата чăваш халăх поэзине çырса кăтартакан еткерсем (И. Павлов);

16) Хĕветĕр Михалипе унăн «Арçурийĕ» (Н.А. Резюков);

17) Тал-Мăрса тата унăн пултарулăхĕ (А. Шувалов);

18) Кириллов Тарасĕпе унăн пултарулăхĕ (И.А.Иванов);

19) Кореньков сăввисем (Григорьева);

20) Чăваш литературоведенийĕн кăлтăкĕсем (А.Башмаков);

21) Вăрçăллă коммунизм вăхăтĕнчи поэтсем: Ахах, Çеçпĕл Мишши, Тал-Мăрса (Спеньков).

Студентсен çак тĕпчев ĕçĕсем ку таранччен пĕри те пичетленсе тухманха. Çав архивра упранакан ĕçсенче докладсене сӳтсе явнă чухне мĕн калани те пур. Ытларах студентсен наука ертӳçи каласнă. Тĕслĕхрен, Н.А. Резюков доклачĕ хыççăн Г.И. Комиссаров çапла хушса хурать: «Хăйĕн жанрĕпе

«Арçури» стихла çырнă, каласа кăтартакан жанра, поэмăсем патне çывхарать. Ку поэмăра эпир мĕскĕн чăваш хресчен пурнăçне вуласа пĕлетпĕр. Юлашкинчен акă мĕскер ас тумалла: «Арçурие» кăçалхи çултан вăтăр çул ытлашшипех маларах çырнă. Пирĕн чăваш литературин историйĕнче ку поэма паллă вырăн йышăнса тăмалла».

Çапла вара, 1927–1928 çулсенче чăваш литературин историйĕ тĕпчев обу́екчĕ пулса тăрать. Çав çулсенче Г.И.Комиссаров литературăмăр историйĕн ятарлă курсне çырать, программăсем пичетлет. Эппин, чăваш литературоведенийĕн çак пайĕ ку вăхăт тĕлне йĕркеленсе, хăйĕн чи малтанхи утăмĕсене тунă тесе калама пултаратпăр.

Чăваш литературин историне тĕпченĕ иккĕмĕш тапхăр 1929–1934 çулсене ту́р килет. Енчен те 1917–1928 çулсенче çак ĕçе, тĕпрен илсен, Г.И.Комиссаров çеç йĕркелесе пынă пулсан, ку тапхăрта вара çак ĕçе ыттисем те ку́лĕнеççĕ: Н.В.Шупуççынни, А.М.Меценатов, Е.З. Захаров т. ыт. те. Тапхăрăн тепĕр уйрăмлăхĕ çав çулсенчи литература критикинче пролеткультçăсем питех те алхасса кайнинче. Çав ту́нтер социологизм сĕрĕмĕ литературовед-историк пуçĕсене те тивретмесĕр иртме пултарайман. Тĕслĕх вырăнне Н.В.Шупуççыннин «Краткий очерк истории чувашской литературы» (М., 1930) кĕнекине илме пулать. Унти çитменлĕхсене Г.И.Комиссаров питĕ аван кăтартса панă.

Н.В.Шупуççынни чăваш литературин çулне-йĕрне халăх сăмахлăхĕпе те, çырулăх историйĕпе те çыхăнтарса пăхмасть. Вăл литература историйĕн çак тапхăрĕсене курать: 1) революцичченхи литература; 2) юпа революцийĕнчен пуçласа «Канаш» союзне уçичченхи литература; 3) хальхи литература.

Çак классификаци çитменлĕхне Г.И.Комиссаров вырăнлă асăрханă: «Революцичченхи самана пĕр пай, революци хыççăнхи самана тепĕр пай тата вăл саманасене икшер пĕчĕкрех пайсем туса уйăрнă пулсан тĕрĕсрех пулатчĕ». Тĕпчевçĕ рецензилекен кĕнекене чылай чăваш çыравçин ячĕ кĕреймесĕр юлнишĕн, хăш-пĕр фактсем йăнăш кайнишĕн пăшăрханать. Вăл

Н.В. Шупуççыннине чăваш çырулăхĕпе литературине И.Я. Яковлев алфавичĕ йĕркеленнĕ, «Арçурие» çырнă тапхăртан çеç пуçланăшăн ӳпкелет. «Ку тĕрĕс мар, – тет вăл татăклăн, – эпĕр унччен чăвашла сăвăсем çырнине, Хĕветюк ятлă чăваш юрăсем шухăшласа кăларнине (вăл юрăсене А. Фукс пичетленине), пирвайхи чăваш литературçи Михала Çĕпритунĕ «Калаçусем» шухăшласа çырнине пĕлетпĕр».

Н.В.Шупуççынни К.В.Иванов пултарулăхне, пĕтĕмĕшле илсен, аван кăтартнă, унăн «Нарспире» мистицизм пур тесе каланă вырăнĕ вара тӳнтер социологсен витĕмĕнчен килнĕ-тĕр. Лешсем ун чухне кĕнеке авторне хытах тапăннă, ăна идеологи тĕлĕшĕнчен айăплама пăхнă. Акă чи сулахайчăк критик Г. Кузнецов-Кели еплерех çырнă: «Малтан «Нарспи» çинчен: ку произведени, татах калатпăр, малтан пуçласа вĕçне çитичченех кулакла, вак буржуаллă, романтикле произведени. Н.Васильев ăнлантарнипе ку произведенире «кулакпа чухăнсен хушшинчи классен кĕрешĕвне кăтартнă»... «Нарспири» кĕрешӳ – классен кĕрешĕвĕ мар. Сетнер – революциллĕ чухăн мар, вăл хăйĕн нимле интересĕшĕн те кĕрешме пултарайман, хавшак, пурна киле «подкулачнике» тивĕçлĕ çын. Нарспи – пуян, илемлĕ; ăна илемлĕ каччă çеç çитмест. Вăл Сетнере качча кайĕччĕ, анчах ашшĕнчен урлă иртме йăла çук. Çак йăлана Н.Васильев «подневольная доля чувашки» тет. Пит йĕретпĕр эпĕр пуянпа чухăна килĕштерекен «историллĕ» йăла çуккишĕн! Чăваш ĕç хĕрарăмĕн пусмăрла «телейне» К.Иванов кăтартман. Михетер Нарспипе Сетнере мăшăрланма чарман пулсан, К. Ивановпа Н. Васильев шухăшĕпе, чăваш ĕç хĕрарăмĕ ирĕке тухатчĕ, чухăнпа пуян хушшине килĕшӳ, танлăх анатчĕ, вара... пролетари революцийĕ те кирлĕ мар, хальхипе каласан, пĕтĕм кулаксем алă-урапах социализм картишне кăштăрт! кĕрсе ларма пултарĕччĕç» (Халăха вĕрентес ĕç. 1930. 7–8 №).

Çав лару-тăрура Г.И. Комиссаров пролеткультçăсен серепине кĕрсе ӳкменни ăна чыс кӳрет. Енчен те Г.Кузнецов-Кели Н.В.Шупуççыннине «Нарспие» хӳтĕленĕшĕн вăрçнă пулсассăн, Г.И. Комиссаров вара çав

тĕпчевçĕ «Нарспие» мистицизмлă япала тенипе килĕшмен. «Шупуççынни тата «мистицизм», «шовинизм», «сентиментализм» сăмахсемпе тĕрĕсех усă курмасть. Ун шухăшĕпе, «Арçури» те, «Нарспи» те мистицизмлă япаласем», – тет литературовед, кĕнеке авторне татăклăн хирĕçлесе. Вăл илемлĕ хайлав тишкернĕ чух авторсене геройсенчен уйăрма кирлине асăрхаттарать, «Арçури» те, «Нарспи» те реализмлă произведенисем тесе çирĕплетет. «Персонажсен психикине (вăл хушăрах мистицизмне) кăтартни вăл произведенин мистицизмĕ мар, *психологизмĕ* (палăртни авторăн. – *В.Р.*) пулать», – хŭтĕлет Г.И.Комиссаров чăваш литературин классикне çав çулсенчи тŭнтерлетŭçĕсенчен.

Н.В.Шупуççынни кĕнеки тухнă хыççăнах чăваш литература историйĕпе Д.Д.Данилов тата Е.З. Захаров интересленнĕ. Д.Д.Данилов çак темăпа 1934 çулта кандидат диссертацийĕ хŭтĕлет, Е.З.Захаров вара чылаях хулăн кĕнеке кăларать. Вĕсен ĕçĕсенче тŭнтер социологизм сĕрĕмĕ вăйлах палăрнă-ха. Е.З.Захаров хăйĕн ĕçĕнче Игн.Иванова, И.Юркина, Яккупа Хĕветĕр тата Энтри Турхансене, Г.Кореньковпа революцичченхи ытти паллă çыравçăсене, В.Рсай, И.Ахах пултарулăхĕсене пачах пăхман. Çапах та вăл М.Федоров, К.Иванов тата Н.Шупуççынни поэмисене туллинрех тишкерме пултарнă.

1937 çулхи репрессисем пуçлансассăн чăваш литературовечĕсене пĕрерĕн-пĕрерĕн пуç илене ăсатнă: Н.В.Шупуççыннипе Е.З.Захаров унтан пачах таврăнайман, Г.И.Комиссаров Шупашкарта пурăнманнине пула çеç хăтăлса юлма пултарнă. Унăн ячĕ çумне 30-мĕш çулсенче çыпăçтарнă «националист» тата «миссионер» ярлăксем XX ĕмĕр вĕçĕчченех çакăнса тăчĕç. Тен, çавна пулах М.Я.Сироткин хăйĕн чăваш фольклорĕпе революцичченхи чăваш литератури çинчен çырнă очеркĕсене Г.И.Комиссаров ĕçĕсем çине таянса çырнине кăтартма шикленнĕ.

Чăваш литература теорийĕн малтанхи утăмĕсем. Литература теорине илемлĕ хайлава тишкерес ыйтусем, жанрпа стиль проблеми, троп, сăвă хывăм (стихосложение) уйрăмлăхĕсене тĕпчесси т. ыт. те кĕреççĕ. Çак ыйтусем

фольклор наукинче те тĕпре тăраççĕ. Чăваш фольклорĕн уйрăмлăхĕсем, унăн поэтики çинчен каласма XIX ĕмĕрĕн 30–40-мĕш çулĕсенчех пуçланă (А. Фукс, В. Сбоев), каярах çав ĕçе малалла С. Михайлов (Янтуш), Н. Золотницкий тăснă. Чăваш фольклорĕн поэтикине тарăнрах тĕпченĕ çынсенчен чи малтан Н.И. Ашмарина асăнмалла. Хăйĕн «Очерк народной поэзии у чуваш» ĕçĕнче вăл чăваш юррисене тĕрлĕ енчен пăхма, вĕсен илемлĕхне кăтартма пултарнă. Çавăнтах вăл тĕрлĕ вырăнта пурăнакан чăвашсен пурин те пĕр сăвă хывăм пулнине палăртса хăварнă.

Çак шухăш ун чухне чăваш çыруллă поэзине пĕр çулпа – çичĕ сыпăклă силлабика çулĕпе – яма чылай пулăшнă. XIX ĕмĕр вĕçĕнчен пуçласа чăваш поэзийĕ хăвăрт чечекленсе пырать. XX ĕмĕр пуçламăшĕнче вăл классика шайне çитет. Çав чечекленў, силлабикăлла сăвă чечекленĕвĕ, халăх сăмахлăхĕн шалти, курăнсах кайман енĕсене уçни пулнă. Урăхла каласан, К.Ивановпа унăн ўсĕмĕ пиншер çул аталаннă сăмахлăхăн илемлĕ мелĕсене халăх мифологийĕпе, педагогикипе т. ыт. те таччăн пĕрлештерме, синтезлама пултарнă. Ун чухне çыруллă литературăна халăх сăмахлăхĕн тăсăмĕ вырăнне хунă, вĕсене уйăрса хирĕçлетмен. Çавăнпа та çыруллă литература теорийĕ çав çулсенче сăмахлăх теорийĕпе «пĕр варта ўтленнĕ».

«Чуваши Казанского Заволжья» ятлă пысăк тĕпчев ĕçĕнче Г.Комиссаров халăхăмăр историне тата этнографине тĕпченĕ хушăрах сăмахлăх теорийĕн ыйтăвĕсене те хускатать. Юрă сăмахĕсен кўлепине палăртас тĕллевпе вăл ытти халăхсен сăвă хывăм системисене аса илет: «Стихи у разных народов составлялись и составляются не по одним и тем же законам, поэтому в метрике различается стихосложение силлабическое, метрическое и тоническое. В поэзии некоторых народов мы находим или просто ритм мысли, или предложений (параллелизм), или повторение созвучных выражений, или еще так называемый сатурнический размер».

Г. Комиссаров чăваш сăввисене çак асăннă сăвă хывăм системисемпе танлаштарса пăхсан, унта тан сыпăклăх та (силлабикăлла сăвă никĕсĕ),

сыпăксен тĕрлĕ тăсăмлăхĕ те (квантитативлă сăвă никĕсĕ), пусăмлă тата пусăмсăр сыпăксен черетленĕвĕ те (силлабо-тоникăллă – автор ăна тоникăллă тенĕ – сăвă никĕсĕ) пуррине асăрхать. Çак тезисла шухăша автор ăнсăртран мар, нумай сăвва-юрра тишкернĕ хыççăн каланă. Акă тан сыпăклăхах илер. Вăл юрă сăввисенче çеç мар, тупмалли юмахсенче те, тĕрлĕ сăвă-такмакра та йышлă тĕл пулать. Эппин, Г. Комиссаров чăваш сăввинче тан сыпăклăх пур тени тĕрĕс шухăш. Е тата пусăмлă тата пусăмсăр сыпăксен ылмашăвнех илер. Тĕпчевçĕ юрă сăмахĕсене юрламасăр каланă чухне вĕсен пусăмĕсем вăйланнине палăртать. Ун пек чухне çичĕ сыпăклă йĕркесенче тап-таса хорей, ямб е ямбпа анапест хутăшĕ тĕл пулать тесе ăнлантарать вăл. Г. Комиссаровăн çавăнта каланă тепĕр шухăшĕ – сăмахри пусăма çемме пăхăнтарса улăштарма пулать тени – питĕ пĕлтерĕшлĕ. Çакă вăл, пирĕн шутпа, чăваш силлабо-тоникин уйрăмлăхне кăтартакан тĕп фактсенчен пĕри.

Чăваш сăввин квантитативлăхне вăл юрă кĕввинче курнă темелле. Юлашки вăхăтри тĕпчевсем çак шухăш тĕрĕс пулнине çирĕплетеççĕ.

Г.Комиссаров хăйĕн ĕçĕнче чăвашсен революцичченхи силлабикăлла сăввине теори тĕлĕшĕнчен çирĕплетнĕ, Т.Кириллов, К. Иванов тата Н. Шупуççынни поэмисемпе сăввисене халăх поэзийĕпе пĕр рете лартса пăхнă. Çав хушăрах вăл сăвăсене кĕвве хывсан квантитативлă, сăмахсенчи уйрăм сыпăксене пусарах каласан силлабо-тоникăллă çемĕсем пулма пултарассине палăртнă. Кĕлĕсемпе вĕрӳ-суру чĕлхисенче тата мăн кĕрӳ такмакĕнче тĕпчевçĕ ирĕклĕ сăвă варианчĕсене курнă.

Чăваш сăвă теорийĕн иккĕмĕш утăмне тума «Чăваш стихĕсене епле çырмалла» статья чылай пулăшнă. Унăн авторне кăтартман. Ĕç 1919 çулта «Канаш» тата «Чухăнсен сасси» хаçатсенче пичетленнĕ. Ăна Г.Комиссаровах çырма пултарнă. «Çтихсем илемлĕ пулни пуринчен ытла çтихри миçе сыпăкран тата çтихри ударенисенчен килет», – пуçлать хăйĕн сăмахне статья авторĕ. Малалла вăл чăваш сăвви яланах çичĕ сыпăклă пулмалли, иккĕмĕш тата тăваттăмĕш сыпăксем хыçĕнче цезурăсем тăмалли çинчен калать. Сăвва çапла йĕркелесен вăл тури чăвашсемшĕн те, анатрисемшĕн те янăравлă пулĕ

тет автор. Тĕпчевçĕ силлабикăлла сăвва çырнă чухне ытлашши сыпăксене хăçан пăрахса хăварма май пуррине тĕплĕн пăхса тухать, тĕслĕх вырăнне М.Федоровăн «Арçури», К.Ивановăн «Нарспи» поэмисен йĕркисемпе усă курать. Çавăн пекех вăл чăваш сăввинче пуçламăш тата вĕç рифмăсем пуррине кăтартать.

Çапла вара, статья авторĕ чăваш силлабикăлла сăвă теорине малалла аталантарать, унăн тĕп принципĕсене пăхăнсассăн сăвă турисемшĕн те, анатрисемшĕн те янăравлă пуласса шанса тăрать.

1920 çулта «Атăл юрри» журналăн 1-мĕш номерĕнче А.Ивановăн «Çтихсем» ятлă статйи пичетленет. Унта автор сăвăсене историлле аталану куçĕпе пăхса хак панă, чăваш сăмахĕсенче пусăм хăш сыпăк çине ӳкесси редуциллĕ *ă* тата *ĕ* сасăсенчен килнине малтанласа асăханă. Енчен те чĕлхере *парăр, тарăр, килĕр* сăмахсенче пусăм (автор вĕсене хыттăн сас тет) малтанхи сыпăксем çине ӳкет пулсан, «çтихра вăл пĕр сисĕнмесĕрех, ирĕксĕрех иккĕмĕш пай çине куçать» тесе ăнлантарать тĕпчевçĕ. Унăн шучĕпе, чăваш сăввинче ямб (кĕске пай) тата анапест (вăрăм пай) çеç пулма пултарать. Малалла автор çав картсен (стопасен) тĕрлĕ варианчĕсене (ямб Ă ямб Ă анапест; анапест Ă ямб) тĕслĕхсемпе кăтартса парать.

Çапла вара, А. Иванов силлабикăлла сăвă теорине малалла аталантарнă, ăна вăл силлабо-тоника енне çывхартнă тесе калама май пур.

Чăваш силлабо-тоникăлла сăввине теори тĕлĕшĕнчен никĕслекенĕ Çеçпĕл Мишши пулни пуриншĕн те паллă. Вăл хăйĕн паллă статйинче («Чăваш сăввипе ударени правилисем») революци вăхăчĕ силлабо-тоникăна тĕпе хунă сăвăсем ыйтнине, çав сăвва вара сăмах пусăмĕсене редуциллĕ сасăсене кура лартса йĕркелемеллине кăтартса панă. Çеçпĕлĕн тĕп шухăшĕ – сăвва вăхăт çуратать тени. Пурнăçăн йывăр саманчĕсенче вăл сăввисене марш евĕрлĕ илтĕнекен силлабо-тоникăпа мар, ытларах ирĕклĕ сăвă кӳлепипе хайлать, хушăран силлабика патне те таврăнать. Эппин, чăваш поэзийĕнче

силлабо-тоника теорине никĕсленĕ тата унпа тухăçлă усă курнă поэт ытти сăвă кӳлеписене те сивлемен.

Куртăмăр ĕнтĕ: чăваш сăввин теорийĕ 1920 çул тĕлне çуралса çеç мар, чылаях аталанса та çитет.

20-мĕш çулсенче чăваш сăввин çулĕ-йĕрĕ пирки шухăшласа çырни Хумма Çеменĕн пур. Вăл Çеçпĕл Мишши каланă шухăшсене тепĕр хут çирĕплетсе хăш-пĕр çĕнĕлĕхсене асăрхать. Чăваш ударенийĕ вырăссенни пек вирлех мар пулни ăна тонлă техникăна (силлабо-тоника тесе ăнланмалла) йышăнас тĕлĕшрен иккĕлентерет. «Тен, пĕлме çук, чăвашла стихсен техники метрлă техника пулмĕ, тонли те мар, тен, вĕсем хушшинче чăваш чĕлхи майлă пĕтĕмпех урăхла техника шыраса тупĕ», – шухăша путать Хумма Çеменĕ хăйĕн тĕпчев статйинче («Чăвашла стихсен техники çинчен»). Вăл пĕр техникине те мала лартмасть. Унăн шухăшĕ çапла: хăш техника тăрăх сăвăсем лайăхрах шăранаççĕ, хăшĕ ыттисене çĕнтерет, çав сăвă хывăма кăна пурте йышăнĕç. Ĕçлемелле, тăрăшмалла сăвăçсен ку тĕлĕшрен.

Емельян Захарович Захаров (Маден) 1893 çулхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнче халĕ Шупашкар районне кĕрекен Иккасси ялĕнче çуралнă (вĕсем Шупуççыннипе пĕр ялтан), икĕ класлă шкул хыççăн Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче ăс пухнă. 1917 çулта пулас литературовед Петроградри тĕн академине пĕтерет. Тăван ене килсен вăл Етĕрне районĕнчи Мăн Чурашри учительсем хатĕрлекен семинарире ĕçлет. 1921 çулхи кăрлачра ăна Хĕрлĕ Чутайри учительсем хатĕрлекен курса куçараççĕ. 1923–1926 çулсенче Е.Захаров Шупашкарти рабфак пуçлăхĕнче вăй хурать. 1926 çулта вăл Мускава вĕренме каять, Тухăç халăхĕсен наци культурин наука тĕпчев институчĕн аспиранчĕ пулса тăрать. 1930 çулта Е.Захаров тăван Шупашкара таврăнать, Чăваш педагогика институтĕнче ĕçлеме пуçлать. Çав хушăрах вăл Чăваш наука тĕпчев институчĕн директор çумĕн ĕçĕсене туса пырать.

Е.Захаровăн шăпи мĕнлерех çулпа каясси малтанах паллă пулнă. Тĕн академийĕнче вĕреннĕ çынсем, енчен те вĕсем литература аниннe тар юхтарнă пулсассăн, 30-мĕш çулсенчи репрессирен хăтăлса юлма

пултарайман. Ку вăл тĕне хирĕçле политикăран кăна мар, ватă интеллигенци çĕнĕ политикăна ăша хывсах çитерейменнинчен те килнĕ-тĕр. Чун тасалăхĕшĕн çуннă интеллигенци совет номенклатури умĕнче попутчиксем пек, нишлĕ çынсем пек курăннă. Вĕсем революцичченхи еткерлĕхе упрама, ăна вараласран сыхлама-упрама хал çитернĕ-çке! Маларах Е.Захаров ентешĕ Н.Шупуççынни «Нарспи» авторне хӳтĕлесе çырать, литературăмăрăн малтанхи утăмĕсене аван кăтартса парать. Çак хаклава Е.Захаров та çине тăрсах хӳтĕлет.

Тĕпчевçĕ хăйĕн монографи-учебникĕнче тиркесе пулин те Ермей Рожанскин, Виктор Вишневскин, А.Фукспа В.Сбоевăн ĕçĕсене асăнса иртет. Çакă вăл автор вулавçа литературăмăрăн историйĕ вăрăм, унăн тымарĕсем тарăн тесе каланиех пулать. Çавăнтах Е. Захаров Михаил Федоровăн «Арçурине» тĕплĕн тишкерет, хайлав баллада майлă пулни çинчен çырать.

Кĕçтенкки Ивановăн «Нарспине» тĕпчевçĕ ыттисенчен ытларах та тарăнрах тĕпченĕ. Унăн хăш-пĕр шухăшĕсем паянхи ивановçăсемшĕн те усăллă. Калăпăр, «Телейсĕр шăпа» е «Турă çырнилĕх» шухăшĕ» сыпăкрисем. «Поэма фольклор произведенисене пит çывăх тăрать, – тесе çырать тĕпчевçĕ. – Сюжетăн хевтийĕ те чăваш халапĕсенчен илнĕскер... Поэмăна витĕр çапăннă «шăпа», «тур çырнилĕх» шухăшĕ пĕтĕмпех фольклортан». Çакна вăл поэт фольклор материалне пăхăннипе, вĕсен хуçи пулса çитерейменнипе çыхăнтарать. Кунтах поэмăри вăрман сăнарĕн пĕлтерĕшне ăнлантарса пани те пур.

30-мĕш çулсенче К. Иванова кулак поэчĕ тесе хăртнă, класс кĕрешĕвне тĕрĕс çутатмасть тесе айăплана, Нарспипе Сетнер сăнарĕсене тиркенĕ. Н.Шупуççыннипе Г.Комиссаров каланисене çирĕплетсе Е.Захаров «Нарспи» авторне хӳтĕлет, поэмăн тĕп шухăшне çак йĕркесенче курать:

Пуянлăхра анчах мар,
Ыр курасси – çыннинче.
Тату, ырă, килĕшсе

Иккĕн пĕрле пурăнсан –
Çĕр хут ытла телейлĕ
Юрлă çын та пуянран.

Е.Захаров хăй те пуянлăх хыççăн хăвалакан çын пулман. Килĕ-йышĕнче татуллă пурăннă, ывăл-хĕр çитĕнтернĕ, Шупашкар варринче шурă çурт лартнă, хăйĕн ăслăлăх ĕçĕсемпе киленнĕ. Студентсене пĕтĕм чунне парса вĕрентнĕ вăл. Çакăншăн хура чунлисем каçарман ăна: çăхав çырса кирлĕ çĕре çитернĕ. Хăшĕсем каланă тăрăх, хăй вĕрентнĕ студентах пулнă. 1937 çулта Е.Захарова арестлеççĕ те инçетри ГУЛАГа ăсатаççĕ. Унăн архивĕнчи хутсене икĕ михĕпе йăтса кайнă. Унта «Нарспи» поэмăн ал çырăвĕ те пулнă.

Е. Захаровăн чи пысăк та пĕлтерĕшлĕ ĕçĕ вăл – «Чăваш илемлĕ литератури» ятлă вĕренӳ кĕнеки (1934). Унта тĕпчевçĕ тĕрлĕ çыравçăн пултарулăх портречĕсене кĕртнĕ, вăл е ку хайлава хак панă.

Е. Захаров илемлĕ критикăра та хăйĕн сăмахне каланă, пичетре пултарулăхăн тĕрлĕ ыйтăвĕсене хускатнă.

Моисей Федорович Федоров Кăкшăм ялĕнче (халĕ Чăваш Республикин Етĕрне районне кĕрет) 1905 çулхи кăрлачăн 14-мĕшĕнче çуралнă. Хĕрлĕ Чутайри педтехникумран вĕренсе тухсан (1924) пурăнма Етĕрне хулине куçать, унта малтан сăнавлă шкулта, 1925–1928 çулсенче педагогика техникумĕнче ĕçлет. 1928–1931 çулсенче вăл Мускав патшалăх университечĕн историпе философи факультетĕнче ăс пухать, ун хыççăн ăна ĕçлеме Ульяновскри чăваш техникумĕсене (педагогика тата ял хуçалăх) яраççĕ. 1935–1937 çулсенче М. Федоров Шупашкарта пурăнать, пĕр хушă издательствăра, унтан Чăваш правительствин ӳнер ĕçĕсен управленийĕнче вăй хурать. Репрессисем пуçлансан вăл Шупашкартан Мускав облаçне тухса тарать, 1942–1945 çулсенче вăрçăра пулать, кайран мĕн çĕре кĕричченех (1985 çулччен) Фрязино хулинче пурăнать, музыка шкулĕнче ĕçлет.

М. Федоровăн пултарулăхне икĕ тапхăра уйăрса пăхмалла: 20-мĕш тата 30-мĕш çулсенче çырнисем. Вĕсем пĕр-пĕринчен вăхăтне кура кăна мар,

тĕпчевçĕ пултарулăх çине тĕрлĕ куçпа пăхнипе, хăй теори енчен аталанса пынипе те уйрăлса тăраççĕ.

20-мĕш çулсенчи пултарулăхĕ. Тĕпчевçĕн малтанхи ĕçĕсем 1927 çулта пичетленме пуçланă. «Сунталăн» 4-мĕш номерĕнче унăн «В. Рсайăн «Аслати умĕн» пирки» ятлă рецензийĕн кĕскетнĕ вариантĕ кун çути курать. Унта М.Федоров илемлĕ хайлава пурнăç хăй кăларать, çыравçă вара ăна ӳкерсе кăна парать тесе палăртать. Ку чăн пурнăç факторне вăл пултарулăх процесĕнчен маларах лартнине кăтартса парать. Автор хăй класĕн психологине кăна кăтартма пултарать тесе çирĕплетни те ыйтăва ытлашши ансатлатнипе çыхăннă. Çав курăм тĕпчевçе В.Рсай хайлавĕ «хресчен психологиллĕ поэма» пулса тухнă тесе калаттарать. Ку вара «поэмăн тĕвви тĕрĕс мар» текен пĕтĕмлетӳ патне илсе çитерет.

Çак рецензин ырă пĕлтерĕшĕ автор «çыравçă – вулавçă» çыхăнăва критикăра малтанласа хускатнинче темелле. Хайлава вулакан ăнланмасть тесе ансатлатма юраманнине, ӳнерĕн «малаллах, çивĕчленсе утмаллине» вырăнлă палăртнă тĕпчевçĕ. Çав хушăрах çыравçăпа вулавçă хушшинче «хачă» пулма пултарассинчен асăрханмаллине те систерет вăл: «Литературăри «хачă» та ырах мар. Çыраканĕсем çырĕç, вулаканĕсем пулмĕç».

Тепĕр статйинче («Пĕр-ик сăмах илемлĕ литература пирки») М. Федоров теори ыйтăвĕсене ытларах хускатнă. Илемлĕ литература ыттисенчен (политика, экономика е философи) «хăй калас шухăша ăс-хакăл çине мар, çыннăн сисĕмĕ, сисĕм вăйĕ çине уртăнса», сăнарсен «килентерекен савăшла чĕлхипе шăрантарса парать». «Çырма йышăннă темăна сисĕмпе, интуиципе анчах мар, – аталантарать вăл хăйĕн шухăшне, – калаври, поэмăри, сăвăри темăна яланах çирĕплетсе пыма пĕлес пулать». Литература ĕçне пуçăннă çынсен ăс-хакăлĕ пысăк пулмаллине те, тема суйланă чухне кирлĕрех япалана асăрхама чухламаллине те, паян малта тăракан ыйту ыран кивелме пултарнине асра тытмаллине те астутарать тĕпчевçĕ.

Хресчен психологийĕ ушкăнла психологи мар тесе шухăшлаканскер, М.Федоров чăваша пролетари психологиллĕ литература кирлĕ тесе çирĕплетет, çакна васкасах тумалли ĕçсен шутне кĕртет. Çакăнта «Сунтал» журналăн историлле тĕллевне, халăх психологийĕпе сисĕмне йĕркелемелли майсене курать вăл.

1927 çулта çырнă виççĕмĕш статйинче («Шкулсенче илемлĕ литературăпа паллаштарасси, вĕрентесси») М.Федоров ытларах меслет ыйтăвĕсене хускатнă. Чи малтанах вĕрентӳ ĕçĕнче вăл ӳсĕм психологине тĕпе хума тăрăшнине палăртмалла. Сăмахран, поэтикăна кĕçĕн тата вăтам классенче хăйне уйрăммăн вĕрентнине сивлет вăл, ăна хайлавпа паллаштарнă май кăна пăхса тухма кирлине астутарать. Аслă классенче вĕрентнĕ чухне вара тĕрлĕ ăнлавсене малтан чăваш литератури урокĕнче, унтан тин вырăс литератури урокĕнче ăнлантарни тĕрĕсрех пулнине палăртать.

Литературăна вĕрентнĕ чухне вĕрентӳçĕн тепĕр принципа та асра тытмалла иккен: «Произведенисене яланах пĕтĕмпе вулама тăрăшмалла». Унсăрăн хайлав пайĕсен çыхăнăвне ачасем ăнланса юлмасан та пултараççĕ. Паянхи меслетçĕсем ăна пĕрлĕхлĕ ăша илӳ (целостное восприятие) тесе палăртаççĕ. Хайлавсене вĕренни ачасен пултарулăхне аталантармалли майсене туса памалла тени те паянхи меслет теорийĕпе килĕшсе тăрать.

Çапла вара, М.Федоров хăйĕн малтанхи ĕçĕсенчех ăста меслетçĕ пулнине кăтартса панă. Теорире вăл вырăс тĕпчевçин В.Переверзевăн ĕçĕсем çине таянни, çавна пула мала социаллă психологие кăларса тăратни сисĕнет. Тишкерӳ ĕçĕнче чăваш теориçи черетленсе пыракан виçĕ тапхăра уйăрса пăхать: *социологилле* тишкерӳ, *психологилле* тишкерӳ тата *формăллă* тишкерӳ. Пĕрремĕшĕнче тĕпчевçĕ хайлав чăн пурнăçпа еплерех çыхăнса тăнине сăнать, ăна хайланă май панă сăлтавсене пăхса тухать. Иккĕмĕшĕнче тĕпчевçĕ хайлавра халăх психологийĕ пуррипе çуккине кăтартса парать. Çапла кĕçĕнрех классенчи ачасене тишкерттерни вырăнлă. Аслă классенче вара автор психологине палăртни мала тухса тăмалла. Виççĕмĕш тапхăрта

тĕпчевçĕ поэтикăна кĕрекен тĕрлĕ енсене пăхса тухать, хайлавăн ăш-чикĕпе форми пĕр-пĕринпе килĕшсе пынипе пыманнине палăртать. Çапларах пулмалла М.Федоров сĕнекен тишкерӳ йĕрки. Ăна вăл В.Переверзев ĕçĕсене вуласа ăша илнĕ.

1928 çулта М. Федоров нацин çĕнĕ культурине (ăна вăл нацилле культура тет) йĕркелес ыйтусемпе кăсăкланать. «Канаш» хаçатра пичетленнĕ «Пĕр-ик сăмах наци культури пирки» статйинче (çĕртмен 14, 16-мĕшĕсенче) вăл çапларах проблемăсем хускатать: «Мĕнле пулмалла чăваш культури? Мĕнле сĕткенпе тăранса пурăнмалла унăн? Мĕнле çулсемпе аталанма пултарать вăл? Хăш çулĕ якарах та, тӳрĕрех те? Паян мĕн тумалла? Ыран валли мĕн хатĕрлемелле? Çак ыйтусем пур чăваш ĕç çынни умĕнче те тăмалла. Пĕтĕм халăх çак ыйтусем çине ответлеме пултараймасăр эпир хăвăрттăн малалла кайма пултараяс çук».

Культура революцийĕн тĕп лозунгĕ чăвашсемшĕн «чăвашла культура, нацилле культура тăвасси» тесе шутлать М. Федоров.

«Пирĕн культура нацилле культура пулмалла, çав вăхăтрах пролетарилле те пултармалла. Пирĕн культура наци тумне тумланмалла, наци кĕлетки ăшне вырнаçмалла, чăваш халăхне ытти халăхсенчен уйăрса тăракан ăрасналăхсене палăртса тăмалла, чăваш халăхĕн пурнăç условийĕсемпе килĕшсе пымалла».

Нацилле культура йышне чăвашла çырнă кашни хайлавах кĕме пултараймасть иккен. Апла пултăр тесен наци психологине кăтартмалла. «Нацилле культура тесе нацин ăрасналăхĕсем, нацие кăна тивĕçлĕ енсем çапăннă культурăна калаççĕ», – пĕтĕмлетет тĕпчевçĕ. Вăл обществăлла психикăн «культура тăвасшăн ĕнерĕннĕ психика» пулмалла тесе çирĕплетет. Унсăрăн наци культури тăвас ыйтăва лартмалла та мар. Тĕпчевçĕ хăйĕн прогнозне лирикăлла палăртать: «Пур енчен те сĕрĕм. Шухăшсем çураççĕ, вăрман пек кашлаççĕ, малта мĕн: çутă пур-и, çутти курăнать-и – пĕлместпĕр, пĕлесрен таратпăр». Тĕпчевçĕн шухăшĕ çирĕп, вăл малалла пăхса çапла курать: «Чăваш халăхĕн малалли çулĕсене шырамалла пирĕн».

Тĕпчевçĕ чăваш интеллигенцийĕн шăпи пирки те шухăшласа çырать. Çав социаллă сие вăл «чăваш хушшинче чăваш халăхĕшĕн ĕçлекен çынсене» кĕртет, ун çинчен сăмах хускатмасăр «нацилле культура çинчен каласни те юрăхсăр, вырнаçусăр япала» пулнине ĕнентерет. Çав нацилле культурăна тăвас тесен чи малтан совет аппаратĕнче ĕçлекенсен хура халăх çине çӳлтен аялалла пăхнине, унпа чăвашла каласманнине пĕтермелле тет вăл. Шухăшне аталантарса çапла пĕлтерет: «Вырăсла калассан, вырăсла çыхăнсан совет аппарачĕ чăваш халăхĕшĕн нихăçан та тăван пулас çук, чăвашла çыхăнмасан нихăçан та бюрократизма пĕтерес çук». Чăваш чĕлхин малашлăхĕ çинчен юмăç ярса ларас вырăнне пурин те çанă тавăрса ĕçлемелле: орфографи правилисене çирĕплетсе çитермелле, чăваш шкулĕсем валли чăвашла кĕнекесем кăлармалла, шкулсенче вара ют чĕлхерен куçарнă хайлавсене мар, тăван халăх пурнăçĕпе çыхăннă чăваш литературине вĕрентмелле, сакăр çуллă шкулсенче предметсене чăвашла вĕрентме тăрăшмалла. Тата ытти ыйтусене те хускатнă тĕпчевçĕ çав теорипе практикăна çураçтарма ăнтăлнă статьяра.

«Литература политикин тĕп йĕрĕ» статйинче (1928) М.Федоров литература политикине ăслăлăх çулĕ-йĕрĕ çине лартас ыйтăва хускатать. Раççей пролетари писателĕсен ассоциацийĕн (РППА) чăваш уйрăмне хăйĕн платформи кирлине вăл «чăваш условийĕсене пăхăннă, чăваш хальхи пурнăçне килĕшĕннĕ платформа» пулмаллине кăтартать тĕпчевçĕ. Ун шучĕпе, теори ĕçĕ опытран иртсе каймалла, вăл конкретлă ĕçшĕн маяк вырăнне шутланмалла. «Теори ĕçĕ – опыта ăнланса илесси çех мар. Мала чупса тухса çула çутатса пырасси те теори ĕçех. Платформа та çавăн пек çул кăтартса пыракан маяк тата ăна çул çинчи тумхахсемпе шăтăк-çурăксем юхма чăрмантарса, салатса, сирсе, чарса, картласа тăрасран хăтарма çутатса тăракан фактор пулмалла», – акă мĕнле шухăшлать вăл литературăри теорипе опыт вырăнĕ пирки. Пĕтĕмлетĕвĕ вара пĕр: «илемлĕ литературăн тĕп ыйтăвĕ – литература пурнăç опытне теорипе çыхăнтарса унăн малашнехи çул-йĕрне, принципĕсене «формăласа пырасси».

Çав платформа культурăн нацилĕх паллисене тĕпе хурасси М. Федорова пачах та иккĕлентермест.

«Пирĕн платформа чăваш хальхи пурнăçне, ун кил йăлисене, ун шухăшĕпе сисĕмĕсене, ун туйăнăвĕсене пăхăнса çырăннă платформа пулмалла. Кашни халăхăн та хăйне кăна, ăна çех тивĕçлĕ ăрасналăхсем пур. Пирĕн платформа чăваш халăхĕн нацилĕхне, чăваш халăхне наци тăвакан ăрасналăхсене хисепе илсе вĕсене пăхăннă платформа пулмалла».

Уйрăм платформа çукки критиксене тĕрлĕ тишкерӳ шкулĕсене пăтраштарса та хутăштарса яни патне çитернине тĕслĕхпе çирĕплетсе кăтартать тĕпчевçĕ.

1928 çул тĕлне М. Федоров тĕпчевçĕ кăна мар, тарăн шухăшлавçă тата теориçĕ, халăх культурипе тата интеллигенцийĕпе туллин кăсăкланакан çын пулнине куратпăр.

1929 çулта М. Федоров хăй малтан палăртнă тĕпчевçĕ пултарулăхне тарăнлатать, ăна тĕрлĕ сферăра кăтартма пултарать: литература теорийĕнче, илемлĕ критикăра тата меслетлĕхре. «Илемлĕ литература, ун методологийĕ, ăна техникумсенче вĕрентесси» статйинче (Халăха вĕрентес ĕç. 1929. 8–9 №) М. Федоров литературăна тĕрлĕрен ăнлантаракансемпе тупăшса унăн «хăйне кăна тивĕçлĕ ăрасналăхĕ, спецификумĕ» пуррине палăртать.

«Анчах та мĕн вăл литература?

Литература – искусствăн пĕр турачĕ, искусство ăрасналăхĕсем – искусство спецификумĕ, çав вăхăтрах литература ăрасналăхĕсем – литература спецификумĕ... Литература – искусствăн пĕр турачĕ – образсен системи» (палăртни авторăн. – *В.Р.*).

Тĕпчевçĕ чылай критик хайлав тенденцилĕхĕпе идейăна пăтраштарнине кăтартса парать. «Мĕн вăл тенденцилĕх? Тенденцилĕх – идейăшăн, тĕп шухăшшăн образсене, образ системине ирĕксĕрлени, – хăйĕн ыйтăвне хăех хуравлать Мускав университечĕн студенчĕ. – Образсен системи тĕп шухăшăн логикине пăхăнмалла мар, образсен системи системăн ăшри саккунлăхне,

йĕркелĕхне пăхăнмалла. Пире нимĕскерле тенденцилĕх те кирлĕ мар. Тенденцилĕх приспособленцăсемшĕн кăна!»

Теориçĕн литература критики пирки ăнлантарса çырни те хăй евĕрлĕ. Унăн шучĕпе, критикăн тĕп тĕллевĕ – илемлĕ хайлаври сăнарăн (автор ăна *сăнлăх* тесе калать) пурнăçри эквивалентне тупса ăнлантарасси, пурнăçăн хăш татăкне, хăш вăхăтне çыравçă сăнар туса панине ăнлантарасси, камсен, мĕнле класăн, хăш сийĕн пурнăçне сăнланине тата вĕсен психикине ăнлантарса парасси.

Содержанипе форма ыйтăвĕсенчен те пăрăнса иртмест М. Федоров. Хайлавра мĕн çинчен çырни содержани мар, чăн малтан фабула пулать. Илемлĕ литература содержанийĕ вăл «сăлтавпа следстви çыхăнăвĕпе тытăнса тăракан пурнăçри факт образĕн характерĕ». Çак теорилле ăнлава вăл тĕслĕх илсе çапла уçăмлатать: «Сетнер характерĕ, Сетнер йăлисем, шухăшĕсем, Нарспи характерĕ, вăл хăйне обществăра мĕнле тытни, ун пурнăçа ăнлантаракан шухăшĕсем, пурнăç çине мĕнле пăхни, çемье çине мĕнле пăхни, юрату ыйтăвĕпе çыхăннă ĕç-хĕл, поэмăри ытти çынсен характерĕ – «Нарспи» поэмăн содержанийĕ».

М.Федоровшăн форма вăл пурнăçри фактсене обӳектланă майсем. Çавна кура чăваш литературин те пролетари содержаниллĕ, çав хушăрах хресчен формиллĕ литература пулмалла тет тĕпчевçĕ.

Илемлĕ литература историйĕ пирки те шухăшланă çамрăк тĕпчевçĕ. Вăл ăна культура е çырулăх историйĕпе хутăштарса янине хирĕç, çав истори «сăнлăхлă литературăн историйĕ» кăна пулмалла тесе шухăшлать. Çав хушăрах унăн тапхăрĕсене экономикăпа культура тапхăрĕсен ăшне кĕртсе лартни ăнăçлă мар, вĕсем «литературăри образсен системин эпохисемпе, литературăри стиль эпохисемпе килĕшсе пымалла».

Г.Комиссаровăн тапхăрлас меслетне кăна мар, историлле-биографилле тĕпчев меслетне те йышăнмасть М.Федоров. Хайлав çуралнă вăхăта, автор биографине тĕпчени тишкерӳшĕн тĕпре мар тет вăл. Илемлĕ литературăна малтанах хатĕрленĕ, малтанах янтăланă экономикăпа общество схеми ăшне

кĕртсе лартмалла марне кăтартать тĕпчевçĕ. Социаллă психика урлă кăна ăнлантармалла унти фактсене. Унпа кăна та мар иккен: «произведени характерне произведенин ăшри логикин саккунлăхĕпе ăнлантармалла». Енчен те хайлава çыравçă пурнăçне пăхни урлă ăнлантарсассăн, ку вăл пултарулăх психологине кĕрсе кайнине пĕлтерет. Çакă вара, М.Федоров шухăшĕпе, литература ăслăлăхне «урăх ĕретре тăракан наука» енне туртса каять.

Теори пĕлтерĕшлĕ шухăшсем М. Федоровăн обзорлă ĕçĕсенче те («Произведенисен формăлăхĕ», «Пуçлакан поэтсен пултарулăхĕ») тĕл пулаççĕ: «Калав пайĕсем ăнсăртла çыхăнупа мар, пулмалăх çыхăнăвĕпе çыхăнса пымалла»; «Пире натурализм кирлĕ мар, эпир реализмшăн тăрă-шатпăр. Пирĕн шутпала, пурне те çырмалла мар. Ăнсăртла (çапла куçарасшăн эпир *случайное* ятлă сăмаха) япаласем илемлĕ произведенире пулмалла мар пирĕн шутпала. Произведенире сăлтавпа следстви çыхăнăвĕпе явăннă фактсем кăна пулмалла»; «Вулаканăн психики яланах пĕр çĕрелле туртăнать, вăл яланах тĕпре тăраканнине шырать, ăна парас вырăнне писательсем хăйсем вулакансен шухăшне сирсе яраççĕ».

Илемлĕ критикăра М. Федоров çамрăк çыравçăсене теорие алла илме, ăстăн енчен аталанма, чăн-чăн илемлĕ хайлавсем çырма чĕннĕ, çапла кăна «илемлĕ пултарулăхăн сарлака çулĕ çине тухма» май пулнине ĕнентернĕ. Хăйĕн ĕçĕсенче вăл ятлă-сумлă çыравçăсен çитменлĕхĕсене те асăннă, вĕсене тенденциллĕ ăшăх хайлавсем çырассинчен асăрханма сĕннĕ. Çав хушăрах тĕпчевçĕ чăваш лиро-эпикине П. Хусанкайăн «Пушкинпа калаçни» çулĕпе (интеллигенци поэзийĕн юхăмĕпе) мар, «Çирĕм улттă» çулĕпе ярасшăн пулнă. Çакна тĕпчевçĕ чи мала социаллă психикăна лартнипе çыхăнтармалла-тăр.

30-мĕш çулсенчи пултарулăхĕ. Ку тапхăрта ăслăлăхпа критикăра пысăк улшăнусем пулса иртеççĕ. Чи малтан вăл М. Федоров тĕрек тупнă В. Переверзев теорине çапса çĕмĕрнинче, çавна май ăна ăша хывса çырнă ĕçсене хытах сивлениннче курăннă. Чăваш пичетĕнче М.Федорова ятласа çырнă ĕçсем

çине-çинех кун çути курнă. Çав лару-тăрура тĕпчевçĕн тӳрре тухма тивнĕ. 1931 çулхи утă уйăхĕн 21-мĕшĕнче ЧППА пленумĕнче вăл акă мĕнле шухăшсем каланă: «Ман йăнăш – классене манса кайнинче мар, вĕсене йăнăш, Переверзевла ăнлантарнинче».

М.Федоров малтан хресчен психологиллĕ литература текенскер, халĕ писательсене пролетари çыравçисем, попутчиксем тата национал-демократсем çине уйăрса пăхать. Хăйне вăл Переверзевран пăрăннă çын пек кăтартма тăрăшать: «Унăн (Переверзевăн) базиспа надстройка хутăшса каяççĕ. Ман вăл çук. Ман хамăн уйрăмлăх пур, вăл – социаллă психика».

1935 çулта пичетленнĕ «Искусство – обществăлла пурнăç ӳкерчĕкĕ» статйинче М. Федоров хăй малтан каланисене хирĕçле çырать: «Искусство ăс-тăнла ӳкерчĕк мар, характер кăна пулсан, искусствăн активлăхĕ пулмасть, вара искусство класлă идеологи пулнине те, леш е ку класа хăйĕн историлле вырăнне çирĕплетме пулăшнине те йышăнмалла мар пулса тăрать. Чăнах та, партилĕх принцип вырăнне Переверзевăн обӳективизм тухса тăрать. Тепĕр енчен, сăнлăх – характер пулнинчен, искусство – вăйă пулнинчен Переверзев художникăн рольне кăларса пăрахни тухса тăрать. Çапла, ун шухăшĕпе, писатель хăй класне кăна кăтартса пама пултарать, ытти классене кăтартса пама пултараймасть, ытти класс представителĕсем масса пек кăна пулса тăраççĕ... Переверзев çинчен каланă май манăн çакăн çинчен асăнса хăвармалла. 1929 çулта пичетленнĕ ман статья та, пĕтĕмĕшле илсен, Переверзевла статья, çавăн пирки вăл та йăнăш, меньшевикла статья».

Хăйĕн ĕçĕсенче тĕпчевçĕ соцреализм теорийĕн принципĕсене мала кăларса тăратать, чăваш художникĕсене тĕрлĕ «-изм»па (обӳемлă кубизм, биологизм, национализм, реакцилле романтизм) айăплать. Ку вăхăтра вăл ытларах философипе, ӳнерсем пуçланса кайнă ыйтусемпе кăсăкланать, логикăлла тата сăнарлă шухăшлавăн историлле аталанăвне сăнать. Шел пулин те, репресси çулĕсенче вăл критикăпа ăслăлăхран пуçĕпех пăрăнать.

М.Федоров питĕ нумай çырман пулин те, унăн 20–30-мĕш çулсенчи чăваш общество пурнăçĕнче хăйĕн вырăнĕ пурри иккĕленӳсĕр. Чи малтанах унăн философи куçĕ пурри, тĕпчев обӳектне контекста лартса каласма тăрăшни питĕ пĕлтерĕшлĕ. Вăл тишкерӳçĕн теорине лайăх пĕлмелле, теорин яланах малта пымалла тени вара паянхи литература тĕпчевçисемшĕн те актуаллă. Вăл сыхçă идеологсене шуйхатма, вĕсене хăйĕн тарăн пĕлĕвĕпе анратса яма тата çăварĕсене хуптарма пултарнă.

* * *

Çапла вара, 20–30-мĕш çулсенче чăваш литература теорийĕпе историйĕ, йывăррăн пулин те, уралансах пырать. Текстсен пуххисем, литература процесне тĕпченĕ ĕçсем кун çути кураççĕ, литераторсен хушшинче пултарулăх тавлашăвĕсем пулса иртеççĕ. Ку вăл литература пурнăçĕ хĕрсе пынине, наци интеллигенцийĕн авангарчĕ халăхăн паянĕпе ыранĕ пирки шухăшланине пĕлтернĕ. Соцреализм меслечĕ эстетикăри ирĕклĕхе хĕссе пынă пулин те 30-мĕш çулсенче уйрăм çыравçă (П.Хусанкай, И.Тăхти) хăйсем калас тенине пĕлтерме майсем тупнă-тупнах. Чăваш литература пĕлĕвĕнче вара çĕнĕ сăмах калаканĕсем Г.Комиссаровпа М.Федоров пулнă.

Усă курмалли литература

Родионов В.Г. Чăваш литература вĕрентĕвĕн малтанхи утăмĕсем // Чăваш литератури: поэтикăпа стиль ыйтăвĕсем: Ăслăлăх статйисен пуххи. – Шупашкар, 1989. – 5–21 с.

Федоров, Моисей. Тĕпчевсем. – Шупашкар : ЧПГĂИ, 2005.

ПĔТĔМЛЕТӲ

Чи малтан 1917–1930 çулсем литература процесĕн пĕр тапхăрĕ пулнине палăртмалла. Унăн тĕп паллисем çаксем: 1. Илемлĕ литература сăмахлă культурăри хăй хаклăхлă, хăйĕн жанр тытăмĕллĕ пай пулса тăрать, вăл халăх сăмахлăхĕпе йăла-йĕрке комплексĕнчен уйрăлса çитет. 2. Ун чухнехи илемлĕх ăнĕ халăхăн культурăпа истори, общество ăнĕпе çураçăнса, пĕр

çыхăра аталанать. Наци чĕрĕлĕвĕн идейи хайлавсенчи тĕп шухăша, жанрпа стиль шухăшлавне йĕркелет. 3. Харкам çын ирĕклĕхĕ енне туртăннă литература çĕнĕ харкамçăсене калăплать. Тавлăклă шухăшлавăн традицилле витĕмĕ жанр тытăмĕнче вăйлă палăрать. Иртнинчен пуласлăха куçакан вăхăта çивĕч туйни малтанхипе (киввипе) ыранхине (çĕннине) хирĕçлетсе пăхма хистет. Çыравçăсен пĕр пайĕ пуласлăх хуравне авалхи идеаллă вăхăтра (Пăлхар патшалăхĕн саманинче) курать.

Тĕрĕссипе, çакăнта палăртнă тĕп паллăсем XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи литературăра та курăнаççĕ. Енчен те XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче (1903–1904 çулсем таранах) çутлăх реализмĕн литератури хуçаланнă пулсан, çĕнĕ ĕмĕрĕн малтанхи çулĕсенче çыравçăсем социаллă ыйтусене ытларах хускатма пуçлаççĕ. Тĕттĕмлĕх проблемисем социаллă тата наци пусмăрĕ пирки калаçнине куçаççĕ, интеллигенци наци шăпи, унăн пуласлăхĕ çинчен шухăшлама тытăнать. Çавна май литературăра реализм тата романтизм юхăмĕсем харăсах вăй илсе пыраççĕ, чылай чухне вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрма та çук.

Шăпах çак тапхăрта чăваш литература классики йĕркеленнĕ, наци чĕрĕлĕвĕ çĕнĕ вăй илнĕ. Кунта 1917 çулхи пăлхавăрсен пĕлтерĕшĕ питех те пысăк. 20-мĕш çулсенче илемлĕ литература хăйĕн шалти саккунĕсемпе аталанакан, хăйĕн поэтикипе йĕркеленекен система пулса çитет.

Чăваш литератури çак тапхăрта поэтикăра тунă тĕп çитĕнӳсем:

1. Лирика тĕсĕсемпе жанрĕсем туллин палăрса çĕнĕ харкамçă сăнарĕ йĕркеленĕ. Çеçпĕл Мишши поэтики-сăвви традицине хывăнса пырать, ăна П.Хусанкай çĕнĕ шая çĕклеме пултарать.

2. Драматурги жанрĕсем хăвăрт йĕркеленсе театрпа харăс аталанаççĕ. Ирĕклĕх идейи Ф.Павлов, Г.Тал-Мăрса, И.Максимов-Кошкинский, П.Осипов тата М.Юрьев хайлавĕсенче хăйне евĕр ӳкерĕнет, «Чăвашкино» пысăк çитĕнӳ тăвать.

3. Малтанласа поэзирен вĕренсе пынă проза 20-мĕш çулсенче икĕ юхăмпа аталанса каять. Пĕрремĕшĕ анăçри беллетристика çулĕпе, уйрăм çын

характерĕ йĕркелес йĕрпе пырать. Кунта кĕрекен В.Рсай, С.Ялавин тата ытти çыравçăсем чылай пысăк çитĕнӳсем тума пултараççĕ. Тепĕр çулĕ – И.Тăхти кĕрсе кайнă тĕнче, унăн поэтики. Вăл фабулăран ытларах юнашар тăракан сăмахсен ассоциаци ретне, монтаж мелне, ăн юхăмне кăмăллать. Унăн хайлавĕсенчи шухăш чылай чухне нумай сийлĕ: вăл ансат вулавçăшăн çиелтех выртать, тарăннишĕн вара шаларах пытарăннă. Ирони, сăмах йӳнетĕвĕн мелĕсемпе ăнăçлă усă курса И.Тăхти халăх культуринче авалтан килекен калупа риторика стилĕсене синтезласа аталантарать.

Литература теорийĕпе историйĕнче Г.Комиссаровпа М.Федоров ĕçĕсем паллă вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем чăваш çыравçисене пролеткультçăсенчен хӳтĕлеме тăрăшнă, илемлĕ пултарулăхăн хăйĕн саккунĕсем пуррине палăртнă, ăна политикăпа пăтраштарма юраманнине асăрхаттарнă.

Ыйтусемпе ĕçсем

I сыпăк.

1. Чăваш наци ăнĕ аталанни, политика юхăмĕсемпе çыравçăсен ушкăнланăвĕсем.

2. Чăваш драматургийĕн малтанхи çитĕнĕвĕсем.

3. Ф.Павлов пултарулăхĕн тĕп тапхăрĕсем.

4. 1917–1922 çулсенчи чăваш поэзийĕн хăй евĕрлĕхĕ.

5. Çеçпĕл Мишши поэтики.

6. Çеçпĕл Мишши прози.

II сыпăк.

1. Чăваш çыравçисен тĕрлĕ пĕрлешĕвĕсемпе ушкăнланăвĕсем.

2. Историлле драма жанрĕ вăй илни. П.Осипов пултарулăхĕн тĕп тапхăрĕсем.

3. Чăваш лиро-эпикин çулĕ-йĕрĕ.

4. Чăваш лирикинчи çитĕнӳсем.

5. Ç.Элкер пултарулăхĕн тĕп тапхăрĕсем. «Хĕн-хур айĕнче» редакцийĕсем.

6. П.Хусанкай лирикин хăй евĕрлĕхĕ.

7. П.Хусанкайăн лиро-эпики. «Тилли юррисен» пултарулăхлă историйĕ.

8. 1923–1930 çулсенчи проза аталанăвĕ.

9. И.Тăхти прозин хăй евĕрлĕхĕ.

10. Литература теорийĕпе историйĕ йĕркеленсе аталанни. М.Федоров пултарулăхĕ.

Çакăнти кашни темăпах рефератсем çырмалла, вĕсен планĕсене кĕнеке сыпăкĕсемпе пайĕсенчи вакрах ятсене кĕртсе йĕркелемелле.

УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА

Ефрем Еллиев. Çĕнĕ ăнланупа ăнлантару / ЧПГĂИ. – Шупашкар, 2002. – 120 с.

Комиссаров Г.И. О чувашах. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2003. – 528 с.

Митта Вăçлейĕ. Çырнисен пуххи. I том. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2004. – 399 с.

Павлов, Федор. Çырнисен пуххи. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1992. – 574 с.

Рсай, Виктор. Çырнисен пуххи. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2004. – 446 с.

Çеçпĕл Мишши. Çырнисен пуххи. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1989. – 526 с.

Тăхти И. Поэзи. Проза. Публицистика. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1970. – 373 с.

Хусанкай П. Çырнисен пуххи. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1997 (I т. – 543 с.); 2002 (II т. – 558 с.); 2002 (III т. – 542 с.); 2003 (IV т. – 478 с.); 2005 (V т. – 478 с.); 2006 (VI т. – 479 с.)

Федоров, Моисей. Тĕпчевсем / ЧПГĂИ. – Шупашкар, 2005. – 276 с.

Элкер, Çемен. Хурапа шурă: тĕрлĕ вăхăтра çырнисем. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1994. – 447 с.

Мĕтри Юман. Суйласа илнисем. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1997. – 543 с.

ЧУВАШСКАЯ ЛИТЕРАТУРА
(1917–1930-е гг.)

Рассматриваемый в данной книге период истории литературы, в том числе чувашской, определился логикой тех исторических и этносоциальных событий, которые произошли в первой половине XX в. Социально-политические потрясения в России начала века сопровождались национально-освободительными движениями и ростом национального самосознания народов. В 1917 г. произошли две революции, результатом которых была смена государственного строя и общественных отношений. Начался стремительный процесс развития национальных окраин, царской Российской империи. У интеллигенции ранее угнетенных народов зародились чаяния и надежды на достойное и равноправное сосуществование при советской власти. Но в 30-е гг. курс на национальное возрождение был свернут под лозунгом борьбы с местным национализмом. В результате этой организованной сверху кампании основная часть творческой, научной и педагогической интеллигенции была полностью уничтожена. Репрессии 30-х гг. явились закономерным итогом кровавых дел революционеров и обманутой ими интеллигенции.

Время с 1917 по 1930-е гг. составляет единый период в развитии чувашской литературы. Художественная литература становится самоценной, обладающей своими жанрами частью словесной культуры, выделившись из состава обрядовой и народной словесности. Художественное сознание того времени, составляя неотъемлемую часть культурного и общественно-исторического сознания народа, развивается параллельно с ними. Идея национального возрождения определяет основную мысль, жанры и

стилистическое своеобразие произведений. Интеллигенция же начинает рефлексировать о судьбе нации и ее будущем.

Другой отличительной чертой данного периода истории чувашской литературы является смена философско-мировоззренческой парадигмы и типа мышления народа.

Многие доступные человеку явления природы цикличны, т.е. имеют возврат к их первоначальному состоянию: день – ночь, новолуние – полнолуние, лето – зима и т.д. Поэтому неудивительно, что древние народы, в том числе и предки чувашей, определяли время по этим циклам природы. Идея цикличного времени определила структуру чувашской народной культуры и языка. Календарь и вся система обрядов чувашей подчинена этой генерализирующей идее времени, периодически возвращающегося к своим истокам. Чуваши-огнепоклонники верили, что законы человеческого времени тоже подчиняются идее цикличности. К примеру, чувашские свадьбы приурочивались к обряду *çинçе* (в этот период, считали чуваши, земля бывает беременной), а *юпа* – намогильные столбы – ставились глубокой осенью. Чуваши верили, что души и судьбы умерших со временем одариваются *Кепе* – новорожденному. Чувашская народная мифология не признавала ни начала, ни конца мироздания, в том числе и человеческой жизни. И рождение, и смерть приравнивались к получению нового статуса в иерархической структуре общества. Новорожденный входил в разряд *ача* (ребенок), женившийся получал статус мужчины – *ар,* а умерший оставался в составе *ватă.* В древности статус *ватă* получали, видимо, те члены общества, которые нуждались в постороннем уходе. По ряду преданий можно полагать, что такие старики и старухи встречали свою смерть в уединении, обычно в лесу. Отсюда, говорят в народе, пошли лесные духи *арçури.*

По представлению чуваша-огнепоклонника, в жизни все расписано и определено, и человек должен подчиняться этому первозданному порядку. Жизнь огнепоклонника определялась его рождением и местом в иерархической структуре общества, его социальным статусом. Потому чуваш

не отделял собственное движение от движения Природы. Такое понимание, как утверждают исследователи, было в основе всей традиционной восточной культуры в целом. Великая гармония между Природой и Человеком – вот идеал, к которому стремился средневековый чуваш-земледелец. В результате таких стремлений в мышлении чувашей начала преобладать логика *согласования,* а не подчинения, как у многих европейских народов. Логику достижения великой гармонии чуваши называли *çураçтару* – достижение согласия, примирение, достижение равновесия и порядка. Почти все обряды чувашей подчинены *идее достижения гармонии,* которая достигалась при помощи согласования с умершими предками, духами, богами и т.п. Знание для огнепоклонника означало путь к слиянию с Природой. Такими людьми среди чувашей считались *пĕлевçĕ, юмăçă* и др., которые, по их убеждению, знали язык Природы, язык окружающего человека мира.

Логика согласования обнаруживается не только в обрядовой системе, но и в этике, правилах поведения, в строе и структуре языка, слов и предложений, музыкальном мышлении. [На основе логики согласования построено чувашское предложение, этому порядку подчиняются морфология (агглютинативный строй языка) и лексемы (равнозначность слогов). В чувашской музыке преобладает пентатонное мышление, т.е. взаимодействие равнозначных, не подчиненных друг другу звуков. В традиционной форме ведения беседы чувашей вместо европейского самоутверждения «я» было стремление к достижению гармонии общающихся сторон. Данная особенность наложила отпечаток на национальный характер чувашей – стремление избегать прямых споров и дискуссий, доведение своего истинного мнения до собеседника через третье лицо и т.п. Здесь следует вспомнить и такие черты характера, которые в определенных условиях жизни обрели отрицательные качества – это излишняя послушность и преданность начальству, изначальный национальный нигилизм и т.п. Все это требует конкретного фактического анализа и глубокого научного осмысления].

Христианство, утвердившееся в чувашском обществе в XVIII–XIX вв., приобщило вчерашних огнепоклонников к европейской *идее подчинения* Природы Человеку. Христианство постулировало разъединенность Человека и Природы, лишило Природу ее магической недостижимости, иррациональности. В результате распространения европейской концепции личности в чувашской среде рано или поздно должна была возникнуть *концепция деятельного человека,* она, несомненно, разрушила бы традиционный принцип «недеяния». Такой период наступил во второй половине XIX в. и достиг своего апогея в первые два десятилетия XX в. Деятельность многих просветителей и романтиков того периода подчинена этой главной идее времени, названного некоторыми исследователями Чувашским Возрождением (аналогичная смена миросозерцания произошла в эпоху европейского Возрождения).

С утверждением христианства в чувашском обществе появилось европейское, линейное, понимание времени. В христианском миросозерцании понятие времени было отделено от понятия личности. Новое, христианское, осознание времени опирается на три определяющих момента – начало, кульминацию и завершение жизни рода человеческого. Время становится необратимым, и история, согласно ее христианскому истолкованию, имеет направление, развертывается по предустановленному плану и движется к концу. Линейное время делилось на начало, середину и конец или прошлое, настоящее и будущее.

Христианское миросозерцание способствовало формированию новой чувашской культуры и нового быта. В качестве примера можно рассмотреть расположение строений и домов в чувашской деревне. В Средние века среди чувашей преобладало гнездовое поселение, более или менее согласованное с родовой и общественной структурой. Расположение жилого дома и других строений, внутренняя часть избы – все это соответствовало мифологическому представлению чувашей о микромире и макромире. Зеркальность, симметричность этих двух миров наблюдались и в утвари,

костюме обитателей этой «окультуренной территории» рода, общины. В каждом таком гнездовом поселении имелись свои центры, т.е. культовые места *(чӳк йывăçĕ)* и утварь для совершения «акта примирения» – *чӳк хуранĕ, чӳк алтăрĕ* и т.п.

Примерно с середины XIX в. в чувашских деревнях появились улицы европейского типа, в результате чего утвердились такие понятия, как *урам (ял) пуçĕ* (начало улицы (села)), *урам (ял) варри* (середина улицы (села)) и *урам (ял) вĕçĕ* (конец улицы (села)). Прямая улица, имеющая начало, свой центр и конец, соответствовала линейному пространству и времени. Теперь центром села стала церковная площадь, а не *тĕп кил* (дом родоначальника) и жертвенное дерево на его территории. Это означало, что вчерашний огнепоклонник, приносивший в жертву богу и духам животных, отныне должен был приносить в жертву себя. Эта жертва уже духовная и индивидуальная, а не материальная и коллективная, как было раньше у огнепоклонников.

Таким образом, в результате утверждения христианского миросозерцания чувашское общество пришло к историческому мышлению и концепции деятельного человека. От церковных летописей XVI–XVIII вв. постепенно отпочковались историко-этнографические очерки, и от последних, как мы уже знаем, – науки и художественная литература европейского типа.

В начале XX в. чувашская интеллигенция выдвинула идею национального объединения на основе этнического своеобразия. Это явление произошло благодаря развитию к тому времени исторического и этнического сознания среди образованных представителей чувашского народа. Концепцию национального объединения на основе всестороннего просвещения (а не только христианского) и культуры настойчиво проводил в жизнь Н.В. Никольский (1878–1961), который был идейным вдохновителем и лидером этого движения. В 1906 г. он учреждает газету «Хыпар», в 1917 г.

организует и возглавляет Общество мелких народностей Поволжья. Общество имело просветительские цели: заботу о развитии национальных культур и расширении функций родного языка. Чувашские радикалы (Г. Алюнов, М. Юман и др.) в это же время делали акцент на росте политического самосознания народа. Эти идейные противоречия были вполне естественны и закономерны, как и антияковлевские настроения. «Птенцы яковлевского гнезда» (Симбирской чувашской учительской школы) уже не могли удовлетворяться теми целями и задачами, которые ставил перед ними Учитель и патриарх чувашского народа. XX в. выдвинул новые вызовы и требовал иного целеполагания. Впрочем, это осознавали даже самые последовательные «яковлевцы», например Даниил Филимонов (1855–1938), который писал: «Нам необходимо устроить всеобщий чувашский съезд для объединения всех чувашских интеллигентов. Наша первейшая задача – культурное развитие чуваш, совокупно и политическое».

В течение 1917 г. все же чувашское национальное движение на основе консолидации ширилось и распространялось (в Уфе его активно поддерживал Г.И. Комиссаров (Вандер), автор трактата «Чăваш халăхĕ малалла кайĕ-ши, каймĕ-ши?»; в газете «Хыпар» печатались статьи А.Милли (1894–1942), в которых он призывал к единению, просвещению, чтобы быть на уровне других народов, выйти в большой мир: «...Чуваши! Путь вперед – открыт. Ведущие по этому пути у нас надежны. Это чувашская дерзость, трудолюбие, чувашские отвага и ум. Учитесь, чуваши! И увидите, мы станем удивительным народом». Идея чувашского единства включала в себя язык, историю (ср. анализ очерка Э. Турхана «Чувашская история») и словесность. То есть были проартикулированы основные положения, принципы новой политической философии чувашского народа. Как будет видно в дальнейшем, они лишь отчасти были подтверждены и нашли свое отражение в литературной практике 20–30-х гг., а сама философия в эксплицитном виде никак уже не могла быть предъявлена и, тем более, реализована.

Октябрьскую революцию основная масса чувашской интеллигенции восприняла сразу, ибо их идеалы полностью сливались с национальной и социальной политикой советского государства. Но шовинистически настроенная часть местного русского населения не переставала распространять слухи о якобы непризнании чувашами советской власти. По этому поводу председатель Чувашского военного съезда Д.П. Петров (Юман) в начале февраля 1918 г. писал: «Чуваши далеки от контрреволюционных замыслов... Чуваши всегда и по всему будут с пролетариатом и трудовым крестьянством. Чуваши совершенно чужды националистического угара, могущего затемнить классовое самосознание. Чуваши знают, что их судьба зависит от исхода социалистической революции. В течение веков, подвергаясь беспощадной экономической эксплуатации, чуваши ныне дошли до полного физического истощения и вступили на путь вырождения. Тяжесть положения в среде эксплуатируемых усугублялась национальным бесправием и национальным угнетением. Единственное спасение чувашей – в воплощении идеалов, возвышенных великой российской революцией».

К 1918 г. М. Сеспель (под этим псевдонимом он впервые выступил в газете «Хыпар» 13 января 1918 г.) формировался как уникальная личность со своими идейно-нравственными взглядами. Социальные и национальные проблемы, наиболее жгучие для чувашской общественности, определили тематическую направленность произведений поэта. Идеалы революции и национальной интеллигенции вошли в плоть и кровь М. Сеспеля, и он был верен им до конца своей, подобно северному сиянию *(кăвак хуппи пек*), жизни. Выстраданные чувашской интеллигенцией идеи социального и национального раскрепощения при соприкосновении с «раскаленным сердцем» (такой перевод сеспелевского эпитета *кăвар чĕре* более приближен к оригиналу) поэта переплавились в художественные образы и идеи. Он вобрал в себя выстраданную народом веками боль и сумел совершить великий акт – *переплавление чувашской национальной энергии в*

художественное слово. Это и есть тот подвиг М. Сеспеля, благодаря чему он навеки остался в памяти потомков.

В иной плоскости конфликт происходил в ходе формирования чувашской автономии. Имела место, вероятно, ожесточенная борьба за власть между местными «патриотами» (вирьял) и «внеобластниками-чувашами» (анатри). В результате была утрачена значительная часть потенциальной чувашской территории, которая могла бы войти в состав республики. Затем борьба продолжилась на почве языка с попытками ниспровергнуть яковлевский литературный язык, отточенный, в основном, на переводах текстов Священного Писания, и в сфере литературы – против Общества чувашских писателей, инициированного все тем же А. Милли, ратовавшего за своеобразный синтез общеевропейских приоритетов и традиционного чувашского стиля (песенного, мифопоэтического и т.д.). В советское время эта «внутричувашская борьба» не могла оставаться собственно в рамках литературы, как противоречие между стилевыми установками, а получала идеологическую нагрузку с навешиванием политических ярлыков на оппонентов, что сказалось на судьбах многих чувашских литераторов в ходе репрессий 1937–1938 гг. Об этом специфическом социально-политическом подтексте чувашского литературного процесса того периода в данной книге написано достаточно подробно. При этом автор опирается на документы, публикации того или иного свидетельства более позднего времени.

ДРАМАТУРГИЯ (1917–1922-е гг.)

Для развития драматургии прежде всего нужен театр. Хотя чувашские пьесы и постановки появились значительно раньше 1917 г., но бурное развитие драматургии началось в пореволюционные годы, после первого спектакля (27 января 1918 г.) чувашского театра в Казани. «В течение трех месяцев мы поставили всего шесть пьес, – вспоминал потом его основатель и режиссер И. Максимов-Кошкинский, – из них и чувашская пьеса М.Ф. Акимова «Вăхăтсăр вилĕм» (Безвременная кончина). Тогда же были поставлены

пьесы Г. Тал-Мрзы «Кам айăплă?» (Кто виноват?), Ф. Павлова «Судра» (На суде). Первым были переведены с русского комедии Н. Гоголя «Ревизор», А. Луначарского «Королевский брадобрей», драма Шиллера «Разбойники», комедия Мольера «Плутни Скапена», драма А. Потехина «Чужое добро впрок не идет», драмы Ярыгина «В чужом гнезде» и А. Писемского «Горькая судьбина» и т.д.

Деятелям культуры того времени, в силу обстоятельств и отвечая духу времени, приходилось быть универсальными личностями. Они сами писали и переводили драматические произведения, самим приходилось ставить и играть их на сцене в качестве актеров. Таковы были первые театральные деятели И. Максимов-Кошкинский, Г. Тал-Мрза, П. Осипов, М. Акимов и некоторые другие.

В июне 1919 г. открывается второй чувашский театр (г. Симбирск) под руководством Н. Шевле. Здесь впервые были поставлены пьесы Н. Ефремова «Пуян Карук» (Богач Карук) и «Маюк». В те годы активно создавались драматические кружки в глубинных чувашских селах: в Акулево (Ф. Павлов, К. Егоров), Бичурино (Е. Римова), Балдаево (И. Скворцов) и др.

Весной 1920 г. Центральный чувашский театр гастролирует по городам Симбирск и Самара. В том же году после образования Чувашской автономной области театр переезжает в г. Чебоксары. Первым значительным событием в театральной жизни новой столицы была постановка пьесы «Чăвашсем» (Чуваши), написанной И. Максимовым-Кошкинским по мотивам драмы М. Лермонтова «Испанцы». Вдохновленный новым спектаклем И. Максимова-Кошкинского, **Михаил Кузьмич Сеспель** (1899–1922) написал драму «Убик» в трех частях.

В пьесе можно выявить отпечатки душевного состояния М. Сеспеля после краткого тюремного заключения. В те дни он глубоко переживал свое поражение Злу и стоял на распутье дороги: или пойти в художественную школу в Симбирск, или же остаться в Чебоксарах и продолжить заниматься родной литературой? Как художник он тянулся в Симбирск (вспомните героя

пьесы Михаила(!), мечтавшего быть художником и рекомендующего Яхрава поехать несомненно в Симбирск). Будучи поэтом, Сеспель сознавал, что свою энергию полностью мог бы реализовать только в Чувашской автономной области (вспомните поэта Яхрава). А влюбленный в Чиберчче Убик (от *упа* – медведь) опять-таки напоминает самого автора (А.П. Червякова в шутку называла поэта Мишкой-ведьмедем). Следовательно, все три героя пьесы – Яхрав-поэт, Михаил-художник и Убик-влюбленный – отражают три ипостаси образа Сеспеля. Здесь обнаруживается мифологичность, которая напоминает христианское представление о трех лицах всевышнего: отца, сына и святого духа. Герои драмы представлены как спасители родного слова и родной культуры.

Борьбу за признание языков народов Поволжья как средства школьного образования возглавил преподаватель Казанского университета, чуваш по национальности, Н.В. Никольский. Этого лидера «мелких национальностей» и его последователей в реакционной печати обвиняли в сепаратизме. Данный факт удачно был использован М. Сеспелем в вышеназванной пьесе. Узнав, что чувашского поэта Яхрава выселяют из Казани, один из героев пьесы спрашивает его: «Черт возьми! Вот собаки, за что же они гонят из города?»

Яхрав: Жандарм принес предписание от губернатора. Там сказано обо мне: «замеченного, дескать, в распространении идей о сепаратизме чувашей...»

Итак, М. Сеспель оставался верен своему творческому кредо и в драматургии. Прежде всего его тревожила проблема национальной свободы и равноправия. В этом деле он был наследником и продолжателем дел национальной интеллигенции между двумя революциями 1917 г.

Другая группа драматургов углублялась прежде всего в социальную проблематику, она искала конфликты в обществе и традиционном быту. **Михаил Филиппович Акимов-Аруй** (1895–1972) известен как талантливый артист и автор двух драм: «Вăхăтсăр вилĕм» (Безвременная кончина, 1918) и «Илюк» (1918–1919). В первой пьесе конфликт развивается на противоречии

двух типов людей, особенно обострившемся в период Первой империалистической войны. Главный герой Мигулай и его товарищи – простые солдаты, но их души и помыслы чисты, а сердца добрые. Злой полковник и льстивые офицеры любят власть и богатство. Здесь обнаруживается несколько осовремененный вечный конфликт между Добром и Злом (вспомним произведения И.Юркина, К.Иванова, Н. Шубоссинни). Вот имеющие глубокую смысловую нагрузку слова главного героя: «Кто хорошо одевается, кто богат, тот везде уважаем и почитаем. Эту истину знают все. Но тот человек и грешен. Он делает только свои личные дела. На ум и сердце человека не обращают внимания, как будто они и не нужны. Все хотят жить, для всех этот мир дорог! Молодые люди... вместо того, чтобы играть, радоваться, работать... раны, болезни...»

В драме «Илюк» главный герой связался со «злыми делами»: избивает свою жену, по ночам ходит к молодой вдовушке, торгующей дьявольским зельем, выгоняет из дома законную жену. Драма завершается смертью безвинной Марье и раскаянием его мужа Илюка. В данной пьесе, как и в первой, страдающий от дьявольских дел герой погибает, но двойник Тхтамана (герой поэмы «Нарспи» К. Иванова) кается в своих греховных делах. Драматург убежден, что подобные трагедии чувашского быта происходят из-за непросвещенности, необразованности главных героев.

Николай Сидорович Ефремов (1895–1988) известен как поэт и драматург. Под влиянием «Нарспи» К. Иванова он пробовал себя в пейзажной лирике и драматургии («Унисье», «Маюк»). Наиболее удачной получилась его социально-психологическая драма «Пуян Карук» (Богач Карук, 1919). В ней драматург ищет социально и психологически обоснованные ответы на вопросы происходящих действий. «Человек, оценивая свою непорядочную жизнь, может преобразоваться, – писал он в предисловии своей драмы. – Вот вы можете обвинять Карука... Если люди, зная и не зная, начинают обвинять нас, то мы тоже подумаем о своих делах, без этого о своих недостатках и грехах можем забыть полностью...»

Драматург, как видно из предисловия, глубоко убежден в целебной силе «взгляда со стороны». При этом следует учесть, что в традиционном чувашском обществе народный смех для всех был безжалостен, в том числе и алчных к наживе людей, подобных богачу Каруку.

Весьма значительной фигурой в чувашской драматургии рассматриваемого периода выступает **Георгий Васильевич Тал-Мрза** (1895–1921), который написал и поставил на сцене Центрального чувашского театра драму «Кам айqплq?» (Кто виноват?), трагикомедию «Ухатер», социально-героическую пьесу «Çĕнĕ пурнăç шурăмпуçĕ» (Заря новой жизни). Его перу принадлежат незаконченные трагедии «Силпи – пăлхар пики» (Сильби – дочь булгарского царя), «Вqйлисен айăпĕ» (Вина сильных). Трагедии драматурга «Аттила», «Архай хан» и «Мăрсапай» (Мурзабай) считаются утерянными. В произведениях Г.Тал-Мрзы преобладают романтический стиль и пафос, восторг героическим прошлым чувашского народа. В трагедии «Вина сильных» драматург дал субъективную оценку деятельности просветителя чувашского народа И.Я. Яковлева.

Историческая трагедия «Сильби – дочь булгарского царя» основана на некоторых фактах исторического прошлого русско-булгарского взаимоотношения. О том, что женой русского князя Андрея Боголюбского была дочь булгарского царя, Г.Тал-Мрза узнал во время учебы в Северо-Восточном археологическом институте (г. Казань) в 1918 г. На основе данного и других фактов он смог создать вполне достоверное и художественно цельное драматическое произведение.

Федор Павлов (1892–1931)

В истории чувашской культуры XX в. первые его десятилетия известны как годы массового подвижничества. В этой плеяде национальных подвижников особое место занимает Федор Павлович Павлов, один из зачинателей чувашской профессиональной музыки, драматургии, музыковедения, эстетики.

Ф. Павлов родился 25 сентября 1892 г. в с. Богатырево Цивильского уезда Казанской губернии (ныне входит в Цивильский район Чувашской Республики). После получения начального образования в различных сельских школах в 1907 г. он поступил в Симбирскую чувашскую учительскую школу (СЧУШ) и успешно окончил ее в 1911 г. И.Я. Яковлев, зная о больших музыкальных способностях выпускника Ф. Павлова, назначил его регентом своей школы. Как раз с этого времени Ф. Павлов начал особенно глубоко интересоваться различными формами художественного творчества.

В 1911–1913 гг. молодой регент Симбирской чувашской учительской школы Ф.Павлов сочинил лирические стихи, поэму на историческую тему, занимался гармонизацией народных песен, пробовал себя в прозаических жанрах. Тем не менее в эти годы он проявил себя скорее не как литератор, а как талантливый деятель национальной хоровой культуры. К литературе в тот период он обращался, как отмечал сам, всего лишь с целью развития «художественного вкуса».

Почему Ф.Павлов, имевший замечательные поэтические данные, стал сначала одним из зачинателей национальной драматургии, а в 20-е гг. полностью отдался чувашской профессиональной музыке? Нет ли здесь закономерностей, определявших пути развития профессиональной художественной культуры чувашей Нового времени? На эти вопросы мы можем найти исторически обоснованные ответы, если кратко вспомним историю формирования и особенности развития чувашской художественной культуры XVIII – начала XX вв.

XVIII в. – начало качественного изменения этносов восточных окраин России и их культур. С того периода народы, своими глубокими корнями связанные с Востоком, начинают входить в лоно западноевропейской цивилизации. Нельзя сказать, что такая переориентация идеологий и культур прошла без существенных потерь. В частности, христианство безжалостно уничтожало святилища-киремети язычников, запрещало проводить

традиционные обряды, многовековые обычаи. Но в то же время оно пропагандировало не знакомую дотоле язычникам культуру: церковно-хоровое пение, христианско-книжную литературу, светскую поэзию высокого стиля, изобразительное искусство в форме иконописи.

Из всех видов и форм европейской художественной культуры на чувашской почве мощное развитие получила письменная поэзия, чему способствовала, видимо, ее близость к народной песне (наличие схожих элементов стиха, образное мышление и др.).

В начальный период она была переводная (оды XVIII в.), а к 30–40-м гг. XIX в. вобрала в себя образно-метафорическую структуру народных песен. В 70–90-е гг. чувашская интеллигенция открыла для себя в родной поэзии такую категорию, как национальное своеобразие. С того времени письменная поэзия вошла в состав основных признаков чувашского этноса.

Чувашская письменная проза берет свое начало с переводов христианских нравоучений и библейских сюжетов, поэтому она в определенной степени была привязана к идеологии. Прозаические тексты тех лет еще не воспринимались как самостоятельный жанр, представляющий идейно-художественную ценность. Прикладное значение прозы подавляло ее своеобразие, ограничивало ее философско-эстетические возможности. Вот почему в период утверждения идеи чувашского возрождения (нач. XX в.) на первое место вышла поэзия, а не проза.

Одной из основных черт поэзии является ее способность быстро откликаться на те или иные события, т.е. мобильность. Активизация социально-политической жизни в начале XX в. побудила в поэтах чувство востребованности, необходимости их творчества. Созданные в этот период лирические стихотворения братьев Турхан, Г.Коренькова, Н.Шубоссинни, лиро-эпические поэмы К.Иванова, Н.Шелеби и Т.Кириллова легли в основу чувашской профессиональной литературы. Плодотворная деятельность одаренных поэтов, с одной стороны, создавала атмосферу высокой требовательности к художественному творчеству, а с другой –

способствовала массовому увлечению стихотворчеством. В стихотворной форме стали писать агиографические тексты, этнографические очерки и бытовые истории, появилась масса переложений сказок в стихи. Такой дилетантский подход к поэзии беспокоил многих, в том числе и Ф.Павлова, который выразил свое отношение к подобному словотворчеству в следующем четверостишии:

Я знаю, что ты не поэт!
Стихи твои забудет свет!
И неизвестен будешь всем!
Зачем писать, зачем?

Свои стихи он относил к альбомным, ибо прекрасно сознавал, что ему никогда не достичь поэтических вершин К. Иванова – коллеги по работе в Симбирской чувашской учительской школе.

Судьбу Федора Павловича Павлова в какой-то степени определила внезапная смерть талантливого музыканта и дирижера И.М. Дмитриева (1884–1911). Дело в том, что будучи воспитанником Симбирской чувашской учительской школы (СЧУШ), Ф. Павлов «последние полтора года был подрегентом у покойного Дмитриева, а последние два месяца (апрель и май) во время его болезни вел спевки и успешно управлялся церковным хором и исключительно один». Перед смертью И.М. Дмитриев просил И.Я. Яковлева выполнить свое последнее желание – назначить своим преемником выпускника школы Ф. Павлова. Забросить дело жизни учителя, которому тот отдавался с таким энтузиазмом и усердием, ученик не имел морального права. А то, что мастерство управления хором Ф. Павлов успел перенять у своего наставника, получившего блестящее музыкально-хоровое образование в столичной Придворной певческой капелле, можно с полным основанием отнести к удачному стечению обстоятельств.

Чувашская хоровая культура к 1911 г. имела богатые традиции, уходящие своими корнями в XVIII в. Именно в Петровскую эпоху из чувашей стали выходить служители церкви, прекрасно владеющие

музыкальной грамотой и искусством церковного пения. Одним из таких известных деятелей является Якуб Ордикеев, который «в 1712 г. составил ноты» октоих.

В конце XVII – начале XVIII вв. пение в Поволжье достигло высшей ступени своего развития. В Казани слагались свои напевы церковных текстов. Певчие стали петь не по книгам, а по тетрадкам. Появились свои композиторы, писавшие для хоров даже на 8 и на 12 голосов. Следует считать, что Я. Ордикеев принадлежал к школе казанских гармонизаторов.

В казанских новокрещенских школах XVIII в. церковное пение входило в число основных предметов преподавания. В Свияжске действовала специализированная певческая школа, в которой в свое время учились будущий востоковед Н. Бичурин, дети многих священников чувашских приходов. В этих школах, а с 1785 г. и в народных училищах юноши обучались не только церковному, но и светскому пению.

